# Петĕр Хусанкай

## *Çырнисен пуххи*

Ултă томпа тухать

Виççĕмĕш том

ПОЭМĂСЕМ

1927—1970

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2002

УДК 821.512.111
ББК 84 (2Рос=Чув)—5
Х 98

*Пичете Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн Ăслăлăх канашĕ çирĕплетнĕ*

Редакци ушкăнĕ:
**Н.И. Иванов, В.П. Станьял, А.А. Трофимов, А.П. Хусанкай, Г.Ф. Юмарт**

Пухса йĕркелекенĕ, ăслăлăх редакторĕ тата ăнлантарусене çыраканĕ **В.П. Станьял**

**ISBN 5-7670-1260-1**

© Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ, 2002
© Чăваш кĕнеке издательстви, 2002

# ПОЭМĂСЕМ

## ХУРИ

*Чăваш студенчĕсене*

### I

Пĕлместĕн-и эс,
Чăваш:
Мĕншĕн çак кĕтес
Йăваш?
Мĕншĕн çакăнта
Мĕнпур
Этем тӳсейми
Хĕн-хур?
Ĕçлетĕр вĕт пит
Маттур.
Ĕçлетĕр ĕмĕр-
Ĕмĕр,
Çапах саплăк çеç
Йĕмĕр,
Çапах çăпата
Ура,
Пурнан пӳртĕрсем
Хура.
Е ку хăвăра
Кура?
Чăваш ĕнсине
Хыçать,
Пăхать мал енне,
Хыçа.
Ытти те çаплах
Хресчен,

Такамшăн вăл та
Ĕçчен.
Мĕскер тăвăн-ха
Пĕччен?
Йĕрет, хурланать
Кĕсле,
Шырать урăхла
Меслет.
Анчах ун сасси
Çинçе,
Ялтан тухасси
Инçе,
Ларах кăмаку
Çинче.
Кавлет хĕвеле
Вăпăр,
Чӳке хатĕрле
Вăкăр.
Куçа тĕтĕрет
Кăмпа.
Сăра ĕçтерет
Чăмпа,
Кичем тĕк — вĕрет
Хăмпа.

## II

Çулсем шăвăнаç
Пĕр май,
Лăпланчĕ шăпăр,
Сăрнай.
Шăппăн тĕлĕрен
Яла
Кĕрет тĕрлĕрен
Йăла.
Çуралчĕ кĕрен
Ялав.
Манман пуль-ха эс
Ăна —
Пĕр çирĕм ик çул
Кăна,
Эпир çуралман чухне,
Раççей ĕç çыннин

Юнне
Тăктарнă вĕт пит
Йӳне.
Чăваш çĕршывне
Ун чух
Хускатнă çĕнĕ
Учук.
Хастар Тимухха —
Хури
Ялти халăха
Юри
Вĕрентнĕ пăлхав
Юрри.
Ăна эс пĕлен
Аван,
Вăл ирĕкпелен
Тăван.
Ăна астăвать
Чĕмпĕр...
Кайран
Чĕлпĕр.
Вара ĕмĕрлĕх —
Çĕпĕр.
Мухтавлă вăрман
Тайга,
Анчах эс кунтан
Кай-ха,
Çуратнă Кăршка...
Çынсем...
Ăçтан кăмăлпа
Тӳсен,
Ăçтан чăттăр-ха
Студент.

**III**

Çĕпĕр! Юмахри
Çĕршыв.
Паха ун мăйрин
Шăрши.
Анчах аллунта
Çăра,
Хуралçă утать

Хыçра —
Мăйăр та таттармасть,
Чарать.
Пăшаллă салтак
Хăнчăр,
Анчах урунта
Сăнчăр.
Сăнчăр чĕркуççи
Таран,
Утатăн аран-
Аран,
Ăçтан унпала
Таран?
Сăнарĕ иккен
Салтак,
Часах пилĕкне
Салтать.
Чăмăр саламат
Чĕнтен,
Выртах, ан ахлат
Хĕртсен:
Çапла касамат
Тĕнчен...
Лере инçетре
Кăршка,
Урам варринче
Çăка.
Çанталăк каллех
Уяр,
Çăка йăлăнать:
Каçар...
Ĕçсем курăнать
Начар.
Чăваш калаçать
Хуллен,
Кĕтеççĕ хыпар
Куллен.
Хыпар илтĕнмест
Ниçтан,
Хăрушă сăмах
«Ристан»
Усал хурахпа
Пĕр тан.

## IV

Кун-çул — ĕмĕре
Çеçке,
Ĕмĕр тĕрмере
Кĕске.
Кам курнă — пĕлет-тĕр,
Тен:
Хĕвел лекеймен
Çĕрте
Черченкĕ ӳсет
Серте.
Хури, сарăлан
Чечек,
Сасартăк юлать
Хĕç пек.
Тискер тупăклах
Ăна
Хĕсет тăваткал
Стена,
Тем те пĕр кĕрет
Тăна.
Чĕмпĕр... Шупашкар...
Хусан...
«Хресчен пĕр кавар
Пулсан,
Тен лармăттăм эп
Кунта,
Анчах хĕрхенеп
Чунтан
Çав сӳннĕ хĕлхем-
Вута!»
Пĕрре кăментант
Кĕрсе
Каларĕ халтан
Хĕрсе:
«Сире паян кун
Хавас —
Тухатăр кунтан
Ак час.
Вăрçа! Раççее
Çăлас».
Унччен те пулмин

Пĕр çын
Сапать тĕрмене
Краççын...
Урам янрататать
Хыпар,
Мĕнпур арестант
Чăл-пар...
Суман, кăментант!
Ан тар!

## V

Хĕлле. Шартлама
Февраль.
Ăна астумап
Эп халь.
Тухманччĕ ун чух
Килтен,
Анчах вунă çул
Иртсен
Юрлатпăр Хури
Çинчен.
Хури — мĕльюнтан
Пĕри,
Чăвашшăн тăван
Хури!
Çĕмĕр сăнчăрна.
Çĕмĕр!
Пуçлчнчĕ çĕнĕ
Ĕмĕр.
Хури, эс мĕншĕн
Чĕмсĕр?
Вуникĕ асаплă
Çул
Ăна пăхăнтарнă
Чул.
Илтет вăл «тапран»,
«Салат».
Анчах хăй аран
Калать:
— Ăçтаччĕ-ши ман
Халат?...

Пĕри ак ĕнтет
Ташша,
Ури айĕнче
Патша.
Чăн-чăн Микулай
Сăнне
Вăл тунă кĕле
Тĕпне,
Çурать те каллех
Хĕнет.
Хури тĕлĕнсе
Пăхать:
Ăçтан ку пекех
Хăват?.
Мĕне пĕлтерет
Карттин?
Патша кирлĕ мар
Эппин?
Тинех революци,
Тин.

### VI

Салатрĕ тара
Пăшал,
Улать тайгара
Шакал.
Хăйра çĕççĕне,
Хăйра!
Раççей — сĕтĕрĕнен
Майра —
Ан пултăр текех
Кайра.
Анчах ĕç çыннин
Аюх,
Нимĕн те çĕнни
Халь çук.
Çапать вăл мĕскĕн
Пĕççе:
Керенски çӳрет
Вĕçсе,
Çĕленĕ питне

Кӗҫҫе.
Керенски...ҫапла,
Ҫапла...
Вӑл тухнӑ иккен
Чапла.
Хуришӗн ку паллӑ
Ят,
Хури шухӑша
Каять:
Керенски... ҫапла...
Ваккат.
Пайтах... Асилсен —
Тӗлӗк:
Вуникӗ ҫулсем
Ӗлӗк,
Персе вӗлерес
Чухне,
Хӑюллӑ студент
Хутне
Вӑл кӳртнӗ Хусан
Сутне.
Тен, халь те пӗр пек
Ӗмӗт...
Анчах хӗп-хӗрлех
Пӗлӗт.
Ӳсет урӑхла
Вӑй-хал,
Пуҫтарчӗ тара
Пӑшал,
Шӑпах тайгара
Шакал.

## VII

Хури таврӑнать
Киле.
Кӑршка, ҫынннуна
Пилле!
Ан ютшӑн унран,
Ан чак,
Куран — вӑл суран
Анчах.

Хавшаннă, куран,
Тăнчах.
Вуникĕ асаплă
Çул —
Ăна пăхăнтарнă
Чул.
Ĕлĕк вăйпитти
Йĕкĕт —
Паян вăл — хăрăк
Шĕшкĕ;
Шĕшке шĕкĕлчет
Шĕкĕ.
Кил-йыш палламасть
Кам ку?
Мĕскершĕн-ха, ма
Салху?
Кăкăр таранах
Сухал,
Кĕтеслĕ янах
Ун халь,
Ниçтан паллама
Çук хал.
— Тимуш... Тимухха?
Çавах...
Чухлаççĕ пуль-ха
Çапах
Ыйтаççĕ: ăçтан,
Мĕнтен
Мехелĕ килет
Тĕнчен?
Илет-ши çĕре
Хресчен?
Хури шухăшлать:
— Аха...
Керенски — мăкла
Така.
Вăл çакĕ паха
Ука,
Кунта макăрать
Суха.
Эппин, пуçланман
Пуль-ха...

## VIII

Хире кичемлет
Хăмăл,
Салху-çке темле
Кăмăл.
Шаланкă йĕрет
Çинçен,
Эс çав кĕвĕре
Сисен
Такам ĕмĕрĕ
Çинчен.
Ку кам-шиваскать
Çулпа,
Мĕнле мăн каска,
Юпа?
Ку кам пăрăнать
Унтан?
— Тăхта! Чар ăна,
Шуйттан!
Ăçта çăвана
Чупан?
Курмастăн-им эс,
Улпут, —
Ванать, тӳсеймест
Чул çурт.
Илтместĕн-им çак
Сасса:
— Пĕтех, юн ĕçен
Сăпса,
Кăлар ман юна
Хăсса!.
Октябрь! Çунать
Çĕршыв.
Мĕншĕн эп çунат-
сăр-ши?
Октябрь! Часрах
Вăран,
Этем тивĕçне
Тăман
Асаплă чăваш —
Тăван!
Илтсемччĕ, мĕскĕн,

Илтсем:
Çăтмах — çĕнĕ тĕн
Çĕнсен!
Пăхсамччĕ вĕçрен
Вĕçе —
Хĕрессĕр этем
Миçе?
Хĕçе эс ĕнен,
Хĕçе!

**IX**

Ан чарăн, йĕтре,
Юрла.
Кăвак пĕлĕтре
Çурла.
Ан çывăр, çĕнĕ
Хурал,
Октябрь чĕнет —
Хускал,
Тĕлле тĕнчене.
Путвал!
Кĕр-рĕс ишĕлет
Пашне.
Тустар, ан шелле
Ăшне.
Çак ылтăн калпак —
Пире,
Вăл пирĕн халпа
Хитре,
Шăратăр унтан
Йĕтре!
Çак тутлă эрех —
Ман юн,
Эп пурпĕрех —
Мĕльюн...
Чипер çарамас
Хĕртен
Çаратар алмас,
Мерчен.
Вăл пирĕн хавас,
Пиртен!
Мĕльюнлă сасса

Пĕр сас
Ăçтан каласа
Парас?
Анчах мĕльюнтан
Пĕри —
Чăвашшăн тăван
Хури —
Пулса-мĕн наган
Хурри.
Çак пысăк хуйха
Пĕлме
Сĕмленчĕ çăка,
Йĕлме.
Калан, никамах та
Çук,
Çил çеç такама
Хăш чух
Чӳклет тем амак
Учук.

## X

Çулсем шăвăнаç
Пĕр май,
Каллех вăранать
Сăрнай.
Каллех шеремет
Тухья
Тухса илемлет
Туя.
Сӳнмест-мĕн ĕмĕт,
Туян.
Кун-çул ĕмĕре
Çеçке,
Ĕмĕр тĕрмере
Кĕске.
Анчах асăрха,
Сăна
Экран çиййĕнчи
Çынна
Палларĕ мĕнпур
Хăна.
Çăтаймĕ эппин

Çăва,
Куран — миçе пин
Чăваш
Унпа пĕр кавар
Çак кун:
— Паян Шупашкар
Ман чун,
Юлташ, алă пар,
Ыр сун...
Çитмен ĕмĕтсем
Çитсен,
Аваллăх тĕксĕм
Иккен.
Анчах вăл асапсăр
Мар,
Кĕлленĕ пайтах
Кăвар.
Ăна та пуçа
Таяр.
Çухалнă ята
Тупсан,
Чуну хĕпĕртет пуль
Сан.
Анчах ятсăрри
Миçен,
Çĕклентĕр тăпри
Вĕсен!
Çак юрă Хури
Çинчен...

1927

## ÇИРĔМ УЛТТĂ

*С. Элкере*

Çирĕм улттăн вĕсем, çирĕм улттăн,
Çирĕм ултă герой — сахал мар.
Вĕсен ячĕ пуриншĕн те ылттăн,
Çирĕм улттăн вĕсем, çирĕм улттăн,
Çирĕм ултă чăн-чăн коммунар.

Авăн уйăхĕн çирĕммĕш кунĕ,
Тамăкри пек вунсаккăрмĕш çул.

Кам пытарĕ паян, кам тунĕ?
Авăн уйăхĕн çирĕммĕш кунĕ
Çирĕм ултă маттур пулчĕç çук.

Каспи тинĕс чăнах-та йĕрет-çке,
Каçпала эс итле-ха, сăна:
Шауман... Азизбек... Джапаридзе...
Каспи тинĕс чăнах та йĕрет-çке,
Çирĕм ултă ята асăнать.

* * *

Красноводск — симĕс Каçпи хули вăл.
Красноводскăн тĕрми пĕчĕк мар.
Шаумян калаçать: — Савнă ывăл,
Çакăнта хупĕç ак пăчăхма.

Мĕншĕнне ăнланмашкăн эс çамрăк,
Камшăнне те чухлаймăн-ха халь.
Кăлăхах сан пуçна эпĕ çаврăп
Пысăк шухăш кĕртсе, так ахаль.

Çавăнпа ытлашши сăмахсемсĕр
Уйрăлмашкăн тивет аçуна.
Самана пит хăрушă та сĕмсĕр,
Çав вутра ман асаплăх çунать.

Ман çеç мар, тĕнчери пур ĕç халăх
Паян кун çăлăну тилмĕрет.
Малашне тек асаймĕ чуралăх,
Юлашки хут ларап тĕрмере.

Çирĕм пилĕк Баку комиссарĕ,
Çирĕм улттăмĕш эп хупăнап.
Каçарми ултавпа улталарĕ
Ирсĕр Фунтиков... Паллăн ăна.

Сывă пул! Анчах курăпăр-халĕ,
Ан кулянăр, ан хуçăлăрсам.
Ыранхи телеграмма мĕн калĕ,
Иличчен ырă-сывă ларсан...—

Ашшĕ урăх сăмах каламарĕ,
Хурал хушрĕ часрах пĕтерме.

— Сывă пултăр Кавказ коммунарĕ! —
Тесе ячĕ пĕр харăс тĕрме.

Шаумян çĕлĕкне хывса илчĕ,
Мăшăр куç ялкăшать çиçĕм пек.
Итлĕр ав — калаçать Джапаридзе.
Итлĕр ав — калаçать Азизбек.

—... Бакура пĕтĕм пурнăç нехтă,
Çынсенчен сăрхăнать мазут.
Акăлчан йыттисем иртĕннех тĕк,
Ĕç çынни, хăвна ху ан сут!

Апшерон çурутрав хура юнĕ
Вĕсене халĕ канăç памасть.
Çав мула вĕçертсен, мĕскер юлĕ
Ишĕлен хуралта юсама?

Ишĕлет вăл куллен ишĕлет-çке,
Хăварма юрамасть ырана.
Тен, вĕсем аслă çул та кĕтеççĕ
Индие, Тĕрĕке, Ирана.

Туркестан хирĕнчи шурă мамăк
Пĕр пекех вĕсене илĕртет.
Ĕç çынни! Эс кала: «Памăп, памăп!
Çирĕм улттăн çеç мар эпир!» — те.

* * *

Вăл каç тинĕс тискеррĕн хумханнă,
Инкекпе, ахăр, пулнă пĕр чун.
Тăшмансем çĕрĕпех каварланă —
Реджинальд, Бичерахов та Кун.

Реджинальд, акăлчан капитанĕ,
Ашхабадшăн хăрушă хăна.
Индие пăхăнтарнă Британи,
Мĕн çитмен-ши тата халь ăна?

— Ан çилленĕр мана, мистер Дружкин,
Анчах эп шухăшлап урăхла:

Çирĕм улттă вăл — тупăшлă ушкăн,
Вĕçертсессĕн пулать кулăшла.

Пирĕн мисси... пĕлетĕр вĕт эсĕр:
Туркестан... Малашне, тен, Кавказ...
Çавăнпа вăхăта ирттермесĕр
Мешшеде вĕсене ăсатас.

Мешшедри акăлчан вăрттăн çарĕ,
Кирлине лайăххрах тĕпчесен,
Çăмăлах Индие те куçарĕ,
А унта — вара пирĕн вĕсем...

Ăнланатăп сире, капитанăм,
Ăнланатăп аван, мистер Джонс,
Ун çинчен эп тахçан шухăшланă,
Анчах халь ман пĕртен-пĕрех шанс.

Сирĕн шухăшăр тӳрĕ пулсассăн,
Сăмах питлĕхшĕн çеç пулмасан,
Ак халех телефон тăрăх сассăм
Бичерахов патне çитĕ ман.

Вăл кунта пиçсе çитнĕ диктатор,
Сирĕнпе килĕштерĕ пуль теп.
Мансăрах ĕнтĕ эсĕр чухлатăр:
Унăн ячĕ питрех те çӳлте...

Реджинальд кулса çеç алă пачĕ,
Куллинче те шăлне вăл хăйрать.
Бичераховăн чаплă тăк ячĕ —
Ун мăскершĕн вара пит кайра!

Тахçанах вăл ăна илнĕ сутăн,
Бичерахов тахçан унпала.
Шырав пуçлăхĕ çеç пулнă кутăн,
Халь ăна та вăл ак улталать.

Çирĕм улттă — чи тупăшлă ушкăн,
Хăш-пĕрне тупăш ларĕ хакла...
Ан çилленĕр ăна, мистер Дружкин,
Анчах шухăшĕ ун урăхла.

* * *

Красноводск тĕлĕрмест пĕр минут та,
Пĕр минут куç хупман кĕçĕр Кун.
Ун пуçне çавăрать çирĕм улттă,
Çирĕм улттă çинче шухăш ун.

«Е чăнах çаксене майласассăн?
Ун чухне Кавказри пурлăха
Çав антра сурăх пек хура масса
Пуççапса кӳрĕ ман халăха.

Унта пирĕн ялав вĕлкĕшет,
Фонтансем пире майлă шавлаççĕ,
Ак тата аппаланăр пăртакçă,
Çур Раççейĕр те касăлĕ шет.

Хĕрхенетĕп сире. Пулĕ йывăр,
Коммунизм тăван мĕскĕнсем...
Акăлчан! Акăлчан! Ан çывăр,
Ĕмĕр чаплă ятна ан çĕртсем...»

Ашхабад — Красноводск — Ашхабад —
Шак та шак тутарать телеграф.
«Мĕн тăвас?» — тесе Кун аптратать.
«Вĕлерес!» — тет лерен Бичерахов.

Реджинальд ухă пек ярăнать.
Кĕçĕрех, çывăрмасĕрваскас.
Кавказа, Кавказа пар ăна,
Асăнчен каяс çук ун Кавказ.

* * *

Кавара сисеймен пăравус.
Ик вакун туркменпа вырăс çарĕ.
— Офицер! Эс пуçна пит ан ус! —
Тесе çеç капитан кĕрсе кайрĕ.

Пăр никам та пĕлмест халь — темшĕн
Кирлĕ пулнă кун чухлĕ салтак.
Реджинальд купере пĕчченех-мĕн
Çирĕм улттăшăн пусă алтать.

Вакунсем алланса пынă майăн
Вăл пушшех хĕтĕртет хăй чунне:
«Шаумян! Мана тин эс пуç тайăн
Çак хĕçе хам çĕкленĕ чухне...»

Çухрăмсем вĕлтлетеççĕ хисепсĕр,
Кăвакарчĕ кĕрхи тĕттĕм каç.
«Ах, сисетпĕр, сисетпĕр, сисетпĕр!» —
Тенĕнех пралуксем янтăраç.

Акăлчан кантăкран пăхса пычĕ:
Çеçен хир тĕлĕрет. Çук кĕр-кар...
Куçĕсем этем юнĕшĕн выçă,
Вăр-хурах пек çиллес те хаяр.

* * *

— Тĕрме алăкĕ ма йывăç мар-ши,
Ма çӳлте-ши ун кантăкĕсем?...
Пуçласам, тантăш, ирĕклĕх маршĕ,
Хам çуралнă çĕре эп вĕçем.

Унта ватă аннеçĕм ман юлчĕ,
Аннепе аса килчĕ Арас.
Çав Арас хĕрринче пирĕн çуртчĕ,
Эп ялан шухăшлаттăм: тарас...

Вунтăвата çултах килтен тухрăм,
Анчах ман халăха сум çукран —
Вунă пин е вунпилĕк пин çухрăм
Çул çӳренĕ пуль эпĕ çуран.

Савăта-и кĕрен, хапрăка-и —
Тăрăхлаççĕ, кулаççĕ кăна.
Ман пулассăм килместчĕ çын айĕ,
Пулмасан — сĕтĕрен сăнчăрна.

Пуçласам, тантăш, ирĕклĕх маршĕ —
Хам çуралнă çĕре эп вĕçем...
Тĕрме алăкĕ ма йывăç мар-ши?
Ма çӳлте-ши ун кантăкĕсем?..—

* * *

Ак пĕри çывхарчĕ вăрахăн,
Такама ÿкĕтлет вăй пухма:
— Ăнлансан, шикленмешкĕн пăрахăн.
Ăнланмастăн пулсан — эс ухмах...

Бакури пролетари халь пирĕн.
Çирĕм улттă — вăл пысăк чăрмав,
Çавăнпа эс вĕсемшĕн ан хирĕн,
Эп кунта вĕт килмен каçарма.

Тата çур сехетрен эпĕ пулăп:
Эс унччен те ĕçе татмасан —
Акă çак саламат, çак хĕç-пулă,
Пит те тутлă апат вара ман!..

Хуралт шалт туса çеç хисеп пачĕ:
— Манран ним те килмест, господин,
Реджинальд капитан ырă ячĕ
Ăшăмранран тухас çук паян тин...

— Ку аван, ку аван. Çапла кирлĕ,
Пăхăнас пулать аслă чина.
Стре пит хĕстереççĕ-мĕн вирлĕ,
Анчах кур — эпĕ вăл Реджинальд.

Вăрăммăн кĕмсĕртетрĕ çăра,
Чĕрисем сиксе илчĕç пурин те.
Çирĕм ултă комиссара
Мĕне кирлĕ халь Перси е Инди?

Халь кунта вĕт, кунта пĕтермен,
Кавказра тумаллаччĕ тăванлăх.
Хăть грузин, хăть черкес, хăть эрмен —
Кашни ырлăх кĕтет, кашни халăх.

Анчах ак çирĕм улттăшĕ те
Пĕр этем мĕлкине тĕл пулаççĕ.
— Хатĕрленĕр халех Мешшеде!
Тесе хучĕ салхуллă хуралçă...

* * *

«Машинист Щеголютин! Итле:
Перевал е Ахча-Куйма...
Ӗҫӗ пулӗ веҫех камитле,
Унпала эс пултарӑн пуйма.

Санран эпир нумай ыйтас ҫук,
Анчах ху тек ҫӳремӗн ҫарран.
Эп кӑтартнӑ ҫӗре ҫитес ҫук
Чип-чипер шӑхӑртан та чаран.

Нимӗнле станци ҫук вӑл тӗлте:
Ҫап-ҫара... ҫӗрӗ хӑйӑрлӑскер...
Ман сӑмах — ӑнланан пулӗ те? —
Пит ансат катмалли мӑйӑр-ҫке...»

Машинист Щеголютин итлет,
Май килсессӗн хавас вӑл пуйма.
Ӗҫӗ пулӗ йӑлтах камитле —
Перевал е Ахча-Куйма...

Саксаул тӗмӗсем... ҫеҫен хир...
Реджинальд алӑ сулчӗ: «Чар!»
Шурӑмпуҫ хӑпарать... чечен ир...
Ни разъезд ку, ни станци те мар.

Кӗпӗрленчӗ те тухрӗ салтак.
Тӗрӗслеҫҫӗ пӑшалӗсене.
— Офицер, эсир пулӑр малта,
Халь пӗр вуннӑшне ҫеҫ эп чӗнеп...

Вакуна витӗрех ку тирет,
Кӗрӗслетрӗ ак залп тулта.
— Юлташсем! Улталарӗҫ пире...
Юлташсем... Ултав!.. Ултав!..

Юрӗ, юрӗ... Халь тин пуҫ ан ус...
Фиолетов, Меттакса, Берг...
— Эп лӑпках, — тет пӗр ҫамрӑк матрус, —
Сывӑ пултӑр Коммуна! Пер.

* * *

Икçĕр çиччĕмĕш юнлă çухрăм,
Красноводск — чăннипех хĕрлĕ шыв,
Таса юн, эс пĕр айăпсăр юхрăн.
Икçĕр çиччĕмĕш юнлă çухрăм,
Вăл паян та çаплах хĕрлĕ-ши?

Саксаул тĕмĕсем чĕрĕ юнлă.
Ăна пурĕ пайтах мĕльюн.
Çирĕм улттăн çеç эпир юлнă,
Саксаул тĕмĕсем чĕрĕ юнлă,
Хăйăра сăрхăнаймĕ вăл юн.

Ав самум та çаплах йĕрсе илчĕ.
Тинкерсе эс итле-ха, сăна:
Шаумян... Азизбек Джапаридзе...
Ав самум та çаплах йĕрсе илчĕ —
Çирĕм ултă ята асăнать.

Çирĕм улттăн вĕсем, çирĕм улттăн,
Çирĕм ултă герой — сахал мар.
Вĕсен ячĕ пуриншĕн те ылттăн,
Çирĕм улттăн вĕсем, çирĕм улттăн,
Çирĕм ултă чăн-чăн коммунар.

1927. Баку — Шупашкар

## ПУШКИНПА КАЛАÇНИ

Аван-и, Пушкин!
Кăшт чăрмантарам-ха,
Кăшт çеç...
Эп Маяковски пек шух мар.
Сăввăмсенче ман питĕ çирĕп рамккă,
Сасартăках пулмасть
Унтан тухма.

Сире курмасăр таврăнас килмерĕ,
Курсассăн —
Калаçмасăр чăтас çук.
Çапла ĕнтĕ сăмах çӳпçин манерĕ,

Чĕлхе тени вĕт пирĕн —
Услам çук.
Çăпатапа мана аплах та мар та,
Хай, как калас,
Пырать-тĕр чăваша.
Юнашарах эп сирĕнпе ак лартăм
Йĕркелемешкĕн хамăн шухăша.

Хăш чух пĕчĕк пуçрах вĕт
Пысăк шухăш,
Теприн —
Пукан пек пуçĕ те ухмах.
Эсир ак пулнă тет
Пăртакçă шухă,
Çапах вĕт
Гени шутĕнчен тухман.

Раççей сире
Çĕр çул ытла вуларĕ.
Тен, малашне юлмăр манăçа.
Ахалĕн мар
Мускавăн Тверь бульварĕ
Сире кун пек
Мăн вырăн панă çав.

Чăнах та,
Сивĕ хĕлтĕр-халтăр пронсă
Чĕртмест пĕр сӳннĕ чĕрене калла.
Ăна хăвăр та калăттăрччĕ:
«Просă»,
Анчах мĕскер тăван,
Йăли çапла.

Тăратăр акă...
Куçăрсем салхулă,
Хĕрлĕ хăмач йăмăхтармасть пуль-çке?
Апла пулсан вара
Питрех те кулă,
Мĕншĕн тесен
Эп хам хĕрлĕ çеçке.

Эп хам
Çав юнлă тĕс çĕнтернĕ хыççăн
Чухла пуçларăм хурапа шурра.

Ай-ай асапчӗ касăлмашкăн выççăн,
Сăхха персе
Чӗнсе илтми Турра!

«Çӗрӗк чăпта,
Ваççили Ванăч,
Суккăр» —
Çапла кăначчӗ вӗт пире ӗлӗк.
Пулман-тăр тӗнчере,
Пулас та çук-тăр
Чăваш пек тӳсекен мăшкăл-элек.

Хăмач хăтарчӗ,
Çавăнпа тăванăн
Мускав та халь пăхать пире килсен.
Анчах сире калас килет-ха манăн,
Калас килет-ха урăххи çинчен.

Леш, сирӗн тусăр,
Çăмăлттай е гени...
Мӗнлеччӗ-ха ун ячӗ
Маннă эп...
Апла иккен,
Онекӗн,
Хай Евгени,
Çав улпутран
Эп питӗ тӗлӗнеп.

Мӗншӗн тӗнче çути сая ярас-ши?
Театтăр,
Бал,
Хӗрарăм та...
Дуел.
Тата туснех тӗллет вăл çӗр çăтасшӗ,
Ну, Ленски хăть поэт,
Çапах та шел.

Пэтăн юнӗ
Пит вӗрет тееççӗ,
Чăтма пултарайман вăл, çамрăкскер.
Ак, калăпăр,
Эп хам —
Чăваш поэчӗ —

Хĕр сивĕнсен
Тен, эп те калăп:
Пер!

Вара мана та
Пульă тивмелле тĕр,
Кăна мĕнле çĕн пурнăçпа çыхар?
(Хĕр çук та-ха, сăпатлăхшăн илетпĕр,
Хĕрпе аппаланма пушах та мар.)

Хĕрсем халь наркăмăш пекех-ха маншăн,
Вĕсемсĕрех
Хыçран хăйăр юхать.
Чĕре ан сӳнтĕр те,
Поэзи, ан шăн, —
Ытти пулать,
Ытти вăл чепухха.

Чăнах та,
Çыркаларăмăр пăртакçă:
Савни...
Элеги...
Добрый вечер,miss ...
Анчах мана вĕт халь те тăрăхлаççĕ —
Хурланчăклă эс, теççĕ, —
Пеççимис.

Çампа эп тарăхса
Веçех пăрахрăм,
Çырмастăп ним те,
Рятовой студент.
Сăввăмсенче тухать пулсан хĕрарăм —
Вăл ĕлĕкхи,
Ăна çырса унччен.

Юратăва юратакан сахал-мĕн,
Халь тракторсем кĕрлеççĕ сăвăра.
Чипер Татьянăр сирĕн
Начарланмĕ,
Анчах дуел...
Дуел пулмасть вара.

Ухмах пуçпа
Çапла эп шухăшлатăп:

Чупса тухас килсессĕн ку чухне —
Перу вĕçне
Пăртак çыртса кышла та,
Тĕрле плакат
Çĕршер йĕрке кунне!

Каçрăр, Пушкин...
Йĕрĕнтертĕм пулĕ.
Хăвăр пĕлетĕр —
Сăмахсем шатра.
Питрех те чухăн пирĕн чĕлхе мулĕ:
Пĕр вунă рифма çеç
Пĕтĕм штатра.

Сем-сем,
Чĕ-чĕ,
Ать-ать,
Тата ытти те
Арпа пекех тулаççĕ хăлхана.
Ятсем пайтах,
Словарь тума та çитĕ,
Анчах усси —
Бӳтшет хуни кăна.

Çаплах, бӳтшет.
Вăл пирĕн халь патшалăх,
Патшалăх мар...
Ну, калăпăр, мĕнле?
Мăн Атăл хĕрринче
Пурнать пĕр халăх,
Вăл ирĕк...
Ахтономи темелле.

Çав Атăл хĕрринчен килсе те эпĕ
Сума сумашкăн вырăс хисепне.
Пулса,
Пулса чăвашăн та хисепĕ...
Онекĕн пек те мар
Йĕртет Сетнер.

Анчах хăйне манаç,
Тăпри ун сивĕ,
Мĕскĕн...
Вăл юлчĕ Пушкăрт çĕрĕнчех.

Теприн çине
Украйна çĕрĕ-шывĕ
Лартса ӳстернĕ хурлăхлă чечек.

Çавсем пулсан
Кулянмăттăмăр эпĕр,
Чĕррисенче çукрах-ха пархатар.
Чăнах та,
Пит нумайййăн çитĕнетпĕр,
Тен, пулĕ малашне вăл, —
Кăшт тăхтар.

Ахалĕн мар çулсем шыратпăр вирлĕ,
Хорей те,
Ямп та,
Тактĕл те каять.
Тата пире
Пĕр критĕк пекки кирлĕ,
Унта та пур пек туйăнать халь ят.

Малтан анчах активнĕ татăк тутлă.
Вĕт уншăн выçă ытларах çунан.
Çампа ялан
Вĕсен ятне эп шутлăп,
Çампа сире те
Юратап чунтан.

Хама кура çитет пуль,
Сывă пулăр!
Чăваш çинчен мĕнех калас тата
Ĕлĕк-авал
Ак пулнă тет пĕр пулхăр,
Леш ылттăн уртасем...
Вот это — да.

Анчах ăна
Калатăр Комиссарăв,
Михал Петрович çыртăр ун çинчен.
Мана
Пĕрех хăюллăха каçарăр.
Сыв пулăр
Хам сире çывхариччен.

1928

## СОНА

Вĕсем тăваттăн чарăнчĕç:
Иосиф Нил — шутник еврей,
Оленин — вырăс, Хай — метис,
Ертсе пыран лопарь — Морей.

Паян ирпе чип-чиперех
Шăнса шартлатрĕ градусник.
Пушанчĕ спирт, пĕтрĕ эрех,
Йытсем те начарланчĕç пит.

Йытсем те ырханланчĕç те,
Апат та саххалланчĕ-тĕр.
Консервă, аш пĕтет ĕнтĕ,
Анчах инçе çул тытнă çĕр.

Калла кайма тата инçе:
Çурма çултан иртсе вĕсем...
Çапла вара хир варринче
Канма тăрать тăват этем.

Пĕлĕт çинче ик-виç хĕвел
Юпа пек тăсăлса тăраççĕ.
Анчах ăшă памаççĕ, шел.
Хĕвелĕ те кунта пăртан-çке.

Пĕр шурă юр, пĕр вилĕ кĕрт —
Умра, хыçра, йĕри тавра
Ним сас та çук, шăпăрт-шăпăрт.
Чĕлхесĕр шартлама тăрать.

* * *

Çынсем ӳпле майларĕçĕ,
Йытсем юра чавса выртаççĕ.
Ăшă тĕтĕм тулан брезент
Вĕсемшĕн маррине чухлаççĕ.

Вăрăм çăмлă çемçе тирсем
Çара этемшĕн сĕвĕнеççĕ.
Çакна пĕлеççĕ-тĕр вĕсем,
Пĕлсе, сиссе ӳпкелемеççĕ.

Пират — малта пыран ертӳçĕ.
Вăл, сакăр йытă ячĕпе,
Морей сăнне сăнаса хучĕ:
Виç кун ĕнтĕ каçпа-ирпе

Лопарь шăннă пулла касса
Валеçнĕ кӳлнĕ йытсене.
Çапах та тепĕр мăн сасса
Мантараймасть Пират хăйне.

Çав сасă халь нумай чĕнмест,
Пăхмасть çав çын йытсем çине.
Анчах Пират ĕненеймест
Хуçа Оленин маррине.

Вăл унăн йытă шухăшпе,
Сăнамалла çапла парать.
Çампа пăртак шур куçĕпе
Пăхса илет вăл лопаре.

Ĕнер касман пуллах унтан
Туртса илсеччĕ вăл пĕрре.
Морей патакĕ пит тăн-тăн
Лекет иккен ӳте-тире.

Паян та ак çав ватскерех
Валеçрĕ йытсене апат.
Хуçа тухмасть те ӳплерен...
Йăлтах хуйха ӳкет Пират.

Анчах лопарь кĕрсе кайсан,
Тĕлĕнмелле ĕç турĕ йытă:
Сасартăк вăл пуçне йăтса
Чунтан-вартан, ӳпкевлĕн, хытă

Уласа ячĕ те пĕрре,
Пулла хыпса, утса кăна
Ӳпленелле илсе кĕрет,
Куçпа шырать Оленина.

Пăхса илет Оленин: «Ну?
Мĕскер эс, тусăм, вăхăтсăр?
Çитет сире ачашлану,
Çăмăр вăрăм вĕт-ха, чăтăр.

Мĕншĕн çиместĕн? Ак тата!
Мĕнпе тăрантăн? Ну, кала...»
Ачашласа вăл Пирата
Хăлхи хыçне сăтăркалать.

Пират, пулла пăрахрĕ те,
Элеклĕн йăнăшса илсе,
Пӳне çӳçеннĕн чĕтретет
Этемĕн кăмăлне сиссе.

Унтан вăл ачашлан алла
Тав тунăн çуласа илет,
Вара хаваслăн каялла
Тухса юртать пуллипеле.

* * *

..........................................

«Çынна никам та йытă пек
Юратаймасть çак çĕршывра» —
Тет Нил кăшт хурлă сассипе,
Чĕлĕм тивертнĕ хушăра.

«Никам та, нимĕн те. Ан ман:
Пăлан та çитеймест йытта.
Çын асапне мĕн авалтан
Кунта пĕр йытă çех йăтать.

Чĕлхи кăна çук мĕскĕнĕн,
Пурне те ăнланать, пĕлет.
Анчах мĕскершĕн-ха, мĕншĕн
Вăл кĕрешет çынпа пĕрле?

Çак утмăл çичĕ градусра
Мĕншĕн çӳрес ун пирĕнпе?..
Вĕрет, Морей, чейне часрах,
Ман хырăм тирĕ кив пим пек».

— Сана ку Хура тинĕс мар-им? —
Тет Хай, сайра шăлне йĕрсе:
— Çук, ман шутпа... чипер хĕрарăм
Чи шанчăкли... — тет куç хĕссе.

«А савмасассăн?» — тет Оленин.
— Тата аван, — тет Хай, — пĕрле
Çанталăк крепăçне илетĕн.
Кайран... Джек Лондон евĕрлех...

* * *

Лопарь Морей сенкер пăра
Вĕттĕн ката-ката ярать.
Хуран чашланă хушăра
Çакна такмакласа парать.

Сире эп пит нумай тăнларăм.
Ăслă сăмахсемех илтеп.
Хĕрарăм тенĕрен... Хĕрарăм —
Чăн-чăн хăватлă вăй пуль теп...

Каланăччĕ-ши эп сире
Атте ман вырăс пулнине?
Пĕлтернĕччĕ-ши — ĕмĕре,
Çак пăрлă тинĕс пуллине

Йытсем валли касса çеç мар,
Кăшт урăхла та ирттерме
Пикеннĕ яш шухăшăма?
Кăмăл тусамăр итлеме...

... Нумай пулать ĕнтĕ вăл халь.
Кун-çул пайтах чĕрчун вĕлерчĕ.
Ун чух çав сив çанталăка
Сайра йĕлтĕр пырса кĕретчĕ.

Пĕрре, тĕтреллĕ ирхине,
Тӳлен тытакансем патне
Эп тухрăм тинĕс хĕррине —
Пĕлместĕп халь мĕскершĕнне.

Атте тӳлен хуçи пулса,
Тен çавăн юнĕ чĕннĕ-тĕр...
Пăхатăп — урнă пек хуса
Чукмарпала çӳрет пĕр хĕр.

Пĕр çĕр çинчен теприн çине
Кушак пек çăмăллăн сикет.
Элес-мелес тӳленсене
Пĕрре çапать те — минретет.

Хăюлăх, меллĕх, çирĕп вăй
Мана пит килĕшрĕ хĕрте.
Кĕске кĕрĕкпелеччĕ хăй —
Чăрмавсăр, чух тумтирĕ те.

Тӳлень тытакансем ăна
Сона тесе чĕнеççĕ-мĕн.
Вĕсен чĕлхипеле Сона —
«Таса» тени пулать иккен.

Хăйсем мĕнле йăх иккенне
Халичченех пĕлместĕп эп.
Анчах Сона хĕр пеккине
Курмарăм урăх вĕсемпе.

Вăл урăх йăх пуль терĕм эп.
Пĕр кун тухап, ик кун, эрне...
Ман хутăш юнлă чĕреме
Туртать хĕр тинĕс хĕррине.

Ак сирĕн шурă куркăра
Хăш чух кăвар çути ӳкет.
Ун пичĕ çав сăнарлăрах,
Куç харшисем авмак, çӳхе...

(Морей пăра хыпса пăхать.)
... Эп те тӳлень тытма кĕреп.
Тӳленçĕсен пит аякка
Çын ямалла пулать пĕрре.

Шăпа тытаççĕ этемсем.
Эп пултăм ирĕккĕн кайма.
Нумайĕш пăхрĕç тĕлĕнсе...
«Пĕччен сахал. Тата кама?

Пĕри вилсен, тепри чĕрĕ.
Асту, пĕрре те хăнана

Каймастăн эсĕ çав çĕре», —
Тесе витерчĕçĕ мана.

Хампа эп ыйтрăм Сонана.
Çакна илтсессĕнех пĕри,
Хавшак та хăлтăскер кăна,
Ĕревĕçленчĕ çав тери:

«Эп те каятăп!» — терĕ вăл.
Хăйĕн вăйне шанан этем
Ун пек каппайчăк çил-тăвăл
Нихçан та кăлармасть. Пĕлтĕм:

Ку хай, эсир каланă пек,
Пĕр тӳсĕмсĕр мăнтăр кăна.
Паллах, çав хулăнлăхĕпе
Ятне те панă — Такана...

Çапах та виççĕн кайрăмăр.
Калас пулать: Сонашăн эп
Укçа парсах тухса, — мăшăр
Пулать тесе ĕмĕтленеп.

Сона чĕнмерĕ нимĕн те.
Йытсем майларăмăр, çуна,
Çимеллисем-мĕнсем ĕнтĕ...
«Лар!» — терĕç. Ларчĕ ман çумма.

Инçе, инçе Тăварлă Кӳл.
Пĕр кун каян, ик кун, виç кун...
Таçта пĕтет сан тавлăку,
Таçта вĕçĕ-хĕрри çулун.

Никам хутне кĕмен хĕлле.
Çанталăк хытă, хальхи пек.
Йытсем валли йĕлтĕрпеле
Сукмак хыватпăр черетпе.

Вăрçать хай пирĕн Такана,
Вырта тăрать, мур, çемçешке.
Тапса тăраткалап çакна, —
Шăнса ан вилтĕр тетĕп-çке.

Çук, кайнăçемĕн хирĕçет:
«Йĕлтĕр ура çумне шăнать.
Мĕншĕн çак тивĕçсĕр ĕçе
Çыхлантăм-ши? — тет. — Камшăн, а?»

Сона чĕнмест-ха нимĕн те,
Ӳпкевлĕ сас та кăлармасть.
Эрне ытла çулта ĕнтĕ,
Калла май çук тин таврăнма.

Анчах апат пĕтсе килет,
Çул — йывăрланнăçем йывăр.
Малтан эпир каяс тĕле
Кун чухлĕ шутламарăмăр.

Мурта-и тен Тăварлă Кӳл.
Хĕвел ик-виç тĕлте пирки
Аташкаларăмăр та пуль,
Çулта пулать вăл ун пекки.

Йĕрет вĕт пирĕн Такана,
Арçын пуçпа ӳксе йĕрет:
Турттар эс çунапа ăна!
«Çук! — терĕ хай Сона пĕрре. —

Эпир ăна çак хир тăрăх
Ярăнтарма илсе килмен.
Ан тив, вăл юлтăр, вырттăрах,
Шăнса çăмăлтарах вилме.»

Çакна, хăй вилсе курнă пек,
Ĕнентерсе калать Сона.
«Юлташ — ялан юлташ, — теп эп, —
Епле хăварăн-ха ăна?»

Сона чĕнместь. Каятпăр шав.
Йытсем тӳнеççĕ выçăпа.
Вилсен те пăрахмастпăр çав:
Шăмми те, тирĕ те — апат.

Канмашкăн чарăнсан часах
Сона йыт ашĕ хатĕрлет.
Куллен пĕрер йыт тавăрса
Туха пуçлатпăр ирпеле.

Юлашкинчен тăвата чун
Тăрса юлаççĕ кӳлĕме.
Анчах шыв урлă kaçнă чух
Вĕсем те пулчĕç пăр айне.

Сона, умне шалçа тытса,
Kaçса каять йĕлтĕрпеле.
Эп, паструмккасене касса,
Çуна çине юлап тепле.

Таканана аран-аран,
Кантра-пăяв сыпса ярса,
Туртса кăлартăмăр шывран,
Ăшăткалатпăр сăтăрса.

Унтан пур пек апатсене
Виç пай туса пайларăмăр.
Сона кăшт пăхрĕ ман çине:
«Çук, — терĕ, — ку ĕç аван мар.

Çак халсăр пĕчĕк нянине
Апат пани халь усăсăр.
Тăварлă Кӳлĕ херрине
Çитес те çук вăл пурĕпĕр».

Эп тепĕр хут: çулти асап
Пурне те тивтĕр текелеп.
Ан тив, парар та уйăрса,
Хăй пайĕпе — хăть пуçхĕрлĕ...

Унччен те пулаймасть — Сона
Каш туртрĕ ман револьвере.
Сиксе чĕтрен Таканана
Вăл хушрĕ ăшăнма — лере...

Эп тĕлĕнеп. Анчах ăшра
Ӳпкевĕм çук хĕре, пĕлеп.
Сона лăпках пăхать куçран:
«Каяр, — тет, — ан пуççап вилле».

(Калавçă хучĕ пурттине.
Итлекенсем, чĕлĕм чĕртсе,
Нăкрах хĕстерчĕç пĕр-пĕрне
Ăшă тирсем ăшне кĕрсе.

Ӳпле тӳпи тĕтĕмпеле
Йĕпеннĕн пасарса тăрать.
Кăвак тĕтĕмпеле пĕрле
Морей сăмахĕ хăпарать.)

... Каятпăр. Эп пуртта йăтап.
Сона çĕклерĕ кĕрĕке.
Виç пайлă тунă апата
Хайхи валеçрĕмĕр икке.

Анчах тухсах пырать апат,
Çывхарăнмасть Тăварлă Кӳл.
Тăвата путнă йытăпа
Эрне пурăнаттăмăрччĕ пуль

Тесе утатпăр хуйхăрса.
Кунне-çĕрне мантăмăр:
Тăр кăнтăрла та вут хурса
Канма тăра пуçларăмăр.

Кайсан-кайсан, юлашкинчен
Тĕл пултăмăр пĕр арçынна.
Этем кăштах шăнса вилмен,
Çитменнине, вăл выçăхнă.

Аллине тăсса, темле
Чĕлхесĕр евĕр кĕленсе,
Аран-аран вут патнелле
Çывхарчĕ вăл упаленсе.

Сона чăрр! пăхрĕ ман çине,
Нихçан капла пăхманччĕ вăл:
Çак выçăхнă çынна çиме
Парассăн çуталчĕ кăмăл.

«Парар-и çак çынна çиме?» —
Хыпар пĕлтерĕ терĕм эп.
Сона каллех пĕр ун çине,
Пĕр ман çине пăхать темме.

Унтан вăл аллипе сĕлттерĕ:
«Çук, памăпăр ăна апат,
Тăварлă Кӳл инçе-ха», — терĕ
Тĕреклĕ, çирĕп сасăпа.

Çын юлчĕ — халсăр, пĕр пĕччен...
Çанталăкпа кĕрешнĕскер,
Паллах, вăл выçлăх аллинчен
Чĕррĕн хăтăлаймарĕ-тĕр...

Утатпăр малалла çаплах.
Ĕмĕтĕмĕр — Тăварлă Кӳл.
Апат йăлт пĕтрĕ. Выçăллах
Тăрса сĕнккетпĕр ак пĕр кун.

Сона малтан урасăрланчĕ,
Пырать-пырать те лап ӳкет.
Манра та нумай мар пек шанчăк,
Ман ӳтĕм-тирĕм те пӳхет.

Ак Морж Шăлĕ текен скала.
Кунтан Тăварлă Кӳл патне
Виç кун каяççĕ йытпала.
Эпир çуран. Вăй-хал пĕтнĕ.

Пăлан Утти тĕлне çитсен
Хĕрарăм ӳкрĕ те — тăмасть.
Аран сирен тутисенчен
Илтетĕп пăшăлтатнă сас.

Хăлхапала выртса тăнлап:
«Арçыннăм! — терĕ вăл мана. —
Ман çулăн вĕçĕ çакăнта.
Сан кайтăр маларан мала...

Сан сивĕ чĕрӳнте Сонашăн
Йăва пулмарĕ ырă чух.
Ăна асаппалан сăнасшăн
Эс илтĕн йывăр, вăрăм çул.

Калам сана, Морей: малтан,
Эс маншăн ылтăн парсанах,
Чĕре сан май выртмарĕ ман,
Кӳрентĕм эп ун чух сана.

Анчах арçын хăй йыттине
Уссишĕн хĕрхенет, куран.
Çаплах эс те Сона çине
Ăшшăн пăхрăн хăйне кура.

Сан шухăшу ăслă, Морей,
Ху эсĕ витĕмлĕ арçын.
Çампа ман хуйхăллă чĕре
Сана сăмахсăр парăнчĕ...

Çуллахи кун, уяр чухне,
Йĕри-тавра хĕвел куран.
Çапла эс те Сона куçне
Хĕвелĕн курăнтăн кайран.

Вара ун ирĕлчĕ пăрĕ.
Сона ялан сана итлерĕ:
Йĕр такăрлатрĕ, йыт пăхрĕ,
Нихçан та «ывăнтăм» темерĕ.

Халь ун йĕрĕ пĕтрĕ ĕнтĕ,
Паян кунтан пĕччен эс пырăн.
Çавах сан сивĕ чĕрӳнте
Пулмарĕ маншăн ăшă вырăн...»

— Чăнах, Сона, чăн, — тетĕп эп, —
Пит сивĕ пулчĕ ман чĕре.
Анчах паян эп ирĕлеп,
Сан асапу мана ирет.

Хĕрарăмăн юратуне
Ăнласа çитрĕм эпĕ, — теп...
Сонан кӳтсех пыран пӳне
Чăмăртаса кĕрĕк витеп.

«Эп савăнтăм» — тет Сона,
Пуçне хурать ман пуç çумне. —
«Итле, Морей, — тет вăл мана, —
Пĕрре эп, пĕчĕкçĕ чухне,

Хам ӳснĕ вăрманта ... лере...
Кил-йыш ухатана кайсан
Пĕччен юлсаттăм ӳплере
Тирсем çинче вăй выляса.

Сасартăк алăк умĕнче
— Уф! — терĕ пĕр хăмăр упа.
Унччен те пулмасть— пичче
Персе те çитрĕ сăнăпа.

Эп пит хăрарăм: пиччене
Упа пĕтĕркелет чикет,
Пĕр хăй пулать пичче айне,
Пĕр ун сăнни çине лекет.

Пиччен пит-куçĕ юн кăна,
Пӳрни — упа çăварĕнче.
Çапах та урнă упана,
Вăрçсан-вăрçсан, çĕнчех пичче...

Сăнарăн-ши, арçыннăм, эс,
Хай эпĕр чĕртнĕ вут патне
Пырса кĕленнĕ этеме?
Сăнарăн-и ун сăн питне?

Сăн-пичĕ çĕвĕллĕччĕ ун.
Сăнарăн-и аллисене?
Хăрах пӳрни çитместчĕ ун.
Тымарĕ çеçчĕ пуç пӳрнен...

Вăл ман пиччеччĕ. Эп ăна
Апат памарăм выçă чух.
Вăл манăн пурнăça çăлнă,
Унтан хакли вĕт ним те çук...»

— Чăнах, Сона, чăн, — тетĕп эп, —
Пĕр пурнăç хаклă çĕр çинче...
Сисетĕп хам: пит ерипе
Тапать чĕри ун кăкринче.

Вара вăл ман алла илсе
Хăй хӳнелле чикет хуллен:
«Арçыннăм, — тет, — çакна çисе
Эс çитĕн Тăварлă Кӳле...»

Шанатри ватă пуçăма? —
Йĕкĕр чăмăр пек хутаçпа
Аш тыттарать мана Сона,
Тӳсе тултарнă типĕ аш.

Тин чухласа илетĕп эп
Мĕншĕн вăл час ывăннине...
— Çук. Манăн йĕрĕм пĕттĕр, теп.
Тăварлă Кӳл — çăва çине...

«Морей, — тет пит хуллен хӗрарӑм, —
Ан ултала хӑвна халь тин.
Сана эп паттӑррӑн кураттӑм,
Хӑҫан та паттӑр пул эппин...

Ҫук, ан хӑвар ман кӑмӑла,
Шансах вилес килет сана.
Малтан мала, малтан мала
Ҫулу сан кайтӑр яланах.

Сан умӑнта ман пӗтрӗ парӑм,
Ак сывлӑш та пӗтет ӗнтӗ...
Нумай пуян, чипер хӗрарӑм
Тӗлпулӑн эс ӗмӗрӳнте.

Анчах пӗри те Сона чухлӗ
Юратмӗҫӗ вӗсем сана...»
Асап тумламӗ — вил куҫҫулӗ
Тухса шӑнса хытать Сонан...

(Морей чей хуранне вӗҫерчӗ.)
...Тем пысӑккӑш ҫак юрату!
Вӗҫӗ-хӗррисӗр унӑн терчӗ,
Хӑватлӑх та, чӑтӑм та ку.

Пӗрварлӑ выҫӑ пиччӗшне
Апат памарӗ ҫул ҫинче.
Вӑл ҫеҫ те мар — хӑй ҫимӗҫне
Татса хӑварчӗ хӑйӗнчен.

Ҫапла: телей уҫҫи — асап.
Ҫапла Пӑлан Утти панче
Пуҫ хунӑ хӗр Сона — Таса...
(Калавҫӑ шӑппӑн чарӑнчӗ.)

* * *

Йытсем, теме сиссе, улаҫҫӗ.
Пасарнӑ, ҫӑмламас Пират
Ӳпленелле юртса пырать.
«Мӗн пулнӑ-ши?» Ҫынсем тухаҫҫӗ.

Ҫӗрле. Сип-сивӗ ҫӑлтӑрсем
Салхун ҫунаҫҫӗ тӳпере.

Кăвак хуппа чĕтрентерсе
Çанталăка «сăн ӳкерет».

Малтан ак пĕр ик-виç тĕлте
Шевле пек кĕренрех хумсем,
Пĕр сасăсăр, шăппăн хӳсе
Сăрлаççĕ хăмăр пĕлĕте.

Унтан шăп полюс тĕлĕнчен
Тем пысăкăш çавра хапха
Кăваккăн, симĕссĕн, тĕрлĕн
Карса илет çанталăка.

Çак аслă асамат кĕперĕ,
Çак ĕмĕрхи тĕнче илемĕ —
Миçе курсан та — тĕлĕнтерĕ,
Никам та «йăлăхтарчĕ» темĕ.

1929

## ИШШАК ВЕРТИ

«...Хĕвел çӳлте-ха,
Çутă пур.
Хĕрӳллĕ пирĕн вуттăмăр...
Те савăнăç,
Те пысăк хур
Курма эпир тĕл пултăмăр?..

Ăçтан килни,
Ăçтан кайни
Мана сан кирлĕ мар питех.

Мĕн тĕпчени,
Мĕн шырани —
Çакна пĕлсессĕн те çитет.
Еувве, йĕкĕт.
Эп юлташла
Çакна пĕлтерĕп хам çинчен...
(Пăрах-ха эс кăранташна,
Итле пăлав ĕлкĕриччен.)
...Науххана арăкĕнчен

Ăвата тавлăк уттинче
Нумай пулмасть пĕр пит чечен
Аул ларатчĕ сăрт çинче.
Ун ячĕ Сууксу-Тăпа.
Вунсакăр кипитке, тĕркмен
Текке хăварнă йăлапа
Пурнатчĕç лăпкăн,
Ерипен.

Атте ман — Мирсеит-Рахман —
Тăвата арăмпа тăрса,
Тăваттăшне те пăрахма
Шут тунă пулнă тарăхса.

Мĕншĕн тетни?
Мĕншĕн тесен —
Кĕтӳ ача-пăча çинче
Пĕр ывăл та пулман вĕсен
Мана туса ĕлкĕриччен.
Каçсеренех мĕскĕн атте
Çĕрле кипиткерен тухса
Кĕлтунă, —
Ывăл ыйтнă тет
Таса Мекке енне пăхса.

Вара эп курнă çут тĕнче,
Анне мана çуратсанах
Ашак кĕçеннĕ картинче,
Çампа чи малтанхи сăмах —
Телей кӳрет-и вăл,
Терт-и
«Ишшак» килсе кĕрет пуçа,
Çампа кĕскен И ш ш а к  В е р т и
Тесе чĕннĕ ман пурнăçа.
Еувве, йĕкĕт:
Ишшак Верти
Пулать ман ятăм
Хам тĕркмен.
Аттен пĕртен-пĕр ывăлĕ
Пурнаттăм лăпкăн,
Ерипен.
Анчах ăслă çынсем мана
Тимлеччĕç пит хивре ĕçе.
— Ак килĕ ахăрсамана,

Çĕр те чĕтренĕ, — тетчĕçĕ.
Мана калаччĕçĕ:
«Ан ман —
Сана çав самана чĕнĕ.
Тĕлĕнмелле ăрăмпалан
Çуралтăн эсĕ тĕнчене.
«Ăшранах сылтăм чышкуна
Чăмăртаса тухсаттăн эс.
Мĕне пĕлтерĕ ку?»
Çакна
Нумайăш тăрăшрĕç пĕлме.
«Тĕрлĕ пулать паллийĕ ун.
Пăхаççĕ:
Ывăç тĕпĕнче
Пĕвер пек кĕвĕлнĕ чĕр юн...
Пĕтĕм аул йăлт тĕлĕнчĕ.
«Мĕнпур асамăç-юмăçă
Пуçтарăнчĕç сана курма.
— Тем чухлĕ юн тăкĕ çак çын,
Вăл çуралса хаси пулма...
— Хăй Чăнкăсхан çапла юнпа
Çуралнă, —
Терĕç этемсем.
Мухтавлă пурнăç,
Çут юпа
Хăварчĕçĕ сана сĕнсе...»
Çапла калаччĕçĕ мана.
— Хаси пул, —
Теччĕç,
Тыт хĕçе!
Ак килĕ ахăрсамана,
Çĕр те чĕтренĕ... —
Теччĕçĕ.

Пĕлместĕп:
Ахăрсамана-и,
Е урăхла пулчи-и ун ячĕ,
Анчах пĕрре —
Калам сана эп —
Чăнах темскер кĕрлесе анчĕ.

Пĕлместĕп:
Чăн чĕтрени, тен, çĕр, —

Вăл пĕр тĕве курпунĕ мар вĕт.
Анчах Науххана
(Мĕншĕн тĕр?)
Хăй çыранне хăй татса кайрĕ.

Ăрамасан таврашĕччĕ
Куран вăрçма хушмасть çав уйăх.
Анчах ман халăх кăшкăрчĕ:
— Хасавата!!! —
Пырса ан çулăх...
Каланă:
«Вăхăт çитĕ тенĕ, —
Çав тинĕс пăс пулса çĕкленĕ,
Ăшши — пăр пулĕ...»
Тенĕ.
Чăн.
Чăнах та çутçанталăк халĕ
Çав майлă çаврăнчĕ-и тен.
Ăрамасан чухне ахаль-и
Мăссăльмана хăваç килтен...

Эп те çĕклерĕм яттакан.
Аулăмпа сывпуллашап.
Тухса вĕçтертĕм аттака.
Синкерĕн тулхăрать лашам...
Вĕçĕ-хĕррисĕр юланут:
Хĕçе хĕç,
Ăмăра ăмăр...
Лашу ӳксессĕн çуран ут,
Калла чакма ан асăнăр.

— Хасаватра вилекене
«Вăл çук ĕнтĕ»
Тесе ан калăр:
Ун чунĕ Турăпа пĕрле,
Ун ĕмĕрлĕх çĕршывĕ капăр...—
Çапла хавхалатать пире
Çар пуçлăхĕ Енвер Пашша...
Эп тĕкĕнмен те чĕлпĕре
Тăп чарăнчĕ айри лаша.
Часрах сикеп йĕнер çинчен.
Лашам пуçне силлерĕ те
Эп тепĕр ут утланиччен

Вырта парать мĕскĕн çĕрте.
Хуса пĕçернĕ хăмăр юн
Сăрларĕ типĕ хăйăра.
Тепре чĕтрет те ăмри ун
Выртса юлать шăрăх уйра.
Эп тепĕр хут асса каяп:
— Ман хыççăн Сууксу-Тăпа! —
Тесе мĕнпур чăрсăр вăя
Пухса вĕçеп çĕн утăмпа.
Енвер Пашша çакна сăнарĕ,
Ал сулчĕ çывăх çыннине:
— Ак çак сана мăссăльман мар-и?!
Тесе кăтартрĕ ман енне.
Еувве, йĕкĕт,
Çапла кăтартрĕ.
Анчах унччен те пулаймасть —
Тăшманăн çарĕнчен пĕри
Ман ут пуçне ярса тытать те,
Çилленнĕ, хаярланнă сас...
Пăхатăп хам кукка Керим!
Мĕскершĕн çапăçатăн? — тет, —
Хаси пулас килчим тата?
Кама хаяр сунатăн?! — тет...
Хам та пĕлместĕп,
Тупата.
Пире каланă:
Хасават,
Кĕфĕрсене турамалла...
Çăлтăр тăхăннă Асхапат,
Унта çур уйăх лартмалла...

Пăхатăп та —
Керимăн та
Калпак çинче хĕрлĕ çăлтăр.
Пăхатăп та —
Лере, малта
Вĕççĕр тĕркмен-мĕн,
Çĕр çăттăр!

Тăратпăр икĕ мăссăльман —
Хĕçе хĕç,
Ăмăра ăмăр.
Ик хурăнташ,

Тĕпрен тăван,
Тăшман пулса тĕл пултăмăр!

— Пасмач! —
Тет хай кукка мана. —
Аçу сухаллине ан кур,
Мăшру сан пултăр тивана,
Ача ан тутăр!.. — тет.
Мĕнпур
Ылханпала ылханчĕ те,
Çиллес çунан сăн-сăпатне
Хăрах аяккăн пăрчĕ те,
Кустарчĕ хĕрлисем патне.
Еувве, йĕкĕт,
Хĕрлĕ хескер
Пулса кукка ман,
Хам — пасмач...

Вăрçă та пĕтрĕ хайхискер.
Çеçен хирсем те лăпланаç.
Эп таврăнап аулăмпа
Анчах ман Сууксу-Тăпа
Йăлтах пăрахнă пурăнма
Текке хăварнă йăлапа.
Аттен пĕртен-пĕр ывăль эп
Шыратăп килĕм-çуртăма.
Пăхатăп та
Йăлт тĕлĕнеп:
Аулăмра çук çуртăм ман!..

Çапла пулса иккен ĕçсем:
Енвер Пашша çĕнтереймен,
Хаси ялавĕпе вĕçсе
Ытла нумай та çӳреймен.

Таçта лере,
Мускав енче,
Çĕнĕ хаси çуралнă-мĕн.
Çавна итленĕ-мĕн тĕнче,
Çав паттăрăн ялавĕшĕн
Пире аулсенчен йăлтах,
Кил-çуртсене кăмрăк туса,
Пасмач,

Ултавçă,
Вăр-хурах
Тесе кăларнă-мĕн хуса.

Çав паттăр пит инçе тăнă;
Çапах,
Вăл сасă парсанах,
Мĕн пурĕ пăхăннă ăна,
Çунатлă пулнă ун сăмах.
— Тĕнче нихçан та паттăртан
Тулман, —
Тет ăслă калаçу.
Анчах çав паттăрпа пĕр тан
Хальччен пулман,
Пулас та çук.
Çынсем ăна хисеплесе
Нумайăшĕ
«Папай, пичче, —
Ленин оглы-Темир» тесе
Чĕнеççĕ имĕш çĕр çинче...

1930 (?)

## ЮЛАШКИ ПĂЛХАР

Ульяновск. Гончаров урамĕ.
Хай шеппĕн пурăнăç вĕрет.
Анчах епле хăшин хура-мĕн
Шухăшĕсем çак çутă тĕнчере!

Ак кăптăр-каптăр хăна килĕ.
Пĕчченлĕ пӳлĕм. Пысăк мар.
Кам çак этем? Ăçтан, ма килнĕ?
Кăна калаяс çук швейцар.

«Мĕнпур телейсĕрлĕх этемĕн
Этем килте пĕччен юлма
Пултараймантан килет», — тенĕ
Пĕр нимĕç[1]. Çавăнтан курмах
Тен, манăн вата пăссашир та
Вырнаçнă пуль çак пӳлĕме.
Сасартăк тен пур ырлăх çитĕ
Юна хушсассăн... сӳлеме[2].

Старик пĕр кĕленче кăларчĕ:
Хĕреслĕ икĕ шăмă та
Этемĕн пуç чашки...[3] Хăвачĕ
Çителĕклĕ пек. Пăлхатать.

Тĕлĕнмелле-çке, пĕтĕм пурнăç
Çак пĕчĕкçĕ кĕленчере.
Сехет... Минут... Куççем те курмĕç,
Хăлха та илтмĕ. Лĕнчĕрех!

Анчах этем питваскамарĕ
Йăхсем хăйне ăнланмасран.
Çак çырăва «Кĕмĕл Пăлхари»[4]
Ăшне хăварчĕ вăл малтан:

«Пурне те»[5] темĕп сăвăç пек,
Тăван ăрăвăма калтăп:
Çак манăн вырăнсăр ĕçпе
Ан айăплăрччĕ никама та.

Ан шухăшлăр: темле типшар[6]
Тăвать тесе, е харакири[7].
Эп ытлашши, эп кирлĕ мар —
Ак ман сăлтавăм, манăн чирĕм.

Эп — пултарулăхпа илем,
Ăслăлăхпа чăнлăх этемĕ —
Епле эп шчут туртса вилем[8]
Пĕр-пĕр кĕнцелерте кичемлĕн?

Çук! Кашниннех çак тĕнчере,
Хăйне кура пулин те, ĕмĕт.
Идей. Е эп пĕлсех, чĕррĕн
Ăна наркăмăшлан сĕт ĕмĕп?

Сире хавхалантаракан
Чăрсăрлăхăр,васкавăр[9] сирĕн —
Вăл ют мана, вăл вырнаçмасть...
Ăна ăс мар, чĕрем ман сирĕ.

Ан шухăшлăр: хавшак мещен,
Пĕччен интеллигент тесе те.
Кун-çул мана туман... черчен,
Эп хамăн çăлтăршăн тӳсетĕп.

Эпир чăваш интеллигенцин
Пĕрремĕш сыпăкĕ, Чĕмпĕр,
Кирек мĕнле иккĕленсен те —
Хура çĕр чунĕччĕ эпир.

Епле эсир, хальхи пур çамрăк,
Мухтавлă Кушкă çыннине[10]
Пĕлменскерсем, епле каçарăр!
Епле ăнланăр пирĕнне!

Нихçан та вĕт эсир, нихçан та
Эпир туйнине туяс çук.
Эй, манайми сăваплă вата!
Сан хыт тую та чуна çу[11].

Эпир çунса, хыпса çунсаччĕ
Çав харсăр арслана пула,
Управлă пирĕшти çуначĕ
Пире тăнишĕн хуралла.

Пире вăл куç пăврĕ, çав паттăр:
Кĕл пулăттăн вута кĕрсе
«Çак халăх начар мар, хăпартăр!»
Тесе вĕрентнĕ тапхăрсем.

Тивлетлĕ пĕр поэт каларăш
ЧĂВАШ ТĔНЧИ ÇЫВХАРНĂ ЧУХ
Тĕтрелĕх витĕр ун маларăш
Хĕвеллине туйсассăн чун

Эп Галилей пекех пĕр шиксĕр
(Чĕрт вуттуна çунтар мана)
Çухраттăм пулĕ тĕшмĕш витĕр:
Çапах та çĕр çавăрăнать!..[12]

Вĕрентекенĕм! — тесшĕн эпĕ, —
Сан чапăшăн[13] тӳсме çăмăл.
Хавассăр хăть кун-çул хисепĕ —
Санран писеймĕ ман кăмăл.

Чĕмпĕр... Чăваш тӳпийĕн тепĕр
Çут çăлтăрĕ унта тивсеччĕ:
Хăçан куççульленмен-ши эпĕр
Нарспипеле пĕрле, пĕлесчĕ?

Ватти, вĕтти, вăйпиттийĕ —
Мĕнпурĕ парăннă ăна.
Вăл пирĕн тĕрĕс куç кĕски вĕт
Йăхăмăрта пĕрре кăна.

Ман куçăм умĕнче вăл халĕ —
Пăхсан раснах та мар, анчах
Ялан çав шухăшлă, хавхаллă,
Пĕшкĕнерех çӳрен ача[14].

Пĕр çиччĕре чухне хăй, ахăр,
Сентти вăл пулнă, çутă чун.
Куçсем йĕрсен те тапхăр-тапхăр,
Й ă в а ш  т у т и йăл кулнă ун.

Вунçиччĕре вăл хăй Сетнерччĕ!
Кăварлă çепĕç кăввипе
Вăл чул чĕресене йĕртетчĕ,
Вăл тимĕр татрĕ чĕлхипе.

Британь музейĕнчи пĕр-пĕр
Историллĕ пăта та хаклă.
Ун пек пăта çеç мар эпир,
Ăна шантараканĕ — ак вăл!» —

Çапла каларĕ Кушкăсем,
Чĕтревлĕ аллипе хавассăн
Çыракана вăй-хал сĕнсе,
Малтан «Нарспи» итленĕ хыççăн.

Чĕмпĕр, ман мăнаçлă сăпкам,
Ман иккĕмĕш çуралăвăм!
Юлашки хут сана салам,
Юлашки хут кӳр аллуна...

Сĕве хĕррипеле кĕçĕр
Çӳрерĕм эп уткаласа.
Ч ă н л ă х çутти! Ширанă çĕр!
Сан кашни пусăму таса.

Вĕрентекенĕм çакăнта
Çĕре кĕме ĕмĕтленсе.
Эп куртăм ун склепне: пăнтăх,
Шăршланнă шыв... Эрешменсем...

Тăлăх ун ĕмĕрлĕх керменĕ
........................................
........................................
........................................
.....................тенĕ вăл ăна,
......................тенĕ ача чух.
Кайран пĕлнĕ: чăн-чăнах
Шӳтпе иртесле мар çав шух.

Кайран кулма пултарайман вăл.
Çĕмрен пек хушусем вĕçсе

Чуна чĕтретнĕ чух; Романов,
Керенский — пурте пĕр хĕçе
Çакланнă чух; ......................
Сасартăк ...............................
...............................ялкăшсан,
Çурса çĕре те пĕлĕте —
Ун чух ........................ сăмаха
Тепре асилнĕ вăл ăнласшăн.
Анчах туя шакка-шакка
Ылханнă çеç ...........................

Çук килĕшӳ. Çук, çук, ан ыйтăр:
ОТЦЫ И ДЕТИ, шăллăмсем!
Пулаймăпăр çав сирĕн йыттăр,
Сĕнккеймĕпĕр «пошол» тесен.

Эп хамăнне вăçлерĕм... Эй,
Пĕрер пĕрчĕн пуçтарнă шухăш!
Кама эс кӳрĕн-ши телей?
Мĕнле йăхсемшĕн пулăн тупăш?

Мĕнле ĕмĕр алли çак манăн
Сархайнă хутăмсем ăшне
Кĕрсе ман шухăша ăнланĕ?
Мĕнле тăпра-ши йышăнĕ
Эп акнă вăрлăха?.. Чăвашлăх!
Ĕмĕтĕмри Кĕмĕл Пăлхари!
Сан чаплăхна куллен, йăвашшăн
Вилĕмсĕрлен пĕр эпĕ мар-и?

Эп сан тасалăхна усратăп,
Чĕлхемĕре пĕр ăнлав

Пырса кĕрсессĕн те сасартăк
Кӳрентерет ман кăмăла.

«Р»па чăваш сăмах уçмастчĕ,
«О» унăн хăлхине касать:
..........................................
..........................................

..........................................
Çук! Кам чăваш чунне чухлать,
Кам ăнланать ăна, кам унăн
Йăлисене çултан çула
Сăнаса пынă, кам ăс-халĕ
Ĕмĕр çиттисене сирсе
Тĕпченĕ яланах — çав калĕ:
Чăвашшăн мар ку манирсем.

Епле сана эп кĕрекесĕр,
Сăрасăр курăп, халăхăм?
Епле хăна-вĕрле килсессĕн,
Кăлармăн эсĕ сар кăкшăм?

Епле халал çăкăр-тăварĕ
Ан пултăр санăн кăмăллă?
Епле ху кил-йышна хăварăн
.............................................

Епле туй-шыльăксăр, сурпансăр,
Пĕркенчĕксĕр эс юлăн-ши?
Хĕрсем çинче тухья курмасăр
Эс манăн мар, эс ют çĕршыв.

...............................................

Пайтах çулсем... Вĕрентекенĕм,
Гимнази тумĕпе чухнех,
Пĕрре тăван енне-мĕн кĕнĕ
Канма ярсассăн çуркунне.

Хĕрсем уяв каланă пулнă,
Килен ял-йыш[15] çавна илтсен
Арман çумне таянса юлнă
Тем кăмăл хуçăлнипелен.

Kaçкӳлмĕ пулнă. Чарнă ямшăк
Кĕтсе аптранă «улпута».
Лăпланаймасăр йĕнĕ яшăн
Пĕртен-пĕр ĕмĕт, пĕр тупа.

«Мăнтарăнсем! Епле чеченĕн,
Епле салхун янтрать юрри! —
Тесе йĕнĕ вĕрентекенĕм. —
Чăнах та хӳтлĕх çук-тăр-и?»

Хĕрсем шап-шурă тумлă пулнă,
Сассисене тытса чарса,
Пуç пĕшкĕртсе хăюсăр кулнă
Тӳмеллĕ каччă[16] çывхарсан.

«Эпир начар та халăх мар-çке,
Грексен Олимп вăййисем пек
Мана çав вăйă халлантарчĕ» —
Тесе вăл асилтерчĕ тек.

Тен, ĕмĕрех kaçхи çав сасă,
Хăй халăхпе чунне çыхса,
Ăна савмашкăн чарăнмасăр
Хистенĕ пуль гимназиста.

Пĕлетĕп: чăн советнĕк тейĕр,
Шантарм режимĕ, йăнăрал...[17]
Ах, яшлăх! «Çĕр тăварĕ — эпĕ»
Тесе пăсатра юнăра?

Юратупа чĕр курайманлăх
Пĕр мар-и? Кăна эп тахçан
Ним диаматсăр чухлап лайăх.
Вăл хытăччĕ. Хаярччĕ, чăн.

Анчах ӳпкелĕ-ши ун çарĕ
Йĕрсе камантласан[18] çав сас?
Пин шырлăх курни те kaçарĕ
Ăна пĕр ырлăхшăн савса.

Мана мĕскерле сас хистерĕ?
Тăван чăваш хăватлине,
Вăл вăйлине курасчĕ терĕм,
Ахах тăкрăм сысна умне...[19]

Авал Мекке[20] хулийĕнчен
Медина[21] тарнă Магомет-мĕн
Эп тартăм хамран хам. Пĕччен,
Ылханлă та камалсăр Демон.

Ак эп вилеп. Анчах хăрап-и?
Пуç сывă. Çук нимле антрав.
Цикута[22] астивсен Сократ[23] пек
Эп лăпкă çакă самантра.

Вăрах кун-çул сире! Сыв пултăр
Тĕнченĕн ĕмĕрхи тĕрри:
Эпир каятпăр, эсĕр юлтăр,
Чăваш çынни Анат Энтри[24].
..........................................

Ульяновск, Гончаров урамĕ.
Хай шеппĕн пурăнăç вĕрет.
Ах, епле шухăшсем хура-мĕн
Хăшин çак ç у т ă тĕнчере!

Ак кăптăр-каптăр хăна килĕ,
Пĕчченлĕ пӳлĕм те виле.
Кам çак этем? Ăçтан вăл килнĕ?
Мĕнле питпе çĕнĕ киле —
Мухтавлă, аслă революцин
Килне — пырса вăл алăк тĕкнĕ?
Е çак çырупа çеç вăл уçнă
Ун хыт тăпсаллă алăкне?

Тухья-хушпуллă романтизм,
Траххум, вĕрӳçĕ, çăпата —
Ку пирĕн мăшкăл мар-им? Чыс-им?
Çапла вăл шухăшланă та
Çак юлашки могикан евĕр
Йăваннă юлашки пăлхар.

Каçарăпăр-ши ăна эпĕр,
Е эпĕр ăна айăплар?

Е: унăн — хăйĕн, пирĕн — хамăрăн:
Сыв пултăр пурăнăç ылмашĕ! —
Тесе психологиллĕ тарăн
Тип пек кăна ăна ăнлар-ши?

1930 (?)

## ПАЯНХИ ПОЭМА

*Чăваш АССР вунă çулне*

Калаччăр: поэзи хунарĕ
Сӳнсе мăшкăлланчĕ тетчĕр,
Пуçлантăр «аха!» та «эпей!*
Паян çĕршыври пролетари,
Писевсĕр, чечен рифмăсемсĕр
Тăвать ĕмĕрлĕх эпопей.

Калаччăр: чечеклĕ çараншăн
Бензин килĕшӳсĕр тетчĕр,
Хуплаччăр сăмси шăтăкне.
Çапах çĕнтерӳллĕ ыраншăн
Паян эпĕр ним хĕрхенмесĕр
Таптатпăр çаран чечекне.

* * *

Туркестан çеçен хирĕн кăлканĕ
Тӳнсе юлчĕ шпалсем айне,
Çĕпĕр йывăçĕ пулчĕ шпал.
Казаха вăрман пурлăхĕ анĕ,
Чалтун çийĕ казах какайне —
Çакнашкал ун пайти, çакнашкал.

Ак часах хăйăрлă хирсенче
Ешеркке хуласем ӳссе ларĕç,
Ӳссе ларĕç чечек пахчисем.
Хай бензин шăрши пулĕ инçе.
Унта чыс хăни çеç пулса мар эс —
Кирпĕчне те кĕрсе çĕклесем!

### 1

Союз вăтам картти çинче
Пĕр пысăкрах пуç пӳрнепе
Пуссассăн ман республĕке —
Республĕкĕм пытанĕччĕ.
Пытанĕччĕ республĕкĕм,
Чикки те курăнмĕ чăвашăн.
Çапах ман паянхи кĕввĕм
Çуралнă çĕрĕмшĕн янрасшăн.

Ав-то-но-ми?! Чăнах-и? Ну-у!
Анчах... Мĕне вăл чăваша?
Историйĕ тăлланнă ун,
Чăваш — халь пичеври лаша.
Хăçан пичев лаши тĕпе
Юрттарни пур хăй çулĕпе?
Паллах, ача-пăча вăййи
Ак вылĕç-вылĕç те лăпланĕç.
Раççей! Миçе патша вăйĕ!
Шӳт тетĕн-и, Ваçлей Иванăч!

— Ăн... да! Эльмен таврашсене
Шансах пĕтерейместĕп эпĕ.
Селиванпа Ехрем çине
Тĕренчĕ пурăнăç хисепĕ.
— Паллах: мул кирлĕ, ырă тон,
Çине-пуçна кăшт тирпейле;
Вара — Европăна! Пардон:
Çăпатуна хăвар киле!..
— Çук, çук, ку революцирен
Чăваш кураймĕ пархатар.
Тата çак хăрăннă çĕртен
Администраци тăрантар!..

Çапла сăмахлама пултарнă
Пĕр-икĕ вĕçкĕнрех эсер.
Çапах та Облăç чăмăртаннă.
Вăл кирлĕ пулнă. Çитнĕ çĕр.

**2**

Фăдераци тавра ак блокада,
Шалта выçлăх асать, пыйтă, чир...
Анчах нихăш фронтран та, нихçан та
Çĕнтермесĕр тухман-ха эпир.

Фĕдераци тавра юн кӳлленнĕ —
Путарасшăн ăна тăшмансем.
«Çĕршыва хăтаратпăр!» — çĕкленнĕ
Танлăх, ирĕклĕх илнĕ çынсем.

Пур хĕн-хурлă, пур пусмăрлă халăх,
Хăй асапĕсене ылханса,
Пĕр ялав айĕнче пĕр каварлă,
Пĕр çын пек панă çак сасса.

* * *

Çамрăк Облăç. Пайтах йĕре-кулă,
Халиччен власть тытман ал-ура.
Автономи хыпарĕ хир урлă,
Ял-ял урлă вĕçет çĕршывра:

Чăвашсен патши пур темеççи?
— Пур тет, пур тет! — Ăçта-ши? Пĕлесчĕ...
— Чăвашах пулĕ те — темле çын?
— Тимухха эльхерей текелеççĕ... —

Хĕсĕк куçлă чее стариксем
Чĕлĕме пак та пак тутараççĕ
Хыпар хыççăн хыпар вĕçертсе,
Халапсем, юмахсем юптараççĕ.

Анчах ним эльхерейсĕр, патшасăр,
Ĕмĕрне те пулман «чăваш влаçĕ»
Ялсенче сисĕнсен — вăтанмасăр
Пуртă, сенĕк, тăпачă йăтаççĕ.

Чĕрĕ юлнă патша йыттисем,
Хуçасен евчисем йĕкĕлтеççĕ:
Чăваш халăхĕн çук сийĕсем,
Пĕтĕмпех хура халăх вăл теççĕ.

— Чăваш халăхĕн çук пролетари,
Вăл хуçа пулаймасть хăй çĕрне.
Автономи мĕнех ăна парĕ?..
Хĕтĕртеççĕ «Чаппан вăрçине».

Çамрăк Облăç. Пайтах йĕре-кулă.
Власть тытма вĕренмен ал-ура.
Анчах класс шăнăрĕ çирĕп, хулăн —
Облăç ӳснĕ куллен вăйлăрах.

**3**

Социализмлă Совет
Республикăсен мăн Союзĕ.
Тĕрекленет çĕршыв, ӳсет,
Татах та тĕрекленĕ, ӳсĕ...

Ман Облăç — Республика. Аслă чăвашлăх, —
Ятне те тупаççĕ-çке, мур!
— Улатăр е Чĕмпĕр? — Улатăр. Тавлашмăп:
Унта табак хапрăкĕ пур...
Пуçланчĕ вара
Тĕрлĕрен мыскара:
— Чи-чи кăсăя,
Ăçта каян, кăсăя?
Е сан тяппу хуçăлсан?
— Улатăра эп каяп,
Сыптаратăп, сыв пулсан!..

Анчах лере
Хăш-пĕр ирçе
Кĕрет чĕрре,
Шав хирĕçет.

Калла тапать
Хăш-пĕр мăкши.
Мĕн сăлтавпа?
Мĕн амак-ши?

— Ай-уй, çут тĕнче!
Суртăр, суртăр ман пите.
Чăваш куçĕнчен
Пăхса пурăнап-и?! — тет.

Пĕлеймерĕç пулас хăшĕсем,
Ăнланмарĕç малтан ак çакна:
Хăй чура пулса курнă этем
Нихăçан чура тумĕ çынна.

* * *

Чикке саран чăваш çынни
Патшалăхри патшалăх мар,
Вăл — аслă штатсенчен пĕр штат.
Улатăр хулинче акни
(Мĕскер çак уншăн пăшăхма?)
Шупашкартах аван шăтать.

Республĕк, Облăç, кĕпĕрне...
Вăй-хал ятра-им курăнчĕ?

Çук, эпĕр урăхпа хастар.
Эпир калатпăр пĕр-пĕрне:
Социализм хорĕнче
Пăрахăç сасă пулас мар!

**4**

Пуçланать пултарулăх
Ĕмĕр-ĕмĕр пулмана.
Хир, çаран, ешĕл улăх
Хурçă-тимĕр тумланать...

— Ĕçсем пит нумай,
Вĕренме вăхăт çук.
Çапах, кукамай, —
Вĕрентем-ха ерçнĕ чух:

Ак ку — çурла пекки —
«С» пулать, ан ман.
Шушкă пек çавраки
«О» пулать, ăнлан!

Йĕкĕр ункă, пĕр патак
«В» пулать, кукамай.
Ак ку виç юпли тата
«Е» пулать капла май.

Кĕрепле пекки ак ку
«Т» пулать. Ан ман, асту!
Вуласа кăтарт. Мĕн тет? —
Кукамай вулать: СО-ВЕТ.

* * *

Шăранать пултарулăх,
Сăрхăнать тар-шур.
Шупашкар тăмлă-пурлă,
Хĕп-хĕрлĕ, шап-шур.

Хăпараççĕ чул çуртсем
Пилĕк-алтă хут та.
Ӳс, респуликĕм, ӳссем,
Эс ӳссен эп тутă.

Чăмăртанчĕ комбинат —
Пролетари акă!
Чугун çулĕ хывăнать —
Чакĕ тăвар хакĕ.

— Ă-йăр çуна! —
Тет ват карчăкки.
Лампи çунать —
Ильич лампăчки.

Пăрки пăрăнать.
Тăрă шыв парасшăн.
Хытăрах пăр ăна,
Ан пăтрат ăссассăн!

**5**

«Историсĕр» халăх
Истори тăвать, кунçулне тирпейлет.
Пытанчăк аваллăх,
Хаваслă малаллăх
Тухать, хăпарать çиеле.

Апаш тăприсем сирĕлсе çĕкленеççĕ,
Ёнер хура пӳрт тĕтĕмне çăтакан
Паян — çивчĕ куçлă хастар кĕнекеçĕ,
Çыравçă, чĕлхеçĕ, сăнавçă... — такам!

Ашмаринĕ, Смолинĕ, Маррĕ
Пыраççĕ республикĕме.
— Яхват, — тет пĕри. — Тен, пăлхар-и?
— Шумер, — тет тепри темме.

Тавлашмăпăр: тен, чăвашах-тăр,
Апла та эпир начар мар.
Ялан киввине ан пуççапăр, —
Пултарĕ çĕнне вăл чарма!

Çĕнни — паянхи, çывăрмасăр,
Канмасăр ĕçлен ĕç çынни.
Историк! Томсем урлă каçăр,
Анчах вырăн туптăр çĕнни!

**6**

Авалхи уçăлса хупăнчĕ.
Ĕмĕрхи хуп-хура тăпра хурчĕ
Пур çĕршыв, пур тĕнче умĕнче
Хăй сăнне хĕрелмесĕр вăл курчĕ.

Экран çинче
Сарпике утать.
Пӳ-си çинçе,
Çӳп-çӳхе тута.

Таçта чикĕ урлă ютри çĕршывра
Халь эпир пурри кунсерен сисĕнет.
Пире, эпĕр тăкнă тара та шура,
Пире — каскăн Атăл пăлхавçине —

Паян шурă пир анаиче сăнаса,
Француз, акăлчан, тĕрĕк, нимĕç
Пулас кĕрешӳ кунĕнче аса илĕç,
Унта ĕç çынни улăпла тапрансан.

* * *

«Шупашкар туйи — шурă туя...»
Итле те «Апайка» кур.
Ӳсет ман çĕршывăм, пуять —
Юрри те, картинĕ те пур.

Çап-çамрăк хĕрсем —
Артист та юрăçă.
Выляççĕ хĕрсе,
Юрлаççĕ... Турăçăм!
— Кай, кай Ивана!
Ма каймастăн Ивана?
Унтан лайăх каччă урăх
Эсĕ тупаймастăн...

Çыр, çыр, Ваçанкка!
Ма çырмастăн сăввуна?
Кив кĕвĕрен çĕнĕ юрă
Эсĕ тăваймастăн.

Пуçлар,
Лартар
«Кушар»,
«Айтар».
Хыççăнах — «Трахом юрри» —
Тухтăр Осипов йĕрри...

Пăртак систеретĕп кăна. Ятлаçмăп.
«Калăп хĕрĕме, — савнă кинĕм, итле!»
Искусство çинчен пĕрре мар калаçнă
Пат тӳррĕн те уççăн, йалт большевикле.

Эпир пурте çылăхлă, пурте.
Анчах кам хăйне чăн-чăнах
Çĕршывăн хура ĕçне кӳртĕ —
Каçарĕ кăра самана çав çынна.

**7**

Çĕршывăмăн поэзи пур —
Чĕрри те, хут çинчи те.
Пурне те хускатаймăпăр,
Пире пĕри те çитĕ.

Мăнрах çынсем пĕлтернипе —
Ун амăшĕ-мĕн Чĕмпĕр.
Çанталăк пулнă тет йĕпе.
Ку чух — хĕвеллĕ ĕмĕр.

Ӳсет республĕкĕм куллен,
Поэзи те ӳсет
Чĕр пурнăç юхăмне хуллен
Хут хӳмепе хӳсе...

«Силлабĕк», «тонĕк» теттĕмĕр
(Хуппи вĕт ухмаха!),
Тавлашрăмăр, çĕнтертĕмĕр.
Халь — иккĕш те паха.

Нарспийĕ те, Сетнерĕ те —
Пит çывăх тантăшсем.

Хуппи шăла лекмерĕ те
Тулли, паха тĕшсен.

Çапах та аслă çил-тăвăл
Силлабĕкпе килмен.
Çампа шутлатпăр: вилчĕ вăл,
Ӳсеймĕ ӳлĕмрен.

Томсем çуралайман та-ха,
Хунать çĕн кĕнеке...
Ăнланăр та ан антăхăр:
Малашлăх тонĕке!

**8**

Çанталăк — чун хăрамалла:
Салху, йĕпе хура кĕр каçĕ;
Чупаççĕ тĕксĕм пĕлĕтсем...
Кун пек чухне урамалла
Телейсĕр савнисем тухаççĕ
Тата — хваттерсĕр поэтсем.

Утатăп Атăл хĕррипе,
Асăрхаман та — хирĕçех
Пĕр вăрăмскер, çил вĕрнипе,
Анать хăяккăн вирхĕнсе.

Пăлтăртатать арки-çанни...
Палларăм. Тĕлĕнтĕм. Чĕнеп:
— Аван-и-ха, Шупуççынни!
Пилле яш çеçпĕлçĕсене!..

Шупуççынни хĕрхӳн кулать:
— Ай-хай! Ăнсах пыраймĕ теп.
Вăл — вырăс культурне пула.
Чăвашшăн — çичĕ сыпăк шеп...

Ак курăнĕ хăшĕ чăнни...
Ман, ахăр, пăрăнать тута.
Йĕри-тавра Шупуççыннин
Пылак идиллийĕ путать.

Хула çинчен вĕри çĕлен
Иртмерĕ чашкăрса çав каç.

Электăр куçĕсемпелен
Çуртсем йăлтăртатса лараç.

Сившу çынни япшар Урха
Анмарĕ Атăл хĕррине,
Тыттараймарĕ сар курка,
Савса, чепчен такмакçине.

Лапсар пики, Кармал Чĕкеçĕ
Тĕшмĕшленмеççĕ ялсенче.
Хĕрсем траххом чирне хĕртеççĕ,
Хĕрсем — рабфак сакки çинче.

Тухатмăшсем, сĕт кӳлĕсем
Хăтараймарĕç чăваша:
Фордсон лашисене кӳлсе
Çанталăкпа вăл тавлашать.

**9**

Тĕп пулать усал йăла:
Трактор кассипе пĕрле
Çĕнĕ сăн кĕрет яла,
Çĕнĕ вăйă кĕр кĕрлет.

Чиркӳ мар,
Халь клуб.
Кĕлтума
Çук пуп.

Хĕрлĕ мăйлă пионер —
Пур ачашăн та пример.

Çăмăл утлă çарĕ —
Комсомоли мар-и?

Бюрократ,
Хăямат. —
Час кăтарт,
Саламат!

Сов е ком- ухмахсене
Харăс тăрă шыв çине!

«Апла тусан та юрать,
Капла тусан та юрать...»
Çакăн пек чее юрра
Кăшт чарсассăн та юрать.

Иртерех-ха, иртерех
Кăмака çине ухса,
Кăвапа çине пăхса,
Савăнса ларма пире.

Ĕçсем нумай,
Хастарлăх ан чактăр бригадăн.
Вăл май, ку май, —
Пĕр шухăш патнех таврăнатăн:

Кивви кисренет,
Çĕнни çĕнтерет.

* * *

Ытлах ан юбилейлĕр,
Ан мухтăр хăвăра, —
Çĕн самолет пропеллерĕ
Кĕрлетĕр хытăрах!

Виçеллĕ кăшкăрар
Тĕллевлĕрех сăмах.
Канаш — Шупашкара
Çĕн çул хывар часрах!

Сайралтăр циркуляр,
Çӳхелччĕр отчетсем! —
Çав аслă пĕр шкула
Уçасчĕ хал çитсен.

Ман çĕршывăн ӳсĕмĕ —
Пур патшалăх тӳсĕмĕ.

Пур патшалăх ӳсĕмĕ —
Ман çĕршывăн тӳсĕмĕ;
Мускаврa мĕн акăнĕ —
Шупашкарта ӳсĕнĕ.

Уйрӑлми йӗкӗреш пек
Пурӑнатпӑр эпӗр.
Пӗрлешсе кӗрешнӗ,
Пӗрлешсе ӗҫлетпӗр.

Пурте пӗр аҫан эпӗр,
Пурте пӗр аман.
Тӑвӑллӑ Октябӗр —
Пирӗншӗн тӑван.

Пурсӑмӑр та меллӗн
Тытнӑ пӗр ӗҫех.
Пуҫӑмӑрта — Ленин,
Чӗрере — вӑл ҫех.

Пурте пӗр этем пек
Эпӗр тупа тунӑ:
Юрттӑр пурнӑҫ темпӗ!
Ҫывхарать Коммуна.

1930. Хусан

## ПОЭТ

«Нарспи» ҫыракан Иванюк Васинкин Кӗҫтенттинӗ вилни 15 ҫул тулнине йывӑр кӑмӑлпа асӑнса ҫак поэмӑна халалать.

*Автор*

### I. Юрӑсен юрри

Хуралҫӑ пӳлӗмӗ. Кичем.
Маччи лутра. Кӗлет-и, лаҫ-и?..
Поэт ларать. Ун куҫӗсем
Таҫта инҫетелле пӑхаҫҫӗ...

Сӑра-эрех кӗленчисем,
Пирус тӗпчӗкӗсем... Тирпейсӗр...
— Кӗҫтук! Ҫисем пӑртак, ҫисем,
Кайран куҫарӑн. Ак, атьсемӗр!

—Тӑхта-ха, чим... Халех, мучей ...
Апатланах эс ... Эпӗ ҫийӗп...

Поэт манать.Ун умĕнче
«Кĕнекесенĕн кĕнекийĕ».

Хăватлă «Юрăсен Юрри».
Ăна часрах куçарттарасшăн.
Анчах вăл васкамасть юри,
Вăл Соломон чунне чухласшăн.

«...Хĕрарăм вилĕмпе пĕрех,
Унран ниçта та пытанаймăн».
Кĕçтук пытаннă ак пĕрре,
Пĕрре çеç мар — нумай пытаннă.

Çак пӳлĕмрех иккен тата
Эрех-пирус кăна пĕлмен-мĕн.
Хуралçă хуçнă çăпата,
Кĕçтук ун юмахне итленĕ.

«Çапла çав, — тенĕ ват чăваш, —
Телейсĕр çын нумай çуралнă:
Вĕри юнлин — ăс-хал аяш,
Ăслăраххин — чĕри суранлă ...

Пурне те витнĕ нӳр тăпра,
Кашни хăй шăпине кура çав.
Силпийĕ хăй те час вара
Саланнă», — тенĕ ват хуралçă.

Пайтах тĕпченĕ яш Кĕçтук,
Пайтах çĕр ыйхăсăр иртгернĕ.
Хĕрарăм — вилĕм-и?.. Çук, çук:
Хăй Нарспине вăл пурнăç тенĕ.

Кайран вара, мăн хуларан
Пĕр мусăкçă чăваш килсессĕн,
Вăл никама та юратман
Тĕнче ют туйăннă вĕсемшĕн.

Каçхи урам хăни пулса,
Вĕсем нумай калаçнă иккĕш.
Ыррипеле пĕрлех — усал:
Ĕçме вĕрентнĕ çĕнĕ «пиччĕш».

Вăл астăвать ак халь аван:
Пуху пек халăх... Пăсăк мусăк...
«Чăвашшăн пултăр! Тыт, тăван!» —
Тесе ăна ĕçтернĕ тусĕ.

«Сетнершĕн!» — тенĕ Кĕçтенттин.
Тумлатнă. Ĕçнĕ. Ӳпĕнтернĕ.
Çавна кура тăран пĕр çын:
«Язычник... киреметçĕ!» — тенĕ.

Вăл астăвать: вĕсен класне
Пăлхавшăн кăларса ярсассăн,
Ăна инспектор хăй патне
Калле чĕнсе илет хавассăн:

«Талант! Анчах чечен ахах
Навус купи ăшне ан лектĕр...
Революционер! Ха-ха!
Тесе виртленĕ ват инспектор. —

Ну юрĕ, килĕшетпĕр-çке.
Сана чĕнтертĕм-ха юри эп:
Чĕлхӳ пуян, хитре чĕлхе!
Куçарăн «Юрăсен Юррийĕ».

«...Юратăр, — тет кĕнекере, —
Ĕрчетĕр йăх, анчах ан манăр:
Кӳлешӳпе хыпсан чĕре —
Хăрушă тамăкра çунатăр».

Поэт ларать, шав куçарать.
Шалта темскер хăйăлтатать ун.
Тем уççăн сывлама чарать,
Анчах ăçтан ăна пăхатăн?

Ăçтан калайăн ун çинчен?
«Йăваш кăмăллисем телейлĕ»
Тесе вĕрентнĕ ĕмĕртен,
Епле вăл пулăшу кĕленĕ?

«Çук, — тет хăй ăшĕнче Кĕçтук, —
Илемлĕх аякра, чун пушă...
Ĕмĕтĕмсем çитмерĕç, çук.
Реакци çĕнтерет... Хăрушă...»

## II. «Истори хушнă ĕç»

Ĕлккĕнех мар ун кабинечĕ,
Анчах йĕрке унта, тирпей.
Чее хыпарçă кĕркелетчĕ,
Ак халь те кĕчĕ вăл ирпе:

«Кĕçтук ĕçет-тĕр, Иван Яккăльч,
Питĕрĕнсех ларать, кĕртмест.
Ĕçре чăрмав, хăйне те шалккă...
Йăлт пăсăлчĕ...» «Мĕн тетĕн эс?!»

Ватти пит хытă шăнăрланчĕ:
«Каллех эппин апла, каллех!
Мĕнле хастар, ĕçчен ачаччĕ...
Çук, тӳсейместĕп эп текех...

— Ăçта вăл? — терĕ сиввĕн пуçлăх. —
Атя, кăтар мана халех...
Асту-ха, шухлăх хыççăн шухлăх —
Пăлхав, хĕрарăмсем, эрех...

Ак тамаша! Ман шкул, ман шкулăм —
Хула кулли, шапа лĕкки!»
Ватти чĕрет. Туйи ун хулăн,
Леш «Аслă Петĕр патакки».

...Шаккарĕç алăка пĕр касă.
Тепре. Тата. Уçмаççĕ, çук.
«Пыр, пуртă илсе кил», — тет сасă.
«Уç», — терĕ хуралçа Кĕçтук.

Ватти кĕрет. Поэт тăмарĕ,
Вăл ларнă пуль ĕмĕрлĕхех.
Ун кăн-кăвак тăнлав тымарĕ
Выртать кӳпченĕ сĕлĕх пек.

Хыпарçă тĕрĕсне каланă:
Çĕрте пайтах пуш кĕленче...
Ал çырусем те сапаланнă...
Çапах — перо ун уллинче.

Ун умĕнче каска пек библи,
Пусарнăн туйăнать хăйне.

Ун чунĕн суранне кам сиплĕ?
Кам парĕ тавăрса вăйне?

Ваттин çилли лăштах тамалчĕ:
«Ах, эс епле, этак-итак...
Мĕнле поэт, мĕнле тăлмачă!
Ĕçетĕн ак, туртанăн ак...

Капла юрать-и? Ак айванлăх!
Манах пек хупăнса ларан.
Ну, çитĕ. Тухăпăр... Çанталăк
Ытла та кăмăллă паян...»

Ăна вăл хулĕнчен çаклатрĕ.
Вара Сĕве хĕрринелле
Хĕрӳллĕн ӳкĕтлесе кайрĕ
Ĕмĕртенхи йăлипеле:

«...Тĕнчешĕн эп нимех те мар та,
Ман ĕçĕм кирлĕ халăха.
Пит чăнкă пусмапа хăпартăм
Тумашкăн çакă ырлăха.

Çырулăха эп ырлăх тетĕп,
Çырулăхăн тĕп кĕнеки —
Вăл библи иккенне пĕлетĕп,
Çапла çак самана йĕрки.

Истори хывнă мисси теççĕ
Ман ĕçĕме чухлакансем.
Нумайăшĕ çакна пĕлмеççĕ,
Пăхаççĕ пăлхатма вĕсем.

«Чăвашсене сутатăн», — терĕç.
Вĕсемшĕн хаклă кĕлетке.
Сĕт тутасем ялав çĕклерĕç —
Тăванлăх, танлăх...» Илтнĕ-çке!

Фантази, Константин, фантази...
Культура кирлĕ чи малтан.
Вăл пирĕн çук! Эпир-ха — Ази,
Дикарь эпир, чăн каласан.

Хура пӳртрен тухса пĕтмен те
Ăçтан сикес малтисемпе?
Реформа! Хам та эп тĕллентĕм,
Яш чух вăл пит илемлĕ пек.

Ансат пек ху тĕллĕн утмашкăн,
Пĕрне те пуççапас килмест.
Анчах, кăшт пурăнса курсассăн,
Ăна-кăна чухлатăн эс.

Тĕнче йĕрки вăл — ĕмĕрхи вĕт,
Сӳс пек татаймăн кăшласа.
Асав шăлсен саккунĕ — кивĕ,
Ăса хăйрас пулат, ăса!

«Чăвашсене вырăслалатăн!» —
Тесе пĕри мăкăртатать.
«Хĕрес çумне эс пăталатăн!» —
Тесе тепри мана хăртать.

Эп пуп та, мĕн те мар, пĕлетĕн,
Анчах йĕри-тавра тăшман
Йăшăлтатать хура çĕленĕн...
Шкула, шкула сыхласчĕ ман.

Епле эс сыхлама пултарăн
Пусмасăр аслисен йĕрне?
Кам урапи çине ларатăн —
Юрлатăн çавăн юррине.

Шăпам пит йывăр çĕклеттерчĕ:
Истори хушнă ĕç çапла.
Мĕнпур асапĕ, хурĕ, терчĕ
Ман пуç çинче-çке, шухăшла!

Эсир манран ак ютшăнатăр,
Пĕлместĕр ман пеккин чунне:
Тен, ман чĕре те ыратать-тĕр,
Манра та çав чăваш юнех.

Хăш чух, пит тарăхса çитсессĕн,
Пур таврари чăвашсене

Ертсе каяттăмччĕ тетĕн,
Тĕнчен таçти пĕр хĕррине!

Анчах саманисем халь урăх,
Çук ку чухне Моисейсем.
Ĕçле те, ватă, тӳс те пурăн,
Шалти пур тарăхна çĕнсе...»

Инспектăрăн сасси чĕтренчĕ,
Шур тутăрĕ пĕр кĕсйинчен
Вăшт-вашт кăна тухса çĕкленчĕ...
Кĕçтук пăхать ун куçĕнчен...

«Тата ăна мĕн пăлхатать-ши?
Кĕрсе курсанччĕ ун ăшне...»
...........................................
Поэтпала çырулăх ашшĕ
Чĕнмерĕç урăх пĕр-пĕрне.

## III. Çара ноябрь

### *Юрă*

Белеет парус одинокий
В тумане моря голубом...
Что ищет он в стране далекой?
Что кинул он в краю родном?

Играют волны, ветер свищет,
И мачта гнется и скрипит...
Увы, он счастия не ищет
И не от счастия бежит!

Под ним струя светлей лазури,
Над ним луч солнца золотой.
А он, мятежный, просит бури,
Как будто в бурях есть покой!..»

Аманнă пек янрать çак сасă,
Анчах вăл тап-таса, çинçе.
Поэт, юрлан хĕре пăхмасăр.
Сĕнксе ларать диван çинче.

Вăл хурлăхлă. Ун тарăн куçĕ
Пытараймасть иккен çавна.

Кăларнă пирусне вăл хучĕ,
Астурĕ: килте мар, хăна.

Ак илтнисем чăвашланаççĕ,
Сăвăланаççĕ йĕркипе:
«Вăл пур — шав тăвăлшăн çунать-çке,
Çав тăвăл канлĕх кӳрес пек...»

Халь тăвăр туйăнать мансарда,
Ишес килет ăна таçтан.
— Тамара! — терĕ вăл сасартăк,
Хĕр юрамашкăн чарăнсан, —

Тавах сире. Ку — манăн лирик...—
Хăй çавăнтах — каллех пĕччен.
«Эпир епле? Хăçан-ши пирĕн?» —
Тесе шутларĕ ăшĕнче.

Тамара хирĕç пырса ларчĕ,
Хĕрхеннĕн пăхрĕ куçĕнчен:
«Çук, пирĕн вырăс пулмаллаччĕ,
Талантăр хăтăлатчĕ тен...

Эп ютшăнмастăп, ан çилленĕр,
Çапах та — тӳррипех калам —
Тĕнче сире нумай пилленĕ,
Чăвашшăн... пысăк вăл талант!

Епле пулсан та тĕттĕм халăх:
Аваллăх çук, мал ĕмĕт те...
Мĕн тупăнĕ хăват памалăх?
Çук, çук, сире Раççей кĕтет.

Культурăсăр çĕр çыннисемшĕн
Эсир халь килнĕ пек ютран...
Ах, Константин! Паллашнăçемĕн
Сире шеллетĕп эп чунтан...»

Тамарăн ватă амăш килчĕ:
«Каçарăç, эп — пĕччен...» — тесе,
«Паллаш, анне: чăваш Да Винчи, —
Тет хĕрĕ шӳтлĕн, хĕрелсе. —

Художник, сăвăç... каскалать те...»
Ват карчăк сĕнчĕ аллине.
Поэт, чуптăванçи пулать те,
Сăнать пĕр харăс иккĕшне.

Мĕнле чечен хăтланкаларăш!
Именесси те çук пачах...
Ялта пулсан — чăваш хĕр амăш
Мĕн калăччĕ хĕрпе качча?..

Асра ун амăшĕ, мăнтарăн,
Йăмăкĕсем... Курман чылай...
— Каçарăр, — тет татах хĕрарăм
Кăштăртатса хăй тухнă май.

Художник куçĕ асăрхарĕ:
Кăвак кĕпе, хăла калпак,
Хулпуççи çинче тĕве çăм шарĕх*...
Питне пăхса илет вăл ак:

Кăшт палăрать пек вăрттăн шухăш,
Ăста пытарнă, пит ăста!
Ку, ахăр, уншăн ăнсăрт тупăш...
Çакна сăнарĕ вăл тата:

Тамара, амăшĕ тухсассăн,
Хытса пек тăчĕ пĕр кăна;
Унтан — пит сисĕнкĕсĕр — ассăн
Сывланăн туйăнчĕ ăна.

Çак çур самантлăх чĕрĕ сисĕм
Ăна хускатрĕ тĕппипех.
Юн çунăхать... киленчĕк çиçĕм
Çӳрет тăртаннă ӳт-тирпе.

* * *

Тамара Мускавран килейнĕ,
Вăл — юрлама вĕренекен.
Кĕçтук ун тантăшне иленнĕ,
Мĕн ма килмест вăл халиччен?

* Шарĕх — шарф.

Уçаççĕ чӳрече. Пĕр хушă
Садран улма шăрши кĕрет.
Поэт кĕтет. Анчах — хăрушă! —
Сават-ши халь вăл çав хĕре?

Çук, ку ытахальтен кăна çав...
Пĕлет вăл: хĕн куракансем
Вилес чухне чăрсăрланаççĕ,
Çав тапхăр мар-ши ун та, тем?

Вăл халь пит хавшаннă, чирлĕ,
Сахал пек шанчăк малалла...
Çапла, ăна хĕрарăм кирлĕ,
Этем ами... Çапла, çапла.

Олимпи пит кӳрнеклĕ, питĕ!
Ачаш ача пек алхасать...
Хăш чух ăна вăл Илемпи тет,
Хĕпĕртесех ятне пăсса.

Анчах самантлăх ăраскалшăн
Çынна кӳмешкĕн пысăк шар...
Ăна, тен, чирлĕ хăвармашкăн...
Çук, выльăх мар вăл, выльăх мар.

Вăл халь урах, тăп-тăрă урă:
Капла пулмасть, пулмасть капла.
Çук, курнăçмасть унпа вăл урăх,
Тӳрех, хăйнех çапла калать...

* * *

Пушар мĕлки пек каçхи шуçăм
Вылять сенкер чаршав çинче...
— Кĕттертĕм пуль? Ан ятлăр, тусăм, —
Тени шăнкравлăн илтĕнчĕ. —

Сăлтавăм пысăк вара манăн,
Вăрçмасăр та пултарăр тен.
Сире эп пĕр сюрприз тăвасшăн:
Паян театрта — «Кармен».

Мускав труппи! Каятпăр пурте.
Тамара, эс те, — виç билет.

Тен хамăр пĕлĕшсем те пур-тăр...
Ах, ман халех юрлас килет.

Епле ăна курмасăр юлăн?
Испани чунĕ, ташă, хор!
Тореадор, вăрçа! Хăюллăн!
Тореадор, тореадор!..

Илемлĕ музăк, тусăм, паттăр...
(Олимпи ларчĕ ун çумне.)
— Ма пит сентябрь пек пăхатăр?..
(Тамара тухрĕ.) Мĕншĕн, э?

— Тулта сентябрь, çавăнпа-тăр.
— Анчах пирте, пирте вĕт май!
— Çук, ман ăшра çара ноябрь...
Олимпи, — терĕ вăл, — эс кай.

Тамарăпа кайса итлех эс,
Ман темшĕн... пуç ыратнă пек... —
Куçсем кăна хĕре пĕлтерчĕç:
«Эс кайăн халь ĕмĕрлĕхех».

Хĕр кăнн хытать, унтан сасартăк
Кулса ярать: — Эй, янавар!
Хăш чух эс хăвăлти сăсар пек —
Тĕнче çути курасшăн мар...

Поэт тăнлать... Епле вăл шухă,
Мĕн чухлĕ вăй вылять унра!
Пĕлет-ши халь вăл — мĕнле шухăш
Кăшлать çынна çак самантра?..

### IV. Пурнăç курки

... Чуна çĕклен суялăх маншăн
Киревсĕр чăнлăхран паха.

*А. Пушкин*

— Ăçта кун пек çĕршыв, ăçта?
Кăтарт-ха эс мана, тархасшăн...
Çĕршывшăн эп черкке йăтап,
Тăван патшалăхшăн, патшашăн.

Сыв пултăр уйрăлми Раççей!
Раççейшĕн, юн тăкан Раççейшĕн
Çĕнетпĕр селĕп нимĕçе,
Асăнтаратпăр! Ма тесессĕн

Пирте Кутузов мелĕ пур,
Суворов ăсĕ... Руç кăтартрĕ,
Кăтартĕ халь те вăл!.. Ак кур —
Пăкки ăçта çитсе шаплатрĕ!..

.............................................

Хупах вĕлле пекех сĕрлет,
Хула мещенĕсем ĕçеççĕ.
Патшалăх куркипе пĕрле
Килти телейшĕн те çĕклеççĕ:

Усламçă — хăй усламĕшĕн,
Çав лавçă — тӳсĕмлĕ лашишĕн,
Чиновник — чин çĕкленнĕшĕн,
Каччи — сар хĕршĕн, хĕр — каччишĕн...

Пĕр кĕтесре çынсем шăпрах,
Ĕçки те — урăхла телейшĕн.
Куçсем пăхаççĕ сăнарах,
Юри ӳсре хываççĕ тейĕн:

«Тăван çĕршывшăн тĕтĕмне
Кунта чыхăниччен шăршлатăн...
Путартăмăр черкке тĕпне
Пур çутă ĕмĕте те... Камшăн?

Кама чăн ирĕк пулчĕ ют?
Хресчен, хресчен çĕкленеймерĕ.
Аçа çапсан та çирĕм хут
Çаплах сăхха кăна вăл перĕ».

— Ах, тантăшăм! Шанатăп эп.
Ан тив, пĕрне-пĕри тулаччăр,
Ан тив, кăшлаччăр, — ĕненеп:
Вулкан тепре шăтарĕ кратер!

«Европăра мĕлке çӳрет»
Тени — ку чух та тĕрĕсси вăл.

Çав шухăш тухатех тӳрре,
Эп курмасассăн — курĕ ывăл.

Унтах лараççĕ ик студент,
Кусен путех «тукмак билечĕ».
Сăра сыпкаласа, хуллен
Чăваш чĕлхипеле пуплеççĕ:

«Эс илтнĕ-и: Кĕçтенттине
Татах леш кăмăлсăр ĕç хушнă.
Мĕнле çынна çухатнине
Пăртак чухлать-ши çав ват супнă?

Ача вăйран тухса ĕçлет,
Вăл библи куçарать васкавлă:
Кĕç Лондонран укçа килет,
Тăлмачшăн — чун уçмалăх!

Британи Библи Ушкăнне
Ватти пултарнă çавăрмашкăн.
Çавсем параççĕ укçине
Чăваш ăсне чирлеттермешкĕн.

Çук, тĕшмĕшлĕ ку çарпала
Сăмах хытармалла пăртакçă.
Халь капитал куçармалла,
Вĕсем Соломонпа хăртаççĕ».

— Ватти йӳтенĕ ĕнтĕ вăл,
Ялан «разбойник» те «мошенник».
Час тухĕ çĕнĕ çил-тăвăл,
Патшалăхсем вăрçа ĕшеннĕ.

Пурне те витрĕ-çке нуши —
Герб ăмăрткайăк, арăслан-и...
Иванова кам çăлĕ-ши?
Ача сăнран ӳке пуçланă.

Çурта пек ирĕлет куллен.
Талант! Вăл хăй хакне пĕлмест вĕт.
Ĕнер калаçрăм хăйпелен.
Кăшт хĕрĕнкĕччĕ... «Чун тӳсмест», — тет.

— Романтик çав вăл, хăй Сетнер,
Çуралнă тутлă тĕлĕксемшĕн.
Кунçул тени чылай тискер...
Эс ак «талант», «искусство» тетĕн...

Анчах çакна та асра тыт,
Çакна та халь манмалла мар сан:
«Поэтом можешь ты не быть,
Но гражданином быть обязан...»

Вăл гражданин пулсах çитмерĕ,
Капитулянт! калас пулсан.
— Чăваш революционерĕ
Вилет вĕт вырăнсăр юлсан.

— Çапла та-ха... Çапах черченкĕ,
Çемçе чĕреллĕ çав Кĕçтук
Хăй çиллĕ пушкăрт çĕрĕнчен те,
Пĕрре те каскăнлăхĕ çук.

* * *

Çак самантра Кĕçтукĕ ӳсĕр.
Вăл уйрăм пӳлĕмре хĕрпе.
— Пĕрин тасалăхĕшĕн! Тӳсĕр,
Путланăр, пĕтĕр пĕтĕмпе!..

Ху тенĕ этемрен нихçан та
Пурне те илес çук, пĕлеп.
Пĕрин тасалăхĕшĕн хам та
Эп варалантăм çĕрпеле.

Сана савмастăп эп, анууртăн,
Эс ун мĕлки те мар мана.
Пĕрре кăна ăна эп куртăм,
Илтетĕн-и? Пĕрре кăна!

Олимпи... Çук! Никам та мар вăл.
Вăл ман ăшраччĕ... ĕмĕтре...
Çухалчĕ. Йĕр те хăвармарĕ,
Шевле пек ялтăр! — пĕтрĕ те.

Каçарăр, эпĕ усраймарăм,
Чуна хупларĕ урăхxи...

Ĕç маншăн, сутăннă хĕрарăм,
Ку — манăн пурăнăç курки...

Кармин туталлă хĕр салхуллăн
Ларать поэт чĕрçи çинче.
— Ну, юрĕ, — тет вăл, — эп сан пулăп,
Ĕмĕтрисем вĕсем — инçе...

— Мĕн ятлă эсĕ? — Магдалина.
— Миçе çулта эс? — Пин çулта.
Çăвам-и уруна, ыр çыннăм?
— Мĕн, эп Христос-им? — Кам тата?

Хĕр урăх нимĕн те чĕнмерĕ.
Поэт, ĕçмен пекех тăрса,
— Каçарăр... акă мейĕр, — терĕ
Хĕре вун тенкĕ тыттарса.

Хĕр тĕлĕнет: мĕн-ма, мĕскершĕн
Халех укçа тӳлерĕ ку?..
— Сыв пулăр! — тет арçын ĕшеннĕн,
Çавтер мăн айăплăн, салху...

Кармин туталлă хĕр ăсатрĕ;
Хăюсăр, шиклĕн те-и, тен,
Поэтăн галстукне юсарĕ,
Унтан чуптурĕ питĕнчен.

— Вун тенкĕшĕн тесе ан калăр...
Укçашăн чуптумаççĕ, çук.
Калле илме те пултаратăр,
Ан манăр... — тет вăл тухнă чух.

...............................................

Хупах сĕрлет. Эрех пĕтмест-мĕн
Раççей мещенĕн телейне.
Çĕршывшăн, сӳнне ĕмĕтсемшĕн... —
Черкке черетлĕн çĕкленет.

Пуху пек халăх... Пăсăк мусăк...
Поэт темскер аса илет...
— Тавсси, ман Мефистофель тусăм! —
Тесе тухса утать киле.

## V. Татăлнă ĕмĕт

Çапла иртрĕ пурăнăç...
*К. Иванов. «Нарспи»*

Вăл кĕçĕр куç хупман. Те мухмăр,
Те чир? Пулмарĕ çывăрса.
«Ӳпке çĕре пуçлать», — тет тухтăр,
Кайма сĕнет вăл кăмăса.

Тепри шутлать: «эрех чури» тет.
Вар-хырăм пăсăлнă, катар.
Анчах мĕн-ма вĕсем пĕри те
Сăлтав çинчен каласшăн мар?

Сăлтав ăçта? Ăçта чир хурчĕ?
Епле вăл ернĕ çак чире?
Вăл пуçласа халь уççăн курчĕ:
Сăлтав хура реакцире.

Вăл пĕлнĕ: Хусанта хур пулнă
Асаплă, кăкăрсăр Тукай.
Унпа нумай усламăç пуйнă,
Хăй ларнă чейсĕр те чылай...

Вăл илтнĕ: Кавказра — йăлт урăх,
Илемлĕ, ăшă çĕршывра —
Хăйпе пĕр ятлă Хетагуров
Костя хĕн курнă хытлăхра.

Хăйне илсессĕн, — ун ятне те
Пĕлмеççĕ пуль вула-вула.
Пĕр шанчăк пур: юрать-ха ĕнтĕ —
Кĕнекере «Нарспи» юлать.

Ватти, юмах тесе пулин те,
Ăна пултарчĕ кăларма.
Хĕн килнĕ пуль хăйне те питĕ...
Раççей — тĕрме те касарма!..

Тен, илтĕç, пĕлĕç... Кĕнекесĕр
Мĕнле калаçăн халăхпа?
Чун туртнă çав таса, пĕртен-пĕр
Ĕçрен те уйăрчĕç... Шăпа!

Сăвва çул çук. Ăçта-ха кайăн?
Эс — шывсăр пулă, пылсăр хурт.
Эс — сывлăш уçлăхĕсĕр кайăк,
Тен, мĕскĕн вĕсенчен çĕр хут!

Чĕлхе ăсти, эс пултăн тарçă:
«Египет ĕçĕ» — куçару —
Сана çаратрĕ, хăшкăлтарчĕ,
Анчах вăл санăн çăкăру.

Çав çăкăр, çăкăр йĕвенленĕ.
Сăвапшăн, çылăхшăн — ĕçле.
Инспектор «каçаратăп» тенĕ...
Эх, намăс, намăс халь епле!..

Манра художник те пурахчĕ, —
Тет Иванов хăй ăшĕнче, —
Хупланчĕ пулмалла, хупланчĕ,
Умра халь хуп-хура тĕнче.

Ман ĕмĕтĕмччĕ — академи,
Халь вăл та татăлать, пĕлеп.
Унта пĕр-ик чăваш этемĕ
Вĕреннине те илтнĕ эп.

Вăл паттăрччĕ! Эпир начар-им?
Çынран кая-им ăс-тăнран?
Тĕнче ăс-халĕ пирĕн мар-им?
Чун илеме туймасть-им ман?

Йăлт — пирĕн пулмалла, йăлт пирĕн!
Чăваш кармашĕ çӳлелле,
Ăнланĕ йăлт, — парсассăн ирĕк,
Анчах кам патăр?.. Илмелле!..»

Стена çинчен курать вăл тепĕр
Нихçан çитми хăй ĕмĕтне:
Ав Афродита, пит чипер хĕр,
Пăхать хĕрхеннĕн ун çине.

Шăрçасăр куçсемпе пăхать вăл —
Юратупа илем Турри,
Грексен пиншер çулхи мухтавĕ,
Вĕсен шур мраморти юрри.

Ав Монна Лиза та ытарлăн
Кулса куç хĕснĕн туйăнать.
Мĕскер вăл хăй ăшне пытарнă?
Мĕнле ăнланмалла ăна?

Ав Санти Рафаэль шедеврĕ
«Сикст мадонни» ачапала:
Миçе пăхсан та тĕлĕнтерĕ,
Пăхтарĕ хăй çине çаплах...

Мадоннăллă çак пĕчĕк пӳлĕм
Халь уншăн тăвăр çав тери.
Пĕр тарăхса, пĕр ӳкĕнӳллĕн
Хыпса çунать поэт чĕри.

Епле вăл халь ăна эмеллĕ?
Мĕн сапĕ çулăмĕ çине?
«Йăваш кăмăллисем телейлĕ...»
Йăпаттăр ку айвансене!

Ку çут тĕнче хуçи пулмашкăн
Хушмасть çынна çак пурнăçра.
Хĕрӳ хĕвелшĕн, сĕм вăрманшăн,
Кашлан уй-хиршĕн — çын чура.

Лере... мĕскер лере? Кам курнă,
Кам килнĕ каялла лерен?
Пĕртен-пĕр ӳкĕт: тӳс хĕн-хурлăх,
Вилсессĕн ырлăха кĕрен.

Çитет, çитет! Вăл çĕрĕн-кунĕн
Илтсе анранă çак кĕлле.
Кунта пурнас килет халь унăн,
Чунтан-вартан пурнас килет!

* * *

Вĕчесĕр карчăк пек çур уйăх
Пытанчĕ кантăканинчен.
Вăл халь те куç хупман, çук ыйăх.
Ăçтан, епле-ха тĕлĕрен?

Асра çĕр пин янравлă çемĕ,
Тапать тăнлав тымарĕ ун.

Туять вăл: пуç ыратнăçемĕн
Çунса, типсе пырать пек юн.

Театр, мусăк, хĕрупраçĕ...
Кĕç тăн пĕтсе ларать-и тен...
Сăнсем, ятсем шуса тухаççĕ...
— Квинтилиан! — тет вăл хуллен.

Чĕнмерĕ шăллĕ, çывăрать-тĕр.
Юрать, çывăртăрах эппин.
«Ыран ирех киле ăсаттăр», —
Тесе шут турĕ Кĕçтенттин.

Ирпе вăл Лермонтова уçрĕ
Сархайнă пӳрнисемпеле
Сиркелесе куçпа вăл куçрĕ,
Вара вуларĕ çак тĕле:

«Çук, эпĕ Байрон мар, эп урăх,
Чапа тухман-ха ятăмпа.
Тĕнче мана та кӳчĕ хурлăх,
Анчах эп вырăс чунăмпа.

Эп ир пуçларăм, ир пĕтерĕп,
Нумай тăваймăп ăспалан.
Мăн тинĕс пек чунра пĕлетĕп,
Выртать саланнă шанчăк ман.

Кам тарăн тинĕс тĕпне анĕ?
Мĕнле хастарлă, харсăр ар?
Кам манăн шухăша ăнланĕ?
Е Турă эп, е — ним те мар!»

Хыткан та шурхăн пичĕ çийĕн
Салхуллă шухăш шăвăнать.
«Чипер юл, çăвăнман Россия!» —
Тесе вĕçлерĕ вăл ăна.

Кĕнекене хупса пăрахрĕ,
Пирус тивертрĕ вăл унтан.
— Чипер юл, Чĕмпĕр! Чун кăварĕ
Кунта ман ялкăшрĕ малтан.

Мана эс савăнăç та патăн,
Инкекĕм те çук мар. Çитет...
Чипер юл эс те, сумлă ватă!
Ан ман ӳркевсĕр йĕкĕте.

Тен, пушкăрт хирĕсен кăлканĕ
Шăтса тӳрлетĕ чирĕме.
Вăранĕ халăхăм — ăнланĕ
Ман татăлнă ĕмĕтĕме.

1929—1930. Хусан

## МАЙРА ИНКЕ
## Е СЕНКЕР ТЫНАС

Юрату вăл — пĕвер чирĕ, урăх нимĕн те мар. Унпа чирлемĕп тесе никам та калама пултараймасть.
*Анатоль Франс*

### Умсăмах

Тăвата кртлă ямбпала
Çырмаççĕ пирĕн сăвăçсем.
Çырам-ха эп пĕр япала
Çунатăмсем вăй илнĕçем.

Ăçтан пĕлес: редактор тус,
Кăшт вашватлăрах пулсан,
Тен, тӳлĕ те пĕр утмăл пус,
Вăтăрпала та пит аван.

Ытах апла та хыткукар
Çырлахмасан, вара... вара...
Поэт ыйткалаканах мар,
Усламăç мар вăл сăвăра.

Çитменнине сăвви пĕртте
Яшка ыйтмасть пуль тетĕп-ха.
«Тен, хăвăн выçĕ», — тейĕр те, —
Чăваш чăтать вăл çуклăха.

Халь çирĕм иккĕмĕш çул мар,
Ун чух мăян та çирĕмĕр.
Çапах вилмен, çавах патвар,
Ку тарана та çитрĕмĕр.

Кĕрешӳсем çинчен Юман,
Фардзон çинчен Кели юрлатăр.
Эп хам пăшал çакса курман,
Ман уйăма çитмен-ха трактăр.

«Хури» е «Çирĕм улттă», тен,
Мухтавлăрах-тăр поэтсемшĕн.
Эп халь куллен ĕçен-çиен
Килти çынсем çинчен пуплесшĕн.

Куллен-кунхи ахаль çынна
Мĕн-ма курасшăн мар çак эсĕр?
Ман шутпала вăл чăн-чăнах
Поэзи тĕлĕшпе телейсĕр.

Паллашнă чух сăвăсемпе
Çав çын хăйне шырать те пулĕ.
Çĕр уншăн — пит лутра, тӳпе —
Ун пеккине ытла та çӳлĕ.

Çĕрпе тӳпе хушшинчискер
Вăл урăм-сурăм интереслă.
Систер çавсем çинчен, систер,
Ман ирĕклĕ çурхи новеллă.

**1**

Шупашкарта, Атăла хирĕç,
Ларать ик хутлă йывăç çурт.
Аялтинче пурнать пĕр тимĕрç,
Çӳлти хутра — хальхи улпут.

Çынсем çапла чĕнеççĕ темшĕн.
Ну... выдвиженцă — кăмиссар.
Паллах, чăваш: çăмах çимешкĕн
Халичченех вăл хирĕç мар.

Паллах, портфелĕ унăн сарă,
Çи-пуçĕ пурçăн та пустав.
Паллах, çав пирĕн комиссарăн
Хăйле программа та устав.

Пухусенче вăл «тăван халăх»
Тесе пуçлать хăй сăмахне.

«Тăван культура» е «ăсталăх»
Тени янрать ун пек чухне.

Анчах килне çитсессĕнех хăй
Телей шырать йăлт урăхра.
«Эпир çуралнă, — тет Сенеккă, —
Кӳмешкĕн усă хамăра».

**2**

Пĕрре, кĕрпе, çак ырă çыннăн
Каймашкăн тиврĕ Тĕпелле.
Ирех вăранчĕ те вăл — чынлăн
Тапранчĕ хăй еккипеле.

Çумри майри хурланкаларĕ:
«Каллех командировкăна!..»
«Эрнелĕх çеç. Чипер юл, Ларă!» —
Тесе чуптурĕ вăл ăна.

Иртет пĕр кун, ик кун иртетĕ,
Кичем пек пирĕн пикене.
Каçпа та пĕр пĕччен, ирпе те,
Ăсран каймах вăл пикенет.

Киносене çӳрес пуль терĕ.
Çӳрет. Анчах мĕскер тăвас?
Ни Гарри Пиль, ни Пикфăрд Мэри,
Ни Тани Юн çырлахтармасть.

Мопассана вулакларĕ...
«Хитре саваççĕ, — тет, — паха,
Сана кунта кам савăнтарĕ?
Чăваш Парижĕ... Ха-ха-ха!»

**3**

Çапла вăл пилĕк кун irттерчĕ,
Ак улттăмĕш кунне хайхин
Мĕнпур асапĕ, тӳснĕ терчĕ
Саланчĕ, сӳтĕлчĕ — аминь!

«Епле майлашнă?» — тейĕр эсĕр.
Ĕç-пуç пулсаччĕ ак çапла.

(Хамран хушмасăр, ӳстермесĕр
Ăна эп калăп малалла.)

Вăл кун çанталăк уçă марччĕ.
Майра инке вăранчĕ те —
Çӳçне ĕнтсе кăтралантарчĕ,
Пит-куç сĕрсе юсанчĕ те —

Чейччен тухса çӳрес-ха терĕ,
Йĕпхӳ пĕрĕхнине кура
Хăйне вăл сулхăшпа хӳтлерĕ,
Вара уттарчĕ бульвара.

Камах пĕлмест, кам сăхланман-тăр
Çак Шупашкарăн бульварне?
Чăн ĕнтĕ: лавăр, олеандр
Яман унта хăй тымарне.

Армак-чармак çăка та çирĕк,
Сăпатсăр, кăштăркка тирек.
Турачĕ çеç вĕсен пит çирĕп:
Пыр, çакăн — йăтĕ чиперех...

Анчах йывăçсене пăхсах-и
Бульвар чапне халь чакарас?
Калар, ун Юрату сăмсахĕ,
Тăвайккинчен чăп-чаплă кас:

Ун тăмлă сакăлта çыранĕ,
Çурма çĕрти кĕсмен ташши...
Рифма туртса роман çырам-и?
Пулам-и Гончаров йышши?

Е, çитĕ. Халлĕхе хамах эп,
Нимле «Обрыв» та çук ăшра.
Пит ăслă-и, пăртак ухмах-и —
Майра инкех-ха шухăшра.

**4**

Тирек айне вăл пырса ларчĕ,
Арки çинче ун Эренбург.
Çук, «Жаннă Ней» те йăлăхтарчĕ,
Унта та тем çитмен пек, мур.

Вулать, вулать... Куçне хупать те,
Хăй упăшки çине куçать:
«Çӳрет çав, сăнчăрти упа, — тет, —
Анчах мĕн тăвăн-ха? Укçа!

Çук, уйрăлмашкăн юрамасть-тĕр,
Ман римисла тавраш начар.
Машшинпала çырма эп маçтăр...
Çук, çук, çапах вăл — кăмиссар.

Чиперрине вăл чипер мар та...
Пит-куçĕ чăвашла та... Çук!
Тап-такăр çул та тĕрĕс карттă
Хаклă тăрать пире ку чух.

Енчен тата... Пит тарăхсассăн,
Мĕскер пăхса тăрас-ха ман?
Хăй çук чухне вăрттăнтараххăн
Тухма та пулĕ йăваран».

**5**

Вăл шухăш татнă вăхăтра
Шупашкарти пĕр паллă «уххăрь» —
Хĕрарăм сунарçи — сăртран
Бульвар çине килейрĕ тухрĕ.

Пăр-пĕр «роман» сӳтсе явса
Вăл таврăнатчĕ пулĕ, ахăр.
Майра пуçне курсан часах
Пуçне çĕклерĕ пирĕн паттăр.

Шĕлепкине тӳрлетрĕ вăл,
Плащне-мĕнне юсакаларĕ.
Туйи те унăн çăп-çăмăл
Вĕçсе вĕлтĕртете пуçларĕ.

Майра тĕлне çывхарсанах,
Те палласа, те палламасăр,
Ăна вăл хушрĕ пĕр сăмах,
Анчах леш илтмĕш пулчĕ, ахăр.

Вара вăл, хирĕç сак çине
Ларса, пирус тивертсе ячĕ:
Унтан хăй Атăл леш енне —
Майрана кутăн пăхса ларчĕ.

**6**

«Какой, однако, интриган!» —
Тесе хĕрарăм шухăшларĕ.
Хăй сулхăм айĕн ăнсăртран
Куç хӳрипе тĕлле пуçларĕ.

«А он недурен», — терĕ вăл,
Çынна пăртакçă сăнасассăн.
Тути-çăварĕ тăп-тăпăл
Пĕрĕнкелерĕ кăмиссаршăн.

Унтан, темле çӳçеннĕ пек,
Тăрса кăшт карăнчĕ, вара:
«Çанталăк сĕврĕнкĕ... йĕпе», —
Тесе çын илтмеллех каларĕ.

«Йĕпе çав», — терĕ леш пуçтах.
Çапла сăмах-юмах пуçланчĕ.
«Юрать-ха, сулхăш аллăртах,
Çав — ман пĕртен пĕр çирĕп шанчăк», —

Тесе хăйсах шӳт турĕ яш.
Хуçи юнанă пек тăватĕ,
Анчах ун куçĕ пит ачаш:
«Кил, тыт, çаклат ман хулăма», —тет.

**7**

Ун пек чухне вара вăл паллă:
Ама туртать йăви енне.
Нумай калаçрĕç-и, сахал-и,
Хĕрарăм чей ĕçме чĕнет.

Ман ятсăр пĕчĕк Дон Жуанăм
Пере пуçларĕ талпаса:
«Тавах, эп тин ĕçсе тăраннă», —
Тесе хурать вăл тайăлса.

Хĕрарăмăн каллех çав шухăш:
«Ăста вылять-мĕн, çĕр çăтман!»
Анчах хăй ăшĕнче вăл: «Çук уш,
Тараймăн ĕнтĕ, — тет, — манран!»

Тармашкăн лешĕ асăнман та,
Вăййи ун меллĕ çав хатер.
Хĕрарăма эс куç хыван тăк,
Нихçан малтан ху ан пĕлтер.

Пĕлсен вĕсем йăлăнтараççĕ,
Пуççаптараççĕ ир те каç.
Хăш чух портфельсĕр хăвараççĕ,
Хăш чух повестка тыттараç.

**8**

Мухтавлă пултăр алимент.
Вăл — пирĕн самана чечекĕ.
Ăна сăвва кӳртмен поэт
Хальхи Парнасшăн пит черченкĕ.

Анчах та Шăпчăк тус пире
Пăртак кая хăварчĕ пулĕ:
Ун пĕр сăвви чылай хивре,
Çавна ман вулаканăм вулĕ.

Мана халь урăххи туртать,
Алиментпах çырлахмăп-ха эп.
Хай икĕ хутлă ман çурта
Сире васкавлăн ертсе кайăп.

Вылявăн вĕçĕ пур пуль çав.
Бульвар çинче кăшт алхассассăн,
Хутран-ситрен куçран куçа
Пăхса сăмахсăр калаçсассăн,

Хайхи ман măшăр чип-чипер
Йăваналла тухса уттарчĕ.
Халь эпĕр вăрттăн тинкерер:
Мĕскер хăтланĕ çак ик тарçă?

**9**

Тарçах çав, юрату таппи
Пурне те çаклатмашкăн хатĕр.
Мĕнпурĕ — çамрăкки, ватти —
Ун çутă куçĕнчен пăхатпăр.

Яш чух çав çутă куç пире
Чăнах та çутатса ярать-мĕн.
Вунçиччĕре мĕнле чĕре
Хăйне хăрах чĕнсе ыратмĕ?

Хăшин çав малтанхи хăрах
Пулать илемлĕ кăвакарчăн,
Хăшне тата (суймасăрах)
Лекет шăлне ларттарнă карчăк.

Пайтах саккун юратура,
Пурне те пĕлес çук-тăр эпĕр.
Пире, тен, хамăра кура
Çакна пĕлсессĕн те çитет-тĕр:

Кам ĕмĕтпе таса, чипер —
Ăна ытти те — пыл та çу-мĕн.
Хĕр тутине астивменскер
Нихçан та арăм шăлне сӳмĕ.

**10, 11, 12**

Эп халь шыратăп пĕр сăмах,
Кĕпер шыранă пек шыратăп.
Ун çинелле кăшт пуссанах —
Путассăм çук нимле шывра та!

«Опочивальня», «спальня»... Мар!
«Тĕпел» е «шыльăк» — май килет-и?
Çук, ман шутпа вăл — будуар,
Хрансуссенчен кивçен илетĕп.

Мерттес, мадам де Помпадур!
Людовик еркĕнĕ пулин те,
Сире пĕр рифмă пама пур,
Эп сирĕн сăмахпа çул илтĕм.

Эсир кăларнăччĕ мар-и
Çав йăлана? Ахаль мĕскершĕн
Гильотинланнă Дюбарри?
Паллах, ытлашширех кĕртлешнĕ.

**13**

Çапла, тирпейлĕ будуар,
Стена çинче Ватто картинĕ...
(Пăхсан — кăмиссарлах та мар,
Шăпах вăрçăcченхи графиня.)

... Мачча таран пĕр куçкĕски,
Сĕтел çинче тепре, виç енлĕ.
Унта хаччи, тури, йĕпси,
Писевĕ, сăрĕ — йăлт тиенĕ.

Сĕтел çитти — çӳхе чĕнтĕр,
Чаршавĕсем çӳçеллĕ пурçăн.
Нимрен ытла пике чипер,
Пики паян пуплет пит уççăн:

«Ларсамăр», — терĕ вăл, çынна
Хăй пӳлĕмне илсе кĕрсессĕн, —
«Пĕлетĕр-и, эп тахçанах
Çунаттăм сирĕнпе пуплесшĕн.

Поэзи вăл имçам пек, мур! —
Туртать, туртать мана ку тапхăр...
Ман хамăн та çырни кăшт пур,
Кăмăлласан, тен, паллашатăр?»

**14**

Хайхи ман ятсăр çăмăлттай
Поэт пулса-мĕн, эп пĕлмен те!
Ун хушамачĕ пĕр-пĕр «ай»
Е «ей»-пеле пĕтет пуль ĕнтĕ.

Паллах, кунта хăшĕ-пĕри
Мана юнаканни те пулĕ.
Анчах хама эп çав тери
Пытармăттăм, ял кулĕ.

Калас пулать: хутсем-мĕнсем
Чип-чиперех, çумрах-ха манăн.
Сăвăçăсем нумай вĕсем,
Ăçтан пуриншĕн те чăтайăн.

Кашни «Нарспи» вулан ача,
Кашни ялкор, рабфак студенчĕ
Тухасшăн чаплă сăвăçа,
Пуласшăн «самана поэчĕ».

Пулать те пулĕ, ан хăра,
Пуян пек пирĕн саманамăр.
Утланăр урхамахăра,
Пегас çине сиксе утланăр.

**15**

Анчах ку ӳкĕт ытлашши,
Пегас хальхи яшсемшĕн ватă.
Вĕсем пуплеç: «Мотор», «машин...»
Кăна эп хам та ăнланатăп.

Ак, калăпăр, «Хĕрлĕ Чăваш»*
(Ку таранччĕн шурри те çук та)
Пĕрре вăш-ваш — Çĕрпӳ, Канаш,
Тепре вăш-ваш — Улатăр, чудă!

Е акă çĕр çинех анас,
Иртен-çӳрен кули ан хăшкăл:
Çулла пружинсăр тăрантас,
Хĕлле çара çуна, ку — мăшкăл!

Ахаль çынна пырать пире,
Каска урапипе те селĕм.
Тӳре-шарамăр ку чире
Чăтсах ирттерейместĕр, темĕн.

Ахаль те кашнĕ портфельтех
Геморойпа диспепçи теççĕ.
Пружинсăр кӳмепе путех
Варти тăрна кунне çитеççĕ.

* «Кр. Чувашия» аэроплан çинчен калаçатчĕ.

**16**

Сĕре телейсĕр ҫав тăрна!
«Ҫиетĕ хăйăр, шыв ĕҫетĕ», —
Тесе ман асанне ăна
Пуҫлатчĕ. Ыттине пĕлетĕр.

Пĕлместĕрех пулсан, калам:
Варвиттие ерет тет имĕш.
ЧĂВКУ сĕнен словарьпалан
Ăна «чĕкре» темешкĕн тивĕҫ.

Анчах таса будуартан
Ытла шăршланчăка кĕретпĕр.
Мĕн илтĕнет-ши халь унтан?
Тинкеререх тăнлар-ха эпĕр.

Поэтпала поэт-ҫке-ха!
Вĕсен, тен, акăш-макăш йывăр
Проблема пур пуҫра... Аха,
Калатăп ҫавă... Чим, ан ҫывăр!

«Тен, паллашатăр?» — тет майра,
Сасси чĕтренĕ пек, тĕрексĕр.
Каччи сăмах ҫапать вара
Ним такăнмасăр, пӳлĕнмесĕр.

**17**

«Хавассăн вулăп! Кăмăл тăвăр...
Чăрманмасассăн ман пирки».
«Мĕнле чăрмав? Пĕлетĕр хăвăр:
Питрех кичем ман кун йĕрки.

Ялан официаллă халăх,
Портфель, доклад... Ну, тăнлăр-ха:
Лару-тăру, чăпта, хуҫалăх...
Эп хам камне те маннă халь.

Эп темле приложени евĕр
Ҫĕленнĕ упăшка ҫумне.
Е хăвăр «танлăх», «ирĕк» тетĕр,
Пĕлместĕр арăмсен чунне».

Хĕрарăм кулчĕ. Темле хӳтсĕр,
Именнĕн авăнчĕ алли...

Арçыннăн куçĕсем вил ӳсĕр, —
Чей лекрĕ пуль пит хăватли...

Кĕсре астарнă йăйăр майлă
Пăхать хăна йĕри-тавра.
Йĕри-таврах та мар, пĕр паллă,
Пĕр пăнчă пур ун, ахăрах.

**18**

Ватто картинĕ «Серенада»
(Мăйне пăрса пăрахнă яш
Гитарăпа ларать), ăна та
Пăхса илет те çын кăшт-кашт,

Анчах ун куçĕн тĕп тĕллевĕ,
Тĕп фокусĕ аяларах.
Сиртен нумайăшĕ, пĕлеп эп,
Аташнă вăл япалара.

Эрешлĕ акăлчан кравачĕ.
Майра инке минтер çине
Таяннă та (тин çеç ларатчĕ)
Кăшт мелсĕр тăснă урине.

Чĕркуççирен чылай çӳлте пек
Чăлха çыххи — сенкер тынас.
Хана çавна тĕллет пуль тетĕп,
Çавна ытараймасть пулас.

«Ĕненĕр, — тет майри, — ман шанчăк...
Эп ирĕк халь... Эп санпала...»
Сасартăк «эсĕ», «сан» пуçланчĕ,
Поэт ĕненчĕ пулмалла...
.....................................................

**19**

Шăнкрав сасси коридорта.
Тепре шăнкăртатать, тепре...
Дуняшшă тухрĕ: «Кам унта?»
«Эп,эп», — тет сасă. Ак сехре!

Хăй кăмиссар персе çитет,
Дуняшшă — будуаралла:
«Ларис Иваннă! Килчĕ, — тет, —
Ларис Иваннă!!!» — «Ан шарла.

Ну, килнĕ — килнĕ, уç та кӳрт».
Майран сасси те улшăнман.
«Пулса иртет-ха ĕнтĕ шӳт, —
Пулать-ха» — тет Дуняшшă ман.

Дуняшшă — тарçă хĕр пекки.
Ун тĕрĕс ячĕ Алтатьти.
Ларис Иваннă, çурт пики,
Сана апла вăл калать-и!

Дуняшшăн ĕçĕ пит нумай:
Кĕпе çăвать, урай сĕрет.
Лавкка-пасарăн та пĕрмай
Чупма тивет, унта — черет...

Хăех яшка та пĕçерет,
Ялан ун чейĕ те вĕри.
Нимрен ытла вăл пĕр ĕçре
Пит усăллă (пĕлместĕр-и?)

Ларис Иваннăн планĕсем,
Апли-капли, ун пек-кун пек
Чăкăлтăшрах ĕç-хĕлĕсем —
Çаксем мĕнпурĕ, пĕтĕмпех

Дуняшшă хӳтлĕхĕпеле
Хальччен ăнса пыратчĕç ун.
Дуняшшă хăй хакне пĕлет:
Хăш чух чăлха, хăш чух саппун,

Хăш чух кĕпе те кучченеç
Илсе парать ăна майра.
Хушу ансат — ан сартăр çеç
Сĕре çĕрте кирлĕ мара...

Çуртри сасса-чĕвве кăна
Сĕре çынна пит ан систер,
Ху ăшунта пытар ăна.
Хĕр пытарать, ăна мĕскер!

## 20

Анчах ĕçсем хăй йĕркипе
Пыраççĕ ман калавăмра.
Хуçа кĕрет, яланхи пек
Кӳпшек портфель ун алăра.

Çӳхе сăмси çинче пенсне —
Пăртак пасарнă, кăшт кăна.
«Мĕн эс вара, илтместĕн-е?» —
Тесе хирет прислугăна.

Шĕлепкипе йĕпе плащне
Перет те чĕмсĕр хĕр енне,
Кĕрсе каять кабинетне,
Портфелĕ — шап! — сĕтел çине.

«Республика»! — тет ăшĕнче, —
Тӳре-шара çынни ку чух,
Çӳрен министăр шайĕнче —
Пуçна витме кӳме те çук.

Мĕн-ма пурнаççĕ Мускавра!
Йăлт урăхла вĕт самана.
А впрочем... иртнĕ суйлавра
Шевле чĕнсеччĕ-ха мана...»

## 21

Хуçа карьера тăвиччен
Хуçяйкă пӳлĕмне çитер.
Вăл ĕлкĕрнĕ: вăл пĕр пĕччен,
Тумланнă-ларнă чип-чипер.

Ăçтан тупать-ши çак меле
Хĕрарăм тенĕ чĕрĕ чун?
Мĕнле хăвăртлăхсемпеле
Ĕçлет-ши ăсĕ-пуçĕ ун?..

Большевикла хăвăртлăх теç,
Индустрилле хăвăртлăх теç,
Кăна мĕнле хăвăртлăх тес?
«Хĕрарăмла хăвăртлăх» çеç

Теме пулать ман шутпала:
Те вĕçрĕ кантăкран тухса,
Те хыçалти пĕр алăкран, —
Çук сăвăç йĕрĕ, тап-таса!

Чухлатăр пулĕ: Алтатьин
Паянхи ролĕ пĕчĕк мар.
Анчах виçеймĕпĕр халь тин —
Будуарта хăй кăмиссар.

«Ларисса, — тет вăл, — ларăр-ха!
Мĕн пулнă çак сана паян?
Мигрень тавраш-и? Чепухха!
Чĕтрет-и нервă! Кил, лăплан.

Мĕн-ма эс сивĕ-ха кун пек?
Эп саншăн кĕрĕк-каракуль
Илсе çӳретĕп кунĕпе,
Тен, эсĕ савăнмастăн пуль?»

«Манто? Ах, тусăм, чим... тăхта...
Эп сывă мар кăшт... Эп пĕлмен...
Манто? Ăçта-ха вăл, ăçта?
Кăтарт-ха ĕнтĕ, ма виртлен?»

Майра хăйне хăй çавăнтах
Çунатлă шухăшĕпеле
Пĕр-ик самантлăх çавăтать
Пĕлĕшĕсем хушшипеле.

Вĕçет вăл халь фантазире:
Чăлт шурă фетăр урара,
Йăл-йăл хура манто çире,
Вăл тон парать Шупашкара...

**22**

Пике çапла тĕлĕннĕ чух
Хуçанăн куçĕ ăнсăртран
Пĕр кĕтессе ӳкет. «Çук, çук,
Куç улталать-ши вара ман?..

Не может быть!» Сиксе тăрсах
Пăхать вăл куçлăх вĕçертсе.

«А это, милая, что за?..» —
Тесе тĕллет хăй кĕтессе.

«Ах!» — терĕ çеç майра кĕскен.
Арçын тени кун пек çĕрте
«Шыв! Шыв!» — çухратчĕ ĕлĕкрен.
Халь... халь вăл тĕлĕнмерĕ те.

Талт-талт пусса (урай хăми
Чут çеç сăпка пек силленмест).
Пĕр-ик минут лăпланайми
Çӳрерĕ вăл, мĕн тăван эс?

Унтан ăнманă кĕтесри
Ăнманă япала умне
Пырса тăрать. Пĕлетĕр-и
Çав путсĕр япала мĕнне?

**23**

Нимех те мар: кизил туя-мĕн,
Чечен кăна Кавказ туйи.
Ăна Ларисса та туянĕ,
Е мăшăр мулĕ шалккă-и?

Анчах Ларисса Кавказа
Кайманччĕ-çке, çитменнине —
Ма ӳкрĕ-ха вăл ахлатса
Нихçан капла ӳкменнине?..

Паллах, ĕçсем пит тасах мар,
Декамеронăн туйăнать...
Хăй аллипех ман кăмиссар
Тытса пăхать çав туяна.

Çап-çутă кĕмĕл суйласа
Саспаллисем майланă та,
Пĕр хушамат авкаласа
Çырса ĕнентернĕ-мĕн ăста.

Ячин инициал кăна,
Хушаматне... илтсе пулас,
Паллать те мар-и вăл ăна?
Çук, пĕчĕк çын-тăр, палламасть.

## 24

Эс сисрĕн пулĕ, вулакан,
Туя çак камăн иккенне.
Таппа çакланнă сăвăç ман
Хыпалантарнă пикене.

Такам каланă: «Ан васка».
Пит ăслă çав сăмах! Анчах
Ун пек чухне, ача-васка,
Васкамалла та пуль кăштах.

Васкамăттăн та — юнашар
Тип шар килет-çке тăвăнса.
Ун пек чухне тую çеç мар,
Ытти те юлĕ татăлса...

Эрне: поэтшăн пĕр енчен
(Каччи чăнах поэт пулсан)
Реклама çеç ку инцидент,
Ку чух талант çине ан шан.

Епле пулсан та, кăмиссар
Вулать халь ун сăввисене.
Ку таранччен — вулама мар —
Куçпа курман вăл вĕсене.

## 25

«Нарспи» — кăна эп ăнланап,
«Чĕкеç» — ак ку вăт япала!
ЧАПП чĕпписен пĕр ячĕ чап,
Чăпăрккапах салатмалла!»

Çапла кăшт шурă куçпарах
Вăл пăхнă, тусăмсем, сире.
«Поэзи» теекен сăмах
Усранă резолюцире.

«Писатель» е «поэт» тени
Лекмен те резолюцие.
Епле пурнать пĕр-пĕр Шенни?
Мĕнпе пĕркеннĕ? Мĕн çиет?

А кам пӗлет! Тен, рифмине
Кышлать-тӗр чернилпа пӗрле?..
Тумтир? Тен, Атӑл хӗррине
Анса тирек çулçипеле
Пӗркеннӗ пулӗ пуç çинчен...
.............................................
.............................................
.............................................

**26**

Çук, ним элексӗр-мӗнсӗрех
Кавказ туйин, кизил туян
Хуçи камне пӗлсессӗнех
Портфельçӗ урӑхланчӗ ман.

Пэзийӗн тути-маси
Кӗрет ун урӑх йӗркене.
«Мӗн пысӑкӑш иккен сасси
Ку арӑм-терӗш еркӗнӗн?

Вулас, сӑнас, ятарласа
«Сунтал» та çырӑнса илес.
Е камите мӑшкӑлласа
Кӳртсе лартсан? Мӗн тӑвӑн эс!

Ах, тавӑрасчӗ хӑлына!
Мещенлӗх-çке... Хыпар вӗçет.
Нумайӑш вӑкӑртан тына
Тума та пултараççӗ вӗт...

Дуэль тавраш йӑлара мар,
Развод парсан — майра аван...
Малтанлӑха, тен, выговор
Парас пуль арӑма... Кайран...»

**27**

Кунта пӗтет ман чӑн халлап,
К а й р а н мӗн пулнине илтмен эп.
Илтсен те (тӳррипех калап)
Сире сасартӑках пӗлтермӗп.

Поэт хӑюллӑ тетӗр-е?
Апла пулсан, ак итлӗр ӗнтӗ:

«Çак хаксăр çынлă тĕнчере,
Тен, эпĕр хаксăр пуринчен те...»

Кăна каланă аслă ар.
Эп ун чĕрĕкĕ кăна та,
Çапах вĕт эп те гонорар
Тулли илесшĕн хăшкăнатăп.

Мана та шел вĕт, сăввăма
Пăнчăпала пăнчăхлантарсассăн.
Çампа пурне те калама
Пултараймасть хăш чух ман сассăм.

Çитменнине вăл — кăмиссар!
Тен, хăй патнех пырса пуççапăн.
Çампа ятне те калас мар,
Хӳри пытарăнтăр юмахăн.

* * *

«Тĕп шухăшу ăçта, поэт?! —
Тесе ан тарăх, вулаканăм.
Ăна пĕр критик тус пĕлет,
Ыттисене çук шанчăк манăн.

Юпах ашак тяппипелен
Часах тапкаласа ак илĕç.
Вĕсем те çав... хай, ху пĕлен,
Вĕри шӳрпе сыпмашкăн тивĕç.

Вĕсен те çутă çăлтăрсем
Манит пулса ӳкмеççĕ пулĕ.
Çампа пăртак хута кĕрсем,
Хăтланчăр — кам мĕн майлă вулĕ...

Эс ху та тишкерӳçĕ, тен?
Апла пулсан, каçар тархасшăн.
Апла сана эп хам енчен
Çапла кăна сĕнсе каласшăн:

Талант пит пысăк ĕнтĕ сан,
Эп ун пирки пуплесшĕн мар-ха.
Çапах эс, ырă çын пулсан,
Ыран ирех биржа уттар-ха...

1930

ЧППА Тĕп тытăмне, тишкерӳçĕсене,
историçĕсене, пĕтĕм чăваш поэзине —
çуралнă сăвăçсене те, çуралманнисене те —

## ХУПĂ ÇЫРУ

(мĕншĕн тесен ку япала çапăнас çук)

Чăнах та, темпсем хăвăртланчĕç-мĕн вирлĕн:
Çулталăкпа мар — уйăхпа, эрнепе,
Е çĕнĕ сăвăç, е калавçă халь пирĕн,
Е критик тухать хурчăка чĕрнепе.
Сунталăн 12-мĕш нумĕрĕнче
Каллех ав черетлĕ кампани.
Семенов текен чĕлтĕрти чĕренче
Тухса чĕлтĕртетнĕ мана-мĕн.
Вулап: «Кăçалччен Хусанкай хăйне
Хулиган еп теетчĕ пулсассăн,
Кăçал вăл çĕнтернĕ ĕç халăх енне
Кулак аллине тăсасшăн.
Ултав е хастарлăх? Конешнă, ултав.
Чее Хусанкай. Артист вăл.
Парне пама мар, хамăр çултан
Шăлса пăрахас пулать чистă...»
Тĕреклĕ каланă, как слетăвăт «çапнă».
Чăн: «Эп хулиган» тени çук пек те ман,
Çапах пĕр-пĕр цитата тĕрĕс маршăн
Халь хам ЧППАмăн ятлас пулмĕ Семенова М.
Вулап: «Хусанкай пултаруллăхĕ — веç —
Хальхи, паянхи романтизм.
Есенин. Хупах. Шехерезадăсем çеç.
Ăçта пролетариллĕ сисĕм?..
Вăл çук. Пролетари çырулăхĕнчен
Виç çухрăм инçе ун поэмĕ...
Кĕскен: «Паянхи» тесе ят хуриччен
Ăна «Ĕнерхи» темелле-мĕн».
Юрать. Ан парнелĕр. Тăватçĕр е виççĕр —
Мана вăл парне хаклах мар пит.
Эп пур халăхпа сӳтсе явчăр та виçчĕр
Тесе ăна ятăм. Ăнмарĕ вĕт.
Эпир ăмăртатпăр. «Епле пĕр-пĕрне
Часрах пултарасчĕ-ши» — тетпĕр.
Семеновпала Кузнецов ав ĕлкĕрнĕ,
Хак хунă, ытти-ытти ал çĕклетпĕр.

«Эпир пĕчĕкçĕ, пирĕн шухăшсем
Мĕскер вăл, эпир ялкорсем».
Тĕрĕс мар юлташсем. Вăт кам пĕлет,
Çын, тен, слона сиктернĕ
Кăпшанкă-шăрпăк тĕртĕшле.
Тӳрех калап, маншăн
Паян сирĕн хакăр штамплану
Цитата пуххи çеç мар вара.
Эп те тишкерем сире, эсĕр те,
Атьăр, ман çук кабинет ăшне шаларах.
Ман лаборатори тăвату стеналлă,
Урайлă-маччаллă лутра пӳлĕм мар:
Капланнă вăй-хал колбисем пăсланмалăх
Мана пин-пин вольтлă электро-вăй пар!
Ман ритм вĕревĕ пуçран чĕре урлă
Чĕрне таранах пăс тултарнă самант
Эп каллĕ те маллĕ — те çумăр, те юрлă? —
Пĕр нимĕн туймасăр çапап утăма.
Авто-и, трамвай-и умра, е лав-и, —
Пăхмастăп: пĕр тăп чарăнса, пĕр сиксе
Таран кĕввĕме рифмăпа хăвалап эп
Хай колбăсене кăшт вĕрсе сивĕтсе.
Епле савăнатăп вара çав кристаллă
Таса тумламсем пуçа пухăнсан!
Вĕсем ĕнтĕ халь çирĕм хут, вăтăр, аллă,
Çĕр хут фильтрланнă, — эс ту-ха ансат!
Сĕтел хушшинче тап-таса хут çине
Сăмах çырасси — вăл вара ĕç те мар.
Унта нихăçан пултару хăй питне
Сирсе кăтартаймĕ сана — тек эс лар!
Перо вĕçне янтă рифма тиресси...
Мĕн эсĕ — тиек-и мĕн? Çук! Эсĕ химик:
Ним евĕрсĕр чĕрĕ сăмах-тирĕс ил.
Ăна атомăн пайласа тухтăр мимĕ.
Кăлар эс — азот-и унта, аммиак-и —
Тултар савăта, пăкăла та тыттар...
Эп лаборатори тесеттĕм — ме, акăр —
Кĕрсе градосла, формăла поэта!
Ку чух поэтсем тĕрлĕрен деклараци,
Устав е програм кăларăççĕ.
Хăшĕ-пĕрисем ӳкĕнӳллĕ çыру
Çыраççĕ — ыйтаççĕ каçару.
Эп çырмăп ăна та, кăна та,

Съесре те тухса евитлемĕп.
Эп хам ĕçĕмпе кăтартатăп —
Кам икĕ е виçĕ питленнĕ.
Паян пуçăма ялавпа тан тытса
(Куç мар, хускалмасть куç харши те)
Семенов манерлĕ çич-сакăр туса
Пĕрре хуравлас мар-ши теп.
Шалт официаллă вакат чĕлхипе
Ыйтас теп малтан.
Хăш çулта çуралтăр эсĕр —
Халиччен илтмен пек,
Курман пек сире маляр-маçтăр,
Анчах... кам çине кĕл сапатăр,
Элле писе айĕн питех палăрмасть?
Эп витĕр курап: пĕр-пĕр ЧАПП каччине —
Савса вырăн илсен —
Сураççĕ кăна пур çырулăх çине.
Сирĕн пек пуç сырман марксистсем
Пуласчĕ Семеновсем пирĕн, пĕлетпĕр,
Пулас Çеменсем те самай.
Усси: — Петтистеннăй пӳрт, хамăн кĕлет те,
«Ан сир ман лăпкă ыйхăма...»
Эпир выçă ларнă, шывпа çăкăр çинĕ,
Ахаль сĕтĕрнмен Хурассан чикине:
Анчах сутăнман, кăпăкла Паркуçинăн
Кустарнă эпир типĕ тар пичкине.
Йăнăш тунă-и? — Кăмака çине улăх,
Пĕççе тăратса сурса вырт маччуна.
Пĕр йăнăш та тумăн. Кам такăр çуллăн
Йăтса тухни пур çĕн сăпатлă чуна.
Çĕнĕ экономик политикĕ. Эп
Хула фокстротланнă... Ташлать буржуази,
«Аврора» матрусĕ вилес пек ĕçет:
«Пĕтрĕ революци... сутаççĕ».
Нумай коммунизм ответлă портфелĕ
Саркайăк йăван сарăлать.
Плакат çийĕнче — ероплан та пропеллĕр,
Сĕтел çинчи пропкă — влаççăралла.
Мачча айĕнче кив салон, кабаре.
Романс гитарлаç, итлесен — хăсса ярăн.
«Сирĕн алăртан латăн шăрши кĕрет...»
Поэзи — веç — эрехпе шӳрĕ
Ессенин çеммипе пĕрле,

Интеллигент чунне тĕп турĕ.
Бульвар йĕпетрĕ Поль Варлен.
Бульвар Парижĕ, эмигрант
Хупах Мускавĕпеле çав самант.
«Раççей пĕтессине курап эп...»
Тесе мещен тĕнчи умне
Поэт пĕр тенкĕлĕх курва пек
Çарамаслатчĕ хăй чунне.
Мещен тĕнчи тăнлать вăраххăн.
Хăлхара — мамăк — çырăçин...
Мещен тĕнчи калать: «Хамра хĕн,
Раççей вăл — эпĕр, ырă çын...»
Ӳпне выртса кавлен ĕне пек
Мăшăлтататчĕ çав тĕнче.
Çав çулсенче çуралтăм эпĕ
Хальччен поэтсăр çĕр çинче.
Эсир, ман çулăма пĕлмесĕр,
Манпа чĕрре кĕрекенсем,
Тĕрĕс тăватăр пуль те эсĕр
Мана халь штык вĕçне тирсе.
Эсир шутлатăр пуль — вăт парти
Ун чух тытнă тĕрĕс çул...
Комсомолтан тухмалла марччĕ,
Тата ытти те тейĕр. Çук.
Мана ку çырлахтараймасть пек,
Хăть «контрреволюци» тем.
Эп янтă çулпала пымастăп,
Пыман, нихçан та пымăп теп.
Вульгарлă ан ăнланăр та:
Пĕришĕн революци — теçĕç*,
Тепришĕн вăл — çĕн трактăр та,
А виççĕмĕшшĕн — «вĕри чей ĕçес».
Тăваттăмĕш — манми сăмах, хăватлă юрă кĕвĕлен.
Вĕт кашни коммунизăма
Хăй çулĕпе пырать тет ЛЕНИН.
Ман революци, манăн çулăм пырать
Поэзи сăрчĕпе.
Тумхах, шырлан, шăтăк е сулнăк — унта.
Унта пурне те чăтăп эп,
Ăна эп хам суйласа илнĕ,
Никам та çанăран туртса

* Теçĕç — тезис.

«Ме сана хут, пера, чернил ме» —
Тесе лартмарĕ ман муза.
Никам та «эс шăннă-тăр, меччĕ — пĕркен»
Тесе сараскарĕ витмерĕ ăшăтан пĕркенчĕк.
Таса çĕнĕ çын — кĕвĕçтерет.
Шелепипе Курак манерлĕ пасарласассăн эп хама —
Çырсан — мана алла силле-силлех —
Картатчĕç литкоммуниста.
Поэзи — мал: хăçан калла, хăш çĕршывра
Вăл таврăнчĕ.
Нивушлĕ ман Ваçанкалла
До-ре-милес пуп хирĕнче.
Ман специальнăç, ман йывăр ăсталăх хушать мана
Халь
Йĕкĕлти такмак мар, — ударлă ĕçе
Кўлсе лартнă ăсталăх ăна ташлатмалăх
Вĕри ток-марш пар.
Манăн ăсталăх хушать мана:
                                        куçа тĕллетпĕр
Хĕвеллĕ ыран еннелле:
Анчах пилĕкçуллăх кăна алăк уçĕ,
Ун урлă кăна ыран кĕмелле!
Эп çакăнмастăп, пусмастăп хама эп — пĕрахăр,
Семенов меçник, çĕççĕре.
Пуçтарăр çĕрĕк кантăра —
Чăтаймĕ. Советшăн эп халь
                                        чĕрĕлле кирлĕрех.
Эпĕ (хăть эсĕр мана асăнатăр
Кашни кĕтесрех «Икĕ питлĕ» тесе)
Эпĕ — пĕртен-пĕр таса осонаттăр
Кичемлĕх, мещенлĕх çĕртен кĕтесе
Эп йоркшир сысни пек хăнчăр куçлăн
Умри куркана тăрăнман сăмсапа.
Манăн сăмах, е çĕнтерĕн, е хуçăлăн —
Чĕрем кĕлленсе сўниччен хĕм сапап.
Эп ĕненеп: революци — хăюлăх;
Коммуна — шырав, тăрăшу, ăмăрту — тыт та ĕçле.
Çĕн машин, вăйă-кулă, çĕнĕ çемĕ кăлар,
Уяр кун — çумăр ту.
Нимле кĕрешў те пулмасть, нимле тарçă,
Ĕç хăй йыхăрать, ĕç — хаваслăх, телей.
Ăна трактăрларĕ, сăвва шăрантарчĕ,
Чĕрў хăш май выртрĕ — çав май кĕвĕле.

Халь чирлĕ сурăх ӳпки пек чулланнă
Хула пахчисем юнпа пӳр сурнă чух
Халь нарицательнăй ят: Кут ç у л а н ă в.
Кашни учреждени пуçнех вуннă чух — халь эпĕр
Чунтан хал парса ăмăртма хăяймастпăр — хăратпăр,
Тен, пултараймастпăр.
Часрах, пилĕкçуллăх, ĕçе хăвăртла,
Сан срука — коммун çĕршывне сруксăр паспорт.

1931, пуш уйăх. Тифлис, хăна килĕ «Капкас»

## ИНТЕРВЬЮ

Большевиксем!
        Сире çак сăвă.
Сире —
        Тĕпкомран
                ячейка таран.
Кам
        пĕр хăйшăн анчах
                        «сăпă»
юрлас мар тет —
        çав тăмĕ сиртен катара.
Çак сăвă,
        большевиксем,
                сире.
Çăмăл мухтав мар:
        хăй проект,
                хăй план.
Епле
        сирĕнпе
                хам сĕме эп сиреп,
çаплах
        тепри
                уçăлĕ, тен, манпала.
Çак сăвă
        сире,
                большевиксем.
пурне те пĕрле,
        ăраснан та.
Хытса ларнă юнне
        сирĕнпе шĕветсе

тапса сикрĕ<br>
          Раççей —<br>
                    сĕтрĕнчĕк Росината.<br>
Сире,<br>
          Пурхвир Сергейĕ Петров,<br>
Хальччен сапаланчăк<br>
                    чăвашăн<br>
праткилĕш хирĕçĕвĕсене<br>
                              вăхăтра<br>
                    тӳрлетнĕшĕн<br>
                        пĕрлĕх тăвасшăн.<br>
Сире,<br>
çĕршыври,<br>
          акăш-макăш электăр<br>
ыранлăхне<br>
          ăшшăн илсе хӳтлĕхе,<br>
паян<br>
          кампа пулнă — çавна<br>
                              (пĕлетпĕр!)<br>
художник пек хавхаланса<br>
                              ӳкĕтлекен.<br>
Сире,<br>
          Иван Ваçлей Токсин.<br>
Пĕлеп:<br>
          кăнтăрла та,<br>
                    çĕрле килте те<br>
чĕнен телефон кĕпçине<br>
                    çĕн токшăн<br>
тытатăр савса: Атăлстрой?<br>
                              Итлетĕп...<br>
Сире,<br>
          Мĕкĕте Элександрĕ Никитин,<br>
тĕпчевлĕшĕн,<br>
          çыхăвăхшăн<br>
                    хамăр ял канашĕ пек<br>
ӳсен киловатлă республĕк мĕлки, тен,<br>
Халь<br>
          сирĕн кун-çулăн<br>
                    пĕртен-пĕр малашлăхĕ.<br>
Сире,<br>
          Çемен Лукийĕ Спасов,<br>
хăрах ӳпкепе сывлатăр пулин те<br>
«Вилес марччĕ

çакна тумасăр»
тесе хĕпĕртенĕшĕн
кăмăл туллин пек.
Сире, — хăвăртан тĕвĕленнĕ сăвва
хушмасăр
хамран
пĕр сăмах ытлашши.
Эсир вăл çак
виççĕшленĕ сăпат.
Эсир —
манпала
интервью тытан çын.

* * *

Малашлăх сăнавĕçĕ
тахçан
ӳлĕм
тĕлленĕ:
— Ку сунтах-тăр?..
тăвăр пулнă...
Виçĕ.
Паян
хăна килĕ вăл.
Çиччĕмĕш пӳлĕм.
Телефонĕ:
19-93.
Паян
унта
çĕр çывăрмасăр
ĕçлет
çак хыткан
этем-штаб.
Йăвăр?
Кули йăвăр мар-тăр.
Анчах
«йăтма пулнă —
йăтап,
Тӳсеп — тӳсме пулнă.
Ĕç чаплă.
«Ĕç —
вăй хушмалли», —
тет этем.

Кăкăр ёлкĕрĕ-ха...
кĕç саплăп, —
Ренткен
çутăрах тивĕ, тен,
Ултçĕр хĕрĕх
(чуххăм)
пин
киловатлă
пулать те станцăмăр».
Манне çеç мар мар,
пĕтĕм çĕр чаххуткин
Кох хурчĕсене
тасататпăр
Хăват:
ик миллиард та
тăхăр çĕр аллă пĕр
Мĕльюн
киловатт-сехете.
Анчах
большевикăн
расна пирĕн алкĕпĕр, —
Иккен пикенсен
тăватта сикетех.
Пур тинĕссем:
Шурри,
Хури.
Пур Каспи,
Балтти,
Атлантти.
Ак манăн ак
Атăл тинĕсĕ
пурри
Тахçан пулнă факт пек
пуçра аталанчĕ.
Шыва
çирĕм пĕр метр таран çĕклетпĕр.
Çирĕм улттăмĕш çул карчĕпе
виçсессĕн те
хăпарĕ
тата пĕр улт-çичĕ метр.
Мĕн юлĕ
шĕкĕр хуларан?
Венеци ёнтĕ!

Анчах
ун ятне шыва ямăпăр эпĕр.
Ш у п а ш к а р —
м ĕ н п у р  х у л а н а
х у л а
тесе йĕкĕлтен кавычка
хывса перĕпĕр,
ун чух —
пуçласа! —
çав халап
чăн пулать.
Чăвашлăх
тăванлă штатсен хушшинче
чи çӳлĕ карта
çитмелле çĕршывра.
Ленин:
Электăр
Совет влаçĕпе
хутшăнчĕ —
Европ кăлтăрмаçĕ çинче
эпĕр вара
«Çĕршыв пирĕн чухăн»
тени
тĕрĕс мар.
Вăрман,
фосфорит,
çунакан сланецсем...
Пăхсам кăшт кăна
тăпра витĕр эс:
ма
ан пултăр
пăхăр?
Кăмрăк-нехт анисем?
Пурне те
кăларăпăр
çиеле.
Электăр-пăра
çитĕ çĕр чĕринех.
Республĕк пӳне
чугун çул пийелет.
Электăр-шалун та
курнать чĕррĕнех.
Халех,

ялти кĕçĕн шкултан тапратсах
ача-пăчана
электрицăпа хими
ĕçне вĕрентес пулать
тап-таса.
Çӳллĕ вольтлă çиçтем,
хăнăхусăр май килмĕ.
Илер
вак ĕçех хăть:
ĕне сăватпăр,
тасататпăр тумтир электрицăпала.
Европ куллен-кунĕ
электăр-шăпăр
пулать —
пулмаллах! —
ун чух пирĕншĕн
киловатт-сехет
икĕ пус тăмалла та,
пĕшкĕнсе
чăрманать-и сана инке.
Мĕншĕн вăл
çӳçне
турапа тăрмалатăр,
Электăр-тура
тасатать иккен.
Пур чăкăлтăш ĕçсене те
вăл ӳсĕ —
электăр-ансатлăх.
Ерçӳ юлĕ ирĕккĕн.
Кĕскен:
Иккĕмĕш революци пулать Атăлстрой
пирĕншĕн.
Пĕтерчĕ
Çемен Луккийĕ Спасов,
сухаллă,
хыткан
«алья мушик».
Унтан
пирусне чĕртсе
илтрĕм —
ассăн
сывларĕ
капланнă ик ӳслĕк хушши.

Пĕтет манăн
        официаллă пай.
Анчах
        пулаймастăп эп
                интервьюçă.
Çарлах
        штаб-этем те
                хытмарĕ манпа,
ак ç а к
        чĕрене (мĕскершĕн-тĕр?)
                                юлчĕ
Вăл каларĕ мана
        юлашкинчен:
«Çĕрĕç кăмиссарĕ чухнехи ĕмĕтĕм
Республика
        аллă трактор кӳлсен
вилме те юрать-тĕр теттĕм.
Çук, хăямат!
        Вилес килмест.
Халь
        ун çинчен
                асăнассăм та çук.
Мĕнпур тикĕсмарлăх,
                елес-мелес,
пур чир-чĕр
        электрăна парăннă чух
епле калаçас халь
        вилĕм çинчен?
Черетĕм çитсен
        килсе шаккĕ вăл та...
Черетĕм
        часах та çитĕ-и, тен...
Çапах
        кăшкăрăттăм эп хам:
                        тăхта!
Туса пĕтерсессĕн
                мĕн пулĕ...
                        Анчах
мĕнле перспектив!
        Мĕнле ĕмĕт малта!..
Çук,
    çĕр çăттăр,
                ман, ача,

вилессĕм килмест
хальхи кăмăлпа.
Мĕн чухлĕ ăс-хал, талант
çĕкленĕ çĕн Атăлпалан!
Чăваш ăстисемшĕн,
(хăйсах калап эп)
ун чух çывхарать
тĕнче калăпĕ.
Сана та,
тĕнче?
шухăшла та
кăлар —
политик-и эс,
инженер-и.
Çыруçăн сасси,
чăвашла кăна мар,
тĕнче хăлхине илтĕнтерĕ.
Шедеврăсем парĕ
сăвăç.
«Кавал таран» мар,
Париж-Лондон таран та...
Итлетĕп те эп
сăвăçă — Спасов — ĕç!
тесе
хама хам
шантаратăп.

1931

## ТАСА ХĔР ТАРЬЕ

Хĕр хальлĕн
çуратнă
Мария çинчен
нумай кĕлĕ-юрă,
ун ячĕ çӳлтеччĕ.
Тивлетлĕ Тур амăш,
мухтав çынсенчен!
Санран ӳтленни
тĕнчене çăлĕ»...
тетчĕç.
«Хăвалăх» колхозĕн
хĕрне
Тарьене

апла мухтамарĕ
        суд прикăвăрĕ.
Анчах
        Тарье айăплă маррине
пĕлсе
        ун хутне
                эп хăюллăн кĕреп.
Тарье те
        хĕр хальлĕн
                çуратнă ача,
Ял-йыш мăшкăлланă —
                        *таса* та *таса*
Çуралнă —
        пĕр хуйхăччĕ ку,
                        анчах
Тарье
        ачине
                вĕлерет пăвса.
Çветтуй сывлăшпа
                юсăлман
                        Тарье.
Çилпе вăрăнман —
        кирек те мĕн калаччĕ.
Унтан ӳтленни —
        трактор маçтăрĕ е
поэт-и вăл —
        çĕн этем
                пулмаллаччĕ.
Илетĕп,
        тенĕ хĕре
                Энтри
Хĕрлĕ улахра,
        хуринче те шантарнă.
Чĕре
    эсĕр
        сивĕ кучан
                тетĕр-и,
вунсаккăрта
        мĕнле пăрпа
                шăнтар ăна?
Сăнтан —
        Сарпике,
                ӳтпе парка, —

ӗненнӗ те
  сулӑннӑ хӗр
    çав енне,
«Кӗпе арки вӗçӗнчех мар-ха!» —
тесе
 калайман-тӑр çав вӑл
      савнине.
Сентре
  пӑчӑ пулнӑ.
    Сӳнтернӗ хӑйӑ.
Уллах
  такмаклanӑ такмак,
      тӑснӑ юрӑ.
Тарье
  ӑшӗнче
    иккӗленнӗ:
       «аюх!»,
анчах
  сассипе
    пӑшӑлтатнӑ
       «юрӗ...»
Иртет
  кӗрхи кӗрлӗх.
    Кӗреççӗ хӗле.
Савни
  асӑнмасть те
    туйӗ çинчен.
Тек макӑр
  ун хулӗ çинче,
      тек ӳле, —
савнин
  ытамми те —
    вӑл мар...
      Сивӗнчӗ.
Уйӑх хыççӑн уйӑх
    шуса çитрӗ
      пиллӗке.
Илемсӗр,
  тискер,
    туйӑнать Тарье.
Тарьен
  купӑс мӑйӗ пек
      пилӗкӗ

урăхла
курăна пуçлать
Энтрие.
Ахалех
пăвать сарă хĕр,
ахаль çав
пӳне
чĕрçитти кантрине
татмалла.
Хура кĕркунне
шăтса юлчĕ калча
вăл та çур енне
хăпарать хăмăла.
Пăхать хĕр
савни куçĕнчен
шанса:
— Имçам илсе пар хăть...
ан тухтăр хыпар...
Савниййĕ савман.
Ун сăмахĕ ансат:
«Çурат та
*вăрттăн* вĕлерсе пытар».
Каланă та
кайнă тухса.
«Куç ан куртăр
«Хăвалăх» колхозĕн
хĕри-пăраçне!
Тăлăх Тарьерен
хитрисем те
пур-тăр...»
тесе вăл
асăннă
пĕр каçхине,
Ял йăлипе,
мăнтарăн, авланнăскер.
Тарье ăшаланнă
çатма çинчи пулă пек.
— Хисеплĕ вăхăт
ытла та кĕске.
Епле пытарам намăса?
Епле пулăп эп?.. —
Çĕршыв та типет.
Ырă, ăшă çулла.

Хӗрсем<br>
        уявра<br>
                сӑвӑ-кӗвӗ калаҫҫӗ.<br>
Тарьешӗн<br>
        чи хӑрушӑ уллах,<br>
пӗччен —<br>
        тӑр пӗччен ҫулаххи —<br>
                                уяв каҫӗ.<br>
Вӑл<br>
   ҫӗр мунчара.<br>
        Хуса пӳлнӗ пӑланӑн<br>
Ҫитсе<br>
        кӗрсе ӳкнӗ<br>
                мунча урайне.<br>
Тул ҫутӑличчен<br>
        хуҫӑлса таткаланнӑ...<br>
Хӗвел те тӑснӑ<br>
        хӑйӗн сар урине...<br>
Курасшӑн<br>
        ҫухрашнӑ<br>
                пӗр чун<br>
                        хӗвеле,<br>
анчах<br>
        ҫӗклесе<br>
                кӑтартайман-мӗн ӑна.<br>
Ирпе:<br>
        амӑш выртнӑ ӑнсӑр,<br>
                                месерле,<br>
ачин мӑйӗнчен<br>
        ҫӗлен ҫип явӑннӑ...<br>
Пӗрне те тунмарӗ<br>
                Тарье сутра,<br>
тутри вӗҫӗпе<br>
        куҫ шӑлсах<br>
                каларӗ.<br>
Унтан ӳтленни<br>
        — кирек кам пултӑр та —<br>
вӑл<br>
   ирӗк ҫӗршывӑн<br>
                ӳсес коммунарӗ.<br>
Час тупрӗ *ҫампа*<br>
                прокурор статйине:<br>
— Колхоз таркӑнне

ай ăплатпăр тата, — тет.
Анчах
Тарье
илчĕ веçех
хăй çине:
«Çук, —
терĕ вăл, —
эп ăна ... хăтаратăп».

* * *

Çакна
хам куçпа курнине
çырса илтĕм эп.
Пĕлместĕп—
нумай-ши тата
çакăн пек хĕр.
Эп пит сапăр пулăттăмччĕ!
Израиль тĕнĕ
мухтанă Марие
халь пулсассăн
*пĕртен пĕр.*

1931

## «ТĔКĔР УМĔНЧИ ВЕНЕРА»

«Искусство тĕнчи —
иккĕмĕш çутçанталăк»
тесе вĕрентни
маншăн мар курăнать.
Çĕршыв чĕрĕ хальлĕн паха.
Хăçан татăлăп
Куллен-кунлăхран?
Пыр-ха кас
çурăна!
Сана вăл
хаçат хыпарĕсемпе,
Тасс телеграммĕсемпе
каркалать.
Пуçна
хăть стена çумне
— пересĕн, пер —

Çапах ак
        Маньчжури çинчен
                çырмалла.
Сана вăл
        редакци заказěпе —
Телефон кантрийě те —
            тăллать, иçмасса.
Епле
        телефон кантрине
                        касăп эп
Хам юн тымарне
        касма хăймасан?
Сана вăл
        журналăн черетлě шаржне,
пароди шăлне кăтартса
                йěкěлтет,
Унтан
        анонимлă çыру ăшне
элек вăлтисем пăрахса
                çекěллет.
Сана вăл
        çемье ăпăр-тапăрěпеле,
Килти арăш-пирěш ěçпе çыхать:
укçа ту,
        çăкăр туп,
            йăва хатěрле,
савман савнине
            тăр сыха...
Сана вăл çыхать.
        Ахалех çухрăмлатăн
çěршыв тинěсне
        хăвăнтан тарас пек.
Чěрě куллен-кун!
        Вăл пиншер çухрăмран та
واркăшса йыхăрать
        пират пăрăсěпе.
Мана-и
        Британи музейěпе Лувăр
классикле çутă сăн-пит
                çаптарěç-и?
Мана
        сěм вăрман сукмакки
                сывă пултăр,

чунпа
ĕмĕрех
пĕкечлĕ дикарь-и эп.
Çӳреп ак
искусство тĕкĕрĕсенче
хам маймăллăха курса
Ленинград тăрăх.
Умра
Эрмитаж.
Пĕччен кĕресĕнччĕ, —
çук,
умăмрах
чĕвĕлти комментатăрĕ.
«Илемлĕ тет,
çутă картин ак ку тет...
Йĕрсем
ак ку статуйăн
çепĕç вит...» — тет.
Йăлтах
трафаретлă
хак хучĕ те,
«малалла» тет пурне те пĕлевçĕ питпе.
«Ан айăплăр...
сирĕн ăса хурласа мар...
Эп хам художник, —
тетĕп хĕре. —
Тархасшăн,
хăварăр мана
пĕр самант
синьор Тицианпала
иксĕмĕре...»
Синьор Тициан!
Йывăра илмĕр тетĕп.
Çук сирĕн хушша кĕрес чăрсăрлăх ман.
Эп,
тӳррипе каласан,
ĕмĕрте те
хăрах чӳрече янаххи
сăрламан.
Шав пушă мар-ха.
Тахçан çитерĕпĕр?
Мольберт та кирлĕ,
кирлĕ натурçă...

А туп-ха
чăваш хушшинче
пĕр чипер хĕр!
Вĕсем —
çук Çилписенче çеç маттур çав.
Пурччĕ вирĕн —
ма пытарс-ха? —
Картин ăстисем те
пур теме юрать.
Çусăр,
ирсе хытă краскă,
ятне тукаларĕç
хамăра кура.
Пирĕн, синьор, çаплаччĕ йăла:
паян Юрий Зайцев,
ыран — Çĕпритун.
А тепĕр кунне...
Юрий Зайцев каллех, —
мелке маллех мар тăк
фото çăкри ун.
Пĕр Мартĕнс кăна —
хускатнă та
станцăсăрах сăптăрать.
Чăваш та мар хăй,
тепле тума пĕлет:
сурпан та сырать,
чĕлĕм те хыптарать.
О, Мартĕнс!
Вăл вăкăрлах ĕçлет.
Пуху-и,
уяв-юбилей —
Мартĕнс.
Çавăн пек ăнлансассăнччĕ
ĕç-хĕле!
О, Мартĕнс!
Чăпта асемшĕн çеç мар, тен, эс...
Каçар, синьор,
ытла вĕрилленнĕшĕн.
Татах та чăпар пулмалла натюрмортăм,
Анчах
эп пĕлместĕп халь: такам илешнĕ
кутăруçăн унта,
такамра ку чух мотă.

Паллă çак çеç:
        сире ăнланмаççĕ.
Пĕр репродукци те çук сирĕнтен.
«Хам хама — хан»
                тенĕ пек —
                        хамăр классик.
Тачка-ха хам хамлăх пирте,
                                сирĕлмен.
Пирĕн, калас тăк,
                Венеци те хамăрăн.
Курсан эсир
        çуркунне
                Атăла?
Хумсем
        хăпараççĕ
                мĕльюн арман авăрнăн,
пĕтĕм Шупашкар
                ким çине тăкăнать.
Карташ варринче,
                урамра кĕсменлеççĕ...
Чаршавлăр
                мухтавлă Венецийĕре!
Пĕрре кăна мар,
                пирĕн икĕ Венеци,
анчах
        теприн шывĕ
                        мана сивĕрех.
Тепри вăл
        художниксемпе поэтсен
богема йăвиччĕ авал,
                        ÇЕП чухне
нумайăш
        тухатчĕç
                унтан
                        йĕпетсе
хĕрӳ черккепе
        сӳрĕкленнĕ чунне.
Традици:
        пĕтĕм пурлă-çуклă талант
ĕмĕр тăршшĕне! —
        хупахра пуçне çирĕç.
Çиеççĕ халь те çаплах...
                        Çампалан

эп
        вăл «Венецие» хирĕç.
Хăçан ăнланĕç,
                хăçан пĕлĕç
Аполлон йыхравне кĕтекенсем:
поэзи — шыру,
                поэзи вăл ĕç:
ăна кирлĕ тӳсĕм,
                тĕреклĕ ĕнсе.
Ан тив халь
        вулаччăр пире манарах,
мĕльюн тиражпа
        эпĕр тумăпăр тупа.
Чăн çутă,
        чăн урă самантра
ĕнтĕ ӳсĕр эпĕр,
                ăмăртупа.
Пире-и халь
        чĕлтĕркке арфăллă музă?
Ăна-и ларас ыталаса?
Искусство
        памашкăн тивĕç
                        усă
тĕнчене çавăран класа.
Тавăр çанна эс
                пĕрле пыран тăк,
мелке,
        партитур,
                е пера пролетарийĕ!
Çитет —
        йăваланнă.
                Паян та, ыран та
ĕç халăх
        пире
                харам пырлăн выртттарĕ-им?!
Пĕлместĕп: сасса эп хытартăм-тăр-и, —
Тицианăн
        «Тĕкĕр умĕнчи Венерĕ»
(илем турри,
        юрату турри)
малалла
        манăн пĕр сăмаха та
                        итлемерĕ

Те хăй çарамаслăхĕнчен именсе —
çаврăнчĕ те ларчĕ вăл
                    çурăмĕпе.
Мĕнле хулпуççи!
                    Мĕнле линисем!
Кун пек кӳлепе çине
                    сурмăп эп.
Анчах хальлĕхе,
                    вăрçăсем класлă чух,
юлам юратусăр,
                    пурнам хăть пĕччен —
эп
  çак илеме те
                    пуççапассăм çук.
Сыв пулăр, синьора!
                    Коммунăччен!

1931

## БАЙРОН

Кам савнă, ачашланă-ши
Ача чухне ăна хавассăн,
Хăйне çуратнă амăшĕ
«Уксах» тесе мăшкăлласассăн?

Кам колледжре ăна юп курнă?
Ытарайми хĕр Чеворт Мери,
Пĕрремĕш чун савниййĕ унăн,
Ăна «уксах ача» çеç терĕ!

Ялан хăй тансăр пирки урнă,
Ялан ӳпкевлĕн çуннă вăл.
Уксахскерех Дарданелл урлă
Илсе каçтарнă мăн кăмăл.

Сăнтан хитре, ӳтпе чăтуллă,
Кебридж университетне
Чунпа вăл темĕн анлăш хурлăх,
Сив ютшăну илсе кĕнĕ.

Улпут студентăн кун иртет-мĕн
Вĕреннинчен ытла — ĕçсе.

Анчах пулас поэт тирпейлĕн
Çырать «Ерçӳллĕ сехетсем».

Лордсен палатинче ун вырăн,
Анчах тус хушшинче пĕччен
Пулас шăпа сунмасть пек ырă...
Çук! Çĕрĕк чунлă çынсенчен —

Аяккарах, курман-илтмен çĕр
Хушшинелле кĕрсе çухал:
Вăл, Англие ик çул килмесĕр,
Вăтаçĕр тинĕспе юхать.

* * *

Яш куçсенче хĕвел кулсассăн,
Тăван çĕршыв тĕтри тем мар:
Вăл таврăнать. Сасси мăнаçлăн
Çĕкленчĕ тăвăл пек хатар.

Этемлĕх хăлхине вăл çапрĕ,
Шавлать, чăшăлтатать, кĕрлет
Поэтăн харсăр хумлă чапĕ
Салху «Чайльд Гарольдпа» пĕрле.

Халь уншăн уçăлчĕ пур алăк.
Сасартăк, пурнăç çитнĕ пек,
Вăл авланать: юлташлăн алă
Парать хĕр Анабель Мильбенк.

Пурнаççĕ этемлех. Асра та
Çук иртнĕ канăçсăрлăх ун.
Тӳлек вăл. Хĕр çуралчĕ — Ада...
Анчах та сăвă мар-çке чун!

Сăвву санран килет: аватăн
Хăш майлă кирлĕ пек; чуна —
Кĕвĕçӳпе элек авать-мĕн
Вăл çын сăмахĕпе çунать.

Пăшăлтату, çийӳ, суялăх
Чапа нихçан та каçарман.
«Ак çакăн пек пул, ак ку лайăх», —
Сĕнет хăй идолне айван.

Юлашки хут, поэт пĕр туссăр,
Савнисĕр, пĕлĕшсĕр юлсан,
Ĕмĕрлĕхех хăваççĕ суккăр
Чунсем ăна ак Лондонран.

* * *

Женев кӳлли. Альп тăвĕсем.
Хăй пек хуса кăларнă Шелли.
Ҫама: мĕне халь хĕрхенсе
Йĕрес? Е хывнă сăнчăр шел-и?

Вăл кунĕ-кунĕпе тулта,
Ҫук кĕвĕçӳ, тăшман элекĕ...
Чуна çиен салхулăх та —
Халь çăмăл хурлăх пек. Элеги.

Вăл килĕшес тет пурнăçпа,
Лăпланнă, мирлĕ Шелли евĕр.
Куллен вăл хатĕр курнăçма
Пур инкекпе те пĕр ӳпкевсĕр.

Анчах çав канлĕхе кĕрет
Хĕрхӳ асаилӳ... Хăрушă...
Ун çуралать пĕччен «Манфред» —
Сĕм хураран та хура шухăш.

* * *

Уяв. Пĕр вĕçсĕр карнавал.
Юрлать те сиккелет Венеци...
Хăçантанпа шыранă вăл,
Хăçантанпа ĕмĕтленетчĕ.

Ҫак ирĕк, шухă, куç тулли
Вăр-вар çынсем пек пурăнмашкăн!
Манфред хуйхи Беппо кулли
Айне пулать, çĕрпе çырлахнăн.

Вăл вăтăрта. Мĕн мăн кăмăл?
Хаваслăхра ăна вăл маннă.
Ун пурнăçĕ халь — çăп-çăмăл
Минутлăх тусĕ — Марианна.

Телей! Тен, çак ытахальтен
Юратнă Маргарита эсĕ?
Эс ватă граф майри пуль, тен, —
Мулпа çырлахайман Тереза?

Хăш сăн пĕ р т е н - пĕ р вĕсенчен
Ăçта яш шухăш чун хавальлĕн
Шыранă, йыхăрнă — чечен
Тивлетлĕ хĕр? Ăçта вăл халĕ?..

«Хĕрарăм — чи хăрушă чун:
Унпа та унсăр та пурнаймăн».
Ак халь мĕн тăрса юлнă ун —
Чи аслă чĕрĕ Дон Жуанăн.

Уяв. Пĕр вĕççĕр карнавал.
Венеци çунатланнă мар-и?
Анчах унтан та тарнă вăл —
Поэт, пăлхавçă, карбонари.

Кăмрăкçăсем тӳссен хур-шур
Мантарнă лордлăхне, тем хушнăн:
Итали ирĕкĕ! Мĕнпур
Поэзи çавăнта халь уншăн.

Телейлĕ эс, тӳлек кӳлле
Хĕрпе кĕсменличчен, хастаррăн —
Чĕре тумне ярса йӳле —
Чару пĕлмен пуçтах корсаррăн

Хумханнă тинĕс варнелле
Ишсе кĕрсессĕн çвраçиллĕн!
Çав çеç, пĕр çавă парнелет
Çынна чăн юрату та çилĕ.

* * *

Пĕлмен вăл Мисолунги шурĕн
Лачакинче, сив чир лексе,
Хĕм юнлăн мар — шупкан, шап-шуррăн
Юлашки хут чĕтренессе.

Хула ют тыткăнра. Эллада!
Ахаль тумтирлĕ çав çынна

Çар пуçĕ пек эс пахалатăн,
Вăл ирĕке чĕнет сана.

«Хускалăр, чурасем, хускалăр!
Ăнланăр: хăвăрсăр сире
Никам, нимле хăват ку тапхăр
Çăлаймăр хăвăр Грецире...»

Çĕршывĕ ун — тĕнче, сисеп эп,
Тăшманĕ тĕрĕк мар — чуралăх.
Мĕне ăна çарпуç хисепĕ?
Ăна чăн ирĕк пултăр палăк.

1932, Сиктĕрме

## УЛМУÇÇИЛЛĔ ТĔРЛЕМЕС

### I. Урапапа

Манпа — архивçă Ермолаев,
Вăлах — яш сăвăç Иленкей.
Çулла утпа çӳреме лайăх...
«Атя, хашкаçăм, силленкке!

Колхоз кулли пулса ан пырччĕ
Чупи-чупми... ак янавар!
Сахал сана тăкса-им пĕрчĕ?
Е ут пăханĕ урах мар?

Атя! Шатил сĕллине çийĕн, —
Пайтах аксаттăмăр кăçал.
Пăрçа пекех шултра пĕрчийĕ,
Хăмăлĕпе те — хăмăш çав.

Пуç ух, çилхесĕр урхамахçăм,
Эс кăйттă çулçӳрен лартман:
Ку — хамăр енчисем. Такмакçă.
Ку — шур хута хуратакан.

Е-е! Чипер çынна аван-им
Хӳрӳ айне пăхса пыма?

Пуçтарччĕ сарруна, айванăм,
Вĕрен пăртак хăвна тытма.

Атя! Çитетпĕр. Çурмаланчĕ.
Ыр çын çур литрлăх хушать.
Ĕлĕкрехех сан курмаллаччĕ
Килсе, юлташăм, çак хušша.

Эс шав хура пĕркенчĕксемшĕн!..
Çăвас тет çумăр. Ме аçам.
Лаши колхозăн та — шӳтсемшĕн
Хушатăн пулĕ кăшт, ачам?..»

Çапла, çурма тукташларах —
Выртса хăяккăн, месерле
Нумай пулмасть Куславккаран
Эп пытăм Тĕрлемеселле.

Манпа архивçă Ермолаев,
Вăлах — каларăм — Иленкей.
Хут хушшинче ун лармалла-и
Е сăвăра шырас телей?

Шырамалла та лармалла та.
Ан тив, пĕрле çул çӳрени
Сана пăртак хавхалантартăр,
Паланкассин йăваш çынни!

## 2. Салтак масарĕ

Кунта халь тупă сасси илтĕнмест.
Çанталăк пĕр тĕрлĕ уяр.
Анчах мĕн кăна астумасть Тĕрлемес!
Мĕскер хупламан çак уя!

Хуçа пек кĕрет пăравус станца.
Канашлăн кашлать вăрман.
Миçе çак станца çĕнетмен салатса!
Кама çак вăрман пытарман.

Сăмах хăйсене — Тĕрлемес халăхне.
Кам курнă хăйсен куçĕпе,
Кам çав ĕçсене халап пек хăнăхнă, —
Çавсем çине халь куçăп эп.

Мана каласаччĕ Крыловăн тăлмачĕ —
Тӳлек Каринке Элексей Кавĕрли:
«...Улма кунĕ ку... Панулми пит нумайччĕ...
Янрать чан сасси, — пĕтрĕ кăнтăр кĕлли...
Ларап чей ĕçмешкĕн кил-йышăмпала.
Кĕр-рĕс! кĕрĕслетрĕ вокзал тĕлĕнче.
Мĕн пулчĕ? Мĕнле шухăш ман тытмалла?
Сасартăк шăнса пăрланать сыпнă чей.
Усраттăм пăртак кĕнеке: Ленин пур...
Ну, хăй çырнисем те çук марччĕ килте...
Часрах тĕркипех çĕр айне алт та хур.
Çӳретчĕ хыпар: шурă çар килет тет...
Самантсеренех тулăн-шалăн чупап...
Унтан, кил-йыша ăсатса анкартне,
Хыçал енĕпе вăрттăн-карттăн çулпа —
Тухса шăвăнăп Мускав çулĕ патне.
И-и, уйра халăх! Тӳшекĕ-минтерĕ,
Тирки-çăпали, выльăх-чĕрлĕхĕ — веç!
Хăшши çирĕмшер çухрăма тарнă терĕ,
Ялта тăрса юлнă ватти-вĕтти çеç.
Вы-ыльль! Етресем. Аякра та пек мар.
Калпакăн-калпакăн хура çĕкленет.
Лаша çитерен ачапча чăл та пар
Сиксе утланса таçталла вĕçтерет.
Унччен те пулмасть — ак тĕнче пĕтнĕ пек
Шартлатрĕ те — вунă вакун сывлăшра.
Турпас тупас çук! Тĕпренет пĕтĕмпех.
Пĕрин динамит пулнă терĕç вара.
Йышран çирĕм саккăрăн юлнă аран,
Анчах вĕсене те уран шурă çар
Хăшне юланутлăн, хăшне çуран
Çитсе касса тăкнă, туранă хаяр.
Кайран, лăплансассăн, çӳретпĕр пухса:
Пĕрин аллисем çук, теприн çук ури;
Хăшне чĕллĕн-чĕллĕн вакланă юри:
Пĕрер пӳрнен хуçнă, е çăлтăр туса
Касса сӳсе илнĕ хăшин çамкине.
Хăйсем, мĕскĕнсем, тавăрма чĕннĕнех,
Выртаççĕ, куçне чариех чалăртса;
Халь çав вырăнта ав Салтак Масарĕ.
Октябрьпе Май кунĕсем çулленех
Е ак Автономи уявĕ çывхарĕ —
Тухса асăнатпăр эпир вĕсене».

* * *

Çирĕм улттă çинчен юрă пур ман,
Каспи хумĕ çинчен юрă пур.
Ах, çĕршывăм! Ăçта çитсе курмăн —
Пур тĕлте те пĕр пек хура-шур.
Пур сукмак çинче юн йĕрĕ пур-мĕн,
Пур кĕтес те калать: юрă хур!
Çирĕм ултă Баку комиссарĕ
Ахаль мар аса килчĕ мана:
Ман умра Çирĕм Саккăр масарĕ,
Иртейместĕп эп лăпкăн кăна...
Тĕрлемес эпопейĕ! Кам сарĕ,
Кам кăтартĕ сан паттăрлăхна?

Мускав çулĕ çинче ларнă майăн
Пултăн эс икĕ стан хушшинче.
Хăш енне шанарах евчĕ ятăн?
Хăш тĕсе сан куçу йышăнчĕ?
Эс тытса чармасассăн — çăханăн
Явăнатчĕ шур çар Кремль çинче.

Ват юманлăхра халь Çирĕм Саккăр,
Сарă-шурă чечеклĕ тăпра.
Миçе пуль кун пекии тĕлсĕр-ятсăр
Пĕр никам палламан шăтăкра?!
Ĕмĕрех çĕклентертĕр асапăр
Çĕнтерӳллĕ ĕçри паттăра!

Çирĕм Саккăр, сире манăн юррăм!
Сире манăç вĕлтренĕ витме
Нихăçан та хăяймĕ, эп туйрăм,
Сирĕн пек ятсăрсен сăн-питне —
Пĕрлешӳллĕ сăпатлăн та уйрăм —
Йăх çитерĕ малашлăх патне.

### 3. Майрапи кинемей калаçать

Шухăш çук илемпе киленме, —
Чăнлăхшăн çак пая сăвăларăм.
Калаçать Майрапи кинемей —
Утмăл пиллĕк тултарнă хĕрарăм.
«Чим-ха, чим... Ăшă кунччĕ... Çынсем —
майăрта.

Тарни — тарнӑ. Эп юлнӑ пӗчченҫӗм киле.
Шарт-та шарт ку хайхи... Пӑхӑсӑн — ман пата,
Пахчана, пӗр салтак ҫатан урлӑ килет.
— Хӑтарсамччӗ, мамаша, тархасшӑн хӑтар! — тет.
Вырӑс пек пуплемест те, ҫапах та чухлатӑп.
Аллипе, урипе тем туса хӑй кӑтартрӗ:
Хӑвалаҫҫӗ, пӳлеҫҫӗ ҫула тет
Ҫарамас, апӑрша. Хӑйӗн ҫурӑмӗнчен
Палкаса юн кӗрлет. Аптӑратӑп.
Чӗлхене-ҫӑвара ҫыхса лартнӑ-и тен, —
Пӗр сӑмах чӗнеймесӗр тӑратӑп.
Чӗтретӗп кӑна. Хамӑн ывӑл салтакӑм,
Тен, ҫаплах юн юхтарчӗ пуль ют пахчана...
Пусӑран шыв ӑсса, сурпана эпӗ салтрӑм,
Кӗҫ сурпан шурлипе ҫыхса ятӑм ҫакна.
— Нӳхреп ҫук-и? — тет мӗскӗн. — Пур, тетӗп.
Анчах
Каласа ӗлкӗреймерӗм — карташӑм умне
Тӗпӗр-тепӗр ҫитсе чарӑнчӗҫ, ман ача
Вашт хӑмла ӑшнелле, унтан — кантӑр айне.
Хапхана ҫӗмӗреҫҫӗ лешсем. — Эй, хуҫа!
Килте пур-и хуҫи? — тесе мирлӗн пуплеҫҫӗ.
Эп пырап тӗлӗнсе, шикленсе эп уҫап.
Сакӑр-тӑхӑр юлан. — Ан хӑра, карчӑк, —
теҫҫӗ, —
Эс калаӑха пире: хӗрлисем сирӗн пур-и?
Камӑн кил-ҫуртӗнче курнӑ эс вӗсене?
Ара эпӗ пӗлместӗп — те хӗрлӗ, те шурӑ...
— Ҫук, курман, ачамсем, тетӗп, — эп
пӗчченех...
— Сад пур пуль санӑн, карчӑк, улма татса
тух-ха! —
Терӗ ҫут хулпуҫҫиллӗ яштак япала.
Пӗр витре улмана ут ҫинчех, кулса шуххӑн,
Ҫирӗҫ, чикрӗҫ те кайрӗҫ ҫаксем ялпала.
Леш ачи, суранли, ҫакланнах-мӗн кайран:
Пӗр юланӗ, вӑл кантӑр ӑшне кӗнине
Сӑнаса хуса ҫитнӗ те каснӑ майран.
Те латыш пулнӑ терӗҫ вара мӗскӗне?..
Ял-йышран такам курнӑ ӑна: пӗчӗкҫеҫҫӗ
Хӗр ача ҫырлаҫан килнӗ пулнӑ ҫав ир,
Лешӗ — ун пуракне сахӑр ывӑнӑ теҫҫӗ.
Ав ҫав хӗр ут ҫулать. Укахви. Бригадир...»

* * *

Сĕткенлĕ утăллă çаран,
Пĕрлешĕвеп хирĕçлеймесĕр,
Часах çаралчĕ çурмаран
Патша ристанĕн пуçĕ евĕр.

Шыв сулхăнĕ. Сывлать чечек.
Çулса пăрахнипе пушшех-мĕн.
Мана, Укахвие — веçех
Вăл ӳсĕртет каç карнă шеппĕн.

Вăл Майрапи кинемее
Тăвать халь çамрăк сăн-сăпатлă:
«Епле ан чактăр вилĕм, э?
Епле, çакна туйсассăн ватлăн?»

Ларать-ха карчăк вутпуççи
Çунса кĕлленнине пăхмасăр,
Çамки çине вак хурткуççи
Пулса тухан тарне шăлмасăр.

Кукленнĕ статуй евĕрлĕ.
Вăл — чăтăм, çитнĕ ĕмĕт, канлĕх.
Ак час «пăрахăр... ĕлкĕрнĕ»
Тесе вăл хĕвеле пăхкалĕ.

Чей ĕлкĕрет. Çулавçăсен
Пит-куçĕсем хĕрелнĕçемĕн
Вунсаккăрмĕш çула вĕçен —
Унпа паянхине пĕлмешкĕн.

Вунпилĕк çул. Укахвисем
Ун чух улт-çиччĕре пулсассăн,
Паян вĕсем — тулса, пиçсе —
Кĕреççĕ пурнăçа хавассăн.

Салтакăн сахăрĕпеле
Çырла пураккине эп темшĕн
Çак анлă çаранпа пĕрле
Ним уйрăлми çыхса тĕвлесшĕн.

## 4. Ыр çын хăнисем

«Ухарь купец, ухарь купец,
Ухарь купец — удалой молодец!»
Ватрĕç станца, тартрĕç яла,
Тартрĕç, çаратрĕç те — марш каялла.
Ĕçнĕ те çинĕ пуп патĕнче —
Виçĕ тĕслĕ пĕр ялав айĕнче;
Аснă, алхаснă пуян килĕнче,
Дюжăнĕпе пушатса кĕленче.
— Аслă Раççей, çутă Раççей!
Чăн тĕнлĕскершĕн пăхар-ха ĕçсе.
Тыт-ха, хуçа! Русь ĕçтерет!
Туп-ха пĕрер хура куç кĕçĕре.
Пултăр чечен, пултăр çинçе, —
Хам эп сӳтем çивĕтне ир çинче!
Хăвăн хĕрӳ ĕлкĕрейнĕ пулсан,
Тав ту, хуçа, офицер юп курсан! —
Ухарь купец, ухарь купец,
Ухарь купец — удалой молодец...»
Ватрĕç станца, тартрĕç яла,
Тартрĕç, çаратрĕç те — марш каялла.

* * *

Кайран, шуррисене пӳлсе
Сĕве панчен хӳтернĕ май,
Ак çак пĕр ĕç Тĕрлемесе
Калаçтарать тата чылай.

## 5. Укçа арчи халапĕ

Пушкинăн хытă рыцарĕ пек
Ларнă вăл мулĕн арчийĕ çинче.
Ларнă старик кунĕпе, çĕрĕпе:
«Эй, пирĕштийĕмçĕм! Тивмĕçинччĕ...
Эй, ырăсем, Пихампар, Хĕртсурт!
Сирĕн хӳтте пӳрĕнет кил-çурт...»

Пулнă сĕм-суккăр старик, çăмламас.
— Хăй картишне сыхлакан йыттине
Сăсăл пĕр ывăç ытла партармасть,—
Тенĕ сăмах сарăлнă ял çине.

— Ун пӳрнине кассан, юн тухас çук.
— Вăл Раштавра пĕр катти парас çук!..

Вăл çăмарта хуçипе хурăнташ,
«Пĕр çăмартапала виç чĕлĕ эс
Çăкăр çисе пуйса кур-ха, юлташ!
Ман-и сан пек кĕлмĕçе хĕрхенес?! —
Тенĕ старик пулăшу ыйтана, —
Ме! Вырса парăн кăçал ик ана!..»

Пушкинăн хытă рыцарĕ пек
Ларнă вăл хăй вырăсла çуртĕнче.
Шăрчăк шăхравĕ те, куççăррипе,
Ун хăлхине тупăлла çурĕччĕ.
Юнсăр алли ун, саван ачаннах,
Шав хыпаланă виç хут арчана.

Çичĕ юлан ярăнтарнă ялпа,
Çичĕ юлан ыйтнă ун тĕлне.
Хирĕç пулан сапаланнă чăл-пар.
Çичĕ юлан чарнă учĕсене,
Кĕнĕ те кайнă — ыйтман, шаккаман.
«Вăрă ку, — тенĕ старик. — Кам кама!..

Илнĕ вăл хăйĕн çава çĕççине,
Тытăннă кайăкçă пек тăнлама.
Суккăр куççем курнăннах çиçĕннĕ,
Тем перĕнсе салатсан тăнлава...
Эй, ырăсем, пирĕшти, Пихампар!
Эсĕ кăна ун хӳтти, никам мар.

* * *

Чылай çул хыççăн, хĕрлисем
Çĕре йăлтах пĕр сăн кĕртсен,
Леш хай юрра тĕрлемессем
Çапла юрланă, тет, иккен:

«Суккăр купса, суккăр купса!
Суккăр купса тарайман, хăтлайман.
Кирлĕ пулман шурă çар пухса
Çăкăр-тăвар кăларса хăтланма!»

## 6. Улмуççиллĕ Тĕрлемес

Тĕрлемес! Пахча, пахча, пахча...
Улмуççиллĕ ем-ешĕл кассем.
Кил те тăс çу каçиччен «дача»,
Хулăнах та кирлĕ мар кĕсьем.

Çăкăр пиçнĕ. Сĕтлĕ тет ĕни.
Пĕр кĕтӳ кĕшĕлтетет шăрттан.
Пушмакна нумай çĕтейĕн-и,
Тротуар пулсассăн курăкран?

Уралан хĕвелпеле пĕрле,
Мăшăр рифма туп сăмаварччен.
Сăмаварĕ евĕрлех вĕлле, —
Пыл астив, чие — тăраниччен!

Чăххисем тăваççĕ çăмарта:
«Селиван хуçамăр, кăт-кăтик!»
Инке-йыш пуплет пĕр çăвартан:
— Халь колхоз сутти — Мускав сутти!

Хĕрĕсем хĕрсе пир çапнă чух
Вĕрене каска çинче тӳнккеççĕ:
— Пăтти-патти, пăтти-патти... Ух!
Селиван пит шăлли пек пул! — теççĕ.

Ăçта эсĕр? Мĕн шутлатăр-ши?
Хутăра кĕмест-и Лондон та?
Çурçĕр енĕ — сулхăнрах çĕршыв...
Кам сирĕн приказчикăр унта?

Ăçта эсĕр? Кам сире хавас?
Таврăнмашкăн Турă çырнă, тен?
Хăтăлчех çав (ма халь тин шанас?)
Ирĕк чăваш ялĕ сирĕнтен.

Тĕрлемес тĕрленчĕ урăхла,
Чашлама та урăхла чашлать...
Выçă кашкăр пул та хурахлан —
Пĕрлехи калчамăр чăшăлах!

— Пăти-патти, пăтти-патти. Ух!
Бригадир валли ак çĕнĕ йĕм...

— Линкка-линкка... Тух-ха, Клавье, тух!
Сан паян ĕçкунĕ çитмен-им?..

Каччă çын — авлан хĕр — кай качча,
Улма йывăç айĕнче савса...
Тĕрлемес! Пахча, пахча, пахча...
Пархатарусем пурах çав сан!

* * *

Кунта халь тупă сасси илтĕнмест.
Çанталăк пĕр тĕрлĕ уяр.
Анчах мĕн кăна астумасть Тĕрлемес!
Мĕскер хупламан çак уя!

Хуçа пек кĕрет пăравус станца.
Канашлăн кашлать вăрман.
Миçе çак станца çĕнетмен салатса!
Кама çав вăрман пытарман!

1933

## БАСМАЧ

### I

Араб лаши хивре юртать, —
Ик чикĕрен ывăнать.
Тĕве хуллен кăна утать, —
Кунĕн-çĕрĕн çул тытать.
*Саади*

### 1

Тӳлек ачаччĕ Рахманкул,
Илемлĕ каччăччĕ вăл ялшăн.
Хуллен кăна пухаччĕ мул
Мехел çитсессĕн авланмашкăн.

Хĕрарăм хаклă ку енче,
Тӳлеççĕ хĕршĕн пысăк хулăм.
Узбекшăн арăм — çут тĕнче,
Хусах юлсан эс сумсăр пулăн.

Кӳрнеклĕрех пике илме
Пайтах укçа тупас пулать.
Дехкан укçи ансат килмест,
Тарпа-шурпа, юнпа тулать.

Чĕркуç таран лачакара
Шур тулăшăн асапланатăн;
Акатăн мамăк, джугара,
Вĕсем те çитĕнмĕç ансатăн.

* * *

Ӳркевлĕ марччĕ Рахманкул,
Епле тӳлек — çаплах ĕçченччĕ,
«Тĕреклĕ пултăр мăшăр хул,
Вара ытти те пулĕ», — тетчĕ.

Чун туртнă хĕр те пурччĕ ун,
Ăна тепле вăл куçа-куçăн
Чачвансăрах курса пĕр кун,
Çырни пек туйăнчĕ вăл уншăн.

Калас пулать çав: Айнисса —
Фарханара тӳремĕпе пĕр.
Ăна нумайăш сăхланса
Çумне хума ĕмĕтленет-тĕр.

Çырни пек туйăнчĕ... Анчах
Çырман пулса иккен худайĕ.
Хĕр çулĕ улшăнчĕ пачах,
Каччи те урăх çулпа кайĕ.

**2**

Пĕрре сасартăках яла
Çапла хыпар çитсе янратнă:
«Эмир çухалнă... Ух, алла!
Эмир Бухарана çаратнă».

Дервиш йĕре-йĕре калать:
«Ĕнер эмирĕн караванĕ
Çĕрле Афганистаналла
Пĕр сас тумасăр каçнă кайнă...

Таçтан лерен, Ташкент енчен,
Хальччен курман пĕр çар килет тет,
Çамки — çут çăлтăр тет вĕсен,
Пăхсассăнах этем вилет тет...

Ай-яй-яй-яй, ай, мăссăльман!
Тĕп пулчĕ йăлт: Туран, Харесăм...
Тата, кун-çул, мĕнле тăшман
Кӳретĕн-ши пире халь эсĕ?..»

* * *

Çапла ĕнĕрлешет дервиш —
Ялта, çулта та хулара...
Чейре-и, пасарта-и йыш —
Хыпар каfive йĕри-тавра.

Рахманкула çитет хыпар.
Ун юнĕ шухă, чунĕ каскăн;
Анчах Туран тĕнчишĕн мар,
Çук, çук: вăл каскăн — Айниссашăн.

Вăл шухăшлать: «Пуян хĕрне
Чипер туйлах илем тесессĕн, —
Мĕнпур пек çамрăк ĕмĕрне
Ĕçрех асапланса ирттерĕн...

Хакне пĕлет-тĕр хунькасси —
Тĕве, ашак, çич-сакăр сурăх
Паллах, манран вăл ыйтасси
Тата вĕт-шак та пулĕ урăх...

Çук! Пуç таймастăп çăмăллăн,
Чухрах пулин те, тарçă мар эп!
Епле туртсан та кăмăлăм,
Хĕре хăй килĕнчех хăварăп...

Е вăрттăн эп кĕрсе çыхам?
Е ман хурах ятне илтес-и?
Ай, савнă тусăм-шăпчăкăм,
Епле йăваш çӳретĕн эсĕ...

Ялан çемçе палас çинче
Эс хурлăхлăн дуттар калатăн,

Ялан ачаш юррусенче
Пĕр çын ятне эс асăнатăн.

Епле сикет пуль ун чĕри,
Епле çав çын телейлĕ пулĕ!
Ма пит шалта сан ичкири,
Ма кил-çуртун хӳми пит çӳллĕ?..»

* * *

Хурне сирмешкĕн йĕкĕт ман,
Хăй шухăшне юрра хурса,
Пĕччен çĕрте тăсать ялан
Йăпанчăк кĕвĕсем тупса:

«Аннӳ сана çуратнă чух
Шăп уйăх тулнă вăхăт пулнă.
Çампа сан çутă сăн-пуçу,
Çампа халь уйăх пек эс тулнă.

Аннӳ сана çуратсанах,
Таса куçне уçса пăхсассăн,
«Ай» пулнă малтанхи сăмах,
Çампа яту халь А й н и с с а сан.

Аннӳ сана пиелесен
Тулли пулин те уйăх аннă:
Эс çутăраххине пĕлсен
Часрах вăл именсе пытаннă.

Аннӳ сана куçран пăхсан
Мекке енне ик çăлтăр тухнă,
Вĕсем — сан икĕ куçунтан —
Çулта аташнисемшĕн çуннă.

Аннӳ сана сĕтне сĕнсен —
Çӳлте шур пĕлĕтсем капланнă.
Çампа санра чакми сĕткен,
Çампа туту çемçе халь санăн.

Ай-яй-яй-яй, ай, ярăм, яр!..
Юрла, чĕрем, хӳхле, дуттарăм...
Вĕçсе тухса аллуна пар,
Ута утлан, юратнă ярăм!..»

Çапла çул кайнă чух хирте
Е килĕнчех ĕç хушшинчен
Ерет те шухăш йĕкĕте —
Юрлать, юрлать вара пĕччен.

**3**

Çав кунсенче йĕри-тавра
«Басмач, басмач» тени саланчĕ.
Тискер, хăрушă хыпара
Пайтах этем сурса ылханчĕ.

Анчах кил-çуртсăр йĕкĕте
Çĕклентерет-мĕн ун хыпарĕ.
Рахманкулсен ял-йышĕ те
Темскер пăшăлтата пуçларĕ.

Сенкер Алай тӳпи енне
Нумайăш тинкерсе пăхаççĕ,
Курбашшăсен йăвисене
Çав ту çинче-тĕр тет хыпарçă.

Ак «Ирзамар» та «Ирзамар»
Тени кăна янра пуçларĕ.
Вăл пухнă тет хăватлă çар,
Хасавата тухать тет çарĕ.

«Мĕнпур Маттур йĕкĕтсене —
Узбек-и, курд-и вăл, туркмен-и —
Çар пуçĕ хăйпеле чĕнет, —
Тесе хыпарçăсем пĕлтернĕ. —

Ун патĕнче пуянлăх, чыс,
Ун çыннисем шерпет ĕçеççĕ.
Вăл сумлă мăссăльман ачи,
Ăна «Ислам ялавĕ» теççĕ...

Ун аллинче паха хĕрсем,
Илемлĕ пикесем хисепсĕр.
Тайма пуçпа пырса кĕрсен —
Кашни савни тупатăр эсĕр...

Утланăр вичкĕн утăра,
Туран ывăлĕсем, утланăр!
Çăтмахăр сирĕн сăрт-тура,
Ирзамарпа килет çăтмахăр...»

## 7

Ирпе ирех, хĕвел тухсан,
Илемлĕ Фархана тӳремĕ.
Нӳрпе пусарăннă тусан
Ун чух мăкăрланса çĕкленмĕ.

Сăрт-ту чĕнет, куçа шартса,
Кама витмен-тĕр унăн терчĕ?
Çӳревçĕ, шăппăн шăхăрса,
Таçти тӳпе çине вĕçтерчĕ.

Çӳревçĕ юрă кĕвĕлет...
Саулĕ, талĕ, каракаçĕ.
Пăхса сенкер пĕлĕтелле,
Ăна пĕр сасăсăр тăнлаççĕ.

Çав юрăра телей те пур,
Çĕре-шыва пахалани те;
Çав юрăра хитре хĕн-хур,
Ултавçă савăнăç та илтĕн...

* * *

Тăр кăнтăрла, хĕрӳ хĕвел
Пуç тӳпинче ташлані чух,
Караванта пыран тĕве
Хăй чĕлхине чăмлані чух;

Ашак çинчи шур сухала
Хĕвел пуçне устарнă чух,
Ют çĕр çынни пур халпала
Шыв сывăхне васкані чух;

Шап-шурă мамăк анисем
Çемçе тӳшек пек выртнă чух;
Çĕршыв курса çӳрен этем
Чейханара пытаннă чух,

Хăй ăшĕнче юрпа пăра
Ырланă чух вăл пĕр кана —
Тĕлĕкриллех çав вăхăтра
Тӳлек тӳремлĕ Фархана.

* * *

Хĕвел ансассăн — каçхине —
Çанталăк сулхăн, сывлăш уçă.
Сенкер, уяр тӳпе çине
Ӳкет кăвар пек хĕрлĕ шуçăм.

Унта-кунта пĕччен тыркас
Кайри ури çинче ташлать.
Çара çерçи вĕçет кас-кас,
Пин-пин чĕрчун тем канашлать...

Çӳревçĕн пĕшкĕннĕ тĕви,
Аулсенчи ашак çухравĕ,
Каян каравансен кĕвви,
Вĕсен пĕртемлĕрех шăнкравĕ;

Раснах тирпейлĕ чейхана,
Раснах таса чалми-калпакĕ —
Юмах пекех ун чух сана,
Тахçан вуланă пĕр халап пек...

* * *

Пуçра иртеççĕ ĕмĕрсем.
Асра ятсем шуса тухаççĕ...
Нумай тĕлĕнмелле этем
Тĕнче умне тăратнă Ази.

Нумай ун паттăр ывăлĕ
Çĕре кисрентерсе хăварнă,
Пин-пин çынсен шăпипеле
Вĕсем шак чулĕ пек вылянă.

Хисепсĕр шăмă-шак çине
Мăн хуласем туса ларттарнă;
Таçти-таçти çĕр илемне,
Пуянлăхне унта тултарнă.

Çĕр сăн-сăпачĕ Самарканд,
Ислам тĕрекĕ Бухара
Пайтах юнланнă дастархан —
Хăрушă чыслăх пытарать...

## 8

Сĕмленчĕ сарлака тӳрем:
Сăрт-ту шап-шур пĕркенчĕк евĕр
Тĕтре антарчĕ тӳперен,
Хупланчĕ çĕр — хӯхле пĕлмен хĕр.

Лăпланчĕ ырнă Фархана,
Тӳлек сар уйăх — ватă тарçă,
Тӳлек аул... Пĕр ут кăна
Тĕмсем хушшипеле кустарчĕ.

Çав ут çинче пĕр яш ларать:
Вылянă пек акатуйла —
Пĕр лапчăнать, пĕр каçрăлать,
Пĕр хырăм айĕн кайăкла

Тухать вăл ярăнса вĕçсе;
Хĕрелнĕ уйăх çутинче
Ура пусси ялтăркки çеç
Йăл-ял виçсе пырать çинçен.

Кайсан-кайсан çын анкалать,
Çĕре выртса темскер тăнлать,
Çумне хĕстернĕ кинжала
Шăм авринчен ярса тытать...

* * *

Ăçтаваскать маттур капла?
Ăçтан вăл тухнă? Кам тавраш̆ĕ?
Кампа ун халь ăмăртмалла?
Лаши кам лашипе тавлашĕ?

Е Тамерланăн пĕр тарçи
Пит вăрттăн хушупа вĕçет-и?
Е Чингисханăн хыпарçи
Çар пуçлăхне хыпар леçет-и?

Тӳлек кăна ларать пахта,
Тӳлек юлать лаштра чинарĕ,
Анма пикеннĕ уйăх та
Пĕр нимĕскер те шарламарĕ...

Ак тарăн шывлă Зеравшан.
Маттур утне кăна шăварчĕ.
Йĕнер çине тăрса каçсан
Каллех вăл урнă пек кустарчĕ...

* * *

Алай сăрт-ту куç умĕнче
Пăт-пат хăмăрлана пуçларĕ.
Маттур итлет... Шăпах тĕнче.
Нимле шăв-шав илтсе пулмарĕ.

Анчах кайсан-кайсан таçта —
Сулахайра — хуллен пĕр сасă:
«Тра-та-та-та... тра-та-та-та», —
Тесе шаккарĕ касă-касă.

Çав сасă пит аякрипе
Аран çитет-ха çиле майăн,
Ăна хальччен илтмен узбек
Мĕн иккенне те чухлайман-мĕн.

Тен, хир сысни пуль ку тесе
Вăл унăн-кунăн пăхкаларĕ;
Утне пушшех чĕпĕттерсе
Пĕр-икĕ хут саламатларĕ.

**9**

Курбашшăсем çав самантра
Хĕрсе хĕрӳллĕн канашлаççĕ,
Тен, пуçлăхне — Ирзамара —
Телей суна-суна ырлаççĕ:

«Сана, эс пуçăннă ĕçе
Нихçан та манмĕ мăссăльманлăх,
Ислам çутипеле хĕçе
Пĕрлештернишĕн эс мухтавлă.

Ан тив, пур Мăхамет çĕрне
Сан витĕмлĕ чапу салантăр,
Пур çăтмахри эмирсене
Сан ыр яту хаваслантартăр...»

Юлашкинчен мулла ăна
Коран чуптутарсах пиллерĕ:
«Чăн Туррăмăр пĕрре кăна,
Çак çын — вăл янă паттăр», — терĕ.

* * *

Çар пуçĕ хирĕç саламлать:
«Эс, Ибрагим — ман сылтăм аллăм,
Эс, хупăнми куç Салахмат,
Эс, Нурăм — татăлми арканăм!

Эс, Клыч — ман виççĕмĕш хăлхам,
Эс, Амирхан, — эсир халь пурте
Юрарăр аслă аллаха,
Сире хăй çăтмахне вăл кӳртĕ.

Çĕрте чăтас пулать этем,
Вилсессĕн — куç тулли пике-хĕр,
Ытарайми чиперккесем
Суйла-суйла эсир илетĕр.

Шанатăп çивчĕ хĕçĕре,
Ислам пур ют тĕне те тартĕ.
Каллех тепре çавра çĕре
Таса çур уйăх çул кăтартĕ...»

* * *

Басмач çарри ярать юрра
Хаяррăн, хыттăн, аравасăр.
Çавăрăнса çитсен çавра
Çак такмака çĕклет пур сасă:

«Мĕн яшша-а, мĕн яшша-а,
Хаси Ирзамар пашша!»
«Хасавата, хасавата!
Хаси ятне çĕртместпĕр эпĕр.
Вилсен вилетпĕр çакăнта,
Илсен çĕре йăлтах илетпĕр...»

Шупкалана пуçларĕ çĕр,
Тĕтре те сирĕлчĕ пăртакçă.

Анчах басмачшăн пурĕпĕр,
Вĕсем пĕри те çывăрмаççĕ.

Вĕри чĕреллĕ мăссăльман
Усламсăр кĕçĕр ĕненет,
Хаси сунан çăтмахпалан
Кĕрӳ каччи пек тĕлленет.

**10**

Хивре лаша пек ыткăнать,
Вăл сикрĕ утмăл çухрăм яхăн.
Сенкер чалма çӳçи кăна
Вĕçсе пырать утланнă яшăн.

Ак сасăсем... ак патнерех...
Ак хасават юрри юрлаççĕ...
Маттур тăнларĕ те — пĕррех
Тусем хушшипеле юрттарчĕ.

«Хасавата, хасавата!» —
Тесе вăл хăй те ĕнĕрлерĕ.
Хуралçă чарчĕ: «Кам тата?
Ăçтан килетĕн эсĕ? — терĕ.

Кама пĕлетĕн ушкăнра?
Вилес килет-им, путсĕр анчăк?!
Кама паллан?!» — «Ирзамара», —
Тесе сас пачĕ утлă каччă.

* * *

«Кам эсĕ?» — терĕ Ирзамар.
«Сеид ачи, Имран таврашĕ...»
«Имран — пăрахăç йăхлă мар,
Пучн тăрса вĕсен аслашшĕ,

Çителĕклĕ вăл тытнă мул...
Апла яту мĕнле-ха санăн?»
«Ман ятăм... эпĕ — Рахманкул».
«Телейлĕ ят. Басмач пулатăн!»

Пуç тайрĕ каччă. Асĕнчен
Ытарайми пĕр ят каймарĕ.

Мĕнпур курбашша умĕнче
Хаси тупа тума каларĕ.

Ак çын, хăй чĕрине тытса
Хытса тăрать çурта пек тӳрĕ:
Кинжал вĕçпе какай хыпса
Басмач пулма вăл тупа турĕ...

## II

Юратушăн — Багдад та çывăх.
*Араб сăмахĕ*

### 1

Пылланчĕ ешĕл виноград,
Пахчасенче саралчĕ кавăн.
Хассан хуçанăн пысăк сад,
Пахчи те сарлака Хассанăн.

Шерпетлĕ хĕп-хĕрлĕ арпус,
Ӳкет улма, айва час ӳкĕ.
Сулмаклă тутă куккурус,
Çу çеç кĕрхи путек курдюкĕ.

«Парать-ха Турă», — тет Хассан
Çынпа калаçнă чух йăвашшăн.
Хассан — илемлĕ Айниссан
Атавĕпе хăрушă ашшĕ.

Пайтах дехкан çĕрĕсене
Туртса илсе вăл пăхăнтарнă,
Пайтах аул хĕрĕсене
Ун тарçисем кайса вăрланă.

* * *

Тăвата арăм çак хуçан,
Тăваттă таранччен саккунлăн
Илме чарман ăна Коран,
Тата мĕн чухлĕ еркĕн унăн!

Çав йышлă еркĕнтен пĕрне
Хассан хуça питрех юратнă;

Саккунлă арăм тивĕçне
Йăла пăссах ăна тăратнă.

Вăл — Çĕпĕртен. Ăна Хассан,
Пĕр вунпĕр çулалла çитсессĕн,
Туяннă чухăн вырăсран
Усрав хĕр пек çитĕнтермешкĕн.

Пакша-сăсар пуçтарнă чух
Çав Çĕпĕрте ăна вăл курнă.
Ытарайман алхаснă чун,
Ун шухăшĕ йăлт урăх пулнă.

Малтан хĕр макăрнă кăна,
Ăна пайтах хистенĕ ашшĕ,
Вара йăпатнă ачана:
«Аннӳ патне илсе каясшăн,

Ку сан кукку пулать, — тесе, —
Час пырăп эп», — тесе лăпканă...
Пайтах хĕр пурăннă кĕтсе,
Кĕте-кĕтех ӳссе лăпланнă.

* * *

Пит хӳхĕм çитĕннĕ Зейнап,
Малтан вăл Зинаида пулнă.
Халь вырăсла та маннă лап,
Сăпачĕ — йăлт сыхланнă унăн.

Умри чачванне çеç эс уç:
Кăшт кӳпшекрех тута-çăвар та
Сап-сарă çӳç, тулта çут куç —
Часах славян йăхне кăтартĕ.

Ун питĕнче — сивлек çилсем
Хĕрӳ хĕвелпеле тавлашнăн —
Пĕрре куран вĕри хĕлхем,
Тепре кăвак пăр асăрхатăн.

Вунсакăр çул инке пулса,
Зейнап пĕрех ача çуратнă:
Вăл та пулин — çак Айнисса,
Кил-йышĕсем ăна юратнă.

Чăнах та, хутăш юнлă чун
Ыттисенчен йăлтах вăл уйрăм.
Туркистанпа çав Çĕпĕр ун
Пĕрлешнине ăçта та курăн.

... Ак тарăн юрлă тайгара
Йĕлтĕрпеле ашать сунарçă.
Ак çил-тăманĕ ахăрать,
Таçта выç кашкăрсем улаççĕ...

Çитмен телей, ылханлă сас...
Кунта çанталăк хĕрхенӳсĕр,
Ахаль вăл нимĕн те памасть,
Пурнас тесен — кĕрешĕр, тӳсĕр.

Кунта илешнĕ чĕрĕ чун
Вăрçать пĕр татăк чĕрĕ ашшăн.
Асав шăлсем кунта саккун:
Эс çыртмасан — сана çыртасшăн.

Шалта кунта этем чĕри,
Хуллентерех çӳрет ун юнĕ...
Çав сивĕ тӳсĕмсен йĕрри
Айниссара пит паллă юлнă.

Çапах вăл Çурçĕр хĕрĕ мар:
Хăйне шанми хавшак чеченлĕх,
Сасартăк хыпакан кăвар,
Час ылмашан хавас-кичемлĕх.

Хыткан пӳ-си, çинçе туна,
Çӳхе тута — ун тепĕр енĕ.
Кăшт чĕмсĕр, сулхăн чалдуна
Япшар, вĕри узбек çĕнтернĕ.

**2**

Хĕрарăм çурчĕ лăпланать,
Шăпах тăватă уйрăм читлĕх.
Çумри хĕр пӳлĕмне кăна
Синкерлĕ хуйхă персе çитнĕ.

Унта çап-çамрăк Айнисса,
Ăна качча çураçнă ашшĕ.
Чĕлтĕрмине янраттарса,
Хĕр хурлăхлăн ташлать пĕр ташă.

Хул-çурăмне чĕтреткелет,
Аллисене авать илемлĕн.
Те арăм ролĕ вĕренет,
Те инкекне силлет —
пĕлеймĕн.

Çут куçкĕски умне çитсен
Вăл ярăнса иртет вăраххăн:
Юлашки хут ун куçĕ, тен,
Хăй яшлăхне курса юласшăн.

* * *

Сасартăк алăк уçăлать,
Хассан хуçа кĕрет иккен.
Ун çийĕнче пĕр хут халат,
Пуçне чалма та чĕркемен.

Кĕрсессĕнех ташлан хĕрне
Вăл шухăшлăн пăхса тĕллерĕ,
Хура сухалĕн кăтрине
Пӳрне вĕçпе пĕтĕркелерĕ.

Вара каларĕ: «Ай, хитре!
Ай, манăн пĕчĕкçĕ саркайăк!
Çитет вĕçмешкĕн ирĕкре,
Йăву тĕлне те асăрха эс.

Аçу епле савсассăн та,
Вăл саншăн илчĕ ĕнтĕ хулăм.
Ик эрнерен Самарканда
Тухса каятăн эсĕ, чунăм.

Самаркандри ишшан-хэзрет
Сана хăй арăмĕ тăвасшăн,
Ун евĕчи халь чей ĕçет,
Пуçтарăн, —
вăл сана курасшăн».

* * *

Хĕр пичĕ пулчĕ шурă пӳс.
Чĕнмест: атте хуҫа, вăл паттăр.
Атте хушсассăн — йĕр те тӳс,
Кирек мĕскер тума калатăр.

Анчах старик тухсассăнах
Хĕр куҫĕнче чĕр ҫиҫĕм ҫиҫрĕ,
Ама пулас ӳт-пӳ часах
Малти телейсĕрлĕхне сисрĕ.

Ишшан-хэзрет... Аху, аху!
Паллах, сухалĕ ун чалланнă.
Миҫемĕш арăм-ши-ха ку?
Тен, ун ачин ачи авланнă?!..

Ҫук, Айнисса каймасть ăна...
Апла пулсан, ăҫта вăл тартăр?
Мĕн тутăр хăй пĕччен кăна?..
Атте хуҫа-ҫке, ҫавă паттăр...

* * *

Ҫапла вăл пăшăрханнă чух
Каллех ак алăк уҫăлать.
Те иртрĕ пĕр самант, те ҫук —
Хура чачван кĕрсе тăрать.

Хĕр хăйĕн тусĕ пуль тесе:
«Ай, Несире! Эс килтĕн-и?
Ма юлтăн-ха кая эс, э?
Сана кĕтни, сана кĕтни!..

Ман пысăк хуйхă, тусăм, ах!..
Эс ма иртместĕн? Ирт-ха, ирт.
Пăрах паранџуна часрах...
Мĕн-ма салху вара эс пит?

Ҫĕр выртмаллах-и, Несире?
Ма шарламастăн, чунăм, эс?..»
Хĕр ун чачванне сирет,
Анчах хăни-мĕн сиртермест.

Хĕр тĕлĕнет, шалт аптăрать,
Ак тамаша, мĕскер тăвас?
Хĕрарăм кĕчĕ те — тăрать,
Питне уçмасть, сăмахламасть.

«Çилленнĕ пулĕ эс мана? —
Тет Айнисса юлашкинчен, —
Çапах эс кĕçĕр ман хăна,
Ямастăп эп сана ирччен.

Е, салтăн, хывăн хăвăртрах,
Ан тарăхтар мана капла.
Сана эп хамăн хыпара
Пĕлтерĕп халĕ ... Ах, алла!

Чухлатăн-и эс, тантăш-джан,
Епле телейĕмĕр кĕске?
Хыпса çунать халь ăшăм ман —
Качча... ватта... параççĕ-çке!..»

* * *

Хĕр ĕсĕклет. Вăл такама
Каламаллаччĕ пуль çакна.
Хăй çавăнтах ыталама
Пуçлать чĕлхесĕр хăнана.

Сасартăк чĕмсĕр Несире,
Хĕре чăмăртаса тытса,
Хăй чачванне хăех сирет...
Шанк хытрĕ пирĕн Айнисса:

Ун умĕнче — чĕр кусăнах —
Узбек каччи тăра парать.
Тин çех сухал шăтан янах,
Кăшт мăйăх пур тути тавра.

Хĕвелпеле хуралнă сăн,
Çамки çинче суран çĕвви...
Вăл пит хаяр пек! Пăхăсăн —
Çемçен тухать сасси-чĕвви.

Рахманкул:

Кĕтменччĕ пуль мана кунта,
Çитменнине, капла... çĕрле...
Кирек епле пулсассăн та,
Эпир ак иксĕмĕр пĕрле.

Эс ан хăра та ан шарла:
Эп хам вăя ĕненнĕ чух
Çак юн активнĕ кинжала
Нихçан та кăларассăм çук.

Пĕлетĕп, илтнĕ: «Рахманкул —
Вăл намăссăр басмач кăна».
Унран хăрать мĕнпур аул,
Тытса паманни çеç ăна.

Мăссăльманпа мăссăльмана
Вăрçма хушмасть иккен Коран.
Ют тĕнпеле ют йăлана
Ан шеллĕр, тет вăл авалтан.

Эс хута хутăш юнлă хĕр:
Аннў сан йăхнă вырăсран.
Анчах мана вăл пурĕпĕр,
Чун каçарать юн аташсан...

Айнисса:

Тем çаврăнать халь ман пуçра?
Пĕр ним те ăнланмастăп эп...
Те синкере ку, те ырра,
Çапах санран эп именеп...

Рахманкул:

Чĕтретĕн эсĕ, Айнисса,
Басмач ытамĕнчен хăран.
Çук, эп сана пусмăрласа
Нихçан хур тумăп, нихăçан.

Басмач пулу та саншăн эп:
Кашни çынна чикмессерен
Эс пуррине аса илеп,
Кашни çаратнă тĕверен

Сан хулăмушăн мул пухса
Аçу умне килсе тăкма
Эп пурăнаттăм шут туса...
Тĕп пултăр халь çав ырлăх ман!

Çук, икĕ питлĕ пурăнăç
Йăлăхтарать, сана калам.
Мĕн мыскара, мĕн курăнăç
Туман-тăр эпĕ хампалан!

Хăш чух çапла... хĕрарăм эп,
Хăшчух хула пасарĕнче
Дервиш пулса ĕнĕрлешеп,
Хăш чух сутса ларатăп чей...

Ку пултăр кĕçĕр юлашки...
Сана çураçнă тетĕн эс?
Камне пĕлетĕп. Ытлашши
Кулянмăпăр...

Айнисса:

Мĕскер ĕçлес?

Рахманкул:

Эп Ирзамарăн ушкăнне,
Кинжал вĕçпе какай хыпса,
Тупа та саншăн тунине
Шанатăн-и эс, Айнисса?

Шанан пулсан — çак самантран
Пăсатăп эпĕ тупама.
Кала: риса-и манпалан
Халех эс ут çине ларма?

Риса-и тул çутăличчен
Никам курман-илтмен çĕре
Çитсе, ман хыт йĕнер çинчех
Мăшăрланмашкăн ĕмĕре?..

Чĕнместĕн эсĕ. Е мана
Асаплама черет çитри?
Е пахарах-и халь сана
Çемçе тӳшеклĕ ичкири?

Апла пулсассăн — эрехмет! —
Басмач эп! Кайрăм, Айнисса!
Ыр куртăрах ишшан-хезрет...

Айнисса:

Çут, тусăм! Эп риса... риса!

Рахманкул:

Риса-и? Ха! Самарканда
Тухса каяс килмест эппин?
Мулла пики пулмашкăн та
Туртмасть-и кăмăлу халь тин?

Ватсупнă пуль вăл тетĕн-и?
Ун юнĕ шĕп-шĕвĕ-тĕр, э?
Савниçĕм! Эсĕ шикленни
Ман кăмăла та сивĕтрĕ.

Тарар часрах çын куриччен,
Анчах ан ман эс: кĕçĕре,
Ута çитсе утланиччен,
Каллех эп пулăп Несире.

* * *

Мĕлке пек икĕ паранша
Шăваççĕ уйăх çуттинче.
Кĕтсе аптранă тур лаша
Çĕре чавать çыр хĕрринче.

Çывхарчĕ икĕ «хĕр» хуллен.
Лаша хартлатрĕ, тулхăрчĕ,
Тултан кăкарнă чĕлпĕртен —
Татас пекех — вăл туртăнчĕ.

Басмач параншине сирет,
Лаша палларĕ хуçине,
«Халь кирлĕ пулмĕ Несире», —
Тесе яш сикрĕ ут çине.

Таран хĕре утлантарса
Хăй умнелле лартсассăнах,

Кĕлипеле пĕр таптарса
Вăл ыткăнтарчĕ лашана.

**3**

Ишшан-хезретĕн евĕчи —
Йăр-яр хура кăвак халатлă,
Сайра сухаллă Емелчин —
Чей куркине тĕртсе, сăваплă

Сап-сар чĕрнеллĕ аллипе
Питне çу сĕрнĕн шăлса илчĕ:
«Эй, пысăк пиллĕ Хассанбек!
Сана аллах сăнавĕ килчĕ.

Ислам çути хезретĕмĕр
Санран ӳтленнĕ çамрăк ӳтĕн
Хӳтти пуласшăн терĕмĕр...»
(Хассан юлхавлăн пăхрĕ тӳртĕн.)

«...Хăй ашшĕ-амăшне кура
Çук мар-тăр та хĕрӳн тивлечĕ,
Эс ху пĕлетĕн — тавара
Тĕсне-питне пăхса илеççĕ...»

* * *

Хассан хуçа хăй хăнине
Ичкирине илсе кĕрет.
Кĕрсессĕнех çине-çине
Чĕнет вăл ăшшăн çук хĕре.

Тата чĕнет — çук Айнисса.
Чаршав хыçне, выртан çĕрне
Пăхса çӳрет вăл — çук ниçта.
«Тăхта-ха», — тет Емелчине.

Вара Зейнап пӳлĕмнелле
Утать сулмаклă уттипе.
«Вăл — амăшĕ, вăл пĕлмелле», —
Тет ашшĕ тупсăм тупнă пек.

Анчах унта та çук хĕрĕ.
Хассан хуçа киле-çурта

Тăратма хатĕр пуçхĕрлĕ,
Пурне те вăратать, ыйтать.

«Ларма чĕнмерĕ-ши пĕри?» —
Тесе вăл аула часрах
Çын чуптарать... Çĕр çăттăр-и!
Шыранисем пустуй йăлтах.

Тарçисене ут утланса
Хире тухса хăвма хушать:
«Чĕр пуççăн, виллĕн — Айнисса
Ирччен пур пултăр!» — тет хуçа.

* * *

Сайра сухаллă Емелчин
Куçне чеен хĕстерчĕ те:
«Сана эп пит хисеплĕ çын
Тесе шутлаттăм ĕнтĕ, — тет. —

Мĕскер пулать-ха ку капла?»
Хăй сăмсине шав каçăртать.
Хуçа пуç пĕкрĕ: «Çăл, аллах!
Ак хутăш юн мĕн кăтартать!..»
............................................

* * *

Салху паян Хассан хуçа,
Ун пичĕ çывăрмасăр туснă.
Ялан пĕр тытан пуçа
Сасартăк йывăр хуйхă уснă.

Ун умĕнче вĕри пăлав,
Шашлык, чабап, çӳхе лавашĕ,
Пылпа пĕçернĕ шаптала,
Халва, улма-çырла тавраш...

Ĕçме кӳк чей те măссалас —
Пăрайнă виноград сĕткенĕ...
Анчах Хассан хуçан анмасть,
Ăна хура мĕлке пĕркенĕ.

Астиврĕ лартнă çимĕçе,
Йăлашăн какăрчĕ те тухрĕ;
Унтан темскер аса илсе
Хăрах куçне пăртакçă хупрĕ.

«Чим, — терĕ вăл хăй ăшĕнче,
Вара кальян тивертсе ячĕ, —
Çаплах кулать-ши çут тĕнче?
Кун пеккине нихçан курманччĕ...»

## III

«Туркестан сĕм каçĕ!
Хупăрла, хăтар.
Йĕкĕтсем канаççĕ,
Çывăрмасть пĕр ар.

Çеçен хир кăлканĕ.
Тӳшек пул та вырт.
Ту çинчен час анĕ
Кăн-кăвак кавир.

Тĕлĕрет чинара,
Ыйхăра пахта.
Каччă куç хупмарĕ.
Пĕр самантлăх та.

Кам унта: басмач-и
Е выç шакалсем?
Туркестан сĕм каçĕ,
Чаршавна сирсем.

Камăн вичкĕн учĕ
Тулхăрать тура?
Каччăн куçĕ уçă,
Анчах каç хура.

Кирек кам çыхлантăр, —
Пирĕн пур вăй-хал:
Пирĕнпе чăн паттăр —
Утаман Байкал!»

* * *

Çапла сăвăлашать отряд
Çурма саспа çĕр варринче.
Пĕри чавсаланса выртать
Йăсăрланан вут хĕрринче.

Вăл — хăй Байкал. Иван Байкал.
Чалланнă ватă партизан.
Çынсем нихçан та кунашкал
Салху курман ăна, нихçан.

«Эй, Çĕпĕр çавраçилĕ! Ха!
Сана мĕн пулчĕ? Пĕлтерсем!»
Утамана пĕр авăка
Сырса илеççĕ тусĕсем.

«Е! — тет Байкал, — хăвăрăнне
Ан манăр, хăвăр ĕçĕре».
«Мĕнле вăл хăврăн-хамрăн, э?!
Эпир халь пурте пĕр ĕçре.

Кала, пĕлтер эс кĕçĕрех —
Мĕн хăямат? Мĕн пулнă сан?»
«Ха-ха! Невушлĕ ман чĕре
Хуçасăр йытă? — тет Иван.

Невушлĕ эп çын чĕлпĕрин
Вĕçне тăрса юлам капла?
Е, итлĕр, итлĕрех эппин,
Узбекĕ, вырăсĕ — тăнла!

... Ку чĕрĕк ĕмĕр каялла
(Ĕнер кăна пек, асилсен)...
Хам пурнăçра пĕр ухмахла
Ĕç турăм эпĕ, ачасем...

Çитсе-ши хăть пĕри сиртен
Байкал хыçне (ман хыçăм мар, —
Байкал кӳлли пур Çĕпĕрте),
Кĕрсе-ши çын кĕмен çама?

Мĕн чухлĕ юрă ун çинчен!
Мĕн чухлĕ витĕмлĕ юмах!

Ман çур ĕмĕр çав çĕрсенче
Иртсе çухалчĕ кăлăхах.

Илемлĕхпе хаваслăха
Курмарăм эпĕ çавăнта:
Шыв-шур, пĕр тăтăш лачака...
Аса илсен— юна шăнтать.

Çук, манпала пĕрле çынсем
Пултараймастчĕç юрлама.
Романтикла баргузинсем
Кĕместчĕç ман та ăшăма.

Куллен, ир пуçласа каçчен,
Çĕпре пек ушахра тăрса,
Пăтранчăк пылчăк шывĕнчен
Суйларăм ылтăн, тарăхса.

Камсем валли? — Шуйттан пĕлет!
Эс — ирĕксĕр этем, тӳсех!
Калатчĕç: яппунсемпеле
Вăрçмашкăн кирлĕ пит тесе.

Мĕн-ма тăшман мана яппун?
Мĕскершĕн эп ăна тăшман?
Манни пекех чĕре-çке ун,
Унни пекех ăс-пуç вĕт ман..

Раççей — тăван аннемĕр те —
Амаçури пек хур тусан,
Мĕскер тăвас ман ют çĕрте?
Мĕнех Порт-Артуру та сан?..

Ĕçлетпĕр. Аласем çине
Хăйăрпа ылтăн мар юлать —
Шет, çын шăмми çине-çине
Ванса та тĕпренсе тулать.

Çăватпăр ылтăн тăприне,
Шыв мар юхать хура çĕре —
Тумлам-тумламăн хăй юнне
Сăрхăнтарать-и тен чĕре...

Ман арăм тӳсеймерĕ. Вилчĕ.
Тăваттăри ачапалан
Тăрса эп юлтăм. Йывăр килчĕ.
Тертлентĕм çичĕ çул таран.

Анчах... (Ылханлă пултăр ылтăн! —
Çĕр тĕпĕнче, çын кĕсйинче,
Банкра, хĕрарăм аллинче
Ылханлă пултăр çав сар тыткăн!)

Кайран-кайран, тек чăтаймасăр,
Тарма шут тытрăмăр эпир —
Чи шанчăклă, каварлă, харсăр
Тăвată каторжник пĕр ир.

Пăшаллă икĕ хуралçа
Пăвса, пайтах ылтăнпала —
Çăтса, ура тĕпне сарса —
Шутартăмăр тайгапала.

Ман вунпĕрти ача, ман Зина,
Ман амăш сăн-сăпатлă хĕр
Çав кун курман-илтмен ют çыннăн
Чури пулать, телейсĕрскер!

Бурят патне канмашкăн кĕтĕм.
Хĕр ывăнчĕ. Ĕç латлă мар.
Кĕçех пула пуçларĕ тĕттĕм.
Ăшăнтăмăр. Тăрантăмăр.

Анчах ман хаклă кашни утăм.
Бурятăн пĕр пуян хăна —
Узбек... Унпа канаш эп турăм.
Вара вăл илчĕ ачана.

«Ăна эп усрăп, çитĕнтерĕп,
Пырса та курăн», — терĕ те...
Ман кашкăр пурнăç çитермерĕ
Халичченех çав ĕмĕте...

Ах, ма вăл ар пулмарĕ-ши
Ман амăш сăн-сăпатлă хĕр?

Мĕскер мана тайга нуши!
Пĕлейĕрсĕрччĕ ак эсир —

Мĕн йывăрăш асаплă чул
Йăтса çӳретĕп эпĕ халь,
Çӳретĕп çирĕм пилĕк çул!
Чипер çĕклем-и?.. Ха-ха-ха!»

* * *

Сасартăк ватă партизан
Йӳçенкĕн, ӳкĕннĕ çын пек,
Кулса ярать, чунне татса,
Йĕмешкĕн вĕренменнипе.

Унччен те пулаймасть — хурал
Персе те çитрĕ вут хĕрне:
«Лăпланăр, йĕкĕтсем! Тура
Юлан сасси пек илтĕнет».

Отряд шăпах пулса тăрать,
Тинкерчĕ вăл утамана.
Байкал çĕре выртса тăнлать:
«Пĕр ут пулас... Пӳлес ăна!

Пăшал сасси ан тунă пултăр!
Хăвăра хирĕç хăмсарсан, —
Кинжаллăр та — йăванса юлтăр,
Чĕрех лексен — тата аван.

Çуран анса чарма мел тупăр,
Чĕлпĕртен — кап! Басмач çĕрте.
Умне — «кĕски», Çăварне — тутăр,
Çыхса пăрах та — пулчĕ те...»

* * *

Тăвата юланут — икшерĕн —
Тухса вĕçтерчĕç ик енпе.
«Ан туртăр. Кăвара тирпейлĕн
Хуплас...» — тет пуçлăх ырнă пек.

## IV

Бухаран каятăн-и, айван?
Сăнчăрланас килет-им вара сан?

*Д. Руми*

### 1

Никам лаши те мар тура:
Рахманкулпа ыталанса —
Синкер пек, хурлăх пек хура —
Юрттарнă таркăн Айнисса.

Юрттарнă нимĕнне пĕлмесĕр,
Телей патне васканă пек.
Кам хăй юратнă — çав пĕлет-тĕр —
Çын пит пуян чун савнипе:

Ӳпле те курăнать чул çуртăн,
Чăпта та — мамăк минтерех.
Сĕм тĕттĕмре пĕр хăйă çутăн —
Çутатĕ хĕвелпе пĕрех.

Çапла калаççĕ. Эп пĕлместĕп.
Пĕлмен-тĕр Айнисса та, тен.
Басмач тени! Пĕлмен-тĕр эс те,
Пĕлсен утна хистемĕттĕн.

* * *

Байкал отрячĕн çыннисем
Пӳлесшĕн çак улах çула.
Каччи илтет. Çывхарнăçем
Утне саламатпа çулать.

Ун асĕнче те çук — ăна
Халь хĕрлисем хăваласси.
«Хĕр ашшĕ пуль аппаланать,
Ах, пархатарсăр хунькасси!

Кăвак çухаллă хезрете
Çак чечеке парасшăн-ши?
Нихçан та, ĕмĕр-ĕмĕрте
Пулмасть вăл! Çăл, туркмен лаши!

Хассан хуҫан тарҫисемпе
Хӗҫе-хӗҫӗн тӑрса пӑхар!»
Маттурӑн куҫӗ ҫиҫӗм пек
Йӗри-тавра сапать кӑвар.

Анчах ак ҫывӑх... Ҫитеслех...
«Илтетӗн-и, савни? Хӑваҫҫӗ!
Аҫун хуралҫисем... Тинех
Сана мулла хурри тӑвас-ши?..»

Пулмарӗ ӑнсӑр Айнисса:
Ҫинҫе ури кӗлипеле
Утне аяккинчен тапса
Таянчӗ тусӗ ҫумнелле.

Ҫула касаҫҫӗ ик юлан,
Утсем сикеҫҫӗ тигр сикнӗн.
Тарасшӑн Рахманкул ҫултан —
Умнех тата хӑпарчӗҫ иккӗн.

Пӗрре пемешкӗн ӗлкӗрсе,
Тыттарчӗ йӗкӗт лашине...
Йӑваш пулмарӗҫ лешскерсем —
Кармашрӗҫ хӗр параншине...

Ҫак урӑм-сурӑм мӑшкӑла
Тӳсме пултарайманнипе
Юратнӑ ар выҫ кашкӑрла
Кӑшкӑрса ячӗ урнӑ пек:

«Сире те мар, мана та мар!
Ылхан ишшан-хезретӗре!..»
Чачван сирӗличчен вӑр-вар
Кинжал майларӗ сар хӗре.

**2**

Рахманкула чӗнпе ҫыхса,
Айниссана — виллипеле
Тӑвата хӗрлӗ партизан
Ҫитерчӗҫ отряда... Мӗнле?!

Хассан хуçа карташĕ мар-çке...
Маттур йĕри-тавра пăхать:
Шлемпа та карттуспа лараççĕ,
Чалма-калпак та пур... Аха..

«Ах, пысăк йăнăш! Йăнăш, йăнăш...
Тӳрленейми эп йăнăшнă!
Ну, Рахманкул, сыхлан та тăрăш
Кĕмешкĕн çĕнĕ роль ăшне...»

«Çара янах! — тет ват Байкал. —
Ку мĕн тата? Кам ку? Апла...
Çитеттĕн пулĕ аякка,
Анчах ман урăхла йăла.

Хураллăр, ачасем, ан тартăр.
Чĕлхе кăларĕ ирпеле.
Ку çыхăнусăр-мĕнсĕр мар-тăр...
Курбан юлташ! Тĕпче. Мелле...»

* * *

Вĕлернĕ хĕр çине Байкал
Пăхса илет вут çутинче.
Тепре пăхать... Темле вăй-хал
Туртать ăна çын хушшинчен.

Туртать, çăлать темле хăват...
Çап-çамрăк, чĕмсĕр çав виле
Ăна халь, калăн, куç пăвать...
Иван тăрса пуçне силлет.

Тĕрĕсех мар вут çутипе
Ун умĕнче тахçан-тахçан
Астунă сăн çуталнă пек,
Паллана пек пăхсан-пăхсан...

Ку хĕрĕн хĕрĕ пулчĕ тен?
Пулма пултараймасть! Ăçтан?
Пурне-çукне те вăл илтмен...
Хытарчĕ кăмăлне Иван.

**3**

Курбан — революционер,
Халапçă, вичкĕн мыскараçă.
Пайтах асап астивнĕскер.
Рахманкул çавна параççĕ.

«Ну, ывăлăм, — тет ват узбек, —
Килти пекех пул. Ан хăра».
Басмач, хăйне никам та тек
Хĕсĕрлеменнине кура

Шалт аптăрать. Анчах чеелĕх
Вылять ун куçĕн шăрçинче.
«Чĕле-çăвар... У! Вăл сиенлĕ!
Ĕнен сире!» — тет ăшĕнче.

Тул çутăлса килет. Такам
Кĕлле чĕнсессĕн халь ăна.
«Епле хĕвел енне пăхам?» —
Тесе яш чун асапланать.

Унтан вăл, ăçтине манса,
Пит ӳкĕнĕçлĕ тарăхпа
Аран тухан çурма сасса
Кĕвве анать çак сăвăпа:

«Рамазанта çуралакан
Ялан пулать тет аслă паттăр,
Çапла калаççĕ авалтан,
Çаплах эпир те халь калатпăр.

Рамазанта çуралакан
Мăйне çакать тет хурлăх чулĕ,
Вăл савăнмасть тет арăмран,
Ун арăмĕ — ун терчĕ пулĕ.

Аллах чап илнĕ паттăра
(Хĕçпе сăнна чипер тытма-тăр)
Ултавлă юрату парать,
Улталаканшăн — вилĕм хатĕр.

Çунатлă вилĕм паттăрта,
Çунатлă вилĕм — çивчĕ ухă:

Тарсан та, пăрăнсассăн та —
Пĕрех ултавçă витĕр тухĕ.

Пур юрату, пур çавă, ах! —
Чуна та шăнăçмасть, юрра та,
Пур хĕрсенчен те ытларах
Эп хам вĕлернине юратăп.

Ай-яй-яй-яй, ай, Айнисса!
Куçна уçса пăхсам-и-ха:
Тӳпе сан хурлăхна курса
Пӳрне пек çыртрĕ уйăха.

Ай-яй-яй-яй, ай, Рахманкул,
Рамазанта çуралнăскер!
Пĕччен эс юлтăн, пĕлнĕ пул:
Çулу тумхахлă çав хатер!

Ирзамара тупа пăсса
Эс çĕртрĕн мăссăльман ятне.
Питне чачванпала хупса
Эс кĕтĕн чун савни патне.

Хурах та мар, басмач та мар, —
Юратнă каччă çын кăна.
Хасаварта хаяр, патвар,
Кунта — çаклантăн çӳç сăнна.

Рамазанта çуралнă эс,
Имран тавраш Рахманкул.
Тĕкел телей сана пĕлмест.
Хăрах эс юлтăн. Паттăр пул!»

**4**

Курбан итлерĕ. Маш аллах!
Ăста та юрăçă иккен!
Юлас килмест-çке мăшкăла,
Вара пуçларĕ хăй çинчен.

Вăл юрă юрласа курман,
Анчах чăнпа паха этем.
Каласа çеç парать Курбан,
Ак ун калавĕ. Пĕт-пĕтĕм.

«Ачам! Эс çамрăкрах çав-ха,
Пиçсе çитмен арбус пек çамрăк.
Итле эс манăн сăмаха,
Тен, санăн кăмăлна эп çаврăп...

Пĕлетĕн пулĕ — Бухара
Нумай пулмасть эмир хуличчĕ.
Эмир керменĕ таврара —
Камран ыйтсан та — çын кулличчĕ.

Патшалăх ĕçĕ мар ăна —
Хĕрсем çав эмире туртатчĕç.
Ясмарлăх йăви пек кăна
Ун кил-çуртне çынсем куратчĕç.

Эпир йĕркешĕн тăтăмăр:
«Яш Бухара» текен пĕр ушкăн
Пĕрлештерсе пуçларăмăр,
Эп те пĕр ункă пекчĕ уншăн...

Анчах керменĕн айĕнче
Хура тĕрме те питĕ тарăн.
Сасартăк ирĕк çут тĕнче
Çав нӳхрепре пăчланчĕ манăн.

Пире хуптарчĕç, питĕрчĕç,
Хуралçă аллине хăварчĕç.
«Ăнмарĕ шухăш, пĕтрĕ ĕç», —
Тесе нумайăшĕ хурланчĕç.

Çӳлте, çап-çутă хутлăхра,
Киленкĕç юрă янăратчĕ.
Эпир ларан тăм шăтăкра
Йĕкехӳре сасси кăначчĕ.

Çӳлте хисепсĕр хĕр-чура
Мĕлке пек шăппăн шăвăнатчĕ,
Çĕр каçиччен пайтах ура
Эмир тавра яваланатчĕ.

Эпир çĕрне те мантăмăр,
Кунне те уйлайми пулсаччĕ.
Çаплах сĕмре ларattăмăр,
Çаплах хуралçă та çăраччĕ.

Тăм нӳрĕ, пылчăкĕ айра,
Этем хури-мари, пур тислĕк...
Сып-сывă çын пĕр уйăхра
Пулса каятăн вилĕм тĕслĕ.

Йĕкехӳре пырса çыртсан
Тин кĕрешӳ хакне пĕлетĕн.
Чун тăвăлать. Пит тарăхсан:
«Вĕлерĕр пĕрех хут!» — теетĕн.

Ăшчик çунса хаярланать,
Кăшкăрупа тăнпуç анратчĕ.
Тепле тӳсетчĕ çурт çакна,
Тепле вăл ишĕлсе анмастчĕ.

Тата пăртакçă пурăнсан,
Путех вăл ишĕлетчĕ, ахăр.
Анчах çав кунсенче Фрунзе
(Маттур этем, аллах сыхлатăр!)

Пит йышлă çарĕпе çитсен,
Эмир кил-йышĕ тухса тарнă...
Çӳлтен ярaплансем çинчен
Хăватлă бомбăсем антарнă.

Çав бомбăсем таçта инçе
Тронсем ванни çинчен уланă,
Хĕвеллĕ ирĕклĕх çинчен,
Тĕрме çукки çинчен юрланă.

Хăрушă пулнă Бухара.
Хăйраннă шăл, янранă хурăç...
Çав кунсенче пире вара
Пур халăхпа çĕклесе тухрĕç.

Пире каларĕç: «Ак кермен,
Паян кунтан хуçи ун — хамăр.
Мĕскер ыйтатăр ирĕкрен?
Асапăршăн мĕскер ыйтатăр?»

Нумайăш ыйтрĕç çăкăр — «нан»,
Пире вĕри пăлав çитерчĕç,
Шерпет ĕçтерчĕçĕ, унтан:
«Тата мĕскер ыйтатăр?» — терĕç.

«Тутлăраххи те пур иккен:
Эмирĕн пысăк хĕр йăвийĕ.
Кам авланасшăн халь сиртен?
Сире пурне те пĕрер тивĕ».

Вăтанчĕç тĕрмери çынсем,
Анчах чечен парне пит çывăх.
Пур халăхпа ăна сĕнсен
Пĕр пуç çине ӳкмест вĕт çылăх.

Кашни эмирĕн витинчен
Пĕрер лаша тытса утланчĕ,
Кашнин йĕнерĕ мал енчен
Хĕр параншипеле чăрканчĕ.

Эп те сенкер çиттипеле
Пĕрне пиелесе выртtартăм.
Ку — тĕрĕк хĕрĕ, «Эдиле»
Тесе çитти çинче вуларăм.

Тасаччĕ пĕвĕ Эдилен.
Шутпа вăл пулнă пуль эмирĕн,
Тен, аллăмĕшĕ, çĕрмĕш, тен...
Ăшра эп шухăшларăм вирлĕн:

Пăртакçă сывалам кăна,
Тĕрме асапĕ çеç кăшт ирттĕр,
Эмир ăсатнă ылтăна —
Хăть тамăкри пек çулăм витĕр —

Афганистан енне каçса
Тăпăлтарса илетпĕр терĕм.
(Çав самантра маттур Фрунза
Тата нумай хула çĕнтернĕ).

Анчах пĕлсем, ачам, пĕлсем:
Çумра чипер пике пулсассăн,
Пăрахăça тухать этем,
Хĕçне вара питех тытмастăн.

Эрне, эмир кĕлемине
Куллен-кунах кура тăркачă,
Малтан эп унăн еркĕнне
Пит астивесшĕнех те марччĕ.

Ют пекчĕ вăл. Кĕç иртрĕ чир,
Сывалтăм, кирлĕ чун уççи те.
Каланă-çке: хĕрарăм — хир,
Кам сухалать — çав ун хуçи тет.

Сухалани пулнах вара...
Йĕнерĕм шăп çулталăк канчĕ.
Çав тапхăр маншăн ялăмра
Пур вăрçă-харçă та лăпланчĕ.

Йĕри-тавра хисепĕ çук
Юланутсем вĕçсе çӳренĕ.
Басмач çине хĕрли ун чух,
Хĕрли çине басмач хӳтернĕ...

Таджик, туркмен, казах, узбек —
Çĕршыв йăлтах сиксе вĕренĕ.
Эп çеç, телейĕм çитнĕ пек,
Сенкер çиттипеле пĕркеннĕ.

Вара çапла каларăм эп:
Нӳхреп пекех иккен ман чунăм.
Кунсем хĕрӳ — эп сивĕнеп,
Кун сивĕ чух — хĕрӳллĕ пултăм.

Анчах пĕрре, пĕр ирхине,
Эп урăх шухăшпа вăрантăм.
Çумра выртан Эдилене:
«Кĕт, — терĕм те витсе хăвартăм. —

Кайса килем пасаралла,
Илемлĕ парнесем кĕт», — терĕм.
Хам чикрĕм çивчĕ кинжала,
Ута тĕреклĕ йĕнерлерĕм.

Асилтĕм аскăн эмире,
Тĕрме хĕн-асапне асилтĕм...
Хаяррăн хăйрăнчĕ чĕре,
Çиллессĕн çунăхрĕ ӳт-тирĕм.

Кунсем-мĕн киленме хушман,
Сӳнмен пулса тăшманăн вучĕ.
Унтан вара çак утăм ман
Пĕрремĕш киленӳ пек пулчĕ...

Ак эс те, эп те мăссăльман,
Анчах пĕрне-пĕри шанмастпăр.
Эп — санăн тăшману, эс — ман,
Çапла хушать халь саманамăр.

Эс çамрăк, чĕрӳпе хастар,
Анчах айван хастарлăх санăн.
Сана эп ӳкĕтлесшĕн мар,
Çакна кăна ăнлантарасшăн:

Пĕччен тĕвепеле тухсан,
Аташасран шик пур, тăванăм,
Çампа инçе çула ялан
Çынсем каяççĕ караванăн.

Эс Ирзамарăн уртинче —
Ют пуш хирти пĕччен тĕвех-çке.
Пирĕнпеле халь пур тĕнче,
Пур чухăнсем пире пĕлеççĕ.

Сана каланă-тăр: тĕне
Сыхлатпăр, тенĕ-тĕр, айванăм.
Эс пур — эмир юлашкине,
Ху сăнчăрна хăвах сыхланă.

Çи-пуçăм ман санни пекех,
Анчах чунри çулпуçăм — урăх:
Вăл Турă мар, вăл çĕр çинчех,
Мехел çитсен ăна эп курăп.

Лăплантăр акă самана,
Юсатăр çул-йĕрне тăван çĕр, —
Эп пурĕпĕр пĕрре ăна
Çитсе саламламашкăн хатĕр.

Вăл ман пекех тĕрмесенче
Хĕвел çутисĕр хĕсĕрленнĕ.
Раççей инçе, Мускав инçе,
Анчах ăна çывхартрĕ Ленин,

Çав манăн чунăмри çулпуç,
Эпир ун ирĕкне тăватпăр...
Ак кам патне эс, шăллăм, куç,
Ав пирĕн Ленин янă паттăр...»

Рахманкула Байкал енне
Курбан куç хӳрипе кăтартрĕ,
Хуралнă вутпуççисене
Патакпала тĕртсе пăтратрĕ...

* * *

«Пытарăр хăвăр йăлăрпа», —
Тесе ал сулчĕ те Иван —
Ик пысăк шурă тутăрпа
Пĕркенчĕ пĕвĕ Айниссан,

Çĕлерĕç те хĕррисене —
Çав пулчĕ тупăк выранне.
Тăваттăн хучĕç хул çине
Пĕр йăткăçăн тăват вĕçне...

Йăтса каяççĕ инçех мар —
Тăвайккинчи çăлкуç патне.
Хыçран утать пĕр ушкăн ар,
Йăлтах пăшаллă — сых ятне.

Тин алтнă нӳрлĕ шăтăка
Тĕпне вак чул сарса хĕре
Антарчĕç те пĕр авăка
Тинкерчĕç шухăшлăн çĕре.

Пăрахрĕç ывăç тăприне, —
Çак вырăн пултăр канлĕхе.
Чул лартрĕç вилтăпри çине
Çырусăр-мĕнсĕр. Хальлĕхе...

**5**

Тӳлек çĕр. Сасă-чĕвĕ çук.
Бурхан аул шăп тĕлĕрет.
Тул çутăла пуçланă чух
Унта отряд пырса кĕрет.

Кăшт вĕркелерĕç йытăсем.
Мамăкпала ут урине
Чĕркенĕ юланутçăсем
Тытаççĕ çул Хассан патне.

Ертсе çитерчĕ Рахманкул.
Çуртне илеççĕ çавăрса.
Анчах епле эс сых ан пул —
Хапха хуралĕ турĕ сас.

Çыхса пăрахрĕç хуралçа.
Кĕреççĕ карташне, шала.
Сиксе тăрать Хассан хуçа,
Пăхать шалтан вăл тулалла.

* * *

Кушак пек йăпшăнса таçтан
Патне çывхарчĕ Ирзамар:
«Апла иккен-ха эс, Хассан!
Халь тин эп санăн хăну мар!

Эс карнă вăрттăн таната!
Сăпса йăви ку! Ме сана!»
Пăшал кĕрĕслетет шалта,
Чĕнми тăвать вăл Хассана.

«Ку — Ирзамар! — тет Рахманкул, —
Пĕлетĕп эпĕ сассинчен.
Тăхта-ха, чим кунта эс юл,
Майлатпăр час, Иван пичче!»

Курбан вăл мĕн каланине
Унтах куçарчĕ вырăсла.
Хăй пăхкалать Байкал çине:
«Мĕн калĕ, — тет, — Рахманкула?»

«Ан тартăр! Тытăр чĕрĕлле!» —
Хыçран Иван сасси кĕрлет.
Ватаççĕ алăк. Тĕпеле
Рахманкулпа виç çын кĕрет.

Икшерĕн шурĕç шалалла,
Икшерĕн икĕ енĕпе.
Чее, хăравçă кашкăрла
Шалтан такам сăнанă пек...

Сасартăк пулчĕ куç тĕлне
Арçын. Йăваш çынах пăхсан.
Персла хĕретнĕ сухалне
Ик аллипе илет шăлса:

«Ха! Рахманкул! Ытла аван
Тытатăн эсĕ сăмахна!
Сана курма эп шутламан,
Килех, килех, эс — ман хăна».

Кĕске пăшалĕ ун вăр-вар
Тухса çĕкленчĕ кĕсйинчен.
«Ме, йытă!» — терĕ Ирзамар.
Йăванчĕ Рахманкул çемçен.

«Çыхсамăр хăвăртрах хăйне!»
Пемешкĕн ĕлкĕрчĕ кăна —
Сикеççĕ виççĕн пĕр енне
Тытмашкăн вăйлă тăшмана.

Калле чака-чака тăшман
Тепре пемешкĕн ĕлкĕрет,
Çакна илтсе татах тултан
Этем кĕпĕрленсе кĕрет.

«Перетĕп! Парăн, Ирзамар!» —
Тесе Курбанĕ кăшкăрать.
Ӳкĕтлени усăллă мар
Таппа çакланнă кашкăра.

Таçтан шалтан тĕлле-тĕлле
Перет вăл çине-çине,
Кулса ылханлă Эсрелле,
Юлашкинчен перет хăйне.

* * *

Паçăртанпа шăри-шари
Янратчĕ-ха хĕрарăмсен.
Пăшал сасси йăнсан — чари
Уçаççĕ алăкне хăйсем.

Хуллен утса тухать пӗри,
Питне вӑл кӑтартмасть ҫынна.
Чачванӗ витӗр ҫав тери
Хӑй тимлӗн тинкерсе сӑнать.

Чалланӑ вырӑсла сухал
Пӑхтарнӑ пек ҫав чавчана.
Хӑйне те тинкерет Байкал,
Куҫ пӑвнӑ пек вӑл Ивана.

Сасартӑках хура чавчан
Яр сирӗлчӗ хӑрах енне:
Хӗрне палларӗ партизан,
Палларӗ хӗрӗ ашшӗне.

1928—1934, Хусан, Мускав

## СПАРТАК

### 1

Римре,
        пӗр тавернӑ хупахпа кӑна
паллӑ плебей ураменче,
каҫсерен
        «виноград сӗткенпе»
                                пухӑнать
хула хура халӑхӗ
                пур енчен.

Пайац,
        гладиатӑр,
                шӑтӑк алтакан,
йӳнрех артиссем,
        проституткӑсем...
Хупах кӗр кӗрлет
                ҫӗр хута
                        алӑкран
ҫӗнӗрен ҫӗнӗ ушкӑн кӳртсе.
Мӗскер гладиатӑршӑн
                        пурӑнӑҫ?
Паян хӑйпеле кӗрекеллӗ ҫынсем
ыранах, тен, ӑна
                    тӑсса хурӗҫ

арен варрине
ирĕксĕр çĕнсе.
Кам уншăн
«хăтарăр» тесе
алă çĕклĕ?
Пурин пуç пӳрни те аялалла.
Вăл сывлĕ-ха,
мĕскĕн чура,
тимĕр çеклĕ
пырса çаклатсан
юлашки асаппала.
Атя, гладиатăр,
пĕтрĕ вăййу санăн.
Эс халь — çăхансем валли апат.
Триумф хапхинчен
сана кӳртрĕç,
тухатăн —
Пытару хапхинчен
мăшкăлланă ятпа.

Диктатăрăн
сăрт пек çу ĕнсере, —
чура та этем икенне
пыр систер ăна.
О, Ромăлпа Рем.
Ахаль мар-мĕн сире
кашкăр ами
ĕмĕртсе ӳстернĕ.
О, Рим —
ĕмĕрлĕх хуласен хули —
чарусăр,
чĕресĕр,
этем сăнсăр Рим!

Сана-и,
тамăк шуйттанĕн кулли,
сана çĕр ан çăттăр-и?!..
Çапла ылхану
амфортан амфора
чашкăрать те,
каллах лăпланаççĕ пăртак.

Каллах
кулленхи хыпарсем:

«Ыран
тухать гладиатăр Спартак».
— Охо!
Кăçалхи саттурнали
пуян-мĕн.
Спартак
Фракирен...
Çавах пулсан —
вуникĕ пин сестерцийе
туяннă
теççĕ ăна
ун хуçи Ациан.
Вăл çĕр вăрçăра ытла пулнă.
Тахçанах
ăна
Рим аренĕ çине
кĕтеççĕ.
Хăрамасть-ши пăртак ланист
çăхана
ывăтмашкăн
çав хаклă аша,
пĕлесчĕ? —
«Мĕн хăрамалла, —
кăрчанкăлла Суллă
ăна
икçĕр çирĕм пин
тӳленĕ.
Çитменне
— паллах —
Спартак чĕрĕ юлĕ,
хальччен вăл
йĕркеллĕ суран та илмен вĕт.
Хĕрĕх тăххăрĕш
тӳнĕçĕ ак —
алла касăр! —
вăл,
аллăмĕш,
тухрĕ чĕррĕн.
Хурлăх пире:
çакăн пек вăйлă,
харсăр
тăванăмăр та
чура-çке пирĕн!..»

## 2

Çĕр çирĕм пин çын кĕрекен
циркра
лăк тулли халăх,
çапса хĕснĕ пек.
Халăх кĕтет,
шăхăрать,
йыхрать
чунне хĕтĕртсе
паянхи ятсемпе.
Шăтăр та шатăр
чăтăмсăр ал çуппи.
Вăхăта ирттерме
йĕклетсе какăрса
чăмлать юн тултармăш пуян,
а çукки
кышлать ăшаланă пăрçа.
Пăрçа та,
тултармăш та —
шыв çĕклекенскер:
«Сыпăрсам
Тускулан шерпетне!» —
тет эрехçĕ.
Курка хыççăн вара
çухăраç шикленмесĕр:
— Часрах, гладиатăрсем!
Ма кĕттереççĕ? —
Акă
çĕр çирĕм пин çын шăнăçуллă
Аслă цирка
лӳпперрĕн,
хуллен
Т е л е й л ĕ  ĕ м п ӳ —
К о р н е л и  С у л л ă
пырса кĕчĕ хăйĕн свитипелен.
Пĕтĕм пичĕ-куçĕ шатра,
юнлăн-пӳрлĕн
тăрать тăртанса йĕрĕнчĕк аскăнлăх.
Çакăн пек сăнсăра
Рим хуçи пулма пӳрнĕ...
Мĕскер тăвăн
ылтăн тĕнче каснă тăк?

«Ал çупăр,
ал çупăр,
антра сурăхсем...» —
терĕ диктатăр
хăй тĕллĕн
утуçăн,
хĕрхӳ куллипе
кăмăлне сĕвĕртсе.
Консулсем
пачĕç паллă:
«Пуçлăр.»
Çирĕм пилĕк фракисен
хĕрлĕ кĕпе,
самнитсен
çирĕм пиллĕкĕшин те —
сенкер;
тухрĕç вĕсем
умлă-хыçлăн
йĕркипе
çамка айĕнче
пытарса синкер.
Суллă умне
пырса тайăлчĕç.
— Пĕт! —
терĕç анчах
кашни
ăшра.
Епле вĕсем
киленсе
хĕçпе
турĕччĕç
çак çултан тухнă вăкра!
Хĕрлĕ тумлисен хушшинче
Спартак.
Хапха юпи пек вăл.
Куç шăрçисем
пĕр сиввĕн çиçсе
ăс вăйне кăтартаç,
пĕр —
юн хĕрӳне
вуткăварлăн çиçсе.
Матронăсем мар,
весталкăсем те

кӗреш Спартака сӑхланса,
«Римре ҫуралмалла пулнӑ ку ҫын! — теҫ, —
Епле вӑл станлӑ,
                таса...»
Пуҫланчӗ вӑрҫӑ.
                Сенкере хирӗҫ
                                хӗрлӗ.

Халӑх
        тытать
                тӗрлӗрен пари:
«Аллӑ талант хӗрлисемшӗн!
                                Кам кӗрӗ?»
— Ҫӗр сенкерсемшӗн! —
                                тет тепри.
Хӗҫ янтӑрать,
                питлӗх-шлем чанклатать...
Хӑйӑр сӑрланчӗ
                хӗрлӗ юнпала.
Пурте вӗсем
                выртмалла ҫакӑнта,
юлсан
        пӗр-иккӗш
                чӗрӗ юлмалла.
Спартак станӗнче
                чакнӑҫем чакса пычӗ ҫын.
Чакрӗ татах,
                юлашкинчен
ҫичӗ ҫынпа
                ҫапӑҫаҫ вӗсем виҫҫӗн.
Анчах вӑл шлемпа-ха,
                        щит ун аллинче.
Сенкершӗн пари тытнисем
                                хавасланнӑ,
хӗрлишӗн тытни
                ларать шӑпӑртах.
— Сыхлӑр ман ҫурӑма! —
                        арӑсланӑн
ҫухӑрса ячӗ Спартак.
— Тата минутран
                ҫӗнтеретпӗр эпӗр! —
терӗ те вӑл
                ҫав самантрах

иккӗшне
пӗр сулӑмпа
тӗпӗр-тепӗр
чиксе йӑвантарчӗ
ҫичӗ самнитран.
Анчах
ҫавӑнтах
икӗ хӳтлӗх те тӳнчӗҫ,
вӑл юлчӗ пӗччен
тӑватӑ ҫынна хирӗҫ.
Ҫеккунт хушши
лап унӑн шанчӑкӗ сӳнчӗ.
Арен тӑрӑх кайрӗ чупса фракийӗс.
Лешсем хӑвалаҫҫӗ.
Сасартӑк Спартак
ҫаврӑнчӗ те
тата иккӗшне
пӗр трук
йӑвантарчӗ чиксе кӑкӑртан,
а виҫҫӗмӗшӗ
хӑрасах тӗшрӗлнӗ.
Цирк
ик тӑшман куҫпа куҫ юлсанах
кӗмсӗртетсе кайрӗ
аслати авӑтнӑн.
«Ан хуйхӑр, Крис,
эп хӑтарӑп сана», —
терӗ Спартак
«тӑшманне»
вӑрттӑн.
Унтан вӑл ӑна,
вӗлерес мар тесе,
ҫапрӗ щитпа
пуҫӗнчен
хуллен.
Вилӗм-и,
пурнӑҫ-и
сенкер тӗсе?
Пурин пуҫ пӳрни те
ҫӗкленчӗҫ ҫӳле.
Мухтав паттӑра.
Урра! Урра!
Ирӗк!

Ирĕк парас
Спартака! —
Сасартăк
лăш кайрĕ чуран ура:
«Тĕлĕк мар-ши ку?
Ирĕк!..
Кам патăр-ха?»
— Ирĕк! —
«Çук!
Парас мар ăна ирĕк!
Вăл
Рим легионĕсенчен тарнă çын.
Çук тивĕç
ирĕклĕхе
дезертирĕн!» —
теççĕ сенкер парипе ларнисем.
Анчах
хĕрлисем нумайраххăн.
— Ирĕк!!! —
плебей галлерейĕсенчен янтрать.
Цирк служăщи пычĕ:
«Пуç тай часрах, —
терĕ. —
Суллă сана
парать ирĕк,
антра!»
Фракийĕс
пĕтĕм улăп пек пĕвĕпе
тӳрленчĕ те, мăнкăмăллăн
пуçне тайрĕ.
Цирк
çухăрать
тĕнче пĕтнĕ пек:
«Сывă пултăр
Спартак —
рудиари!»

1934

## ЯМАНКАС ЮМАХӖ

*Петӗр Чичканова*

Киремет тӑвайккинчен
Инҫех мар — колхоз вити.
Ӑшӑ тӗтӗм ӑшӗнче
Ут пӑхан япшар ватти
Пуҫне пушӑт ҫыхнӑ та,
Чӑштӑр-чӑштӑр ҫӑпата
Хуҫнӑ майӑн, ват ӑсне
Йӑпатса, вылянтарса
Сӑмахлать хӑй сӑмахне,
Чӑннипех юмах юрса.

«Пулнӑ виҫҫӗн пӗртӑван:
Аксарин, Чура, Яман.
Хӗвел тухӑҫ хӗрринчен,
Ҫеҫен хирлӗ ҫӗрсенчен,
Хусан хули хыҫӗнчен, —
Тем сӑлтав хӗтӗртнипе, —
Хӑйсен сиплӗ тарӗпе
Кӑпкалатнӑ тӑпраран
Пуҫӗпех тарса, писсе
Ҫакӑ пирӗн таврара
Вучах чӗртнӗ-мӗн ҫитсе
Ҫав пӗр варлӑ виҫ тӑван —
Аксарин, Чура, Яман.
Калаҫатчӗҫ: сӗм вӑрман
Пулнӑ тетчӗҫ ҫакӑнта;
Ниҫта пуртӑ янтраман,
Сӗрлемен пӑчкӑ та.
Пуҫласа ҫав тӑвансем,
Тухан хӗвеле пӑхса,
Хул айне калпак тытса,
Ҫӗре алӑ тивертсе,
Авалхи пек пӗр кана
Тунӑ та ҫын йӑлине, —
Виҫҫӗш виҫӗ ҫӑкана
Картнӑ несӗл паллине.

Аснӑ кайнӑ сӗм вӑрман
Ыйхӑран вӑратнипе:

Ахăртать хăй усракан
Пур чуна та тенĕ пек.

Упа-кашкăр улашать,
Мĕкĕрет пăши-палан.
Пăшăх килчĕ пурăша.
Сăсар сикрĕ хăвăлтан.

Кайăк-кĕшĕк чăв та чав,
Çăлтăр пек чăмать мулкач.
Сим сĕткенлĕ йывăçа
Сăхать пуртă кач та кач.

Ӳхĕреççĕ ӳхĕсем,
Шар сунать çăхан-курак.
Никĕс пăтти чӳклесе
Виçĕ тăван пӳрт пурать.

Вăкăр-пăлан хăмпипе
Карчĕç пӳрчĕн тĕнине,
Уртăш йывăç ункипе
Çакрĕç йĕрĕх пĕрнине.

Карташпăтти астивсе
Çавăрчĕç карта-хура;
Чĕр йытта çĕре чиксе
Турĕç чыс Пихампара.

Йĕкĕлти кил ийисем,
Хăтлăха унран Хĕртсурт,
Тĕпсакай кăчăрмисем, —
Йăлт ĕрчетрĕ çĕнĕ çурт!

Авалхи тĕшмĕшсемпе
Сĕмленен улах ăс-хал
Хăй тавра вăл пĕтĕмпех
Чăк тултарнă ыр-усал:

Çула тухăн — виртлесе
Аташтарĕ арçури;
Шывра — Вутăш хĕрĕсем,
Уйăх — Вупăрăн чури.

Алччамуй алпастăсем,
«Катьти пар» упăтесем...
Мĕн курмасть-ши çав этем
Юлхав пуçăн йӳтесе!

Пур усал-тĕселе
Хӳтĕлет-мĕн Киремет.
Виç тăван ăна пиллет
Пуринчен паха хирмет:
Чи малтанхи сунарта
Тытнă пăлан, тытнине»,
Чĕррĕн касса тăватта,
Ывăтрĕç тăват енне.
Хăватлă-çке Киремет!
Ăшĕ-чикки хура юн.
Пур хаярĕ-мурĕ ун
Тарçи-тĕрçинче çӳрет,
Тенĕ халăх ун çинчен.
Пӳлĕх Туррăн пахчинче
«Йыт йăли» туса пĕрре
Ылхантарнă та хăйне,
Вăрласа Хĕвел хĕрне
Çак çĕре вăл килнĕ тет
Урăм-сурăм Киремет.
Пухнă та тискер хуçа
Хăй тавра пур сĕмсĕре,
Ырăпа вăрçа-вăрçах
Ватăлать тет тĕнчере...

* * *

Кун ылмаштарать куна.
Çул иртет. Этем хунать.
Чура хăй ял тăвать те —
Чурачăк ят парать тет,
Аксарин тăвать А к с а р,
Яман — пирĕн асатте —
Çывăх та мар, инçе мар,
Сирĕн тăтăш çӳрекен
Çулăр-йĕрĕр çинче мар, —
Пирĕн хапăл кĕреке
Варринчех-и, тен, çав ар...
Юмах юплĕ. Тӳррипе —

Яман тунӑ, тетӗп эп,
Ҫак эпир халапласа
Ларакан Я м а н к а с с а.
Йышлӑ юхнӑ пулӗ шыв,
Йышлӑ ҫиӗннӗ пуль чул.
Вӑрӑм* ҫӳллӗш-туллашӗ
Капла ҫеҫ пулман ун чух.

Кӑк кӑкланӑ уй уҫма,
Хӑнӑхтарнӑ хурт-хӑмӑр.
Арсерен пӳлсе паҫма,
Аслӑланнӑ кассӑмӑр.

Хӗвел аннӑ хӗрелсе,
Уйӑх тулнӑ шуралса.
Шӑппӑн шунӑ ӗмӗрсем
Хура пӳрт пек хуралса.

Ӗнсе ҫинчен ӗмӗрте
Хырӑҫ-марӑҫ татӑлман.
Ӗмӗтсӗр Киремете
Тӑкнӑ пӗлӗм те юсман.

Куҫӗ витӗр ун курать:
Чиркӗве — шӑтӑк тӑхлан
Киреметшӗн — чӑн нухрат,
Тетчӗҫ ӗлӗк-авалтан.

Хаярччӗ-ҫке ҫав хуҫа!
Ӳкӗтленӗ пӗр мулла,
Пупӗ ҫавӑрнӑ пуҫа,
Латӑнне сулла-сулла, —

Чӑваш тунӑ хӑйӗннех:
Хӑть мӑйран ӑна эс пус —
Хӗстернех вӑл хыр ҫумне
Вӑрттӑн-карттӑн пӗрер пус.

Хырӗ, эп астӑвасса,
Виҫӗ тӗп кӑначчӗ те,
Ӗлӗкрех ҫын аташса
Кайнисем те пулнӑ тет.

* Вӑрӑм — юханшыв ячӗ.

Тимĕрç вырăс ларнă-мĕн
Киремет хырне касса.
Ут кунри вăл алтнă-мĕн, —
Вилнĕ учĕ антăхса.

Тепри çав хыр каскинчен
Вĕлле хăвăллана тет, —
Хурт сăрри те юлмиччен
Утарĕ саланнă тет...

Пит хаярччĕ сăтăрçă!
Хырĕ умĕн иртнĕ чух
Сас тăву ан пултăрччĕ, —
Вăл вара тытмасăр çук.

* * *

Кун таврăннă кунашкал,
Çĕр çаврăннă çавнашкал, —
Пирĕн Яманкассинче
Иртсе кайрĕ çав мăшкăл.

Сăвапутă тетĕр-и,
Революци тетĕр-и, —
Куçкĕрет пĕр кĕркунне
Хăрчĕ вată хыр тăрри.

Ял-йыш хирĕç ял-йыша,
Яшши итлемест ватта,
Ватти пăхăнмасть яша, —
Туп тупсăмне тупата!

Амасăр хурт-хăмăр пек
Чăваш халăхĕ тата
Хăйĕн ывăл-хĕрĕпех
Ĕç пуçлать Шупашкарта.

Ĕмĕр-ĕмĕр пулмана —
Хамăр телей хамăра
Кӳнĕ ӳкнĕ. — Самана! —
Терĕмĕр эпир вара.

Киремете хисеп çук,
Пуп йăпшăнса çеç çӳрет.
— тулчĕ, харам пыр, шалçу! —
Тетчĕç çамрăксем тӳрех.

Кĕç колхоз çĕн самани...
Мĕн пулмарĕ çак ун чух!
Каличчен каламанни:
Ӳт чĕлхенĕн шăмми çук...

Пĕччен çын сурать — типет,
Халăх кӳл тăвать, сурсан.
Тĕрĕс ку тĕрĕссипех,
Хамăрах ĕнтĕ аван.

Анчах тепĕр майлăрах:
Халăх çăварĕ — хапха,
Тĕрлĕрен вăл кăларать
Хăлха илтнĕ сăмаха.

Ик пускил пĕрле пырать, —
Кăн пăхать те пăрăнать.
Ик тăван пăри вырать —
Пăтти пиçнĕ ăрасна.

Арçын ака акалать,
Матки ларать кантурта.
Ачисем — колхозалла,
Ашшĕ-амăш — яхăн та!

Кӳршĕ хĕрĕ пит кервен, —
Сăхлансах эс ан авлан:
Вăл — усламăç хĕрĕ-мĕн,
«Çĕн çĕре» ун каймалла.

Купăсçи чипер, кăтра, —
Кайăпах тесе ан шан:
Унăн ашшĕ салтакра
Шунă шурă çарпалан...

Çыннăн çылăхĕ шалта,
Çав-çавах ăна веçех
Нихăш пупран та ăста
Çиеле кăларчĕçех.

Пӳрт пуран — турпас сикет,
Сăвăран — вӗçет кипек,
Ял тени те çавă-çке —
Танăç мар ăш-чиккипе.

Колхоз — пура, калăпăр,
Пурамашкăн пит йывăр.
Халăх — кăшăл, калăпăр,
Сăвăрма пӗлсе сăвăр!

Пукра вăрри те пулать,
Армути те тырăра.
Эртелре те — е кулак,
Е наян ята ярать.

Начарах мар пулмалла
Сăвăртăмăр кăшăла:
Кун куратпăр курмалла,
Телей шăтрӗ чăшăлах.

Киремет те хӳтлеймест,
Пӳлӗхçи те пӳлеймест:
Виçӗ хыртан пӗр хырне
Касрăмăр та ятăмăр,
Унăн кутаски çине
Пӗр машина лартрăмăр*!

Вăл çапать, вăл сăвăрать,
Пӗтӗм тӗшмӗш ăс-хала
Ударника çавăрать,
Хулан кăтартать яла.

Çынсене те çăмăллăх,
Урхамахăмсем те ман
Халӗ ӗнтӗ кăмăллăн
Кӗçенеççӗ тӗл пулсан.

Малтан, чăнне каласан,
Шикленеттӗм, шеремет.
Анчах çук — çак колхоза
Çӗнтереймӗ Киремет.

---

* Вуникӗ лаша вăйӗллӗ двигатель лартнă тесе асăрхаттарать 1934 çулхи «Канашăн» 294-мӗш №.

Пĕтĕм сăрт аяккипе
Лартрăмăр улма пахчи:
Улми пулчĕ алтăр пек,
Çырлисем — ĕне чĕччи.

Кăçал мар, килес çул мар —
Виç-тăват çултан килсе
Астивме йыхрав ярар,
Хальлĕхе картса хурар:

Çавăн чух ĕçсе-çисе
Киремет тăвайккине
Урăх ятлă хумалла;
Халăх халь ун пеккинне
Мĕлкине те манмалла!

* * *

Сăмах çитрĕ пуль пине.
Ман такмакăм пĕтмелле.
Эй, Ятман асаттене
Тăратсанччĕ, пĕсмĕлле!

Куртăрччĕ вăл, йăх пӳрен, —
Тĕтĕм-сĕрĕм кăн-кăвак
Явăнан хура пӳртрен
Ăçта çитрĕ кассăм ак!

Пӳртĕм пур, хампарăм пур,
Лаççăм пур та клубăм пур,
Утмăл урхамахăм пур, —
Халăх шаннă мулăм пур.

Ылтăн саспаллипеле —
Ман ятпах тет, авă кур!
Куçăмсем киленмелле
Эрешленĕ крамăт пур.

Ватăлмалăх кунăмра
Куртăм шĕкĕр Мускава,
Яшсемпе пĕр çырурах
Тивĕç пултăм мухтава.

Мускав сайӗ асӑмран
Каяс ҫук ман виличчен,
Пур йыша та кассӑмра
Эп пӗлтертӗм ун ҫинчен.

Мухтав аслӑ ҫынсене!
Сӑвап пултӑр яланах
Аслӑ вырӑс ывӑлне —
Пархатарлӑ Ленина!»

1934

## ШЕЛЕПИ ШЕРЕПИ

Йӗтӗр-йӗтӗр-йӗтӗрпи,
Йӗтӗр тӑрӑх шерепи.

*Сутмалли юмах:* с ӗ л ӗ .

Ҫав тери аякра! Нимле сӑвӑ-юрра та,
Калава та вӑл шӑнӑҫайми — ҫав инҫет.
Пин ҫулхи юмах витӗр эп пӑхнӑн куратӑп:
Ман ҫӗршывӑм ҫинче вилӗмӗн ҫави ҫех.

Кам пӗлет, тен, историн ҫапла пуль саккунӗ:
Вӑйлине яланах кӑларть вӑл тӳрре.
Анчах кам паян кун пӗлмӗш пулӗ, кам тунӗ:
Миҫе ӗмӗр таран туламан-ши пире!

Ӑру хыҫҫӑн ӑру ӑсатса тӑнӑ Ази,
Вир пӑтти пек ҫӗр ҫаврӑннӑ вӗресе.
Таҫта тем хӑямат сӑртӗнче ҫухалаҫҫӗ
Пирӗн мӑн маҫаксен, мамаксен йӗрӗсем.

Сӗм-тӗттӗм! Кӗнеки те юлман-ҫке чӑвашӑн.
Ҫисе янӑ ӑна та ӗне тахҫанах.
Кам-ха ҫавӑ ӗне? Мӗскер халӑх каласшӑн?
Мӗн пытарнӑ ҫав сфинкс пек ытарлӑ сӑмах?

Сӗм-тӗттӗм! Хура пӳрт тӗни пек сайраран ҫеҫ
Уҫӑлать пӗр хыпар иртнӗ пурнӑҫ ҫинчен,
Анчах йӑлтӑр хӗвел те кӳртмест: сӑрланаҫҫӗ
Хуп-хурах кун-ҫулсем пирӗн ун ҫутинче.

Тамерлан лашисем урпана тĕшĕреççĕ,
Куршанаклă хӳри-çилхине вĕçтерсе.
Меçĕт уйăхĕпе тирĕнет киреметçĕ,
Унтан чан улавне ылханать, хĕресе.

Миçе хут юнпала пĕверленнĕ-ши Атăл?
Миçе пурнăç кĕлернĕ юнланнă хума?
Вăл Хаяр Ивана та курса, Разина та,
Пăкачав пăлхавне те... Нумай-çке, нумай!

Хутлăн-хутлăн сийленнĕ кун-çул тĕми витĕр
Хыпалатăп пусарăнчăк сĕм авала.
Пĕр сăмах-иероглиф пытарнă пур сий те:
Вăл — чуралăх, кирек те мĕнле хыпала.

Ан тив, пĕр-пĕр таса тинехпиçĕ килентĕр,
Тутлă пулхăр шерпечĕпеле чӳхенсе.
Пултăр пулхăр, чăваш, анчах эпĕр пĕлетпĕр:
Чи малтан — унта пур пуянпа чухăнсем.

Унта пур мăрсасем, турхансем, пур асамăç,
Тӳресем — пире сутнăскерсем ĕмĕрне.
Каярах вĕсем пирĕн пата евчĕ ярĕç
Юрламашкăн чее эсерсен юррине:

«Чăваша чăвашлах лайăх-çке сăйламашкăн...
Пĕр пĕтĕм, уйрăлми ырă пултăр йăхне.
Ма Ехрем хуçапа пĕр ик-виç Селиваншăн
Лартмалла темиçе кĕреке хушшине...»

Шалт та шалт тав курки: «Тав, мухтав пирĕн
аслă
Чăваша! Мухтав, ăслă, ĕçчен йăваша!»
Унта пупĕ, тиекĕ, поэчĕ — пĕр маçлă,
Офицерĕ, профессорĕ — тан сăйлашать.

Таврара тепĕр «аслă, мухтавлă пĕр пĕтĕм,
Уйрăлми» Русь-Раççей. Епле хирĕç тăрас?
Тĕтĕрет вырăсла шовинизмлă тĕтĕм
Йăпăлти чăваш пуп Кирле ывăль Тарас.

Вăл кадило сӳнсен сăвăпа аппалннă,
Сăвă хыççăн каллех кĕç кадилăпалан.

Пуп кушакĕ пул тытнă çапла. Аполлонăн
Юравçи пирĕн пек типĕ рифмăç пулман.

Тепĕр ен: пур йышши тĕшмĕше тăрăхлавлă
«Арçури» сарăлать хутсăрах — чарма çук.
Кам пĕлет, тен, пытарăнчĕ пуль «Калевала»
Çав Хĕветĕр Михалипеле çавăн чух!

Тепĕр ен: Чĕмпĕрте çирĕм пиллĕкри гени
Иванюк Ваçинккин Кĕçтенттинĕ хăрать.
Вăл, чăваш ăс-пуçне çĕнĕлле çĕклекенĕ,
Выçă халăхсене çапăçма йыхăрать.

Çĕршыва ман пулсассăн халь сăвăллă парăм
Эпĕ чун инженерĕн ятне тивĕçсен —
Ун сăлтавĕ «Нарспи»: çиччĕрех эп вăрларăм
Ăна хамăн аппан минтерри айĕнчен.

Тепĕр ен: ик-виç çул вĕренсе, вăрттăн-карттăн
Хаçатсем вуласа, ăнланса тертлĕн пит, —
Таврари ĕçсене хăйне майлă ăнкартнă
Полоруссов тиек, паянхи Шелепи.

Тав сана, ват саркайăк! Юрру вăрăм пултăр!
Сан «тиек йыттисем» тил тытман çав питех:
Хăвăн хыççăн хӳтернĕ — патша-тăр, улпут-тăр
Çитмĕл çичĕ хӳреллĕ йытти-качкипе.

Эс хăймасăр ик-виç паллăпа алă пуснă
Юптаруллă «Çĕленĕн» сăххи, «Ваçанккан»
Е «Раççейĕн» кулли хăй ĕçне хăвăрт тунă:
Хĕççĕн тивнĕ харам пырсене каçантан.

Епле халь пирĕн пек курманни ăнланайĕ —
Çăкăр мар — Мигуэль Сервантес романне
Хĕвĕнче усраса Çĕн Ӳсел Микулайĕ
Дон Кихот пек çĕршыв тăрăх сĕтрĕннине?

Ху каларăш: Раççей питĕ пысăк, ах турă!
Анчах ун йĕркисем, йăлисем ... тур çырлах!
Çав Раççей — ытти мар! — курма тивĕççĕр турĕ
Хĕвеле ак сана вăйпитти халпалах.

Анчах эс пирĕнпе. Сан тĕнчӳ янтăравлă,
Сас-чĕве тăнласа пурнăçпа хутшăнан.
Халăхсен тĕрми мар: халь хăватлă та аслă
Ирĕк çĕр хапăллать сан паха шухăшна.

Эс тăран ман умра, аптраман тăван халăх,
Кунĕ-çулĕн, асапĕн салху мĕлки пек.
Санпала тахçанхи кĕнекесĕр аваллăх
Сăвăç-юрăçисем тăнă пĕр йĕркипе...

Эс тăран символ пек, ĕмĕр-ĕмĕр капланнă
Хăвăн хуплăхупа иртнине питлесе.
Эс тăратăн — çав мăшкăллă, тăнсăр, ылханлă
Пурнăç тек нихăçан, нихăçан килмессе!

Вăтăр çул. Мĕн вăл ĕмĕрлĕхшĕн!
Анчах çиррĕмĕш ĕмĕрĕн çулĕ
Кашниех çирĕм çул тăрăшшĕн
Малашне туйăнма пире пуçлĕ.

Эпĕр кĕрĕпĕр, ахăр, коммунăн
Керменнех, ăраскаллăскерсем.
Халь мана аса килчĕç кам унăн
Алкумне çывхарса ӳкнисем.

Эсир илтнĕ-и çап-çамрăк Тайăр
Сăнчăрпа Çĕпĕре утнине!
Хывăр çĕлĕкĕре! Пуç тайăр
Чăвашсен гражданин-поэтне.

Хăвăрт сӳнчĕ тепри те, анчах
Мана ун чун хавалĕ паха.
Çуттăн эп курап çав пăнча:
Ĕмĕрех ялтăртаттăр Ахах!

Тăван халăх телейĕ — çав çеç тĕл,
Ырлăх — тимĕр татан чĕлхе çеç:
Украинăра халь выртать Çеçпĕл,
Хăй республикинчен тĕлĕнсе.

Сочири тинĕс умĕн пĕр паллă,
Пĕр иллюзи каç-каç манăн пур:
Кĕç тухса калаçать пуль теп Павлов —
Композитор, поэт, драматург.

Эпир пур çĕршывра халь кăна пек,
Вĕсене — кӳме çук тавăрса.
Çĕпĕрти экспреспа ыткăнап-и —
Асăмра сĕмленет Тал-Мăрса.

Ленинград тăрăх эпĕ çӳреп-и —
Юнашар пек Кели Кĕркури,
Е ак Куйбышева кĕрĕп эпĕ —
Хирĕç тухĕ Исаев Мĕтри...

Кань сунар. Тăприсем çăмăл пулччăр!
Эп ăçта йăвансассăн та хам —
Шупашкар тăвайккисĕр мар кун-çĕр
Канăçаймĕ, яр-уççăн калам.

Ахаль мар пирĕн шĕкĕр хуламăр
Кисловодск пек тет Юркин ку чух.
Чăн, Иван Николайч, хула капăр,
Нарзанпа чугун çул кăна çук.

Кунта «Пиçнĕ тута калаçни» те
Çырма йывăр ĕнтĕ малашне.
Ху каларăш: чăваш халĕ ним те
Пытармасть иккен хăй чăвашне.

Паян пурте пуçтарăннă акă,
Миçе тĕслĕ сăмах шерепи!
Мĕнле пысăк поэзи сапакĕ!
Кĕреки варринче — Шелепи.

Халăха, çĕршыва рапортлатпăр,
Паян пултăр хаваслă парад.
Кашни хăй ĕçĕпе парĕ рапорт,
Эп пĕрерĕн халь паллаштарап.

* * *

Сăввуна суйлама пуçлани —
Эп çураличченех, тахçанах.
Анчах кам халĕ Шупуççынни
«Ватăлать» теме хăйтăр сана?

Мĕн калас сана, тусăм Элкер?
Эс кăларнăччĕ-çке «Самана».

Çавăнпа шай утмашкăн сĕнер.
Хальлĕхе тав сана, сав мана!

«Атте сачĕ — улма йывăç сачĕ,
Шăпчăк кĕчĕ вĕçсе — янах ячĕ...»
Мĕнле сад чĕннипе? Мĕнле шăпчăк?
Пахчасем масарлах пирĕн шăпчĕ.

Кĕркунне юрра ячĕçĕ пирĕн
Пур пек кайăк вунçиччĕмĕш çул.
Сăвăшать пĕринчен-пĕри вирлĕн:
Кураксем, Чĕкеçсем... Темĕн чул!

Ăçтарах-ши эсир халь саланнă,
Тăвăлпа çунатланнăскерсем?
Сывлăм шывĕ кăлартăн, Шаланкă,
Ĕçчĕрех-им ула кураксем?..

Эп сисĕп, эп тавçăрăп, туйăп,
Ху пĕлен: мана пулĕ пит шел —
Эс те сассăр юлсан, савнă Уйăп,
Çӳлерех улăх, тусăм Мишель!

Кам कаларĕ сире Шăпчăк кайăк
Пуç пӳрне пек вăл пĕчĕк тесе?
Мĕнле йывăç турачĕ йăтайĕ
Çĕпритун юрăпа çĕкленсен?!

Çĕкленсемĕр, туссем! Çунат — символ,
Сарлака ирĕке пĕлтерет.
Стратосфера пекех поэзи вăл, —
Ăмăрткайăкăн варкăш, чĕре!..

Вăл калавçă, вăл сăвăç, вăл драмçă,
Е хальччен те эсир паллашман?
Анчах темшĕн ырмасть вăл хальхаççăн —
Акçентей Ăçтаппанĕ Лашман.

Колчака тирнĕ хыççăн эсир те
Пит чĕнместĕр хисеплĕ Тăхти.
Эп сире сăннăра хума ир теп,
Е пушанчĕ Пегасăн нăхти?

Карăнтарăр-ха, тепĕр аллюрлăр
Ваш кăларăр сатира хĕçне!
Чăннипе — пирĕн çар вĕт-ха юрлă.
Вăл салтак тăрĕ виç яшшине.

Ӳпкелен яшсене те... Мĕн тейĕн?
Тин пĕрле пăтă çинĕ. Ĕнер.
Ман илтессĕм килет Алентейĕн
Сассине. Ма шăпланчĕ Пинер?

Ак Пайраш. Епле халĕ Пайрашăн
Юлас çамрăк пуçпах парăма?
Кама ятламалла вăл кайрашăн?
Мĕдицинăна е... арăма?

* * *

Эс хула советне тарăхатăн, Думилин:
Санăн çук-мĕн хваттер, ман та çук.
Çыр-ха, çыр лайăхрах, хваттер мар —
çурт та илĕн,
Хăнана пырăп эпĕ ун чух.

Сăвăçпа прозăçа юнашар
Пит лартмах каламан та, Ваçли,
Рифмисем çапла килчĕç, каçар:
Пирĕн пур-мĕн Краснов та — Асли.

Манас марччĕ ман Кĕçĕннине те:
Вăл хăть «вилнĕ» тесеччĕ мана,
Парада эп çапах та чĕнетĕп,
Ма çынна тавăрса чăрманам?

Шав тăваççĕ. Ялавин, Ялавин...
Мана вырăн шел мар, кĕтĕрех.
Анчах маншăн Ялавин ялав-им?
Дисциплина пурне те пĕрре.

Эп пĕлместĕп: те усă парайĕ,
Те параймĕ Владимир Сĕркке?
Виç сĕнӳ сана, тантăш Бараев:
Вĕренӳ, тăрăшу та... йĕрке!

Авалтан эпир тус Миттапа,
Пĕр-пĕрне куриччен тăванлашнă.
Халь те уншăн чĕрем пит тапать,
Анчах халь — тусăм сăвă çырманшăн.

Сăвăра кăна мар та поэзи,
Çавнашкал-ха кунта кĕреки.
Шăллĕ те калав çеç çырать теççĕ, —
Ман аташăм Митта Петĕркки.

Кăшт юрлать те тăхтать хăш-пĕр кайăк,
Сăвăçсем те тăхтаççĕ кăшт-кашт.
Хăçанччен тăхтĕ-ши — халь прозаик,
Ĕлĕк сăвăç шутланнă Тукташ?

Тăпрана калаçтартăн та, эс те
Чĕлхӳне шартах çыртрăн, Ăрсай.
Сан халап-юмахна эп итлес теп,
Çитрĕ пуль çӳреме тăлхăрса?

Янкас юрă çырать темеççи?
Çĕршывра ун сасси ян кайсан
Паянах лавр çулçи
Татăлса тирĕнтĕр Янкаса.

Мĕнпеле рифмăланĕ Петокки —
Автономлă вирьял сăвăçи?
Пур мухтавлă пилот Кокинакки,
Çунатлан, Энтри тус, вĕçсе çит!

* * *

Арисран эп ыйтасшăн чиперрĕн:
Хăпарать-и йӳçсе сан чусту*?
Хăçан унăн, хăçан эс пĕçерĕн,
Хăçан çиййĕн роман-хăпарту?

Çуралас ăрусемшĕн манми,
Улшăнми кулăш енчĕк хуçи —
Вăл Иллариус ывăль Мами,
Капкăнмейстер Йăван, ай, Мучи.

---

* А. Арис «Йӳçсе хăпарать» роман çырма пуçланăччĕ.

Хулара калаçаççĕ халь пурте,
Эп илтетĕп ĕна ир те каç:
Пирĕн çĕнĕ Мюнхаузен пур тет,
Ал пусать тет вăл имĕш Ч у л к а ç.

Эп паян аптăрарăм шалт — ун
Ятне рифма çукран тарăхса:
Анчах пур вĕт вăл, пур вĕт Чалтун
Кам хăтарĕ унран Чăвгиза?

Йышлă ят хушшинче ят шыравçăн
Паян кун манас марччĕ пĕрне:
Сывă пултăр хĕрарăм-çыравçă,
Тав, хисеп Трубина Мархвине!

Манăн пурнăçăмра пĕр задач-тĕл:
Сăвă, урăх эп ним те пĕлмен.
Вăл — калавçă, поэт, председатель —
Самарти манăн тусăм Паймен.

Туссемпе яланах çавăн пек:
Ĕлкĕретĕп-ха тетĕн, халь ир...
Кĕç кĕмесĕр юлман Саламбек,
Кĕç кĕмесĕр юлатчĕ Талвир.

Мĕн калас ăшшăнрах сана, тусăм?
Кузнецов паранки анине
Тара илтĕн те-ха кутăруçăн,
Мĕскер акăн унта х ă в ă н н е?

Эй, республикăн халăх артисчĕ,
Çтаппан ывăль Екким Кушкăсем!
Сăвăçсен парадне те пар чыс эс,
Драмйышна пуçтарсам та кĕрсем.

Пирĕн пур (темле халăх вăл?) Айзман,
Пирĕн пур (чăваш теççĕ) Мранькка.
Тата камăн ятне асăнас ман?
Кама валĕ тивмерĕ? Аха...

Чап-мухтав туянатчĕ ак-ак вăл,
Çырчĕ пьеса та, çырчĕ калав,
Анчах халь ак инспектор Агаков,
Анчах эп — çыртăр тетĕп каллах.

Ак тепри: пичĕ-куçĕ илемлĕ,
Кăтар çӳç, пĕвĕ-сийĕ тăлпан.
Е санран та кĕтсе эп илеймĕп
Ху пек хӳхĕм шедевр, Кăлкан?

Эп пĕлместĕп: чăн-ши ку, суя-и,
Çырнă, имĕш, трагеди Патман.
Юрĕ, пырăп, хавас çĕн туя эп,
Хальччен мансăр премьера лартман.

Кам пытарĕ, атьсемĕр, кам тунĕ:
Эпĕр астăвасса ĕлĕкрех
Пирĕн пурччĕ Лява Тлатунĕ,
Халь — курап эп ăна тĕлĕкре.

Савнă цензорăм! Мĕн такăнтарчĕ*?
Халь тутли çинчен çырăр эсир.
Е сире ку чухне ывăнтарчĕ
Ют ремаркăсене йĕрлесси**?

Шанчăкăм çамрăксем çине куçтăр.
Чăн сăмах: вĕсене çĕр çăмхи.
Ак калар, çамрăк Осипов тухтăр —
Катерин патшапа пĕр çулхи.

Тулли мар пулĕччĕ ман парадăм,
«Айтара» та сума сумăп эп —
Драмăç-сăвăçă мар — Виноградов
Кĕмесессĕн Айтар тумĕпе.

* * *

Чукмарланă çеç мар — эмелленĕ
Критик йышĕ поэт тавралашне.
Пирĕн пур ак Сахар Емельянĕ,
Вăл çакна чухлĕ теп малашне...

Авалхи манăн Ылтăнăм-тусăм,
(Микулайĕ, Аркадийĕ мар!)
Çыраймастăн-çке эс кутăруçăн?
Ӳпкелет сана пур Шупашкар.

---

* Шуç Левентейĕ (Лява П.) «Йӳççи такăнтарчĕ» пьеса çырнăччĕ.
** Лява П. цензорта ĕçлетчĕ.

Моисей — халăха ирĕклевçĕ.
Пирĕн Хветĕр Муççи те иккен
Хăй пуçне ĕнтĕ халь çăлнă теççĕ
Переверзев Египетĕнчен.

Хутарпа урлă-пирлĕ те пултăм,
Майлă та пулни пур ку таран.
Пĕр-пĕрне ăнланма тӳрĕ туртăм,
Уçă шухăш кĕтеп Хутартан.

Нумай енлĕ çынна тăшман мар эп:
Сăвăра вĕçет тет Савнă Тус.
Çыр, çырах! Чи малтан алă парăп
Чăнласах сарăрсан çунату-с...

Нумай енлĕ çынна манăç тивмĕ:
Тишкерӳçĕ, историк, культпроп —
Куçнецов та сăвах çырать, имĕш,
Ак кунта вара эпĕ хăрап.

Эп хăратăп кĕтӳçĕсĕр сурăх —
Сăвăсем — аташса каясран.
Кĕтӳçсем пирĕн çук та-иç урăх,
Камăн ячĕ тухман ăнсăртран?

Кĕтсен кĕтĕ Данилов Мĕтри,
Вăл та сăвăçчĕ те ĕлĕк чух...
Халь лăпланнă. Анчах ĕлкĕр-и?
Ал пусма та ун вăхăчĕ çук.

Нимĕскер те тăваймăн! Вăл — шеф:
Пĕрне кирлĕ хваттер, теприне —
Санаторий-мĕн, виççĕмĕш — эп —
Хамăн Ленскисемпе тирĕнеп.

Кулянса ӳкрĕм эп, тăвансем!
«Тăлмач — çутĕçĕн пуштă лаши»* —
Кам çакна ăнланса, кам пĕлсе
Ман асаплă ĕçе хаклĕ-ши?

Тишкерӳ йĕтемми çап-çарах.
Эп аптрап. Сирĕн çав аптрава,
Краснова та пулин вĕт ара
Тишкермешкĕн тивет Петрова**.

* А.С. Пушкин каланă.
** С.П.Петров В. Краснов-Асли кĕнекине тишкернĕччĕ.

* * *

Карелсен пур юратнă ят Айна:
«Калевала» хĕрне саврĕç пит,
Пирĕн те тивĕççем ӳссе кайнă:
Хĕрсене ят хураççĕ Нарспи,

Халăх тăнĕ вăраннă, куç уçнă.
Анчах тек куçна уç, тек вăран, —
Сăвăçсен ячĕпе шăлна хуçăн:
Пур Айгир Мах, Фетис, Деферан...

Хирĕçместĕп, юлташ: пул эс Пушкин,
Пул Гомер, анчах кам-ха сана
Грек е вырăс теет пĕр ятушăн?
Эс чăваш-çке, туп хăвăн сăнна!

Теприсем: Юманкай, Хуманкай.
Кĕрелкай та Малкай, Ахтупай,
Хурăнай та Пушкай... Ай-яй-яй!
Тата кирлĕччĕ пĕр попугай...

Айсемпе айкашни, тен, паха та,
Тен, шыратпăр тĕп халăх сăнне, —
Пит хавассăнах мар эп пăхатăп
Хамăн а й л ă кил-йышăм çине.

Юлсан юлĕ пĕр ай (чăн та юлĕ),
Хăй айне пур ая та туса.
Ахаль мар Иванов йăхĕн юнĕ
Ун вĕрет чĕринче: вăл — Ухсай.

Мĕн сунас ăнсăртран Ĕçхĕле?
Пит хитре ан калаç, тус Аркади!
Сăввуна ĕçлерех çеçкеле,
Ĕç вăл пур чăрмава та аркатĕ.

Александр Бачков сăвăç çук, —
Чап çуртне уçиччен алăка
Вăл хăйне чăвашлатнă ку чух:
Пулмалла теççĕ сăвăç Алга.

Аполлонăн пехилĕ тивни
Е тивен-и ăна — эп пĕлместĕп:
Анчах пур пирĕн сăвăç Ивник,
Пултаруллă яш тет. Ĕненес теп.

Илпекрен эпӗ ыйтрӑм: «Мӗнле
Рифмӑлас сана, — терӗм, — Илпек?»
Вӑл калать: «Радио эп меллеп,
Эфирта вирхӗнетӗп ҫил пек!»

Те пуян халь ытла пит эпир?
Е наянлӑх пусать пӑртак-и?
Пирӗн пурччӗ пулас Пиктемир,
Ма аташрӗ ун «Тимӗр таки»*.

Ҫӗрпӗве эп кайса килмесессӗн,
Кӗрейместӗнччӗ эсӗ, Ҫаваҫ.
Сӑвӑҫ пулӑн-ши эс? Хӗн пӗлмешкӗн.
Студентсем сана хытӑ саваҫ.

Каҫарах мана, тусӑм Алакӗр,
Ӑнсӑртран эп сиктернӗ сана.
Маларах кӗмесен, хыҫӑла кӗр,
Уншӑн ятламасса эп шанап.

Малтисем хыҫала юлӗҫ тенӗ,
Хыҫри тухӗ мала... тӑрӑшсан.
Каҫару ыйтас теп Ӗҫхӗлтен эп:
Хальлӗхе курӑнмасть, сӑнаман...

* * *

Пӗтертӗм. Ҫитменнине ҫитерсемӗр,
Ытлашши пулнине каҫарсамӑр.
Тайма пуҫӑмӑра тайнӑ эпӗр,
Хӗҫ витсен-витмесессӗн те — сапӑр.

Ҫакӑнта кӗнӗ ят-хушамат
Тӗнчерен вӑл ҫухалмӗ халь тин:
Кулленех сарӑлать, хушӑнать
Ырӑ чап Кӗнеке Палатин.

«Тек чӑваш ҫыруне ӗне ҫимӗ,
Эсӗ, шӑллӑм, унран ан шиклен!»
Ҫак сӑмах палат пуҫлӑхӗн — тимлӗ
Библио-патриарх Ванюшкен.

---

* Ун пӗртен-пӗр эп пӗлекен сӑвви ҫапла ятлӑччӗ пулас.

Эп ăна вăрăм ĕмĕр сĕнесшĕн,
К ĕ н е к е ç ĕ  тени чăннипе
Халь кама та пулин тивĕçсессĕн —
Александр Иванча тетĕп эп.

Вăл пĕртен-пĕр гаранти — йăлт эпĕр,
Хаçатсем хушшинче çухалса,
Тепĕр хут чĕрлессе: вăл пĕртен-пĕр
Шанчăк — пирĕн ятсем юласса.

1936

## ТАВЛАШУ

Сарамат пиччĕ — ман хурăнташ,
Чăннипе ун ячĕ урăхла:
Пирĕн, темшĕн, пурсăмăрăн та
Икĕ ят мĕн авалтанпала.
Чиркĕве пит ăшшăн курмантан
Пулса кайнă пулĕ çаплалла.

Çарăмсан таврашĕн вăрманне
Ман ăру хăй йĕрĕхĕсемпе
Вырнаçни — пĕр виççĕр çул патне.
Хут çине ӳкмен пĕр саккун пек
Янăранă: «Ан çĕрт йăх ятне!»
Шеп-и, мар-и ку — шарламăп эп.

Анчах пуп тĕне кĕртме пырсан
Пирĕн харсăр аслă асатте
Çил çунатлă ăйăр утланса
Урнă пек кустарса çитнĕ те
Тĕн шывне, йĕнер çине тăрса,
«Йыт кулли» туса хăварнă тет.

Парăнми çав киреметçĕсен
Сыпăран сыппа: йăхран йăха
Тухнă витĕмлĕ чĕлхеçĕсем,
Юмаха юптарнă пит паха,
Такмака, сăвва-юрра тесен —
Тĕлĕнтернĕ пĕтĕм халăха.

Сарамат пичче вăл шăпăрçă,
Пурччĕ унăн пĕр кĕвви: илтсен —

Витрине лартса ташлатчĕçĕ
Шыв ăсма анан чипер кинсем;
Пурччĕ ун тепри — макратчĕçĕ,
Сăпкари ача пек, ваттисем.

Çамрăк чух вăл таптарсан вăййа,
Ăнсăр пулнă теççĕ хăш этем;
Арăмсен (те чăн ку, те суя)
Салтăнатчĕç имĕш саррисем;
Сар хĕр пуçĕ тăрринчи тухья
Сиккелетчĕ тет итленĕçем...

Сарамат хапхи панчен сайра
Татăлатчĕ урапа-кӳме.
Чапĕ кайнăччĕ йĕри-тавра,
Аякран килетчĕç тилмĕрме.
Унсăр пуçланмастчĕ пыл-сăра,
Унсăр туй сикмен, хĕр хӳхлемен.

Калаçатчĕç: вăл пăлан ĕнин
Хăмпинчен хăпартнă шăпăрне,
Алтăрпа ярса тултарайми
Мăйрака вăл лартнă кăкăрне;
Ăмăрткайăк çунаттин шăмми
Хунă имĕш чĕлĕх кĕпçине.

Ĕмĕрне ирттерчĕ ĕçкĕре.
Сарамат шăпăр калать тесен —
Пур тухатмăш та сиксе чĕтрет.
Пăхаймасть туйра ун куçĕнчен,
Пăсаймасть вăл каччăпа хĕре,
Хăтарать çав вăйăç синкертен.

Лăстăр çеç силлет кăтра çӳçне
Хыпчăкне хăяккăн кăларса,
Палт перет хăмпа мачча çумне,
Хăй ĕçет кăшт сывлăш çавăрса.
Яш пăхать те курайман çине —
Кăнн хытса каять леш хăраса.

Юнашар кĕпĕрнерен пĕрре
Чĕннĕ пĕр чăваш пиччемĕре.
Пулнă имĕш çав кĕпĕрнере
Тӳсме çук хăватлă та хивре,

Çулсерен питрех тĕлĕнтерен
Урăм-сурăм шăпăрçă тепре.

Чĕнекен чăвашĕ вĕсене —
Сараматпала çав ăстана —
Тавлаштарнă имĕш пĕр эрне,
Туйĕн чапĕ кайнă таврана.
Сарамат çĕнтернĕ-çĕнтернех,
Мухтанать унпа вăл яланах.

Халь çав манăн шăпăрçă таван
Ватăлса килет кунран-кунах.
Хăй çапах юлмасть-ха уявран,
Ĕлĕкхи шайпа вăлт-валт кăна
Каçăртать те кăкăрне, унтан:
«Ну, карчăк, — тет, — яр-ха пĕр кана!»

Хăвармасть вара вăл карчăкне.
(Ачисем пулман шереметсен.)
Çапла акă пĕлтĕр кĕркунне,
Тырă-пулă пуçтарса кĕрсен,
Илсе килчĕç пирĕн ял клубне
Пианино, кĕмсĕртеттерсе.

Çав тери «тамашана» курма
Ял-йышсем клуба ĕлĕкхинчен
Пырса тулнăччĕ раснах нумай,
Районти çынсем те пур иккен,
Студентсем те çулла каннă май
Каяйманччĕ хăшĕ çав кунччен.

Сарамат та карчăкне ертсе,
Хăмпине чиксе сăкман хӳне
Пынă мĕн клуба мĕштĕртетсе
Вăйлă тырă-пулă уявне.
Малтан пулчĕç докладсем-мĕнсем,
Вара вăйă турĕç каçхине.

Юрăсем юрларĕç пĕр кана
Çамрăксем-ватсем килĕштерсе,
Сăвăсем каларĕç аванах
Хамăр ял хастар сăвăçисем.
Председатель куç хĕсрĕ мана:
«Эс ан шухăшла пĕччен тесе!»

Ташлама тапратрĕç унтан ак:
Пукан пысăкăш ача кăна
Ларчĕ те — пĕр вальс, пĕр кроковяк
Çĕмĕрет анчах пианина.
«Вихтĕр. Музыка вĕренет няк...» —
Терĕ кам? тесен, пĕри мана.

Çаврăнаççĕ пăрчăкан хĕрсем.
Сарамат піччĕ пĕр кĕтесре
«Ташă, ташă» тесенех вĕрсе
Хăмпине хăпартрĕ чиперех.
Пианино сассине илтсен —
Вырăнта пулмарĕ ват чĕре.

Хулара вĕреннĕ йĕкĕтсем
Çаврăнса шăваççĕ йăр та яр,
Пĕр шултран утса, пĕр вĕтетсе
Вăркăшса илеççĕ вăр та вар.
Хĕрсене çĕн ташă вĕрентсе
Авкаларĕç, хуçрĕç — майлă мар!

«Чăвашла ташласчĕ те пăртак, —
тет пĕри кăшт кăмăлсăрланса, —
Сарамат пичче кунта-и çак?
Калăр халĕ иксĕр ăмăртса!
Вихтĕр хамăр ял-çке, как-никак
Сума сутăр хамăр колхоза...»

Ак «Линка-линка» та «Шур аппа»
Ячĕ Виктор пианинăпа.
Сарамат пуçларĕ Викторпа
Ăмăртмашкăн чаплă шăпăрпа:
Тăрăшса вĕрет, ура тапать,

Хушăран сĕтет вăл такмакпа:
Карчăк, карчăк, карчамас!
Карта урлă каçаймасть;
Шăпăр, шăпăр тесенех —
Ури çĕре çакланмасть...

Тухрĕ-çке кӳрнеклĕ Сăпанюк —
Сараматăн карчăкĕ — çиççе;
Кайрĕ-çке юхса, сĕрсе, хăш чух

Пилӗкне тытса та ал сӗлтсе;
Ларт тулли курка — тӑкӑнас ҫук
Унӑн пуҫӗ тӑрринчен ӳксе.

Сарамат вӗрет хӑмпа, вӗрет,
Пӗркеленнӗ пичӗ тӑртанса
Клуб ҫинчи хӑмач пек хӗрелет.
— Вӑл сӑрне памасть-ха иҫмасса, —
Теҫҫӗ ваттисем, — ха, илтерет!.. —
Старикки тӗреклӗ-ха, таса...

Анчах Виктор вӑрттӑн йӑл кулать:
Пианино шӑпӑр мар, пичче!..
Ун пӳрни шӑши пек чупкалать
Хура-шурӑ чӗлӗхсем ҫинче.
Хупланать кив шӑпӑр, хупланать,
Аран ҫеҫ илтӗнет ҫинҫен.

Шӑпӑрҫи вӗрет, тармакланать,
Урине тапать, ҫӳҫне силлет.
— Курас марччӗ-ха сан мӑшкӑлна! —
Тет хӑй ӑшӗнче: кӗҫ ҫӳлелле
Печӗ хӑмпине вӑл маччана,
Печӗ те... тытмарӗ тек калле.

«Иртнӗ! — терӗ Сарамат. — Пулмасть...
Илсе кай, ачам, Шупашкарах,
Музее эс пар ҫынсем курма
Манӑн намӑс курнӑ шӑпӑра.
Шур ҫӳҫпе паян эп сан умна
Тайма пуҫӑн тайӑлса тӑрап.

Аллӑ ҫул каларӑм шӑпӑра,
Аллӑ ҫул ташлатрӑм чӑваша.
Халиччен никам та таврара
Ҫӗнтерсе курманччӗ тавлашса.
Сан хурру пулас-ши-ха вара —
Тенӗ шухӑш ҫунтарать ӑша.

Мӑшкӑла тӳсмешкӗн ҫук вӑй-хал,
Шалт тӗнче кулли ку, шутласан.
Анчах эс, ҫапах та хамӑр ял,
Ху та кӑшт вӗреннӗччӗ манран.
Ман кӗвве те сыхлӑн ҫакнашкал
Хатӗрпе, тен, манӑҫ пуласран.

Яр, эппин, янрат çут тĕнчене!
Пил-пехил сана авлхи пек...
Пирĕн иртнĕ... тунă хамрăнне...» —
Терĕ шăпăрçă пит ерипе.
Тар шăлам пек усрĕ те пуçне —
Куççульне вăл шăлчĕ çаннипе...

Пианино шав кĕмсĕртетет,
Пĕр качча çаклатрĕ Сăпанюк,
Старикне йĕкĕлтесе иртет,
Сарамат кулать: — Ах, ăçтиçук! —
Унăн-кунăн пăхкаларĕ те
Пĕр хĕре куç хыврĕ: — Кил, Наçтук!

Пианино шав кĕмсĕртетет,
Çамрăк кĕрĕм туй та çуй тăвать.
Иртсе кайрĕ пулĕ çур çĕр те —
Автана илтмест ни яш, ни ват.
Савăнать ял-йышăм, хĕпĕртет,
Çук ăна тытса чарас хăват!

1936

## АВАН-И, ПУШКИН!

... Пире хирĕç сулă çине туса лартнă Вилĕм таканĕ юхса анать-мĕн, ун урлавĕ çинче виççĕн çакăнса пыраççĕ... Тулли уйăх çав мĕскĕнсен сăнсăрланнă пичĕсене çутатать. Вĕсенчен пĕри ватă чăвашчĕ.

*А. Пушкин*

### 1

Çав çул пире ун вилĕмсĕр сăмахĕ
Çитсе çĕклерĕ Атăл хумĕ пек...
Ялтан яла ытти ĕçе мансах эп
«Онегинпа» çӳреп, чăвашлипе.

Кĕркуннехи тумхах пытанайман-ха,
Çуран тăман чупать çул хыттипе;
Автомобиль айне пулать айван хăй,
Хăй чăрсăр — шалт ие путекĕ пек.

Вĕрет-сурать, асать арçурилле те,
Слюда çумне те çыпăçса виртлет...
Çилпе такамăн юррине илтетĕп,
Таçтан пĕччен шăнкрав сасси çитет.

Таçта сĕм пурнăç кĕрчĕ-юрĕ тăрăх,
Çил-тăвăл витĕр пĕр кӳме пырать.
Хăй çĕрĕнче те тыткăнри пек тăлăх
Пĕр çын унта кун-каçăн çул тытать.

Пĕччен! Лаша таврашĕ те — жандармăн
Аксельбантне ăна асилтерет.
Сĕм пĕлĕте пин хулăпа çаптарнăн
Çаралнă шурă хурăн шилетет.

Сив çăлтăрсем çине пăхать вăл халĕ,
Хур кайăк Çулĕ сассăр йыхăрать...
Телей çуках! Анчах та ирĕк, канлĕх...
Кала-ха ун çинчен эс хытăрах!..

Çӳлти хура юнсем, патша, Булгарин...
Куç шуррисем вĕлтлетрĕç вирелле.
Янаххине ун тăлăпĕ хупларĕ,
Пасарнă бакенбарчĕ ирĕлет.

Тĕнкĕлтетет пĕр çемлĕ шăнкăравĕ,
Чуна тивеççĕ ямшăк юррисем.
Чĕрме тупан сасси, ут тулхăравĕ,
Ула юпаллă çухрăмсем... Кичем!

**2**

Тин тунă уйăх ылтăн пулă евĕр
Чăмать сайралнă пĕлĕт хушшипе:
Пĕр пуçĕпе тухать вăл, именмесĕр,
Пĕр хӳрипе çапать юмахри пек.

Ăçта кӳме? Шоферăм кулса ячĕ,
Унпа кăна-ши эп? Çук, пур тепри.
Портфелĕмре ун кĕнеки, ун ячĕ,
Хăй — çуммăнах, çап-çамрăк та вĕри.

Аван-и, Пушкин! Ăшă-и, çемçе-и
Çак ГАЗ минтерĕ çийĕнче сана?

Каласшăнччĕ пĕр юрату çинчен эп,
Ман чĕрене хĕсет вăл тахçанах.

Пайтах пулать... Вăййа эп пит ерместĕм,
Сăмах та вакламастăмччĕ питех...
Кăтра ача, ман патăма кĕрсеттĕн,
Паллашрăмăр сĕм хăйă çутипех...

Кĕрхи каçсем вăрах вара, чĕнмесĕр,
Чавсаланса лараттăмăр ун чух.
Сисеттĕм эп: çунат ӳстернĕ евĕр
Кăтăкланса ман ырататчĕ чун.

Сан вĕлтĕрен уки пек çӳçӳнте те,
Кӳренчĕкле кӳпшек тутусенче,
Аяккалла пăхан куçусенче те
Кураттăм эпĕ урăхла тĕнче.

Аслăланатчĕ тăвăр пӳртĕм манăн:
Йĕре-йĕре çӳрен çил ачисен,
Чӳречерен шаккан кĕрхи тумламăн —
Йăлт урăхчĕ пĕлтерĕшĕ вĕсен...

**3**

Çул хыççăн çул... Ак иртрĕ те ачалăх.
Сенкер тĕтреллĕ шуçăм çутăлчĕ.
Куç уçăлчĕ. Яр сирĕлчĕ шăналăк:
Куç умĕнче тем пысăкăш тĕнче.

Çап-çарамас поэт чунĕпе утрăм
Асаплă-илертӳллĕ çулпала.
Çăмăлах мар çĕклерĕ манăн çурăм,
Каллех эп туртăнтăм сан патналла.

Ăнлантăм: шăхăрса юрра ямашкăн
Çак пурнăç туй та уяв мар ялан.
Поэзи куркине вара пăртаккăн
Хушмашкăн тиврĕ сивĕ шыв та ман.

Çĕршывăма куллен ман ӳсрĕ парăм.
Çурма çултан тавăрăнни — начар.
Каллех иккĕленӳ. Каллех шырарăм.
Каллех манпа эс пултăн юнашар.

Ак эп сан тăлмачу. Шăпланчĕ музăм:
Куç хӳрипе пăхать те хушăран,
Тухьяллăскер, тăрать вăл тайма пуçăн,
Вилес пек кӳлешет Татьянăран.

Эп санпала куçа хупмасăр лартăм:
Кашни сан сăмахун чăн-чăн тĕшне
Шĕкĕлчесе илесшĕн асаплантăм,
Мĕнле кăнттам эп пулнă ун чухне!

Тавах: сăмах тертне тӳсме вĕрентрĕн,
Сан урăхла янран сăввусенче
Хам чунăм кĕввиех пурне пĕлсессĕн
Мĕнле вара эп савăнаттăмччĕ!

Хавхаланса, çунса та, тарăхса та,
Хăй вырăнне лартсан сăмахăма,
Сĕм вăрманта çул тупнă пек сасартăк
Чĕлхе ăсти пек туйăнтăм хама.

**4**

Ямб пек яка та тикĕс пирĕн çул-йĕр,
Шав ыткăнать вут куçлă урхамах.
Шап-шурă юр... Кайсан-кайсассăн — çӳллĕ
Хура вăрман сиксе тухать уммах.

Армак-чармак ват юмансем лараççĕ
Çара туратсемпе кар карласа.
Вĕсем Пугачева та курнă, Разин
Çыннисене те юлнă палласа.

Эс курнă вĕсене. Ав вăл çĕкленнĕ
Виç ытама та кĕрейми юман.
Сан тăвăллă кунна-çулна ирттернĕ,
Манран та пултарать-ха вăл юлма.

Анчах пире-и çак çĕрте çĕрмешкĕн?!
Эпир ун йышши мар. Ак эс паян
Пур çут çанталăка тĕлĕнтеретĕн,
Этемлĕх çамрăклăхĕ пек шавлан.

Кустар, машина, чун-чĕре çĕклентĕр,
Çил пек касса кĕр çĕнĕ ĕмĕре!
Кунта... кунта кăшт чарăнăпăр эпĕр:
Хăна пулма чĕнеççĕ халь пире.

Пăхсам, поэт, кур халăха паян ак,
Кур ĕмĕтне çитернĕ çĕршыва:
Çакса сулăпала юхтарса янă,
Юнпа ăна кĕлернĕ, вăл сывах!

Хапхаранах тухса илет тăванăн
Сана вăл сарлака чĕрипеле:
— Пусма пек пултăр ман саламăм саншăн,
Кĕрсем, хăнам, иртсемччĕ тĕпеле.

Пехил сана: пĕр пĕрчĕрен пин пĕрчĕ!
Ларсам ман ирĕклĕ кĕрекене.
Сан вăрлăху вăрман пек ĕрчетĕрччĕ! —
Тесе сĕнет вăл савăш куркине.

Ларар, поэт: хальччен çăкăр-тăварсăр
Ӳсмен-ха вăл эреш те ярапа.
Тĕппи курка! Сахал пулсан — ăсатпăр
Юри хывтарнă Алтăр çăлтăрпа.

1937—1949.

## ОРДЕН

### 1

Эрнешер сухал хырмасăр,
Çывăрмасăр талкăшар,
Тăшмана хĕссе пыратпăр
Таччăн, çуммăн, юнашар.

Шурă çуртлă Украинăн
Ешеркке черешнисем,
Мĕн кăтартнă сире мина,
Бомба, тупă етрисем!

Хуçнă, чĕлнĕ, турпасланă,
Симĕс çулçă типшĕрет.
Сар мерчен пек сапаланнă
Çырла-çимĕç тип çĕре.

Чиесем лараççĕ капăр,
Илĕртеççĕ: — Кил, çисем. —

Мина çурăлчĕ те — шапăр
Тăкăнаççĕ пиçнисем.

Вĕллене лекет вăр-варрăн
Пĕр осколок, куртăмăр.
Сĕрлесе тухать хаяррăн
Хыпаланчăк хурт-хăмăр.

Çыннисем çинчен мĕн калăн?
Çав вĕлле хурчĕсем пек,
Хаярланнă чун хаваллăн
Виç çул тӳснĕ пĕр инкек.

Мĕн çын мулĕ çичĕ ютшăн!
Сăхнă-сăхнă та яла —
Халь эпир хĕссе пыруçăн
Вут тĕртсе тарать калла.

Ав Европăна «çĕнтернĕ»
Сăрă-симĕс автомат.
Хул айне кĕлте хĕстернĕ,
Сывламасăр ыткăнать.

Вĕлтлетет кача пăталлă
Ата тĕпĕ вăрăлла.
Вăл васкать — тата пĕр аллă
Çурт тĕртесшĕн пулмалла.

Чарăнса вутпа хăмсарчĕ
Хĕрринчи лутра пӳрте.
Çав самант ман ординарец
Хураха ăса кĕртет.

Сулкаланчĕ, ӳкрĕ ак вăл
Шурă пӳрт кĕтессине.
Аллинче сӳнет ун факел.
(Ыраш улăм тессине...)

**2**

Уйăхшар ура салтмасăр,
Мунчине-мĕнне манса
Хăвалатпăр, хăвалатпăр
Тăшмана хавхаланса.

Мĕн вăл вырăн? Кăшт хăяккăн
Пистолет ТТ çинче
Тĕлĕрен те — кăларатăн
Планшетна пуç айĕнчен.

Сăрт, çырма, кĕпер ... — йĕрлетчĕ
Куç вăраннă-вăранман.
Мĕн тери хаяр трагеди
Пытарать пĕр-пĕр вăрман!

Ак хайхи, вăрçсан-вăрçсассăн,
Буг текен шыв хĕррине
Пырса тухрăмăр хавасссăн
Ик патшалăх чиккине.

Шыв леш енĕ — Польша çĕрĕ,
Шыв ку енĕ — хамăрăн.
Тĕтĕмпе тусан сĕмлерĕ
Пĕлĕте хăп-хăмăррăн.

Кашни пусăм, кашни аршăн
Кӳпрĕ чĕрĕ юн ĕçсе.
Чикĕ урлă ярас маршăн
Пуç хураççĕ фашистсем.

Юнпала пусаççĕ алă
Гитлера тупа туса:
«Польша — нимĕç çĕрне алăк,
Каçармастпăр вырăса!»

Кунĕпе вĕçет июлĕн
Сар тусанĕ — çаврăнать.
Хăпарать тĕтре каçкӳлĕм,
Нӳр çапать пур таврана.

Кунĕпе те, çĕрĕпе те
Артиллери ахăрать.
Ансăр каçă мар ку тетĕн, —
Тĕпĕ-йĕрĕсĕр ахрат.

Анчах пирĕн пур пĕртен-пĕр
Тăшмансем пĕлмен меслет:

Хĕн килсессĕн — Атăл — тетпĕр,
Çавăнтах вăй-хал кĕрет.

Шур çилхеллĕ Атăл хумĕ
Кăтăрать куç умĕнче.
Вăрçă хыççăн, вăрçă умĕн
Такмаклатпăр ун çинчен:

— Астăвар тепре, атьсемĕр,
Аслă, вилĕмсĕр чапа.
Сталинград ятне çĕртмесĕр,
Рокоссовскилле çапар!..

**3**

Кам мана ĕнентересшĕн —
Юрă вăл тӳлек тесе?
Муза, тупă ӳхĕрсессĕн,
Чĕлхине тӳлет тесе?

Вăл пыратчĕ çулăм витĕр
Маскировкăпа шуса,
Окопа кĕретчĕ шиксĕр
Керз аттипелен пусса.

Çамкине пĕрсе пăхатчĕ
Куçăмран вăл сăнаса.
Умне çакнă автомачĕ
Тинкеретчĕ Анăça.

Хĕвелпе çунса шуралнă
Хăй пилоткине хывсан
Курса юлнăччĕ суранлă
Тăнлавне эп ăнсăртран.

Арçынла кастарнă çӳçĕ
Кĕççеленнĕ кăшт кăна.
Вăл калатчĕ: «Çĕнтерӳçĕ
Тивĕç санăн юрруна.

Ыран мар, халех пул хатĕр,
Туп эс кирлĕ кĕвĕсем:
Чăн сăмах тăва хускатĕ,
Пăслантарĕ тинĕсе.

Туп, кӑлар эс витерӳллӗ
Чӗрене тивен сӑмах.
Ҫав сӑмах, тен, кӗрсе юлӗ.
Ӗмӗр-ӗмӗр асӑнма.

Ку сахал: хӗҫпе пул тивӗҫ
Сӑмахна эс хӑвӑнне.
Юррупа та сана виҫӗҫ,
Ӗҫӳпе те малашне.

Пултӑр тамӑк, пултӑр вилӗм —
Ҫӗн те каҫ эс леш енне!..»
.........................................
Ак мӗскершӗн эпӗ илтӗм
«Хӗрлӗ ҫӑлтӑр» орденне.

1945

## ПУРӐНАХ , ЧӐВАШ ҪӖРШЫВӖ!

Ят тухнисемпе пӗрле эп
Ҫӗрпӳрен ҫуран уттартӑм.
Кӑнтӑрла кӑшт сулӑнсассӑн
Ушкӑн ҫитрӗ Апаша.
Шӑкӑрах чӑваш ҫеҫ марччӗ,
Пурччӗ вырӑс та, тутар та,
Казахсем те, кавказсем те...
Пире кӗтнӗ, тамаша.

Ҫураки пӗтернӗ майӑн
Апашсем уяв пуҫарнӑ,
Колхозпа та, килсерен те
Хатӗрленӗ кӗреке.
Хирӗҫ тухрӗҫ хӗрупраҫӗ,
Хурлӑхне кӑшт пусарнӑ
Арсӑр арӑм, вата-вӗтӗ, —
Ак мӗн юлнӑ тӗреке.

Ҫав-ҫавах (ӑна эс ан пӑх!)
Сухаланӑ, сӳреленӗ.
Районра пӗрремӗш вырӑн.

Пĕлтĕртен те кая мар.
«Ĕçчен мар-им эпĕр» — терĕ
Тăххăрти пĕр шăлйĕренĕ,
Пусĕнче çĕмел пек шлем ун,
Гимнастерки ун шалпар.

...Хирĕç тухрĕç. Сирĕлеççĕ
Пит шăллийĕ, чĕр çиттийĕ.
Витре хăлăпĕ чанклатрĕ.
Ĕрĕхет çĕнĕ сăра.

«Тав сире!» — тет председатель,
Тен, пĕртен-пĕр вăйпиттийĕ.
«Сĕврĕлмен-ха, тин йӳçет, — тет
Ял асламăш, — тав çара!»

«Тараватă иккен çĕршывĕ,
Сарлака чĕреллĕ халăх!» —
Теççĕ пурте пĕр çăварлăн,
Кăшт хĕрсессĕн кинетех.
Эп те тав курки ĕçетĕп.
Эп чĕнместĕп. Эп мĕн калăп?
Халăха мухтав тусассăн
Вăл мана та тиветех.

Ман пĕр шухăш, ман пĕр ĕмĕт:
Йĕрсĕрех çухалас марччĕ,
Тен, мана та пурнăç картĕ,
Юррăм çĕклĕ халăха.
Çав хăюлăх вăй паратчĕ,
Урăм-сурăм вăрçă-харçă
Сăвăçа пăшал тыттарчĕ,
Эп каятăп салтака.

Туп-тулли колхоз карташĕ,
Ротипех кĕрсе ларатпăр.
Тăп-тăр урă кĕрекеçĕ
Рет хывать сума суса.
«Шăртанне хисеп тусамăр,
Чăкăтне çыртарах парăр!» —
Тет çич-сакăр ача амăш
Йĕпсене илсе хурса.

Ӗҫтереҫҫӗ те сӑйлаҫҫӗ —
Каварлашнӑ пурте, калӑн:
Кӑмӑлҫах карчамасем те,
Ӗххӗмшӑл чӗлӗмҫӗсем,
Салам куҫлӑ ҫӗнӗ ҫынӗ,
Йӗкӗр мӑйӑр пек туталлӑ
Хӗрӗсем-ҫке, ӑш ҫунтармӑш,
Юн вӗретмӗш хӗрӗсем!

Тӗлӗнсе пӑхса сӑнаҫҫӗ
(Пур-тӑрах ҫав сӑнамалӑх!)
Белорус хӗрӗ-хӗрарӑмӗ,
Еврей ачи-пӑчи.
«Пархатарлӑ-мӗн ҫӗршывӗ!
Вашават иккен ку халӑх!» —
Чыс-сӑйне тутаннӑ ҫын.

Пехиллрӗҫ, ырӑ сунчӗҫ.
«Пӗттӗрех тӗнче хурахӗ!» —
Ылханланчӗ йӑмра айӗн
Халӑх тарӑхӗ, хурри.
Лейтенант командӑларӗ.
Чӗкеҫ куҫлӑ пӗр хура хӗр,
Ман ҫине питех пӑхмасӑр,
Мана сӗнчӗ ҫул курки.

Ун ятне эп астумастӑп,
Астуашкӑн пӗлеймерӗм,
Ыйтаймарӑм, каламарӗ,
Ахӑрнех пуль вӑтанса.
Унпала аса илетӗп
Сан сӑнна, ҫуралнӑ ҫӗрӗм,
Куҫӑма эс курӑнатӑн
Ҫамрӑк ӗмӗтлӗ, таса.

Сан сӑнна эп илсе кайрӑм,
Сан ҫинчен эп шухӑшларӑм,
Йывӑр-йывӑр сехетре те
Эп йӑпантӑм санпала.
Ҫав-ҫавах-ши эс, ҫӗршывӑм,
Сӑртлӑ-варлӑ Шупашкарӑм,
Тӑнӑҫ-канӑҫсӑр шыв-шурӑм,
Муллӑ Атӑлӑм? — Кала.

Никама та ют темерĕн,
Хапăл турăн эс хальçемĕн:
Украина юрçисем те,
Латышсем те сан çинчен
Чунлăн-варлăн асăнаççĕ,
Кĕвĕлеççĕ çĕнĕ çемĕ.
Хурçă пекчĕ пирĕн пĕрлĕх,
Халь алмаз вăл пур енчен.

Ывăлу-хĕрне эп куртăм,
Пултаратăп каламашкăн:
Сан ятна вĕсем çĕртмерĕç
Çĕр çуран çапăçура.
— Ирĕке иленнĕ халăх
(Хĕç чуптурăмăр чăвашшăн)
Нихăçан та, никама та
Пулмĕ, — терĕмĕр, — чура!

Çутçанталăка ишес пек
Артиллери тупăлатчĕ.
Вилĕме куçран пăхан та —
Чăмăртатăн пăшала.
Пĕр сержант калать: «Атьсемĕр,
Ахăрнех ку пирĕн Лаптев,
Чăвашла юрлать снарячĕ,
Çĕмĕретпĕр, ан шарла!»

Танк качи шăла çыртарчĕ.
Ик чăваш ачи пуплеççĕ:
«Хăшĕ пулĕ çав Ширманов,
Çав картин çинчи Энтри?»
— Пĕлеймстĕн-им, мăнтарăн?
Чăвашран йăхман пуль эсĕ!
Чи малти, шăллăм, Ширманов,
Чи питти вăл, — тет тепри.

Ăсанать юнпа тар кунĕ,
Карăнать каçхи шăналăк.
Тĕлĕретни, тĕлĕрместни.
Флягăран кăшт шыв çăтса, —
Самолет сĕрлет сулмаклăн:
«Ку — Орлов, ку Ăмăрткайăк!» —
Тетпĕр, плащ-палатка айĕн
Кайăкла куç ывăтса...

Çук, чăваш ятне çĕртмерĕ
Ывăлу-хĕрÿ, çĕршывăм!
Ÿкермерĕ санăн аслă
Пехилне хура çĕре.
Ахаль мар эс çитĕнтертĕн
Танлăн, тÿсĕмлĕн те сыввăн,
Чăнкă Атăл хумĕ çийĕн
Чăпăлкка туса, пире.

Ахаль мар яту сан ыррăн
Янăра тăрать çав халĕ
Ленин-Сталин саманийĕн
Çут хĕвелĕ айĕнче.
Пурăнах, чăваш уй-хирĕ,
Сĕм вăрманĕ, ешĕл ялĕ,
Йăлăм улăхĕ, шыв-шурĕ —
Чăвашла пĕчĕк тĕнче!

Пурăнах, сăнтан сăпайлă,
Ăспа тарăн, чунпа анлă,
Сăнавпа шап-шур сухаллă,
Кăмăлпа ача пекскер!
Пурăнах, кун-çул йĕтемĕ
Варринче тăпачăланнă,
Лутăрканнă, шĕкĕлченнĕ,
Çапах тĕшлĕ те йĕкĕр!

Пурăнах, ĕçре çуралнă,
Ĕçпе ĕмĕр ĕмĕрленĕ,
Куç хупсан та виçĕ кунлăх
Çĕр çине ĕç хăваран!
Сан тару паян ахаххăн,
Сан юну паян мерченнĕн,
Çĕнтерÿ пуç кăшăлне эс
Илемлетрĕн çынпа тан.

Сухаçу та, тимĕрçÿ те,
Пахчаçу та, пулăçу та,
Юрăçу-кĕнекеçÿ те
Санăн тытнăччĕ пăшал.
Антăхан тăшман тĕп пулчĕ,
Пирĕн пурнăç пулĕ çутă,
Хальхинчен вăл çĕршер хут та
Пулĕ тухăçлă кал-кал.

Сан çине ӳкмерĕ бомба,
Сан куçна касмарĕ тĕтĕм,
Сан ӳтне клеме пусмарĕç,
Ма тесен сан салтаку
Сталинград вут çумăрне те,
Ленинград кахатлăхне те,
Кĕрхи Днепр сиввине те —
Тӳсрĕ саншăн, саншăн ку!

Пурăнах, Чăваш çĕршывĕ!
Вырăспа пĕрле вăй илтĕн
Аслă çĕрĕн варринче эс,
Сан шăпу халь çап-çутах:
Юн тăкса тасатнă туслăх
Ĕмĕр-ĕмĕр пырĕ пирĕн,
Пĕтмĕ вăл хăмла путсан та,
Йывăр чул юхсассăн та.

Тĕнче касрăм сахал мар эп,
Çитсе куртăм юталла та, —
Мĕнлерех çак юррăма ман
Вĕçлесе парас сире?
Сăмаха пит çĕклемесĕр,
Каламашкăн пултаратăп:
Тем тесессĕн те, атьсемĕр,
Лайăх хамăр Раççейрех!

1945

## ÇĔНТЕРӲ ЮРРИ

### 1

Çĕнтерӳ юрри пуçлатăп.

### 2

Тултарсамăр куркăра,
Кăпăклантăр пыл-сăра!

### 3

Иртĕр, ларăр тĕпеле,
Итлĕр чун-чĕрепеле,
Кăна пурте пĕлмелле.

Камăн ĕмĕт малалла —
Çавăн уççăн манпала
Ярăнса юрламалла.

**4**

Эп пăхатăп Сталинградăн
Медальне асăрхарах.
Паян кун вăл бриллиантăн
Çутатать ман кăкăра.

Симĕç хăйăвĕ ун маншăн
Изумрудăн курăнать.
Тинкерсе ăна пăхсассăн
Дон хумханнăн туйăнать.

Хĕрлĕ йĕрĕ — чăн рубинăн,
Çук унтан таси, çутти:
Çав йĕрпе çĕнтерӳ пынă
Атăлтан Рейна çити.

**5**

Ах, вĕриччĕ-çке çав август!
Ĕннĕ курăк. Шывсăр кавăс.
Эшелон силлет пире:
Лăстăр-лăстăр... Сăвăр, авăс,
Сапала çеçен хире!

Хĕвел çаврăнăш чечекĕ
Çаврăнать хĕвеле май.
Станци. Кăркăс-и, узбек-и —
Кĕсйинчен кăларчĕ пекĕ,
Тытăнать вăл хырăнма.

«Сывлăш!» — тет Хусан тутарĕ
Юриех. Леш хускалмарĕ,
Тавăрать çапла кăна:
«Насретдин хуçа каларăш,
Эп мулла-им? Мĕн мана!»

Шӳтлĕн-шӳтлĕн марш пуçланчĕ.
Кĕреçе аври хистет.
Хĕтĕртет пĕр чăрсăр шанчăк:
Нимĕçе эпир курманччĕ,
Ну... курман-ха нимĕç те!

## 6

Утмăл çухрăм утнă хыççăн —
Хуп-хура та йĕп-йĕпе.
Паллашатпăр вăрçăн выçкăн
Чалăш шăл-çăварĕпе.
Саманта сывланă чух
Çăвăнма та вăхăт çук.

Вăтăршарăн, хĕрĕхшерĕн
Çĕкленеççĕ çăхансем.
Кунĕн-çĕрĕн, кунĕн-çĕрĕн...
Кар-карлаççĕ çăткăнсем.
— Эх, мăнтарăн кĕреçе!
Ма эс ансăр? — тетпĕр çеç.

Анчах çĕрĕ чул пек хытă.
Чĕрнесем юнланиччен
Çатăртаттарса эс тыт та
Вырт çунан ана çинче!
Эс çуран, эс — хир патши,
Е юта пустарăн-ши?!

Качăр-качăр танк хĕресĕ
Чуна çĕççĕн хăйăрать...
Эс çуран. Хуçа халь эсĕ
Çук тăма, çак хăйăра...
Ур, тулаш эс, вил, анчах
Каялла пĕр шит ан чак!

Пулчĕ: вилчĕç те — чакмарĕç.
Аслă çĕрĕмер-анне!
Нихăçан манмалла мар эс
Сталинградăн салтакне.
Манмăн, манмăн: çавăнтан
Çĕнĕ чап пуçланчĕ сан.

## 7

Эпĕ калăпсăр машинăн
Пĕчĕкçеççĕ пĕр винтти.
Мĕльюншар ман пек вĕтти.
Анчах чунĕ — пысăк çыннăн

Мăн чунех çав вĕтĕсен;
Вăл калать, итле пĕлсен:
Эп — этем. Ак манăн чинăм.

Кĕвĕçместĕп эпĕ: пултăр
Генерал та, маршал та.
Анчах манăн пур шалта
Хамăн тивĕç, эпĕ шутсăр
Мухтанатăп унпалан:
Хут çине нимрен малтан
Ман ята çыраççĕ, вулăр.

«Салтаксем-юлташăмсем!» — тет
Пур приказ та малтанах.
Ăнланас пулать ăна!
Çавăнпа... мĕскер тес ĕнтĕ? —
Хамăн хĕсĕк окопра
Эп генералах вара,
Ăна пинĕн итлесен те.

Ман окоп сыхлать ыр-сыввăн
Генералăн блиндажне,
Генерал — хăй маршалне,
Маршал, калăпăр, çĕршывăн
Чĕрĕкне те — Мускава.
Ну, Мускав мĕнне хăвах
Эс чухлан... Асту, ан çывăр!

Мускавра, хăть бомбăлатăр
Çĕр çурса ăна тăшман,
Куç хупмасть Тĕпком ялан:
Вăл курать сан окопна та,
Калаçать ачупала,
Чăннипе — ăна пула
Эс çын евĕр пурăнатăн.

Ак ăçта эс çывăхартăн,
«Пĕчĕк винт» ерипеле,
Чим-ха, эс пыра-киле
Кремльте черкке хăпартăн...
Хальлĕхе тĕнче шăпи —
Сталинград чĕри таппи
Хускатать сана хаяррăн.

## 8

«...Çапăçса ыран вилсен
Коммунист тесе хисеплĕр...»
Ак çапла салтак кĕскен
Тăрмалать кĕрхи сивлек çĕр.
Ак çаплах эп те иккен
Çыртăм, нимĕн тĕлĕнмесĕр,
Эп — чĕлхе лаççи, анчах
Тупаймарăм тек сăмах.

Шурăмпуçĕ кăвакарчĕ...
Кăвак мар çав, хĕп-хĕрлех!
Камăн мĕн — асра ват карчăк
Аннемех пĕкĕрĕлет:
Яланах вăл вăранатчĕ
Шурăмпуçĕпе пĕрле.
Миçе çаврăнчĕ-ши кĕçĕр
Çĕрĕпе вăл, тĕлĕрмесĕр?

Карласа ларать мăян,
Хытхура та йӳç шурарăм.
Вăл та час минăпалан
Кукшаланĕ лакăм-лакăм.
Чĕрĕ, сывă-ха паян,
Кунăма — тин çеç пуçларăм...
Хĕвел тухрĕ ерипе,
Вăл та тупă етри пек.

Ик тĕнче. Ик çул. Ик шухăш,
Икçĕр утăм хушшăмăр.
Чăмăртанчĕ чун. Юн шухă.
Мăян айĕн шурăмăр,
Вилĕмӳ патне эс шу-ха!
Те минут, те çур ĕмĕр...
Вăхăт çитрĕ. Кĕç гранатăн
Шартлатса çĕр çурăлсассăн...

Ку таран эп çак çĕре
Кайăк юнĕ те тăкманччĕ.
...Пĕтрĕ пĕр чун тĕнчере,
Ĕçĕсемшĕн вăл хупланчĕ:
Аллине тăсса пĕрре

Кĕрт çине этем йăванчĕ.
Тем ыйтас пек — куçĕнче
Çиçрĕ хĕм юлашкинчен...

Чунăм час лăпланаймарĕ:
Шав кураттăм çав çынна...
Анчах чи малтан хăй мар-и
Вăл хăмсарнăччĕ мана?
Ĕмĕрхи саккун каларĕ:
Хĕçе хирĕç — хĕç кăна!
Тайма пуçăн вăл килес-мĕн...
Вырăнпах выртса вилес мĕн...

Кам пĕлет: тен, çав кунне
Пуçласа эп пӳлтĕм пулĕ
Антăхан тăшман çулне.
Çав траншейăри юн кӳлĕ,
Çав йӳç эрĕм — ĕмĕрне,
Тен, вăл чикĕ пулса юлĕ:
«Ырăпа усал чикки», —
Тейĕ пурнăç кĕнеки.

**9**

Çĕнтерӳ юрри юрлатăп.
Тултарсамăр куркăра та,
Тăкăр кăшт тутаниччен:
Таврăнманнине пуç тайăр,
Тăприсем çăмăл пулайтăр
Çĕре кĕнĕ паттăрсен!
Вăрçă пулчĕ урăм-сурăм,
Кам пĕлет: тен, эпĕ юлтăм
Ротăран та пĕр-пĕччен...

Вĕлтĕр-вĕлтĕр-вĕлтĕр юр...
Çуна çук та — йĕлтĕр пур,
Йĕлтĕр пур та, йĕрĕ çук-ха.
Çил хаяр улать ялан
Сылтăмран, сулахайран.
Тыттарать вăл вăрттăн çупкă.
Кăчăр пулчĕ Дон хĕрри,
Леш енче тăшман çарри,
Мĕн шутлать вăл? Пĕл-ха, чуп-ха!

Лăпкă Дон лăпках та марччĕ:
Кĕперне, асту, ан сарччĕ, —
Бомбăлаççĕ сарсанах.
Кимĕпе, асту, ан курăн,
Вайкăнатăн чикĕм-пуçлăн:
«Фердинант» куçлать сана.
Вĕрен ан тăс эс шыв урлă:
Ку шывра шултра тет пулă,
Тунсăхлать вăл тахçанах...

Сармалла-çке кĕперне!
Пĕрне витĕç, тепĕрне...
Тен, пĕр çиччĕмĕш çĕкленĕ.
Тытмаллах-çке ким хӳри!
Пĕри путĕ, ну — тепри...
Теприне, тен, Дон хĕрхенĕ.
Тăсмаллах-çке вĕренне!
Вуннăш... çирĕммĕш... пĕрне,
Тен, сăнаймĕ шыв леш енĕ.

Малтанхи юр кăпăш, лайăх,
Вăтăр çын — пĕр вунă халăх,
Вунă халăх — вун чĕлхе.
Ĕнтĕркет туркмен пăртакçă,
Çĕпĕрсем кăшт тăрăхлаççĕ:
«Ку хĕлле-и! Эх-хе-хе!..
Чимĕр халĕ — шăрăх пулĕ!..»
Шуса антăмăр каçкӳлĕм
Шыв хĕрнех, пĕр вĕтлĕхе.

Ах, атьсемĕр, пулчĕ каç!
Пĕр хушуччĕ: вил те каç!
Юхрĕ кимĕ, юхрĕ сулă:
Пĕрене, хăма тп шпал
(Ан йĕпентĕр çеç пăшал.)
Плащ-палатка, çатан-хулă...
Лăпкă Дон, сыхла çарна, —
Каçарсам леш çырана,
Кур — епле эпир хăюллă!

Чи шултра хума вататпăр,
Кĕç — ракета, кĕç тата пĕр...
Ылхантармăш асамат!
Аçа çапрĕ, çурĕ çумăр...

Лăпкă Дон, ан ур, ан çухăр,
Чĕрене эс ан хăрат...
Чĕрере çав каç, пĕлетĕп,
Вуннă мар — çĕр чĕлхепе те
Пĕр сăмахчĕ: С т а л и н г р а д.

Çавăнта ман тапмалла
Пур чĕлхеллĕ çарпала,
Çав ятпа çĕкленчĕ халăх.
Çавăнта ман çитмелле
Асаппа та тертпеле,
Сарлака, юлташ, каçалăк!
Авалхи тус Атăла —
Дон халь алă памалла
Ĕмĕр-ĕмĕр асăнмалăх.

**10**

Юрлă, çумăрлă та çиллĕ,
Куç уçма çук сăлпăран.
Каçпала шăнтать те вирлĕ —
Витĕрех эс пăрланан.
Пĕр хĕлхĕм çунать пăр айĕн,
Унпа çеç чăтать ĕнсе:
Шăл çыртса, упаленсе,
Çиле хирĕç, çиле майăн
Тăшмансем патне йăлмак
Сĕтĕретĕн эс, салтак!

Виççĕр пинĕн йăлмакланчĕç,
Лекрĕç пирĕн мăйкăçа.
Хăтăлма вĕсем хăтланчĕç —
Мăйкăç пăврĕ хĕл каçах...
Мина айĕн, тупă хыççăн,
Хăш чухне туртса çуран,
Çĕмрĕлсе юлсан хуран —
Чĕр кĕрпе çисе е выççăн,
Кун-çĕрне манса йăлтах
Тăрмашатăн эс, салтак!

Манас çук кăра январĕн
Çилсĕр вуннăмĕш ирне.
Тинкерсе темскер тăнларĕ
Икĕ лагерь пĕр-пĕрне.
Шăпчĕ пĕтĕм çут çанталăк,

Вăл та тем тăпалнă пек.
Анчах иртрĕ майĕпе
Ультиматум панă талăк.
Вăрăм талăк пулчĕ-çке!
Нимĕçе питрех кĕске...

Парăнмасть тет нимĕç имĕш.
«Юрĕ!» — терĕç салтаксем.
«Ху çинех тиентĕр, нимĕç,
Çылăху-сăвапусем!..»
Пĕлĕте çурса хĕвел кĕç
Печĕ анăç еннелле.
Хĕвелпе пĕр мехелех
Тупăсем çĕре кисретрĕç.
Пулчĕ ахăрсамана
Асăнмалăх тăшмана!

* * *

Юрлăп терĕм юррине те,
Калăп терĕм халапне.
Юрлаймарăм çуррине те,
Калаймарăм чĕрĕкне.
Камшăн хаклă манăн тертĕм?
Пулнă-иртнĕ тахçанах.
Каппаймастăп эп, анчах —
Рядовой пулса сӳнтертĕм
Сталинградăн çулăмне.
Мĕн хушас-ха кун çумне?

Салтака мĕн? Кăмăл тултăр:
Вăрçă парад мар, бал мар.
Хĕллене кăçатă пултăр,
Çуллана — пăртак юр-вар.
Çуркунне чечек çурсассăн,
Формировкăра-мĕнте
Чĕрене темскер ĕнтет...
Ешеркке сада тухсассăн,
Ăшă куç тĕлне лексен —
Аван мар пек, именен...

Мĕн тăвайăн, мĕн калайăн
Килсĕр-йышсăр çынсене?

Тав тăватăп эп çав майăн
Дон хĕрарăмĕсене.
Тав тăватăп ăшăтнишĕн,
Типĕтнишĕн тăлана,
Пылшăн, çушăн... Яланах
Тав тăватăп чи хаклишĕн:
Кăмăла çĕклентерен
Юратушăн-чĕререн!

Юрату! Çав ялкăшатчĕ
Аслă çĕрĕн чĕринче:
Вăрттăн ĕмĕтлĕн пăхатчĕ
Хĕрача пек пĕринче,
Тепринче — кĕтсе илетчĕ
Тин çураçнă сар хĕрле
Е салтак арăмĕлле,
Е ват карчăк пек пиллетчĕ,
Е кулса йăсла-йăсла
Тĕл пулаччĕ ачалла...

Çĕнтерӳ юрри вĕçлетĕп:
Тултарсамăр куркăра.
Эп паян пĕрне çĕклетĕп:
Юратушăн пултăрах!
Юрату иртетчĕ мар-и
Штык çинчи çеçкепеле?
Шăнăçусăр чĕр çилле
Хĕртрĕ мар-и ун кăварĕ?
Пĕр тупа туса вăл шав
Чуптумарĕ-и ялав?

Юрату çĕнтерчĕ мар-и
Унăн çутă куçĕнчен?
Хура мур, этем хаярĕ
Пăхаймарĕ нумайччен.
Юрату вăл — ĕмĕр сывă,
Вилĕме çĕнен телей,
Вăл — сăваплă Мавзолей,
Парăнми Тăван çĕршыв вăл.
Уншăн эп курка çĕклем,
Уншăн юррăмçăм, чĕрем!

1945

## АВТАНРАН АВТАНЧЧЕН

### 1

Кил-çурт илемĕ — сар автан
Виç тапхăр хыттăн авăтсан,
Тăратăп ăшă ыйхăран,
Пăхатăп тĕксĕм кантăкран.

Кĕреннĕн-саррăн хыпăнать
Ир шуçăмĕ пăртак тăрсан.
Ӳсет, ӳсет, йăмăхланать:
Унтан таçтан, Анаткасран,

Пасарнă йывăç леш енчен,
Кусса тухать хĕвел çатми.
Шăнса пăрланнă кĕленче
Ылтăнланать ытарайми.

Тем евĕр йывăçсем çинче
Нихçан курман-илтмен чечек
Эрешленет куç умĕнче
Таçти асамлă тĕнче пек.

Час, тулăн-шалăн çӳрӳпе,
Пӳрт сивĕнет. Тухатăп эп.
Поэт хушса хăварнă пек —
Юман вутти çурса кĕреп.

Туратлă, шăн вут сыппине
Çапсассăн — пуртă ыткăнать.
Çапан, çапан çине-çине,
Хĕрсе çитен те — тыт кăна!

Çырма ларсан çапла малтан:
Перо шумасть, сăмах витмест.
Чуна çĕн ĕмĕт çутатсан —
Тытса кăна пыратăн эс.

Турпас сикет йĕри-тавра,
Çуркамĕ — сăвă йĕрки пек...
Юман вутти кăмакара,
Сăвви — сĕтел çинче типет.

Тӗпел кукри таврашӗнче
Анне пӗрмай пӗшкӗнкелет.
Куймак чашларӗ (икерче
Ҫапла калаҫҫӗ пирӗнле).

Унтан сӗтел ҫине ларать
Ҫутатнӑ сарӑ сӑмавар.
Кунта эпир тутарларах —
Чее ӗҫетпӗр шӗвӗ мар.

Вара умри хыр туратне
Тӗллетӗп эпӗ куҫпала,
Перо тытап вӗри алла...
Уҫатӑп сӑвӑ тетрадьне.

**2**

Кашлать хыр йывӑҫ... Юр купи
Казбек тӳпи пек туйӑнать.
Ун урлӑ телефон юпи,
Йӑмраллӑ Ӗнчӗ курӑнать.

Унта, юрпа пӑр айӗнче,
Эп ачаран таптанӑ йӗр.
Тем анлӑш тинӗс те Ӗнче
Тӑраймӗ-тӗр, тӑраймӗ-тӗр.

Унта ҫӳренӗ ман шӑпа
Чӗркуҫ таран йӗм тавӑрса,
Сапланӑ пушӑт алапа
Вӑл пулӑ сӗрнӗ тӑрӑшса.

Ик-виҫӗ кӑртӑш е мулюк
Курсассӑн ҫӗтӗк алара —
Унран паха телей те ҫук,
Лаша та кирлӗ мар вара.

Унта ҫу кунӗнче ҫичшер
Шыва эп кӗнӗ ҫулсерен.
Ҫӳҫ типнӗ-типменех ишсе,
Чӑмса алхаснӑ тӗрлӗрен.

Тӑватӑ тинӗс тӑварне
Ӳтпе активнӗ хыҫҫӑн тин

Çырмам мĕнле илемлине
Туятăп эп паян туллин.

Йăмри те çавă, шывĕ те
Ĕмĕртенхи тăван илем.
Эпир хурсем кĕтнĕ тĕлте
Çĕкленнĕ ферма витисем.

Каç-каç унта вар хĕррипе
Пырать тет кашкăр-кашаман.
Путек-çатак макăрнипе
Шăлне хăйрать çав çĕр çăтман.

Анчах йĕри-тавра хӳме.
Йытти вĕрме чарăнсанах
Сиксе тăрать те — итлеме
Тухать хуралçă хăвăртрах.

Пăшал кĕрĕслетсе каять.
Тукмак хӳре хăтăлайсан —
Шăши кăварĕ пек çунать
Ун выçă куçĕ аякран...

Унта сысни нăриклетет,
Ĕни, пăрушĕ сас парать.
Çĕршывшăн мул та перекет
Колхоз ĕçченĕ пуçтарать.

Унтах, çав Ĕнчĕ хĕрринче,
Арча пек чыслă мăн çуртра,
Эртеллĕ ĕçĕн штабĕнче
Эп пултăм çакă вăхăтра.

Пăхатăп пĕр стени çине —
Куратăп Иванов сăнне,
Пăхатăп эпĕ теприне —
Тукай тухать ак куç умне.

Пĕр тантăш чаплă поэтсем
Хальхи ял пуçĕсемпеле,
Авалхине çĕре чиксе,
Канаш тăваççĕ-мĕн пĕрле.

**3**

Кашлать-ха хыр. Эп ҫыркаларӑм.
Харам пулман автан сасси.
Ĕҫ — ман телейĕм. Манӑн парӑм —
Ялан чӑнне кӑтартасси.

Чӑнни йӑлтах уявлӑ мар-ха:
Пайтах пӳрт ҫийĕ улӑмран,
Тӑхӑнаймастпӑр пурте бархат,
Шĕшле те музее паман.

Анчах ҫав ҫинчĕк улӑм витĕр
Йӑлт урӑх пурӑнӑҫ тапать.
Урамĕсен ятне ҫеҫ илĕр —
Унта та вĕр-ҫĕнĕ шӑпа.

Ак пирĕн кас. Темле салхуллӑн
Янратчĕ: «Хыҫалти урам».
Халь, ун патне ҫывӑхаруҫӑн,
Эс Пушкинӑн ятне куран.

Ҫаплах: пĕрремĕш ҫĕнĕ пӳртĕн
Кĕтессине, хӑма ҫапсах,
Поэт ятне ҫырса сӑн кӳртнĕ
Таҫти ял хĕрринчи касса.

Пыран-пыратӑн та куратӑн:
Е телефон юпи ларать,
Е радио кашти — Мускавӑн
Хумне тытасшӑн кармашать...

Ҫӑпатаҫи те урӑхланнӑ:
Шĕшлĕпеле чавалансах
Ларать-ларать те, хӑй хутланӑ
Балкан ҫинчен хушать сӑмах.

«...Ак пирĕн ҫиччĕмĕш ноябрь,
Пур халӑхпа чысланӑ кун.
Пӑлхарӑн — тӑххӑрмĕш сентябрь,
Ҫав кун патши тĕп пулчĕ ун.

Хам пултӑм Софире, хам куртӑм, —
Тет ват салтак кӳршисене. —

Аван çынсем. Вĕсен те туртăм —
Раççей енне, Мускав енне...»

Çапла йĕли тухман тум айĕн
Çĕнни ӳссе аталанать,
Ӳссе çитсессĕн вăл — хăй майĕн
Çĕнетĕ пирĕн йăлана.

Мирте Мирун пур тенĕ евĕр,
Ялта Якку пур тенĕ пек,
Çĕн кĕреке те (сискелетпĕр!)
Лекет кив кирĕк тĕлĕпе.

Хăш чух эпир ютла пуплетпĕр,
Асаттесен йăлипеле:
«Ку — хамăн, ку — ман мар», —
теетпĕр,
А пирĕн «хамрăн» темелле.

Хăш чух пĕр шухĕш çеç: кун irттĕр.
Ĕçренваскатпăр килелле.
Хăш чух бригадир мар — çур литр
Шута илет ĕçе-хĕле.

Калаççĕ: вăрçă пулчĕ, теççĕ.
Хăш чух килте ларнисемех
Çав анлă кĕççепе витеççĕ
Вăтанăççăр сăмсисене.

Анчах çав вăрçăн чăн салтакĕ
Пит ытлашши сăмахсăрах,
Хăрах куçпа пулин те акă
Ял тытăмне тытса тăрать.

Вăлах, пĕр ватă çын каларĕш,
Ялти коммунистсен асли».
Çавсем çинче колхоз маларĕш,
Ун пархатарлă пуласси.

Çавсем, фронта васканă евĕр,
Пусаççĕ анлăн, сарлака,
Çӳлтен хушассине кĕтмесĕр
Юсаççĕ пĕтĕм шăйрăка.

**4**

Хӗрсе кашлать ват хыр... Хӗреççӗ
Пуçри хускалнă шухăшсем.
Сăввăмсене пырса кӗреççӗ
Тӗрлӗ шăпаллă ял-йышсем.

Ав ӗнерхи танкист. Пӗлетӗп:
Яра куна вăл хуп-хура,
Выртать ӳпне те, месерле те —
Сиплет аманнă трактора.

Совет разведчикӗ ав халӗ
Сӳсмен çӗлет, йӗвен йӗслет.
Кăкри çинче Берлин медалӗ
Хуллен кăна чӗтренкелет.

Ав харсăр санитарка пулнă
Чипер пике больницăра.
Ав гимнастеркăсăр, шур тумлă,
Хӗреслӗ тутăрлă сестра.

Çартан килейнӗ хӗр сасартăк
Сасси пурне сисет иккен:
Мускавалла уçасшăн алăк,
Пуплет вăл Барсова çинчен.

Хăй хальлӗхе, клубра каç-каçăн
Аккордеон тăсса ярсан,
Янраттарать те кассăн-кассăн, —
Хӗллех чечек те шăпчăк сан!

Унтан вăл тантăшне чӗнет те:
«Подгорный!» — тет купăсçине.
Вара çав кӗвӗпе ӗнтеççӗ
Хăюллă вырăс ташшине.

Вӗсем Европа çӗрне виçнӗ:
Румынин саплăк анисем,
Германин сарă хăйăр витнӗ
Уй-хирӗ, Вена ращисем —

Йăлт юлнă ассенче. Анчах та
Çак пӗчӗк шывлă Сиктӗрмех

Вĕсемшĕн ĕнчĕ те, ахах та,
Ытарайми ĕмĕрлĕхех.

Вĕсем пĕлеççĕ: çакă ялăн
Ирхи кăвак тĕтĕмĕсем
Мĕнпур Тăван çĕршыв сывланăн
Мăкăрланаççĕ çĕкленсе.

Вĕсем пĕлеççĕ: çак уй-хирĕн
Йăрансăр-йĕрсĕр курнăçĕ —
Татти-сыпписĕр пурнăç пирĕн,
Тăван çĕршывăн пурнăçĕ.

Вĕсем пĕлеççĕ: ватă Улăп
Тĕми çинчи хурал юпа:
«Ялан çĕршывшăн сыхă пулăп!» —
Тесе кунта тăвать тупа.

**5**

Ак иртнĕ кун та. Хыр кашлать.
Хăçантанпа ăна паллап эп!
Ун айĕн чарăнми юхать
Асаттесен юмах-халапĕ.

Хăш кaç унта темле мулсем
Иеленсе çунаççĕ тетчĕç.
Кĕреçепе вара çынсем
Чи çур çĕр тĕлĕнче йĕрлетчĕç.

Хăш чух çав хыр тавра хĕрсем
Уяв калаççĕ сассăр тетчĕç.
«Вĕсем — хĕр хальлĕн вилнисем», —
Тесе пире ĕнентеретчĕç...

Кашлать, кашлать хыр тĕрлĕрен...
Эпир вучах чĕртсе яратпăр.
Кăварĕ шăранса çитсен
Шала паранкă кустаратпăр.

Тăвар сапса, уйран сыпса,
Çиетпĕр «тăлăплă паранкă».
Хăюсăр лампа мăчлатса
Сÿни-сÿнми сывлать аран кăшт.

Анчах улт-ҫичĕ ҫухрăмра
Электăр тенĕ ҫут пур тет.
Ăна ҫак пилĕкҫуллăхра
Эпир ялта курасшăн пурте.

Ҫав ĕмĕт ҫитнĕн ҫывăха
Чĕп куҫĕпех сăмах йĕрлетĕп.
Урамалла пăха-пăха
Ыранхине курса ĕҫлетĕп.

**6**

Кашлать ик йĕплĕ кукăр хыр.
Ҫил ҫурҫĕртен вĕрет хаяррăн.
Ыран каллех юр хыр та хыр —
Черетлĕ физкультура манăн.

Ак кутсăр-пуҫсăр вĕҫтерет...
Хăй кăмаки ҫинче ĕшеннĕн
Анне пăртак ӳсĕркелет,
Мăрье улать такам хĕненĕн.

Аманнă, ҫĕмрĕлнĕ ура
Вăрҫа-харҫа асилтересшĕн —
Сурать, пĕр вĕҫĕмсĕр сурать,
Ниҫта кайса кĕре пĕлместĕн.

Анчах, хăй ҫутине кура,
Сержант килсе кĕрет каҫкӳлĕм,
Хам пек тӳлек, хам пек хура,
Хам пек аманнă ҫын, ман кӳршĕм.

Вара, вăл ҫăлтăр йĕрĕллĕ
Мулаххайне хывса хурсассăн,
Пуҫлатпăр хамăр евĕрлĕ
Салтак тамашине пăртакҫăн.

«Пантера», «Фауст» сăмахсем
Аса илет хастарлă снайпер.
Курман этемсене кичем,
Эпир — асăнсанах чухлатпăр.

Вăл перчеткеллĕ аллине
Майран кăкарнине сăнап та —

Манап ура ыратнине:
Ăна, тен, ман пек мар асап-тăр.

Эпир чĕнместпĕр ун çинчен,
Шав малаллах ĕмĕтленетпĕр.
Ĕмĕтленни çитеймесен
Тепри çитерессе пĕлетпĕр.

**7**

Хыр шав кашлать. Ман патăма
Кĕрсе ларать хисеплĕ ватă.
Питтăпайран пуçлать сăмах
Манпа çав çын кирек хăçан та.

Тулти çил юррипе пĕрле
Янрать ун ылтăн пек сăмахĕ.
Çак таврари Шелепилле
Ăна куратăп яланах эп.

Мĕн чухлĕ мул çав ватăра!
Мĕнле вăл хаклă та, паха та!
Сăхап, сăхатăп эп вара,
Çĕр çумăр сăхнă пек сăхатăп.

Эпир калаçнă хушăра
Пырса кĕрет пĕр шкул ачи.
Мана хăй тетрадьне парать
Çак саккăрмĕш класс сăвăçи.

Саспах вулатăп сăввине.
Хăюсăрскер пуçне чикет те
Çĕлĕкĕпе хуплать питне:
«Кайран чăрманăр-ха, çитет», — тет.

Вара эпир унпа пĕрле
Ямбне-мĕнне виçсе пăхатпăр.
«Пĕри сӳнсен, тепри кирлех», —
Тесе пăртак шӳт тукалатпăр.

Çур усă сас йĕрки çинчен
Пуплетпĕр самаях чиперрĕн...
Çав икĕ ӳсĕм хушшинче
Хама эп туйăнап кĕперрĕн.

Юхан кун-çул кисретнĕçем,
Ан тив, пĕрре сăвайăм вантăр,
Эсир, каçса ĕлкĕрнисем,
«Сыв пултăр пурăнăç!» янратăр.

Поэмăсем — сайра юпа,
Сăвви-хăми те пит сайра пек.
Анчах ан манăрччĕ: юнпа
Цементласа ăна сарап эп.

Пĕлетĕп пуринчен малтан:
Кĕперĕм чĕнтĕрлĕ пулмарĕ,
Анчах ун урлă каçакан
Курманнине курма пултарĕ.

Лере, малта, чечен çыран,
Малта вăл чĕнтĕрлĕ-чечеклĕ
Ванми кĕпер: тӳпи таран,
Хĕвел таран сире вăл çĕклĕ.

Эпир хĕне çĕнтернĕрен
Çав чĕрĕ асамат кĕперĕ —
Çĕр пин эрешлĕ тĕрĕрен
Çеçке те çимĕç çитĕнтерĕ.

Унта та пĕлĕç чăвашла:
Вăл çывăх. Пулăр хатĕр, хапăл.
«Çулçи çупать, улми ташлать»
Тени пулсассăн — çавăнта вăл.

Эп хунă каштасем çине
Хăюллă пусăр, каçăр урлă.
Вара эп халь юрланине
Çĕклентерсе туйри пек юрлăр.

**8**

Хыр шав кашлать. Пӳрт-çурт, хуралтă
Хуралчĕ. Вăхăт çывăрма.
Инçе Шупашкара куратăп,
Куратăп çывăх çыннăма.

Хам ăшăмра ăна калатăп
Хальччен тухман сăмахсене.

Ытараймасăр ыталатăп,
Тасалăх, çăмăллăх сĕнеп.

Атя, атя манпа пĕрле теп,
Çӳлтен çӳле, малтан мала.
Эп санăн суранна тӳрлетĕп,
Манне эс сиплĕн хупала.

Хупа кăна! Тумлам илсессĕн
Эс тинĕс тавăр халăхна.
Тасалтăр, çăвăнтăр тирпейлĕн
Унта вăл тав туса сана.

Çӳлтен çӳле! Хыпса çунсан та —
Чи çӳллĕ тӳпере сӳнер.
Сан çуттупа тепри хускантăр —
Тата паха, тата чипер.

Малтан мала! Ирхи хĕвелĕн
Мал енченех-çке тухасси...
Хыр кашламасть. Сĕм каç шĕвелнĕ.
Тулта каллех — автан сасси.

1948

## ЮЛАШКИ

Карантай Матви пурнатчĕ
Ĕмĕрхи ячĕпелех.
Янăравлă хушамачĕ —
Мăн аслашшĕн пехилех.

Анчах тикĕссĕн пымарĕ
Ун кун-çулĕ ку чухне.
Кăшт кăна вăл çухатмарĕ
Хăйĕн тĕп хушаматне.

Пĕтĕм ялĕ колхозланнă,
Карантай Матви кĕмен.
Тем майпа, тем шутпала вăл
Тăрса юлнă пĕр-пĕччен.

Агитаторсем килетчӗç
Районтан, Шупашкартан;
Калаçатчӗç, витеретчӗç
Пухура-мӗнте ялан.

Çав-çавах, хисеп тăвуçăн,
Çӗр те виçӗ килӗрен
Пӗр килли Матви-«индусăн»
Шутланатчӗ çулсерен.

Счетовод тӗртсе илетчӗ:
«Мӗн чăваш пуçупалан
Пӗчченле пурнатăн? — тетчӗ, —
Пӗрлешесчӗ çынпалан.

Хăçанччен эп çырăп саншăн
Уйрăм список сводкăра?!»
— Кӗрӗп-çке, — тет леш йăвашшăн, —
Колхоз тармӗ-ха ара... —

Ӳкӗтлетчӗ хурăнташӗ:
«Хушамат ятне яран!
Мӗн пӗччен эс , мур курашшӗ?!
Пурăн хамăр йышпалан.

Санпала ӗçме-çиме те
Лайăх мар, хăвах чухлан:
Çулсерен эс пӗрӗнетӗн,
А эпир — çӗрме пуян!»

«Вăл çапла та...», — текелетчӗ
Карантай ун пек чухне,
Хăй сухапуçпех чӗретчӗ
Хытса кайнă анине.

Председатель ӳкӗтлетчӗ,
Ӳкӗтлетчӗç ял-йышсем.
«Кӗмелле те халӗ...», — тетчӗ
Карантай иккӗлешсе.

Тепӗр чух перетчӗ тӳррӗн:
«Çыпăçатăр çын çумне!
Çыннăн хăйӗн ăсӗ пур ун,
Тем пулас-ха малашне?..»

— Мĕн малашĕ? Çирĕм çул кĕç
Пурăнатпăр колхозра.
Час уявлĕç, юрă юрлĕç,
Эс — пĕччен... мĕнле вара? —

«Халь пĕччен те... ĕрчеттерĕ
Саманамăр, тен, кайран...»
— Маяна юлатним? — терĕ
Пĕри шăппăн хыçалтан.

Сăмах çыпăçрĕ те ларчĕ,
Хăпăтсан та хăпас çук.
Карантайăн хушамачĕ
«Мая» пулчĕ çавăн чух.

— Хăш Матви? — тесе ыйтсассăн
Ун çинчен пур таврара
Калаçатчĕç пĕр çăварлăн:
«Леш... Мая Матви ара...»

Çын колхоз марне пĕлсессĕн
Ют ялсем те хăш чухне
«Мĕн маяматвиленетĕн?» —
Тенĕ имĕш пĕр-пĕрне.

Çавнашкал çын ячĕ кайнă,
Асăнсассăн пĕрмаях
(«Карантай» теме те маннă!)
Шав Мая, Мая, Мая...

Матви карчăкĕ кӳреннĕ,
Ун пăртак турти кĕске:
«Маяна, старикĕм, — тенĕ, —
Чăх айне хураççĕ-çке!..»

Унчченех упăшкипе вăл
Урлă-пирлĕ пулнă та,
Çавăнтан вара çил-тăвăл
Çавăрттарнă пур çурта:

«Пурăнмастăп! — тенĕ карчăк,
Хĕрĕх çул мăшăрлăскер, —
Колхоза кĕмешкĕн чарчĕ,
Халь ав куртăмăр мĕскер!

Чăх айне хурсан-хурсассăн
Çăмарта — пĕлетĕне? —
Пăнтăхса каять, курмастăн
Намăсу мĕн терине.

Час Чăхай Матви темешкĕн
Пуçлĕç акă ухмаха.
Лайăх пулĕ тем илтмешкĕн
Ват пуçпа çав сăмаха?

Пурăнмастăп! — тенĕ карчăк
Шарт хупса пӳрт алăкне.
Унтан уçнă та сасартăк
Шăнтнă янă мăшăрне:

«Колхоза кĕретĕп!» — тенĕ.
Вара кӳршĕ ачине
Вăл çыртарнă заявлени,
Утнă канцелярине.

Мĕн тăвайăн, мĕн ĕçлейĕн:
Ӳт чĕлхен ун шăмми çук.
Карчăк юмăç пулнă тейĕн
Тарăхса ятлаçнă чух.

Пĕр ик-виçĕ кун иртсессĕн
Матвие — ăçта илтен —
Ял-йышсем «чăхай» темешкĕн
Тапратаççĕ ерипен.

Çивчĕ-çке çав çын сăмахĕ:
Çитсе living — вырт та вил!
— Хăш Матви? — тет пĕр амакĕ.
«Леш ара... Чăхай Матви...»

Сарăлать хайхин камичĕ
Касăран касса ялта.
Ют ялсем те — ăçта килчĕ —
Сĕтĕреççĕ çав ята.

«Мĕн, Чăхай Матви пек эсĕ
Халь те колхоза кĕмен?..
Мĕн чăхайланатăн?» — теççĕ
Теприсем хĕрсе çитсен.

Кам пĕлет: тен, çыннăн ячĕ
Пур республика урлах
Сарăлса чысран каятчĕ,
Анчах тухрĕ урăхла.

Юбилей туса ирттерчĕ
«Ăмăрту» колхоз çав çул.
Инкесем ирех икерчĕ
Чашкăрттарчĕç, сĕрчĕç çу.

Ватăрах кинемейсем кĕç
Сĕрчĕç кăпăклă сăра.
Стариксем симпыл симлерĕç
Утара çывăхарах.

Пĕр эрне малтан, çав майăн,
Мухмăрларĕç ирсерен.
Хăш-пĕрин куçне комбайн
Карап пек курнатчĕ, тен.

Шăп колхоз уявĕн кунĕ
Матвие те ир-ирех
Хыпар турĕ Макçăм кумĕ:
«Пыр-ха, кум, хайхи çĕре...»

— Авна мар, кум, — терĕ лешĕ, —
Янттине кӳпме çӳрен, —
Тейĕ халăх, ӳпкелешĕ;
Пыраймастăп, ан кӳрен. —

«Пирĕн пĕтмĕ! Председатель
Хăй каларĕ йыхăрма».
— Ну, апла тесен, татахчĕ...
Карчăк тем калать-ха ман? —

«Çӳç-пуçна пуçтар пăртакçă,
Сухална та тураман.
Çын çинче çын пек пуласчĕ,
Мĕн шăлна йĕрсе ларан?

Лантăш супăнь пурччĕ манăн,
Ме, питне çу, упăте... —
Хăртрĕ-хăртрĕ те хăй майлăн
Хушрĕ карчăк: — Час ут теп!»

Юбилей, колхоз уявĕ,
Кĕлтĕр-келтĕр çĕрте мар:
Пахчара кĕрлет ун шавĕ,
Çĕнĕ сад ӳсет катмар.

Улмисем те пулкаланă
Çамрăк-çамрăк йывăççен.
Чиесем пур, хурлăханăн
Хуп-хурах-мĕн тĕмĕсем.

Шыв хĕррипеле питомник,
Шалалла — кăшт сăртарах —
Лартнă радиоприемник.
Пĕтĕм халăх ун тавра.

Кĕреке сĕтелĕ тунă,
Пĕрре мар-ха, темиçе.
Сак тавраш та лартса тухнă,
Ашлă пăтă час пиçет.

Пичĕке кустарса анчĕç
Стариксем утар енчен.
Кашнине курка тыттарчĕç,
Куркисем — шур кĕленче.

Йăкăнат пичче, утарçă,
Купăсне ĕнĕркелет.
Юрăççем тăрса тухаççĕ
Пĕр енне йĕркипеле.

Гимнастеркăллă яш каччă
«Слава» орденĕпелен.
Çав пулать-мĕн председатель,
Çав сăмах калать иккен.

«...Çирĕм çул ĕнтĕ пурнатпăр
Пĕрлешсе ял-йышсемпе.
Çĕр ĕçне туса пыратпăр
Кĕнеке вĕрентнĕ пек...

Ахаль мар каланă пулĕ:
Пĕччен çын сурать — типет,
Халăх сурĕ — тăвĕ кӳлĕ.
Çав сăмах тӳрре килет...»

Вată çын пек калаçать ку, —
Терĕç хăшĕ, — эккей, э! —
«Кум, сана та кăшт хыçать ку!» —
Терĕ Макçăм Матвие.

— Йăнăшрăм, ушипкă пултăм, —
Терĕ леш пуçне хыçса.
«Тӳрлетме пулать-тĕр, кумăм?» —
Терĕ Макçăм. — Темле çав... —

«Тав сана-ха!» — терĕ Макçăм.
— Тав ĕçех! — Леш малалла:
«Эс вулав çуртне халь хаççăн
Çӳреместĕн пулмалла?

Хаçатсем халь пĕлтереççĕ:
Польшăра, Болгарире
Колхозсем тăваççĕ теççĕ,
Халăх илнĕ тет çĕре.

А пире саккунлăн панă
Çак çĕре ĕмĕрлĕхех.
Вăй — эпир, эпир, тăванăм,
Тав сана-ха!» — Тав, ĕçех!

Йăнăшрăм, ушипкă пултăм,
Пăсрăм хамăн пурнăça.
Ял-йышран хăпăнса юлтăм.
Халь кĕрсен те... тепле çав... —

Кăмăлу пулсассăн — туххăм!» —
Макçăм кум сăмах илет:
«Ак кунта ман Матви кумăм
Колхоза кĕресшĕн...» — тет.

— Заявлени çыртăр, — терĕ
Председатель, хăй чеен
Халăха пăхса йĕрлерĕ
Кулакан куçсемпелен.

— Халăх хирĕç пулмассассăн
Йышăнатпăр тен тӳрех?
«Кĕтĕрех, — терĕ пĕр сасă, —
Мĕн хусах хур пек çӳрет...»

Матви карчӑкӗ кӑлт тӗртрӗ
Чавсипе упӑшкине:
— Тӑр, калаҫ ӗнтӗ ху, — терӗ, —
Е ҫӗн ят илтес тетне?! —

Матви кӑшт ӳсӗркелерӗ:
«Ара, халӑх, ӗнтӗ эп
Каярах юлтӑм та, — терӗ, —
Хапӑлах пулсан — кӗреп.

Йӑнӑшрӑм, ушипкӑ пултӑм:
Сухапуҫ кӗлмӗҫпеле
Маташса ҫак куна куртӑм.
Пултӑрах вӑл эртеле.

Тен, паранкӑ ҫурма юрӗ...
Заявление ӑна
Макҫӑм кум та ҫырса хурӗ,
Леҫсе парӑп паянах».

Счетовочӗ кӑчӑк туртрӗ
Хуратутлӑ ачана,
Хӑлхинчен каларӗ — хушрӗ
«Чуп-ха! — терӗ вӑл ӑна, —

Телефонпалан мӗн ту та
Района кайса пӗлтер:
Ҫӗр процент халь «Ӑмӑрту» те,
Ӑнланатӑн-и? Вӗҫтер!

Сводка панӑччӗ... Хуратчӑр
Уйрӑм списокне пачах.
Колхозра тесе кӑтартчӑр
Ҫак... Матвей Агапӑча».

Вӑл каларӗ хытӑраххӑн
Юлашки сӑмахсене.
Карантай Матвийӗ танлӑн
Пӑхрӗ карчӑкӗ ҫине.

Мӗн кӑна тесе чӗнмерӗҫ:
Пӗр «мая», пӗр «хусах хур»,
Пӗр тата «чӑхайӗ» терӗҫ,
Ҫын чӗлхи вӑл — ҫилӗм, пур!

Çыпăççан — саваламасăр
Хăпăтаймăн ĕмĕрне.
А сави... сави вăл — хамăр
Яланах ун пек чухне.

Ахаль мар пуль çав пуплеççĕ
Кая юлнă çын çинчен:
Çынтан мар, муртан юл, теççĕ,
Ĕлкĕрес пулать иккен.

Пур çĕрте те пурăнаççĕ
Этемсем эртелленсе.
Шур курак пек курăнаççĕ
Ку чухне пĕччен çынсем.

Çавăнпа-и, тен, сăхаççĕ
Сăмахпа унашкала.
Коммуна пĕччен сухаçă
Кĕреймест ман шутпала.

Карантай Матвин те ячĕ,
Тен, республика урлах
Сарăлса чысран каятчĕ,
Анчах тухрĕ урăхла.

Халь ăна куç умĕнче те,
Курман чух та — пĕрехмай
Ячĕпе чĕнеççĕ ĕнтĕ:
— Кам тавраше? Карантай! —

— Хăш Матви? — «Матвей Агапчă!»
Тет хай счетовод вара.
— Миçе кун? — «Шăп вăтăр пачĕ
Тăрăшса çак уйăхра».

Ăнсăртран кăна хăш тапхăр
Çăмăл чунлă шăлйĕрен
Каласа хурать тăрлавсăр:
«Тухрĕ-им чăх айĕнчен?..»

Унашкал пĕр мыскараçă
Тĕл пулать вăл ялсерен.
Анчах хытă хăтăраççĕ
Ваттисем çавна илтсен:

«Пулн-иртнĕ. Çын — ударник.
Ма шăла йĕрес халь тин?
Урăх вăл яла култармĕ,
Ятне ямĕ. Хамăр çын!»

1949—1950

## ЧĔРЕ ЮРРИ

Чĕрем юрри — пин çын юрри!
*Çеçпĕл Мишши*

### 1. Çамрăксен кăмăлне

Нихăçан пуç усми çамрăк гварди,
Куç тулли шăллăмсем, йăмăксем!
Ку сăвва сирĕн чунăр çыртарчĕ,
Сирĕн яш куçăрти çут хĕлхем.

Сăнăра-пуçăра сăнассăн —
Çирĕм çулăм чакать хĕрĕхрен.
Савăнса çĕкленет уçă сассăм,
Çамрăк халлăн янрать çĕнĕрен.

Çăмăл савăнăç мар, çăмăлттайăн
Сиккелеймĕп яш çын ташшине.
Сирĕнпе пĕрле хутшăннă майăн
Тĕрлĕ шухăш ӳкет пуç çине.

Çуркунне ешерет-и çĕн курăк —
Яланах пĕр картина умра:
Сахал мар-ха хура шăтăк-çурăк,
Окопсем, траншейсем çĕр тавра.

Кĕркунне тăкăнать-и сар çулçă —
Эп куратăп тин çеç курнине:
Сахал мар тантăш-тус выртса юлчĕ
Пичĕпе Хĕвел анăç енне.

Çамрăксемччĕ вĕсем, вăйпитиччĕ,
Пĕччен пĕкĕ авас пек маттур.
Çавсемпе ак каллех аса килчĕ
Тар шăршиллĕ вăрман, хĕрлĕ юр...

Чĕлĕнсе, татăлса пĕтнĕ йывăç —
Те чĕр йывăçчĕ вăл, те юпа?
Анчах эпĕр «çĕр хут пулĕ йăвă
Çак вăрман!» тесе тунă тупа.

Ĕмĕтленнĕ кунсем килсе çитрĕç,
Чĕррисем! Хывăр çĕлĕкĕре:
Çĕнтерсе çĕре кĕнĕ çын тивĕç
Тав-мухтав юррине ĕмĕрех.

Фашистсен эрешмен пек хĕресĕ —
Хуплаймарĕ вăл пирĕн çĕре.
Çамрăк гварди! Малта пултăн эсĕ —
Чи хăюллă йышпа пĕр ретре.

Пуринчен хăюлли пирĕн парти:
Пысăк шанчăк хывса вăл сана
Хамăр çĕршĕн тăма вăй хуштарчĕ,
Комсомол! Эс ăнлантăн ăна.

Чапа тухнă ятна эс çĕртмерĕн:
Станокран, уй-хиртен уйрăлса,
Пăшална чăмăртарăн тĕреклĕн —
Тăшмана çĕниччен хумасса.

Хĕрлĕ çăлтăр нумай чикĕ урлă
Каçрĕ санăн пилоткупалан.
Танлăх, ирĕклĕх, мир! — Ак мĕн курнă
Ĕç çынни ун çинче чи малтан.

Халĕ ак çур этемлĕх хускалчĕ,
Çапса ватрĕ вăл кив гербсене.
Миçе тĕрлĕ династи шутланчĕ, —
Кирлĕ мар! — тет кун-çул вĕсене.

Ăмăрткайăк-и герб, арăслан-и —
Пĕтчĕр, — тет ĕç çынни, — усси çук.
Пĕри çеç çулсерен аслăланĕ,
Ун çинче — çурлапа мăлатук.

Ваттисем пĕр юмах çӳрететчĕç
Малтанах вăрçă чух ялсенче:
«Çав Китай тапранмарĕ-ха, — тетчĕç, —
Тапрансан — хускалать пуль тĕнче...»

Çамрăк гварди! Пиртен эсĕ ыйтăн:
Хăш тĕнче? Тĕрĕс пулĕ ыйтни.
Тĕнче иккĕ: пĕри — харампырăн,
Тепри — хамăрăн, пур ĕç çыннин.

Чан Кай-шийĕн пулсан — пĕттĕр унăн!
Хăвăртрах пăнчăхни пит аван.
Анчах сывă вăл Мао-Цзе-дунăн
Çур мильярдлă Китайĕ паян.

Аслă халăх чăнах та тапранчĕ,
Çут тĕнче пĕтессе-ши ку? Çук!
Çĕн Мускав сассипе вăл вăранчĕ —
Пин çул çывăрнă Ази ку чух.

Çапăçать ав Вьетнам, çичĕ ютăн
Умĕнче вăл пуç таймĕ халь тин.
Кашни ĕçлĕ çемьен, мирлĕ çуртăн
Çутă шанчăкĕ пур: Хо-Ши-Мин.

Парăнмасть Ким Ир Сенăн салтакĕ,
Вăл калать пур тĕнче илтмелле:
«Пĕтчĕр сутăнчăксем! Е татах-и
Ман çĕршыв тыткăна лекмелле?»

Çамрăксем! Эсремет эрешменĕ
Тăскалать-ха алли-урине.
Вăл чылай çĕр тавра халь пикеннĕ
Çавăрма Уолл-стрит картине.

Çĕр çинчен вăл ахаль тасалать-и!
Астăватпăр-ха эпĕр, манман:
Юн юхтарчĕ Пальмиро Тольятти,
Доллар пуçлă хурах тупăнсан.

Çавăнах — Уолл-стритăн çăханĕ
Сĕхма пăхрĕ Морис Тореза.
«Вăхăт çитĕ: çăхан персе анĕ!» —
Тетпĕр хирĕç эпир, кар тăрса.

Репродуктор умне пухăнсамăр:
Миршĕн, миршĕн кĕрлет халь тĕнче...
Мир тĕрекĕ — вăл эпĕр, вăл — хамăр,
Пур çĕршывăмăр мир вахтинче.

Сталинград медальне эп усратăп,
Эп манман-ха Мамай тĕмине.
Халĕ ун тӳпинчен эп куратăп
Вăйпитти çĕн хула ӳснине.

Час унта çĕнĕ тинĕс пек шавлĕ
Аслă Атăл мухтавĕ — пĕве,
Çĕршыва çĕнĕ ырлăх халалĕ,
Тарăнлатĕ сăвва та кĕвве.

Эп Мускав леш енче чăрăш куртăм,
Мина татнăччĕ ун тăррине.
Çав тĕлте тепĕр хут кăçал пултăм:
Пиллĕк ӳснĕ пĕрре вырăнне!

Çав яштак тăрăсем асра çутрĕç
Пилĕк юплĕ тăван çăлтăра:
Ешĕл чăрăш — вăл вĕçĕмсĕр пурнăç,
Кремль хӳми çумĕнче вăл тăрать.

Украина урлах эпĕ каçрăм,
Хăш чухне блиндажра е маршра
Туссемпе эп «Каховка» юрларăм,
Халь — çĕн юрă ыйтать çав тавра.

Днепрогэсăн çап-çамрăк тăванĕ
Час çĕкленĕ унта çуталса.
Пиччĕш пек кăна мар вăл чапланĕ,
Çĕн ăру вăйĕпе хăпарса.

Эп туркмен çĕрĕнче те пулсаттăм,
Эп пĕлеп Кара-Кум хăйăрне.
Анчах ак пĕр ирпе ман хаçатăм
Пĕлтерет çĕн канал хыпарне.

Эп курап: улăпла экскаватор
Çул тытать пуш хире. Час çав хир
Ешĕл сад пулса ларĕ, тăватпăр,
Тумасса — тытăнмастпăр эпир.

Пĕр чĕлхеçĕ пирки çырмаллаччĕ...
Пурте кирлĕ халех... Ёлкĕрес...
Сывалать-ши Пальмиро Тольятти?..
Миçе сас миршĕн пухнă конгресс?..

Инçетри хĕвелтухăç кутемĕн
Вăранать те пулас ыйхăран.
Çур çĕршыв çывăрать-ха тӳлеккĕн,
Ма тесессĕн — пĕр çын çывăрман.

Кам пĕлет çĕр каçа миçе хут вăл
Чĕлĕмне тултарса чĕртнине...
Çывăр, савнă çĕршыв, çывăр тутлă,
Сан ĕçе тăмалла ирхине.

Аслă халăх! Тăхлан çумăр витĕр
Тин кăна иртрĕн эс улăп пек,
Паян кун утăмлатăн пĕр шиксĕр
Ĕçлĕ кунăн кăвак тумĕпе.

Чап-мухтав та, парне те эс ыйтмăн,
Эс пĕлен ху чысна тахçанах:
Çар геройĕн те çăлтăрĕ ылтăн,
Ĕç геройĕн те — çав ылтăнах.

Ирсерен çутăрах эс куратăн
Хĕрелсе тухакан хĕвеле.
Пур йăхсен чĕлхипе эс юрлатăн:
Сталин — мир, Сталин — пурнăç, телей!

**2. Икĕ ят**

Çын тесе пысăкла каласассăн
Чи малтан — икĕ ят асăмра.
Çавсемпе тĕрĕслетпĕр кун-каçăн
Пур ĕçре те эпир хамăра.

Икĕ ят, уйрăлми Ленин — Сталин,
Кам кĕртмен-ши сăвва вĕсене?
А вĕсем — эпопея пек халĕ,
Çырăн, çырăн — тухаймăн вĕçне...

Ман килте çитĕнет пĕчĕк ывăл,
Вăл тин çеç сăмахсем тукалать.
Ик портрет — уншăн чи çывăхри вăл,
Вĕсене тахçанах вăл паллать.

Çиччĕри шкул ачи, пур тытсассăн,
Чи малтан класс туски варрине

Вăл çырать тăрăшса та хавассăн
Ик çулпуçăн юратнă ятне.

Пионерăн тупи — Ленин, Сталин.
Комсомолăн — ик ят ĕлĕкрен.
Партие кĕнĕ чух эс мĕн калăн?
«Ленин — Сталин ĕçне тăвăп!» тен.

Ленин — Сталин! Вĕсем ик хĕвел пек
Çутататаççĕ тĕнче тӳпине.
Вĕсемпе тĕл пулсассăн, пĕлеп эп,
Хура пĕлĕт ӳпне ӳпĕнет.

Летчик çĕнĕ йĕрпе çул тытать-и —
Чĕринче вăл усрать ик ята.
Пăр çинче пирĕн çын хĕл каçать-и —
Икĕ ят ун чунне ăшăтать.

Пуçласа çын чугун шăратать-и —
Чи малтан вăл хывать ик портрет.
Çĕнĕ çурт пураса çын лартать-и —
Тĕпелне икĕ сăн вăл кĕртет.

Ватă акын тумра ĕнерет-и —
Ик ята асăнса пуç таять.
Ват ученăйăн кунĕ пĕтет-и —
Ун чунне вăй парать икĕ ят.

«Пур-ха кун!» тет ученăй алхапăл
Хăйĕн чаплă та йывăр ĕçне
Ик ятпа çутатать те вара вăл,
Куç хупсан та пурнать ĕмĕрне.

Эп — поэт. Кĕрешӳшĕн те сассăм
Мирлĕ ĕçшĕн те кирлĕ ку чух.
Анчах çав икĕ ят пулмасассăн
Эп нихçан та çăвар уçас çук.

Тĕнчерен пытанса урăм-сурăм
Хурлăха пусарма хал çукран
Çырмара макăрашĕччĕ юррăм
Пĕр-пĕр суккăр кĕслеçĕпе тан.

Кӳтсе çитнĕ хавшак чун хавалĕ
Ирĕк шухăш чĕртсессĕн вара
Старăстан пашалу пек медалĕ
Час вăл хуплĕччĕ ман çăвара.

Ун чухне Тайăр тантăшăм евĕр
Çĕрнĕ пулăттăм эп Çĕпĕрте.
Е тип шар тăвăттăм, тӳсеймесĕр,
Макçăм шăпăрçă пек ют çĕрте...[1]

Икĕ ят — пур кивве çапрĕ савăл:
Патшасен, тӳресен, улпутсен
Пин çулхи йывăçне шар çурса вăл
Çиçĕм пек вут хыптарчĕ тĕпрен.

Икĕ ят — пулчĕ халăх сасси вăл,
Ĕнентерчĕ тăван çĕр вăйне.
Çавăнтан вара чунăм ман сывă,
Ирĕк шухăш çул тупрĕ хăйне.

Ирĕк сас ача пек ынатланчĕ,
Юррăм тухрĕ çырма тĕпĕнчен.
Çулсерен вăл ӳссе çунатланчĕ,
Нихăçан та тек пулмĕ пĕччен.

Манпала пĕр юррах пĕр канашлăн
Янратать кӳршĕ-пĕлĕш сасси.
Пур ĕçре те пĕр ĕмĕт халь манăн:
Ик ята тивĕçрех пуласси.

Икĕ ят, уйрăлми Ленин — Сталин.
Ленина чĕрĕлле эп курман.
Шартлама январьти юр кристалĕ
Нихăçан каяс çук асăмран.

Урамра, вут чĕртсе, ушкăн-ушкăн
Эпир тăтăмăр çав январьте.
Шартлама — анчах йăлт çара пуçăн
Те сехет, те çур ĕмĕр иртет...

Юлашки салютпа çĕр чĕтренчĕ.
Юлташсен куçĕсем — ан та кур...

---

[1] Вырăс писателĕ Н.Д.Телешов çырнă «Тип шар» повесть геройĕ.

Аслă гимн сассипе чун çěкленчě
Чакăртатрě таптаннă тип юр.

Мускавра çавăн чух уçă саслăн
Янăранă-мěн аслă тупа.
Тупине тăвакан — пулнă Сталин,
Чěрě Ленин вăл çав кунтанпа.

Сталин! Ун асěнче пур малашлăх:
Хире лартнă кашни икеле
Юман паттăр пулса кашламашкăн
Вăл пиллет чун тулли пилпеле.

Çурт пулса хăпаран кашни кирпěч,
Кашни тимěр листи тенě пек,
Ун сěтелě çине малтан выртěç
Проектри, макетри сăнěпе.

Пур этемлěх çинчен шутлаканăн
Кашни çěнě сăвва, романа,
Юмаха та тытса вуламашкăн
Тупăнать-мěн сехет яланах.

Сталин! Чăн тӳпери аслă гени.
Анчах унăн тымарě çěрте.
Халăха вěрентсе çěклекенě
Хăй унтан вěренсе хěпěртет.

Аса килчě мана хăй сăмахě,
Çук унтан витěмли нимěн те.
Çавăнпа танлаштарăп хăйсах эп:
Халăх — çěр пулсан, Сталин — Антей.

Анчах çак Антее çěнтермешкěн
Çуралман, çук Геракл тěнчере.
Вăл çуралмě нихçан та, пěлетěн:
Сталинпа халăхăн пěр чěре.

Халăхра йăлтăр çутă курсассăн,
Сталин çулăм чěртет хěлхемрен.
Вăл наука тăвать аслă класăн
Ăмăртуллă патвар ěçěнчен.

Çын чунне тенкĕпе çеç хакланă
Çĕрсенче ăнлас çук çаксене.
Ахаль мар тĕлĕнтерчĕ Стаханов
Тĕнчери академиксене.

Шурă слон шăмминчен тунă башня
Хăтараймĕ кив шухăш-ăса.
Çĕнĕ чăнлăх пырать хăйĕн кашни
Пусăмне Сталинпа çутатса.

Халиччен тӳсеймен пĕр суя та
Унăн тимĕр касан чĕлхине.
Шухăш улăпĕнче эп туятăп
Шĕл кăвар пек поэт чĕрине.

Кам сăмах шыраса хĕрĕнмерĕ
Ленина сăнлама халиччен?
Сталин «ту ăмăрткайăкĕ» терĕ,
Кам калайнă кун пек ун çинчен?

Эп курап: вăркăшать ăмăрткайăк,
Тусем урлă хăюллăн вĕçет.
Пăр пек сывлăш, тăман, çил шăй-шайĕ —
Ним те мар: пур хĕвеллĕ инçет!

Çав хĕвеллĕ инçет çывăх ĕнтĕ:
Темиçе ту-сăрт урлă каçса
Ăмăрткайăк куç хупрĕ пулин те,
Чĕпписем унăн сывă, таса.

Вĕсене унăн тусĕ ӳстерчĕ,
Хăй тусем хушшинче ӳснĕскер.
Хурçăран вăл çунат çитĕнтерчĕ,
Хăруш мар тек пире нимĕскер.

Ĕçлесе пурнакан пур этемлĕх
Халь пĕр çын патнелле туртăнать,
Чи таса кăмăлпа, чи илемлĕ
Парнесем ун патне вăл ярать.

Ват ăста ятнех атă çĕлет-и —
Пур чунне хăй ĕçне вăл хурать,
Кинемей кĕпе умĕ тĕрлет-и —
Кашни пурçăн сĕвемĕ юрлать.

Ваза, чĕлĕм, сĕтел-и, пукан-и,
Чернил савăчĕ, хут касмалли —
Пĕтĕмпех юратса туса панă
Ĕмĕрех ĕçлекен çын алли.

Китайран янă зонт, унăн ячĕ —
Вуншар пин çын хӳтти: Ван-Минь-Сань.
«Тĕнчене çĕнĕ çутă вăл пачĕ»
Тесе янă Иран кĕмĕл сăн.

Ак Испани урлах каçнă танлăн
Мăшăр тутăр вĕçсе, кур ăна.
Çӳхе пурçăн çинче Ленин — Сталин
Ĕç çынни çавсемпе пурăнать.

Пусмăр пуснă индеецсем акă,
«Сталинран асли çук тĕнчере!»
Тесе янă ăна чап калпакĕ,
Ăру пуçĕ туса ĕмĕре.

Индуссем çулпуçне саламланă
Ыр сăмах çиттĕрехчĕ тесе,
Пĕр пĕрчĕ рис çине çырса янă
Виççĕр саспаллирен irттерсе...

Çавнашкал, нимле виза ыйтмасăр,
Парăнмасăр штыка та хĕçе,
Йĕтĕр çăтнă пек тӳрĕ те каçăр
Дипломат пуçĕ урлă вĕçсе,

Ыткăнать юрату, аслă шанчăк.
Адрес — виçĕ сăмах. Халь ăна
Пур чĕлхеллĕ çĕршыв та ăнланчĕ:
М у с к а в а, К р е м л е, С т а л и н а.

Юлашки хыпарсем итлесессĕн,
Кремль сехечĕ вуниккĕ çапсан,
Тĕлĕрет ман çĕршывăм тӳлеккĕн
Ĕмĕтсем çитнипе савăнса.

Анчах Кремль варринче пур пĕр кантăк,
Çĕрĕпех ун сӳнмест-мĕн çутти.
Çавăнта, пур тĕнче çывăрсан та,
Илтĕнет-мĕн пĕр çыннăн утти.

Çын çӳрет шăплăхра каллĕ-маллĕ
Хăйĕн ĕмĕр пĕр пек уттипе
Е сасартăк ларать, ăс-хавалĕ
Шыракан сăмахне тупнипе.

Вăл çырать. Çӳлте Ленин портречĕ.
Умĕнчи хăмăр томĕ çинче
Пурте пĕлнĕ Ильич силуэчĕ,
Унпала канашлать вăл ирччен.

Кам пĕлет харсăр шухăшпалан вăл
Çак çуртран хăш çĕре çитнине.
Витĕр куçĕ ĕçпе хавхаланнă,
Тинкерет вăл тĕнче карттине.

Тӳпере вăркăшать Кремль ялавĕ
Ăмăрткайăк вĕçсе иртнĕ пек.
Партин ту ăмăрткайăкĕ! — Çавă,
Çавăн ăсĕ вĕçет тĕнчипе.

Карттă хучĕ çине акă куçăн
Хĕрлĕ çутă хӳсе килнĕ пек.
Çур мильярдлă Китай çинчен ку сăн
Нихăçан каяс çук ĕнтĕ тек...

Мĕнлерех-ши тыр-пулă Болгарин?
Çитмелле-ши Албанин хăйне?
Хăвăртрах мильоншар гектарăн
Актарасчĕ Лысенко сортне...

Пĕр чĕлхеçĕ пирки çырмаллаччĕ...
Пурте кирлĕ халех... Ĕлкĕрес...
Сывалать-ши Пальмиро Тольятти?
Миçе сас миршĕн пухнă конгресс?

Инçетри Хĕвел тухăç кутемĕн
Вăранать те пулас ыйхăран.
Çур çĕршыв çывăрать-ха тӳлеккĕн,
Ма тесессĕн — пĕр çын çывăрман.

Кам пĕлет çĕр каçа миçе хут вăл
Чĕлĕмне тултарса чĕртнине...
Çывăр, савнă çĕршыв, çывăр тутлă,
Сан ĕçе тăмалла ирхине.

Аслă халăх! Тăхлан çумăр витĕр
Тин кăна иртрĕн эс улăп пек,
Паян кун утăмлатăн пĕр шиксĕр
Ĕçлĕ кунăн кăвак тумĕпе.

Чап-мухтав та, парне те эс ыйтмăн,
Эс пĕлен ху чысна тахçанах:
Çар геройĕн те çăлтăрĕ ылтăн,
Ĕç геройĕн те — çав ылтăнах.

Ирсерен çутăрах эс куратăн
Хĕрелсе тухакан хĕвеле.
Пур йăхсен чĕлхипе эс юрлатăн:
Сталин — мир, Сталин — пурнăç, телей!

## 3. Сăмах хăвачĕ

### 1

Эп сăмах хăватне ĕненетĕп,
Эп пĕлеп: сăмахпа этеме
Амантма та пулать, ӳкерме те,
Ӳкнине те пулать çĕклеме.

Эп пĕлеп: сăмаха хĕрлĕ хурçăн
Хĕмлетсе хыптарсассăн кăна
Вăл парать ăшшине ырă тусшăн
Вăл касса пăрахать тăшмана.

Чăн сăмах! Эс ăна ӳстеретĕн
Чĕрепе те, чунпа та юнпа.
Çапла çеç вăл пулать ĕмĕрсемшĕн —
Çулти çутă маяк, вут юпа.

Çапла çеç вуншар пин çухрăмран та
Магнит пек вăл туртать çынсене...
Эп манман, манас çук нихăçан та
Мускавра Горькие курнине.

Чĕрĕ Данко! Пĕрре кăна куртăм,
Пĕрре çеç илтрĕм ун сассине —

Пĕтĕм шухăшăм, кăмăлăм, чунăм
Талпăнса туртăнчĕ ун енне.

Çавнашкал тепĕр сасă-йыхравçă
Асра юлчĕ нихçан манмасса.
Вашингтон Шурă çурчĕ — хăравçă! —
Виза памĕччĕ халь çав сасса.

Анчах пур дипломат пуçĕ урлă,
Пур тӳре-шара урлă — çаплах
Ыткăнать шавлă, тăвăллă, хумлă
Маяковский малтан малаллах...

**2**

Чăн сăмах! Вăл пирте уçă саслăн,
Ирĕк вăйлăн тăрать янраса.
Сахал мар çĕрсенче-ха сăмахăн
Ирĕкне илмелле çапăçса.

Унта чăн сăмаха хĕсĕрлеççĕ,
Пур вĕт-шакăр йытта вĕртерсе;
Кунĕн-çĕрĕн йĕрлеççĕ, пӳлеççĕ,
Анчах çук пĕтерме тĕрĕсе.

Сăмаха тĕрмене те хупаççĕ,
Сăнчăрлаççĕ кашни сыпăкне.
Ун чухне стенасем калаçаççĕ, —
Чăн сăмах çитетех çын патне.

Бурсăра вунвиç çул чул та тимĕр
Кăшлаттарчĕç Назым Хикмета.
«Ӳкĕн, — терĕç ăна, — йăлăн, тилмĕр...»
Çук! Пĕлмерĕç вĕсем поэта.

Ун чĕри парăнми юнпа тапрĕ,
Унăн шухăшĕ пулчĕ инçе.
Ун кунне вырăс хĕрĕ çутатрĕ
Тĕттĕм тĕрĕк тĕрмин тĕпĕнче.

Вырăс хĕрĕн, совет хĕрĕн пичĕ,
Зойăн сăнĕ ялан асĕнче:

— Манăн ирĕкĕмшĕн çав хĕр вилчĕ, —
Терĕ вăл чи хура каçсенче.

Ун çинчен хучĕ вăл ăшă юрă,
Йăмăк терĕ ăна юратса.
Кирпĕче шăтарса сăмах тухрĕ,
Кайрĕ тĕрĕк çĕрне хускатса.

Тинĕç урлă каçса вăл янрарĕ
Софире, Парижра, Мускавра.
— Хăтарар! — терĕ те ĕçлĕх çарĕ
Чăмăртанчĕ пĕр шухăш тавра.

Поэта хăтарса алă вĕççĕн
Йăтса тухрĕ тус-йыш çавăнтах.
Çĕнĕрен çĕнĕ вăй хушса вĕçнĕн
Ыткăнать, çĕкленет çав сăмах.

Тав сана, пирĕн тӳсĕмлĕ тантăш!
Сывă çитрĕн хĕвел çĕршывне.
Тек сана сăнчăрлаймĕç нихçан та.
Тав, Назым! Тыт телей куркине!..

Илтрĕм эп: долларпа пĕр каварлă
Тӳресем, хуçине итлесе,
Сана халĕ çĕршывсăр хăварнă.
— Кĕлмĕçсем! — тес килет питлесе.

Турцин намăс пĕлмен янычарĕ —
Пуççăр пуçлăх — вăл сутăннă халь.
Епле вăл сăмаха тытса чарĕ,
Çав сăмах çĕклесен халăха?!

Çав Панкрац теекен хура хурлă
Тĕрмерен, Прагăран — çавăнтах
Вĕççе ӳкнĕ вăл пур çĕршыв урлă —
Çăкăртан кирлĕрех чăн сăмах.

Пĕр хут мар çав сăмахшăн — çĕр хут чик
Йăлмака, çулăма, çĕр тĕпне:
Пурăнать пирĕн Юлиус Фучик,
Хуплаймарĕ тăпра ун ятне!

Эп тытап кĕнеке: вăл çӳхе те,
Анчах йывăр нумай томсенчен.
Миçе хут хама хам эп чӳхетĕп
Кĕрешӳ хумĕпе пур енчен!

Юрату юрри мар, роман мар вăл:
Ĕмĕрхи тăшмансем чăтайми
Çĕкленсе çунмалли типĕ тар вăл,
Ун кашни страници — динамит.

Хуплашки çийĕнче сăнӳкерчĕк:
Çамрăк Фучик кулать чун тулли.
Мĕнле йывăр пулсан та ун терчĕ,
Тăшманран вăйлăрах ун кулли.

Хаяра çĕнтерет ырă çынлăх,
Çутă кун çĕнтерет тĕттĕме.
Çакнашкал çĕр çинчи аслă чăнлăх.
Паян тин ăна çук пĕтерме!

Эп вулап кĕнеке, аслă класăн
Вăйĕпе манăн чунăм тулать.
Çамрăк паттăр кулать шав хаваслăн,
Супнă кив тĕнчерен вăл кулать...

Паян — пуçлăх, ыран — ыран çĕр ăманĕ,
Кам астутăр ун ирсĕр ятне?
Поэта халăх усрĕ, ăнланĕ,
Вут çинчен пырĕ вăл ун патне.

Пур хушу, пур чару, çын элекĕ —
Хут çине çырăнать те вилет.
Чăн поэт — халь те кăмăл тĕрекĕ,
Пин çултан та — чи çутă тивлет.

Чăн поэт турпаса ташлаттарĕ,
Касĕ чул, халсăра парĕ хал.
Чăн поэт — юрату, халăх тарĕ,
Йĕнĕрен ваш кăларнă кинжал.

Тĕнчене икке уйăрнă тапхăр
Пире сыхă пулмашкăн чĕнет...
Тав сана, пирĕн шанчăклă паттăр,
Аслă ирĕклĕх тусĕ — Хикмет!

### 3

Сăмаха мăйкăчпа йăлмаклаççĕ:
Паллă парĕç — карт туртĕ палач.
Шăтарас пек куçпа пăралаççĕ
Алăк витĕр ăна: «Ан калаç!»

Çав пăра пек куçран хăрамасăр
Çав йăлмак карăнас кунччене
Прагăри тĕрмере вăрттăн харсăр
Сăмахсем çырнă паттăр пĕр чех.

Кашни хут татăкки, хамăр шаннă
Çынсенче çутă ĕмĕт чĕртсе,
Йĕрлесен те — пытаннă, усраннă,
Кăвкарчăн пек тухнă вĕçсе.

### 4

Аякри Чилире тепĕр сăвăç
Хăй çине илнĕ йывăр çĕклем.
Халăхсем ăна ĕмĕр тав тăвĕç,
Эп те уншăн чуна кĕвĕлем.

Вăл çӳрет ăмăрткайăк çунатлă
Шухăшпа тăшманран пытанса;
Вăл çӳрет Фучик çĕрĕ çуратнă
Поэтран хушамат йышăнса.

«Таркăн» тет вăл хăйне. Эх, мăнтарăн,
Йăваран тухса ӳкнĕскерсем!
Кам чунне сутас мар тет — çав «таркăн»,
Кам суймасть — çав унта «ют» этем.

Вăл çӳрет — миршĕн тухнă йыхравçă,
Телейпе кĕрешӳ хыпарçи.
Хресченсем ăна çăкăр параççĕ,
Ăшă сĕт, виноград — лар та çи.

Шахтерсем, матроссем, куçма-куçăн
Курмасан та кĕтеççĕ ялан.
Çур çĕрте те ăна алăк уçă,
Ун юрри илтĕнет аякран.

Пуянсемшĕн пулмасть мыскараçă,
Доллара вăл сутмасть юррине.
Ун таса кĕввисем шантараççĕ
Çутă ĕмĕт — Мускав — пуррине.

Тав, мухтав сана, Пабло Неруда!
Ытларах куçчăр пирĕн енне.
Çăмăл пултăр аллу та, юрру та!
Тав, мухтав коммунизм çарне!

**5**

Парти — хурçă колоннăсен çарĕ.
Ун çулне, тĕллевне пĕлсен тин
Умри ĕмĕт çитсе янтăрарĕ
Сарлакан, пархатарлăн, туллин.

Парти! Ун умĕнче чун яр-уçă:
Вăл тĕпчет, вăл пĕлет, çул сĕнет.
Паян слесарь, ыран эп — çар пуçĕ,
Паян — токарь, ыран — президент.

Парти! Кăмăл мĕнле-ха çĕкленмĕ?
Паян эпĕ — кĕтӳçĕ, ыран —
Пур тĕнче пĕлекен академик,
Пуçланать çĕнĕ чăнлăх манран.

Парти — чакмĕ пĕр шит каялла вăл,
Вăл ĕçлет пур этемлĕх валли.
Ун çинче — аслă Ленин ялавĕ —
Çĕнтерен коммунизм палли.

Доллар пуçлă хуçан пин «геройĕ»
Çаврăнмашкăн чараймĕ çĕре:
Эпĕ — партийĕн пĕр рядовойĕ —
Вĕсенчен вăйлăрах тĕнчере.

Ман хирте халь кăмбайн, экскаватор,
Вĕсен — тупă та танк хуп-хура.
Пĕр-пĕрне тинĕс урлă куратпăр:
Вĕсен — вилĕм, ман — пурнăç умра.

Ман умра — пĕтĕм çĕрĕн телейĕ:
Ĕçпеле пиçĕхсе ӳснĕ чун —

Партипе пултарап хĕвеле эп
Çĕр çине антарма кирлĕ чух!

Акапуçĕ тытса хăпаланнă
Аллăма пĕтĕм халăх çинче
Парти хĕç пек перо шанса панă,
Эп пăрахмăп ăна виличчен.

Эп сăмах хăватне ĕненетĕп,
Сăмахсем тĕллĕ тухрĕç пулсан,
Ку — вĕсен тымарне те, тĕшне те
Аслă парти сĕткен панăран.

Тен, хальччен кирлĕ пек çырайман та,
Ахаль мар пуль каймасть асăмран
Рельс çине урлă выртнă Раймонда —
Хĕç-пăшал поездне чаракан.

Çавăн пек, çав вулкан евăр Францин
Паттăр хĕрĕ — Раймонда Дьен пек,
Мирĕн пĕр тăшманне эп чарсанччĕ
Сăввăмра çунакан чĕремпе!

**6**

Францие асăнсан пĕр писатель
Паянхи пек тухать куç умне:
Хусана Жан-Ришар Блок пырсаччĕ
Хĕрĕх пĕрмĕш çулта, кĕркунне.

Хулара çын виç хут ытларахчĕ,
Ак тата пĕр хура касхине
Мускавран çитсе поезд антарчĕ
Мускаври литераторсене.

Пичет çурчĕ патне тăкăлаççĕ:
Пур сĕтелĕ-тенкелĕ çине
Тулнă çын: çавăнтах вырткалаççĕ,
Çикелеççĕ хăйсен паюкне.

Çавăн чух аякри хăнана та
Малтанхи майлашман кунсенче
Пур рабочисемпех эп кураттăм
Типографи столовăйĕнче.

Мĕн тери сăнаса асăрхатчĕ
Черетри çынсене Жан-Ришар!
Куçĕнче хурлăх та курăнатчĕ,
Шанчăк та — хурлăхпа юнашар.

Ват наборщик, фальцовщица-карчăк,
Переплетчик-старик, метранпаж...
Çамрăксем ăçтине вăл ăнкарчĕ,
Пĕтĕмпех курчĕ пирĕн юлташ.

Çав кĕр çырчĕ вăл «Франци вулканĕ»,
Тыткăнри Парижне асилсе.
— Пусмăра хирĕç халăх хускалĕ! —
Терĕ пирĕн вăя ĕненсе.

Мир кӳрес кĕрешӳ ветеранĕ,
Пирĕнпе пĕр çарта утнă çын,
Ĕмĕрех ман асра вăл усранĕ —
Хĕç çĕкленĕ поэт-гражданин.

Пĕлтĕм эп ырă тусăмăр вилнĕ,
Францире — сӳнмĕ вутлă вулкан.
Ахаль мар пролетарийĕн гимнĕ
Французла янăранă малтан!

**7**

Эп сăмах хăватне ĕненетĕп,
Эп пĕлеп сăмахпа этеме
Амантма та пулать, ӳкерме те,
Ӳкнине те пулать çĕклеме.

Ман тупасчĕ, мĕнле шырасан та,
Ĕмĕрхи тăшмана çапнăçем —
Ӳкесле кăна мар — нихăçан та
Тăмасла çапакан сăмахсем.

Ман тупасчĕ паян Вилли Макги
Таса чунĕшĕн чĕрĕ сăмах.
Ĕмĕре юлтăр сăвăç сăмахĕ,
Пултăр вăл вилĕмрен вăйлăрах.

Ман тупасчĕ çав айăпсăр неграна
Ачисемшĕн чĕрем сăмахне.
Ылхансачĕ, питлесчĕ хаяррăн
Куçма-куçăн вĕсен тăшманне.

Пуринпе те пĕр тан, пĕртăванлăн
Пурнакан çак чăваш çĕрĕнчен
Кăшкăрассăм килет халĕ манăн
Океан леш енне çитиччен:

Эй, эсир, капитал — атте турă,
Доллар — турăш, текен мĕскĕнсем!
Кирлĕ мар мана сирĕн «культурăр»,
Ăшăм-чикĕм тулать асилсен...

Робсон, Робсон! Мĕн юрлăн тăшманăн
Чĕрине çуракан сассупа?
Тăванун куçне кур та, тăванăм,
Кашни нота халь пултăр — тупа!

Тăхлан куçлă çынсем сана хирĕç
«Сасси тытăнтăр!» — теççĕ пулсан,
Тусусем сан басна уççăн илтĕç:
Кĕрешӳ, çĕнтерӳ, мир вăл сан.

Вилли Макги чĕнет! Унăн юнĕ,
Унăн çуннă чĕри сивĕнмен:
Ĕмĕрех вăл пирте хыпса çунĕ,
Пусмăр, хурлăх, ултав пĕтиччен.

Эпир ним те манман! Эп тытатăп
Улт кĕтеслĕ хура кăранташ.
Ун çинче икĕ ят эп вулатăп,
Вĕсем — çывăх мана, хурăнташ.

Икĕ рыцарь вăл — Сакко, Ванцетти,
Вĕсене те пĕр айăпсăрах
Суд туса çыхса лартрĕ, вĕлерчĕ
Доллара пуççапан вăр-хурах.

Кашни шкул ачинчех вĕсен ячĕ
Вутлă ток витĕр витрĕ чуна.
Аслă класс çиллине вăл хытарчĕ,
Пин те пин чĕрере вăл çунать.

Эпир ним те манман... Канăç памĕ
Вăтăр улттăмĕш çул: чĕннĕ пек
Кăшкăрать сăнчăрланă Испани
Лоркăн çулăмлă яш юнĕпе.

Ун чухне Пиреней çур утравĕ,
Халь — Корея, каллех çур утрав.
Пĕр пекех çав асапăн сăлтавĕ,
Пĕр ятлах ункăланнă пăяв.

Вăл фашизм, эпир ăна курнă
Шăннă Зойăн çинçе мăйĕнче.
Сахал мар пăвса тухрĕ вăл, урнă
Вупăр пек çав хура кунсенче.

Эпир ним те манман... Çук, манмастпăр!
Çирĕп миршĕн çĕклетпĕр алла.
Çурлапа мăлатук — пирĕн паспорт,
Пирĕн герб, пирĕн çăлтăр, ялав.

Вăхăт çитĕ: кашни тумлам юншăн
Халăх илĕ çĕр хут çĕр парне.
Çав куллен çывхаран çутă куншăн
Тав, мухтав коммунизм çарне!

1950—1951. Шупашкар

## ТУРИ ВЫЛТА ТУЙ СИКЕТ

Хурапха Хĕветĕрĕн
Михалин мехелĕпе,
Çарăмсан саркайăкĕн —
Шелепийĕн шайĕпе,
Пушкăртри Пăртта йăхĕн
Кĕçтенттинĕн кĕввипе
Калаçам-ха эп каллах,
Халаплам-ха пĕр халап.

Чыс тăвам календаре:
Чăвашсем çак хисепре
Пин те тăхăрçĕр алла
Çитсе ĕлкĕрнĕ тĕле

Шартлама уяр хĕлле
Шупашкар урамĕнчен
Шухăш тытнă еннелле
Ирхи çăлтăр сӳниччен
Тухрĕ пĕр лашасăр лав.
Кăсăк пулĕ ман калав.

Лав тесе юптарнине,
Юптару юмах марне
Пĕлтĕр пулĕ малтанах.
Лав — машина вăл, паллах.
Анчах темшĕн, хуларан
Уялла тухса кайсан,
Çил вĕрсессĕн пĕр самант,
Килчĕ манăн асăма
Арçури ataштаран
Мĕскĕн, чухăн та йăваш,
Пуринчен те хăракан,
Тĕттĕм, тĕшмĕшлĕ чăваш.
Çавăн чух чунтан-вартан
Хисеплессĕм килчĕ ман
Авалхи асапранах
Такмаксем кăларакан,
Хĕн-хура манасшăнах
Юмахсем юптаракан,
Халапсем те хайлакан
Хамăр харсăр çынсене.
Çавăн чух сăввăмпалан
Ӳкрĕм эп çак йĕр çине.

Хĕвел тухрĕ хĕрелсе,
Сулахай енче çунать;
Кантăк витĕр вăл кĕрсе,
Йăпатса пырать чуна.
Ман шоферăм, шеремет,
Пăхрĕ те хĕвел çине:
«Сар хĕр пулĕ куç тĕлне,
Ку çавна пĕлтерĕ», — тет, —
Шав хушать хăй бензинне,
Шав хистет хăй таксине,
Вĕçтерет те вĕçтерет:
Тумхахне те такăнмасть,
Çырмине те çакланмасть,

Пăр-шурне те вăл пăхмасть —
Хăвăртрах çитме хавас.
Каччă çыннăн çавă-çке —
Касакра та улахра.
Вăрăм çулĕ те кĕске
Ун чухне пире вара.
Ман шоферăм... (Ун ятне
Пит пĕлес теекене
Пĕлтерес халех эппин,
Ячĕ пултăр ун Якку,
Хушамачĕ Тапаккух.)

... Ман шоферăм — чаплă çын,
Маçтăр хăйĕн ĕçĕнче,
Ун Чăваш çĕршывĕнче
Пĕр çырма, пĕр ял, пĕр вар,
Пĕр кĕпер пĕлменни çук.
Унпала çул кайнă чух
Кулянмасăр эсĕ лар,
Нихăçан та курмăн шар.
Халиччен вăл йытта мар,
Тыркаса та таптаман;
Хăй те пит вара хастар,
Çаврăнкалăш та вăр-вар,
Уттипе те утаман,
Вăйĕпе те вăкăр пек.
Ыттипе те ытарма
Çук çав ман шоферăма.
— Пулĕ-пулĕ те Якку, —
Тет пĕр пĕлĕш вара ман, —
Ну, ак ку тесен, ак ку —
Такамран та Тапаккух! —

Эп пăртак пуçа пĕксе
Силленсе пынипелен
Кăтăш пулнă пек сĕнксе
Курнă тĕлĕк те иккен:
Хĕл кунех пек, çул яка,
Тăсăлать пит аякка;
Çутă йĕрлĕ çулпалан
Пĕр çуна килет таçтан;
Туртине туртса çыхса
Çӳлелле тăратнă та,

Утсăр-мĕнсĕрех шуса
Вăл анать-мĕн аната.
Пăхрăм эп çуни çине —
Куртăм леш хайхисене:
Сар чăпта сăрнă хыçне
Таянса аран-аран
Ав ларать пĕр асанне —
Пин çулхи Ашапатман.
Йăнăшмастăп, çавă вăл:
Хуп-хура çăварĕпе
Темĕскер кавленĕ пек,
Курăнать шăпах пĕр шăл...
Хăйĕн тимĕр тыллипе
Вупăр карчăкĕ те ав.
«Шалт-шалт, тыллăм!» тенĕ пек
Янаххи сикет ун шав;
Куçĕ кайнă чалăрса,
Пĕлĕм пит, хăях сăмса.
Ав, куратăп, арçури,
Качака сухаллăскер;
Алли çăмлă, ик ури —
Ик карлав пек пит тискер!
Хĕрлĕ куçлă йĕрĕхсем,
Симĕс куçлă ийесем,
Вăрăм çӳçлĕ вутăшсем —
Пуçĕсене пăр шăннă;
Йыт хӳреллĕ, çын сăнлă,
Кушак пуçлă тăмана...
Хăш тĕнче? Хăш самана?

Лайăхрах пăхатăп та —
Те ырра ку, те мура —
Ларкăчи çинче тата
Пĕр этем ларса пырать,
Хăй ярать кăна юрра.
Çĕлĕк илчĕ — çын сынах,
Хушмалла пулать сăмах:
— Ăçталла каян капла? —
Терĕм эп, этем калать:
— Çакă пухă-пĕрĕке,
Ăçтиçук çак йĕксĕке,
Инкеке те синкеке
Шупашкар театрне

Туянтарăп тетĕп-çке.
Унта пур тет вырăнĕ.
Ахалех выртать тавар;
Илмесен вара лава
Кĕртĕп эп музей килне
Е тĕпчев институтне
Çавăрма пулмасть-ши теп,
Хаклă ыйтмăттăмччĕ эп
Аппаланччăр çавăнта!
— Ху эс кам пулан тата? —
Ыйтрăм эпĕ сых ятне.
Çын кăшт пăхрĕ ман çине:
— Эпĕ-и? Эпĕ — Хĕветĕр
Эсир мана пĕлетĕр! —
Терĕ вăл кулкаласа...
Кĕç таçтан темле сăпса
Вĕçрĕ кĕчĕ хăлхана,
Сăрлатать, сĕрлет кăна!
Вăранатăп, вăл иккен —
Ман такси юрлать хитрен.
Тĕлĕнтермĕш тĕлĕке
Эп курса пĕтереймен —
Кĕнĕ кайнă Элĕке.
Чарăнтăмăр, тухрăмăр,
Акă мĕн-мĕн куртăмăр.

Кăтра сурăх тирĕпе
Хăнтăрланă кĕрĕкпе,
Саррипе те хурипе,
Вĕтĕ-вĕтĕ пĕрмепе
Ăшăнса, саркаланса,
Хăшĕсем йӳле ярса,
Тутăр çиййĕн тăхăннă
Çавракa çĕлĕксемпе
Пасара пуçтарăннă
Паярсен майрисем пек
Кинемейсем килеççĕ.
Именмесĕр иртеççĕ.
Эпĕ ыйтрăм: — Ăçталла
Çул тытаттăр-ха капла? —
Кăвак куçлă кукамай
Чарăнать ак утнă май:
Путек тирĕ пуçĕнче,

Çĕнĕ кĕрĕк çийĕнче,
Çаннисем те çыруллă,
Аркисем те çыруллă,
Кăшт вуласа пăхрăм та —
Пархатар çук мар кунта!..
— Ара, эсĕ, ар тăван,
Астумашкăн маннă тем?
Суйлав кунĕ-çке паян,
Шкулалла пирĕн çулсем, —
Терĕ карчăк йĕркипе,
Ушкăн кулчĕ ерипе,
Кулнине кăтартмасса —
Тутине кăшт тутăрпа,
Алсапа хупăрласа
Хăвăрт утрĕç ĕç пурпа.

Ак унччен те пулаймасть —
Янраса каять пĕр сас.
Сас енне пăхса илеп...
Ма художник мар-ши эп?!
Мĕнлерех пĕлсе сăрлас
Хам куçпа хам курнине?
Хуткупăсне хутлатса,
Перчетке пӳрнисене
Чĕлĕхсем çине лартса,
Пĕр авса, пĕр вылятса,
Кăчăк туртнă пек туртса
Тухрĕ урлă урамран
Çамрăк купăсçă, атьсем!
Сар хĕрсем те йĕкĕтсем
Алăран алла тытса,
Шăлт та шалт мăйăр катса
Çул тытаççĕ пĕр енне,
Ахăртнех, çав шкул патне.
Шĕкĕл-шĕкĕл шӳтлешсе,
Иртĕнмесĕр виртлешсе
Вылятаççĕ кăмăлне,
Çитнĕ тейĕн çуркунне.
Чакăр куçлă пĕр пике
Маншăн пулчĕ мур пекех:
Яш пăхрĕ те куçăмран
Тăп чарăнтăм ун тĕлне,
Кăн хытса тăрап, айван.

Шур кăçатă уринче,
Çут калушĕ ун çинчен,
Пурçăн тутăр пуçĕнче:
Çурхи кăчкă çăмĕнчен
Çыхнă шурă перчетке
Унăн тăп-тăп аллинче.
Ăш хыптармăш çав пике
Юлчĕ чунăм тĕпĕнче.
Çавăнтан вара ман темшĕн
Пĕр юрра чĕрем усрать:
«Эп каламăп, эс пĕлместĕн —
Чунăм çулăмсăр çунать».
Мĕн тăвар-ха, мĕн тăвар?
Эп чăваш та, кунти мар —
Аслă Атăл хĕрринчи
Шупашкар патнерехри...
Хупăн, чунăм чӳречи,
Лăплансам, поэт чĕри,
Иртнĕскерĕ ирттĕр-и!

Элĕк шкулĕ пит ĕлккен,
Иван Якăльч ячĕпе
Хисепре тăрать иккен.
Таксие чаратăп эп,
Çĕлĕке хыватăп эп,
Шалалла кĕреп хуллен,
Ирткелеп çын хушшинчен.
Пысăк залăн варринче
У р н а тенĕ ещĕк пур,
Çăрапах питĕрнĕ, кур,
Пур пичет те ун çинче.
Яшшисем те ваттисем,
Вăкăр пек вăйпиттисем
Шав тухаççĕ пĕр класран,
Бюллетень хутне тытса,
Урна çывăхне пырса
Вăш яраççĕ çурăкран.
Бюллетенĕсем çине
Çырнă сумлă ятсене,
Кам камне кала-кала
Ăнлантарнă чăвашла.
Пĕр стена çинчен, çӳлтен,
Ачасем ăсталаса

Ешӗл чӑрӑш лӑссинчен
Ҫавӑрса-явкаласа
Тунӑ пӗр хашакӗнчен
Шур сухаллӑ ҫын пӑхать.
Уншӑн халӑх аллинче
Кӗнеке пурри паха.
— Иван Якӑльч, тав сана! —
Теҫҫӗ пурте ҫав сӑна...

Ак хайхи коридорта
Ячӗҫ леш хуткупӑса,
Тӑпӑр-тӑпӑр-тӑпӑр та
Чӑнкӑр-чӑнкӑр тутарса
Виҫӗ мӑшӑр харӑсах
Орденне те медальне,
Хутӑш — кӗмӗл тенкине
Ҫиҫтереҫҫӗ ҫаврӑнса,
Хушӑран ҫын хушшине
Сапалаҫҫӗ такмакне:
«Сӑмахне сӑмахлӑр та.
Халӗ ирӗк хамӑрта:
Ялта ят яракана
Суйламастпӑр Совета!

Наяна та кахала
Пур ҫӗртен те хӑвала!
Килте ахаль лариччен
Кӗрӗк арки йӑвала.

С а м о к р и т и к мӗн тени?
Тӗкӗр витӗр тинкерни.
Пит-куҫу хура пулсан
Супӑнь пӗтнӗ тетӗн-и?..»

Кулнӑ сас каять таҫта.
Пӗр-пӗрне тӗрте-тӗрте,
«Пултарать ача, ваҫка!»
Тет каччи те, хӗрӗ те.
Ҫитрӗ манӑн та черет,
Хӑлхана хам ят кӗрет:

— Сӑвӑҫа итлесчӗ! — тет
Малтанхи пӗр виҫӗ рет.
Йӑлӑна та йӑлӑна

Çук вăл ман ыйтарасси.
Пирĕн сăвă каласси
Кĕрсе кайрĕ й ă л а н а.
(Хаçатла каларăм та,
Пит ан тиркĕр хаçата!)

Тухрăм сăвă калама,
Пăхса илтĕм хам ума:
Карчăк тутăр айĕнчен
Хăлхине кăларкалать,
Старик чĕлĕм чĕртнĕччĕ —
Халь хыпи-хыпми ларать;
Урхамах пек йĕкĕтсен
Куçĕ мăч та хупăнмасть,
Пăрчăкан пек хĕрĕсен
Пĕсехи те хускалмасть.
Пур вĕт-шак ушкăнпала
Ларчĕ, тӳнчĕ чи мала.
Сак çитмест, пукан çитмест, —
Урайне те тиркемест.
Ма вĕсен куçĕнче вут?
Мĕн кĕтет çак пин чĕре?
Эп ăнлантăм тепĕр хут:
Сăвă кирлĕ тĕнчере.
Кирлĕ витĕр витекен
Чăн сăмах кунта тухма,
Сăвăçран çавна илтсен
Халăх хатĕр тем тума.
Чăн сăмах ялан пыл мар,
Хăш чухне — сухан, кикен,
Хăш чухне вăл шар тăвар:
Йӳçĕ те кирлех иккен!
Пĕрин хыççăн теприне
Хамăн пуçăн çӳпçинчен
Кăларап сăввăмсене,
Тĕрĕслетĕп çын çинче.
Хăшĕ вăрăм ытлашши —
Хăлчăк-хывăх ăшĕнче
Çухалса каять тĕшши.
Хăш сăввин çитмест ăшши;
Хăш сăмахĕ — кĕленче
Айĕнчи çеçке йышши:
Тĕсĕ пур та, çук шăрши!

Хăш сăмахĕ — пуш чечек,
Хăшĕ — шăши вучĕ пек:
Çутатать те хĕмленмест...
Пĕтĕмпех куратăн эс
Ăслă халăх куçĕнче.
Пĕр сăмахсăрах сана
Пĕлтерет вăл ун çинчен —
Асăрха кăна, сăна...
Вăхăт кайрĕ вăраха:
Хал кĕртсе те култарса,
Шухăш шухăшлаттарса,
Кăмăлне те тултарса,
Аллине те çуптарса
Эп хăвартăм халăха.
Ман шоферăм, шеремет,
Таксине пăрахнă та
Чиперех иккен итлет
Сăввăма коридорта.
Иксĕмĕр те тухрăмăр,
Лартăмăр та вĕçрĕмĕр.
Çывăх марччĕ çулăмăр,
Тури Вылччă тĕлĕмĕр.

Тукташ юлчĕ ту хыçне,
Тавăт пулчĕ куç тĕлне.
Суйлав кунĕ ячĕпе
Клубĕнче буфет ĕçлет.
— Черккисем пăхма чипер,
Тытма та çаплах-ши? — тет
Ман шоферăм, чеескер.
Тытса пăхрăмăр пĕрер —
Чиперех пек туйăнать.
Ак ял-йыш та пухăнать —
Суйлани, суйламанни —
Клуб тулли колхоз çынни.
Пур пичче те, пур инке,
Кĕр те шав тăвать иккен.
— Камит мар вĕт, мĕн кĕрен? —
Тет пĕри шалтан. Лерен —
Çĕмĕрлеççĕ çĕрĕн, тен:
— Кай-ха эсĕ камитпе!
Сăвăç килнĕ, амитке! —
(Шупашкар камичĕсем!

Айăп ан тăвăр мана:
Халăхра мĕн илтнисем
Кĕрсе юлнă хăлхана.)
Тавăтсене тав туса.
Синерсене систерсе,
Хитексене хĕтĕртсе,
Ураскилт урлă каçса
Тури Выла тухрăмăр,
Акă мĕн-мĕн куртăмăр.

Çимĕк мар, çулла та мар —
Шартлама хĕл уйăхĕ.
Чĕрере çунсан кăвар,
Сивĕ пысăк хуйăх-и?
Пăнтăр-пăнтăр параппан
Илтĕнсе каять таçтан.
Камăн туйĕ-шыльăкĕ?
Кам телейĕ-ырлăхĕ?
Авăнас-тăк авăнас! —
Тенĕ çĕмĕрт пĕкечи.
— Авланас-тăк авланас! —
Тенĕ Тури Выл ачи.
Çимĕкчен-ха тем пулас:
Те писес, те куçăхас,
Те тата хитре хĕре
Тепĕр каччă куç хывас...
Чӳпĕк мар-çке-ха чĕре!
Халь шăпах тата суйлав,
Шăп праçник те шăп уяв.
Хĕлĕн кунĕ — хĕр ыйхи:
Анасларĕ, карăнчĕ,
Куçне хупрĕ те хайхи
Тĕттĕме вăл парăнчĕ.
Уйăх çуллă чăкăт пек
Пĕлĕтри кĕрекере.
Алтăр çăлтăр аврипе
Çаврăнса чĕнет пире:
Тытăр, ăсăр-ха сăра,
Сывлăх сунăр мăшăра!

Ак сасартăк илтĕнчĕ
Хĕрĕн ашшĕ килĕнче
Ĕмĕрхи, тен пин çулхи

«Тухать-и те тухмасть-и».
Туй çынни картиш тулли:
Çамрăк-кĕрĕм те ватти,
Вĕтĕр-шакăр, вăйпитти,
Халăх майлă каласан,
Куçĕ-пуçĕ куракан,
Урипеле утакан,
Шуç чуманпа шăвакан,
Сăмсипеле сывлакан —
Пурте пынă туй курма.
Хĕрĕ тухрĕ пӳрт умне
«Хĕр йĕрсе» йăла тума,
Пурте пăхрĕç ун çине:
Авалхи пĕркенчĕк мар —
Пурçăн тутăр вăркăшать.
Пичĕ-куçĕ пархатар
Курмалла пек ялкăшать.
Хĕр çумми хĕрсен юрри
Йăпатать те çупăрлать:
«Макăр, макăр, ай, Мари,
Макăрмасăр кам каять...»
Мари тутăр айĕнчен
Йăл кулса илет чеен.
Кĕреке кăшт тăсарах
Янратать çавра-çавра:
«Хĕртен арăм пулнă чух
Макăрни те килĕшет...»
Çук, ку хĕрĕн куççуль çук, —
— Ан та пултăр! — тес килет.
Чĕн йĕвен чăлтăр тăвать,
Шăнкăрав шăнкăр тăвать,
Туй лаши пуçне ухать,
Кукалет те — çĕр тухать...

Яш та мар, ватах та мар,
Пĕвĕ-сийĕ пит капмар,
Хулĕ урлă çакнă хăй
Те сурпан, те пит шăлли,
Куçĕнче вылять-ха вăй,
Аллинчи курки — тулли,
Те туй пуç, те мăн кĕрӳ —
Пычĕ тăчĕ ман пата,
Сăмахне çапать хĕрӳ,

Вăтантарчĕ, тупата:
— Эс те — эсĕ, эп те — эп,
Тахçанах сана пĕлеп.
Эс çыран хушамата
Илтменни те çук кунта;
Михаппар мучи кăна
Илтеймен пуль халь ăна.
Айăп тумăн старике, —
Вăл хăлхасăр хĕрĕх çул...
Эс, эппин? Хăвах иккен?
Пирĕн савнă хăна пул!
Указне те куртăмăр,
Вуласа та тухрăмăр:
Эсĕ — халăх сăвăçи,
Халăхпа халь ĕç те çи.
Пирĕн халăх туй тăвать,
Туй тăвать çуй тăвать;
Пăх та кур, пăхмалăх пур,
Юратсассăн — юрă хур.
Кăрнаттир пек каччăмăр
Куçпа çиçĕм çиçтерет.
Хăй те çав, пытармăпăр,
Хисепленнĕ гврадире.
Чыслă тăнă салтакра,
Пиллĕк пулнă парадра
Шăп Мускавăн варринче,
Чи сăваплă çĕр çинче.
Мĕн каласси пур ара!
Хĕрĕ те хĕрех вара,
Эс асту-ха ун умне:
Тенкинчен те йăвăрах
Çакнă орден-медальне,
Мĕн тесси ĕнтĕ хĕре!
Касра мар — ялта пĕрре,
Вăрламан, тухса кайман,
Çураçман, укçа паман.
Саламат та, евчĕ те
Кирлĕ мар халь йĕкĕте.
Кăшт, илемшĕн тенĕ пек,
Савăнатпăр çаплалла.
Туй та тумасан мĕнпе
Çак куна асăнмалла?
Кун пекки хĕрпе качча

Тивĕçет пĕрре анчах:
Ик хăрах — тĕкел пулма,
Икĕ чун пĕр чĕм тума,
Иккĕн выртнă вырăнтан
Виççĕн яшт siksе тăма
Пĕрлешетпĕр авалтан.
Эсĕ, халăх сăвăçи,
Мăшăра кăмăлласа
Кăшт кăна такмакласан
Сана айăп тăвĕç-и?..

Халăх, халăх тенĕрен
Хал çĕкленчĕ çĕнĕрен.
Тăтăм эп çуна çине,
Куртăм йăлтăр куçсене,
Туйрăм йыш мĕн кĕтнине.
Чĕн йĕвен чăлтăр тăвать,
Шăнкăрав шăнкăр тăвать,
Туй лаши пуçне ухать,
Кукалет те — çĕр тухать.
Туй çынни мана тăнлать,
Ман такмак çапла пулать:

Тавссиех, тăванăмсем!
Авалхи йăлапала
Ман кунта каламалла
Саламалĕк сăввисем.
Утмăл çухрăм сĕм вăрман,
Çитмĕл çухрăм çеçен хир...
Халиччен килсе курман
Çĕршыва паян эпир.
Эсир курнă курасса,
Эпĕ — килтĕм пуçласа.
Айăп ан тăвăр мана:
Айăп ан тăвăр мана:
Тĕнче пысăк, çĕр çавра,
Çитменне, пăртак кăна
Çул та пулчĕ пуль тавра...
Вăрманпа эп иртнĕ чух
Тĕл пулмарĕ такмакри
Каçăр пуçлă пăлана,
Ăмăрткайăкĕ те çук:
Пуртă-пăчăкă юрри
Кĕрсе кайрĕ хăлхана.

Илтрĕм эп п ă л а н, п ă л а н
Тенине те хушăран.
«Хăшĕ?» — терĕм те, айван,
Кулчĕ ман шофер манран.
Юмахра йăпанмалли
Мар иккен вăл, чăн-чăнах
Çĕршыва вăйлатмалли,
Халăха пуйтармалли,
П ă л а н мар-мĕн, п л а н сăмах.
Çеçен хирĕн варринче
Эп курмарăм урхамах:
Çак «Победа» ăшĕнче
Ялти ăшă пӳртри пек
Иртрĕм эп çеçен хирпе.
Çитрĕм пулĕ вăхăта?
Çапла мар-и, ыр хăта? —

— Вăхăта-çке! Лăп та шай! —
Тет ял-йыш унтан-кунтан.
Ман сăмах лăплпннă май
Илтĕнет юрри шалтан:
«Кĕлту, кинĕм, апуна*
Сарă, вăрăм тунăшăн.
Пил ту, амăш, ачуна
Ырă ятлă пулнăшăн.

Шурă, шурă çăмарта,
Шуратрăмăр — çирĕмĕр.
Ах, кинĕмĕр Мари пур,
Юратрăмăр — илтĕмĕр...»

Картишне пĕр кĕтесе
Ĕмĕрхи туй арăмсем
Сикрĕç тухрĕç хĕрĕнсе
Сĕрме купăс сĕрнĕçем.
Умĕ-сумĕ — йăтсан йăт! —
Çутă кĕмĕл çуршар пăт.

«Атя, инке, яра пар,
Ярапине пире пар,
Юлашкине тара пар,

* Апуна — аннӳне (*вирьял*)

Эпир тара парас çук,
Хамăр тара илмелле...»

Чимĕр-ха! Каланă чух
Сăвăça итлемелле! —
Тет пĕри таçтан каллех.
Мĕн калас халь тин кунта?
Халăх — вĕркĕч, эп — кăвар.
Ытлашши хĕрсе тата
Кăвартан кĕл пулас мар.
Асилер те поэта
Туй тăвар та шеп тăвар!
Леш туй арăм тенисем
Илĕртеççĕ хĕрнĕçем:

«Тупа-тупа-тупата!
Ик урара çăпата,
Çăпата мар — атă,
Ман упăшкам вată.

Кунĕн-çĕрĕн пак та пак
Тĕтĕрет кăна табак;
Уншăн хуйхăм çукчĕ —
Пултарайми пулчĕ.

Пултарасса пултарать,
Хăш чух çынна култарать,
Култарин култартăр,
Çапах та пултартăр!»

Çавра çил пек пĕр матка
Вĕçрĕ тухрĕ варрине;
Çаптарать хăй такмака,
Йĕкĕлтет çĕнĕ кине:

«Эс те çын та, эп те çын,
Кĕпӳне кăтарт-ха, кин,
Крепдешин та файдешин!
Кăмăл тулчĕ ĕнтĕ тин».

Пĕр старик патне пырать
Каçăр карчăк каркăшса.

Шурă тутăр çавăрать
Кăшт хăяккăн чалăшса:

«Кăчăк туртрăм — пымарăн,
Алă сĕлтрĕм — юлмарăн,
Хĕрĕх те пĕр хĕр çинче
Мансăр пуçне тупмарăн.

Эх, стрикĕм — çумçакки!
Пур-ши урăх сан пекки?
Тапăп ывăтăп тесех
Çирĕпленчĕ йăлмакки.

Сакăр улăм — сарă ул,
Тăвăп тăххăр та, ан кул.
Хăвăнта хевте пулсан —
Эпĕ хатĕр, илтнĕ пул!

Эпир апла марччĕ-çке,
Эпир капла марччĕ-çке,
Маххă памăпăр, старик:
Пулсан пултăр теçетке!»

Ав, атьсемĕр, пăх та кур:
Те пуса каччи, те мур,
Те ялти ахаль маттур, —
Ай тур-тур, ташлать сатур!
Такмакки те хăйĕн пур:

«Пăнтăр-пăнтăр параппан,
Параппанне çапакан
Пархатарне курĕ-ши?
Курĕ-ши те курмĕ-ши,
Пире пултăрччĕ ташши...»

Ак унпа ăмăртмалла
Тухрĕ нар пек сăнпала
Ман шоферăм, яш Якку,
Урă-сурăм Тапаккух,
Пычĕ тăчĕ хĕр умне,
Тăрăс тапрĕ урине:

«Арăм çук — парăм çук,
Хуньăм çук — хуйхăм çук.

Пуç тавра шухăшласан
Санран савнă çыннăм çук,
Тух, тух, тух, тух!

Çул çук, йĕр çук,
Ни урапа, ни çуна.
Эпĕ çитмен çĕр çук,—
Ман машинĕ çил çунат.
Тух, тух, тух, тух!

Ах чух, эпир чух,
Йĕкĕт чух, хĕр чух,
Икĕ чун пĕр чух,
Пӳрне тулли çĕрĕ чух!
Тух, тух, тух, тух!
...Ух!»

Чĕн йĕвен чăлтăр тăвать,
Шăнкăрав шăнкăр тăвать...
Туйĕ кайрĕ хускалса
Çĕрĕпех çывăрмасса.
Çĕр иртет те кун иртет,
Тепĕр каç пулса çитет —
Тури Вылта туй сикет:
Выласене văратса,
Янкураса янратса,
Асамата астарса,
Хирлепсене хиртерсе,
Пинерсене пĕлтерсе,
Шĕнтрешсене шĕвĕртсе,
Йăлкăшсене йăпатса,
Хутарсене хускатса
Тури Вылта туй сикет,
Ман çапла калас килет:
— Аллă çынăн аллипе,
Хĕрĕх çын хĕрĕвĕпе,
Вăтăр çыннăн вăйĕпе
Тунă туйăн сăрипе
Выла йышĕ вăйлантăр,
Саватерĕ савăнтăр,
Мулкачкасси муллантăр;
Ырлăх пĕтĕм таврипе
Сар хăмла пек сарăлтăр,
Ярапа пек явăнтăр! —

Çĕр çитет те кун иртет,
Тури Вылта туй сикет,
Пĕтĕм халăх туй тăвать,
Туй тăвать те çуй тăвать,
Çук ăна чарас хăват!

1950—1951

## ÇУЛЛАХИ ТАЛĂК

*В.К.*

Эп çӳреп çĕршывăм тăрăх
Сулхăн каç, тăр кăнтăрла.
Ăшă çумăр, пăчă шăрăх,
Сиплĕ сывлăм манпала.

Çумăр кирлĕ ӳстермешкĕн,
Ăшă кирлĕ пултарма.
Сывлăм кирлĕ пит типсессĕн,
Нӳр тытмашкăн тыррăма...

Çĕмелсем кăçал пит йăвă,
Туй та йышлă пулмалла.
Пурăнать Чăваш çĕршывĕ,
Шав утать вăл малалла.

Тин кăна эп кайса куртăм
Пур район пек районах.
Вакунтан тухайрăм — утрăм
Лав кĕтмесĕр çуранах.

Çĕрĕ аслă çул хĕрри те, —
Пĕр-пĕр почта, МТС
Е кино таврашĕ çитĕ
Хыççăн терĕм, мĕн кĕтес?

Чăнласах та: пилĕк çухрăм
Утаймарăм та-и тен, —
Шăлтăр-шалтăр турĕ, пăхрăм, —
Урапа хыçрах иккен.

Лавçă чарчĕ, йĕкĕлтерĕ:
— Мĕн эс, пĕтнĕ этем пек,
Ик уран çӳретĕн? — терĕ, —
Лар, каятпăр кӳмепе!

Шӳт тăван çынпа, пĕлетĕп,
Вăрăм çул та кĕскелет.
Лартăм. — Каç пулать-çке, — тетĕп.
— Ан шарла, çитетпĕр, — тет.

Сарăп çук тимĕр кăвакăн,
Айăр мар та... как калас —
Урисем çапах тăваттăн...
— Хăш ялсем пулан? — Малкас.

Çак çула хутлатăп эпĕ
Каллĕ-маллĕ... суяс мар...
Çирăм икĕ çул хисепĕ,
Ху куратăн: эп — пуштар.

Пуштă, пуштă турттаратăп
Чугун çул хывиччене...
Халĕ, станци çывăхра та,
Уçăлса çӳренĕнех.

— Мĕнлерех йӳнеçтеретĕн? —
— Пĕр ĕç кунĕ кунсерен.
Сирĕн пеккисем лексессĕн —
Ирткелет те пĕрререн...

Ну, çынна та ыр тăвап çав —
Е посылка, е хаçат...
Çавăнпа сума сăваççĕ,
Ятлă çын та калаçать.

Шутласан мĕскер-ха çитĕ
Çынпа çын калаçнине?..
Лавçа — кăшт философ, питĕ
Юратап ун йышшине.

Юратап кăшт ывăнсассăн
Çуллахи уяр кунта
Урапа çине лармашкăн:
Тăсăлса выртатăн та —

Калаçса кăна пыратăн,
Çулăн ик енне пăхса.
Сăмах йышлă манăн лавçăн —
Пĕтерейме чăх сăхса.

— Эс çĕмел пит йышлă тетĕн, —
Терĕ вăл, — мĕскер калам?
Халь çĕмел, итем, пӳлме те
Трактортан килет, ачам!

Трактор тарăн сухалать те,
Нӳр тытса юлать тăпра.
Асаттех ăна калатчĕ:
Тĕш пăхать вăл тымара...

Мĕн тен эс! Авал пĕлмен-им
Тарăн сухалассине?
Анчах пит сĕтĕрттереймĕн
Çинчĕк улăм кĕсрине.

Виççĕ сывлăш кăларать те
Кĕсререн хуплу юлать.
Трактор — ку вара карахтĕр!
Кунпала тума пулать.

Халь лару-тăру мĕнле-ши?
(Хаçатне мĕн çырнă-ха.)
Кранклатать-им-ха çав лешĕ...
Леш — пуçне пулман çăхан?..

Леш, Амерĕкре-и çавă,
Англире-и... у р н ă  й ы т
Тенĕ пек сăмахчĕ-ха вăл...
Халь те вăл урать-им пит?

— Уол-стрит-и? Çавă пулĕ,
Кам пулас тата ку чух!
Хăçанччен вăл вĕрĕ, улĕ?
Халăх пур унта ай çук?

Хамăр пек ахаль çынсем те
Тинĕс урлă пур пуль-çке?
Ну, апла пулсассăн ĕнтĕ
Çăткăнсен кун-çул кĕске... —

Çаплалла калаçса пычĕ
А х а л ь  çын, хăй пит япшар.
Каç та пулчĕ. Ултă-çичĕ
Помидор, ик-виç хăяр,

Çăкăрпа тăвар, сухан кăшт —
Пулчĕ шеп кăна апат.
— Шăртанне, ачам, пусман-ха, —
Тет ман лавçă вашават.

— Ĕлĕк шав чăх куç пулатчĕ,
Эс курман-и? Çук пуль çав...
Халь ак çав пахча апачĕ
Уçрĕ ячĕ куç-пуçа.

Хам эп, утмăлта пулин те,
Никаккуй та аптраман.
Ма тесессĕн — в и т а м и н  тет
Пирĕн тухтăр. Чăн, куран...

Тĕттĕмленчĕ. Сулхăн витрĕ.
Çыхрĕ çын хутаççине,
Пеккине хутлатса чикрĕ,
Кăшт хистерĕ лашине.

Района çитсессĕн пирĕн
Пулчĕ икĕ çул вара.
Мĕн пулсан та хире-хирĕç
Теççĕ çăкăр-тăвара.

Хам чухланă пек чыс турăм
Эпĕ те çул çыннине.
Тавтапуç терĕм те утрăм
Сукмакпа анат енне.

Çынсене чăрмав тумарăм, —
Çитнĕ халь чăрманмалли.
Ни машина эп ыйтмарăм,
Ни лаша çав каç валли.

Чул çурт умĕн шăппăн иртрĕм,
Çап-çутахчĕ кантăксем.
Уçă кантăк витĕр илтрĕм —
Калаçатчĕ пĕр этем.

Телефонĕ шăнкăр-шанкăр:
— «Çутталла» колхоз-и ку?
Ну, хăçан çапма пуçлатăр?
Ха, мĕнле çанталăку!

Чăн, çанталăкĕ илемлĕ —
Лăпкă, ăшă та уяр.
Пĕлĕтрен куçна илеймĕн,
Çăлтăрсем пăхаççĕ чар.

Ĕмĕрхи хуркайăк çулĕ
Пĕлĕте урлах выртать.
Кайăксем канаççĕ пулĕ, —
Йăмрасем шăп-шăпăртах.

Çӳлте çеç ав кăлтăр-кăлтăр
Самолет вĕçсе иртет.
Çĕнĕ çăлтăр — виçĕ çăлтăр
Курăнать тӳлек çĕрте.

Алтăр çăлтăр кăшт именчĕ,
Кĕвенте çăлтăр енне
Аврине тăсса чĕтренчĕ,
Леш — систерчĕ Алине.

Çын кăна siксе тăмарĕ
Тутлă ăшă ыйăхран:
Ни вĕри çĕлен курмарĕ,
Ни эсрел вăл, ни шуйттан.

Çăлтăр ӳкрĕ, кăшт тăрсассăн —
Кĕç тепре, унтан тепре...
Таçта илтĕнчĕ пĕр сасă:
— Манăн çăлтăр тӳпере! —

Хĕрача пуль. «Çамрăк чуншăн
Çул-йĕр çутă», тенĕ пек
Янăрарĕ сасă уççăн
Пархатарлă ĕмĕтпе.

Эп Патмар ялне кĕретĕп.
Ял канать. Анчах клубра
Çап-çутах-ха, вăл пĕрре те
Çывăрман пек ку хутра.

Купăс, юрă, вăйă-кулă,
Курăнать Хисеп хăми.
Аякра-ха манăн çулăм,
Эп иртеп пăхи-пăхми.

Шăнкăр-шăнкăр, шăнкăр-шăнкăр...
Çывхарать пĕччен шăнкрав.
Хирĕç пулчĕ. Лаши мăнтăр.
Тен, мана юрать ку лав?.

Тăрантас хыçне таяннă
Туй каччи пырать иккен;
Пĕккинчен вăл çакса янă
Йăлтăр пурçăн тĕслĕрен.

— Каялла çавратни? — терĕм.
Каччă пăхрĕ ман çине.
— Çитнĕ, — терĕ те лӳпперрĕн
Сулчĕ сылтăм аллине.

Сасси тытăннă-мĕн каччăн,
Миçе каç юрланă пуль!
Çул каларĕ, ăнлантарчĕ,
Шăхăрчĕ те — «Сывă пул!»

Уттарса кăна вăл кайрĕ,
Ма тесен — ĕнтĕ килте.
Хăй камне вăл шарламарĕ,
Шарламарăм эпĕ те.

Çĕмелсем кăçал пит йăвă,
Туй та йышлă пулмалла.
Пурăнать Чăваш çĕршывĕ,
Шав утать вăл малалла.

* * *

Малаллах эп те утатăп,
Тухса кайрăм Патмартан.
Кушкалла эп çул тытатăп,
Сасă пачĕ пĕр автан.

Те сехет çитсех ку тапхăр
Те ăшша вăл авăтать?

Хура пусă. Таçта трактор
Çĕрĕпех тăрăлтатать.

Утрăм, утрăм — тухрĕ тулă,
Кăшт кайсан ыраш курап.
Çĕмелсем кашни пĕр улăп,
Çар пекех каçхи уйра.

Укăлча хыçне çывхартăм.
Тимĕр çекĕллĕ хапха.
Уçса кĕтĕм те çаклатрăм,
Ялпала пыратăп-ха.

Кĕпер урлă иккĕн каçрĕç.
Ик хĕрарăм. — Хăш ял? — теп.
— Саманак! — терĕç пĕр харăс,
Именсе кăшт кулчĕç те.

Сăмах хушрĕç пĕчченшерĕн:
— Каçа юлнă-çке эсир, —
Тет пĕри. Тепри шӳтлерĕ:
— Те халь каç ĕнтĕ, те ир?

Киноран килетĕп, — терĕ, —
Халăх час пымасть: ĕç çи...
— Мĕн кăтартрĕç? — «Китай хĕрĕ».
— Эп Кушка çитейĕп-ши?

— Инçех мар та... выртса кайăр, —
Хăрах çын утти вăрах.
Пит ан тиркĕр ĕнтĕ, канăр,
Ялĕ пирĕн — ял майлах.

Каясах тесен — ан ятлăр,
Уйăх çук та... ав унти
Свет çути тĕлне тухайăр,
Çап-çутах вăл свет çути... —

Поэтсем э л е к т ă р тенĕ
Электричество вăйне.
С в е т  ç у т и теме пикеннĕ, —
Мĕн тăвайăн çынсене!

Малтанах аса килеççĕ
Тĕрлĕ хутăш сăмахсем.
Анчах халăх — хăй чĕлхеçĕ,
Эс ăна та итлесем,

Ахаль мар (эп хам вуланă,
Электролампа çутса)
Вырăссем ăна Светлана
Теççĕ-мĕн ачашласа.

Свет çути... Пĕлсессĕн эс пĕл
Харăс икĕ чĕлхене.
Свет çути — ку маншăн штепсель
Чăлт туни пек илтĕнет.

Тен мана нумай вĕреннĕ
Тĕпчекен вуласанах
Хăтăрмашкăн та пикенĕ
«Тупнă!, — тейĕ, — пĕр сăмах!»

Тавлашас килмест пĕрре те
Пысăк ăслă çынпала.
Пысăк ăссăрах пĕлетĕп:
Чĕлхе чĕрĕ япала.

* * *

Те Çавал, те Шетмĕ пулчĕ, —
Кĕпер урлă каçсанах
Сылтăма пĕр улăх юлчĕ,
Свет çути çунать чăнах.

Катăк уйăх, хĕрлĕ уйăх
Вут пуççи пек чашкăрса
Тухрĕ, улăхрĕ те — улăх
Янк çуталчĕ кăшт тăрсан.

Уйăх хăй те шупкаланчĕ,
Вĕтĕрех çăлтăрĕсем
Именсе чăл-пар саланчĕç,
Курăнмарĕç тек вĕсем.

Свет çути хăнк та тумарĕ:
Тухрĕ те ту хысĕнчен —

Хытăрах вăл ялтăрарĕ,
Унтан çĕтрĕ çĕнĕрен.

Чăваш çĕрĕ варлă-çырлă,
С в е т  ç у т и  тухать, чăмать,
Асăмра «Вут çути» çырнă
Короленко çав самант.

Хуп-хура чернил пек çул та
Хуплайман çунан вута.
— Ман енче çапах та çутă! —
Тенĕ çын хутран-хутах.

Сӳнми шанчăк хал-хавалĕ
Ăшăтса тăнă чуна...
С в е т  ç у т и  — умрах вăл халĕ,
Çитнĕ ĕмĕт пек çунать.

* * *

Кушкă марччĕ манăн тĕлĕм,
Çитес çĕрĕм — малалла.
Çула май кунта эп кĕтĕм.
Çур çĕр çитнĕ. Канмалла.

Эп сайхах çинче выртатăп,
Типĕ утă ăшĕнче.
Ах, тĕнчем! Кирек ăçта та
Пурнăç тутлă та чечен!

Анчах кам тин кушнă утă
Ăшĕнче выртса курман,
Çавăн çур телейĕ çук-тăр
Çумĕнче, ман шутпалан.

Çурăк витĕр ялтăрарĕ
Çутă фара — инçех мар.
Пĕр пӳртрен илтĕнсе кайрĕ
Пин çулхи «Ай-яр, ай-яр...»

Кĕç машина тăрăлтатрĕ;
Тулăн-шалăн çӳрӳпе
Кĕçĕн алăк шăлтăртатрĕ:
Каччă тухрĕ хĕрĕпе.

Çавăрса юрланă майăн
Эп курмасăрах уйлап:
Хĕр каять, ял-йыш сăпайлăн
Ăсатать ăна туйла.

Çĕмелсем кăçал пит йăвă,
Туй та йышлă пулмалла...
— Çывăр, çывăр, çывăр, çывăр! —
Тет ман ăсăм кăмăла.

Кăмăл вĕçрĕ... Халь çулла теп,
Ĕç хĕрӳ, çĕрсем кĕске...
Ял çапах выртман: юрлать те,
Савăнать те... Ку мĕскер?

Ним туймасăр çывăратчĕ
Ĕлĕк ял ку вăхăтра.
Пурнăç, пурнăç çăмăлланчĕ:
Халăхпа ĕç ансатрах...

Ир-ирех вăрантăм, куртăм:
Сывлăм çеç хуçан пахчи.
Ав хуçи, вăл тытнă пуртă,
Тӳрлетет хăмла шалчи.

Кĕреçе сухал. Йĕс чĕлĕм
Шăвăнать айккинелле.
Вăл — малтан, эп — хыççăн чĕнтĕм
Хăнари йĕркепеле.

— Канлĕ çывăртăн-и? — Канлĕ.
— Сывлăм шалт тăм ӳкнĕ пек.
Сулхăн пуль? Кĕр, ăшăн-халĕ,
Час эп ярăп нӳхрепе...

Салтакран кăçал кĕтетĕп
Авланман ывăлăма.
Хăмла кирлĕ пулĕ тетĕп
Пăртакках йăла тума...

Хуçапа пĕрлех эп кĕтĕм.
— ...Эп капан тăватăп хам, —
Тет вăл халь, — ман ĕçĕм-хĕлĕм
Вăйăма кура, ачам.

Халăх ĕçĕ те-ха пирĕн...
Урăххишĕн мар пит эп —
Пурнăçне пурнасчĕ мирлĕн,
Вара сывлăттăмăр теп.

Ĕçĕнчен хăракан марччĕ...
Ывăлсене мар эпир —
Ывăлсем пире пытарччăр,
Çавă ĕнтĕ пирĕн мир.

Ăслă çын. Çĕр çул сывлатăр
Çĕр çинче вăл! — тетĕп эп.
Капанне тăвать пуль, ахăр,
Вăл тирпейлĕ — кăкшăм пек.

Урлă сак пек хулпуççиллĕ,
Ултă пăт йăтать пуль-ха...
Халăх тем те тăвĕ, кирлĕ
Лăпкă кун çеç халăха.

* * *

Юрататăп эп хальхаççăн
Çак Çавал таврашсене.
Ма тесен кунта хавассăн
С в е т   ç у т и   мана чĕнет.

Кушкăран чылай ял урлă,
Кушартан-мĕнрен иртсен,
Авалхи леш хурăн çулăн
Хĕррипе утап пĕччен.

Обозсем иртеççĕ тачă
Малтанхи тырăпала.
Грузовик тусан кăларчĕ,
Кăлтăртатрĕ урапа.

Моторсем çинче вĕçеççĕ,
Пĕкĕсем çинче те ав
Пысăкрах та пĕчĕкçеççĕ —
Темиçе хĕрлĕ ялав...

Кăнтăрла. Ыраш выраççĕ.
Самоход-комбайн çӳрет.

Вар енчен касса пыраççӗ
Çурлапа та виçӗ рет.

Кӑшт шырланнӑ та-мӗн хирӗ, —
Çын машинӑна упрать.
Пӗлнӗ пек пӗр тикӗс, ирӗк
Çӗрпеле комбайн утать.

Пӗлессе пӗлет те пулӗ...
Комбайнерӗ ӑçталли?
Хӗр пулас... Лисук е Юля?
Е ман пӗлӗш Натали?

Чӑн та Аптарман тавраш-и?
Кам пулсан та, умри çын —
Çӗнӗ ӗмӗрӗн чӑвашӗ,
Çутçанталӑкӑн хуçи.

Юмахра авал юптарнӑ
Кӑлтӑрттин арман çинчен:
Хӑй вӑл аварнӑ, лӑканӑ,
Хӑй пӗçернӗ тет иккен.

Ку та халь — вырать, çапать те,
Сӑвӑрать те тӗш тӑвать.
Çын çурла çине пӑхать те
Комбайна вӑл куç хывать.

Кам этем ӑсне тав тумӗ?
Юмахра к у р п у н с ы с н а
Теекен çурла тек пулмӗ,
Курпунлатмӗ вӑл çынна.

Пилӗк-çурӑм тӳрӗленчӗ,
Ӗлӗкхи тар-шур тек çук,
Çук асап: уйри тӗрленчӗк —
Урӑх кӑмӑллӑ ун чух.

Астӑватӑп и н т е л л и г е н ц и
Теекен этемсене
Виртлесе «с и к к е л е к е н с к и»,
«Тӳрӗ пилӗк» тенине.

«Вăл пуçпах ĕçлет те...» тетчĕç
Тепĕр чух тĕрте-тĕрте.
Пуççăр ту-ха ку чухне ĕç!
Çук ун пек ĕçсем пирте.

Сарлака хальхи каçалăк!
Утрăм-утрăм — çитме çук.
Яшкана ларать-мĕн халăх
Эп унта çывхарнă чух.

— Апата! — тесе сас пачĕ
Шур калпаклă кинемей.
Тутлă пулмалла апачĕ,
Кирлĕ мар тепре чĕнме.

Илтрĕ пуль ана. Çук: п у с ă.
Мĕн ани халь пулмалла!
Халăх пухăнчĕ. «Клуб» уçă.
Мĕн калассипур — кала.

— Акă, — терĕ бригадирĕ, —
Килнĕ сăвă калама...
— Каласан калатăр, ирĕк,
Эпир хатĕр тăнлама...

— Ларса çитĕр-ха пăртакçă,
Выçнă пулĕ çул килсе...
Кĕç пырать пĕр мыскараçă
Кинемей патне çиççе:

— Сан çинчен мĕн тет бригада,
Эс пĕлетĕн-и çавна?
Вăл патшалăха тытма та
«Пултарать!» — тет. — Кам ăна? —

— Эсĕ, эс ĕнтĕ — кухарка.
— Ăс çитсессĕн — тытăн та...
— Çуллăраххине тултар-ха,
Кур — хăна пур ав унта...

Çăкăртан аслах пулаймăн,
Эп ларатăп тĕм çине.
Леш шутник каллех хăй майăн
Çаптарать сăмаххине:

— ...Стариксем кăçал шӳтлеççĕ,
Техника тырра-пулла
Хуса çитерейме теççĕ.
— Епле, мĕншĕн-ха апла?

Мĕншĕнне хăвах куратăн:
Пĕкĕ çӳллĕш те ыраш,
Çурлапа тăрсах выратăн,
Самоход туллать кăшт-кашт.

Ваттисем вĕсем тирпейшĕн:
«Хăмăл тикĕс юлмасан,
Килес çул тыр-пул илеймĕн», —
Теççĕ тем ăрăмласа.

Тӳррипе калас пулсассăн —
Машинпа ĕççи кĕске,
Кун сахал, тата комбайншăн
Пĕрчĕпе тӳлетпĕр-çке.

Ваттисем кăшт перекетшĕн,
Хăшĕсем ĕлĕкхи пек
Çăвĕпех ĕçлесшĕн тейĕп,
Унашкал май çук-çке тек...

— Чим-ха, — тет тепри, — пуяр кăшт,
Колхозпа та ун чухне
Пĕтĕмпех илетпĕр акă
Тракторне, комбайнне...

Кĕç тепри хушать çав майăн
Шухăшланă шухăшне.
Тишкерсе пăхать комбайнăн
Анлăшне те çӳллĕшне:

— Ман шутпа, куна халь тунă
Çур тырри пусси валли.
Ыраша лартсассăн — унăн
Пур-ха, пур юсамалли.

Тен, конструктор чухлайман-тăр:
Çĕклеме е антарма
Кирлĕ пĕр-пĕр регулятор,
Йывăр мар пуль-çке тума?

Ман куç-пуç пăртак курать те
(Эп механикчĕ çарта),
Кăшт майларăм-ха, пырать тет
Комбайнерĕ халь тата.

Ну, тулла тесен — ан пĕшкĕн,
Çурлуна пуçтар вара...
Техника! Алла илмешкĕн
Ăс та кирлĕ çав пуçра...

Эп итлеп те тĕлĕнетĕп:
Кам-ши ку? Хресчен çаплах
Е ку халь интеллигент-и?
Пуççăр — алă та чăлах!

Шут тăвайĕç, хисеп тăвĕç,
Танлаштарĕç кирлĕ чух.
Чăвашри пек йышлă сăвăç,
Ман шутпа, ниçта та çук.

Ним хушмасăр, каппаймасăр,
Евит пултăр тĕнчене:
Пирĕн сăвă каламасăр
Кун иртмест вăл ку чухне.

Сăввине ăна калатпăр
Çичĕ кун та эрнере.
Анчах пит хĕрӳллĕ тапхăр
Çитрĕм эпĕ çав хире.

Бригадирăн ал сехечĕ
Шав çиçтерчĕ хĕвеле.
Хуçи шав ăна тинкерчĕ
Вăрттăн куç хӳрипеле.

Эп сĕвем-сĕвеммĕн сӳтрĕм
Чăмăр сăвă çăмхине:
Пăртак чарăнтăм та илтрĕм
Бригадирăн сăмахне:

— Майлă пек-и? Мĕнле картăр?
Ман шутпа, леш сăвăра
Пĕр рифми пит аплах мар та,
Ну, пырать... хăйне кура.

— Ай турах! Аван-çке питĕ, —
Тет пĕри хута кĕрсе.
— Аванни сахал та, çитĕ,
Теççĕ мар-и вырăссем?

— Ĕлĕкхи сăмах ку, — терĕç
Хыçалтан бригадира, —
Лайăх та нумай, вăт тĕрĕс!
Сахалли халь — начара...

Кĕç-вĕç тем тĕрлĕ дискусси
Пуçланас пек çын кĕрлет.
Бригадирăн чее куçĕ
Питсене пăхса йĕрлет.

— Юрĕ, — терĕ вăл, — халь вырăр,
Каç клуба чĕнĕпĕр-ха.
Ялĕ япăх мар, вăл пырĕ, —
Туп-ха эс ку халăха!

* * *

Çĕмелсем кăçал пит йăвă,
Туй та йышлă пулмалла...
Эп утатăп çамрăк йывăç
Лартнă ешĕл çулпала.

Туйĕ-шыльăкĕ вăл маншăн
Иртнĕ ĕнтĕ тахçанах.
Мĕншĕн хатĕр-ши утмашкăн
Çĕрĕн-кунĕн эп çапах?

Ытларах пĕлесчĕ тетĕп,
Манăн тивĕç çаплалла:
Хăлхапа итлемелле те
Курмалла хам куçпала.

Мĕн шухăшласа кăларĕ
Килĕнчен тухман юлхав?
Бригадир юлташ каларăш —
Туп-ха эс ку халăха!..

* * *

Пилĕк-ултă кĕпер урлă
Каçрăм пулĕ кунĕпе.
Çикелерĕм «швеши» пулă
Ватă пулăçăсемпе.

Сыпкаларăм тутлă турăх,
Çырткаларăм эп шăрттан.
Сар урпа сăри те тулăх
Юхрĕ авăрлă чăмран.

Ку каллех ĕнтĕ каçпаччĕ,
Хĕвел ăшă-ха самай.
Хăш çĕрте — сеппер апачĕ,
Хăш çĕрте пулать — явкай.

Е — Энтри апачĕ теççĕ:
Уй-хирте чĕре сури
Тунă пек çисе илеççĕ
Канмалла çынсем юри.

Ял енчен ак йăлтăр-ялтăр
Тухрĕ пĕр велосипед.
Вĕлтĕр-вĕлтĕр, кукăр-макăр
Çаврăнса кунта килет.

Пĕр старикĕ тинкерет те
Ал тупанĕ айĕнчен.
— Ха, епле ĕрĕхтерет, — тет, —
Сĕлĕ лашиех иккен!..

— Почтальон! — тет йыш хаваслăн.
Çитрĕ, анчĕ, «лашине»
Çавăтса кĕрет мăнаçлăн
Сар ача хăмăл çине.

«Çыру пур-и, Сантăр?» — теççĕ
Хĕрлĕ питлĕ хĕрĕсем.
Е çартан хыпар кĕтеççĕ,
Е флотран салам вĕсем.

Хуларан ответ илесчĕ
Теççĕ шкул пĕтернисем.

Шупашкар, Канаш пичечĕ —
Çул уççи кăçал вĕсен.

Хусантан та хут килет-тĕр,
Горькирен те Мускавран...
Хут мĕн тутине пĕлетĕр,
Çамрăксем, эсир аван!

Сантăр шăппăн таянтарчĕ
«Лашине» çĕмел çумне;
Сумкине уçса кăларчĕ
Çырусем ял-йыш умне.

Тем çитмен пек пулчĕ, ахăр,
Сырса илчĕç кайнă чух:
«Тăван Атăл» çук-им, Сантăр?
«Ялав» çук-им? Мĕншĕн çук?

— Хальлĕхе — хаçат... Тем пулнă? —
Терĕ Сантăр халăха, —
Журналсем пиртен кăшт юлнă,
Мĕншĕнне эп пĕлĕп-ха... —

Çавăтса тухса утланчĕ
Сантăр хăйĕн «çăрхине».
Леш бригадăна кустарчĕ,
Тусан тухрĕ çул çине.

Ак çынсем хаçат вулаççĕ
Уй-хирти ĕçсем çинчен,
Çырнă сводкăна пăхаççĕ:
Район шав малтах иккен.

Савăнаççĕ, хĕпĕртеççĕ:
— Хамăр ял та кайрах мар,
Райхаçат çырсаччĕ, — теççĕ, —
Халь мĕнле-ха? Чим, пăхар...

— Чăнласах та колхоз ячĕ
Пур Хисеп хăми çинче...
— Ах, апла хуратас марччĕ,
Атьăр-ха эппин каçчен!

Ăмăрту! Ĕçчен бригада
Ĕçченреххине курать.
Ял — яла; кирек ăçта та
Пирĕн ĕç çапла пырать.

Ăмăрту! Пĕр татăлмасăр:
Ял, район, республика,
Пур çĕршыв!.. Епле ку тапхăр
Урăхла эп пулăп-ха?

* * *

Шăкăл-шăкăл, чĕвĕл-чĕвĕл
Калаçать-ха хир çынни.
Илтĕнех каять пĕр кĕвĕ —
Шупашкар юрлаканни.

Юрă — чун уççи вăл çыннăн,
Хăлха чанк тăрать илтсен.
Сикрĕ тухрĕ пĕр машина
Сăрт хысакĕ хыçĕнчен.

Грузовикпала килеççĕ
Юрласа та вирхĕнсе
Шупашкарăн çул çӳревçĕ
Ывăнми артисчĕсем.

Пăнтăр-пăнтăр тутараççĕ
Вунă алă харăсах:
Шофера чарма калаççĕ,
Таçтанах мана курса.

Чарчĕç: лартрĕç кăпăр-капăр
Ещĕксем çине мана.
— Чим-ха, теп, ăçта каятпăр?
Пĕрех мар-и? Лар кăна!

* * *

Хир те ту, çырма та улăх,
Шав вĕçет-ха грузовик.
Янраса каçать шыв урлă
Федор Павловăн «Сăвви».

«... Кĕтĕм кайрăм пĕр киле те
Амăшшĕн мар — хĕрĕшĕн...»
Ял хапхи. Чупса килет те
Яр уçать çиччĕри çын.

Шакла пуçлă, хура куçлă,
Шăнкăрав пекех сасси.
— Ку хăш ял? — тет пирĕн пуçлăх.
— Ку-и? Ку — Каруккасси. —

Ялĕ тахçанах-мĕн илтнĕ,
Ав пуплет халь шакла пуç:
— Академтеатр килнĕ!
Аки, пар-ха аллă пус.

Аллă пуслăх эп курам-ха
Тухья пуçлă Нарспие...
— Колхозпах куратпăр, кам халь
Кăтартать пуль пĕччене?.. —

Клуб. Машина сасă пачĕ.
— Ак, — тет шофер, — мĕнле чыс:
Тырă леçрĕм, парса ячĕç
Кашни центнершăн артист!

— Чим-ха, — тет ăна пĕр карчăк, —
Пӳрни пӳрт хыçнех килет...
Асли хăшĕ-ши?.. Хăварччĕ
Ман валли те пĕр билет.

— Юрĕ, — тет кӳпшек портфеллĕ,
Шур шлепкеллĕ пĕр çынни.
Хăй типтерлĕ те йĕркеллĕ,
Те «асли», те «кĕçĕнни».

— Юрĕ, — тет вăл, — хăваратпăр,
Старикне чĕнме ан ман.
Ялĕпех кĕçĕр куратăр.
— Тавтапуç, апла пулсан. —

Кинемей утать хаваслăн,
Шӳт тума та пит ăста:
— Старикки юлмасть вăл манăн,
Йĕп ăçта — çиппи унта...

Клуб умне тăваççĕ сцена —
Çын шала шăнăçас çук.
Вылятать колхоз ĕçченĕ
Пуртă, пăчкă, мăлатук.

Ав хайхи ача, куратăп,
Юпаран вăл уртăнчĕ:
— Эп чаршав кантри туртатăп,
Пĕркунне те туртнăччĕ.

Ав тепри — чĕвен тăрать те
Клуб чӳречинчен пăхать:
— Пĕр камичĕ çывăрать, — тет, —
Пуçласси час мар пуль-ха.

Хĕвел анчĕ, сулхăнланчĕ,
Халăх тин уйран кĕрет.
Ял çыннин каçхи апачĕ
Кĕттерет тепрер сехет.

Артистсем те ав лараççĕ
Тăрăхла сĕтел тавра.
Ялтилле — яшка сыпаççĕ
Тĕттĕм пулнă вăхăтра

— Яшка тутлă-çке паян! — тет
Астивсе пĕри малтан.
Хальлĕхе вăрçмасть никам та,
Ни ӳпкев çук, ни ылхан.

Тăхтаманĕ те Нарспи те,
Яш Сетнер те Михетер —
Пурте лăпкă, мирлĕ питĕ
Килĕшӳллĕ çав хатер.

Кашăк çеç шăлт-шăлт лекет те
Илтĕнет сĕтел çинчен.
Кăшт тăрсан хаяр трагеди
Тухмалла çак çынсенчен.

Таçта тепĕр чăваш ялĕ,
Тен, ăша сĕре-сĕре
Кулмалла комеди халĕ
Курать пуль çак сехетре.

Иртнине те хальхи паттăр
Ĕçсене те куç умне
Кăларатăн эс, театр,
Эс çĕклен çын кăмăлне.

Тав тăвас килет сан пысăк,
Йывăр ĕçлĕ ушкăнна,
Чун илемĕн, вăйăн, чысĕн
Вăрлăхне акакана.

Çу каçа мĕскер курмастăр?
Автопа та лашапа,
Хăш чухне çуран утатăр,
Шăрăх е йĕпе-сапа —

Каçсерен хăш каç икшер те —
Явăн, сӳтĕл, хып та çун.
Чăн ăсталăх — тар та, терт те,
Кĕрешӳ те кашни кун!

Тав сире пĕтĕм чун хальлĕн,
Алексеевпа Ырзем,
Шорникова та Ургалкин,
Молодовпа ыттисем.

Тав сире, мĕнле пулсан та,
Ĕçлеме юратакан
Пĕр саманари, пĕр тантăш,
Пĕр ĕмĕтлĕ сăвăçран!

* * *

Шăнкăравĕ шăнкăртатрĕ,
Чи малтан коммунистсен
Секретарĕ витерӳллĕ
Сăмахне калать кĕскен:

— Ак спектакль кăтартатпăр...
Ну, ыран ирех — хире.
Тыр-пула тăккаламасăр
Вăхăтра пухса кĕрер.

Хăвăрах пĕлетĕр, халăх:
Çуллахи пĕр лайăх кун

Тăрантать пире çулталăк,
Çавнашкал чăн хакĕ ун.

Кăçалхи çанталăк — мул вăл:
Пĕрчĕ ылтăн пек кĕрет.
Ырашпах ак пулчĕ тулă,
Сĕлĕ, ясмăк ĕлкĕрет.

Çинерех тăрса майлар та,
Тен, Автан яшки тĕлне
Килсе çитĕ çак бригада
Кăтартмашкăн çĕннине.

Курмалла та, пĕлмелле те,
Халь эпир таçти тем мар,
Ыттисем пекех пуль тетĕп:
Çăкăр пур — ыйтан юр-вар.

Ял юр-варсăр мар, каласшăн
Ак çапла эп сăмаха:
Халăх халь туллин пурнасшăн,
Тем те кирлĕ халăха.

Шухăшне те шухăшлатпăр,
Чун та, кăмăл та ыйтать,
Паян кун — мире сыхлатпăр
Уй-хирте эпир йăлтах.

Мирлĕ ĕç кӳрет культура,
Ӳстерет пуянлăха... —
Эп леш сăмахах астурăм:
Туп-ха эс ку халăха!

* * *

Халăх шăпăрт. Çур çĕр çитрĕ.
Нарспи лекрĕ асапа.
Талăк çеç тенĕ пек иртрĕ
Эп çула тухнăранпа.

Анчах мĕн кăна курмарăм
Эп çав талăк хушшинче!
Çуррине те калаймарăм
Ун çинчен эп хут çинче.

Кăвакарчĕ август каçĕ
Кăвакарчăн-шуçăмпа.
Артистсем шав пуç таяççĕ,
Халăх халь те ал çупать.

— Килĕрех тепре, кĕтетпĕр! —
Теççĕ куç шăлса хĕрсем,
Нихăçан та Нарспи евĕр
Хĕн курман, курмасскерсем.

Куç шăлаççĕ те кулаççĕ:
Ку спектакль-çке йăлтах!
Саламат та тек курмаççĕ,
Сурпансем те çук ялта.

Çăлтăрсем — йĕс шăнкăравлăн
Чĕтренет тӳпе маччи.
Таçта илтĕнчĕ янравлăн
«Тухать-и те тухмасть-и...»

Пĕлĕт кĕçĕр кӳме евĕр,
Уйăх кĕçĕр — параппан.
Ав чăнах иккен, атьсемĕр,
Пăнтăр-пăнтăр тет таçтан.

Çĕмелсем кăçал пит йăвă,
Туй та йышлă пулмалла.
Пурăнать чăваш çĕршывĕ,
Шав утать вăл малалла.

Çĕкленет ман ирĕк халăх,
Ма вăл ан çĕклентĕр-ши?
Çĕкленмелĕх, ыр курмалăх
Вăй парать Тăван çĕршыв.

Аслă çĕрĕн аслă йышĕ
Ĕç ĕçлет те мул тăвать —
Пурнăçпа телейшĕн, миршĕн,
Çук çакна чарас хăват!

Каçхине çутатĕ уйăх,
Кăнтăрла хĕртĕ хĕвел.
Ывăл-хĕрĕн пулĕ туйĕ,
Кил-йышпа кĕрлĕ тĕпел.

Вылĕç-кулĕç, ĕçĕç-çиййĕç,
Сар сĕтелĕ сарлака.
Чăп тултарчĕ пĕрлехи ĕç
Тав курки — çавра курка.

Аслă партин аслă ячĕ,
Чĕлхесем çинчи пĕр ят —
Пирĕн хӳтлĕх, пирĕн шанчăк...
Çук çакна чарас хăват!

1951

## ÇУРАЛНĂ ÇĔРШЫВРА

... Каллех эп килсе куртăм.
*А. Пушкин*

Каллех ак эп çуралнă çĕршывра.
Каллех ак чакăр пĕлĕт анинче
Сайран, кăшт сарăраххăн курăнаççĕ
Тин çулçă сарнă ватă йăмарсем.
Йăмра! Йăмра пек мар-и пирĕн халăх?
Хуç йăмрана эс, тăрăнтар çĕре —
Вăл çавăнтах тымар ярать, хунать.
Çапла çак сулхăн Кама йăлăмне,
Çынран илтнипеле кăшт каярах
С а к к а м тесе ят хунă çĕршыва,
Пĕр виççĕр çул авалах эпир
Тăван йăхран хăпса килсе вырнаçнă:
Йăмра турачĕ пек, тăпра ăшне
Часрах тымар ярса хуна пуçланă...
Ял-йышăмсем! Ĕрчевлĕ, çăра юнлă,
Ура çине нихçан та пустарман,
Шывра путман, вутра çунман çынсем!
Ăçта кăна тĕнче эпир касмастпăр?
Хăш хуларан кунта çыру килмест?
Анчах çыратпăр пурте чăвашлах.
Сĕм вăрмана вырнаçнă ăру-несĕл,
Кăкла-кăкла, ана-çаран уçса,
Алран кайми аки-сухи çинчен
Юрла-юрлах хунанă та ĕрченĕ;
Илемлĕ, витĕмлĕ, çаврăнăçуллă,
Ытарайми хăй чĕлхине упранă...
Эп кайрăм Ĕнчĕ шывĕ хĕррипе...

Лупашкара, вар-васанта выртать-ха
Пусăрăнса хуралнă кивĕ юр.
Çара-ха çирĕк; кăчкăра çӳçе;
Çерем тин çеç симĕсленет. Çил сулхăн.
Анчах уçланкăра унта-кунта
Кĕренĕн те сенкерĕн курăнать
Çурхи тĕнче илемĕ — çепĕç çеçпĕл,
Ун çеçкине пыл хурчĕ тирĕнет,
Асра янра пуçлать манми пĕр юрă...
Кунта пăртак ăшăтарах парсассăн
Куçран пăхатчĕç чĕлтĕркке, чипер
«Ан ман мана» текен вак чечексем,
Ав халĕ те вĕсем палăркалаççĕ;
Çапах таса, илемлĕ, илĕртӳллĕ,
Анчах... куçран пăхман пек туйăнать.
Ăçта эсир, чунсем ешернĕ чух,
Чĕремĕрсем чечек пек çурăлсассăн
Пĕрремĕш хут мана пăхса тинкернĕ,
Именнĕ, шиклĕ, тĕлĕннĕ, юратнă,
Курса тăранайми кăвак куçсем?
Ăçта эсир? Курайăп-шим сире?
Пулин! Эсир мĕскерлине пĕлетĕп:
Çап-çутă канлĕх, ăслă пĕркеленчĕк:
Хăюллă, шиксĕр, тĕлĕнмен, анчах
Çаплах юратнă, мана мар пулин те,
Çаплах юратнă, юратан куçсем!..
Шыв урлă, трактор сассинчен писмесĕр,
Каçса кайса тăри тăрилетет.
Таçта çитех вăл улăхса çитет те
Сасартăк — чăмнă пек — вĕçсе анать,
Унччен те пулаймасть — лере тепри
Вĕлтĕртетсе çĕкленнине куратăн,
Ун та хăй савăнăçĕ, хăй тĕнчи:
Çĕрте ун тусĕ ăшă йăвара
Чăпар çăмартасем çинче тӳлеккĕн
Пуси-пусми асăрханса ларать,
Урисемпе хыпаласа пăхать те,
Лекет пулсассăн — ним те кирлĕ мар!
Анчах савнийĕн юррине илтет вăл,
Çĕр сасăран та уйăрать ăна.
Çĕр сасă çĕр кĕслен тĕнкĕлтетет:
Яра куна, çӳлтен çӳле вĕçсе;
Чĕрĕлĕхе те ĕрчеве мухтаççĕ

Уй-хирӗн ӳркенми сӑвӑҫисем.
Сайралнӑ ҫӗмӗртлӗхелле кӗретӗп.
Ҫак йывӑҫсен тӑррисене эпир —
Ҫара туналлӑ, ярханахскерсем —
Вӗҫе-вӗҫӗн чупса ҫитсе, пӗр харӑс
Хӑпарнӑ упӑте пек явӑнса,
Чӗлхе ҫаврӑнмиччен кавленӗ ҫӗмӗрт.
Йӑлтӑртатса тӑран сапакисем
Хура кушак хӳри пек курӑнатчӗҫ.
Ват ҫӗмӗрт вуллисем халь кӑвакарнӑ;
Тӑрри хӑрни те пур; турачӗсем те
Хӑш-пӗрисем е хуҫӑк, е аманчӑк.
Анчах йӗри-тавра, — хӑрса йӑваннӑ
Тункатисем тавра та — ушкӑн-ушкӑн
Кӗшӗлтетсе кӑна ӳссе лараҫҫӗ
Чӗкеҫ шатриллӗ хӑмӑр хунавсем.
Кашни ҫав ушкӑн — уйрӑлми кил-йыш,
Пӗр-пӗринпе харкашса мар, юлташлӑн,
Пӗрле чӑмӑртанса, пӗр тӗм пулса
Тӑпра сӗткенӗшӗн, хӗвел ҫутишӗн
Ҫине тӑрсах ӗҫлет те кӗрешет.
Ҫапла эпир пурӑнакан чи аслӑ
Саманари чи ӑслӑ этемсем —
Ҫанталӑк хуҫисем — хускатнӑ шухӑш
Куллен чӑнланнине курса иртетӗн...
    Ҫинҫе вӑрман. Ҫаплаччӗ унӑн ячӗ.
Пӑхан — ытам ҫитми кӗреш те йышлӑ,
Касса та тухнӑ-мӗн пӗр кассине,
Хуралтӑ ҫавӑрнӑ, пӳрт лартнӑ пулӗ,
Вӑрманӑн ячӗ ҫав-ҫавах Ҫинҫе.
Уҫланкӑ пулса юлнӑ вырӑнта
Халь ашкӑрнӑ та кайнӑ шӗшкӗлӗх.
«Ан авӑн, шӗшкӗ!» — терӗм те ӑшра эп
Яштакарах пӗр вуллине суйларӑм.
Ун тымарне чаваласа пӑхатӑп,
Вара кӗрен те авмакаскерне,
Вакрах тымарсене ирте-ирте,
Ҫӗҫӗпеле касса эп кӑларатӑп.
Алла кӗрет мӑйӑр шӑршиллӗ, селӗм,
Ҫуралнӑ ҫӗр пек шанчӑклӑ туя.
Каҫар мана, ӗҫне ӗҫ пек тӑван,
Саралнӑ атӑллӑ, сӑран уртмахлӑ,
Сунарҫӑ куҫлӑ ывӑнми хуралҫӑ!

Каçар мана: инçе-ха манăн çулăм...
Умра вĕçĕ-хĕррисĕр ĕç ани,
Нихçанхинчен те ытларах, туллин
Пурнас килет çак пĕлĕт айĕнче!
Хамран малтан, вĕри чĕрепеле,
Таса кăмăлпала çуна-çуна
Сăмах вăйне шыранă тăвансемшĕн;
Вĕсен çитсе ĕлкĕреймен çап-çамрăк
Ĕмĕчĕсемшĕн; аслă вăрçăра
Сип-сивĕ вилĕме куçран пăхса
Çĕнтерӳпе пуç хунă тантăшсемшĕн;
Çын элекне пула тăван çĕртен
Хурăнташран йĕрсе уйăрăлса
Таçта çитех кайса кĕнĕ пулин те,
Çак хамăр çĕршывах ытараймасăр
Мал ĕмĕт тытнă витĕмлĕ чунсемшĕн —
Пуриншĕн те, пуриншĕн те эп тивĕç
Сăмах тытмашкăн халăх умĕнче.
Тумаллине туса çитермесессĕн
Чĕрем тапа пуçлать сиксе тухас пек,
Чун пăччăн туйăнать, куç хуралать...
Сасартăк çак хĕвел, çерем, вăрман
Ман куçăмран ĕмĕрлĕхех çĕтсессĕн, —
Эй, çамрăксем, çĕршывăма килсе
Эп утнă сукмака шыраса тупăр,
Ман ӳкнĕ туяна палласа илĕр,
Куçкĕретех çĕрте çĕрме ан парăр:
Чăмăртаса тĕреклĕн тытăр та,
Пĕрне-пĕри ылмаштарса хаваслăн
Сукмак çинчен мăн çул çинелле тухăр,
Хĕвел çине пăхса хăюллăн утăр!
Хĕвел, кăвак тӳпе, ем-ешĕл хир,
Тусем-сăртсем те, аякри çулсем те
Ман канăçсăр кăмăлăма туртатчĕç.
Ан тив, вĕсем сире те çавнашкал
Ытарайми туртса тăччăр. Пĕр те пĕр
Çул çӳрекенсемпе пăртак канма,
Туртса яма, е чей ĕçме ларсассăн,
Тен, астăвăр мана та ăнсăртран:
«Çынни тĕнче касма пит юрататчĕ», —
Тесе пĕр-пĕринпе шӳтлешĕр те,
Çав шӳт сире вăй патăр, тӳсĕм патăр!
Тавах сана, пĕчĕкренпех мана

Шухăшлама вĕрентнĕ хӳтĕ улăх!
Тавах, вăрманалла ертсе кĕрен —
Ялан шерпет пек тутлă — Ĕнчĕ шывĕ!
Тавах сире, мана — çĕр ачине —
Поэт туса ӳстернĕ çĕршывсем:
Чĕлхемĕр хăватне шыра-шыра
Куçа хупмасăр ларнă каçăмсемшĕн,
Асапшăн, савăнăçшăн, тӳсĕмшĕн;
Хура кун-çуллă, тĕшмĕшпе пăтрашнă
Этемлĕх тĕпĕнчен ç ы н л ă х а л л а —
Ăспа çиçсе тăран тӳпенелле —
Çунат хушса çĕкленнĕ кăмăлшăн;
Хура тăпра çине çарран тăрса
Пĕрремĕш хут ура ярса пуснишĕн,
Тăвар сапса тыттарнă тертлĕ, тарлă
Ыраш çăкри чи малтанхи чĕллишĕн,
Атте-анне чĕлхипеле каланă
Чи малтанхи сăмахшăн — тав! Тавах!

1951. Сиктĕрме

## ГОРКĂРИ ÇУРТ

### 1

Ял. Вырăс ялĕ. Унăн ячĕ
Халь паллă пĕтĕм тĕнчипех.
Унта эп халиччен пулманччĕ,
Ялан чун парăмлăччĕ пек.

Мир Конференцинчен тухсассăн
Ильич патне пĕр саманта —
Ăна курман енчен курасшăн —
Кĕрсеттĕм эпĕ çавăнта.

Ăна кашни хресчен палланă,
Вăл хăй те пĕлнĕ кашнинех.
Ав çав пӳртре сăмах каланă,
Итлекенсем пур хальчченех.

Шур мрамор çапнă асăнмалăх
Тултан пӳрт пĕрени çумне.
— Ильич вăл хамăрăн! — тет халăх,
Çав сасă янрĕ ĕмĕрне.

**2**

Ял. Вырăс ялĕ. Ленин ячĕ
Ăна çĕклерĕ тӳпене.
Кунта эп халиччен пулманччĕ,
Килсе курманшăн ӳкĕнеп.

Пĕр хут çеç мар çырма пикентĕм,
Куçа тинкертĕм ун çине.
Килсе кĕнĕ-кĕмен иментĕм:
Тупман-ха эпĕ ун сăнне.

Тупаймасассăн — ĕмĕр шырăп,
Нихçан та усмăп аллăма.
Тăн сӳннĕ чух та уншăн çырăп
Чи юлашки сăмахăма.

Инçе-и, мар-и кайĕ сассăм,
Çав çул хурланнă çынсемпе
Пĕр кăкăртан сывларăм ассăн,
Çыратăп çав тивĕçĕмпе.

**3**

Сĕм чăрăшсем сĕнксе лараççĕ
Сулмаклă юр пуснипеле.
Çав январех астутараççĕ,
Çав сывлăш пӳлĕннĕ хĕле.

Унччен пулман ун пек çанталăк:
Пăрланнă пĕлĕт айĕнче
Чĕнмесĕр тăтăмăр. Самантлăх
Кăн хытрĕ пĕтĕм çут тĕнче.

Ӳкет çунатлă кайăк. Йывăç
Шатăртатать. Çуна йăслать.
Чĕре кăна — хăй хăрах ывăç —
Сикет ниçта шăнăçмасла.

Ăна пĕрех: пăрпа, вутпа тĕк, —
Куç хупнă Ленин! Ак чăнни.
Нимле сăмах витми тупа пек
Пуç тайрĕ шăппăн ĕç çынни.

## 4

Сĕм чăрăшсем сĕнксе лараççĕ,
Лăсси çинче сулмаклă юр.
Çав январех-и ку? Çав каç-и?
Кунта халь вилĕмсĕрлĕх пур.

Çак паркăн, çак пахчан, çак çуртăн
Кашни кĕтесĕ Ленина —
Ĕнер кунта вăл утнăн —
Усрать халь чĕррĕн ялана.

Ак вăл канма юратнă вырăн:
Сăрт, йывăç сак, çулла — çерем.
Кунтан хир курăннă: е вырнă,
Е сухаланă хресченсем.

Кунтан тем анлăш тавракурăм —
Р о с с и я — курăннă куçа.
Сăрăлтатса чĕтрет çан-çурăм,
Кив сăнлăх кăмăла хуçать...

## 5

...Пиншер, çĕршер пин саплăк-саплăк,
Ситрелчĕк ансăр анасем.
Пейзаж юратаканшăн «чаплă,
Улăшăнми» картинăсем.

Анчах пейзажшăн мар çав тапхăр
Çунса тинкернĕ çын хире:
Малтанлăха пĕр çĕр пин трактор
Парасчĕ тенĕ вăл çĕре.

Хура хăйчиккипе сĕмленнĕ
Мунча пек хăрăмлă пӳрте
Хĕвел кĕртме вăл ĕмĕтленнĕ,
Çав ĕмĕт халĕ çитрĕ те!

Историшĕн нимех те мар та
Пĕр вăтăр-хĕрĕх çул, пăхсан —
Халь çур планетăн çĕнĕ карттă,
Ку — Ленин чунĕ çуннăран.

### 6

Вăл çуннă. Нимĕскер хуплаймĕ
Çил-тăвăл кун сан кăварна.
«Из искры возгорится пламя!»
Çав çулăм хыпнă тавраана.

Вăл çуннă, ĕмĕрех вăл çуннă;
Терт, шар тухах тăнă таçтан.
Пурне те аяла вăл тунă —
Çĕре çаврăракан титан.

Эсир, çĕр аллăшар, икшер çĕр
Çултан иртсе пурнас çынсем!
Ан манăр: сирĕншĕн тем те пĕр
Тӳссе ун чакнă кунĕсем.

Çур ĕмĕртен кăна вăл иртнĕ;
Вăл курнă хĕн-асап, инкек,
Чăрмав, нуша — пин çынлăх çитнĕ,
Пĕччен вăл пин Прометей пек.

### 7

Пĕр кун та хăйшĕн пурăнман вăл:
Кĕске самант канусăн та —
Çынпа калаçнă, пулнă хапăл
Ĕçпе килекене кунта.

Ват юмана вăл кăмăлланă:
Леш — тантăш-мĕн Мускавпала!
Ак ку аллейăра вылянă
Çамрăксемпе вăл чушкăлла.

Лере ир-ирĕн е каç-каçăн
Вăл тухнă шăллĕн ачипе.
Ав çавăтса пырать хавассăн
Ăна вăл çăмăл уттипе.

Калать-и тем е куларах вăл
Итлет ача калаçнине...
Çапла ӳкернĕ фотографи,
Çапла вăл паллă тĕнчене.

## 8

Гараж. Таçтан ютран кӳртернĕ
Машина. — Хамăрăн çукчĕ-шим! —
Пулман. Ильич ларса çӳренĕ
Пĕр ĕмĕтпе: тăватпăр, чим!..

Эй, халь курсанччĕ куçма-куçăн
Минутсерен кусса тухан
Машинăмăрсене çул пуçăм
Комбайн ĕçленине курсан!

Элетротрактора курсанччĕ
Е улăп-экскаватора!..
Ун ĕмĕчĕ, вăл хывнă шанчăк
Куллен чăна тухса тăрать.

Ав ун çуни, унпа çӳренĕ
Вăл çывăх ялсене тухса.
Ав ун кимми, мăшăр кĕсменĕ,
Хăй ишнĕ вăл шыва пăхса.

## 9

Ăçтан пĕлен: тен, лăпкă кӳлĕ
Аса илтернĕ хумсене...
Тен, Атăла вăл курнă пулĕ
Е Чĕмпĕр тухнă куç умне.

Ачалăх тусĕсем тĕрленнĕ.
Тем тĕрлĕ халăх, тум, йăла...
Нумай чĕлхепеле сĕрленĕ
Вăл çитĕннĕ чăпар хула.

Тутарĕ, вырăсĕ, чăвашĕ,
Ирçи, мăкши... Вăл ун чухнех
Сăнанă, çуннă ăнланасшăн
Çав тĕрлĕ халăхсен чунне.

Вĕсен танмарлăхĕ, хисепсĕр
Кун-çулĕ, мăшкăлĕ, нуши —
Ачаранпах ун тĕкĕр евĕр
Ăсне кĕрсе юламрĕ-ши?

## 10

Ульяновсен чи çывăх тусĕ
Инспектор Яковлев чăваш
Асне килме пултарнă, унсăр
Иртмен пекех килти канаш.

Пĕрре çеç мар Володя ларнă
Ун сарлака чĕрçи çинче,
Чăваш шкулне те пыркаланă,
Вылянă ун кил картинче.

Ӳсерехпе ак ашшĕ вилнĕ,
Патша çактарнă пиччĕшне.
Ун чух çав тус хăй çине илнĕ
Вĕсен пайтах йыварлăхне.

Ильич çавна ялан астунă
Мĕнпур тĕнчешĕн ĕçлесе,
Хăй аллипе çырма мел тупнă
Вăл Яковлев хутне кĕрсе.

## 11

Вăл асĕнчех усранă, ахăр,
Хăй чăваша вĕрентнине;
Çăпатапа пулин те, харсăр
Чăваш çутта туртăннине.

Анчах вăл, ахăртнех, пĕлмен-тĕр
Çав халăхăн пĕр йăлине:
Охотников хăй ывăлне те
В л а д и м и р ятлă хунине...

Кайран, пур пусмăра вăл харăс
Ĕмĕрлĕхех çапса ватсан,
Ача чухнехине уяр ăс
Кăларнă чĕррĕн ялтратса.

Вара «пур халăхшăн, чĕлхешĕн —
Пĕртанлăх, ирĕклĕх!» — тесе,
Çут тĕнчене йăлт çĕнтермешкĕн
Пире тăратрĕ вăл чĕнсе.

## 12

Çуртне кĕретĕп. Кашни пусăм
Ильич йĕрне усрать кунта.
Çак карлăкран тытса çул пуçăм
Хăпарнă ак çӳлти хута.

Ав ятсăр маçтăр авнă креслă
Çӳçе хунавĕнчен кăна.
Вăл халь пурне те интереслă,
Кашни ачах паллать ăна.

Кресли хыçне таяннă Ленин
Куçне хĕссе пăртак кулать.
Вăл уçă сывлăшпа киленнĕ.
Ун ал сехечĕ çуталать.

Паркра чĕвĕлтетет пуль кайăк,
Ильич итленĕ пек ларать.
Аван-çке пурăнмашкăн, лайăх!
Э т е м — хăватлăн янăрать!

## 13

Çак çурт пайтах çынна астунă;
Ăна тирпей кӳрекенни,
Ун хăчĕ, ырă чунĕ — пулнă
Надежда Константиновни.

Кунне-çĕрне йăлтах вăл маннă:
Куç хупанки йывăрланса
Сиккеленми пуличчен ларнă
Чунтан-вартан ăшталанса.

Вăл темĕнле кил-вут хӳтти пек,
Çапла куратăп яланах:
Ыйхи çĕнтернĕ куçĕ типĕ,
Тути çинче ăшă сăмах.

Вăл ларнă çепĕç няня евĕр
Аллисене умне тытса,
Çынна хурлантарас темесĕр
Куççульлине аран çăтса.

## 14

Приют ачи-пăчи — таçтанччĕ? —
Çыру çитернĕ ун патне:
«Надежда асанне, сыхлаччĕ,
Упра Ильич асаттене...»

Çав çырăва тĕрленĕ евĕр,
Чăпта çине çиппе çырса
Ăсатнă ачасем: халь эпĕр
Ăна вулатпăр куç шăлса.

Упранă вăл, куç пек сыхланă,
Самай пек пулнă вăхăтра
Кĕнекесем вуласа панă,
Хыпар пĕлтернĕ хаçатран.

Ĕшеннĕ чĕрене пуласлăх
Çĕкленĕ çутă инçетрен,
Самант та татăлман ун аслă
Ăс-хакăлĕ çак тĕнчерен.

## 15

Тата кама çак çурт паллань?
Çулпуçăмпа пĕрле кунта
Çын чунĕн инженерĕ ларнă,
Чи паллă инженер-ăста.

Вăл Горький пулнă... Çăра чейĕ,
Чечек çыххи сĕтел çинче...
Балконĕ айĕпе Россия
Иртет ик çын куç умĕнчен.

Вĕсем ăна утса хутланă
Енчен енне, вĕçрен-вĕçе.
Пĕр çул пĕтсен тепри пуçланнă —
Йĕрлев, тĕрме те ссылка çеç...

Ютра та уншăн пăшăрханнă
Юратнă халăхшăн чĕре.
Сасартăк Капри сăнарланнă
Аса илсессĕн ют çĕре...

## 16

Вĕсем тĕл пулнă куçа-куçăн,
Пĕрле ӳссе, пĕр хĕн тӳссе,
Пĕр аслă чăнлăхпа яр-уççăн
Çутăлтарсан пур кĕтессе.

Хĕрсе тавлашнисем те пулнă
Çав чăнлăха шыранăçем.
Çавна аса илсе халь кулнă,
Именнĕ те-и тен вĕсем.

Çынна мĕн чухлĕ юрататăн —
Ун чухлĕ ытларах çунан:
Ниçтан нимле хура-мара та
Ан ертĕр тетĕн çав çынна.

Çыравçă ӳсĕрсе илсессĕн
Сасартăк — сăмаха чарсах —
Пăшăрхана пуçланă Ленин,
Канма хистенĕ вăл часрах.

## 17

...Интеллигенци саботажĕ,
Пăлхав та выçлăх, тăлăхсем,
Наука, пролеткульт... Ăçта-ши
Çитмен калаçура вĕсем!

Республикăмăра шар урнă
Инкек ун чух. Çавна пĕлсех
Çĕр çул малаллине те курнă
Ик çын пĕр чунлăн пуплесе.

Ик тантăш, икĕ тус, ик гени
Хăватлă вырăс чĕлхипе
Пур халăхсен чунне çĕкленĕ,
Калаçнă пĕтĕм тĕнчипе.

Вĕсем çине пăхсан калатăн:
Ак çакăнтан вара чăнах
Европа хăй ăс-хал ыйтмашкăн
Киле пуçлать Российăна.

## 18

Иртетĕп. Пӳлĕм хыççăн пӳлĕм...
Эп унăн кабинетĕнче.
Те курăн, те кураймăн ӳлĕм
Тесе чылай тăрап пĕччен.

Çак пӳлĕмрен хăватлă шухăш
Саланнă пĕтĕм тĕнчене.
Шкапра — нумай чĕлхепе хутăш
Кĕнекесем. Сĕтел çине

Вăл Горький кĕнекине хунă —
«Ман университетăмсем».
Джек Лондона вуланă пулнă
«Пурăнăçа саван этем».

Пенснеллĕ Чехов умне çакнă
Календарьне вăл çав кунне
Çурма ĕлкĕреймен, хăварнă —
Январĕн çирĕм пĕрмĕшне.

## 19

Вăл çакăнсах тăрать. Сархайнă.
Январĕн çирĕм пĕрмĕш... Çук!
Пĕтмен, пĕтме пултарайман ун
Кун-çулĕ хăй куç хупнă чух!

Гипс пит. Меркуров тунă маска:
Тути те, куç харши те ун...
Ма çав-çавах шантараймасть-ха
Вăл Ленин çуккине çав кун?

Çĕрĕпелех ĕçленĕ скульптор —
Ирччен, тăватă сехетчен.
Тулта — тăман е тăвăл уртăр —
Капланнă халăх пур енчен.

Тулта — те юр çуман, те çунă —
Тап-такăр пулнă çул, уй-хир,
Çынсем курса юласшăн çуннă,
Куç хуптарман çĕршыв хуйхи.

## 20

Кĕрленĕ, макăрнă, ӳленĕ
Салхуллăн, хурлăн мăрьесем.
Ильич — вăл вилнĕ, анчах Ленин...
Пуçланнă Л е н и н  к у н ĕ с е м.

Çапла кăна каланă халăх.
Çав сăмахпа хăй çул пуçне
Вилмеслĕх, ĕмĕр пурăнмалăх
Вăл пехилленĕ çав çулне.

Çав çултанпа çуллен пĕр авăк
Ĕç çыннисен вĕри чĕр
Хăвăртланса тапать сасартăк.
Çав çултанпа, çав кил-çуртри

Тин çеç пуçланнă календарĕн
Кун листисем сархайнăçем
Кĕрешĕве чĕнсе, кăваррăн
Çунаççĕ Л е н и н  к у н ĕ с е м.

## 21

Январĕн çирĕм пĕрмĕш... Тăрăр!
Шăп пулăр пĕр самант, çынсем!
Анчах пире хуплаймĕ траур, —
Утатпăр Ленинпа çĕнсе.

Çак алăкран вăл тухнă — Ленин,
Тĕнче курман мăн çĕклем пек
Ăна хăй партийĕ çĕкленĕ
Нихçан сӳнми ĕмĕтсемпе.

Çав кун таçти çĕрсем те ырнă:
Çав вырăс ялĕнчен инçе
Çав тупăках çĕклесе пынă
Пин-пин хулпуççисем çинче.

Анчах çын чунĕсем туптаннă
Çав йывăр хурлăх пуснăçем.
— Чурашăн çăлăнăç пуçланнă! —
Шантарнă Л е н и н  к у н ĕ с е м.

## 22

Тăван çĕрте тӳлек çанталăк,
Ак мир ĕçне — Ильич ĕçне —
Тума пуçтарăннă пур халăх
Эпир халь килнĕ ун патне.

Пуху пӳне çитмен яшсемччĕ
Нумайĕш вăл астăвасса.
Халь пирĕн сассăмăр çĕкленчĕ
Телейшĕн, миршĕн янраса.

Курса пăхса çӳретпĕр акă —
Пайтах чĕлхеллĕ тĕрлĕ çын:
Корейĕ, вырăсĕ, полякĕ...
Пăлхарпала чăваш, румын...

Куçсем йăлтăртатса каяççĕ:
Пĕр ĕненӳллĕ йыш эпир.
Тулта халь кăнтăрла-и, каç-и, —
Чĕремĕрте çап-çутă ир.

## 23

Хура юнсен хура ылханĕ
Каллех, виле çăханĕ пек,
Кăранклатса вĕçме хăтланĕ
Пур çут çанталăк анĕпе.

Мĕн пур йăх-ях, тĕнче усалĕ,
Пĕр пĕлĕт евĕр капланса,
Уяр куна пăсасшăн халĕ
Аслатисем авăрттарса.

Анчах çĕршывăмăр пуçланă
Çĕн эрăн шуçăмĕчченех
Эпир тăрса çапла юрланă,
Çапла юрлатпăр хальчченех:

«Хаяр аçа çапса ватсассăн
Чун иллисен пур ушкăнне,
Пире çак хĕвелех хавассăн
Çутатĕ, парĕ ăшшине».

## 24

Çак шухăшпа çуртран эп тухрăм.
Куçа çиет хĕлхемлĕ юр,
Çара çăка, юман та хурăн.
Ĕнтрĕкленмен-ха. Çутă пур.

Сасартăк эп утса пыруçăн
Куратăп ешĕл чăрăша.
Каçхи хĕвел ăна яр уççăн
Çутатрĕ ячĕ пĕр хушша.

Умра каллех çурхи тĕнче пек,
Лăсра курап ун вăй-халне.
Унтах аса илетĕп эпĕ
Кремль умĕнчи чăрăшсене.

Чĕр пурнăç ĕмĕрлĕх пилленĕн —
Çаралмĕ чăрăш нихăçан.
Пирĕнпеле ялан пĕр Ленин,
Эпир те Ленинпа ялан!

1951—1952.
Мускав, Шупашкар, Кисловодск

## ТĔНЧЕРЕ МĔН ВĂЙЛĂРАХ?

### *Юмах*

*Н.Р.Романова*

Халăх ăсĕн çӳпçинче
Тупнă эсĕ çак ĕнче,
Эс курман пулсан, хальччен
Пĕлес çук ăна тĕнче.

Якатмах çитмерĕ хал,
Тен, ăсталăх та сахал.
Пĕчĕк ĕçĕм те пулин
Пултărах сана халал!

* * *

Пĕр патшан хăй килĕнче
Пĕлес килнĕ пĕринче:

Пуринчен вăйлăраххи
Мĕн-ши пирĕн çĕр çинче?

Кам та кам чăнне калать,
Çав çынна патша парать
Çур патшалăхне тесе
Халăхра вăл сас сарать.

Ак хайхи патша патне,
Унăн чаплă кил-çуртне
Тăхăр çын пуçтарăнать
Çав хавас хыпар ятне.

Пырса çитрĕ чи малтан
Çил арманĕ пăхакан,
Мельник тейĕпĕр кĕскен
Пит сăмах вакланасран.

Иккĕмĕш — вутран-хĕмрен
Инкек курнă çын иккен.
Виççĕмĕшĕ — пулăçă
Сĕреки-атмипелен.

Тăваттăмĕш — тимĕрçĕ,
Килсерен вăл кирлĕ çын;
Пиллĕкмĕш — çар пуçлăхĕ,
Витĕмлĕ те вирлĕ çын.

Улттăмĕшĕ — яш кăна
Сарă каччă. Мĕн ăна?
Сарă хĕр савать пулсан
Мĕн çитмен-ши каччăна?

Çиччĕмĕш — чыса пĕлмен
Выçă куç усламçă-мĕн.
Саккăрмĕшĕ — евчĕскер
Йăпăлти чĕлхипелен.

Тăххăрмĕш çынни камне,
Вăл мĕскер ĕçленине
Пĕлеймерĕмĕр эпир,
Тамаша тенĕ хăйне.

Те виртленĕ чăваша
Те юптарнă пĕр кукша,
Те ку ят, те хушамат? —
Пирĕн çук-ха вăл нуша.

Ак патша çав çынсене
Лартрĕ хăйĕн çывăхне:
«Пуринчен вăйли мĕскер?
Калăр, — терĕ, — тĕрĕсне!»

Сăмаха мельник пуçлать:
«Чи вăйли вăл çил пулать,
Ху пĕлен — мĕн йывăрăш
Чулсене вăл çаврăрать.

Урăм-сурăм тапрансан,
Тӳс кăна вара арман!
Çунатне те шарт хуçать
Хăш чухне вăл пит ассан...»

Çуннă çын тăнларĕ те,
Хаш кăна сывларĕ те
Хушрĕ хăйĕн сăмахне:
«Чи вăйли çил мар-ха, — тет. —

Çил часах вăл ывăнать,
Ывăнать те чарăнать.
Çуната хуçса кайсан
Тӳрлетме пулать ăна.

Пуринчен ытла вăл — вут,
Акă çунчĕ те ман çурт —
Çӳпĕ те юлмарĕ!» — тет
Хуйхăрса вăл тепĕр хут.

Пулăçа ку килĕшмест,
Вăл калать: «Вут, тетĕн эс, —
Вăл часах çунса пĕтет,
Шыв-шура мĕн çĕнтерес?!

Шыв вута та сӳнтерет,
Пĕвене те çĕмĕрет,
Кӳлĕрен тухса тарать,
Тĕпсакай тĕпне кĕрет.

Шыв хăватлă пуринчен!» —
Тет çакскер юлашкинчен.
Акă тимĕрçĕ тăрать,
Пурте пăхрĕç куçĕнчен.

Вăл калать хăй шухăшне:
«Шыв хăватлă — çуркунне,
Çĕкленсе таçта-таçтах
Сарăлать вăл ун чухне.

Çăва тухрăн — шăрăхра
Вăл типме те пултарать.
Шартлама хĕлле тата
Пăрлансах каять вара.

Тимĕр вăйлă чăн-чăнах,
Çитекенĕ çук ăна.
Тимĕр пуртă ӳкерет
Виç ытамлă юмана.

Тимĕр тупă инçене
Çитерет етресене,
Тимĕр вут та кăларать
Перĕнсессĕн чул çумне.

Тимĕр хĕç, кирлех пулсан,
Тиркемест, шăлмасть пуçран:
Улпутне те чиперех
Вăл касать пĕлсе сулсан».

Ак çар пуçлăхĕ пуплет:
«Тимĕре ман çар пĕлет —
Тупă та, пăшал та пур,
Хĕç те, сăнă та пур, — тет. —

Анчах акă мĕн пăсать:
Тимĕр-тăмăр тутăхать.
Паттăр вăйлă пуринчен!
Ман сăмахăм чăн пулать.

Эпир паттăр пулнăран
Хирĕнет, ӳкет тăшман.
Кам патшалăха сыхлать?
Кам иртейĕ паттăртан?

Паттăр вăрçă та вăрçать,
Ĕçĕ те ун ăнăçать,
Паттăра хисеп те чыс!»
Халĕ каччă калаçать:

«Паттăр — вăйлă, ку паха,
Тиркеместĕп сăмаха.
Сарă хĕр çав паттăра
Илĕртсен мĕн калăн-ха?

Ытарма çук хĕр çине
Кам хурайтăр аллине?
Хĕр пултарĕ çавăрма
Патшана та хăй енне!

Пăхса илĕ те пĕрре —
Тапса сикĕ те чĕре.
Тем тесен те, чи вăйли —
Хĕр илемĕ тĕнчере».

«Ха-ха-ха — кулса ярать
Ват усламçă, ахăрать: —
Сарă, хӳхĕм хĕрсене
Кĕмĕл сум пăхăнтарать.

Тĕнчере вăйли — укçа!
Вăл пурне те хăй хуçа.
Укçапа ухмах та халь
Улпутла ухать пуçа.

Пĕлмесен укçа пухма,
Ыр улпут та — тăр ухмах.
Пуп укçашăн пултарать
Икĕ хут венчет тума.

Укçапа упа ташлать,
Тĕрме алăк уçăлать.
Вăр-хурахăн мăйĕнчи
Тимĕр сăнчăр татăлать.

Çав укçасăр — мĕн калас! —
Патша хăй те пурнаймасть».
Çын силлерĕ енчĕкне —
Чăнкăр-чăнкăр турĕ сас.

Усламçа итле-итле,
Евчĕ хушрĕ кăшт шӳтле:
Укçа вăйлă та, анчах
Вăл пымасть-çке пур тĕле.

Укçан куçĕ çук тесе
Сăмахлаççĕ этемсем.
Пĕлмелле ăна тупма,
Кĕт-ха эс вăл кĕрессе!

Шăмăсăр чĕлхе — ак мул!
Парăнми пĕр паттăр пул,
Kaçăр каччă, хӳхĕм хĕр —
Чĕлхе çавăрĕ, ан кул!

Усламçа усламçă та
Чĕлхепе часах лартать.
Кĕçĕнни асла тухма
Чĕлхепех йăпăлтатать.

Пуçлăхсем пур халăха,
Патшасем патшалăха
Чĕлхепе пăхăнтарса
Тыткалаççĕ мар-и-ха?

Вăй вăл — шăмăсăр чĕлхе,
Çав хуçа ĕмĕрлĕхех
Çакă пирĕн тĕнчене, —
Пĕл, патша, тĕрĕслĕхе!»

Сакăр çын çапла пайтах
Тăкрĕ, авăртрĕ сăмах.
Патша уйрăм уççине
Тупаймарĕ-ха çапах.

Тамаши шарламанран
Ыйтрĕ вăл Тамашаран:
«Кам каларĕ тĕрĕсне?
Мĕн вăйли сан шутпалан?»

Пуçне хыçрĕ Тамаша,
Пăртак кайрĕ шухăша,
Вара хушрĕ ерипен:
«Чăн сăмах вăйлă, патша.

Чăн сăмах çил пек вĕçет,
Чăн сăмах хĕç пек витет.
Çурхи шыв пек сарăлса
Пур çĕре те вăл çитет.

Чăн сăмах вăл паттăра
Чĕрĕ вăй парса тăрать,
Халсăра вăл хал кӳртет,
Сар хĕре ăслантарать.

Чăн сăмахăн хăватне
Пĕтерес теекене
Çакăн пек усламçăсем
Йăлт параççĕ усламне.

Чăн сăмах суеçĕсен —
Çакăн евĕр евчĕсен —
Суйине те кăларать
Итлеме пăртак пĕлсен.

Чăн сăмах вутра çунмасть,
Кивелмест, шывра путмасть,
Тутăхмасть, çĕрте çĕрмест,
Ĕмĕрне те ватăлмасть.

Чăн сăмахсăр халăх та
Саланса каять таçта.
Ман сăмахăм чăн, патша,
Сан мĕнле-ши-ха тата?

Сăмаху çине тăрсан,
Сăмахна тытан пулсан
Çур патшалăхна мана
Памаллах пулать халь сан».

Ку патша иккен хайхи
Пулнă евчĕ хăраххи,
Талпаса çапма кăна
Пĕлнĕ ун чее чĕлхи.

Нимĕн те памарĕ вăл,
Хуралне каларĕ вăл:
«Хăвалас та кăларас!»
Çаврăнчĕ те кайрĕ вăл.

Анчах çав Тамашанне
Халăх илтрĕ сăмахне:
Патшаран вăл çавăнтах
Туртрĕ илчĕ çĕршывне.

Кĕç хăйне те патшана
Кайса ячĕ катана, —
Çичĕ тинĕс уттинче
Тăна кӳртрĕ вăл ăна.

Юмахне юптарнă чух
Шав пырать пĕр калаçу:
Тĕрĕс çав, чăн сăмахран
Хăватли тек ним те çук!

1952

## ПĔРРЕМĔШ КĔРКУННЕ

Ун чухне эп пĕчĕкçеççĕ,
Тин çӳретĕп сӳрене.
Патшана ӳкернĕ теççĕ,
Ирĕк тухнă тĕнчене!

Салтаксем таврăнкалатчĕç.
Ял-йышсем ыйтса пĕлсен:
«Кирлĕ мар вăл пулнă сначчăт!» —
Тетчĕç çав патша çинчен.

Шкулта çеç патша портречĕ
Çакăнса тăчĕ чылай.
Тек пире вĕчĕхтеретчĕ
Мăк сухаллă Микулай.

Ак хайхи хăюллă ушкăн
Урокчен пĕр ирхине
Пырса кĕтĕмĕр те — шуххăн
Тăтăмăр патша умне.

Хур шăмми е хăмăш лартнă
Сакăр-тăхăр пăшалпа
Персе ятăмăр хăватлăн
Пăрçапа, паранкăпа.

Кулăшла патша сăн-пичĕ:
Виçĕ шăтăклă сăмса,
Кăн-кăвак куçне шур илчĕ,
Тути кайрĕ чалăшса.

Пуп класа хăтăркаларĕ,
«Без обеда» хăш-пĕрне
Хăварса хăтланкаларĕ, —
Класс шарт çыртрĕ чĕлхине.

* * *

Хĕрнĕçем кунсем хĕретчĕç.
Халăх тухрĕ акана.
Çĕр пирки вăрçни кĕретчĕ
Пирĕн пĕчĕк хăлхана.

«Мĕн пăхатпăр? Мĕн кĕтетпĕр?
Кӳршĕ ял вырăсĕсем
Улпута тустарнă... Шеп-тĕр
Креппите те силлесен?»

Çавнашкал сас-чӳ янратчĕ
Ял çинче, уйра-хирте,
Кантăкран килсе шаккатчĕ,
Вăркăнатчĕ вăл пӳрте.

Пĕринче, выртма кайсассăн,
(Пирĕн ял çапла тăвать)
Темĕн чухлĕ кассăн-кассăн
Купаларăмăр кăвайт.

Шăматкун, вырсарни каçчĕ:
Ир-ирех таврăнас çук.
Çĕрĕпех вут явăнатчĕ
Юман çӳллĕш ун пек чух.

Çĕрĕпех пиçет паранкă,
Тĕтĕм те касать куçа.
Алхасан, юмах яран кăшт,
Юмахран чăна куçан.

— Самана пăтранса кайрĕ, —
Терĕ пĕр ватти хăй май, —

Кĕтӳре кĕтӳç юлмарĕ,
Йĕрке пулĕ-ши? Ай-хай!..

Çавна хирĕç Матрус Сентĕр,
Питĕртен тин килнĕскер,
Сăмах хушрĕ çĕкленмесĕр:
— Пулĕ! — терĕ вăл кĕскен.

«Йĕрке кам тăвĕ?» — тесессĕн,
Пирусне вут пуççипе
Тĕртрĕ те Матрус тивсессĕн —
«Ленин», — терĕ ерипе.

* * *

Çав сăмах ăша вырнаçрĕ.
Матрус Сентĕр каялла
Питĕрех вăл тухса кайрĕ,
Эпир юлтăмăр яла.

Ĕç пуçтартăмăр. Шăп кун-çĕр.
Хăмăл çеç уйра карлать.
Кайăк-кĕшĕк тытрĕ çул-йĕр
Çурçĕртен кăнтăралла.

Тăрнасен картин кĕтесĕ,
Пĕлĕтре куçа-куçа,
Акрамат автан йĕтесĕн
Курăнатчĕ вăл куçа.

Çав йĕтес пит илĕртетчĕ:
Темĕнле телей кĕтсе,
Такампа туртас килетчĕ
Çав тытма çук йĕтесе.

Çулçă тăкăнчĕ. Хура кĕр.
Кайăксем шăп-шăпăртах.
Тертленет, ялтрать пуçра пĕр
Илтсе юлнă çав сăмах.

Л е н и н... Кам вăл? Кам пĕлет-тĕр
Вăл мĕнле çын иккенне?
Тинкерсех эпир итлетпĕр
Ваттисем калаçнине.

«Пулĕ-ха тĕнче мехелĕ.
Ĕçлекен хутне кĕме,
Тен, çав çын саккун йĕркелĕ —
Хӳтлĕх кирлĕ этеме...»

«Ленин»... Тен, вăл Çтенкке Раçăн,
Пăкачав пек çын-тăр, а?
Ахаль мар ăна чараççĕ,
Килтĕрччĕ вăл хăвăртрах...»

«Ленин килнĕ тет, атьсемĕр,
Пурăнать тет Чĕмпĕрте».
«Ну, апла кунта çитет-тĕр.
Чăваш мар-ши?» — «Вырăс тет.

Темиçе чĕлхе чухлать тет,
Вăл пире ăнланĕ-ха...»
«Ăнланмасăр! Куç курать вĕт:
Хӳтлĕх кирлĕ халăха...»

* * *

Çук текех патша потречĕ
Таçта ун хашакĕ те.
Чиркĕве çӳрекелетчĕ
Пуп пире хисте-хисте.

Хăрамасăр, шикленмесĕр
Патша несĕлĕ çинчен
«Вăрăм ĕмĕр, вăрăм ĕмĕр!» —
Тетчĕ пуп хăй кĕллинче.

Ăнсăртран пĕрре эп илтрĕм
Переменăра чухне
Çав пуппа учитель пирĕн
Шултранах калаçнине.

«Шкул... чиркӳ... патшалăх... турă...
Ирĕк...» — тет учителĕ.
Пуп итлерĕ те мăш! турĕ:
— Эс мана ан ӳкĕтле!

Виççĕр çул ытла Романов
Раççее тытса тăрать.

Мĕн Керенский! Кам влаç панă
Путсĕр узурпатора?!

Узурпатор... ăпăр-тапăр...
Вырăсла е чăвашла —
Эп пĕлмен ăна çав тапхăр.
Леш, учителĕ, шăлать:

— Вăл çаплах пуль, Марк атте, те,
Анчах манăн шухăшпа,
Ĕлĕкхи пулмасть-тĕр тетĕп,
Çĕнелсе килет шăпа...

Вăхăт çитнĕ-мĕн: пĕр «старшши»
Тытса тухрĕ шăнкăрав.
Урока-ши, урăха-ши
Çав йыхравлă янăрав?

* * *

Пасар каç пĕрре каятпăр
Аттепе вир çуртарма.
Тутар ялĕ çичĕ-сакăр
Çухрăмра лекет çул май.

Темиçе те курнă ахăр, —
Икĕ ялăн чиккинче
Чул ларатчĕ, кукăр-макăр
Çыру пурччĕ ун çинче.

Çав шур чул пире тĕл килчĕ,
Патĕнче пĕр çын. Тутар.
— Тпру! — Атте çĕлĕкне илчĕ, —
Тыт-ха, — тет, — эпир туртар.

— Нăрулла, эс мар-и? — Эпĕ.
— Мĕн унта чаваланан?
— Амитке! Тутар хисепĕ
Çĕкленсе килет, ăнлан!

Хусан хамăрăн пулать тет!
Çак чулсем, — пĕлетĕне? —

Çĕнĕрен кăтартмалла тет,
Хамăр çĕрĕн чиккине.

Ват мулла каласа пачĕ
Пухура, — тет Нăрулла.
— Мĕн тăван эс Хусанпа? — тет
Ман атте кула-кула, —

Ĕмĕрне те ман хăраххăм
Ялунтан тухса курман.
Пурăнасчĕ лăпкăраххăн,
Туртса яр-ха... мĕн Хусан!

— Эх, чăваш! Чăваш темерĕн!..
Тутарсем — тĕнче тулли!
Пирĕн пулнă-çке, пĕлсессĕн,
Авалхи Хусан хули.

— Пултăр, пултăр, ха — вĕрерĕ!
Ху пит çĕкленсессĕн те
Мана паллăн тетĕп? — терĕ
Тилхепе туртса атте.

* * *

Вулăс ялĕ. Юн сăрлатрĕ.
Ав сехре хăппи — кантур.
Ав хупахĕ, ав пасарĕ,
Пĕр ик-виç чул çурт та пур.

Чавкасем чăвăлтатаççĕ
Шур чиркӳ тăрри тавра.
Хирĕç пулчĕ пĕлĕш лавçă:
— Кайрĕ пулĕ уяра...

— Ахăртнех пуль... — тесе хыврĕ
Çĕлĕкне каллех атте.
Анчĕ ут пуçне вăл тытрĕ:
— Тăвĕ питĕ чăнкă, — тет.

Çавăтса анать вăраххăн
Пушă аврипе утне.
Тăхтама хушать: мăнтарăн
Янаварĕ хăмăтне

Янаххи патне çитернĕ, —
Чараймасть урапана.
Кĕç аттен саппас вĕренĕ
Туртса çыхрĕ тукуна.

Аранах анатпăр халĕ
Виçĕ кустăрма çинче.
Чарăнатпăр ик хапхаллă
Мăн хуралтă умĕнче.

Пĕр енче — кĕрпе арманĕ,
Тепринче — çăмне тапать.
— Çĕкленет Курсай Раманĕ! —
Тет атте сив кăмăлпа.

Арманта шăкăл та шакăл
Калаçу мĕн ĕлĕкрен.
Халапа çынсем пит хапăл:
Вăл — черет кĕскетекен —

Пырса кĕчĕ пĕр тирпейлĕ,
Типшĕм, куçлăхлă этем.
Çĕлĕкне хывса илейрĕ —
Шăп лăпланчĕç ыттисем.

— Авăртас-им? — терĕ куçлăх
Ман килес-ха тенĕ пек.
— Кирлĕ, — тет пĕри кăшт хурлă, —
Кишĕклетпĕр майĕпе...

— Э... апла кĕрпе арманĕ
Пулчĕ пулĕ ку эппин?
— Çавă, — тет Курсай Раманĕ, —
Уптиркка ку, ырă çын.

— Ăçтисем эс? — тет такамĕ.
— Эп-и? Эп — çырмапуçсем.
— Курнă çын пек çавă... Хам эп —
Касăлман туртапуçсем.

Халăх кулчĕ, ĕхĕлтетрĕ.
Шăп шăпланчĕ арман чулĕ.
— Эс шӳтник пулмалла? — терĕ
Куçлăхли, — юмахçă пулĕ?

— Юмахпа кăна пурнатăп,
Унсăр — çăкăр ан çитер!
— Эп шăпах юмах пухатăп...
— Эсĕ пуль? — Тăхта! Чипер!

— Тăвансемĕр! Хура халăх! —
Терĕ куçлăх кăшт тăрсан. —
Илтнĕ пуль: вăрман хăлхаллă...
Илтмесессĕн тăнлăрсам.

Чăвашсем чăмăртанаççĕ:
Пур çĕрти-çӳлти çинчен
Калаçма пуçтарăнаççĕ
Тĕрлĕрен хуласенче.

Чĕмпĕртен тин çеç эп килтĕм:
Ятлă-сумлă çынсемпех
Чăвашла калаçса илтĕм,
Пурте халь пĕр чунлă пек.

Пулса куртăм Хусанта эп,
Пулса куртăм Самарта.
Час чăваш çĕкленсе кайĕ,
Ырлăх пулĕ хамăрта.

Ну, унччен пуху-таврашăн
Çӳреме тӳрре килсен
Вăхăтлăх тӳре-шарашăн
Сасăлас пулать çынсен.

Çавăнта чăваш телейĕ...
«Çĕр пирки мĕн тамаша?»
— Питĕрти пуху мĕн тейĕ...
Манмĕç, манмĕç чăваша.

Çавăнта пур хура халăх
Пархатарлă ĕмĕчĕ. —
Пуçлăх чарăнчĕ те, алăк
Патĕнчен пĕр çын тăчĕ.

Шăтарас пек куçлăха вăл
Пăхса илчĕ пĕр самант,
Ун еннех тăрса алхапăл
Хăй пуçларĕ калама:

— Сирĕн пурте — хура халăх:
Лашалли, лашасăрри,
Пилĕк-ултă кив капанлă
Хыт кукарĕ, тарçăри...

Ухливан хуçа та сирĕн,
Ун тарçи те пĕр картра.
Хам ак эпĕ кунĕн-çĕрĕн
Ирттеретĕп шахтăра.

Ĕçĕм-хĕлĕм, каласассăн,
Чăннипех те хуп-хура.
Анчах эп — рабочи класăн
Пĕр çынни çак пухура.

Юлташсем! Ан шанăр халь çеç
Йăпăлтатнă йăваша:
Йăвашсем йăвантараççĕ...
«Çĕр пирки мĕн тамаша?»

— Час пуçлатпăр валеçмешкĕн
Пур çĕре ятакпала.
Унчченех илес тесессĕн —
Çылăх пулмĕ, сухала!

«Кăçал акнă... Килес çулшăн
Шухăшлать ялти этем...»
— Пулĕ! — Туршăн та-и?» — Туршăн
Мар: этемшĕн, юлташсем!

Шăв та шав. « Хăшне ĕненĕн?»
«Чăнлăх çук-шим?» «Çук çав, çу-ук...»
— Чăнлăх? Чăнлăх пирĕн — Ленин! —
Терĕ çын хăй тухнă чух.

* * *

Тăм ӳксе шуралнă уçăм.
Пир тăла сăхать шыва.
Эп пăру шырама тухрăм,
Хамăр хĕрлĕ пăрăва.

Выльăх-чĕрлĕх çăркаланă
Эп пыран калча пусси

Халĕ ĕнтĕ тумхахланнă,
Кăчăр пулнă çĕр пĕр си.

Çав-çавах алла кĕртмеççĕ
Пурлă-çуклă выльăха:
Каçармашкăн йывăр теççĕ,
Хĕлĕн хырăмĕ ай-хай!

Каç пулать. Пыратăп лăпкăн
Пĕчĕк пуççăн тĕмсĕлсе.
Кавлесе выртаççĕ шăппăн
Сĕт шăршиллĕ ĕнесем.

Кавлемешкĕн чарăнсассăн
Мăш! туса илеççĕ те —
Пĕтĕм çĕр сывланăн ассăн
Сас каять пек инçете..

Йăрансем. Вуникĕ çуллăх
Çурнă тет. Вĕсем çинче
Хыт хура, шурарăм, çулăк
Карласа ларать... Кичем!

Ял çинче тата пуплетчĕç:
Леш хайхи креппитсене
Ĕмĕрлĕх çĕр панă тетчĕç,
Курайма стчĕç вĕсене.

Кассерен пĕрер-икшерĕн
Пурччĕ çав «ĕмĕрлĕхсем».
Пухура-мĕнте тискеррĕн
Çухăрашнă-мĕн вĕсем.

«Ял-йыша утланса ларчĕç,
Мăй çинче хура сăпса.
Ял çĕрне памалла марччĕ!» —
Тетчĕ халăх тарăхса.

Креппитсем валли кастарнă
Чи паха ана-çаран.
Хăш хуçи карта тыттарнă,
Хăшĕ пур — юри тытман.

Анчах ун йăранĕ урлă
Выльăх кăшт каçсассăн та,
Чухăна инкек те хурлăх:
«Тенкĕ!» — тет вăл çавăнтах.

Хупăнса тăрать кун-каçăн
Касăлса вара ĕне.
Ун пек чух юр-вар кураймăн:
Хупакан сăвать сĕтне.

«Мĕншĕн сурăн-ха?» — тесессĕн
Эсĕ çавă креппите,
Вăл санах хăртать: « Мĕн эсĕ?!
Çĕлен ĕмнĕ пулĕ», — тет.

Выльăху кĕмен çĕртен те
«Кĕнĕ» тет çав çĕр çăтман.
Макăратăн та тӳлетĕн
Е вырса пама пулан.

* * *

...Эп супсах пăру шыратăп,
Хăвăртрах тупас килет.
Такăнкаласа пыратăп
Çăпата пуçĕпеле.

Хĕрача тĕл пулчĕ: — Петĕр!
Хупнă вĕт пăрăвăра!
— Эс ăçтан пĕлен? — Пĕлмесĕр!
Палламастăп-им вара?

Макăрса тăрать — хам куртăм —
Урхантейĕн картинче.
Хĕç пек пулнă. Çинчĕк улăм
Курăнин хăть умĕнче.

Тенкĕ тет шуйттан креппичĕ!
Лекнĕ пирĕн вăкăр та... —
Çунăхать хĕр тантăш пичĕ,
Ман та çулăм — кăкăрта.

Пăрăва хамах паллас-тăр,
Ĕненсен те сăмахне.

Хĕрачапала утатпăр
Урхантей паçми патне.

Урхантейĕн уйрăм хутор,
Анисем — йĕри-тавра.
Выртмара-мĕнте ан тухтăр
Ун енне лашу вара!

Е эс лашуна шыруçăн
Ун çĕрне ху çаклансан,
Тур ан хуштăр куçма-куçăн
Тĕл пулма çав çынпалан.

Йĕвенне туртса илет те,
Ну кĕтсех тăр нушуна:
Час çăварлăхпа ислетĕ
Çемçерех çĕртен сана.

Сăнчăрта çӳретчĕ йытă,
Кашкăра пăваканскер.
Хамлатса вĕретчĕ хытă —
Çăмламас, хаяр, тискер.

Каç пулсассăн вĕçертетчĕ
Йыттине вара хуçи,
Шăп сасран та шикленетчĕ:
«Ахăрьян, ваçи! ваçи!»

* * *

Хĕрача — хам пек сăхманлă
Типшĕмрех кăна Евлен —
Калаçать, пусать хăй анлăн
Çинçешке урипелен.

Чĕнтĕрленĕ, симĕс пулнă
Çăм чăлхи ун хуп-хура,
Çăпати ăшне те тулнă,
Манăнни пекех, тăпра.

Хашкаса пырса çитетпĕр
Урхантей умне, сăрта.
Çурăк витĕр тинкеретпĕр,
Хапхине уçма — ăçта!

Чĕрĕллех хыпса çăтассăн
Ахăрьянĕ ахăрать.
Урхантей тиек пек танлăн
Калинкке уçса ярать.

— Аçуна кала: пĕр тенкĕ!
Ав сан хĕрлĕ пăрăву! —
Терĕ хыттăн ял инкекĕ.
Кĕç пĕр сасă: «Кăравул!

Кăравул! Хурах пусаççĕ!» —
Кăшкăрать тӳсмелле мар.
Аслă çул çинчен тухаççĕ
Ултă-çичĕ çын вăр-вар.

Хамăр ял çыннисемех-мĕн,
Чи малта — темле салтак.
Курăнаççĕ хĕпĕртенĕн,
Темĕн пулнă пек ялта.

Кăшкăраканни — хĕрарăм,
Урхантейĕн арăмĕ.
— Çухăр! — тет хуçи, — хăрарăн!
Ялăм-йышăм мар-и-мĕн?

— Ара эп хуран çакмалăх
Хăрăк шанкă пухрăм та...
Ха, мĕн чухлĕ хăпнă халăх,
Ахаль мар ку, тупата!

* * *

Аслă çул та вулăс çулĕ,
Тĕрлĕ çын унпа иртет.
Тем те курăн, тем те пулĕ...
Ак салтак сăмах чĕнет:

— Эс-и Урхантей Çтаппанĕ?
— Эп пулатăп. Мĕн тата?
— Халăх мурĕ, ял çăпанĕ
Эс, эппин, вăл? Тух кунта!

— Мĕн вара эс, ырă çыннăм?
Кам пулатăн? Мĕнле чин?

Леш кастарчĕ: — Манăн чинăм?
Эпĕ — ирĕк гражданин!

Питĕрте саккун кăларнă:
Креппитсен-мирсен çĕрне
Халăха пама каланă
Ятакран ытлашшине.

— Çĕр хăçан ытлашши пулнă?
Калаçан кирлĕ мара.
Халăха! Кам алă пуснă
Сирĕн çав саккунăра?

— Алă пусаканĕ — Ленин.
Çавă — хӳтлĕх халăха.
Калчуна вырса илеймĕн,
Халь кăлар ют выльăха!

Çын çинчен куçне илмесĕр,
Урхантей пăрăнкалать;
Капкăнти ват кашкăр евĕр
Унăн-кунăн пăхкалать.

— Ял-йышна та пит шанаймăн...
Карчăк, уç-ха картана! —
Терĕ те вăл утнă майăн,
Эх, вĕçтерчĕ вăрмана!

Тĕттĕм пулчĕ. Тăкăр-тăкăр
Кĕрхи çул хыттипелен
Пĕр тына утать, пĕр вăкăр,
Хыççăн — эпĕ те Евлен.

* * *

Тепĕр кун-и, ик кунтан-и
Пирĕн шкул пахчи умне
Яланхи пек пуштă аннă
Урокран тухас чухне.

Çавăнтах пуçтарăнатчĕç
Йышлăраххăн кунсерен.
Çырусем илсе тăратчĕç
Инçетри салтаксенчен.

Хуйхă пуснă салтак ашшĕ
Шак тӳмеллĕ сăхманпа:
«Пирĕнни çыру яман-ши?
Хыпар çук нумайранпа».

Салтак амăшĕ хупланă
Çăварне тутăрпалан,
Айккинче тăрать, хурланнă:
Ят тухмарĕ ун паян.

Салтак арăмĕ ун-кунăн,
Хĕвĕшсе те хĕсĕнсе,
Тăрса тухнă ушкăн-ушкăн
Хăлхисем чанках вĕсен.

Хăшĕ пур — раснах йăл куçлă
Арсăр арăм хушшинче:
«Хамшăн хам эп пуç та пуçлăх!» —
Тенĕ пек вăл хăй çинчен.

Шалтине те, тултине те
Чухласа пĕр-пĕринне,
Шӳт туса та илкелетĕн
Пурнăçсем шӳт мар енне.

Анчах ак пĕри тин илнĕ
Ют çыру вуларĕ те
Татăлса хӳхлерĕ: «Вилнĕ!»
Сас çĕкленчĕ пĕлĕте.

— Вĕлерсе пăрахрĕç! Камшăн?
Мĕншĕн хучĕ вăл пуçне?
— Камшăн? Турăшăн, патшашăн, —
Пусарать тепри чунне.

Йĕкĕлтенĕн, мăшкăлланăн,
Чĕп-чĕрĕ суран çине
Шар тăвар е пăрăç сапнăн
Илтрĕ йыш ун сăмахне.

Çав самнт сăр çĕлĕк урлă
Хĕрлĕ хăю сăрнă çын
Пычĕ тăчĕ. Ку — эп курнă
Хайхи и р ĕ к г р а ж д а н и н .

— Кулянса та ним тăваймăн, —
Терĕ вăл, — анчах сире
Калама тивет халь манăн:
Кĕтсе илĕпĕр мире.

Мирлешмешкĕн хатĕрленнĕ.
Сăмах татнă. Пур саккун.
«Кам кăларнă?» — Кам-и? Ленин.
Çавă пирĕн çутă кун.

* * *

Çавнашкал аса илсессĕн
Ман пĕрремĕш кĕркунне.
Вăл пуриншĕн, пур тĕнчешĕн
Пулчĕ ешĕл çуркунне.

1955

## ВЛАДИМИР МАЯКОВСКИЙ

### 1

Тумхахлă пурнăç çулĕпе
Çарран чунпа утса пыруçăн
Эп курнăччĕ вут чулĕ пек
Пытанчăк çулăмлă хĕрӳ çын.

Пĕччен вут чулĕ ним те мар.
Ăна пырса лексессĕн хурçă, —
Хыпмашкăн пултарать пушар.
Пăхсан — шарса каять çын куçĕ.

Çапла, çĕнни çĕнтернĕçем
Кивви виреллерех çапсассăн
Хĕлхем тăкатчĕ çав этем,
Кĕрлетчĕ аслати пек сассăн.

### 2

Хусан. Театр. Сцена уçă.
Сăр пиншакне ярса йӳле,
Вăл тухрĕ лăпкăн, хырнă пуçăн.
Балкон тек çуйăхмасть. Тӳлек.

Çăт-çат ал çупрĕç. Çын пĕр марччĕ,
Чылайăш вуламан та, тен.
Мухтавĕ ун кайран хăпарчĕ.
Сăмахăм тахçанхи çинчен.

Ун чух ăна çав шĕпĕл-шепĕл
Сайра кăна аплодисмент
Виртленĕ пек кӳрентĕм эпĕ,
Ăшра пуçларăм хирĕçме.

Вăл цирк арени çине тухнă
Тореодор пек курăнчĕ:
«Кунсен ула вăкри»* кĕç унăн
Хĕçне тирĕнессĕн туйăнчĕ.

Умне тӳрех пăхса сăнайрĕ
Зала пăртак куç айĕнчен, —
Пур çын та пĕчĕкленчĕ кайрĕ.
Чи пысăкки — вăл çеç. Пĕччен.

«Чарас вăрçа!» — пуçларĕ сасă.
Вара сехет те, иккĕ те
Итлерĕ халăх сывламасăр.
Никам пăхман-тăр сехете.

Çурхи шывла кĕрлерĕ шуххăн
Мăнаçлă бас, туллин юхса.
Вутланчĕ те çĕкленчĕ куçăн
Вунçиччĕмĕш çулхи тухса.

Ик ăслă, пысăк куç çиçеççĕ
Пĕр хаваспа пĕр çилĕпе...
Сăмах çĕмренĕсем вĕçеççĕ
Хивре хирлӳ хистенĕ пек.

Вăл тытнă кĕнеке, анчах хăй
Калать пăхмасăр сăввине.
Тăнлатăн та — миçе вучах халь
Хĕртет-ши тетĕн чĕрине?!

Шултран утăмласа сасартăк
Çĕре пуçлать калана май,

* В.Маяковский сăввинчен.

Пиншак хывать е кĕç «антракт!» тет,
Тухать вăл сывлăш çавăрма.

Поэт тухсан та пĕр самантлăх
Куç пăвнă пек тăхтать-ха зал.
Ту хушшинчи кĕрлев хăватлăн
Кумса хутлать-и тен сасса.

Таçти чулсем çине вăраххăн
Вăл çапăнса лăпланиччен,
Йăлтах илтĕнмиччен ларатăн,
Унтан — «тепре итлесчĕ!» — тен.

## 3

Лавут юлташ! Кĕртме ыйтатăп
чăваш писателĕсене.
*В. Маяковский*

Çав арăслан пек ахăравлă,
Патне ярас çукла этем
Мĕн евĕр вашават вара вăл
Хăйпе пупленĕ самантсем!

Мĕнле вăл кăмăллă та çепĕç!
Ак ун патне хăна килне
Кĕретпĕр, Шелепи те эпĕ,
Тупатпăр унăн пӳлĕмне.

Старик ун чух кăвак сухаллă,
Туяллă, куçлăхлă çын мар:
Çук, Шелепи хура-ха, аллă
Çула та çитеймен, патвар.

Сухалĕ сăмала пек. Капăр.
Кăтраланса кăна тăрать.
Шаккатпăр. «Кĕрĕр... Кам пулатăр?..»
Чăкăртатса илет кравать.

Сунатпăр сывлăх. «Çыркалатпăр,
Итлесчĕ сирĕн сăввăра.
Чăваш сăвăçисем пулатпăр.
Билет юлман-çке кассăра...»

Канса выртатчĕ пулĕ Улăп,
Ури таçтах — пукан çинче.
«Çыравçăсем?» — Вылянчăк кулă
Кăшт палăрать тутисенче.

Тăрса ларать. Лартать. «Папаша», —
Тесе пуплет Шелепипе.
«Чувашин тĕрĕс-и, чуваш-и?» —
Ыйтать темскер астунă пек.

Калатпăр та ăнлантаратпăр.
Уçса хупать вăл блокнотне.
Тинкеререх пăхать çав тапхăр
Сăпайлă халăх поэтне.

Унтан калать вăл: «Эп итлерĕм
Пĕр сирĕн çамрăк поэта.
Çемçе, хитре чĕлхе пуль терĕм,
Пит авкаланчăк пек тата...»

Сулмаклă ручкине тытать те
Çырать хăйпе çӳрекене:
«Лавут юлташ! Кĕртме ыйтатăп
Чăваш пистелĕсене...»

Çак çырăва пула хисепсĕр
Пулмарăм эп театрта:
Малти ретрен куçа илмесĕр
Пăхса тинкертĕм поэта.

Сассипеле ман чун çĕкленчĕ.
Маяк вăл пулчĕ çав хĕлле.
Эп ун чухне — Хусан студенчĕ,
Поэзи — инçетри тĕллев.

**4**

...Çапла. Çĕмĕрĕлет-ха зал.
Чăвашĕ, вырăсĕ, тутарĕ,
Мари, удмурчĕ, пĕр пулса
Пĕр Маяковские тăнларĕ.

Анчах çĕр тĕрлĕ пуç: «Уй-юй!» —
Тесе тепри питне хуплатчĕ.

Вăл тапхăр çĕнĕлле буржуй
Ĕнсе çинче йăшăлтататчĕ.

Хăйне кура ун сăваçи,
Артисчĕ, драматургĕ пурччĕ.
«Çакна поэзи темĕ çын!» —
Пăшăлтататчĕ нэп улпучĕ.

Шăрттан çĕрсен ун ăшĕнче
Хуртсем кĕшĕлтете пуçлаççĕ.
Çапла çĕретчĕ çав тĕнче,
Çав питĕрĕнчĕк тĕшмĕш лаçĕ.

Пăшăлтатса çеç мар: ун ав
Тав-шав тума ту пур хавасĕ,
«Ăнланма çук! Суя! Ултав!» —
Тесе кăшкăрашать ют сасă.

Е ал пусмасăр вăл çырать:
«Миçемĕш арăмпа хальхаççăн?»
«Кампа çӳрерĕр Парижра?»
«Мĕн сыпрăр устрица çăтсассăн?»

«Ма писрĕр сарă кĕпĕртен?
Хăçантанпа эсир хĕрелнĕ?»
«Сире листашăн Коминтерн
Мĕн чухлĕ ылтăнпа тӳленĕ?..»

Йăлтах саспа вулать поэт.
Куç харшисем ун пĕрĕнеççĕ.
Вулать те кĕсйине чикет.
Пит тĕплĕ ответлет пĕрне çеç.

Такамĕ ыйтнă ЛЕФ çинчен.
«Пĕртен-пĕр тивĕçлĕ ыйту-мĕн!» —
Тесе хурать те чылайччен
Калать вăл — витĕмлĕн, хĕрӳллĕн.

«...Кивви çĕрет, çĕнни çĕнет.
Çĕн форма çĕнĕ шухăшлавшăн!» —
Тет Маяковский. Вăл сĕнет
ЛЕФпа йĕркеллĕ паллашмашкăн.

ЛЕФ выставкиччĕ фойере,
Поэт антракт чухне сăнанă
Çынсем çинчен калать пире,
Сăмахĕ  асăмра сыхланнă:

«Тухкаласа çӳренĕ чух
Кураççĕ ман кĕнекене те, —
Тем... пит илесшĕн çунни çук.
Кĕтменччĕ. Ăнсăртран пуль тетĕп...»

Тута кĕтессипе пăртак
Кулса илет трибун йăвашшăн...
Куç хупăнчĕ. Тухать вăл ак.
Автомобиль çине ларасшăн.

Ак икĕ милиционер
Машина патнелле çул турĕç.
Анчах студент тавраш — çĕршер.
Палларĕç. Пӳлчĕç. Хирĕç утрĕç.

«Уни-верси-тета!!!» — татса
Пĕр харăс çухăрчĕ çав ушкăн...
Чĕрем чĕвен тăрать тапса —
Поэзишĕн. Поэтшăн. Уншăн.

**5**

Мускав! Вăл ĕмĕт аякраччĕ.
Ун сассине илтсе юлсан
Мана вăл ыйăха мантарчĕ.
Сасси — поэт сасси пулса.

Сасси, сăпачĕ те тĕрекĕ
Пуçтарăнчĕ пĕр этеме.
«Çитсе курап ăна пĕрех эп,
Тепре итлетĕп!» — теттĕм эп.

Ниçта кайса кĕре пĕлмесĕр
Çӳреттĕм çав хĕл Хусанта.
Шурум-бурум çинчен пĕртен-пĕр
Сасса илтеттĕм эп унта.

Çĕклентерсе те, хăтăрса та,
Çӳçентерсе те вăл мана

Чӗнетчӗ: «Ырана курса тăр,
Сăввупала ҫывхарт ăна!»

Кун-ҫул юпаллă ҫул памарӗ,
Эп утрăм чăтлăхри йӗрпе.
Яш чух темскер те сăхлантарӗ,
Умна каркалӗ серепе.

Виртлет усламăҫ магазинӗ:
Тем тӗслӗ кӗленче ҫиҫет,
Вăлчи, кăркки те апельсинӗ...
Студентăн мӗн? Стипенди ҫеҫ.

Кафе «Аполло». Кӗмӗл тирӗк
Курса иртетӗн кантăкран.
«Вузра» вир пăттине те пирӗн
Ҫиеҫҫӗ иккӗн ҫурмаран.

Кино «Электра». Пикфорд, Фербенкс.
Багдад вăрри вӗҫсе иртет.
Чунпа пӗлӗтелле вӗҫтертӗн,
Ик сехетрен — каллех ҫӗрте.

Анчах «малашлăх — пирӗн!» тетпӗр:
Пӗр каҫ пулин те уйăхра
«Касьяныча» кӗрсе ӗҫетпӗр
Лавҫăсемпе пӗрле сăра.

«Харлампий Ҫветтуя» юрлатпăр
Е «Гавдэамус» хăшӗсем,
Е «Чӗнтӗрлӗ кӗпер» яратпăр
Чăваш чӗлхи янранăҫем...

**6**

Хăлхам йăлт илтрӗ, куҫăм курчӗ.
Иртмешкӗн ҫукчӗ ансатах.
Театр. Тутар Культурӗн Ҫурчӗ,
Тавлашусем асра йăлтах.

«Гамза* вулать «Гаврилиада»
Турăсăрсен ушкăнӗнче.

* Гамза — вăл вăхăтри Хусанти паллă пропагандист-атеист.

Владимир Поссе* — астăватăп —
Калать хăй курнисем çинчен.

Нумай хушаматран пит йăвă
Пĕрне вăл асăнса иртет.
Ку — Горький. Çавăн пек ман йывăр
Йăтас килет хам ĕмĕрте.

Темле асап та, терт те, хур та
Мана хăрушă пек пулман.
Яш чух эпир çапла-çке пурте:
Ура çине ĕне пусман!

Тутар тĕнчи хăйне манерлĕ
Хавхалантарчĕ вĕркесе.
«Арабçăсем» таçта кĕлернĕ,
Выртаççĕ мехелне кĕтсе.

Машинкăн, кĕнекен, журналăн
Пĕр ятлă фирма — «Яналиф».
Е хĕрлĕн, е кăвак сăнарлăн
Шав çапăнатчĕ ун палли.

Сулмаклă СУЛФ** сăмах кĕрлетчĕ,
Ку — Маяковский вĕртнĕ çил.
Ула йыт тирĕпе çӳретчĕ
Адель Кутуй — ун сăвăçи.

Такташ туйи вĕлтĕртететчĕ,
Пар тустарса кив тусана.
Çавсем енне куç тинкеретчĕ.
Çапла хăвартăм Хусана.

**7**

Мускав. Ак эпĕ пырса тухрăм
Чăваш хаçачĕн картишне.
Туссем те, тăшмансем те тупрăм,
Ку — урăх тема. Малашне...

* В.А. Поссе (1864—1940) — журналист, издатель, М.Горькипе çыру çӳретнĕскер.

** Сулф — сулахай фронт.

Ман Маяковскиччĕ асра,
Çавна тепре илтме, курма
Вырнаçнă-вырнаçман часрах
Хистерĕм эп ун чух хама.

Анчах сасартăк апрельте
Нихçанхинчен те иртерех
Аçа çапса кĕрлерĕ те
Пулмарĕ курасси текех...

Пуçланчĕ ĕмĕрхи пуплев,
Пăшăлтату, элек-челек:
«Ма перĕннĕ?» «Нумай тӳлев...
Хĕрарăм...» Пурăнас тӳлек!..»

Хăй кункринчен пуçне малта
Пĕр ним курмасăр кавлекен
Пит йышлăччĕ çав тапхăрта,
Чăн, халиччен те вăл пĕтмен...

Ма перĕннĕ? Ăçтан калар
Кĕскен те уççăн кун çинчен?
Поэт — оркестр, тумра мар,
Пырса тĕпче-ха пур енчен!

Вăл вăхăт çĕкленме йăтать,
Çунать иртнишĕн, пуласишĕн.
Ĕçрен тухать-çке хурçă та,
Чĕремĕр — мускул çеç вĕт пирĕн,

Тумра е купăс хĕлĕхне
Карăнтаран та пушататăн;
Нӳртен сыхлатăн хăмине —
Футляр ăшне чиксе хуратăн.

Поэт çап-çарамас чунпа,
Пур кивĕ тĕнчене те хирĕç
Алтивĕççĕн тăрса чăл-пар
Вăркăнтарать сулмаклă кирпĕч.

Пиншер сăмах суйла-суйла
Чи кирлине шыранăçемĕн
Пăхсан — хăй те тытать чулла,
Вăй вĕçĕмсĕр тухмасть этемĕн.

Чĕре хӳтти, тус-йыш ăшши,
Хĕрарăмăн таса ачашĕ —
Е ку ялан хăй амăш-ши?
Е аппăш-йăмăкĕ кăна-ши?

Çапла-шим ĕмĕрех вара? —
Ĕçпе — ыранлăх никĕс сарăн,
Ху — пурăнан ют кил-йышра,
Савни те — упăшкаллă арăм...

Литература кӳллинчи
Шапа çăварлă сĕмсĕрсем:
«Ак тулчĕ те хайхин шалчи!» —
Теме пуçларĕ йĕлпĕрсе.

«Есенина хурларăн та
Хăвах уттартăн çав çулпа...» —
Çине тăрсах пĕр-пĕр ăста
Тиркемелли сăлтав тупать.

Анчах пĕр шутлă пин пуçра
Пĕр аслă, витĕмлĕ ăс пур.
Çĕршыв ăна тасан усрать.
Никам та тăваймарĕ хур.

«Эс — пирĕн. Хамăрпа пĕрле.
Ан тив, тумхахлă пултăр çул, —
Мĕнпур хура ĕçӳпеле
Эс пирĕн, ĕмĕр пирĕн пул!»

**8**

Çапла каларĕ пат татса
Пĕрлешнĕ ăслă парти.
Хăватлă тупă пек сасса
Вăл сыхласа хăварчĕ.

Ытараймасăр ăнтăлса
Эп ун патне килсеттĕм,
Ман ĕмĕт юлчĕ татăлса, —
Тек кураймарăм теттĕм.

Улах кăна пĕр пӳлĕмре
Пăшалĕ шаплатсассăн,
Самантлăх хăпрĕ ман сехре,
Сасартăк пĕтрĕ сассăм.

Кун хыççăн кун, çул хыççăн çул...
Сăмах вĕçет çĕмренĕн.
Ăна тытса чарма ан пул:
Ут мар, ун çук йĕвенĕ.

Рабфак, студент пӳлĕмĕсем,
Колхоз е çар, е цех —
Вулаççĕ тутине пĕлсе:
«Поэтăмăр — эсех!»

Эй, сăвăç юлашки самант,
Курок туртас чухне,
Пĕлсенччĕ мĕнешкел савма
Эпир пултарнине!

Ăна савма, ăна, ăна,
Тек никама та мар!
Тен, сулĕччĕ алпа кăна,
Тен, тумĕччĕ тип шар.

Пĕччен пăлан пек мĕкĕрсе
Вăл чĕннĕ такама.
Пĕри илтмен-тĕр, теприсем —
Илтсен те ăнланман...

**9**

Çул хыççăн çул... Пĕрремĕш сьезд
Пуçтарчĕ пур вăя пĕрле.
Совет культури — пĕр экспресс,
Малашлăха юртса кĕрлет.

Литература — аслă вăй,
Ялан вăл — çав экспресăн пуçĕ.
Пĕр пăравусĕ — Горький хăй,
Тепри ун Маяковский пулчĕ.

Çывăхарсах килет инçет.
Хаш-хаш вучах вĕри хĕлхемлĕ:
Ик пăравус çаплах вĕçет,
Вĕсен сасси — тĕнче илтмелĕх.

Нумай чĕлхеллĕ мăн хорта
Эп те пĕр пĕчĕк сас пулсассăн,
Паян эп уççăн палăртап:
Вăл — Маяковский лартнă сассăм.

Тикĕтлемен кусатăран
Хайрăлнă пек эп сывă марччĕ:
Тытăнкалан, хăйăлтатан
Вăл — çăмарта пек уçăлтарчĕ.

Ăна куçарнă хушăра
Эп пурнăç таппине ăнкартăм;
Çĕршыв ĕçне, пур йывăра
Йăтса пымаллине ăнлантăм.

Вăл Пушкинпа Лев Толстоя
Ӳстернĕ çĕр çинче çĕкленнĕ
Патвар юман пек: çак вăя
Çын тусĕ — Горький пехилленĕ.

Вăл — вырăс ăсĕн çĕнĕлле
Хăпарнă ирĕклĕ хăвачĕ.
Тен, çавăнпах хăй çинелле
Вăл пур халăхсене пăхтарчĕ.

**10**

Хĕлле. Российăн Пушкинсăр çĕр çулĕ.
Российăн, Грузин, Францин те... — тĕнчен!
Колонлă зал час пирĕнпе ак тулĕ,
Пуçтарăнатпăр тĕрлĕ çĕрсенчен.

Этемлĕх генине — чĕре хисепĕ.
Кĕç янрĕ вăл вуншар чĕлхепелен.
«Онегин» сыпăкне вуласшăн эпĕ.
Вуларăм та. Халь урăххи çинчен.

Шăп çавăн чух Орджоникидзе вилчĕ,
Поэзин Пушкин уявне вара
Пăртак кайран уçмашкăн тӳрĕ килчĕ.
Мĕнпурĕ пултăмăр пытарура.

Тăратпăр. Хĕрлĕ площадь. Хура хурлăх.
Ак кăшт пасарнă Мавзолей çинчен
Сăмах анать те — йышлă халăх урлă
Чан çапнăн янраса каять инçе.

Тупа итленĕ пек итлетпĕр. Пур-тăр
Кашнин çакна пуссах каламалли:
«Ан тив, пире пĕр палăк евĕр пултăр
Кĕрешӳре çĕклен социализм...»

Поэтăн сарлака, тулли сăмахĕ
Çав вырăнтан çапла янранине
Илтсе юлман пулсассăн, тен чăнах эп
Пĕлместĕп пуль поэзи мĕскерне.

Вăл темĕнле этемле мар хăватăн
Чĕтрентерсе çĕклерĕ ман ӳте.
Каллех ăна курнишĕн хаваслантăм,
Курнишĕн те, сăмах хушнишĕн те.

Унпа пăр кĕрешӳ çынни пулнишĕн,
Пĕр ĕмĕт-шухăшпа хавхаланса,
Поэзи çарĕнчех вăрçма юлнишĕн —
Эп савăнтăм нихçан та манмасса.

Ан тив, эп рядовой кăна пулам та,
Кун пек çар пуçĕ пур çинче мана
Поэт тени вăл — чыс тесе мухтантăм...
Çапла вĕçленнĕччĕ пĕр самана.

1958

# РАÇÇЕЙĔМ

## 1

Буря мглою небо кроет...
*А. Пушкин*

Раççейĕм Пушкинран пуçланчĕ.
Хĕлле пĕр хутлă чӳрече
Шур илнĕ куç пек шуралсассăн,
Чăпта сăрса ашăклаттарнă,
Шалтан пас тытнă алăка
Уçмассерен сип-сивĕ сывлăш
Йăсăрланса пӳрте кĕрсессĕн,
Юр пуснă улăм пӳрт çинчен
Аран курăнакан мăрье
Çил ачисем йĕртсе ларуçăн, —
Таçта çав хăтсăр сивĕрен,
Сăлпăрантан, пăртан-шутран
Алмаз пек ялтăркка, таса,
Янравлă юрă туса хунă
Ăста пурăннине сисеттĕм...
Сĕм-тĕттĕм, кутсăр-пуçсăр çиллĕ,
Çуран тăманлă каçсенче
Çулти этем аташасран
Чиркӳ хуралĕ чан çапатчĕ:
Чи пысăк чан сасси салхуллăн
Чĕтре-чĕтре çилпе пĕрле
Таçтах каятчĕ танлатса.
Пит йăвă мар çапать, вăраххăн —
Пĕрре, тепре... пĕр вунă хут...
Унтан кăшт тăхтаса тăрать.
Чун сӳ! тăва-тăва илетчĕ.
Тем анлăш çут çанталăкра
Этем вăй-халсăр, хӳтсĕр пек,
Аташнă чун пек туйăнатчĕ.
Чан çапнине илтсен анне —
Сӳс арласа лараканскер —
Хăш чух хăй йĕкине чарсах
Пăхса илетчĕ кантăкран,
Хаш сывласа çапла калатчĕ:
— Ах, турăçăм! Хирти этем
Маяклă çул тĕлне пулинччĕ,
Çул хыттине вăл çухатминччĕ,

Лаши-çуни пĕр çул тытинччĕ,
Турти пăявĕ татăлминччĕ...
Сĕтел çинчи кĕнекере
Шăп çавăн пек хаяр хĕлехчĕ.
Кӳмеллĕ çунапа такам
Лашисене юр аштарса
Пĕрмай каятчĕ. Вĕççĕр çухрăм
Ула-чăла юпасемпе
Юлатчĕ тăсăлса. Пĕр шухă,
Пĕр хурлă ямшăк юррине
Çын шăппăн итлесе пыратчĕ.
Ăçта каятчĕ-ши? Мĕскершĕн,
Кĕртне-юрне, çилне пăхмасăр
Вăл талпăнатчĕ малалла,
Вăл — шăрăх Африкăн чарусăр,
Сиксе вĕрен юнĕпелен
Кичемлĕ çурçĕрĕн пăрне
Ирĕлтерме пултарнăскер?
Мĕнле элчел! Мĕнле шăпа!
Ăçта каять? Ăçта пулсан та,
Эп хатĕрччĕ унпа каймашкăн:
Ун чух — Раççейĕмччĕ вăл маншăн.

**2**

Я Пушкин просто, не Мусин.
*А. Пушкин*

Ялтан пĕр вăтăр çухрăмра
Писне улпучĕ пурăнатчĕ.
Ятне-шывне астăваймастăп.
Хушаматнене те маннă ĕнтĕ,
Мана вăл мар халь кирлĕ-ха.
Анчах пĕр çĕр çул ĕлĕкрех
Писне шывне пула ят хунă
Çав вырăс ялĕ, çав Писне,
Вăл пурăннă-мĕн пăхăнса
Граф Мусин-Пушкина. Çавна,
Çав улпута аса илетчĕç
Ял-йышăмсем хаяр юмах пек.
Мĕн пулнă-ха? Улпут хресченĕ
Антон Петров пăлхав хускатнă:
Çĕр ял та пулĕ, — сенĕк, пуртă,

Чукмар е вĕрлĕк çĕклесе, —
Улпут паçмисене хăмсарнă
Çав Писнерен хыпар илтсессĕн.
«Антун çĕр чăнлăхне пĕлет,
Мăнахвисне вăл хăй вуланă,
Çĕр — хамăра! Улпут тавращшăн
Тар юхтармастпăр урăх, çитĕ!
Сан ирĕкӳ, çĕр ĕçлекен!»
　　　Çапла хавхаланса çĕкленнĕ
Çынсем уес-уесĕпе.
Апраксин генерал хăрушшăн
Пусарнă çав пăлхавăра,
Пăшалсăр çынсене вăл пенĕ
Пин-пин салтак пăшалĕпе,
Штыкпа та сăнăпа чиксе
Лаша таканĕпе таптанă.
Виле... Аманчăк... Петровне,
Судне-пуçне кĕтсе тăмасăр,
Пур халăх умĕнче вĕлернĕ.
Вĕлерессе вĕлернĕ те,
Тапраннă халăх ĕмĕтне
Вăл татайман: кĕç Лондонра
Çапа пуçланă Герцен «Чанĕ»...
　　　Ман ялăм-йышăм вуламан,
Илтмен çав «Чан» çинчен ун чух, —
Çырусăр халăх пулнă-çке.
Анчах вăл сыпăран сыппа
«Антун Петрух» çинчен калаçнă,
Хĕрхеннĕ ырă вырăса.
«Пĕр мар, атьсемĕр, вырăс та.
Улпут хресченĕсем пиртен те
Начар пурăннисем чылай:
Йытăпала та улăштарнă
Улпучĕ вĕсене, картла та
Выля-выля яни тем чухлĕ,
Качча каяс чипер хĕре те
Малтан улпут хĕве хупать-мĕн...
Антун Петрух çав мăшкăла
Тӳсме пултарайман пирки
Кунне-çулне те хĕрхенмен,
Вăл хура халăхшăн пуç хунă...»
　　　Çаплаччĕ пирĕн ял юмахĕ,
Раççей чукмарĕн пĕр сулмакĕ.

## 3

Понятна мне времен превратность.
*А. Пушкин*

Атăлпала киле пыруçăн
Миçе иртмен-ши Писнерен?
Вăл халь — Антоновкă. Хисеп
Хăюллă вырăс хресченне,
Ун ячĕ юлчĕ таврана.
Чăваш тĕнчи тĕкме çапсах
Уйăрăлман ыттисенчен.
Çĕршыв пăтрашнă, çăрăлнă,
«Хĕвел пĕрре те, çĕрĕ — ют»
Тесех тăман-тăр: Атăл тăрăх
Вылянă мул, вĕренĕ юн,
Çĕлĕкĕсем çине — мала —
Сăрланă кашăксем çыхса
Çынсем бурлак пасарне утнă:
Яшки — хуçан, хул вăйĕ — санăн,
Туртатăн кимĕ кĕрĕшсе...
Çав Писнерен инçе те мар
Пур тетчĕç эп астăвасса
Пĕр пĕчĕкçеççĕ вырăс ялĕ;
Ун улпутне асăнатчĕç,
Вăл пулнă, имĕш Арăстух,
Мĕнле-ши тĕрĕсрех — пĕлместĕп.
Паллах, ăна эп кураймарăм.
Анчах ман йышлă йăхăмри
Пуçтах ватсем, хивре чĕлхеллĕ
Ĕмĕртенхи лĕкĕртисем,
Кĕрекере хĕрсе çитсессĕн:
«Çав Арăстух хăта патне
Тепре кайса ĕçсен пыратчĕ!» —
Тесе шӳтлетчĕç хушăран.
«Мĕнле хăта? Улпут хăта-и?..»
Вара пуçлатчĕç йĕркипе:
«Ара, эсир курман, пĕлместĕр,
Эпир те халь аран-аран,
Асаттесем каланипе
Асра тытатпăр çаксене —
Майра-çке пирĕн асаннемĕр!
Ăру ами, кил-вут хĕрт-сурчĕ,

Вăл — Арăстух улпут таврашĕн
Çĕр ĕçлекен çыннисенчен.
Çĕртен иртсе вăл пурăнчĕ
Тесе пуплетчĕç ваттисем, —
Йăлт манчĕ вырăс туррине,
Йăлисене те чĕлхине:
Сурпан вăл сырăна пуçларĕ,
Чӳклерĕ чӳк хăй йĕркипе,
Шыв пек пуплерĕ чăвашла...»
    Раççейĕм — тупмалли юмах,
Асамлă, куç пăван хăват!
Ăçтан тупас сан тупсăмна?
Мĕнле сана ăнланмалла?..
    Тавах майра асаннене!
Пуçтах чăваш, тĕнче ухтармăш,
Çитсе кĕрет те Хусана,
Вăрах тăрать-и вăл, сахал-и,
Телейлĕ-и, телейсĕр-и, —
Вăлтса илет çав пикене,
Çав Арăстух çыннин хĕрне,
Килет унпа чăваш ялне.
«Хусан çынни» те «хусансем»
Тее пуçлаççĕ хайхине.
Хушаматланнă та вара вăл
Çырма тапратнă вырăсла:
Казанковсен ратти пуçланнă,
Кайран вăл тулнă çур яла.
Эп, хамăр Çеçпĕл калашле,
«Чăваш тĕнчи çывхарнă чух»
Çав вырăсла хушамата
Чăвашлатмашкăн шухăш тытрăм
Тымарĕ, кăкĕ — киввиех...
Раççейĕм умĕнче ман парăм:
Хăçан сăнланĕ çав хĕрарăм?

**4**

Дела давно минувших дней...
*А. Пушкин*

Мĕнле-ши эсĕ, асаннемĕр?
Яту та çук, сăну та çук,
Вил тăприне те çын пĕлмест.

Патша династи мар çав, пĕр-пĕр
Кăптăрмăшрах улпут та мар.
Çĕр ĕçлекенĕн хĕрĕ эсĕ,
Çакланнă имĕш Хусана,
Улпут майри умĕнче тăнă
Хĕр тарçă пуççăн, тĕкĕр пек
Пăхса тинкернĕ пикӳне.
Пăрчăканлах вăр-вар эс пулнă,
Мĕн хушнă — тунă çунтарса.
Анчах чун пăччăн туйăннă,
Вăл туртăннă ирĕкелле.
Кăвак куçпа, кăлкан çӳçпе
Пĕрре эс тухнă пахчана,
Тĕл пулнă ху пек мар хура,
Кăтра та вашават качча.
Вăл вырăсла кăшт перкелешнĕ,
Çăпата мар-мĕн уринче,
Йӳнни пулин те — сăран атă,
Тĕрленĕ кĕпи çиййĕн уртнă
Хула пуставĕнчен çĕлетнĕ
Пĕрмеллĕ вырăсла сăхман.
Хусан хуçи пулма мул çук,
Хуçа тарçи пулма — пит хурлăх...
Куç хывнă та сана çав каччă,
Тăр-тăр чĕтĕресе çӳçеннĕ:
Кăвак куçу, юхан шыври
Çавăрăнса тăракан авăр,
Асамлă авăр, тĕпсĕр авăр
Пулса, ăна турта пуçланă.
«Путсан — путам, пĕтсен — пĕтем!» —
Тесе вăл шухăшланă та
Сăмах хушма хăю çитернĕ.
Мĕн илтнĕ эс çав сасăра?
Мĕн курнă унăн кăмрăк пек
Тăрăхларах куçĕсенче? —
Ăçтан пĕлес ман халь ăна!
　　Пăрахутсем те çӳремен-тĕр,
Пулман та пулĕ-ха вĕсем,
Хывăнайман-тăр чугун çул та,
Çапах пĕр тĕттĕм каç пĕр мăшăр —
Чипер утпа-и, çуранах-и —
Шап-шур хӳмеллĕ Хусантан
Тухса çухалнă. Туп, шыра!

Мĕн туртнă-ши çав чăваша
Хура пӳртсемлĕ хăй ялне?
Мĕн çухатса, вăл мĕн шыранă?
Мĕн шыраса эс, асаннемĕр,
Хула пики пуçупала
Таçти çав кĕрĕм шăтăкне,
Сĕм вăрманти Сиктĕрмене,
Çав кисреметçĕсем патне
Пырса кĕмешкĕн кăмăл тунă? —
Ăçтан пĕлес халь ман ăна!
«Пиртен вăйли те пур пирте» —
Тесе калаççĕ чăвашсем...
　　«Хĕве хупсассăн — хĕрĕх çуллăх.
Выртатăр иккĕн — виççĕн тăрăр!..»
Илемлĕ ывăлсем, хĕрсем
Çуратнă кĕçĕн çын, майра,
Ăру юнне çĕнетсе янă.
Ун сарлака хысанине
Тĕреклĕ тунă çут çанталăк,
Ун тав курки пек кăкăрĕ
Çул сиктерсе паха сĕтпе,
Сипетлĕ сĕтпе карăннă.
Çĕртен иртсе вăл пурăнса
Алла çывхариччен çуратнă.
Кăвак куçли, кăлкан çӳçли те
Курăнкаланă çуратуçăн:
Каярахпа çурма чăваш,
Çурма славян юнлăскерсем
Кăшт тĕксĕмленнĕ, хăмăрланнă.
Шултра, хĕрӳ хевтеллĕ йыш
Ĕрчетнĕ ырă мăшăр пилĕ:
Сухаçăсем, сунарçăсем,
Каскалакан ăста çынсем,
Салтак çăкри çиме тивсен —
Патвар, яштак кăрнатирсем.
Шăпăрçăсем, юр ăстисем —
Такам та тухнă йăхăмран...
　　Майра пикемĕр, асаннемĕр!
Сан сиплĕ, канăççăр юну
Манра пĕр-ик тумлам çӳрет-ши?
Ăçтан пĕлес! — Кăвак тӳпе пек
Кăвак куçу мана çити
Йăлт ирĕлсе пĕтнĕ пулин те,

Юну çук мар-тăр чĕремре.
Тен, çав хистет-тĕр кунĕн-çĕрĕн
Çула тухма, пур таврана,
Пур аслă çут çанталăка —
Çĕрти-çӳлти йăлтах — пурне те
Пурăннăçемĕн ытларах
Курасшăн хыпăнса çунма...
    Эй, ятсăр вырăс сар пики!
Сана чĕртме пултарасла
Чи хӳхĕм те чи çепĕç юрă
Юрласшăн ăнтăлаттăм ĕмĕр:
Эс те — Раççейĕм, асаннемĕр!

**5**

Под небом Африки моей...
*А. Пушкин*

Пĕр сăн ӳкерчĕке пăхатăп.
Пурин те асра юлнă, паллă.
Хăй аллă саккăрмĕш çулхи
Уяр тӳпеллĕ Ташкентра
Ӳкернĕччĕ иккен ăна.
Çав кунсенче кирек ăçта та
Пур чĕлхепе те ик сăмах
Янратчĕ: А з и, А ф р и к ă.
Ӳкерчĕкĕм çапла упраннă:
Виç халăхăн виç çыравçи
Кулса тăраççĕ юнашар —
Тутар юлташăм Афзал Шамов,
Эп хам тата пĕр негр ачи.
Ачах та мар та, хамăрпа
Танлаштарсан ик хут вăл çамрăк,
Каçартăрах, вулас пулсассăн
Ятне те лайăх астăватăп,
Хушаматне те. Ăслă, вирлĕ
Сăмах каларĕ вăл ун чух.
Ăна ура тăрса ал çупрĕç.
Эп каласси ку марччĕ-ха.
Тен, сых ятне халь вăл камне
Каламанни те юрăхлă...
Пĕрне-пĕри кĕнекесем
Парнелесе унпа пăртак

Сăмахламашкăн тиврĕ манăн.
Сăнне шăп çавăн чух ӳкернĕ.
Эпир, тем майăн, Пушкина
Аса илсе калаçрăмăр.
«Эсир телейлĕ, — терĕ вăл, —
Çав негр юнлă поэта
Хăй çырнă пек вула пĕлетĕр,
Эп — французла кăна вуланă.
Пире вăл çывăх хурăнташ-çке,
Хăйне хăй Африка çынни тет.
Унпа саккунлă мухтанатпăр:
— Начар юнах памарăм пулĕ! —
Теме çĕршывăм пултарать.
Ăна хăйне вуласшăнах
Ман вĕренесчĕ вырăсла.
Эсир телейлĕ, раççейсем!..»
    Çав негр тусăма ун чух
Парсаттăм эпĕ «Горкăри çурт» —
Пĕр пĕчĕкçеççĕ кĕнеке.
Тăлмач ăна ăнлантарсассăн,
Вăл пӳрнине çĕклерĕ: «Ленин?»
Эп пуç сĕлтейрĕм: «Ленин» — терĕм
Çын çав ята илтсессĕн, унăн
Ахаль те йăлтăр-ялтăр куçĕ
Прожектор пек çуталса кайрĕ.
Кĕнекене çав тер управлăн
Асăрханса вăл сиркелерĕ;
Унтан кăшт шухăша каçса
Тепре каларĕ шăппăн: «Ленин...»
Ăнланчĕ пуль вăл кам пире
Ытарайми çав Пушкинăн
Хĕвеллĕ, аслă тĕнчине
Кĕртме пултарнине... Раççейĕм!
Австрали, Африка е Ази —
Мĕнпурĕ халь сана шанаççĕ.

1960

## АСЛĂ ЧĔРЕ

«Чĕмпĕр. Совдеп председательне. Чăвашсен учитель семинарийĕсен председателĕсене мĕнле йĕркепе, мĕнле условире суйлани çинчен телеграфпа пĕлтерĕр. Мана Иван Яковлевич Яковлев инспекторăн — чăвашсене наци тĕлĕшпе çĕклес-сишĕн 50 çул ĕçленĕ тата патша влаçĕ хĕсĕрленине чылаях тӳссе курнă çыннăн — кун-çулĕ интереслентерет. Яковлева хăйĕн пĕтĕм пурнăçĕн ĕçĕнчен уйăрас пулмасть тесе шутлатăп. Халăх Комиссарĕсен Канашĕн председателĕ *Ленин*».

Ленин чĕри, шухăшĕ пекех, аслă пулнă.

*Клара Цеткин*

Революци ĕнтĕ пулнă
Таçта шавлă Питĕрте.
Хăш çĕрте кая вăл юлнă,
Хăш çĕрте тин çеç иртет.

Пысăк-çке Раççей çĕршывĕ!
Улахрах шыв куринче
Кив карап юласшĕн сывă
Çил-тăвăл лăпланиччен.

«Пăтăрмах пăтрав пек уртăр, —
Пулкаланă ун пекки!
Ну, Керенский тарнă пултăр,
Шаннă пултăр ун пăкки.

Çул ыттин те пулмĕ такăр,
Пит тухаймĕç çиеле.
Тӳсмелле пулать кăшт, ахăр,
Раççейре вăл — Раççейлех.

Лев Толстой граф пуçĕпе те
Мĕн хăтланчĕ те ара!..
Пулĕ шăрăх та, йĕпе те,
Выçлăх, мур йĕри-тавра.

Çĕтĕкпе çӳресе курăн, —
Хальлĕхе йĕп тыт, сапла.
Çавăн пек мехелĕ туррăн,
Самана палли çапла...»

Çавнашкал йăпанкаланă
Сехĕрленнĕ кив тĕнче.
Революци шуххăн, анлăн
Утăмланă çĕр çинче.

Чарăну пулмасть. Ав Ленин
Куçнă теççĕ Мускава.
Çав хыпар çитсе çĕкленĕ
Чĕмпĕрти Яковлева.

Иван Яковлевич пулнă
Çитмĕл çул тултарнă çын.
Хăш-пĕр тусĕ-йышĕ шунă —
Тарнă ĕнтĕ. Тарĕçин!

Кайччăр. Умĕсенчен хыçĕ!
Йывăр имĕш? Çăмăл мар.
Чăвашсем вĕлермĕç выçă, —
Вăл вĕсемшĕн тăкнă тар.

«Кам вара эп: пуп тавраш-и,
Çĕр улпучĕ те тарма? —
Тет хăйне вăл. — Кăларасшăн
Эп çутта халăхăма.

Шăп ак аллă çул хисепĕ
Лăш курмасăр тăрăшап.
Кирлĕ мар-им ĕнтĕ эпĕ
Ку чухне хам чăваша?

Совет влаçĕ туса хучĕ
Семинари шкулăмран.
Халь — эп мар тет унăн пуçĕ:
Çитрĕ хут комиссартан.

Чăвашсем хăйсем пăтратнă,
Элекленĕ те, куран.
Мĕн тăвайăн-ха, мăнтарăн.
Шăлсăрланнă арăслан?

Чухласах пĕтерейместĕп:
Хам вĕрентнĕ ача-пча
Хама хирĕç. «Ватă эсĕ!» — тет
Пĕр вунсаккăрти ача.

«Кивĕ!» — тесшĕн хăй, мошенник,
Куçĕнчен пăхсах пĕлеп.
Чи ăста вĕренекенĕм...
Ак, этăк-итак, епле!

Вырăсран уйрăлассишĕн
Калаçаççĕ тет иккен.
Вырăс — тинĕс! Епле ишĕ
Пирĕн кимĕ пĕр-пĕччен?

Уйрăлсан ăçта каяс-ха?
Ун çинчен шутларăр-и?
Е эпир пĕр-пĕр Аляска?
Çук, эпир — Раççей варри.

Шăв та шав ялан, кĕр те кĕр...
Тен, Тургенев калашле,
«Ашшĕсемпе ачисем-тĕр»,
Çав чăрмав-тăр малашне?

«Парти, парти» текелеççĕ,
Хăйсем пурте ман шкултан —
Тĕрлĕ партишĕн кĕрлеççĕ:
Большевик, эсер... ăнлан!

Манăн ĕмĕрех пĕр парти:
Пур Раççей тата чăваш.
Аллă çул умра шкул партти.
Аллă çул... Мĕнле малаш?

Алексей Иванăч, ывăл,
Вăл та акă хĕрĕхре.
Хальлĕхе сывах-ха, сывă...
Мускава чĕнет пире.

Тымара çăлмашкăн йывăр,
Ыратать-çке, Леля, пит!
Сирĕн ĕнтĕ хăвăр йышăр,
Урăх аршăн, урăх шит.

Аслă вырăн, аслă ирĕк
Сĕнчĕç ĕлĕк те. Çавах
Шӳтлесех юлмашкăн тиврĕ:
Кайăкне кура йăва.

Питĕр те мана чĕнетчĕ,
Мускавран та пулчĕ сас.
Çак асран тухма пĕлместчĕ:
Чăвашсемсĕр мĕн тăвас?

Эп хура пӳртре çуралнă,
Вăйăм-халăм пĕтиччен —
Çав пӳртсем ĕнтĕ çуталнă
Тенине илтесшĕнччĕ.

Эп çĕртен пуçларăм, ыльăм,
Тăпраран, çăпатаран.
Кушкă пулчĕ ман Афинăм,
Пантеонăм — Чĕмпĕр ман...»

Ват инспектор кантăк витĕр
Пăхрĕ шкулăн картишне.
Ав ун юлашки йăви те,
Хатĕрленĕ сых ятне.

Иккĕшин валли те тунă,
Çавăрса çитернĕ шеп:
Хăй виçсе алттарса хунă
Цементланă ирĕк склеп.

Кам çак пурăнăç сĕткенĕ
Типиччен хăйне çапла
Чыслă вырăн хатĕрленĕ —
Çав ӳпкевсĕр пулмалла.

Камăн ĕмĕрлĕх кил-çурчĕ
Курăнать куç хупиччен,
Кам ăна кĕрсе те курчĕ —
Çав телейлĕ çĕр çинче...

— Кăшт тухса çӳрем-ха, амăш, —
Терĕ вăл хăй мăшăрне...
Ăшă çил вĕрет вăш та вăш,
Ăсатса Сĕве пăрне.

Ачасем кăшкăрашаççĕ
Çывăхри çыр хĕрринче.
Кураксем кăраклашаççĕ
Çӳçепе тирек çинче.

Шур сухаллă, шĕлепкеллĕ
Çын утать туяланса.
Илĕртет апрель хĕвелĕ,
Канăç çук хастар ăса.

Çуркунне! Тем астутарчĕ:
Илья Николаич ... Ун
Кĕçĕн ывăлĕ çуралчĕ
Çакăн пек пĕр ăшă кун.

Мункунчченччĕ-ши? Çапла тăр.
Аллă çул та пуль калла...
Аллă мар-ха, хĕрĕх саккăр...
Чăп: шăп çак вăхăталла.

«Çав Владимир, çав Ульянов
Ӳсрĕ куçăм умĕнче.
Халь вăл — Ленин! Кам шутланă? —
Тет старик хăй ăшĕнче. —

Мускава вăл куçнă теççĕ.
Питĕрте те ывăл ман,
Мускавра та... Тен, пĕлеççĕ,
Тен, пĕрне-пĕри манман?

Ашшĕ-амăшне пăхсассăн
Ырă кăмăллă пуль теп.
Пит сăпайлăн та йăвашшăн
Астăватăп ăна эп.

Ашшĕ куç хупсан та пычĕ
Чи малтан вăл ман пата,
Пиччĕшне çаксан та... Килчĕ
Хĕн курма ăна пайтах...

Ачаран вăл пит ĕçченччĕ,
Пулăшатчĕ амăшне.
Пĕр арçын юлса, пĕчченçĕ
Чун кӳртетчĕ кил-йышне.

Халь — патшалăх пуçĕ пулчĕ,
Ав мĕн майлă самана!
Курманни чылай çул тулчĕ,
Астăвать-ши вăл мана?

Вăтăр çул та иртрĕ пулĕ...
Ашшĕ тусăм пулнă та,
Урăхла пуль çав кун-çулĕ
Çамрăксен ку яхăнта.

Хăй яшах та мар та ĕнтĕ...
Хам чăваш ĕçĕпеле
Сĕкĕнес пулсассăн тем тет?
Мехелне те пĕлмелле...

Ывăла çырса ярсассăн
Шыраса вăл тупĕ тен...»
Ватă çын сывларĕ ассăн
Пĕтĕм кăкăр тĕпĕнчен.

Çав кунах — чунтан курасшăн,
Калаçасшăн чĕререн —
Çырупа пĕлтерчĕ ашшĕ
Ывăлне инкек çинчен.

Аслă ывăлĕ — профессор —
Мускавра, Волхонкăра,
Пит ăна-кăна пĕлмесĕр,
Пурăнать çав хушăра.

Çыруне илсен вăл курчĕ:
Ашшĕне асап чăнах.
Кремĕлтен пит çывăх çурчĕ,
«Кайăп, — терĕ, — ыранах...»

Ак хайхи манми апрелĕн
Çиррĕммĕш кунне, ирпе,
Алексей Иванăч меллĕн
Тухрĕ хăйĕн еккипе.

Голофтеев хуçа килĕ
Пăхса юлчĕ хыçĕнчен:
Çавăнта хваттер вăл илнĕ,
Хуçи тарнă пуль унччен.

Ав историк çав иркӳлĕм,
Çав вунсаккăрмĕш çулта,
Нихăçан манмаслăх ӳлĕм
Кремĕле иккен утать.

Хăвăртрах çитсе кĕретĕн
Халăх Комиссарĕсен
Канашне. Анчах черет-мĕн,
Питĕ йышлă кĕтекен.

Председателе курасшăн
Пурте кирлĕ ĕçпеле.
Çук, профессор, тăхтаймастăн:
Лекцие ĕлкĕрмелле.

Яковлев çырса хăварчĕ
Ленина пĕр пĕчĕк хут,
Ун секретарьне тыттарчĕ:
«Килĕп, — терĕ, — тепĕр хут».

Иван Яковлевич терчĕ
Мĕнлине çырса кĕскен,
Ильича аса илтерчĕ
Ал пусса вăл хăй çинчен.

Вăхăт пур-ха кăшт. Уттарчĕ
Вăл хваттерĕ патнелле.
Кĕчĕ çех — шăлт-шалт тутарчĕ
Темле çын кĕлипеле.

Кивĕрех салтак пушмакĕ,
Шупкарах обмоткăпа,
Френч пекки... Чăнах салтак-и
Е ахаль вăл çав тумпа?

Тинкерсе хуçи сăнарĕ,
Хăнăхсассăн куçĕсем:
— Половинкин, эсир мар-и?
— Эпĕ, — терĕ леш этем.

Половинкин пурăнатчĕ
Голофтеев çуртĕнчех.
Таçта, тем ĕçре тăратчĕ, —
Калаçмастчĕ-ха питех.

Халь профессора кĕтет-мĕн
Шарламасăр кил-йышне;
Ак утса кĕрет йĕркеллĕн
Унпала кабинетне:

— Каçарсамăр-ха тархасшăн,
Эпĕ Ленин патĕнчен,
Хушрĕ вăл çыхăнтармашкăн
Халь сире хăйĕнпелен.

Шăнкăртаттармашкăн ыйтрĕ,
Эп чĕнем-ха номĕрне... —
Алексей Иванăч тытрĕ
Телефонĕн кĕпçине.

Вăйпитти хăй, ача ашшĕ,
Хăй — итлерĕ пăлханса.
Акă кăмăллă та ăшă,
Тахçанах паллană сас:

— Алексей Иванч! Каçарăр, —
Чăрмантартăм пулĕ теп.
Тен, халех килме пултарăр?
Сире кӳртĕç... Эп кĕтеп... —

Хăвăрт таврăнчĕ профессор, —
Сисеймерĕ çитнине.
Кремĕлте черет кĕтмесĕр,
Кĕчĕ вăл Ильич патне.

Темĕскер Ильич çыратчĕ
Хăй сĕтелĕ хушшинче.
Курчĕ. Тăчĕ. Алă пачĕ,
Йăл кулса пур чунĕнчен.

Хăмăр куçĕ йăлтăр-ялтăр
Ялкăшать, çиçет ăшшăн:
— Мĕн тăвам? Тума эп хатĕр
Иван Яковлевичшăн. —

Пуç тайса, профессора вăл
Лартрĕ хăйĕн çывăхне;
Куçĕнчен пăхса пит хапăл
Шăп итлерĕ сăмахне.

Ĕç çинчен ыйтса тĕпчерĕ,
Академиксем çинчен...
— Çăмăл мар-ха, йывăр, — терĕ, —
Сывлăш çавăрăпăр тен...

Мир ал пусрăмăр. Мĕн калĕ...
Пин çулхи кив кирĕке
Тасатать истори халĕ,
Хăвăр та историк-çке.

Ахăрнех хальччен пулманччĕ
Кун пекки, астăвăр-ха?
Чăн истори тин пуçланчĕ,
Ку хускав — вăрахлăха... —

Чĕмпĕре вăл асăнсассăн,
Шухăша кайса пăртак,
Сывласа илейрĕ ассăн:
«Тен, курнăçаймăпăр та...

Пăр тапраннă пулĕ ĕнтĕ
Атăлта та Сĕвере...
Çĕр çинче ăçта çитсен те
Чун туртать çав Чĕмпĕре».

Ун çуралнă кунĕ акă
Ырантан тепĕр кунне:
Тултарать вăл хĕрĕх саккăр.
Тахçанхи кĕрет чунне.

— Çавăнтах, эппин, хисеплĕ
Сирĕн аçăр, çав çуртрах?
Ĕçлесех тесен — тĕреклĕ
Пулĕ-ха çулне кура?

Сывлăх сунăр... — Ленин илчĕ
Председатель блокнотне,
Хăй аллипеле вăл çырчĕ
Телеграмма ун çине.

Вуласа хăех кăтартрĕ
Йăл кулса вара унтан,
Кĕтессе вăл çырса лартрĕ:
«Ярса парăр хам шутран».

«Хам шутран». Епле вăл çывăх
Курнă çав «чăваш ĕçне»!
Мĕн тери сăпайлă çынлăх
Вырăнаçнă чĕрине!

Чĕмпĕре вара — Совдепăн
Председателĕ патне —
Шаклаттарчĕ морзе шăппăн
Аслă Ленин сăмахне.

Кам пĕлмест, кам вуламанччĕ
Халиччен çав сăмаха?
Вăл юмах пулса саланчĕ
Чăвашра яланлăха.

Улăп вăйлăн та асамлăн
Хушрĕ вăл пире çунат.
Нихăçан ăна манаймăн,
Юррăн кĕчĕ вăл чуна.

Калаçать сурпанлă карчăк,
Кĕреке ватти пуплет:
Ленин! Çав пире хăтарчĕ.
Çавăнтан килет тивлет.

Ленин! Çав пĕлтерчĕ мар-и
Çĕнĕ пурнăç тутине?
Ленин! Çав сӳнме памарĕ
Пирĕн йăлтăр çутине:

— Иван Якăльча ан тивĕр! —
Терĕ тĕрлĕ пуçтаха, —
Патша чух вăл тӳснĕ йывăр,
Ырă тунă халăха. —

Кушкăсем Якку Иванĕ,
Яту юлчĕ тĕнчере.
Ленин пулчĕ упраканĕ,
Тав ăна мĕн ĕмĕре!»

Тĕрлĕ кĕвĕллĕ çав сасă
Сарăлать ламран лама.
Лăпланать вăл касă-касă
Çĕнĕрен амаланма.

Юмахри пĕр Феникс кайăк
Хыпса çуннă та кайран
Кĕлĕнчен чĕрĕлсе кайнă.
Эпир çав кайăкпа тан.

Пире вут тĕртнĕ, çунтарнă
Вĕçтерес тесе кĕле.
Çĕнĕрен эпир çуралнă
Революципе пĕрле.

Ним инкекĕ, ним амакĕ
Сарăплаймĕ тек ку чух:
Аслă Ленин чăн сăмахĕ
Нихăçан та сӳнес çук...

Чĕмпĕрте, пăрсем кайсассăн,
Çав вунсаккăрмĕш çулта
Сывах мар ват çын хавассăн
Сывласа ярать шкулта.

Ун килне пĕр ир хай çут ĕç
Комиссарĕ патĕнчен
Урăхла пакет ак кӳчĕç,
Хут чĕтрет ун аллинче.

Куçлăхне часрах çаклатрĕ,
Таянса выртса вулать,
Хăй сисмесĕрех ахлатрĕ,
Кĕç йăл-йăл кула пуçлать.

Пĕлчĕ: килнĕ телеграмма,
Ленин кĕнĕ ун хутне.
Халатне пĕркенчĕ. — Мама! —
Чĕнчĕ хăйĕн карчăкне.

Тăчĕ, утрĕ, ним пулманнăн,
Мăшăрĕн пӳлĕмнелле:
— Мама! Ак хайхи Ульянов!
Савăнăç пире, телей!

Астăвать, манман Владимир —
Тусăн кĕçĕн ывăлĕ.
Халь пире никам та тивмĕ,
Пĕтмĕ ĕмĕр ĕçĕ-хĕлĕ!

— Пит аван. Анчах эс ырнă,
Ан хускат ытлах хăвна, —
Тет хуллен Екатерина
Алексеевна ăна.

— Ырнă пуль, çапла пуль, ахăр, —
Тет старик куçне шăлса, —
Ĕçлесси нумай та мар-тăр,
Канлĕх пулĕ, иçмасса.

Тăрмашатăп пит вăрах-мĕн,
Кам пĕлет: тен, аташап...
Ну, Володя... вăл пăрахмĕ,
Вăл пăрахмĕ чăваша! —

Классене тухса кĕресшĕн
Ватă çын ăшталанать.
Тен, хыпар вăл пĕлтересшĕн,
Систермесĕр тумланать.

Аллă çул авал тĕлленнĕ
Тĕлĕк çаврăнтăр чăна.
Яш Володя пулчĕ Ленин,
Алă пачĕ-çке ăна!..

Пăлтăрне вăл тухнă хушă
Курчĕ акă халь татах:
Пĕр шăхличĕ, вăрăм пушă,
Хуçса хунă çăпата,

Шĕшлине те чиксе лартнă
Сарă пушăт хушшине.
Тахçанах, тахçан вăл çакнă
Асăнмалăх çаксене...

Вăл кĕтӳçĕ пулнă мар-и?!
Ах, пайтах унтан вара
Пĕлĕш-тантăша хупларĕ
Тарават хура тăпра!

Çăмăл мар сĕтĕрмешкĕн
Вăрăм пушă кунĕпе:
Шăрăх, çумăр... лӳшкенетĕн,
Çăпату-чăлху йĕпе.

Ют турам вăл питĕ йӳçĕ,
Эс ăна çăтса пăх-ха!
Унтанпа... — каллех кĕтӳçĕ,
Урăхла кĕтӳçĕ халь...

Ку тата йывăртарах-мĕн,
Вутсăр вут хыпать ăша...
Ленин, Ленин... Вăл пăрахмĕ,
Вăл пăрахмĕ чăваша...

Шур сухаллă, шĕлепкеллĕ
Çын тухать туяланса.
Уйрăмах вăл халь тирпейлĕ
Çутă куçĕ тап-таса.

1960

## УПА ЭРХИПĔ

*В.А. Долгова*

Ваттисем кайсах пыраççĕ:
Нумаях пулмасть кăçал
Вилчĕ пирĕн пĕр сунарçă,
Хурланса пытарчĕ ял.

Ял илемĕ те ял чунĕ
Катăлать-çке çынсерен.
Вăрăм-и, кĕске-и кунĕ,
Çын тени — кашни пĕрре.

Хисепреччĕ вăл, мăнтарăн,
Кӳрĕш-кӳп кĕрекинче.
Упана çĕнме пултарнă
Кĕрешсе пĕррехинче!

Ахаль мар У п а  Э р х и п ĕ
Тенĕ ячĕ юлчĕ халь.
Вăйлă, шăнăрлă, хĕрхи пек
Çивĕч куçлă çынччĕ-ха.

Астуса тăраççĕ пурте:
Хăмăр кĕрĕклĕ упа
Кĕр енне çав çул шар курчĕ
Тытăçса сунарçăпа.

Пуçтахран-и, чухлайман-и
Е вăл шаннă хăй вăйне —

Пынă кĕнĕ утаманĕ
Кăнтăрлах чăваш ялне.

Ял-йышсем, паллах, хускалнă,
Ун пекки ăçтан куран?
Хăшĕ хăвăрт ут утланнă,
Хăшĕ ыткăннă çуран.

Килте пĕр сунарçă илтнĕ,
Авăрланă пăшалне.
Ну Эрхип пичче те илнĕ
Хăйĕн ик кĕпçеллине.

Хупăрлас шут тытнă халăх,
Лешĕ сикнĕ — хурлăха:
Ялтан тухнă та — хăй майлă
Ластăртатнă улăха.

Утлисем хыçран чуптарнă,
Пăшалпа перкеличчен
Пĕр утне упи хăй чарнă —
Янă тытнă хӳринчен.

Ярса тытнă та суллать тет.
Утпаскер Эрхип пичче
«Ку апла-çке!» — тет, анать те
Уттарать çуран, пĕччен.

Курчĕ леш, чĕвен çĕкленчĕ,
Хирĕç утрĕ çын патне.
Сунарçи тĕллерĕ, печĕ —
Са пулмарĕ. Ку мĕн, э?

Чăхăмларĕ-çке пăшалĕ.
Çитрĕ, тытрĕ те упа —
Ыталарĕ: çын вăй-халĕ
Тăрмаша пуçлать унпа.

Лутăркать, авать леш, каскăн.
Çын пăшалĕ — çĕр çинче.
Кинжалне ярса тытасшăн
Хăтланать Эрхип пичче.

Лешĕ сисрĕ: пĕçĕ тăрăх
Шукалан çын аллине
Пӳрнинчен вăл çыртрĕ. Шăрăх
Килчĕ пирĕн пиччене!

Ĕрлешсе ял-йыш çывхарчĕ.
Ак хайхи упа чăл-чал
Пăхкаларĕ те чавтарчĕ.
Юнашар юхать Çавал.

Шăмпăр-шампăр кĕрсе кайрĕ,
Ишкелерĕ те çакскер
Каялла тухма шутларĕ,
Пичĕ-куçĕ пит тискер.

Çав самант çурса та ячĕ
Улăха пăшал сасси.
Ку — Эрхип пичче çаптарчĕ,
Çитрĕ ун тавăрасси.

Çырана çитсе килейрĕ
Хай упамăр йĕп-йĕпе,
Силленсе те илеймерĕ,
Тăрăнчĕ вăл сăмсипе.

Савăнса ял-йыш кĕрлерĕ,
Ак унччен те пулаймасть —
«Хур та лар-ха, тантăш!» — терĕ
Урапаллă çын, хавас.

Упана йăтса тиерĕç.
Хартлатать хура лаша.
Сунарçа лармах хистерĕç.
Ларчĕ лешĕ. Майлашать.

Пăшалне çумне тăратрĕ,
Хăй утланчĕ упине.
Шăлтăр-шăлтăр шăлтăртатрĕ
Урапа мăн çул çине.

Мăн çулпа — яла. Ал сулчĕ
Ял çынни курни-пĕри,
Çĕлĕк илчĕ, ырă сунчĕ.
Хĕпĕртет чăваш чĕри.

Ак хăçан хайхи кинжалĕ
Ĕç тупать Эрхип пиччен:
Тирне сĕвĕ те каскалĕ
Упана вăл тĕттĕмччен...

Астивмен ял-йыш юлмарĕ
Мăнтăр сиплĕ какайне.
Пĕр шăрттан пек вăл ăсатрĕ
Мускавах, ачи патне

Çавăнтан вара ял-йышĕ
Хучĕ те хайхи ята.
Шăл йĕресшĕн мар ку — чысшăн:
Упаран та вăйлă та!

Ваттисемшĕн паттăр ар çав
Шут хисепĕ пулчĕ халь:
«Ку, ара, Эрхип сунарçă
Упа тытнă çулччĕ-ха...»

Теççĕ пĕр-пĕр иртнĕ паллă
Ĕç çинчен астунă чух...
Ырă ячĕ пархатарлă,
Хăй... хăй урăх ĕнтĕ çук.

Вилчĕ терĕм малтанах эп.
Çын пĕлмест хăй шăпине,
Анчах ун тирпей сăмахĕ
Кĕмеллех çын хăлхине.

Каласа хăварнă тетчĕç
Хăйĕнне Эрхип пичче.
«Пит илемлĕ тирпейленчĕ», —
Теççĕ халĕ ял çинче.

Ак çапла ăна пытарчĕç:
Йăлине-мĕнне тусан,
Пăшалпа персе тасатрĕç
Шăтăкне пĕрре, унтан

Çӳлелле ик тапхăр печĕç —
Леш хайхи пăшалĕпех;
Пĕрер алтăр сим ĕçтерчĕç
Кашнине, каланă пек.

Вара  тин хăйне антарчĕç,
Тупăкне хурса çапсан.
Ывăçă тăпра пăрахрĕç:
Çăмăл пултăр тăпру сан!

Хăй çапла хушса хăварнă,
Çыннăн кăмăлĕ — саккун.
Маларах-и вăл, кайран-и —
Пĕрех çех килет çав кун.

Аслă-чаплă шутланатăн
Е эс кĕçĕн тĕнчере —
Хăвăнне ху çеç пурнатăн:
Çын тени — кашни пĕрре.

1961

## АННЕ

### 1

Сĕтелĕм тĕлĕнче яланлăх юлтăн.
Пуçу тавра анатрилле сурпан.
Художнике тав турăн та ыр сунтăн:
«Хам пек пуль, — терĕн, — ватă,
                    ватă ав, куран...»

Суха касси пек тарăн пĕркеленчĕк,
Çат тытнă тутуна яланхи пек.
Ик куç харши хушши раснах йĕрленчĕ, —
Унта пайтах пытарăннă инкек.

### 2

Эс кайрăн та — кил-çуртăм юлчĕ пушă.
Пĕрре кăна çĕр каçрăн çĕн килте.
Хăнăхаймасăр хăшкăлтăм пĕр хушă:
Ытла сасартăк пулчĕ! Тем кĕтеп...
Тин мар-и кӳршĕ-аршăпа эс лартăн?
Тин мар-и-ха пăлхар тусăмсене
Дунай юрри савса юрласа патăн,
Тав куркине сулса енчен енне?

**3**

Кил-çурт хӳттийĕн, ырă пирĕштийĕн
Кăштăртатса çӳреттĕн ерипе.
Пиçиххийӳ çинчи çăра уççийĕ
Хуллен ак халь те чĕлтĕртетнĕ пек...
Эс ĕçлемесĕр пурăнма пĕлмерĕн:
«Ват йывăç ларнă хальлĕнех хăрать,
Çапла вилсен аванччĕ маншăн», — терĕн.
Сар ĕмĕтӳ сан çитрĕ, ахăрах.

**4**

«Çынна йăлăхтарса епле выртайăн?
Виç кунлăх çеç пулинччĕ ман чăрмав», —
Тесе калаттăн. Виççĕмĕш кун кайрăн.
Шав çумăр çурĕ, лӳшкентерчĕ шав...
«Ыр çын вилсен ялан çапла вăл», — терĕç.
Çавна сăнанă имĕш ваттисем.
Пĕлместĕп эп: те тĕрĕс мар, те тĕрĕс,
Анчах сана начар темен çынсем.

**5**

Эп сан çулна çитеймĕп: сывлăх урăх...
Пĕртен-пĕрӳ — пулмарăм йăх асси,
Таса юнпа çуратрăн, çирĕп турăн,
Хамран килетчĕ пуль упранасси.
Хамран-ши? Ах, апла кăна пулсассăн!
Анчах çанталăк тĕрлĕ çаврăнать:
Хăш чух, ирпе хĕвел йăл-йăл кулсассăн,
Каçпа сип-сивĕ çумăр ярăнать...

**6**

Мана ырра шанми туни те пулчĕ...
Çав хурлăхлă, хĕрхӳ самантсенче
Санпа кăна ман кӳтнĕ кăмăл тулчĕ,
Санпа кăна илемлĕччĕ тĕнче.
Ялти пӳртри тĕпелччĕ-и, хула-и, —
Сан кăмăлу пĕр пекчĕ яланах.
Пусăрăнаттăмччĕ çавна пула эп,
Эмел пек сиплĕччĕ тăван сăмах.

### 7

Сăмаварна чĕртеттĕн те каçкӳлĕм —
Ларатчĕ юрласа сĕтел çинче
Кăшт калаçар-ха, — теттĕн, — тахçан ӳлĕм?
Çулу-йĕрӳ ялан çапла инçе...»
Мĕн куç пăвнă сан ывăлна çав шай?
Инçеччĕ çав, инçеччĕ, çывăх марччĕ,
Ялан вăл тăвалла тапса хăпарчĕ,
Пĕр утăм та пусмарĕ тăва май.

### 8

«Пĕрре çуралнăскер, пĕрре вилетĕн,
Анчах эс пурăна пĕл пурнăça!» —
Тесе хутран-ситрен мана питлеттĕн.
Пĕлме... пĕлме пит йывăр пулнă çав.
Те пĕлтĕм пурăнма, те пĕлеймерĕм?
Хальччен мĕскер активнĕ — йăлт паха:
Хăй майлă сиплĕ пыл, хăй майлă — эрĕм,
Тата мĕн курасси, ай, пур-ши-ха?

### 9

Тахçан ача чухнех эс вĕрентеттĕн
Сас паллисем палла пуçласанах:
«Ӳссессĕн хура халăхшăн тăр, — теттĕн, —
Çыру тесе йăхна ан мансамах».
Сана итлеттĕм ун чухне йăвашшăн,
Хура-шурра ăнланнă-ăнланман...
Мĕн те пулин тăвайрăм-ши чăвашшăн?
Ăна хăй калĕ халăхăм кайран.

### 10

Шухăшласан — шухăшăм тем чухлĕ,
Аса илсен — темĕн те асра.
Пĕр тикĕс килмесен те çын кун-çулĕ,
Чун яланах усратăрччĕ ырра.
Шăлтăртатмасăр пулмĕ чашăк-тирĕк,
Анчах ăша ан лектĕр хура юн.
Сан пек пуласчĕ тӳсĕмлĕ те çирĕп:
Хура юна çĕнтертĕр ырă чун.

**11**

Хăш чух кĕлтунă евĕр калаçаттăн:
«Çĕре кĕресчĕ куçлă та пуçлах...»
Сакăрвунна çити чĕнтĕр çыхаттăн!
Куçу сӳнмерĕ, хупăнчĕ вутлах.
Çӳçне касаттăм, чĕрнӳне иртеттĕм,
Çуса та кăлараттăм килте чух, —
Çулланнăçем илемлĕччĕ, аннеçĕм,
Сан пек никам та маншăн пулас çук.

**12**

Уявсенче икерчĕ пĕçерсессĕн
Çынна астивтереттĕн савăнса.
Салхуччĕ эс çав кун çын кĕмесессĕн:
«Килмерĕ сĕт майри те иçмасса», —
Тесе вара кӳрше кайса чĕнеттĕн,
Пĕри пулмарĕ — килтĕрччĕ тепри:
«Çатма шăрши кăлартăм та кăшт, — теттĕн, —
Çисе пăхсам ... çĕнехчĕ те çĕпри...»

**13**

Тусăмсене ятран пĕлсе тăраттăн.
Пĕр пысăк ялччĕ саншăн Шупашкар.
Митта Ваçлейĕн сăввине тăнлаттăн,
Ларса юрлаттăр иксĕр юнашар.
Ак эс те, вăл та çук ĕнтĕ. Хура çĕр
Хупларĕ те ямарĕ каялла.
Ыр сунансем сире ырах кураççĕ,
Çав сыпăнтартăр хуçăк кăмăла.

**14**

Кĕнекерен, куллен-кунхи ĕçрен те,
Тĕл пулнă çынсенчен те ывăнсан
Час-час санпа лармашкăн эп вĕрентĕм,
Сана пĕр сиктермесĕр тăнласа.
Каланине çыра-çыра пыраттăм
Кукаçейсем, кукамайсем çинчен...
Хама пĕр пысăк кил-йышра кураттăм,
Халь ак эс çук та — çав тери кичем!

**15**

Ӳстересси — ун кулленхи нуши.
Çуратасси — хĕрарăмăн телейĕ,
Ачи кам пуласса ăçтан пĕлейĕ?
«Çын пултăр», — тет сăпайлăн апăрши.
Анчах ак эп, сасртăк витĕр курнăн,
Ăнлантăм хам кун-çулăн тупсăмне:
Мана эс çын та, сăвăçă та турăн,
Ик хут сана эп парăмлă, анне!

**16**

Ӳкерчĕкӳ нумай çынна пăхтарчĕ,
Пĕри апла курать, тепри капла.
Манра анне тем чухлĕ сăн-сăпачĕ:
Расна курап кашни сăввăмпала.
Анчах сăну мĕн евĕр пайлансан та, —
Паян, ыран е ӳлĕм, малашне, —
Сана эп курăп теп кирек хăçан та
Пĕр пĕтĕм сăн — чăвашăн амăшне.

**17**

Сăпка юррипеле чĕлхе упранă,
Вăйăсенче, туйра та юпара
Пĕр савăнса, пĕр хурланса юрланă
Пин-пин анне пекех эс асăмра.
Калас килет сана: пур пек вăя та,
Чуна та — халăха эп пехиллем.
Тайма пуçа çĕре çитех таятăп,
Чĕлхемĕн амăшĕ, чăваш аннем!

1961

# ÇӐЛЕЛЛЕ

## I. Çӳлелле

Çăлтăр витĕр çул курăнать...
*Халăх юрри*

### 1

Ӳпкелеместĕп çуралманшăн
Кăшт маларах е каярах.
Çук: вăхăтлă ку тапхăр маншăн,
Тĕнче эп курнă вăхăтлах.

Çапла калаçнине эп илтнĕ:
«Çав çын таланлăскер, анчах
Ун самани — ку мар, вăл иртнĕ...»
Ку маншăн ют вара пачах.

Çакна пит лайăх ăнланатăп:
Эп «халăхсен тĕрми» текен
Патшалăхра ят хăварма та
Пултарас çукчĕ, — тек тертлен!

Этемĕн вырăнне, пĕртен-пĕр
Çак пурнăç тĕллевне пĕлме
Ĕлкĕриччен — шыври чул евĕр
Эп путатăм сĕм тĕттĕме.

Мĕн чухлĕ çамрăк та çунатлă,
Хĕвеллĕ ирĕк йыхравçи
Касаматра ĕмĕтне татнă!
Çынсем çавна манайĕç-и?

### 2

Çити-çитми пулин те çăкăр,
Усранă несĕлĕм мана.
Хама кура пурах ман çăлтăр
Тесе эп шаннă шăпана.

Хура çĕре çурса йăр та йăр
Çӳлте çут çăлтăр вĕçнĕ чух
«Ман çăлтăр тӳпере!» — çухратпăр,
Çапах — çĕртен хăпмашкăн çук.

Çĕр туртăмĕ, этем ĕç-пуçĕ
Пире çак çĕр çинчех тытать.
Автан сассиллĕ шурăмпуçĕ
Ялан чуна хавхалатать.

Пĕрпеклĕх çук, çав пит паха та:
Кун-каç, хĕл-çу... Çапла тĕнче.
Çурхи ăсан туйне саватăп
Эп йăлăмри хырлăхсенче.

Илемлĕ чечекри çаранлăх:
Уяр... юрлаççĕ шăрчăксем...
Çак çĕр çинчи мĕнпур пахалăх —
Шав пахарах, пурăннăçем.

**3**

Çăтмах пурин те мар-ха, паллă:
Пуçларăмăр аркатуран.
Анчах ыранлăха янравлă
Симфони пек вĕрет тĕп план.

Çак çĕрĕн миршĕн, пархатаршăн
Çĕнелекен пайĕсене
Куллен куратăп анлăраххăн,
Кивви куллен-кун хĕсĕнет.

Шывсен çулне улăштаратпăр,
Ватапăр ту, лартатпăр сад
Е çурт çĕклетпĕр — йăлт тăватпăр
Этем çинчен шухăшласа.

Хăйчиккипе ларса арланă
Хура пӳртсемлĕ çĕршывра
Хĕрсем машина авăрланă,
Çĕн çутă халь йĕри-тавра.

Çеçен хирте пытанчăк муллă
Кăлкан карлатчĕ ĕмĕрех, —
Çерем çĕтсе ӳстернĕ тулă
Сап-сарă ылтăн пек кĕрет.

**4**

«Ман çăлтăр тӳпере!» — çухраттăм
Ĕмĕтĕмпе вĕçе-вĕçе.

Малашлăха çул хыврĕ атом,
Тен, çăлтăр — пĕчĕк пристань çеç?

Йыхрав илтĕнчĕ. Курап эп:
Ман тăхăм (тен, ман ывăлах)
Тĕнче уçăмĕнче пырать пек
Халь йĕлтĕрпе вашлатнăнах.

Е Марс çинче, поэт каланăн,
«Этем чĕриллĕскер» пулсан?
Пĕлетĕп: вăл мана ăнланĕ
Ун чухнехи ăслайпалан.

Вăл вулама пултарĕ халь ман
Çырăнакан сăмахсене,
Вăл пĕлĕ — тундрăра та пальма
Эпир лартса ӳстернине...

Туятăп эп: этем тăванĕ
Кунта таçти инçе çĕртен
Салам ярасшăн хавхаланĕ
Çитес хаваслă ĕмĕртен...

**5**

Мĕн çӳллĕш ăсăмăр хăпарчĕ!
Мухтав: пуçланчĕ хамăрта.
Вут витĕр тухнă халăх, парти
Пĕр ăс пулса халь ăмăртать.

Мухтав: каллех Раççей тапратрĕ
Тĕнчешĕн çĕнĕ самана.
Çĕнтерчĕ ирĕк ăс хастарĕ
Пур асапа, пур нушана...

Ӳпкелеместĕп çуралманшăн
Кăшт маларах е каярах.
Çук: вăхăтлă ку тапхăр маншăн,
Тĕнче эп курнă вăхăтлах.

Телей ыйтмастăп хамшăн уйрăм:
Пур халăхпа çĕклен çурта
Эп те пĕр пĕрене, тен, хутăм,
Телейĕм пултăр çавăнта.

Ак вымпел çӳлелле çул уçрӗ.
Унта ман ӗç те пур. Пӗлеп.
Çап-çутӑ коммунизм çурӗ
Çывхарнине туятӑп эп.

1960

## II. Пуçланчӗ

### 1

Пуçланчӗ! Аслӑ пӗр уявӑн
Ялавӗсем çуталчӗç янк!
Мускавӑн, Прагӑн та Варшавӑн
Çӳрер-ха, кӑмӑл туртнӑ ямб!

Çӳрер Тиранӑн та Пекинӑн,
Шӑв-шавлӑ Лондонра кӗрлер,
Çӳрер Белградӑн та Берлинӑн,
Нью-Йоркӑн чӑтлӑхне кӗрер.

Алжир, Гавана, Дели витӗр
Çынсен сӑнне курса тухар.
Пӗр мӑшӑр куç — ӑçта ан çитӗр —
Унта ялкӑшнине курар.

Çав мӑшӑр куç — совет çыннин вӑл,
Çынни — пуриншӗн те тӑван.
Вӑл халӗ — пӗтӗм Çӗршӗн символ:
Сӑпкамӑр пирӗн — Çӗр ялан.

Мана çак хушамат Г а г а р и н
Шыраттаруçӑн рифмине
Этемлӗх ӗмӗчӗн Икарӗ,
Тен, килчӗ йышлӑ çын асне...

### 2

Юмах-легенда мар, чӑнтан-чӑн:
Пӗрремӗш хут савни патне
Йӑл-йӑл кула-кула, васканӑн
Хӑпарчӗ çын сӗм тӳпене.

Çӗкленчӗ паттӑр Прометейӗн
Пур тӗшмӗш тӗтӗмне сирсе,

Хăватлă самана идейĕн
Тĕрĕслĕхне ĕнентерсе.

Вăл вĕçнĕ чух темскер пулассăн
Кăнн хытрĕ хăшĕ хăраса:
«Е турăçăм ăна пуçтахшăн
Çӳлтен калле антармасан?..»

Пĕр ӳсрĕ шанчăк, пĕр тем хĕснĕн,
Пĕçертнĕн туйăнчĕ чуна...
Çын таврăнчĕ! Турри? Вăл — мĕскĕн,
Этем ачалăхĕ кăна.

Чылай сăмах халь урăх сумлă:
«Усал» та «ырă», «вăрçă», «мир»...
Этемлĕх çĕнĕ чикĕ урлă
Каçса уттарчĕ пек пĕр ир.

**3**

Йăла е этикет — тем мар-ха...
Джон Кеннеди! Эп аслăрах —
Çав тивĕç пур ман... Сăмахлар-ха
Лару-тăру çинчен кăштах.

Сиртен ытла эп пурăнатăп,
Кăшт вăрăмрах сукмакăм ман.
Тĕнчешĕн эп ответ тытма та
Тивĕçлĕрех апла пулсан.

Тен, калăр: «Кулăшла! Мĕн пешка?
Ĕç тумалла корольсемпе...»
Çавах эп тивĕç пуплемешкĕн —
Çак Çĕрĕн гражданинĕ пек.

Ача-пăча пурах пуль сирĕн?
Ман хамăн та пĕр ывăл, хĕр.
Çапла тăвар: никам ачишĕн
Хăруш ан пултăр тĕттĕм çĕр.

Тревога мар сехĕрлентертĕр,
Йăпаттăрччĕ сăпка юрри.
Этем ăсне ăçта çĕклетпĕр!
Мĕн пирĕн хирĕçӳ пурри?

**4**

Тĕнчемĕр пултăр хĕç-пăшалсăр!
Пĕр шиксĕр пурăнăç тăвар!
Хĕрарăм ан тертлентĕр арсăр,
Уксах-чăлах ан юлтăр ар.

Амантнă çĕр йăлт тикĕслентĕр,
Çын мантăр тупăсем çинчен.
Тăри юрланине итлетĕр
Чипер уйри чипер ĕçчен.

Хальччен Çĕре юнпа шăварнă
Никам пĕлмен салтаксене
Лартасчĕ ылтăнран хывтарнă
Пĕртен-пĕр палăк Çĕр çинче.

Ачамăрсем выляччăр мирлĕн —
Пăшал персе, хĕçлешсе мар.
Хăватлă атом пултăр пирĕн
Чи пысăк ырлăх, пархатар.

Хăюллисен шутне халь кӳртĕ
Ăс-пуç çĕнтерĕвĕ сана.
Америка, Европа — пурте
Ĕç тупĕ — тăрăштăр кăна.

**5**

Эп Сталинград салтакĕ пултăм,
Мĕскер хушас-ха кун çумне?
Çапăçура эп чĕрĕ юлтăм —
Çав манăн хурлăхлă парне.

Пин-пин илемлĕ, çамрăк, паттăр
Салтак чĕри килсе шаккать
Ман кăкăра халь тапхăр-тапхăр:
Асра пин сасă ахлатать.

Эп çав сасса хиртен илтетĕп,
Хирург сĕтелĕ çийĕнчен...

Асап сасси — вăл ĕмĕрне те
Лăпланмĕ хам лăпланиччен.

Освенциумăн кĕлне куратăп.
Ав Бабий Яр, ав Моабит.
Тĕрми хăрушă та, хура та,
Джалиль — яланлăх çутă пит.

Пурне те манăн пысăк парăм,
Вăл канăç памĕ нихăçан.
Вĕсен çилли мана кăваррăн
Çунтартăр, эп чунпа суйсан!

**6**

Пегас çунатлă пулнă теççĕ...
Асфальт çинчен, çерем çинчен
Çĕкле мана, ман ямб-вĕçевçĕ,
Чĕре хевти хавшаниччен!

Пĕр вырăсла сăмах пур: «сердце»,
Çавна рифмăласа, пĕр çын
Лартать хăюллăн «мегагерца».
Ан тарăх, хурăн юрăçи!

Шав çĕннине туптарчĕ пурнăç.
Леш физик-лирик тавĕнче
Хăш чух пустуй ӳпкев те турĕç, —
Пурне те аслă çак тĕнче!

Тĕпчетĕр физик, çыртăр лирик,
Хăюллă шухăш — ĕмĕре.
Хавхалану тени вăл — ирĕк,
Пур пултаруçăн та пĕрре.

Анчах хăш-пĕр чечек, пĕлетпĕр,
Улма кӳмесĕрех пĕтет.
Чăн пурнăçăн сĕткенĕсемсĕр
Ӳсме пултараймасть поэт.

## 7

Чăн пурнăç — тарăн шухăш та çав,
Вĕри чĕре те, — йăлт эс кур.
Пур сăвăç чунлă Тимирязев,
Профессор ăслă Брюсов пур.

Поэзие савса халь эпĕр
Кашни кĕске сăввăмăрта
Хăват, асам курасчĕ тетпĕр,
Çапла вăл пулмалла-тăр та.

Çаплах вĕреннĕ çын та калĕ
Хăй тунă формула çинчен.
Сӳнми хунар пекех çуталĕ
Вăл тупнă чăнлăх, ăс çитсен!

Анчах этем — этем кăна-ха:
Ĕç пайланать пин-пин алла.
Кашнин хал çук асам тума халь,
Чăн гени вăл сайра ялан.

Ăна туртса тăрать пĕр çутă
Тĕллевлĕ вăй. Хăйне пăхсан —
«Чудак» текелĕç. Тунă чудо
Тĕнчешĕн палăрать кайран...

## 8

Пурне те мухтамасть-ха юрă:
Хăш-пĕр ятсем вăрттăнлăхра.
Çĕршыв чапне эпир мĕнпурĕ
Вăй хунă хамăра кура.

Çулсем-йĕрсем пулмарĕç такăр:
Чи малтанхи программăран
Виççĕмĕшне çити пыратпăр
Ĕçре, кĕрешӳре ялан.

Пĕр ят çуна çаплах çĕкленĕ:
Çил-тăвăлта, аслатире
Йыхрав пек илтĕннĕ вăл — Ленин,
Тупа, ялав пулса пире.

Ун ăсĕн вилĕмсĕр хăвачĕ,
Пĕр вĕççĕр атом вăйĕ пек,
Çултан çула энерги пачĕ
Утмашкăн революципе.

Çак мирлĕ атомпа сатуррăн
Хăпарнă космос паттăрне
Кĕрхи Нева çинчех вăл курнă
Çутсан «Аврора» çутине.

**9**

Çӳлте çын çутнă йăлтăр-йăлтăр...
Пăхатăп эпĕ тӳпене:
Чĕтреççĕ çăлтăрсем... Хăш çăлтăр
Чухлать-ши ман шухăшсене?

Çав каççенче пур çăлтăрсен те
Кăшт урăхланнă çутисем:
Кашни темскер калас пек ĕнтĕ,
Анчах... тухмаççĕ сассисем!

Тĕнче юмаххине тупмашкăн
Сăмах çитмест-ха, темелле.
Çапах этем тăлăх-туратăн
Пăхмасть текех тӳпенелле.

Шырать, кĕтет вăл: тен, çын евĕр
Чĕр чун унта пурах пуль-ха...
Ахальтен мар савнатпăр эпĕр
«Пулас» та «çутă» сăмаха.

Этем каланă: «Çутă пултăр!»
Э т е м ! Вăл тунă турă мар.
Ăс-тăн çути! Çав чăнлăх çуттăр,
Çавăнпала халь çул тытар!

1961

## III. Çăлтăрлă çулпа

**1**

... Илемлĕ! Самана сăнарĕ
Каллех кĕрет ман сăввăма.
Çарти хушу пек вăлваскатрĕ
Сăмах хăвачĕ шырама.

Каллех ак Мускава итлетпĕр,
Каллех пуҫтарчĕ ҫынсене
Асамлă радион пĕртен-пĕр
Сип-симĕс куҫĕ хăй умне.

Пĕлесчĕ: кам-ха тухса кайĕ
Тепри ҫак Ҫĕр туртăмĕнчен?
Кĕҫ паллă пулчĕ: Николаев —
Чăваш ачи! — вĕҫет иккен.

Кун чухлĕ эп хĕпĕртеменччĕ:
Совет Колумбĕн йĕрĕпе
Манпа пĕр йăхлă ҫын ҫĕкленчĕ,
Ҫулне тытать чăн паттăр пек.

Салам сана! Яту сан ырă,
Поэма пулĕ час кунта.
Чăваш поэчĕсем мĕнпурĕ
Халь парăмлă сан умăнта.

**2**

Сана ҫĕклерĕ аслă туслăх,
Куратăп эпĕ: тусусем
Паян ҫӳреҫҫĕ ялтăр куҫлă
Сана инкексĕр ҫул сĕнсе.

Гагарин куллине куратăп,
Титовăн шухăшлă куҫне.
«Вĕҫ ҫӳлерех те, ытларах та!» —
Тесе каланă пек тусне.

Малтан вĕҫсе хăпарĕҫин те,
Вĕсемшĕн хаклă, ҫывăх эс.
«Мухтав» тени пурне те ҫитĕ,
Вăйли нихҫан та кĕвĕҫмест.

Чĕлхемĕрте пайтах каларăш,
Ватсен сăмахĕ, вĕрентни.
Паян пĕри асран каймарĕ —
«Чăваш ятне ан ҫĕрт!» — тени.

Ăна ялта хăвах итленĕ:
Ҫапла ят тухнă йĕкĕте,

Качча каян хĕре пилленĕ...
Çĕртмен, çĕртмерĕн, çĕртмĕн те!

**3**

Чĕлхемпеле чăваш пулатăп,
Гражданлăхпа — совет çынни.
Иккĕшинпе те мухтанатăп,
Кам кăлăх тейĕ — мухтанни?

Пур халăх савăнать. Сасартăк
Вăл курăнчĕ таçтан-таçтан:
Этемлĕхшĕн чи аслă стартăн
Ани çинче тăрать пĕр тан.

Епле хаваслă тулăх Атăл!
Çырансене енчен енне
Часрах хыпар тумаваскать вăл,
Илтсе çынсен сассисене.

Вăл пирĕн телее туять-тĕр:
Шавлать çыр тăрăх ял, хула...
Кашни чăваш каччи халь хатĕр
Тухмашкăн çăлтăрла çула.

Илсе каях эс, Атăл хумĕ,
Аналла ман сассăма:
Ман халăхăн çĕкленнĕ сумĕ
Пурне те пултăр савăнма.

**4**

Эппин, пуçланчĕ çĕнĕ эра.
Шав космонавт та космонавт...
Кам халиччен те ĕненмерĕ —
Ак уншăн тепĕр çĕнĕ факт.

Ĕненменсем пурах-ха, пулĕç
Çĕр чăмăрĕн леш çурринче:
«Чăваш вĕçет-и? Тен, кăшт суйрĕç?
Вăл халăх тĕттĕм пуринчен!»

Кăна эпир илтменех марччĕ:
«Вĕт-шакăр халăхсем ăçтан

Совет çĕршывĕнче упранччăр?
Пĕтеççĕ йăлт пăртак тăрсан!

Малашлăх çутă мар вĕсемшĕн,
Пулаяс çук çӳлти ретре...»
Хăйсен индейĕсем пекрех-мĕн
Кураççĕ хăшĕсем пире.

Анчах индей те çын. Пар ирĕк,
Вĕрент ăна — çуралĕ, тен,
Çав халăхăн хăйле Шекспирĕ, —
Çуралĕ Эдисонĕ те...

**5**

Чĕлхемпеле чăваш пулатăп.
Октябрь чĕртнĕ халăх ман
Чăн ирĕклĕ тесе шутлатăп
Çул космоса хывать пулсан!

Сехетсерен çĕнелекен çĕр
Пире чĕнет малтан мала.
Пур йывăрлăхсене те эпĕр
Çĕнтерĕпĕр Андриянла.

«Вĕт-шакăр халăх...» Кам калайĕ?!
Çав халăхсен элчи пулса
Пырса кĕрет ак Николаев
Малашлăх алăкне уçса.

Унпа çак эрăна çуратнă
Мухтавлă çĕрĕн ик çынни.
Вĕсем халь ĕмĕрлĕх çунатлă,
Çуначĕ — самана чĕнни.

Вĕсем пуласлăхран çĕкленнĕ,
Унта çын çыншăн — тус, тăван,
Çĕр чăмăрне ыр суннă Ленин
Йăл кулчĕ вĕсене курсан.

1962, августăн 11-мĕшĕ,
Гагра хули

## ÇĔРТЕ ТЕ ÇĔРМЕСТПĔР

*Совет Çарĕн 50 çулне*
*халаллатăп*

Этем çуралать пурăнма,
Супсан, йӳтесен тин вилме.
Чун илмĕш куçа курăнмасть,
Шăлтан суйласа вăл килмест.

Этем çамрăклах куç хупни —
Ик хут вилнĕ пек вăл мана.
Мĕн чухлĕ ун пек пуç хуни!
Миçе унашкал самана!

Арçын — чи малтан вăл салтак:
Паян мăюнта мăй тутри,
Ыран ăна эсĕ салтах, —
Çар тумĕ сана чи хитри.

Ах, вунпĕр тӳмеллĕ кĕпе,
Тĕнче паллакан хакки тĕс!
Хăвна витнĕ юн тĕсĕпе
Чи хаклă тĕсрен хаклă эс...

Этем вăрçмасса вăй хурать,
Этемлĕхĕн — хăйĕн йĕрки:
Хăш вăрçă — тăвасшăн чура,
Хăш вăрçă — чăн ирĕк пирки.

Эпир «вăрçа — вăрçă!» тесе,
Мĕнпур ĕмĕрхи тискере
Тĕнче умĕнче питлесе
Çĕнетрĕмĕр хамăр çĕре.

Этемлĕх курать: халиччен
Пулманччĕ кун пек çар çынни.
Унта та кунта çĕр çинче
Телей ӳстерет вăл çĕнни.

Çур ĕмĕр эпир хуралта:
Хула арканать, чул çунать,
Çĕре хурçă-тимĕр алтать...
Касать терт тăварĕ чуна.

Анчах та эпир вăл — эпир:
Вилни, хăтăлни — йăлт пĕрле...
Салтак! Эс хур пултăн пит ир,
Эп санăн йĕрне халь йĕрлеп.

Кĕске ĕмĕрӳ, татăлса,
Кун хушрĕ телей ĕмĕрне.
Çап-çамрăк, сăваплă, таса
Кĕретĕн Мухтав Çыруне.

**1**

Йăлкăш ялĕ йăлкăшать
Йăвашрах хăй çутипе.
Сарă хутлă «Канаша»
Вăл вулать тем кĕтнĕ пек.

Пур хутла пĕлекенсем, —
Элĕкре вĕреннĕ тет.
Самани — кун иртнĕçем
Чĕрене вăл чĕтретет.

Çук патши те тахçанах,
Вăрçă шав пырать иккен.
Пĕлтерет хаçат çавна,
Урăхла вăрçаççĕ тен?

Хурарах кăтра ача
Тинкерет-мĕн хаçатне.
Авăтать автан, анчах
Илтĕнмест хурал пӳртне.

Темĕнле ятсем те ав
Кĕркелеççĕ хăлхана.
— Мĕн? «Йӳтенĕ» тер-и çав? —
Тет пĕри кулса кăна.

Ку «Юденич» хушамат
Пирки пулчĕ пулмалла.
Пӳрт пуçларĕ шуйхашма:
«Чим! Вулатăр малалла...»

Вулама хура ачин
Хăйĕн те хавасĕ пур.

Вăл ӳссе çитет-ха тин,
Иван ывăлĕ Прахвур...

Пĕр каç кӳлĕм çитрĕ ак
Сăвăпа хайхи «Канаш».
Çырса панă-мĕн «Колчак»
Теветкеллĕ пĕр чăваш.

Ахăрттарчĕ те вара
Ял-йыша хивре сăмах!
Шăрантарчĕç улахра
Темиçе хут çав сăввах.

Килĕрен киле кайран
Çӳреттерчĕç хаçатне...
Вăхăт шурĕ — хаçатран
Пĕлчĕç тепĕр çын ятне.

«Врангель. Ку тата мĕнпе
Хăмсарать-ха паян кун?
Ячĕ «анкăль» тенĕ пек,
Ăшĕнче-мĕн хура юн».

Çав хура баронпалан
Çапăçма чĕнет Совет.
Хаçатри пек каласан —
«Канаш ирĕкĕ» чĕнет.

Кун иртет те çĕр иртет.
Кайкалать ял-йыш фронта.
Çамрăксен çитет черет,
Ят тухать Прахвурăн та.

**2**

Атте-анне авалхилле
Пиллерĕ çăкăр-тăварпа:
«Ачам! Аслисене итле,
Ан аппалан кирлĕ марпа.

Юлташ тумашкăн — хăвăнтан
Ăслăраха эс шырасам.
Кирек ăçта пулсассăн та
Чăваш ятне ан çĕрт, ачам!»

Йăли çапла çак халăхра:
Качча каять-и савнă хĕр
Е ывăл ăсанать çара —
Пĕр пил: «Чăваш ятне ан çĕрт!»

Таса курасшăн вăл хăйне
Ытти пур халăх хушшинче.
Прахвур тытать хуткупăсне, —
Калас пĕрре юлашкинчен.

Каларĕ вăл салтак кĕвви,
Юрларĕç тантăш-пĕлĕшсем.
Пĕрре çĕнни, тепре кивви —
Янрарĕ юрă килĕшсе.

«Илсе каях хуткупăсна, —
Сĕнет ăна тăван-пĕтен, —
Шăпи сывах кӳрсен пуçна,
Хупа пĕрлех вăл килĕ тен...»

Прахвур тинкерчĕ ашшĕне.
«Ил», — терĕ ашшĕ те кĕскен.
Хăй шăппăн шăлчĕ куççульне
Кĕпе çанни вĕçĕпелен.

Патшалăх хушнине туса,
Çара каять тесе çынна
Пичет пусса та ал пусса
Хут панă, пĕчĕкçĕ кăна.

Тухса каять вара Прахвур
Юлташĕпе пĕр лашапа.
Ят тухнă яш татах та пур.
Мĕнле пулсан та — пĕр шăпа.

Ку — Аристарх, Антун ачи.
Ялйышĕ утрĕ ăсатма.
Хапха уçать ял укăлчи.
Лавçи утне пит васкатмасть.

Сăрланă симĕс пĕккине
Ик тутăр явнă ик тӳрри.
«Палланă пек ку парнене», —
Тет пĕр инке кулса юри.

Унтах тăрать тен ик чипер
Сиксе тапан чĕрепеле...
Лаша кустарчĕ юрттипе
Вулăсалла, Элĕкелле.

Унтан ак пулĕ Етĕрне.
Республика та, облăç та
Ун чух туман-ха: кĕпĕрне.
Ăçта çул тытăпăр? Ăçта?

**3**

Чикмерен, Шупашкартан-и,
Атăлпа ишсе-шуса
Хусана яш-кĕрĕм аннă:
Кĕпĕрне хули — Хусан.

Çамрăксем! Тин çеç пуçланă
Пурăнмашкăн темелле.
Ĕмĕрпе пĕрле çуралнă,
Çирĕммĕш ĕмĕрпеле.

Самана çĕклемĕ йывăр
Пуслăх пек пусать сире.
Явăнса çунать çĕршывăр,
Вирт каять уя-хире.

Систерет юрри те уççăн:
«Шурă çар, хура барон
Патшана лартмашкăн куçăн
Хатĕрлеççĕ çĕнĕ трон».

«Анчах тайгаран Британ тинĕс таран
Тăван Хĕрлĕ Çар вăйлăрах пур çартан!..»

Юрлать çамрăк халăх. Прахвур ĕнерет,
Кĕвве купăспа калама вĕренет.

Юрлать пăрахут, — сахал мар ят тухни:
Чăвашĕ те вырăсĕ, мăкшă çынни.

Тутарĕ ларать Куславкка патĕнче.
Пит тĕрлĕ-çке Атăл тавра çак тĕнче!

Çитеççĕ Хусан хулине, Ар уйне.
Унта вĕрентеççĕ «салтак вăййине».

«Вăран! Тăрса тух!» — илтĕнет ирхине.
Тăран та сапан сивĕ шыв пит çине.

Ик-виç минутра тумланса тухмалла,
Мĕскер кирлине хăвăртрах тыт алла!

Нумай чĕлхепе кĕр-кĕрлет касăрма,
Пăртак ĕлкĕрен паллашма, калаçма.

Выртать Прахвурпа пуçлă-вĕçлĕ такам.
«Мĕн ятлă?» «Ахмет». «Ăçтисем?»
«Шăнкăртам».

Тепри: «Эп Миклай, — тет, — Чикме
патĕнчен».
Мари хăй, чухлать чăвашла та иккен.

Пурин те вĕсен пĕр шăпа, пĕр тӳпе,
Телейĕ тĕрленĕ, тен, уйрăм тĕспе.

Пĕлеççĕ аван: юнсăр вăрçă пулман,
Çапах та шанаççĕ-тĕр сывă юлма.

Вунсакăр е вунтăхăр çул пурăнса,
Вĕсем сывлăм шывĕ пекех-ха таса.

Пăшал палламан, тар шăрши те туйман,
Халь акă кашни — хăйне май арăслан.

Патшашăн та, тĕншĕн те пĕлĕтшĕн мар —
Çĕн пурнăçшăн, ирĕкшĕн, çĕршĕн патвар.

Этемлĕх пĕр харăс икке пайланать,
Иккех тĕс: шурри те хĕрли палăрать.

Пухать шур ялав пĕтĕм кив-кирĕке,
Пăвса пăрахасшăн каллех ирĕке.

«Анчах тайгаран Британ тинĕс таран
Тăван Хĕрлĕ Çар вăйлăрах пур çартан!»

**4**

Темиçе эрне иртрĕ
Вĕренеççĕ çамрăксем.
Аслăрах пĕр командирĕ —
Уçă кăмăллă этем.

Хушамачĕ Файзутдинов,
Ячĕ унăн Гилемзят.
Прахвурпа пĕрле çав çын ак
Питĕ тĕплĕ калаçать:

«Пĕр канаш парасчĕ тетĕп,
Иванов, Прахвур юлташ ...
Ман шутпа, пур енĕпе те
Эс пултармалла чăваш.

Хаçатсем вулакалатăн,
Вырăсла чĕлхӳ витет.
Купăсне вара калатăн —
Ташласа ярас килет!

Эпĕ хам — Хусан тутарĕ,
Эс те Атăл тăршшĕнчен.
Пиччĕш-шăллĕ пек пулар-и
Хамăр çарăн йышĕнче?

Коммунист пиччӳ эп саншăн,
Сăмахлар-ха тăванла:
Кăмăл çук-и çырăнмашкăн,
Шăллăм, сан комсомола?»

«Тепле çав... Те пултарайăп?
Шухăшлам-ха пуçпала...»
«Шухăшла. Кăна вара эп
Юрататăп. Шу-хăш-ла.

Эс те пуп ывăлĕ мар-тăр,
Ман атте те мулла мар.
Хамăр пек çынпа вăл паттăр
Çĕнтерӳллĕ Хĕрлĕ Çар...»

Çамрăксен тинрех çуралнă
Комсомол йышне кĕрсен

Çĕнĕ вăй тапса хускалнăн
Туйрĕç çар йĕкĕчĕсем.

Иванов, тем каласан та,
Вичкĕнрех халь ялтинчен:
Куçĕпе тĕллет «Антанта»
Сăмаха хаçатсенче.

Ун тĕпне те, тымарне те
Тăрăшать вăл ăнланма.
Асăна пуçларĕ ĕнтĕ
Час-часах хаçат Крыма.

Кашкăр куçлă каскăн Врангель
Иванов çинчен илтмен.
Юрĕ-ха, ан илт те ан пĕл, —
Хăй пĕлтерĕ кун çинчен!

Иванов! Миçе пиншерĕн
Шутланать вăл çĕршывра?
Çавсене пĕр çын чиперрĕн
Шута илнĕ Мускавра.

Иванне те, Ахметне те
Тĕпчесе мĕнпур енчен,
«Ĕç çарне эп ĕненетĕп», —
Тет вăл карттă умĕнче.

Тăшмана çапса ватмалăх
Вăй пуçтараннă тĕле
Телеграм вĕçет васкавлăн
Кăнтăр фрончĕ еннелле.

Шуррисен планне пăсмашкăн,
Урисем çине пусса,
Крымалла кĕрсе каймашкăн
Вăл ярать иккен хушса.

Тĕрĕсленĕ-и Сивашăн
Ăшăхрах тĕлĕсене?
Тен, пулать çуран каçмашкăн?
Тупмалла пĕлекене...

Йăлт чухлать çав çын, пурне те
Хăй курса тăрать пекех.
Тен, кунтах вăл пулĕ тетĕн,
Хĕрлĕ Çар çыннисемпех...

Вуласа тухать те Фрунзе, —
Куçăн курнă пек ăна:
Йăлкăшать Ильичăн куçĕ,
Сăмахланăн тин кăна...

**5**

Тапса туртать кив пăравусĕ,
Хашкать-хашкать те кăшт тăхтать.
Çĕршыв выртать-ха çĕмрĕк, тусăк,
Çитмест тумтир те, кăмрăк та.

Пит йышлă хапрăк-савăт хупă:
Çук тимĕр, пăхăр е тăхлан.
Çителĕксĕр пăшал та тупă,
Çимелĕх çăкăр çук хулан.

Мĕн пур? Пур ирĕклĕх çĕршывăн,
Пур паттăрлăх — чи хаклă мул.
Пур революци: уççăн, сыввăн
Вĕрет ун çилĕ виçĕ çул.

Тата пур контрреволюци:
Шалти, тулти тăшмансене
Пăшал тыттарнă Врангель юлчĕ,
Çавна ватма çĕршыв чĕнет...

Шалун шăвать кăнтăралла.
Хусан та, Атăл та инçе.
Вакун силлет, вакун аллать —
Уйрасшăн пек шухăшсенчен.

Чăваш ачи, хура ача
Чӳречерен пăхса пырать.
Ешернĕ-мĕн уйри калча,
Çĕртме пусси хура выртать.

Унта-кунта çинçе йăран:
Хăш анисем сарлакарах,

Хăшне сурпан пек çеç куран,
Пуянĕ-чухăнĕ, паллах.

Кăнтăралла çывхарнăçем
Хĕвеллĕрех те ăшăрах...
Мĕн шухăшлаççĕ Прахвурсем,
Аристархсем çав хушăра?

Аса илеççĕ, тен, киле,
Тăван сăмах мĕнле ачаш!
«Ачам, аслисене итле...
Чăваш ятне ан çĕрт, ачам...»

* * *

Файзутдинов сасă пачĕ:
«Иванов юлташ, мĕнле?
Тен, пусса пăхсан пыратчĕ
Купăсна майĕпеле?

Юлташсем кăшт канкаларĕç,
Юрламашкăн та юрать,
Тен, фронтра йывăртарах ĕç
Хушĕç хамăра кура.

Вăхăт-вăхăт, тен, тытаймăн
Купăсна та, кам пĕлет...
Эх, вĕренмелле-мĕн хамăн
Калаçма чĕлĕхпеле!..»

Иванов ларса типтерлĕн
Пăхса илчĕ тавралла.
Купăсне кăштах, ĕнернĕн,
«Калаçтарчĕ» йăлкăшса.

Аристарх Антонов пичĕ
Нар пек пулчĕ, хĕп-хĕрлех.
Юрласси те унăн килчĕ,
Йĕресси те пуль пĕрлех.

Юрламасть чăваш этемĕ,
Макăрмасть те çын çинче.
Илĕртсен те кĕвĕ-çемĕ,
Сасă тумĕ вăл пĕччен.

Çамрăк купăсçă тапратрĕ
Пурте пĕлнĕ пĕр çемме.
Тăсарах малтан каларĕ,
Кĕç вăл тытăнчĕ хĕрме.

Юррине пуçларĕ Юрин —
Вырăс яш — яланхи пек.
Вакуна хускатрĕ юрă
Демьян Бедный сăввипе.

«Ăсатать мана анне, —
        Ятăм тухрĕ.
Пур тăван-пĕтенсене
        Çуртăм пухрĕ...

Хĕрлĕ Çар мана чĕнет,
        Хамăн çарăм:
    — Харам пыр улпутсене
        Çап хаяррăн!..»

Хăй çинчен юрланă евĕр,
Тĕнчене манса пачах,
Сассине пит çĕклемесĕр,
Сăвăлать чипер ача.

Улăм тĕслĕ унăн çӳçĕ,
Кĕскерех те — палăрать.
Çавракă та чакăр куçĕ
Кăшт виртленĕн пăхкалать.

Юрин. Ячĕ ун Владимир.
Хăй Смоленск таврашĕнчен.
Тăсăлать-ха юрă... Чимĕр:
Тем... шăватпăр пит хуллен...

Пĕчĕк станцие çитеççĕ,
Чарăнма тивет пăртак.
Те каяççĕ, те килеççĕ —
Пур татах унта салтак.

— Янис! — тет пĕри хăй евĕр
Сарăрах çынна чĕнсе.
Тем калать... Хăй чĕлхипе-тĕр...
Латышсем пулас вĕсем.

— Иштван! — тет тепри хăй майлă
Хурарах çынна курсан.
Тем калать... Ку урăх халăх:
Мадьярсем пулас ятран.

Котелок йăтса çӳреççĕ,
Хăшĕ куккурус кăшлать...
Ик чăваш ачи хуллен çеç
Калаçаççĕ чăвашла.

Чĕрĕ шанчăк йăлтăр-йăлтăр
Çутатать малашлăха.
Симĕс шлем те хĕрлĕ çăлтăр
Йыхăрать пур халăха.

**6**

«Каховка, Каховка», — эпир халь юрлатпăр,
Вĕçет пирĕн юрă таçтах.
Мĕскершĕн ăна асăнатпăр, мухтатпăр?
Мĕне пĕлтерет çав сăмах?

Каховка... Тăшманшăн хăрушă пулса вăл!
Унта шурă çар чиккине
Çапса кӳртсе лартнă эпир хĕрлĕ савăл
Çав çирĕммĕш çул, кĕр енне.

Калать халь истори: «Каховка плацдармĕ».
Вулатпăр тахçан пулнă пек.
Кун-çулĕ ун çыраннă питĕ хаяр-мĕн:
Юнпа, Хĕрлĕ Çар штыкĕпе.

Çитет çавăнта Иванов ларнă пуйăс.
Анаççĕ. Кĕç митинг пулать.
Канах, çул йăпанчăкĕ — савнă хуткупăс,
Час тухăпăр урăх çула...

Хĕрӳллĕн калать сăмахне комиссарĕ:
«Крымри тăвансем асапра.
Унта ашкăнать улпутсен шурă çарĕ,
Çапса ватмалла çав çара!

Çапатпăр, вататпăр! Крыма хăтаратпăр!
Халь Врангель шăпи ак капла...»

Плакат курăнать: барона хĕрлĕ паттăр
Тирет хĕрлĕ сăнăпала.

Каховка... Юрри каярах кĕвĕленĕ...
Пĕр ĕмĕт, пĕр шут, пĕр тупа:
Чонгар-Перекоп еннелле тĕллеттернĕ
Ун чух Хĕрлĕ Çар пур туппа.

Легенда пулса Перекоп кĕрсе юлчĕ
Халап-юмаха та юрра.
Легендăшăн мар Иванов унта пулчĕ
Чи йывăр, хаяр вăхăтра.

Вăл — пысăк çар йышĕн пĕр штыкĕ, пăшалĕ,
Юман пек хытарчĕ хăйне.
Чи аслă саккун — Революци ун халĕ,
Çавна вăл парать пур вăйне.

Пĕр штык, пĕр пăшал çав... Мĕн ун ячĕ-шывĕ!
Анчах кашни çын — хăй тĕнче:
Çынна калайми ĕмĕр чĕрĕ те сывă
Хăй шухăшĕ пур пусĕнче.

**7**

Ставкăра е фронтăн штабĕнче
Шухăшлаççĕ анлăн та шултран.
Чи малтан вĕсен масштабĕнче
Армисем, дивизисем куран.

Пысăк карттă. Хĕрлĕ кăранташ
Тĕрлĕ паллă ун çине тăвать...
Икĕ комсомолец, ик юлташ
Ак кунта-мĕн хырăмпа шăвать.

Ăнланаççĕ пит аван вĕсем:
Кăранташĕ карттă çийĕпе
Куçса пытăр маларах тесен, —
Тен, тумашкăн тивĕ çĕрĕпе.

Çапăçу пулать-тĕр. Сисĕнет:
Тĕрĕслерĕç пур хатĕрлĕхе.
Яланхи пекех штабрисене
Кирлĕ пулнă тăшманран «чĕлхе».

Икĕ комсомолец, ик хĕрли
Шăвăнаççĕ шуррисем енне.
Командирсене мĕскер кирли —
Хăйсене те кирлĕ вĕсене.

Чарăнса пăртак итле-итле
Çывхараççĕ патнерех вĕсем.
Тĕттĕм çĕр мĕлкесемпе виртлет:
Те этем, те йывăç тĕмĕсем?

Ик юлташăн, калăн, пĕр чĕре...
Ак траншея çывăхĕ пулас.
Шурĕç сасă илтĕннĕ çĕре.
Пĕр лăпланчĕ, пĕр çĕкленчĕ сас...

«Чубарики-чубчики» юрра
Ĕнĕрлет иккен унта шурри.
Тепĕр сас ăна чарать, куран...
Тĕ пăртак хĕрĕнкĕрех пĕри?

Икĕ комсомолец, ик юлташ
Тем каларĕç шăппăн пĕр-пĕрне...
Ак пĕри кинжал кăларчĕ — ваш!
Сикрĕ траншейри этем çине.

«Ах!» — тесе кăна сывларĕ леш.
Хăрăлтатрĕ, ӳкрĕ çĕр çине.
Тепĕр паттăр — яш юман кĕреш —
Майлаштарчĕ тепĕр шуррине:

Пусĕнчен çапса, кăшт анратса,
Сиксе ларчĕ çамрăк тигр пек.
Çăварне пĕр тутăр тултарса,
Туртса çыхрĕ урлă тепринпе.

Ун кинжаллă тусĕ çавăнтах
Тăшман икĕ аллине хирсе
Çыхса лартрĕ хыçала хытах.
Кăлараççĕ сĕтĕрсе-тĕртсе.

Кăшт шусан-шусан, туртса алпа,
Салтрĕç леш хайхин аллисене.
«Шу!» — пĕри хăмсарчĕ пăшалпа,
«Шу!» — тепри кăтартрĕ кинжалне.

Хамăр çĕр енне каçарахпа
Шатăртатрĕ пулемет лере:
Тĕрĕсленĕ пулĕ окопа,
Пуля чун шырарĕ тĕттĕмре.

Анчах çитрĕç тĕрĕс-тĕкелех
Икĕ хĕрлĕ паттăр шуррипе.
Командир патне ăна кĕçех
Илсе кайрĕç хушнă йĕркепе.

Икĕ комсомолец, ик маттур,
Тытса килчĕç çаплалла «чĕлхе».
Кинжалпа ĕçне туни — Прахвур,
Леш — Владимир, тус ĕмĕрлĕхе.

Вырăс Юрин, Иванов чăваш
Пĕр ĕç турĕç. Вырăсĕ калать:
«Çак чĕлхемĕр, командир юлташ,
«Чубарики-чубчики» юрлать».

«Ха! Юрлать эппин? Асту-ха эс! —
Командир пăхать шурри çине, —
Ир енне мĕн юрласса пĕлмест...
Йĕмелле ан пултăр ун чухне!..»

**8**

Калаçаççĕ икĕ каччă.
«Аçу пур-и?» — тет Прахвур.
«Пур, — тет Юринĕ, — сывахчĕ».
«Ман та пур... Анне те пур...

Тем... çыру килмест». «Тен, пулнă,
Юлчĕ пулĕ хыçала».
«Автономи туса хунă, —
Тесе çырнăччĕ çулла».

«Мĕн вăл?» «Ну... Чăваш çĕршывĕ
Уйрăм облаç пулмалла».
«Уйрăм? Питĕ кирлĕ-ши вăл?»
«Ленин хушнă». «Хăй?!» «Çапла».

Юрин кăштă шухăшларĕ,
Тем илесшĕн тавçăрса.

Ак çапла вара каларĕ
Шухăшне вăл çавăрса:

«Тĕрлĕ халăх пурăнать те
Пирĕн аслă Руç тулли,
Ленина халь курăнать-тĕр
Лайăхрах мĕн тумалли».

«Курăнать пулас çав», — терĕ
Ивановĕ ерипен.
Тепĕр хут вăл хĕпĕртерĕ,
Пăхрĕ тусĕн куçĕнчен.

Çав хыпар пирки пĕчченçĕн
Шухăшланă вăл темччен,
Такама пит пĕлтересшĕн
Пулнă пулĕ май килсен.

«Саламлатăп! — тет Владимир, —
Ленин... вăл аташ-ха ман.
Буржуйсем памастчĕç ĕмĕр
Автономи никама!

Пĕтĕм пролетариатшăн,
Ирĕк халăхушăн та
Арăслан пек çапăçмашкăн
Тивĕçӳ сан пур кунта.

Ахаль мар аллу сан кĕçĕр
Çирĕп тытрĕ кинжала».
«Юрĕ, — тет Прахвурĕ, — çĕртĕр!
Вăл-и, эп-и, халь çапла...»

* * *

Эп салтакчĕ. Астăватăп
Çĕр нӳрне, тар шăршине...
Ăнланмашкăн тăрăшатăп
Ивановăн шăпине.

... Вунпĕр çухрăм тăршшĕ выртнă
Çӳллĕ Тĕрĕк Тĕмески.
Шурă çар пит хытă тытнă
Çав çĕре: вăл — Крым чикки.

Крым хапхи вăл пулнă ĕмĕр,
Эс ăна уçаймăн час.
«Тап та ват, çунтар та çĕмĕр —
Кĕр Крыма!» — хушать приказ.

Крым хапхи... Пĕччен салтакшăн
Çав хапха пĕр-пĕр йăран,
Шăйăрлан пулать... Каçмашкăн
Вăй çитет аран-аран.

Кашни утăм, кашни аршăн
Илĕнет-çке юнпалан.
Пĕр шитне те парас маршăн
Тăрăшать лере тăшман.

Вăл «никамăн çĕрĕ» урлă
Сăнаса выртать сана —
Хар! сикмешкĕн хатĕр урнăн
Пĕр асли хушсассăнах.

Ху та эс çавах: килте, тен,
Чăх пусса курман ача —
Халь çынна перен, чикетĕн
Çынлăхна манса пачах.

Чыхăнать çапла чипер çĕр
Юнпала мĕн авалтан.
Вăрçă вăл — искусство» тетпĕр,
Вăрçă вăл — хура ылхан!

Пулĕ-ши халăхпа халăх
Хĕç-пăшалсăр ăмăртни,
Пĕлӳпе илем, ăсталăх
Пур вăя та палăртни?

Акатуй çеремĕ евĕр
Ман курасчĕ çак Çĕре...
Хальлĕхе — пăшал пемесĕр
Ирĕк те лекмест пире...

Иванов, тен, шухăшланă
Урăхла сăмахсемпе.
Ăнланма — çапла ăнланнă,
Туйăм пулнă — çакăн пек.

**9**

Революцийĕн виççĕмĕш çулĕ.
Тĕттĕм каç. Йĕп чиксе курăнмасть.
Çил тулать. Сывлăш сивĕ те нӳрлĕ.
Хăçанччен окопра пурăнас?

Хăвăртрах Крымалла çул хывасчĕ, —
Киленесчĕ туртса иçмасса.
«Крым тапакĕ туртас!» — шӳт тăваççĕ
Хăшĕсем пăшалне тăратса.

Акă çитрĕ хыпар: «Фрунзе килнĕ!»
«Ну, апла — кĕçĕрех е ыран
Тапранатпăр. Приказ ĕнтĕ илнĕ.
Сиваш урлă каçатпăр, куран...»

Фрунзе çар çул-йĕрне палăртмашкăн
Пырса çитнĕ дивизи штабне,
Хушнă çывăх ялтан йыхăрмашкăн
Сиваша пĕлекен çынсене.

Çар йышне çул кăтартнă çын пулнă
Пĕрре мар, иккĕ мар, тен, ун чух...
Пĕрин ячĕ историшĕн юлнă —
Украина çынни Оленчук.

Сăмахланă çар пуçĕ пĕлесшĕн
Çут çанталăк йăли-йĕркине.
«Çил вĕрет анăçран, — тенĕ лешĕ, —
Шыв тарать халь Азов тинĕсне.

Ăшăхрах вырăнсем пулкалаççĕ,
Типĕ çĕр те тĕл-тĕл тупăнать.
Ертсе кайăп. Ик каç-и, виç каç-и
Çил çаплах вĕрес пек туйăнать...»

Фрунзе тимлĕн итленĕ. Мĕн чухлĕ
Ăс куран сăнасан халăха!..
Революцийĕн виççĕмĕш çулĕ,
Ку — ноябрĕн улттăмĕш-ха...

Тепĕр кун, революцин тĕп кунĕ,
Пулмалла йывăртан йывăр марш:

Штаб карттин анине сиввĕн ӳкнĕ
Шывлă-шурлă, тăварлă Сиваш.

Çичĕ çухрăм сарлакăш çав кӳлĕ,
«Çĕрĕк тинĕс» текен çав шыв-шур —
Пурнăçпа вилĕме чикĕ пулĕ:
Е çĕнтер, е пуçна унта хур.

**10**

Ăçта-ха Иванов Прахвур?
Чылай тухман вăл окопран.
Юлташĕ ун винтовка пур,
Патрун хутаçĕ — брезентран.

Хуткупăс юлчĕ хыçала —
Упус урăписем çине.
Кам халь ăна унта калать?
Аса илет-ши хуçине?

«Тухасчĕ тĕрĕс-тĕкелех,
Юлминччĕ купăсăм пĕччен.
Çапса ватсассăн Врангеле,
Вăрçи те пĕтмелле-и тен...»

Шăнса кӳтен пӳрнисене
Хускаткалать Прахвур, авать.
Пăхса илет енчен-енне,
Пĕччен марри çапах аван.

Ун сылтăм кӳрĕшĕ — тутар,
Леш Файзутдинов, çирĕп çын.
Сулахайра, инçе те мар,
Пур Тарасенко — украин.

Полк командирĕ вырăнне
Вăл юлнăскер çав вăхăтра.
Пайтах чакарнă-мĕн полкне
Сивашшăн çапăçнă хутра.

Çĕр каçрĕç, пысăк тупăсен
Сассисене тăнла-тăнла:
Сиваш леш енĕ — шуррисен,
Çаплах переççĕ кунталла.

Çĕр каçрĕç — çилĕ чарăнмасть.
Нӳр кăчăр хытрĕ окопра.
Анчах та кăмăл парăнмасть
Ни çумăра, ни юр-пăра.

Октябрь уявĕ-çке паян!
Прахвур типмен шинель çумне
Хăмач тупса çĕлет таçтан,
Шупка хăмач — пĕр-ик пӳрне...

Тен, пулнă ун савни тутри,
Тен, сӳтрĕ пуль вăл енчĕкне,
Тен, амăшĕн сурпан хĕрри...
Ăçтан пĕлен йĕкĕтĕнне!

Каç пулттипе тăпăртатса
Ут чупнисем ак илтĕнчĕç.
Маузерне чăмăртаса
Çĕкленчĕ Тарасенко кĕç.

Ак ун окопĕ çывăхне
Çитсе тăрать пĕр юланут.
Ку Фрунзе пулчĕ. Ун ятне
Сĕм каç каларĕ нумай хут.

Асли парасшăн рапортне.
«Отставить, — терĕ лăпкă сас, —
Пĕлетĕп эпĕ мĕнлине...
Атакăна каятпăр час».

Хыпар вĕçет йĕри-тавра:
«Командующий пирĕнпе!»
Салам калать çар пуç вара
Октябрь уявĕ ячĕпе.

Урра! — тени енчен енне
Кума-кума çӳрерĕ те,
Сасартăк пачĕ сассине
Сулмаклă артиллери те.

Ӳлеççĕ йывăр етресем,
Ӳкеççĕ тепĕр çырана.
Пеме пăрахрĕç шуррисем,
Лăпланчĕç темшĕн пĕр кана.

Кĕтменччĕ-и кунтан пире
Е турĕç-и чее кавар?..
Штыкпа çурса кĕрхи çĕре,
Кĕрет пехота — çуран çар.

Иван Иванăч Оленчук
Малтисене ертсе пырать.
Кунта сукмак, лере вăл çук,
Малта утрав пекки выртать...

Кунта кӳлленчĕк, тарăн мар...
Патак чиксе пăхать Иван...
Утать пехота — çуран çар,
Леш çыранта — хаяр тăшман.

Утать вунтăххăрти Прахвур,
Пин-пин Ивановран пĕри.
Ун пуçĕнче пĕр шухăш пур,
Пĕр ĕмĕтпе тапать чĕри:

Çĕршывăн тăшманне пăр-рах
Ватасчĕ те пĕр ватмалла,
Çитсе ӳкесчĕ хăвăртрах
Тăван çĕре, тăван яла.

Хура кĕр çитрĕ çут тĕнчен,
Хĕле кĕретпĕр ĕнтĕ час.
Кăçал ялти улахсенче
Ун купăсĕ памарĕ сас.

Тунсăхлаканĕ пур унта:
«Кĕтетĕп, — тенĕ, — киличчен».
Çак каç вăл шавлă ушкăнта
Куçне шăлса илет-и тен...

Хытать çанталăк, сивĕтет:
Пусатăн та кӳлленчĕке —
Çӳхе пăр чалтăр сирпĕнет,
Ванать вăл кĕленче пекех.

Çав вăхăтра таçта малта,
Кăшт хăвăртрах каçса çитсе,
Пралук карти тата-тата
Уçаççĕ çул коммунистсем.

Çуран çар хыççăн утлă çар,
Унтан туппи сĕтĕрĕнет.
Çĕпре пек пылчăк, шар тăвар
Йӳçет, юхать, пĕтĕрĕнет...

Сулмаклă тупă кустăрми,
Лаша ури, этем ури —
Йăлт çăрăлать... Никам курми
Хуплать пурне те каç хури.

«Ан юлăр! Таччăнрах!» — тени
Кĕрет Прахвурăн хăлхине.
Савăнтарать ăна илтни
Çав Тарасенко сассине.

Вăл каярах пырать пулас...
Умра çич çухрăмлă Сиваш.
Çынран ăçта тăрса юлас?
Аслисене итле , чăваш!

Ик тинĕс икĕ айккинче,
Малта Крым пырĕ, типĕ çĕр...
Утаççĕ çур çĕр иртиччен,
Тен, хăшĕ ĕнтĕ каçрĕ-тĕр...

Сасартăк пĕтĕм Сиваша
Çутатрĕç ячĕç шуррисем
Çунать прожектор, ялкăшать,
Пере пуçларĕç тупписем.

Унтан-кунтан çине-çине
Шатăртаттарчĕ пулемет.
Прахвур çитменччĕ леш енне,
Команда илтĕнчĕ: «Вперед!»

Вара «Интернационал»
Пĕри пуçларĕ юрлама.
Çĕкленчĕ кăмăл, çĕнĕ хал
Вăл хушнă пек хул-çурăма.

Винтовкине умне тытса
Прахвур та пачĕ сассине.
Чупни чупса, утни утса
Васкарĕ леш çыран çине.

Анчах мĕнпур çиллипелен
Переççĕ шуррисем пире.
Ак Тĕрĕк Тĕмески енчен
Çитсе шартлатрĕ пĕр етре.

Шрапнель саланчĕ шăхăрса,
Тăхлан сапса йĕри-тавра.
Тăхлан çӳрет çын шыраса,
Вăл тупрĕ пирĕн Прахвура.

Прахвур юрлатчĕ-ха. Юрри
Çителĕксĕр янратчĕ тен.
Анчах туссен сасси пурри
Юрра хăват кӳрет иккен.

«Хаяр аçа çапса ватсассăн
Чун иллисен мĕнпур йăхне,
Пире хальхи пекех хавассăн
Хĕвел çутатĕ ĕмĕрне...»

Прахвур юрлатчĕ... Çамрăк сасă
«... Çак юлашки çапăçу-у!» —
Тесе çĕкленчĕ те пĕр касă —
Лăпланчĕ. Тек сăмах та çук.

Сасартăк çапнă пек тукмак —
Çан-çурăм кайрĕ пĕçерсе.
Ёлкĕреймерĕ юн тухма —
Этем ӳкет тĕшĕрĕлсе.

Ик аллипе вăл хуплама
Пикенчĕ кăкăрне çапах.
Ёлкĕреймерĕ ыратма —
Çухалчĕ тăнĕ çавăнтах.

Çынсем, урра! урра! тесе,
Атака турĕç малалла.
Чĕрри персе, вилни вилсе
Тăшман вăйне хавшатмалла.

Ирхи тĕтреллĕ çутăпа
Хăватлă çар ик аллипе
Ярса тытать Перекопа —
Крым хапхине яр уçнă пек.

## 11

Выртса юлчĕ чăвашĕ
Тăварпа варăнса.
Çупăрларĕ Сивашĕ
Хĕрхенсе, хурланса.

Çил шыва хăваларĕ
Ĕмĕрхи йăлапа:
Пĕр ейӳ шывĕ кайрĕ,
Пĕр калле вăл тапать.

Хура тинĕсĕн хумĕ
Е Азов тинĕсĕн —
Çук вĕсен умĕ-сумĕ,
Çук хисепĕ вĕсен.

Сиваш урлă иртеççĕ
Каллĕ-маллĕ кумса.
Тем кураççĕ-илтеççĕ —
Каламаççĕ хумсем.

Кун-çулсем кустараççĕ,
Чарăнмасть урапа.
Çĕршыва пустараççĕ
Улăпла утăмпа.

Чĕррисемшĕн — малашлăх,
Вилнине — ĕмĕр чап.
Пурăнах, ирĕк халăх,
Тырă выр, авăн çап.

Пирчесе юсанаççĕ
Сурансем ерипе.
Салтаксем асăнаççĕ
Иртнине йĕркипе.

Сахал мар çиçĕм çиçрĕ,
Сахал мар ванчĕ чул.
Сисĕнмерĕ те — çитрĕ
Вăтăр пиллĕкмĕш çул.

Эртелсем те вăй илчĕç,
Çук йăран та асра.

Пурăнать Павлов тимĕрç
Çывăхри колхозра.

Вăл Сиваш çине анчĕ
Шыв чаксан, çĕр кушсан:
Йĕс тавраш тупаканччĕ
Е тăхлан çавăнтан.

Шаларах кĕрсе кайрĕ
Вăл картечь шыраса.
Кĕç выртать (асăрхарĕ)
Шыв пуххи хăпарса.

Унăн типнĕ тĕркемĕ
Мăкрăлать ахаль мар.
Пĕрчĕк-пĕрчĕк хĕлхемĕн
Çуталать шур тăвар.

Таканланă пушмакăн
Тĕпĕ курăнчĕ... чим...
Сирсе пăхрĕ те акă —
Çын выртать, вилнĕ çын.

Шикленсе ӳкрĕ Павлов,
Хыпар турĕ яла.
Пырса пăхрĕçĕ... Паллă:
Тахçанхи япала...

Шинельне тӳмеленĕ,
Кĕсйинче хут та пур:
«Иванов Прохор» тенĕ.
Йăлкăшсем. Хай Прахвур.

Татăк-кĕсĕк шинелĕ
Тытсанах саланать.
Хăйĕн ӳчĕ тирпейлĕ, —
Тăвар каснă ăна.

Тимĕрç пăхрĕ тем те пĕр
Иртнине астуса.
«Ха, çĕрте те çĕрместпĕр!» —
Терĕ хурлăн кулса.

**12**

Ĕлĕкхи «Эрмен Пасарĕ» —
Халь «Армянск» текен хула.
Пĕчĕкçеç салтак масарĕ
Çавăнта курма пулать.

Шуррисем персе вĕлернĕ
Çичĕ паттăр матруса.
Асăм палăкĕ çĕкленнĕ
Çавсене сума суса.

Çав тĕле пырса пытарнă
Прахвура çар йĕркипе,
Уйрăм чул хурса хăварнă
Хушамачĕ-ячĕпе.

Ун çулне çитсе эп куртăм:
Пĕр сăмахсăр пуç тайса,
Чечек пуç кăшăлĕ хутăм,
Тăтăм шухăша кайса.

Ятсăр-йĕрсĕр те хыпарсăр
Çухалнисенчен пĕри...
Чĕррĕн туйăнчĕ ун харсăр
Юратса тапан чĕри.

Çуркунне тин çеç çуратчĕ
Шурă çеçпĕл сăрт-тура.
— Эсĕ ху çав çеçпĕл, каччă, —
Тессĕм килчĕ Прахвура. —

Ытлашши те çамрăк пулнă!
Темиçе пинтен пĕччен
Эс çĕрте çĕрмесĕр юлнă,
Ахаль мар ку пулĕ, тен.

Çĕр пире астутарасшăн:
«Усрăр çамрăк ăрăва.
Ан вăрçсамăрччĕ тархасшăн,
Ан пĕтерĕр хăвăра...»

Музейре пăхса ларатăн
Эс тытса хуткупăсна.

Крымпала тăванлантартăн
Хăвăн савнă çĕршывна.

Уншăн, çĕнĕ йăлкăшсемшĕн,
Пур çĕршывăн эс кунта
Чĕрӳне тăхлан тивтертĕн
Паттăрла кĕрсе вута.

Эс вилсессĕн те çĕнтертĕн,
Тивĕç аслă хисепе.
Эп салам илсе çитертĕм
Ху калаçнă чĕлхепе.

Манăн пуç кăшăлĕм шанĕ, —
Пит черченкĕ вăл çеçке.
Ытларах сăну сыхланĕ,
Ун та ĕмĕрĕ кĕске.

Чул çинчи çыру якалĕ,
Палăк лармĕ ĕмĕрех.
Пурăнать сăмах вăй-халĕ,
Пин çултан та вăл чĕрех.

Çавăнпа ман чунăм туртрĕ
Сăвăлла çырма сăнна.
Халăх кăмăлĕ, тен, упрĕ
Тăванла курса ăна.

Сан çулна-йĕрне эп тухрăм
Чăвашран çитсе Крыма.
Сан çинчен юрланă юррăм
Кайĕ, тен, ламран лама.

Эс герой ятне илмерĕн,
Çук сан орден, çук медаль.
Сан çинче çуллен илемлĕн
Чечеке ларать миндаль.

«Паллă мар салстак...» Мĕн чухлĕ
Ун пекии çак çĕр çинче!
«Паллисен» мухтавлă çулĕ
Килнĕ сирĕн пеккинчен.

Тертлĕ утăм — пин хăлаçлăх,
Шит те питĕ сарлака.
Тав пăшаллă та хутаçлă,
Кĕреçеллĕ салтака!

Ĕмĕре яту сан юлтăр,
Кайтăр ян мухтав юрри!..
Кан, тăванăм, çăмăл пултăр
Виноград хура тăпри.

1967. Ялта, Мускав

## СЕРГЕЙ ЕСЕНИН ПАТĔНЧЕ

Ока шывне укалатса
Хĕвел анас патне пыратчĕ,
Хăй мĕлкине юпалатса
Шыв урлă вăл тăсса яратчĕ.

Тӳлекчĕ. Çукчĕ тарăху.
Шыв юхăмĕ те паллă марччĕ.
Шап-шурă çăмăл пăрахут
Мана антарчĕ те хăварчĕ.

Çара та тăмлă сăрт çине
Хăпартăм. Ялĕ çӳлĕрех-тĕр...
Чиркӳ тĕрленчĕ куç умне,
Хăй çырнă пек — тăрри хĕрессĕр...

Пăхатăп çаврăнса калла:
Çырма леш енĕн тавра курăм
Каять таçтах аяккалла...
Çĕршывĕн анлăхне эп туйрăм.

Çĕршывĕн, халăхĕн, чĕлхин
Чăтăмлăхне сиссе илетĕп.
Грекран Варяг таран халь тин
Çул хывнă пек эп тĕлленетĕп...

Урамалла виç чӳрече,
Ялти нумай-нумай пӳрт пек.
Тăрап ик йывăç хушшинче:
Пĕри йăмра, тепри тирек.

Поэт хăй лартнă вĕсене.
Йăмри хăрса пырать иккен,
Тирекĕн хăвăлĕсене
Цемент тултарнă. Ларĕ тен...

Ялта, таçта сулахайра,
Кăраклатаççĕ кураксем.
Тирек йывăççисем тавра
Сас хытăрах каç пулнăçем.

Унта — курак сасси енче —
Ларать-ха мезонинлă çурт.
Вăл Кашин çĕр улпутĕнчен
Юлса упраннă — ялшăн ют...

Çав Кашин таврашсен пики —
Сăн панă имĕш поэта:
Вăл Анна Снегина пекки,
Çапла пуплет халь халăх та.

Кĕретĕп картишне, пӳртне.
Чĕриклетет пусма картламĕ...
Епле мана, ял çыннине,
Çак кил ăш-чикĕ хумхантармĕ?!

Сăнатăп: сăвăç сăнĕсем...
Ар тантăш-тусĕ... кĕвентеллĕ
Хĕрсем, шушунлă* арăмсем...
Çăпаталли те пур... Ял çемлĕ.

Унтах çиçет куç умĕнче
Ытарайми Дункан илемĕ:
Таçти ют çăлтăр тӳпинчен
Анман-ши татăлса? — Пĕлеймĕн...

Ик-виçĕ пӳлĕм. Ытла мар.
Асран тата, тен, çакă тухмĕ:
Сĕтел çинче сар сăмавар,
Шкапра — туя, Париж костюмĕ...

---

* Шушун — килте тĕртнĕ çӳхе те шурă çăм тăларан çĕлетнĕ хĕрарăм тумĕ. Есенин хăй амăшĕ çинчен çапла çырнăччĕ: «Йăли тухнă кивĕ шушунпа». — *П.Х.*

Пĕр кĕтесре — çăвăнмалли,
Кăмканĕ — чугунранччĕ пулĕ...
Автанлă вырăс пит шăлли,
Тăм савăтсем вырнаçнă çӳлĕк...

Хăй пурăннă чухне илемлĕн
Ешернĕ сачĕ халь çара.
Тин лартнă пĕчĕк йывăçсенĕн
Ырри-шырри — малашлăхра.

Сăвва вырнаçнă вĕрени те
Хăрса йăваннă. Халь яшши
Ăна хуса çитесшĕн питĕ,
Анчах пĕр ĕмĕр-ха хушши...

Сыхланнă улăм витнĕ пӳрчĕ.
Унта кӳртмеççĕ. Кантăкран
Путмар та пĕр сĕтел куç курчĕ,
Пĕр лампа, тăрăх сак, пукан.

Ыттисенчен ытла пăхтарчĕ
Пӳртри сӳс кĕнчели мана:
Сар ывăл çырнă чух арлатчĕ
Пуль савнă амăш пĕр кана.

Çак пĕчĕкçĕ пӳртре çуралнă
Пит йышлă пысăк шухăша
Тĕнчешĕн, çынлăхшăн суранлă
Чĕри юн панă тăтăшах.

Çапла: тĕнче шухăшĕпе
Кунта вăл пурăнса ĕçленĕ.
Пит çамрăк, тин шăтайнă пек —
Çĕре кĕме те хатĕрленнĕ.

Ун чĕрĕ кунĕ-çулĕнчен
Ик хут эп аслăрах тăратăп,
Çак юмахла çĕршыв çинчен
Вĕçĕ-хĕррисĕр шухăшлатăп.

Юмахăн тупсăмне тупман.
«Раççей вăл — Сфинкс», — тет пĕр поэчĕ*.

* А.Блок — «Скифсем».

Тен, Айседора та — Дункан —
Ăна тупас тесе тертленчĕ.

Ма гени çакă çурçĕрте
Пит ир е сарăмсăр вилет-ши?
Мĕскер касать? Мĕскер хĕртет?
Мĕнле тытамак силлет-ши?

Ăнланайман Дункан çавна,
Анчах çак ял ӳстернĕ гени
Куç пăвнă Айседорăна,
Таса çăл шывĕ пек чӳхенĕ...

Нумайăшне курса пулмарĕ,
Сана тĕл пулманни — инкек,
Мĕн-ма тесессĕн ял тымарĕ
Пулсаччĕ пирĕн пит пĕр пек.

Сăмах тупăнатчех, курсассăн,
Вунулттăри ял ачине
Сăввун шарлакĕпе эс сапрăн
Ӳкереслех çак çĕр çине!

Тараттăм та каллех пыраттăм
Шарлак айне — шапариччен!
Пĕли-пĕлми алпа çыраттăм
Сан майлă хам та — анриччен!

Малтан çапла пулать те пулĕ:
Такам çатăрласа тытать;
Ача мĕн вулĕ — çавă юлĕ
Асра, чунра та кăмăлта.

Пурне те халь аса илсессĕн —
Чĕррисенчен чи малтанхи
Эс тиврĕн чĕрене, Есенин,
Сана тавссийĕм. Яланхи.

1968, çу уйăхĕ. Мускав

# ВĔÇЛЕНМЕН ПОЭМĂСЕНЧЕН

## ЧĂВАШ КАНТАТИ

Октябрь! Сана çак мухтав, çакă юрă,
Санпа эпир илтĕмĕр ирĕк тивлет.
Нихçан та чура эпир пулмăпăр урăх,
Санран пархатар та, телей те килет.
Октябрь! ĕмĕр-ĕмĕрех, яланах
Эс тивĕç тава чăн-чăнах.

Октябрь! Мĕнпур халăхпа эпĕр танлăн
Карах тăрса тухрăмăр саншăн вăрçа.
Кĕрешрĕмĕр кив тĕнчепе хĕç-пăшаллăн,
Пур мăшкăл-ылханшăн ăна тавăрса.
Октябрь! Ĕмĕр-ĕмĕрех, яланах
Эс тивĕç тава чăн-чăнах.

Паян аслă çул варрине утан халăх -
Виçетпĕр эпир пур кун-çул анине:
Асаплă аваллăх, хаваслă малаллăх
Тухса çĕкленет чĕррĕнех куç умне.

Чăваш усраннах,
Хăй ятне çухатман.
Çĕнтернĕ ăна,
Анчах вăл пăхăнман.

Пире арабсем хуçа пулнă пĕр тапхăр,
Хĕçпе, коранпа ӳкĕтленĕ темччен.
Эпир йышăнман выртайнă масарсăр
Мулла таврашне миçĕтсен тăрринчен.

Тайма пуçпала
Йăлăнман тăшмана,
Таса чунпала
Сутăнман суяна.

Пире Чингисхан, Тамерлан хурах пуснă,
Вирт янă пăри анисен тăршшĕне.
Пахчамăрсене тĕшĕрсе сăнсăрлатнă,
Кăкланă та каснă улма йывăçне.

Паха хуласене
Аркатнă чăл та пар,
Пасар варрине —
Ыр-ыр тихасем мар —
Чипер хĕрипраçа
Кăларнă кăкарса.

(хĕр. соло):

А-ах! Асап-çке...
А-ах! Касать-çке...
Пĕвĕм-сийĕм, çĕлен пул,
Сăнчăртан эс шуса тух.
Икĕ аллăм, ик çунат
Пулса çĕклĕр ман чуна.
Çичĕ ют çĕршывĕнче
Чурара пурăниччен —
Вĕçĕп-кайăп аякка,
Ерĕп акăш кайăка.
Акăш, акăш, шур аппам!
Йăмăку эп сан пулам.
Сăрт-сăрт урлă вĕçейсе,
Шыв-шыв тăрăх ишейсе
Таврăнар Атăлпала
Каялла — Чăвашалла...
А-ах! Асап-çке...
А-ах! Касать-çке...

Иртеççĕ ĕмĕрсем,
Пĕр тĕрлĕ тăшмана
Улăштараç вĕсем
Тепринпеле кăна.
Пире хĕстернĕçем
Хĕстернĕ самана.

Акă Атăл тăрăх аннă
Çĕмĕрсе Хаяр Иван.
Хуласем, ялсем арканнă,
Ваннă, тарнă çырантан.
Пире пусмăрланă, çаратнă, çунтарнă
Анчах юмахри Феникс-кайăк майлах,
Кĕлрен чĕрĕлсе çĕнĕрен çунатланнă
Эпир тăшманпа çапăçмашкăн ялан.

Пирĕн пулнă Алекă-паттăр,
Янчура — яш утаман.
Юнпала вĕренĕ Атăл,
Ухă ӳкнĕ утăмран.

Алекă-паттăра
Асăнатпăр паян.
Хастар Янчура —
Пулнă тĕр утаман.

Чăваш усраннах,
Хăй ятне çухатман,
Çĕнтернĕ ăна,
Анчах вăл пăхăнман.

Кун-çул тăршшĕпех
Кĕрешӳ те пăлхав.
Ĕмĕр-ĕмĕрех
Манăнми Разинпа,
Аттеней паттăрпа,
Пугачев туспала,
Изелбей маттурпа
Çĕкленнĕ эпир хĕç-пăшаллăн,
Мĕнпур таврана тăвăлланă.
Аркантăр, аркантăр, аркантăр
Пинçуллăх хĕн-хур та асап!

Мĕнпур халăхпа пĕр каварлăн, пĕр чунлăн
Кĕрешрĕмĕр пур мăшкăлшăн тавăрса.
Мухтав сана, парти! Пире ертсе тухрăн
Чăн тĕрĕслĕхшĕн аслă вăрçа.

Хаяр тăшмана та,
Сивве те, выçça та

Çĕнтертĕмĕр эпĕр санпа,
Мухтав ĕмĕр-ĕмĕр сана!

Мухтав, нихăçан манăнми ăмăрткайăк,
Хăватлă та вилĕмсĕр Ленин, сана!
Мухтав, кунсерен çут хаваслă малаллăх
Патне çывхартан аслă Сталин, сана!
Мухтав!

## ТАЙГА САККУНĔ

### 1. Улма чăпар пăлан

Пĕç тĕп таран юр тайгара,
Унта çырма,
Кунта çырма...
Марал-Кима ухатара,
Тункус каччи Марал-Кима.

Ай-яй епле чăнкă чăрăш,
Ай-яй пихта çăра епле!
Марал-Кима
Нумай тăрăш,
Марал-Кима,
Хастар ĕçле...

Вуник сăсар тытса сутсан
Пĕр арăмлăх укçа пулать.
Вара ним хуйхă та çук сан...
Марал-Кима йăл-йăл кулать.

Марал-Кима йăл-йăл кулать,
Йĕлтĕр те çăмăллăн шăвать.
Тупас ăраскалне пула
Сунарçă ӳкнĕ чăм шыва.

Тăвăр Хунхус сукмакĕпе
Йĕрлет вăл хӳхĕм сăсара.
Ай-хай сукмак хĕрри йĕпе,
Таптаннă юр та сап-сарах.

Ай-хай пăлан виртленĕ пек
Тункус пĕшкĕнчĕ:

Çĕр çăттăр —
Пусарнă вырăн лĕп-лĕпех,
Тин çеç тăрса тапраннă-тăр.

Тин çеç тăрса тапраннă-тăр.
Вăкри пулсан —
Шăтăк тăвать,
Ĕни выртса варланă-тăр...
Ăçталла кайнă ку, çăва?

Ай-ай епле хăлтă йĕрĕ:
Вĕрмен-тĕр çил,
Асман тăвăл...
Тункус шутарчĕ йĕлтĕре,
— Малтан аш пултăр, — терĕ вăл.

Сăсар йĕрне çухатмасса —
Тайган саккунлă йăлипе —
Пĕр хурăн хуппине касса
Чĕрсе хĕстерчĕ вуллипе.

Хĕстерчĕ хурăнĕ çумне:
Ухатари этем пĕлет
Ку кайăк çыннăн иккенне,
Вара каймасть йĕрĕпеле...

Марал-Кима хыпаланса
Тăкать чăрăш лăссисене.
Ай-яй паян ĕçсем ансат,
Тухсанах тупăш сисĕнет.

Ай-яй йĕрсем пит чармака,
Шултра йышши пуль ку пăлан.
Усламлă пулĕ мăйрака,
Пиллетĕрех ăслă шаман.

Пиллет те пуль ăслă шаман:
Йĕрсем пыраççĕ çырмана,
Шăварăнать пуль-ха пăлан,
Часах курать ак вăл ăна.

Тĕп пултăрах! —
Яш хыр çине

Пĕри хĕстернĕ хай палла.
Тӳрре килмерĕ аш çиме,
Услам тарать аяккалла.

Ай-яй епле час ĕлкĕрнĕ,
Епле чее çынсем нумай.
Анчах йĕрлевçĕ хăй йĕрне
Ăçта пытарнă-ши ку май?

Мĕнле йĕрлевçĕн мелĕсем?
Ăçтан çаврасшăн вăл ăна?..
Тункус тăп тăчĕ тĕлĕнсе,
Тытас килет-çке пălана!

Пăланĕ те шултра йышши,
Çĕн уйăхченех çитмелле.
Кил-йышĕ,
Ашшĕ-амăшĕ
Хисеплĕччĕç ăна мĕнле.

Ай-яй Иман çырми çинче
Ун чумĕнче çын йышлă çав,
Ай-хай хĕл каçасси инçе...
Пĕтерчĕç тутă шанăça.

—Хупларĕç шаннă шанăça, —
Тесе пырать Марал-Кима.
Сасартăк тухрĕ уçланка,
Уçланкăра чăнкă çырма.

Çырми çап-çутă кĕленче,
Пат-пат хупланнă юрпалан.
Шăнман кӳлленчĕк умĕнче
Тăра парать хайхи пăлан.

Ай-яй çемçе тутисемпе
Сăрăхтарать тăрă шыва.
Кăвак, шатра чĕлхи вĕçпе
Хăй пĕççине кăтра тăвать.

Кăтралатать хăй пĕççине,
Пӳне лăстăр-лăстăр силлет.
Хăй тем тăнлать,
Чăтлăх енне
Шикленерех пăхса илет.

Ай-яй туратлă майраки,
Йăмăх хура ĕнси патвар.
Хăй хăп-хăмăр,
Ик аякки
Лапка-лапка улма чăпар.

Сайра кун пек йăх тайгара,
Хаклă тăрать ун тирĕ халь.
Ай-яй кăна тытсан вара...
Чим-ха,
Йĕрлевçĕ кури-ха...

Йĕрлевçĕ, тен, кураймĕ те,
Илтеймĕ те алхапăлтах.
Е вырăс пулĕ-ха вăл, тен... —
Марал-Кима пăшал тытать.

Пăланĕ сисрĕ пулмалла
Майракана пĕр лапчăтса
Вăл виркĕнчĕ вăрманалла,
Сунарçă юлчĕ мăй тăсса.

Пăхать
Çырман леш хĕррипе
Пускил çынни ват Кевепуль
Шăва парать йĕлтĕрĕпе.
Ай-яй старик пĕçертĕ пуль!

Ай-хай ылханĕ Кевепуль,
Мĕнпур палланă
Пĕлĕш çын —
Упа Утти пуль,
Хăнтăр Кӳл —
Ĕмĕр юп курмĕç ку ĕçшĕн.

Тункус шыв урлă каçрĕ те
Аллисене çӳле тăсса
Ӳксе пуççапрĕ старике
Хăй хуйхине такмакласа.

Ай-яй Иман çырлан çинче
Ун чумĕнче çын йышлă çав.

Çампа каçарĕ ват пичче,
Каçарĕ çамрăк сунарçа...

Каçарĕ ватă çамрăка,
Пĕррелĕхе хĕрхенĕ те —
Хăй паллă тунă кайăка
Пертерĕ тен вăл йĕкĕте?..

Ай-яй ун чумĕнче аш çук,
Хĕвел те сивĕ тыткăнра.
Кевепуля вăл тепĕр чух
Нумай тапак тупса парать.

Нумай шур пуçлă кĕленче кӳрет.
Ан тив,
Хĕрхентĕрччĕ ĕнтĕ,
Пиллетĕрччĕ пускил йĕре.

Пиллетĕр кӳршĕ çак йĕре... —
Ахаль те ансăр куçсене
Старик хĕстерчĕ те пĕрре
Вăраххăн пăхрĕ çын çине.

Унтан пĕрер уран шуса
Çывхарчĕ çамрăк патнелле.
— Тайга саккунĕ пит усал,
Ăна сунарçăн пĕлмелле...

Тайга çынна хĕрхентермест,
Кунти çын кашкăр пек сăтăр.
Ун куçĕсем куççуль пĕлмеç,
Чĕри ун виç кĕтеслĕ пăр...

...Анчах маттур пускил йĕкĕт
Çемçетрĕ Кевепуль чунне.
Ват Кевепуль аван пĕлет,
Пĕлет Марал-Кима чумне.

Пĕлет ун ашшĕ чухăнне...
Ват Кевепульăн йыш сахал,
Ун аш та Пăчăр уйăхне
Çитсе пырать-тĕр-ха кăçал...

Юрать,
Парать эппин йĕрне,
Юри,
Сăнамаллах парать,
Анчах улма чăпар тирне,
Мăйракине —
Хăйне вара... —

Ай-яй хавас Марал-Кима,
Ай-яй халь тăрăххăн сикет.
Хаяр тапак туртма пыма
Чĕнет хурать вăл старике.

Лăпсăр-лăпсăр хура хӳре
Нумай тытсан Кевепуля
Пырсах чĕнет-ха вăл пĕрре,
Ун чух туя вара,
Туя... —

— Юрать.
Кевепуля ялан
Саваççĕ тапакпа эрех.
Хăй те савать те вăл,
Малтан
Тытас-ха çав иçĕпĕре...—

## II. Тăвата куç

Ай-яй килти пăлан юртать,
Ай-яй чăшăлтатать çуна.
Çуна çинче йĕкĕт юрлать,
Ăшă ĕмĕт тулать чуна...

Марал-Кима ик пар кӳлсе
Пăлан ашне пырса тиет.
Улма чăпар тирне сӳсе,
Пантне хуçса —
Кӳрши илет...

Ай-яй аш кимĕрчĕç çынсем,
Ай-яй ĕмрĕç шĕвĕ мимме,
Сунарçă нăк кăна çисен
Каллех уттарчĕ йĕрлеме.

Каллех вăл йĕлтĕрĕ çинче.
Лăпсăр-лăпсăр хура хӳре
Тарман-тăр халĕ пит инçе,
Тен, çав тĕлтех юртса çӳрет.

Тӳрех вăл ярăнчĕ шуса
Хăй паллă тунă çĕрелле. —
Тайга саккунĕ пит усал,
Вăл халь пĕлет ĕнтĕ,
Пĕлет...

Çил тулхăрать,
Су-улхăн çил!
Хăтăркалать вăрман ăшĕ.
Анчах вăрăм-ха ун кунçи,
Тăраннă хырăм та ăшă.

Ай-яй ăшă халь хырăмра,
Тăкăс выртать унта какай.
Чĕлĕм чĕртсе ярсан вара
Тайга урлах хăть тухса кай...

Сунарçă тухрĕ йĕр çине.
Тăвăр Хунхус сукмакĕпе
Илсе пырать йĕр хайхине,
Ав хай ирхинехи йĕрпе...

Ак кунталла леш хурăнччĕ,
Ав паллă,
Чăнласах та пур...
Кайсан-кайсан йĕр пăрăнчĕ, —
Чăтлăхаллах кĕресшĕн мур.

Чăтлăхаллах кĕрет сăсар,
Пихта йĕппи тирет пите,
Анчах Марал-Кима хастар,
Вăл пурĕпĕр хуса çитет.

Шăвать тункус.
Варсем,
Сăртсем,
Пĕчĕк уçланкăсем лекеç.
Ун шухăшĕ халь пĕт-пĕтĕм —
Сăсар тытса сĕвесси çеç.

Шӑвать йӗкӗт,
Йӗр шав пӗтмест.
Шӑвать...
Кӑшт ырнӑ пек ура.
Чарайрӗ чӗлӗм тивертме,
Пӑхать —
Малта ик ҫын курать.

Малта ик ҫын пыраҫ йӗрпе.
Пӗри лутра та ҫинҫерех,
Вӗттӗн шӑвать йӗлтӗрӗпе
Теприн ҫине тӗренерех.

Хура ҫӑмлӑ тоххапала,
Хӑлхаллӑ ҫӗлӗкпе хӑйсем.
Пӗри хӗрарӑм пулмалла,
Анчах тункус матки тесен —

Тункус матки шума ӑста,
Саккун та тивӗҫлӗ пӗлме.
Тумтир те урӑхла тата...
Сунарҫӑ чикрӗ чӗлӗме.

Сунарҫӑ чикрӗ чӗлӗме, —
Часрах хуса ҫитес эппин.
Епле хӑять-ха йӗрлеме
Вӑл тупнӑ кайӑка ют ҫын?

Хуса ҫитет,
Умне пӳлет.
Пӗри чӑнах хӗр,
Ютскерсем...
Пӗли-пӗлми чӗлхипеле
Ӳпкелешет тункус хӗрсе:

—Ай-яй тӑватӑ куҫлӑскер
Пӑсасшӑн ҫирӗп саккуна.
Эс ху йӗр туп та
Ху хӗстерӗн
Пӗр йывӑҫҫа ху тамкуна.

Ай-яй йӗре тытса илсен
Марал-Киман ҫилли хаяр.

Харам пулас килмест иккен —
Уттар-ха лерелле,
Уттар...

Уттар часрах, Тăвата Куç!.. —
«Тăвата куç» кулать кăна.
Йĕлтĕр вĕçерчĕ те тункус
Йĕрле пуçларĕ тăшмана.

— Мĕскер эс?! —
Терĕ леш этем,
Хăй те вĕçертрĕ йĕлтĕрне.
Ним хĕрхенмесĕр хайхисем
Кӳпке пуçларĕç пĕр-пĕрне.

Тăвата куçлă çынра та
Вăранчĕ авалхи çĕвер.
Культтур чунне хăямата
Хуса кăларчĕ сив Çĕпĕр.

Пăркаланаççĕ кĕрт çинче
Юра тусан пек вĕçтерсе.
Тункус сасартăк кунçинчен
Туртса кăларчĕ мăн çĕçĕ.

Тăват Куçа кайри кĕсйе
Вульвер парса ĕлкĕриччен,
Ăна вăл чикрĕ йĕрĕнсе
Сулахай хулĕ айĕнчен.

Этем тĕшĕрĕлсе анать.
Тункус юнланнă çĕççине
Ик-виç ăстрăм хăвăрт кăна
Чиксе кăларчĕ юр çине.

Унтан шултра шăлне йĕрсе
Кулса вăл пычĕ хĕр патне.
Хăй пĕлнĕ пек хĕре хĕрсе
Ăнлантарать çын айăпне. —

— Ай-яй мăка кĕленче куç
Пуясшăн пулнă пит вăш-ваш.
Çук,

Ӳлĕмрен ху кусна уç,
Тайга саккунĕпе паллаш.

Тайга саккунĕ пит усал... —
Хĕр хытнă кайнă тĕлĕнсе,
Романттĕкле чĕреллĕскер
Кĕтмен вăл кунашкал ĕçе.

Кĕнекесем тăрăх ялан
Кун пек чухне шур çын çĕнет.
Мĕскер тĕлне-ха ку паян?
Мĕншĕн улталанать ĕмĕт?

Джек Лондона вуланă вăл,
Мĕншĕн унта каплах вилмеç?
Çапла ун пăтранать кăмăл,
Хăй пĕр сăмах та чĕнеймест...

Марал-Кима Джек Лондона
Нихçан та вуласа курман.
Ун саспаллийĕ карт кăна,
Ун кĕнеки хура вăрман.

Ун кăранташĕ — пĕкече
Пери — пӳлкке,
Ручки — пăшал.
Ун куçĕ те ав иккĕ çех,
Çапах палла курать вăл шалт.

Палла та асăрхать те халь
Йĕре те ямĕ аякка.
Ак курĕ шур хĕр,
Курĕ-ха — епле вăл перĕ кайăка.

Лăпсăр-лăпсăр хура хӳре
Тытса сӳсессĕн çакăнта, —
Ай-яй илемлĕ яш хĕре,
Ай-яй мăя пит ăшăтать.

Çук,
Яш хĕр ахалех чĕтрет,
Марал-Кима тивмест ăна,
Ай-яй ун куçĕсем хитре,
Ай-яй кăваккăн вылянаç...

Тункус кăтартрĕ пĕлĕте.
Унтан шĕвĕр пӳрнипеле
Хĕрĕн питне тивертрĕ те
Кăтартрĕ шур кĕрт çинелле.

Кăтартрĕ шур кĕрт çинелле:
—Тин çунă юр пекех çемçе, —
Теесшĕнччĕ вăл хăйĕнле, —
Юр пек таса теесшĕнччĕ.

Хĕр ăнланмарĕ пĕтĕмпех,
Анчах вăл сисрĕ:
Тăшман çук.
Тункус халь урăх çын пекех,
Тытас ăна май килнĕ чух.

Часрах фактори патнелле
Илсе каяс улталаса. —
Хĕр илĕрте пуçлать,
Меллет,
Анчах —
Тункусăн пур сăсар.

### III. «Вĕренĕр пирĕн саккуна»

Йĕри-тавра тăват ӳпле.
(Сăнавçăсем вунвиç этем.)
Мăкпа, чĕрĕ тирсемпеле
Юрпа пĕркенĕ ӳплесем.

Шăнк варринче лупас пекки,
Унта ĕçме-çиме пиçет.
Шутник студент Пăши Хăлхи
Ăна «франсус кухни» теет.

Паян дежурнăй вăл,
Ларать
Пăтă хуранĕ пăтратса.
Ашне астиврĕ те
Харах
Кăшкăрса ячĕ янтратса:
— Эй, банда!

Килĕр апата,
Париж паштечĕ пиçрĕ ман.
Миçе кăшкăрмалла тата? —
Тункус!
Пакша Хӳри!!
Шаман!!!...

Чыхас та çывăрас часрах,
Сире кĕтсе тăрас-и ман.
Ахаль те эп ĕнер каçран
Паян ирччен куçа хупман...

Яшсем кĕпĕрленсе тухаç:
— Уçса çывран,
Хупса ĕçлен...
—Еней! —
Пуç айĕнче хутаç, —
Сăхрăн пуçна çын тухиччен?
............................................

— Куччум хана кайса чĕнес
(Профессорне çапла виртлеç).
— Ермак!
Мĕнле шутлатăн эс:
Сана хур мар-и кун пек ĕç? —

Мĕнпурĕ ячĕç лахлатса.
Ермак пăтта хыпайнăччĕ,
Кышлан какайĕпех тăрса
Ват сăнавça кайса чĕнчĕ.

— Ăçта çав пирĕн Амунтсен?
Ăçта ун дирижабĕлĕ?
— Ларисса!
Вовă!... —
Çук вĕсем,
— Еноттовă!
Çĕр çăтрĕ.
Шаплĕн!!

Пăши Хăлхи сурса вăрçать:
—Е сирĕн шутăрпа каллех
Хуран хуçа патне тарçа
Кĕрĕп-и эп?

Е çĕрĕпех
Тухатмăш пек куçа чарса
Пăхса ларас ман вут çине?
Хуран тĕпне шаккаттарсан
Аптрамĕччĕ те кусене...

Ан тив, пĕрре,
Робинзонла,
Чĕре кăварĕ вырăнне
Аллисемпе сулла-сулла
Тивертчĕр хырăм кăварне.

Аминь! —
Пĕтерчĕ пăтăçă.
Сасартăк лакĕр варрине
Ларисса хашкаса кĕчĕ,
Мĕнпурĕ пăхрĕç ун енне.

— Волотьă... Шаплĕн... —
Терĕ хĕр, —
Вĕлерчĕç Шаплĕна.
— Ăçта?
Чпху! Сволăч!
Антăхнă Çĕпĕр!!
Камсем çакланчĕç-ха тата?

— Ухутари тункус...
Часрах
Хуса тытать çав çĕвере.
Вăл халь йĕрлет-тĕр сăсара,
Пĕлетĕп эпĕ вăл йĕре...
..............................................

* * *

Марал-Кима чип-чиперех
Хăйне тытмашкăн пыриччен
Çынна вĕлернĕ çĕççипех
Сăсар сӳсе ларать иккен...

## АТĂЛ КУÇĔ

Шупашкарта тăран «Тургенев»
Пĕрре вăраххăн çухăртса
Йăлăм вăрманĕнче пур енĕн
Виртлештерсессĕн çĕр хут сас —
Шур пир кĕпеллĕ те панамлă,
«Трантас» пек куçлăхлă ват çын
Хул хушшине сăтрăлкаланнă
Плащне тытса сап-сар туйин
Кукрашкине самай таяннăн —
Каççир умне пырса тăчĕ:
«Пĕччен кают. Чĕмпĕр... Ульяновск», —
Тесе часрах тӳрлетрĕ çын.
Хăй тавралла именчĕклĕн
Пăхса илсе, тем айăп тунăн
Маташкаларĕ — енчĕкрен
Билет укçи кăларнă хушшăн.
Унтан, чăматанне илсессĕн
Вăл ал çĕклем камĕрĕнчен,
Сасартăк — тем астунă шеппĕн —
Самант хушши тинкерĕнчĕ
Çыран хĕрринелле.
Вăл курчĕ:
Çынсем таса тумтирпеле,
Кăмăлĕсем уявлă, уçă,
Раснах хаваслă пек темле.
Сап-сапăр мăшăрсем тăраççĕ,
Ача-пăча, хĕри-пăраç.
Хăй ывăлне телейлĕ ашшĕ
Прахут енне ал тăстарать.

Тăм сакăлта. Бульвар. Поэзи.
Мĕн икkенне пĕлен тирек.
— Ехмин турачĕ хăшĕ? — теççĕ
Сăввисене илтмесĕрех.

«Истори, — терĕ çын салхуллăн, —
Пăрах-ха кăларса ăна!
Шупка кăна, çапах та пулнă
Вăхăт ялавĕ. Самана...»
Куç шурĕ: Юрату Сăмсахĕ.
Миçе чĕрен çăра юнне

Хумхантарман çав пĕчĕк сакă
Хумханчăк Атăла йӳней!

Е уйăх-çăлтăр пек каварлăн
Тӳлек шывра чӳхеннĕ чух,
Мĕнле мăшра лăплантарман вăл
Кӳрсе пĕр чĕмсĕр çураçу!

«Сильнее смерти...» тенĕ шухăш
Вĕлтлетрĕ ăшă çил вĕрнĕн...
Таçтан оркестр, юрă — шуххăн
Анать кас-касăн çыр хĕрне.

Ăс паçăр курнине сăнларĕ:
Ем-ешĕл тумлă комсомол,
Маттур спартакиадăн çарĕ,
Хĕвел ураллă çăп-çăмăл
Пионерсемччĕ — çухăраççĕ
Малашлăха штрумланă пек.
Пĕр вĕçĕмсĕр урра! урра! çеç
Ĕрлет чăваш урамĕпе...

Сап-сар туяллă çын васкавсăр
Шав тулăн-шалăн хĕвĕшен
Пассажирсем çине пăхмасăр
Прахут ăшне кĕрсе çитсен —
«Тургенев» тепĕр хут сас пачĕ.

Пĕрремĕш класс салонĕнче
Çыравçăн шурă сăн-сăпачĕ
Курнать каюта патĕнчен.
Сасартăк — çав сăна пăхсассăн —
Путенесем, пăчăр, ăсан
Сĕтел тулли ларса тухассăн
Ак туйăнчĕ ăшаланса.

Сасартăк лăпăс пальмă айĕн
Апатланан чипер çынах
Сунарçă йыттине пĕр стайăн
Пулса тăрайрĕ пăхана.

Вăрман пек ӳсрĕ пальма йывăç,
Кӳл пулчĕ умĕнчи шӳрпе...
Ах, ас, мĕн курнине усравăç,
Эс çитмĕл енлĕ тĕкĕр пек!

Кĕтмен çĕртен пĕр пайăр çутă
Ӳксессĕн санăн пĕр енне —
Эс куçкĕрет тăватăн чудă:
Пур çитмĕл ен те тĕрленет...

Çак сĕмлевпе туяллă ватă
Уçтарчĕ те хăй пӳлĕмне —
Ларма та аптраса, тăма та
Çӳрерĕ кăшт калле-малле.

Прахут тапранчĕ. Дебаркадер
«Чăваш республĕкĕн N-мĕш çулĕ
Сыв пултăр!» тенĕ йăлтăр-ялтăр
Сăмахсемпе ăна пуç сулчĕ.

* * *

Тапса тăран сарлака Атăл
Кӳрнеклĕ, тăп-тăрă, тулли,
Вăл халь пурне те харăс, хапăл,
Шăлне йĕрмест хумсен кулли.
Çыран юррисене тăнланăн
Выртать мухтавлă шывăм манăн.
Тӳлеккĕн çеç, кĕвве йӳней,
Хускаткалать кервен пӳне.
Анчах та «Атăлстрой сыв пултăр!»
Тени ун ватă хăлхине
Пырса кĕрсессĕн — вăл кинет
Пĕркенчĕ хурлăх пек сĕм тутăр:
«Сыв пулăп-ши, сыв пулăп-ши?» —
Тесе çӳçенчĕ улăп шыв.

Сывах пулатăн, савнă шывăм,
Бетон та тимĕр çырана
Кӳртсен кун пек кăна-и сыввăн
Хăпартăн эсĕ вăй-хална!
Ху юхнă Каспирен те шеппĕн
Тăварсăр хумупа эрешлĕн
Тĕлĕкӳнте те тĕлленмен
Курман-илтмен çĕн илеме.
Эпир сана шартлам пăртан та,
Ăшăхлăхран та çăлăпăр:
Çулталăк пурнăç çутăлтăр,

Çулталăк та çапла пĕр тан тăр —
Иштер вĕçе-вĕçĕн прахут,
Чăваш пӳртне электăр çут.

— Миçе çул сан кахаллăх стажĕ? —
Тесе ыйтать санран Ухсай.
— Ах, Атăл, намăсу ăçта-ши! —
Тесе вăл тăрăхлать кулса.
Тавăрмаллах пулать, шыв-шурăм,
Пайтах ху еккӳпе эс шурăн.
Пайтах алхасрăн çурпала
Вил ӳсĕр уххăр купсалла.
Пайтах хĕллерĕн шур упа пек.
Çитет! Тӳрмен ан пул ĕнтĕ,
— Сыв пултăр çĕнĕ çулăм! — те
Уяв янратнă юрăпа пĕр.
«Сыв пултăр, — сывă пултăр... сыв...» —
Тесе лăпкать çырана шыв.

Ăнланчĕ, килĕшрĕ пуль Атăл.
Куçран çухалчĕ Шупашкар,
Ăна *Чăваш карри* тет ватă,
Çапла каланă аслă Марр.
Шупаш — Чăваш — Пăлхар сĕвемĕ
Çăмхаланать пуçра этемĕн:
Вăл хăйĕн ĕмĕр-ĕмĕрне
Çыран «Кĕмĕл Пăлхарине»
Кăларчĕ те никамăн куçĕ
Ӳкмен, никам тытманскере
Кĕлтунăлла сире-сире
Йăпанчĕ, ачашларĕ, хучĕ.
Мĕн чухлĕ-ши çак çĕр тавра
Йĕре те кулă, мыскара!
(Уллах тĕпенчĕк мыскара)
Прахут çинче кĕсле калаççĕ.
Мĕн евĕр ват историçе
Тултарчĕ кăмăлне йăла çак!
Мĕнле ун чунĕ тăрăлчĕ!
Ун асĕнче халь ярăм-ярăм
Картин эрешленет уяррăн:
Темле журналăн хуплашки,
Сарлакăшпех — тен, юлашки! —
Кĕслеçĕ, çăм шĕлепкепеччĕ...

Пахча, утар, улмуççисем...
Тĕнче туллилĕхне сиссе
Каçса кайса вылять кĕслеçĕ...
Ăçтан ку? «Атăл юрринче»
Курса иккен историçĕ.

Çырулăх, ăслăлăх, ăсталăх
Редакциленĕ вăл ун чух.
В прошедшем веке опоздалый
Темен ăна яш-кĕрĕм, çук.
Саманапа пĕр шай вăл утнă,
Чăвашлăхра çанталăк тунă.
Тӳре-шараллă этемсем
Унпа калаçнă ĕненсе...
Çак яланах чуна киленкĕç
Иртейнĕ тĕлĕк йĕрĕпе
Ун асĕ шурĕ ерипе,
Кĕсле хĕлĕхĕсем — пĕр çепĕç,
Пĕр вирлĕ — илĕртеç, чĕнеç...
Çын тухрĕ палуба çине.

Сасартăк ĕмĕтри идилли,
Сирсе фантазин çут тумне,
Салхуллă, хăп-хăмăр çиттиллĕ
Пулса тухайрĕ куç умне:
Кĕслеçĕ ватă суккăр çеç мĕн.
Пĕр ташлатан, пĕр йĕртмĕш çеммĕн
Мĕнпур илемĕ — çак калпак
Ăшне пăртакçă пăхăр вак
Пуçтарасси. Анчах сайра-çке,
Сайра «Линка» хушшипелен
Укçа чанклатнине илтен.
Сайра «Хуракăшшăн» сараççĕ
Кĕсье çунаттине; сайра
Катаççĕ «Сарă мăйăра».
«Сĕрен» мĕскер тени вăл?
«Олту» мĕн йывăç кĕслеçе?
«Лаштра юман» та «килях, авă»
Ăна мĕскер пĕлтерĕçĕ?
«Уя тухсассăн та...» тек тухтăр-и,
«Уй куртăм» теейместь çак суккăр.
Асап-мĕн, Çулĕç, санпа та
Хăть тир çĕр çирĕм «Çăпата»,
Анчах ан ӳкĕн, сăвăç, савăн:

Историçĕ ăна илтсен —
Эс çырнине пĕлсех-и, тен —
Çурта çутма тăран çын халлăн
Ыйткалакан умне пырса
Пĕр тенкĕ хучĕ кăларса.

* * *

Хĕвелĕн хĕп-хĕрлĕ çатми
Вăраххăн чăмрĕ Атăла.
Сенел пек йăмăх пĕлĕте
Пăхатăн эс ытарайми.
Прахут шăвать анаталла.
Шыв кĕвĕллĕн шĕпĕлтетет.

Тӳлек. Хуллен пĕркет лĕп каç.
Тусем-сăртсем, ката-вăрман
Йыхравлă пулăç киммисем —
Юмахланаç, асамланаç.
Шыва тăсмаккăн, вăрăммăн
Ӳкеççĕ мĕлкесем. Тĕксĕм.

Пĕр-пĕринпе ăмăртмалла
Ахах пек çăлтăр тирĕнет.
Аса килет: çĕр те чăмăр...
Шур акăш шав малтан мала,
Киленĕçлĕ шыв ӳт-тирне
Савса çурать, çилленсе мар.

Çап-çамрăк уйăхăн мĕлки
Хумханать вак хум çинче.
Тен, çав чипер уйăхшăнах
Тутар аваллăх хан пикин —
Сĕйăн пикенĕн миçечĕ
Тӳпенелле кармашăнать...

Çын çывраймасть. Тĕнче пек ватă,
Телей пек çамрăк тĕмсĕлӳ
Вĕçтерчĕ шухăша таçта та,
Тĕрленчĕ тĕрлĕ асилӳ.

Хусан. Çынсем ылмашăнаççĕ:
Пĕри анать, тепри ларать...

Улт-ҫичӗ савӑнӑҫлӑ сасӑ
Ян янратаҫ коридора.

Хутран чӑваш сӑмахӗсем,
Хутран сӑмахсӑр кӗвӗ-ҫем...
Е ак сасартӑк пӗр йӗкӗт
Сӑвӑпалан пӗрӗхтерет:

..........................................
Пӑлхар тӗнчи ҫывхарнӑ чух
Анаслӑ ыйӑхӑн ӑшши
Выранлӑ-ши? Выранлӑ-ши?..

«Суян, Сӑрнаев: *пӑлхар мар*,
*Чӑваш тӗнчи* вӗт Ҫеҫпӗлӗн...»
Чӑнах-и, Эрнепи? Каҫар... —
Ҫапах кӑшт ыйӑх вӗлерсен
Пыратчӗ пуль, этсемӗрсем, —
Ҫӗр ҫухрӑм терӗҫ каймалли...
— Тавайӑр салона кӗрсе
Тӳнер... — «Профессора валли
Тупса парайрӗҫ-ши кают?»
— Тупма пулсаччӗ те. — «Йӑлт-и?
Ларса пӗтни?» — Атя ут, ут,
Анаслӑ ыйӑхӑн чӑпти!.. —
..................................................
Ҫак калаҫу, ҫак татӑк-кӗсӗк
Ҫурма шӳрчев каюталла
Уҫ сывлӑш евӗр печӗ. Кӗҫ ак
Пӗри фокстрот пианинлать...

Ҫын пӑхрӗ сехетне. Хӗр типшӗм
Питне курса тӗкӗр ҫинче
Вӑл шухӑшларӗ: ватӑлтӑм-шим?
Кӗҫ тухрӗ. Салона кӗчӗ.

Паллашрӗҫ. Ҫамрӑксем иккен
Каяҫҫӗ экспедицине.
Ӑслӑлӑх академинчен
Чавма Пӑлхар ишлӗксене.

«Эп скульптор...» — терӗ Эрнепи —
Ҫӳҫне кӗске кастранӑ хӗр,
Хура, хыткан та хӑйне пит
Хӑюллӑ тыткалаканскер.

«...Эп курнă пĕр кĕнекере
Пăлхар хулин барельефне.
Ӳкерчĕк. Çавăнпа пĕрре
Çитсех пăхас теп хулине...

Мана интереслет: чăвашăн
Матриархат пулни авал?
Эп халь пĕр кĕлетке тăвасшăн,
Пĕр ушкăн... *Хăрхăм* ятлă вăл.

Тĕрлĕ саманари хĕрарăм.
Чăваш. Мĕн авалтан хальччен
Эп ун сăн-сăпатне сăнарăм —
Курни-илтни, вуланинчен...

Эп халăх юррисем тăрăх
Чухласшăн пултăм ун чунне.
Тăван сăвăçсемпе кăлăх
Сĕнксе лараттăм хăш чухне.

Пĕр Çеçпĕлпе Иванова
Эп тивĕç пысăк тав тума:
Вĕсем ман хавхаланăва
Чĕртрĕç, чун кӳртрĕç ман тăма.

Пĕр-ик эскиз ӳкерчĕкне
Ярсаттăм эп Шупашкара.
Ак çавсенчен пĕр... пукане —
Пĕтмен-ха: шав улăштарап.

Хĕр шурă кӳмĕркке кăларчĕ:
Акшар  çинче ак-ак утать,
Ак-ак  чĕлхеленсе калаçĕ —
Хĕрарăм кĕлетки тухать.

Пĕркенчĕк вак хутсамланса
Ӳкет ун урисем патне.
Ик аллипе тармакланса
Тытать вăл кăкăр çаккине.

Хаваслăх та ун, çилĕ те,
Йĕрĕннĕ пек те укçаран,
Вăтаннă пек те, — илĕртет
Ăна тĕнче чунтан-вартан.

Куç хӳрипе хĕр чалăшшăн —
Хĕвел çине пуль — тинкерет.
Нихçан та кунашкал ăшшăн
Пăхман вăл уншăн тĕнчере.

«Емансипаци, — терĕ вată. —
Хĕрарăм ирĕке тухни.
Аван... Каçарăр: сирĕн ятăр...
Эсир чăн чăвашран йăхним?

Тĕне кĕмен-им? — тесшĕн эпĕ».
— Мар, — терĕ Эрнепи, — кĕрсе.
Хамран ыйтмасăрах кĕртнĕ.
.............................................

Пуп хунă ят Марье. Анчах,
Пиччем-аппам пурăнманран
Мана пăсса чĕннĕ. Халь ак
Эп турăм хушамат унтан.

Эп эрнекун çуралнă-мĕн,
«Телей çăвĕ пуçу çине,
Тивлет те пулăх иксĕлмĕ»
Тесе мана эпи сĕннĕ.

Тăват çулччен эп пуплемен,
Мĕскĕн анне çулсеренех
Чĕкеçсенчен чĕлхе илме
Мана йăтса тухса кĕнĕ.

Эп астăватăп: ман атте
Çапатчĕ кирпĕч. Эп ялан
Пырса лараттăм ун патне,
Тек айкашаттăм тăмпалан.

— Эй, ман чĕлхесĕр янавар! —
Тесе атте куляннă тет...
Халь акă эп, калаçма мар,
Шапăлтатап ытлашши те.

Анчах нумай йăпатайман
Сăмахласа эп аттене:
Вăл вилнĕ вăрçăра. А ман
Аннем выçса кĕнĕ çĕре.

Унтан приют, колонисем...
Юлашкинчен Ленинградра
Скульптор шкулне пырса кĕтĕм, —
Уйрăлаймарăмах тăмран!

Тахçан пĕрре, ача чухнех,
Петергофра эп хывнă пек:
Мана йăтса чĕкеç çине
Тĕллет анне хăй пӳрнипе.

Çук çав хăтланăшăм хамра,
Эп station уншăн хатĕр тем пама!
Хăть ĕмĕрне çав темăран
Хăтăлас çук: вăл парăм ман.

* * *

Шав сарăлан, шав анланан
Мăнаçлă капăр шывпалан
Шур акăш шав ишет пĕччен...
Ик енлетсе — эс ăнланан,
Куçпа ăна эс хыпалан —
Выртать тем пысăкăш тĕнче.

Анчах прахут — хăй пĕр тĕнче.
Тип çырантан вĕçерĕннĕ
Пассажирсен пĕр пек шăпа.
Анчах кашнийĕн чĕринче
Татах тĕнче: тĕпчейрĕне —
Кам юнашар пырать санпа?

«Эп Атăл хĕрринче çуралнă, —
Тет ват чăваш Эрнепие.
Атте ман пулнă пулăçă
Тата вăл бакĕн çутнă — аллă
Е утмăл çул... Кипке, пийев,
Сăпкам та Атăл пулчĕ çав.

Ак çакăн пек çĕрсем каçкӳлĕм
Вир икĕ «хăлхара» пулсан —
Ирччен вăл кашта аври пек
Чăшăлтатса ӳсен — ăш нӳрлĕ
Çĕрсем, пайтах кĕсмен сулса
Эп Атăл сĕм авăрĕпе.

Пĕлетри: Атăлăн пур куçĕ.
Сайра çынна вăл уçăлать,
Кăвак хуппи пекех иккен
Кăвак хуппи — телей пӳрӳçĕ,
А Атăл пăхрĕ — усала:
Синкер-сехре пулать, инкек.

— Саманасем улшăнасса вăл,
Вăл — хура халăх хуйхине...
Ăнлантаратчĕ атте ман.
Кам ун куçне курать-мĕн — çавă
Сăваплă... Ах, мĕн чул, мĕнле
Ăна курасшăн эп çунман!

Эп ӳсрĕм тĕшмĕшлĕ. Фантаст эп.
Шанап эп халăх сăнавне.
Вĕреннĕ чух та е кайран —
Хам тĕпчевсемшĕн Ибн-Даста,
Фадлан, Шереф-ет-Дин ăшне,
Е Плано Карпини таран

Юпса шыраннă тапхăрта та —
Ялан çав Атăл куçĕпе
Тĕллентĕм эп: пĕр кам кăна,
Мĕнле чĕлхепеле кăтартĕ,
Хăш кĕнекере уçăп эп,
Тăван йăха пĕлсе, ăна?..

Çапла эп тарăхнă. Вăл пулчĕ —
Çав эсĕр çул тытан Пăлхар.
Халь — ишлĕк... хупă куç... сĕм каç...
Мĕскер курман çав Атăл куçĕ?!
Мĕнле сехре хăппи, хăр-хар
Трагедисем унта выртаç!

Аттиллă, каскăн чун çар пуçĕ,
Хĕлхем шеллевсĕр Тамерлан,
Хаяр Иван çĕмренçисем... —
Пурне те курнă Атăл куçĕ!..
Каçарăр: сирĕн анмалла,
Çитсе пыратпăр Тетĕçе.

1936 (?)

## ХĔР ЙĔРРИ

Пин-пин чăваш Аннисенчен пĕри.
Паян эпир сума суса ăна,
Тен, ашшĕ ячĕпе чĕнĕпĕр-и,
Анчах калла чакар пăртак кăна.

Çĕр-çĕр чăваш ялĕсенчен пĕри:
Пур Анаткас, Тури те Вăтакас
Тури касра пурнатьТуймер Энтри
Мунча пек пӳрт. ... кив лупас.

Йĕри-тавра йăмра. Ан пултăр ним,
Çапах та йывăç йăвăрах лартас:
Ун витĕр пурнăç ишĕлни-çĕрни
Çынна пит курăнмасть... Ма кăтартас?

Сăнанă-и эсир? — Чуп-чухăнскер,
Пăхан: ачи-пăчи хисепĕ çук.
«Мĕн тăвăн? Пирĕн ремесли çав-çке...»
Тесе шӳтлет вара çын ун пек чух.

Туймер Энтрин те — Аннинчен асли —
Уллах ухтарĕш виç хăлат йĕкĕт.
Тата вĕтти — ирпе саксем тулли,
Каçпа сентре тулли кĕшĕлтетет.

«Чăваш сахал-ха, — тет Энтри пичче, —
Ĕрчетĕр, пулăшас хама кура...»

Иртен каçчен, хăш чух каçран ирччен
Ача йăсланине итлет йăмра.

* * *

Анни пырать вунулттăра.
Улт çул вĕренмелли шкула
Пĕтерчĕ те виçĕмçул вара
Тек каяймарĕ малалла.

Тырă-пулă манăн пархатарăм
Акрăм, выртăм, тав çĕршывăма.
Кĕреке тулли хăна пуçтартăм,
Маси килчĕ килĕм-çуртăма.

— Аларан койми аки-сухийĕ,
Касмăках та касмăк сар сăра... —
Лăпланать вара хуйхи-суйхийĕ
Асăнса тăссан пĕрер ҫавра.
Нумай пĕтĕ тенĕ, сахал ҫитĕ,
Ăста юрă чул ту витĕр витĕ.

Ҫичĕ хут симленĕ симпыла
Иксĕлми сыпса ĕҫни илемлĕ,
Чĕрене пусса юрла-юрла
Ĕмĕре ят хăварни тивлетлĕ.
Такмакланă чух эп такăнман,
Акатуйĕнче эп арканман-ха,
Куркана эп пушшăн тавăрман,
Мыскара айне пусарăнман-ха;
Анчах пуҫăм янкăр урă чух
Канăҫса курман-ха манăн чун».

Кĕпи те чăвашла
Ун халĕ — кĕскĕллĕ.
Ҫулла уяв калать,
Уллах ларать хĕлле.

Ҫулсем ҫунат хушсах
Вĕҫеҫҫĕ малалла,
Ҫулсем хăш чух хуҫса
Каяҫҫĕ кăмăла.

Анни вунулттăра.
Тăрăхларах куҫсем —
Ҫĕр кăмрăк пек хура
А варринче — хĕлхем.

Хĕлхем амаланса
Кăвар хыпсан куҫра,
Ҫунмасăр сыхланса
Пăхма ҫуках вара.

Анни вунулттăра.
Пăрҫа купи пек ҫӳҫ —
Кĕмест шур тутăра,
Курса киллен те тӳс!

Эп илтнĕ: яш хĕрсем
Хăш чух пĕр-пĕринне
Хĕвĕсене сирсе
Виçеççĕ кăкрине.

«Чей куркине тулать —
Качча кайма пулать!»
Тесе кула-кула
Кĕрлет вара уллах.

Анни вунулттăра,
Анчах кăкри ун, тен,
Тулать пуль алтăра,
Тапса тăрать сĕркен.

Çулсем çунат хушсах
Вĕçеççĕ малалла.
Çулсем хăш чух хуçса
Каяççĕ кăмăла.

Илемлĕ те таса
Чечек пек хĕрсене
Кам пăхмĕ сăхланса?
Кам савмĕ вĕсене?

Хĕрленĕ кив сăхман
Пăссассăн кӳрнеке,
Ăна шухăшпалан
Хывса пăхать йĕкĕт.

Пĕрре кĕр еннелле,
Ĕç пуçтарса кĕрсен,
Тăла пусма çĕрле
Пуçтарăнчĕç хĕрсем,

Анни те пур иккен.
Пусаççĕ юрласа,
Вĕт-шакăрсемпелен
Хутран кăшт алхасса.

(Сыхлан ун пек чухне
Йăр-япăш шăл йĕрен! —
Лекен çатан айне
Е çăм çăмах çиен.)

Таçта. Чĕмпĕр хули пур тет,
Пуянтарах ял-йыш унта
Вĕренкелет те çав — пĕртте
Хал çук-çке çĕклеме çурта.

Çын хушшинче çын пек пулма
Çи-пуç та кирлĕ..., ялти мар...
Пуль-и вăл хăпса тухма,
Эпир çĕрте,
Эпир — тымар...

Çапла Анни «ача пăхма»
Тăрса юлайрĕ хăй килне.
Ӳссе кĕскетнĕ кив сăхман
Çав çеç пĕлет ун хурлăхне.

Çулла килеççĕ Чĕмпĕртен
Ик-виçĕ хĕр, ик-виç ача —
Тин çеç пĕрле вĕренекен
Аннин тантăшĕсем. Анчах
Анни хăймасть: вĕсем асла
Хураççĕ хăйсене кăштах.
Перкелешеççĕ вырăсла,
Çи-пуçĕ хулари... ăçта!

Хăйсем хирте ĕçленĕ пек,
Хăйсем кĕлте кӳрӳçĕн те
Выртаççĕ-çке кĕнекепе
Кĕлте кăрманĕсем çинче...

* * *

Анни юлчех пуль çав:
Саспаллисем-мĕнсем
Кĕресшĕн мар пуçа, —
Вăл çитнĕ çитĕнсе.

Пултарчĕç тăлине.
Хуçи ăсать сăра.
Аташĕ Аннине
Чĕнет ак пăлтăра.

Тăваттăн пăлтăра
Кĕрейнĕ тăнă-мĕн.

Анни алхапăлтах
«Хурах!» та тееймен.

Çĕклерĕç те хĕре
Хупларĕç çăварне,
Кĕрхи сĕм тĕттĕмре
Пăрахрĕç лав çине.

Чаш! — çапрĕç лашана
Чĕр пушăпа тăсса.
Кĕрӳ çăлтăр кăна
Ăсатрĕ трантаса.

Кĕрхи шевле кулать.
Ирпе пĕр йĕкĕте
Тепри ак тĕл пулать:
«Вăрларăмăр вĕт, э!?»

— Ан та кала, ача!
Кам пĕлнĕ? Каç хура... —
асăннă мура:
Начар эпир, начар,
Ял халĕ ыр курать...»

Тĕлĕнекен пулман:
Çапла ĕмĕртенпех.
Çапла. «Пиртен тухман,
Кĕреймĕ пирĕнпе.»

* * *

Тĕреклĕ пурăнать Улай Ларукĕ,
«Пуян Ларук» тесе ахаль чĕнмен.
Тухатмăш куçлă, калăн — вăрттăн ӳхĕ
Пăхса ларать арпалăх ăшĕнчен.

Лупас пек çӳçĕсем кăшт кăвакарнă,
Сухалĕ сарлака, вырăсларах.
Тăн-тăн этем. Хăй утмăла çывхарнă,
Пĕр шăлĕ те ӳкмен-ха, шап-шурах.

Шатрунлă икĕ пӳрт, калай виттернĕ,
Симĕспеле сăрланă; таврашне

Эрешлесе, чĕнтĕрлесе пĕтернĕ,
Лаша касса хăварнă тăррине.
Мăйне авса юртать лаша илемлĕн,
Ăçта çитесшĕн? Йывăр калама.
Ку чухнехи самананне пĕлеймĕн, —
Тет хăй, Улай Ларукĕ, — çăмăл мар...

Ав ĕнтĕ патшана ўкернĕ теççĕ,
Крепитсене пĕтересси çинчен
Ял хушшинче сассем илтĕнкелеççĕ,
Е ĕмĕрлĕх çĕре тытса илсен?..

Çăм тапаканнипе кĕрпе арманĕ
Çĕклеççĕ те пăртакçă... Кам пĕлет?
Тен иртĕ-ха, ĕлĕкхиллех майланĕ
Кĕтсе пăхар кăшт хамăр мехеле!»

Çĕрле. Ларукăн ыйхă çук ку тапхăр,
Вăл тарçине шансах пĕтереймест.
«Кўпчет пуль-ха хура пўртре, масахăр,
А тен ăйăр выçă пулĕ... тĕрĕслес...»

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

## РАЙКОМ СЕКРЕТАРĔ

Икĕ хутлă пысăк çуртăн
Сулахай кĕтессинче
Ултă кантăк эсĕ курăн,
Сар чаршав вĕсем çинче.

Пĕр хĕлхем курăнмасан та
Пур ытти пўрт-çуртсенчен, —
Çап-çутах çав ултă кантăк
Хăш чухне сўнмест ирччен.

Кĕçĕр те ак ялтăраççĕ
Ултă куç çав кĕтесре.
Çавăнтан курса тăраççĕ
Районри мĕнпур çĕре.

Хăш уйра мĕн чухлĕ вырнă,
Миçешер çĕмел, сурат,
Капана мĕн чухлĕ хывнă —
Пĕтĕмпех çак çурт курать.

Итемсем мĕн чухлĕ витнĕ,
Çапасси епле пырать,
Авăнпа мĕн чухлĕ типнĕ,
Мĕнлерех комбайн вырать.

Хăш колхоз малтан тиенĕ,
Хăшĕ юлнă каярах,
Урапи, миххи пĕтмен-и:
Курăнать кунтан йăлтах...

* * *

Кăçалхи калча пек симĕс
Тăрăхла сĕтел тавра
Уткалать этем пĕр тикĕс
Пĕчченех кабинетра.

Ик тăнлавĕ кăвакарнă,
Хăй — пăхмашкăн — вăйпитти.
Питĕнчен касса кăларнă
Пулмалла тăхлан татти:

Çутăрах тĕле пулсассăн
Палăрать аран çĕвви...
Килĕшмест çынна хальхаççăн
Çут çанталăкăн кĕвви.

Николай Фомич Арланов
Вăрçă хыççăн ку енче.
Лере — юн, кунта — тарланă
Вăл пайтах çак çулсенче.

Планшетри кĕске масштаблă
Пĕчĕк карттă вырăнне
Халь Чăваш çĕрне вăл çапнă
Икĕ кантăк хушшине.

Пысăках та мар районĕ,
Вăл çапах та час-часах

Кун кунланă, çĕр çĕрленĕ
Кив машин çинче ларсах.

Тырă тунă, шыв пĕвенĕ.
Çутă кӳртнĕ вăл яла.
Выльăх-чĕрлĕх, сад ĕрчетнĕ,
Лартнă, типĕтнĕ хăмла,

Е учительсене пухнă,
Е стахановецсене.
Кашниех пĕлесшĕн пулнă
Самана кĕввисене,
Çут тĕнче хал-хавалне.

Сывалать-ши-ха Тольятти,
Ăçтарах Мао-цзе-дун?
Югослави пăрăнать-и,
Пирĕнпех-и çулĕ ун?

— Райкомра та пĕлмесессĕн! —
Тет те çын юри каять.
Секретарь пирки хисеплĕн:
— Районра чи вăйлă ят!

Анăça куçать ун куçĕ:
Краков, Прага та Берлин..
«Иртнĕ çулăм паллă, уçă,—
Ӳпкелемĕç!..» — терĕ çын. —

«Паянхи?» Хаçат вăл пăхрĕ,
Тĕрĕслерĕ сводкăна.
Пиллĕкмĕш пыратчĕ... чакрĕ:
Çиччĕ... саккăрмĕш кăна!

Пирĕн çар калла чаксассăн,
Хуласем пара-пара,
Мĕн калатчĕç пуль курсассăн
Тылрисем çав хыпара!

Мĕн шутлатчĕç пуль Уралăн
Е Кузбасăн çыннисем —
Кунĕн-çĕрĕн ура-алă
Кантарса курманскерсем! —

«Юрамасть!..» Миçемĕш хут-ши
Вăл итлерĕ çĕнĕрен?
Çумăр вăйлăрах пек пушшĕ,
Пĕлĕт ишĕлнĕ-и тен!

Алăка такам шаккарĕ,
«Кĕрĕр» терĕ çын хуллен,
Кĕрсенех камне каларĕ:
Литератор леш иккен.

Ак райкомăн секретарĕ
Хирĕç утрĕ, ал парать:
«Ну мĕскер, мĕн хăваларĕ
Сана çак çанталăкра?!»

Тахçанхи тус-йыш пек эсĕ,
Сан тесе вăл калаçать:
«Йĕп-йĕпех пуль... типĕтес-и?»
Леш сăран тумне хывать:

— Типесси-ăшăнасси вăл
Пулĕ-ха... Мĕнле сывлан? —
«Вунă класс пĕтерчĕ  ывăл,
Çавăнтан шухăшласан,

Чавтарсах юртаймасан та,
Япăх мар, хама кура!
Шел, хĕрӳ вăхăтра антăн,
Килмеллеччĕ уявра.

Вăйăсем тăваççĕ пирĕн,
Ерминкке те акатуй...
Ах, çак çумăр... кунĕн-çĕрĕн!
Ха, мĕнле ишет... уй-юй!

Ырă çын халь йыттине те
Кăлармасть-тĕр килĕнчен.
Эсĕ... тема кирлĕ ĕнтĕ!
Ну шыра-ха!.. Хăçанччен?»

—  Мĕнле пулĕ-ха, мĕн тупăп...
— Нумай мар мухтанмалли.
— Ма ялан мухтас? Мĕн курăп...
Тен, çитет пуль ман валли.

Чăвашла вулакаланă? —
«Çавă çав: вулакалап.
— Нигилист! — тесе те ятлăн,
Анчах эп чăнне калап.

Чĕрене вырнаçаймастăр,
Çавраймастăр кăмăла.
Пурнăçа туллин кăтартăр,
Ан вĕренĕр çăмăла.
Çак пĕртен-пĕр пурнăçа!

Хăш чухне вулан-вулан та —
Те Чăваш çĕршывĕнче,
Те Калугăра ĕç: янтă
Штамп мĕнпур çынсем çинче!

Шолоховăн — Дон сăнарĕ,
Сулейманăн — Дагестан.
А чăваш? Вăл тивĕç мар-и
Хăй сăнне курма малтан?

Ну... çиеççĕ вăкăр пуçĕ,
Пыл та çу пур сăвăра,
Кĕслесем янраççĕ, юрă
Çав-ши чи хакли вара?

Кам пĕлет, хăш чух хама та
Тен, курас килет пуль ман?
Ятшăн мар çапла калатăп
Коммунист сăнне ăнлан».

— Тĕрĕс, — терĕ литератор,
Илтнĕ пек хăй шухăшне, —
Хальлĕхе мухтанаймастпăр,
Мĕскер пулĕ малашне...

«Радио итлеп каç-каçăн
Шурă розăсем çинчен,
Тинĕссем çинчен юрлаççĕ,
Те Кавказ, те Крым ку? — тен.»

Этем чунĕн инженерĕн
Ячĕ пысăк та паха.

Эпир пур, хăвах пĕлетĕн,
Техниксем те мар-çке-ха! —

Вара асăнчĕç пĕр тапхăр
Çеçпĕле, Иванова.
— Эппин, памятник лартатпăр?
— Бронзăран! — Аван, аван.

Унтан илтĕнчĕ çав майăн
Маяковский, Горький ак,
Руставели, Пушкин, Байрон,
Низами, Шекспир, Бальзак..

Пушкин, Горький, Данте, Гете,
Руставели те Шекспир,
Низами, Толстой — пурне те
Шыв пек пĕлмелле эпир.

Ачаран илтни тепре,
Çĕнĕлле янрать иккен:
Асне килчĕ çĕнĕрен:
«Çакă çутă тĕнчере
Вăйли çук та этемрен».

Ак сĕтел çинче сасартăк
Телефон шăнкăртатать:
— Мĕнлерех унта çанталăк? —
Шупашкар çемçен ыйтать.

Тахçанах паллană сасă,
Мĕн калас ăна паян?
Пытарас-им е тунас-и?
Партирен епле тунан?

Элеватора пĕр лав та,
Пĕр машин та пушатман.
Пыркалана та — ытла та
Нӳрлĕ пулнă, йышăнман.

Секретарĕн асне юлчĕ
Лаборантка-хĕр Маюк.
Тĕрĕслерĕ те ал сулчĕ:
«Йышăнмастăп, — терĕ, — çук.

Çирĕм пилĕк процент чакрĕ!
Ку — кондицие лармасть:
Норма — вунтăххăр...» Лав кайрĕ
Ыраша кăшт куштарма...

Хĕпĕртерĕ те мухтарĕ
Секретарь ун чух хĕре.
Лавăçа кулса каларĕ:
— Вăрăм пушăччĕ сире!.. —

«...Да, çанталăк тем тĕлне вăл? —
Пирĕн питĕ те йĕпе!» —
Тет обком секретарьне вăл
Халĕ ашшĕ ячĕпе.

Леш шӳтлет: — А пирĕн питĕ...
Вут хыпас пекех уяр! —
«Уярттарăпăр эпир те» —
Терĕ ку. — Юрать, шанар, —

Терĕ леш, унтан вăл хушрĕ:
—Сывлăх, сывлăх мĕнлерех? —
Ну кунта вара ку суйрĕ:
«Сывлăх», — терĕ, — чиперех!»

Пĕр-ик кун малтан аптрарĕ
Вăл суран ыратнипе,
ВТЭК пирки шутлакаларĕ
Тухтăр хытă сĕннипе.

Пĕр çур кун ыйтса пăхас-и
Обком секретарĕнчен?
Операцие выртас-и? —
Тетчĕ вăл паян кунччен.

Халь унпа сăмахласассăн,
Манчĕ вăл çавна йăлтах.
Тĕпчесессĕн те, хавассăн
«Сывă», — терĕ шанмаллах.

Суйрĕ-ши? Тен çыннăн кăмăл
Ăшшине туйнипелен
Чăнласах та ăна çăмăл,
Вăй та хушăнчĕ пуль тен.

Хĕпĕртенĕ пек вăл пулчĕ,
Уткаларĕ те пăртак
Николай Фомич кăшт кулчĕ,
Шухăшлăн каларĕ ак?

Кĕрешӳсĕр, хирĕçлевсĕр
Халиччен пулман прогресс...
Коммунизмра мĕнле-тĕр?
Шутлани, Георгий, эс?»

Литератор шарламарĕ,
Пăхрĕ те тинкерсерех
Тем сăнарĕ, шухăшларĕ.
Секретарь калать хăех:

«...Чи малтан — çак çут çанатлăк,
Çавăнпа кĕрешĕпĕр...»
(Çумăр, çумăр... икĕ тавлăк!)
Леш каларĕ: — Тĕрĕс-тĕр... —

«Курăн, — тет Арланов, — курăн!
Халь вăл ĕнтĕ çывăхра...»
Циолковскипе Мичурин
Ячĕ илтĕнчĕ вара

Виçĕ хутлă этажерка
Литератор асăрхать:
Тимирязов та Лысенко
Вильямс ячĕ курăнать.

Пур çынна та паллă автор
Хушшинчех пур ыттисем.
Пĕрне тытрĕ литератор:
«Чăваш çĕрĕн тăприсем».

«Мĕн пăхатăн? — тет Арланов,—
Çынсене ертсе пыма
Пултараймасан хăтланăп
Тен, тăпра чавалама.

Ман атте — Арлан Хумми вĕт!
Тен, пĕр-пĕр участокра
Агроном пулмашкăн тивĕ
Ватăлмалăх кунăмра».

— Чиперех ертсе пырсан та
Пĕлнĕçем пĕлни чармасть,
Ытлашши пулмасть нихçан та, —
Терĕ хирĕç лăпкă сас.

Анчах хăй вăл шухăшларĕ,
Тĕлĕнсе çав каçхине:
Çĕнĕлле ăнлантăм мар-и
Кулленхи сăмахсене?

Миçе хут илтменччĕ пулĕ
Çав ертсе пырас текен
Икĕ сăмаха, мĕн чухлĕ
Вуламан-тăр ун çинчен!

Колхозра тыр-пул тăваççĕ
Е касаççĕ вăрманне,
Фабрикра пукан аваççĕ
Е сăрлаççĕ пуканне.

Педагог çунать вăл шкулшăн,
Агроном çĕр çĕнетет, çĕре тĕпчет,
Прокурор тăрать саккуншăн,
Тухтăр сывлăх тӳрлетет.

Çĕн меслет тупать хастар ăс,
Бригадир — калав çырать...
Çаксене пурне те харăс
Пĕр райком ертсе пырать.

Миçе тĕрлĕ кăмăл, туртăм,
Миçе шухăш юнашар!
Пур чуна пĕр пек пĕр утăм
Пустарма та çăмăл мар.

Пуринне те ӳркенмесĕр
Хăйĕн чĕлĕхне тупса
Кăларас пулать пĕртен-пĕр
Кирлĕ юрă янратса.

Кам ăна пĕлсе ĕнерĕ?
Кам пăсмасть ăна нихçан?..
Этем чунĕн инженерĕ —
Пирĕн парти вăл малтан...»

Çаплалла çав литератор
Шухăшларĕ çавăн чух.
«Ну, канас пулать, Каятпăр
Ман пата» — тет леш. — Çук, çук.

Ман гостиницăра çуртăм.
Çак районăн хуçине
Чи малта курасшăн пултăм. —
«Юрĕ. Кур-ха ун килне».

— Пылчăк-çке. —
«Тасатăп ĕнтĕ!»
—Тăвăрлас килмест пĕртте! —
«Манăн ирĕк халь: анне те
Арăм, пĕр ача килте.

Анатолий Николайăч —
Аслă ывăл — Хусанта.
Авиастудент!» — Пит лайăх. —
«Ну, калаçăпăр унта...»

Телефонĕ шăнкăртатрĕ:
— Мунча пулнă, — терĕ сас.
«Мĕн? Мунча? Аха... Пулать-тĕр
Шупашкар мунчи те час

Çак кунсемшĕн!..» — тет Арланов
Литератор еннелле.
«..Ну, юрать, пыратпăр, Ланă,
Икĕ милĕк хатĕрле!»

Шав çумăр. Сăнчăр чăлтăртатрĕ.
Йытти уттарчĕ тулалла.
Пĕр-иккĕ — сых ятне — хамлатрĕ,
Унтан палларĕ пулмалла.

Çанталăк пирĕн мар-им? — терĕ.
«Кампур, ан тив! Ку хамрăн! — хушрĕ
Арланов, — вырт кĕрсе». — «Выртас!»

Овчарка кăшт силленкелерĕ,
Кăштах ют çынна йĕрлерĕ,
Шăршларĕ те лăпланчĕ час.

— Сунарçă? — «Перкелеп пăртакçă.
Йытти ку ман — универсал.
Хирте — вĕшле, — килте — хуралçă,
Шывра илет вăл кăвакал...»

Урисене хывса кĕреççĕ.
Хĕрарăм тухрĕ кай пӳрте.
Çуталчĕ лампа,
Чĕлтлетрĕ штепсель. Силленеççĕ.
Хĕрарăм тĕпеле кĕртет.

«Светлана Павловна — ман арăм.
Георгий Львович — ман юлташ.
Фронтри юлташ, ан ман!» — Вуларăм, —
Тет арăмĕ, — Шлаваш? — «Шлаваш».

Ал тытрĕç. Упăшки куç хĕсрĕ:
«Çынни вăл аптрамасть, пырать,
Анчах иртмен ачалăх чирĕ:
Халичченех стихсем çырать!»

Мĕнпурĕ кулчĕç. Йăлтăртатрĕ
Светлана куçĕ çап-çутах.
— Мĕн тăвăн-ха, çăкăр-тăварĕ
Çав пулĕ, — терĕ вăл кулсах.

Шлаваш именчĕ: — Да, çав тĕлĕк
Иртмест-ха. Путлĕ поэтсем
Кăшт намăса пĕлетчĕç ĕлĕк, —
Çитместчĕç хĕрĕхе вĕсем. —

«Ну, ну! Ĕлĕкхине ан тавăр! —
Юнать Арланов, — ирттĕрех.
Джамбул ĕмĕрĕнче пурнатпăр,
Çĕр çул таптасчĕ-ха çĕре!

Ну юрĕ. Мунчана анар-ха,
Виç утăм çех карташĕнчен.
Анне, пĕрер кăкшăм тултар-ха,
Ăш хыпĕ çапăнсассăн тен.

Килти сăра! Шупашкарта вĕт
Лекмест сире вăл япала...»

Тухса ăсанчĕç. Çумăр шавĕ
Кĕрсе çухалчĕ шалалла.

Умне хунар тытса вĕçе-вĕç
Уттарчĕç, тухрĕç пахчана.
Сукмакпала анаççĕ, кĕчĕç
Пăсланакан шур мунчана.

Мĕнле çăвăннине, мĕн евĕр
Каçса кайса çапăннине
Çырасшăн мар эп: кĕвĕлетĕр
Ухсай Кĕлпукĕ вĕсене.

Паллах, туй такмакне чыс тăвĕç:
«Милки — кăлкан, ăшши — шерпет» —
Текелесе те илĕ сăвăç...
Анчах каçхи апат кĕтет...

Светлана Павловна майларĕ,
Çӳрерĕ тулăн-шалăн шав.
Тем ăшаларĕ, тем лăкарĕ:
Хăна-çке-ха. Шаккаççĕ ав.

Хунямăш уçрĕ вашаватлăн:
— Ăшши пĕтмен-и? — «Кĕр кăна!»
— Мунчи тутлах пуль те? Е, салтăн,
Кӳр хам çакам, — тет хăнана.

Шлаваш ним калама аптрарĕ:
«Ан чăрмансам, хамах эп...» тет.
Светланăн кĕмĕл сăмаварĕ
Туй арăм пек çиçсе иртет.

Ачи хура пуçне кăларчĕ,
Чăр пăхрĕ ашшĕн куçĕнчен.
«Эс çывăрмастним? Ах, шăркалчă!
Мĕскер вулан?» — Тимур çинчен. —

«Ку ман аккордеон ăсти, — тет
Арланов. — Пит аван. Юрать.
Тен, композитор пулĕ. — «Питĕ
Вулать». Тен, сăвă та çырать? —

«Вуниккĕре кăна та, — терĕ
Светлана, — çырĕ те ара...»
— Ах, ку хайхи — ачалăх чирĕ!
Каллех виç çын кулса ярать.

Вуниккĕри чăваш ытла та
Чăл-чал. Асламăш пулмасан,
Пĕлместчĕ пулĕ чăвашла та,
Халь ик чĕлхе чухлать аван.

— Мĕн ятлă? — «Вова» — Улатимĕр.
Мухтавлă ятпала çӳрет
Вăл пирĕн, — тет асламăш. — Килĕр, —
Тет амăшĕ, — ларсамăр, — тет.

Тĕрлишĕн тĕрлĕ август каçĕ.
Кунта, çуралнă çĕршывра,
ни ял, ни хулара
Ак кĕçĕр пиллĕкĕн лараççĕ
Пĕр çавракa сĕтел тавра.

«Пĕркенчĕк кĕтесси» тĕрриллĕ
Сĕтел çитти — урай таран.
Шăрттанĕ, çăмарти, хĕп-хĕрлĕ
Помидорсем, хăяр, сухан...

Пĕлместĕп, темĕншĕн Светлана
Пĕрне çисен теприне мар,
Пурне те харăс лартса панă,
Пуриншĕн пуçлăх — сăмавар.
Йăла юлать кăшт, мĕн тăвар?

Тен карчăк кăмăлĕ çапла-тăр,
Хунямăш хушнă ĕлĕкрен:
«Сĕтел тени тулли лармасăр
Илемĕ çук вăл кĕрекен».

Шлаваш сăнарĕ: эрешленĕ
Сурпан çакса диван хыçне.
Сурпан вĕçĕнченех çĕленĕ
Йĕп чикмелли минтерсене.

Çак кинемей тăрăшнисем-тĕр, —
Шутларĕ сăвăç. «У! Сурпан

Сехре хăппиччĕ вăл. Мĕнле хĕр
Хăпартнă сехрене —
Çӳçенĕ халь çакна курсан?

Асра та çук!..» — Ну, — тет Арсланов, —
Пуху мĕн тейĕ те мана,
Ĕçмешкĕн кăмăл пур халь манăн,
Аса илер-ха Немăна.

Çав шыв çинче эп пĕр хура кĕр
Тĕлпултăм çак чăвашпалан.
Мĕнле пек, Ланă? Тен, юрать-тĕр?
Вырсарникун-çке-ха ыран.

— Пĕчĕкçипе, тен, сарăпламĕ —
Светлана тултарать: «Тепле...»
— Хăвăнне ху пĕлен, — тет амăш.
Арланов черккине çĕклет.

Чанклаттарса ĕçсе яраççĕ.
Хуçа калать хăй хăнине:
«Эс тĕлĕнен пулас пăртакçă
Курса эп мĕн хăтланнине.

Кунта ман дисциплина çирĕп,
Светлана тухтăрпа пĕрех».
— Мĕскер юсан вара? Мĕн чирĕ? —
«Осколок-çке ман ӳпкере...»

Шлаваш нимĕнле мар пек пулчĕ,
— А! — терĕ те пĕрре кĕскен,
Ыйтмарĕ урăх, куçĕ тулчĕ
Тем шухăшпа çавна илтсен.

Уитмэн ун асне килмест-и?
«Аманнă этемрен нихçан
Суран çинчен эп тĕпчеместĕп,
Эп хам суранлă унпалан».

Кăларнă пирусне вăл хучĕ,
Светлана курчĕ: «Туртăр, ак!»
— Мĕн эс? — тесе Арланов кулчĕ, —
Мана эс ан пăх. Эп — çур хак.

Ҫынран пырсан халь хаҫҫӑн:
Туртмастӑп та, ӗҫместӗп те.
Килти сӑра кӑна... ку — саншӑн.
Тепре-и? — «Чим-ха, ан хисте!»

## СТАЛИН ПАТНЕ ЯНӐ ҪЫРУРАН

* * *

«Историсӗр халӑх» тенӗ
Тенӗ пирӗн пек халӑхсене.
Тискер кайӑк пек йӗрленӗ
Пире ӗмӗр-ӗмӗрне.

Чӗрене тытса вулатпӑр
Иртнӗ кун кӗнекинче
Ӗмӗрсем хушши таптаннӑ
Халӑх пурнӑҫӗ ҫинчен.

Эсӗ уҫнӑ кӗнекемӗр
Сарӑлса выртать умра:
Тискер кайӑк мар-мӗн эпӗр,
Историйӗмӗр пурах.

Анчах ҫук унта хаваслӑх,
Кӗнекемӗр пит кичем;
Юнпа шӳнӗ, хурлӑ халӑх
Юнӗпе ун листисем.

Ҫаврӑнса пӑхма хӑрушӑ...
Кам пире лутӑркаман?!
Азипе Европшӑн хушӑк
Пулнӑ епӗр авалтан.

Гунсенчен варах-ҫке Атӑл
Юнпа хутӑш хумханать;
Хӑва мар вӑл — хӑрӑк шӑмӑ
Сырса илнӗ ҫырана.

Чингисхан пире тулант
Ҫеҫен хир уртисемпе;

Çунтарса, хăртса юланăн
Вĕçсе иртнĕ çиçĕм пек.

Хум хума хыпар çитернĕ,
Ваттисем — çамрăксене:
Тамерлан килсе пĕтернĕ
Пирĕн лăпкă ялсене;

Хуласем çунса кĕлленнĕ,
Йулнă халăх çаралса;
Вилепе тулса пĕвеннĕ
Чулман-Атăл*, Çарăмсан.

Çурçĕртен анса кĕрешнĕ
Пирĕнпе ушкуйниксем;
Арабсем чеен çӳренĕ
Мăхамет тĕнне сĕнсе.

Ĕмĕртен: каханĕ, ханĕ,
Князь, мăрса, тӳре-шара
Пире Новгородра сутнă,
Пире сутнă Багдадра.

Çичçĕр çул асап та хурлăх
Аснă пирĕн пуç çинче.
Тӳсме çук ик хут чуралăх
Пуснă çĕнĕ ĕмĕрччен.

Пĕрре мар хĕретнĕ епĕр
Çĕре хамăр юнпала.
Пулхăртан варах çĕклетпĕр
Хамăр ирĕкшĕн ялав.

Пĕрре мар чăваш çĕнтернĕ
Хайар «çичĕ ютсене».
Анчах хăй çинчен вăл пурпĕр
Сиреймен чуралăхне:

Çав-çавах пырса тустарнă
Пурлă-çуклă çуртсене;
Çавçавах ясак** турттарнă
Хансене, тăрăнсене...

---

* Камă.
** Хырçă.

Акӑ Атӑл тӑрӑх аннӑ
Ҫӗмӗрсе Хаяр Иван*.
Хуласем, ялсем арканнӑ,
Ҫуннӑ, тарнӑ ҫырантан.

Кимӗсем шӑтса йӑваннӑ,
Путнӑ мирлӗ пулӑҫсем.
Хӑвӑлсем** турпас пек ваннӑ,
Тӑшман урнӑ пыл ӗҫсе —

Вӑл ҫӳренӗ аскӑн, ӳсӗр.
Вилӗм акнӑ ҫӗмренсем.
Вӑрманта саланчӑк, хӳтсӗр
Марта вӗҫнӗ сӗрлесе.

А улпут тавраш̆ӗ пирӗн,
Ӗмӗрхи йӑлапалан,
Шур патша умне тирпейлӗн
Тухнӑ чаплӑ тумпалан.

Патшана симпыл ӗҫтернӗ,
Халалланӑ сар хӗрсем.
Хусана илес ҫӗрте-мӗн
Пулӑшма пулнӑ хӗрсе.

Сахьан атӑ, симӗс атӑ,
Кӗмӗлленӗ йӑрана***
Улталанӑ сахал мар-тӑр
Ҫӑпаталлӑ урана.

Ахах тирнӗ хӑнтӑр ҫӗлӗк,
Ӗнчӗ куҫлӑ шур пушмак
Пусмӑрҫа вӗсем пӗр ҫиллӗ,
Пӗр усал сӑмах хушман.

Вара хамӑр ҫӗрте хамӑр
Эпӗр пулнӑ чурасем.
Ҫӗршыва хупланӑ тыткӑн,
Аснӑ, урнӑ хурахсем.

---

* 1551—1552 ҫҫ.
** Вӑрман пыл хурчӗ йӑвисем.
*** Йӗнер пускӑҫӗ.

Ясаксем виç хут хăпарнă.
Пире хамăр алăпа
Крепăçсем туса ларттарнă
Хамăра пăчăртама.

Етĕрне, Чикме, Улатăр,
Кăрмăш, Тетĕш, Шупашкар —
Касамат пек пур хула та,
Пур çĕрте те каскăн çар.

Уйсене ак тăпăлтарнă
Улпутсем, мăнастырсем.
Чунсене те сăнчăрланă
Хĕрессем çине тирсе.

Халиччен сыхланнă юрă:
«Йăлăмра — шыв-хум сасси,
Ку енче — тӳсме çук хурлăх
Чан сасси те пуп сасси...».

Ак çакна кура тапраннă
Улталаннă чăвашсем.
Сăр, Сĕве, Çавал хуранăн
Вĕресе тăнă сиксе.

Епĕр халĕ асăнатпăр
Янчура утамана;
Алек-паттăр* вăрçнă харсăр,
Сехĕрлетнĕ Ивана.

Атăл тăвăллăн хумханнă,
Вăрмансем шавланă тек.
Пинĕн-пинĕн çар тăратнă
Хастар чунлă Ахметтек**.

Анчах мĕн вăл сан çĕмренĕ
Шереметьев туппине!
Пире çĕмĕрнĕ, çĕнтернĕ,
Лутăрканă ут айне.

---

* Иван патша çарне хирĕç кĕрешнĕ чăвашсен пуçлăхĕсем.

** Шереметйĕв князь çарне хирĕç кĕрешнĕ халăх пуçлăхĕсенчен пĕри.

Йениккейӗн йачӗ юлчӗ,
Ассенчех пурнать Йелппай...
Халь вӗсен йатне чӗртетпӗр
Сӑвӑпа та юрӑпа.

* * *

Ҫӗр мунча пек пӑчӑ пурнӑҫ
Хӗсӗнет хӗсӗннӗҫем.
Чӑл та пар тарса пытаннӑ
Сехри хӑпнӑ этемсем.

Вӑрманкас, Ҫатра, Паланлӑ,
Ҫырмапуҫ та Упавар —
Ҫак йалсен йатне хӑварнӑ
Пире ырӑ пурнӑҫ мар.

Чӑнласах упа йӗнни пек
Хура пӳрт ӑшӗ тӗттӗм:
Курӑнмасть хӑмпӑ тӗнни те, —
Йавӑнать кӑвак тӗтӗм.

Сухапуҫӑн ҫук ним тухӑҫ,
Пӗр пус та кӗрет хӗнпе.
Ваттисем каларӑш: пурнӑҫ —
Йӗппе пусӑ алтнӑ пек.

Пуйансен ҫӑкри те йӳҫӗ;
Тарҫа лекрӗн — ӗмӗрлӗх.
Ҫӗтӗк-ҫатӑкӑн ҫи-пуҫӗ
Ҫурӑлать йыт вӗрнипех*.

Ак тӑса-тӑса хураҫҫӗ
Чухӑна хурал пӳртне;
Ҫара ҫанлӑн ҫунтараҫҫӗ
Чӗрӗллех сӗвеҫ ӳтне.

Вӑрмана час-час янратнӑ
Шӑнкӑрав сассийӗсем:
Пристӑвпа тиек кустарнӑ
Хырӑҫ-марӑҫ тиесе.

* Халӑх халапӗ.

Кучченеç шаккать тăлмачĕ;
Куштансем, усламçăсем
Ашкăнаççĕ, мăшкăлаççĕ
Ял хевти хавшанăçем.

Çаралать çĕршыв кунран кун...
Таврари сĕм вăрманта
Ши те ши шăхрать ак таркăн,
Çĕн хавха вăл вăратать.

* * *

Кам каланă — аслă Атăл
Типсе хухăнĕ тесе?
Кам шанасшăн халăх-паттăр
Ĕмĕрех пуç пĕкессе?

Кам каланă — Алтăр çăлтăр
Сӳнсе ӳпĕнĕ тесе?
Кам шанмасть çăраллă сăнчăр
Ункăн-ункăн сӳтлессе?

Шăпи тулĕ! Халăх пирĕн
Чура чунлă çуралман.
Ак хăпарнă шыва хирĕç
Аслă Раçăн утаман*!

Тепĕр хут хумсем çĕклеççĕ
Чĕррĕн пирĕн ятсене.
Халь пире аса килеççĕ
Пихтемей те Аттеней.

Воеводăсен хаярĕ,
Улпутсен сехре хăппи —
Çĕкленет Тутимĕр çарĕн
Йывăçран тунă туппи.

Çĕкленеç вĕсем тем чухлĕн:
Ессаул маттур Емай,
Иселпей, Искей Пайтулĕ...
Чĕннĕ паттăр çапăçма.

---

* Степан Разин пăлхавĕ, 1670 ç.

Йӳçсе çитнĕ аслă çилĕ
Тепĕр хут силлет çĕре...
Анчах витĕмлĕ те вирлĕ
Долгорукован йĕтре*.

Тепĕр хут пире кĕлернĕ
Ашайми юн сĕлтĕше...
Атăл шывĕ чĕр пĕверрĕн
Выртнă йăмăх тĕлкĕшсе.

* * *

Ĕмĕрхи лаштра юманлăх,
Хырлăхсем йĕри-тавра
Тахăш те пĕр хапсăнмалăх
Ӳснĕ пирĕн çăршывра.

Тăрана пĕлми ăмсанчăк
Улпутсемшĕн Европа
Аслă Петĕр каснă кантăк
Сăмалалă пуртăпа.

Ак хирме пуçлаççĕ пирĕн
Куç курми сĕм вăрмана,
Лашман** çулĕ урлăн-пирлĕн
Хывăнса такăрланать.

Ялĕ-ялĕпе хăваççĕ
Халăха вăрман ĕçне,
Чăвашсем карап тăваççĕ
Леçме Балти тинĕсне.

Улăп пĕвĕ пек кĕрешĕ
Шар çурса персе анать
Те йурлаççĕ, те йĕреççĕ —
Ян яраççĕ таврана:

«Эх, вушар иккен юманĕ!
Хушăнмасть пăчăк кĕрпи.

---

* 1670—71 ç.ç. Чăваш çĕршывĕнчи пăлхава пусарма йанă çарăн пуçлăхĕ Долгоруков князь пулнă.

** Карапсем тума вăрман касакансемпе турттаракансене (XVII ĕмĕрпе XIX ĕмĕр пуçламăшĕ хушшинче) çапла ят панă.

Вăрманах выртса юлам-и?
Ют çĕрте эп çĕрĕп-и?

Пĕрене чутлатпăр тетпĕр,
Шăрататпăр сăмала:
Чĕрене чĕлетпĕр епĕр,
Вĕрететпĕр кăмăла.

Сăрхăнать юман сĕткенĕ
Хуппи айĕн çӳлелле.
Лашман çурăмĕ вистеннĕ
Саламат вĕçĕпеле.

Сирпĕнет юман турпасĕ
Ах, атьсемĕр, аякка!
Хăçан çӳрĕп эп — сунарçă —
Ирĕк пуççăн кайăка?

Ыткăнать, витмест-çке савăл
Шăнса кайнă каскана.
Ыткăнас та çапăнас вăл
Этем мурĕ патшана!..»

А лере, сивлек тĕтреллĕ
Балти шывĕ хĕрринче,
Тепĕр юрă кĕвĕленнĕ
Чура халăх чĕринче:

«Çил çĕкленчĕ, çил лăпланчĕ,
Хум çапать те хум чакать.
Ăçта юлнă пирĕн шанчăк?
Кам вăрланă шанчăка?

Шурлăхра епĕр пĕтетпĕр,
Чĕркуççи таран шывра.
Хутлă-хутлă çурт çĕклетпĕр
Чултан мар-çке — шăмăран.

Анчах çитĕ вăхăт, харăс
Эпĕр тухăпăр пĕрре —
Чăваш, пушкăрт, мăкшă, вырăс —
Хамăр тунă Питĕре.

Эпӗр тӑрӑпӑр хаяррӑн,
Хӑтӑраймӗ йӑлӑну:
Ес нумай пире таптарӑн,
Чаплӑ пӑхӑр юланут*!

Пирӗн урлӑ эс сиктертӗн
Лашуна ҫӗн ӗмӗре.
Ҫав-ҫавах туртса илмешкӗн
Тивӗҫ епӗр чӗлпӗре!..»

Ҫакнашкал юнавлӑ юрӑ,
Паттӑр шухӑш ҫӗклесе,
Хир-хир урлӑ, вӑрман урлӑ
Ялсене кӗнӗ вӗҫсе.

Аслӑ Петӗр ҫавна сиснӗ,
Илтнӗ тейӗн ҫав юрра:
Пӑшал, пуртӑ, ҫӗҫӗ, сенӗк
Тыттарман вӑл Чӑвашра**.

Улпутсем пиртен хӑранӑ,
Пире тимӗр суттарман.
Тимӗрҫӗсене кӑларнӑ,
Хӑваланӑ пур ялтан...

Юмахра авал йуптарнӑ
Фенӗкс кайӑк евӗрлӗ —
Миҫе хут пире ҫунтарнӑ,
Миҫе эпӗр чӗрӗлнӗ!

Пире кӗл туса хӑварнӑ,
Танлаштарнӑ ҫӗрпелен.
Хӗлхем ҫеҫ тивет — кӑваррӑн
Ялкӑшатпӑр ҫӗнӗрен.

Эпӗр — Атӑлӑн хӑравсӑр
Ӗмӗрхи пӑлхавҫисем —
Епӗр кар сиксе тӑрайнӑ
Пӗр йыхрав кӑна ҫитсен.

---

* Пӑхӑр юланут (Медный всадник) — 1-мӗш Петӗр ятне лартнӑ палӑк.

** Ҫак указа 1-мӗш Петӗр 1697 ҫ. кӑларнӑ.

Ак тепре Раççей кисреннĕ
Кĕтерин патша çивти
Тĕпĕнчен — ялти тиекĕн
Хур шăмми вĕçне çити.

Ейĕк шывĕ ейӳ кайнă,
Атăл тухнă çырантан
Емельян — маттур Иванăч —
Пăкачав хумхатнăран*.

— Утаманăмăр! тыт-халĕ
Йĕкĕр сарă алтăра.
Чăваш халăх чун хавалĕ
Иксĕлми вăй пултăрах!

— Утаманăмăр! çырт-халĕ
Пирĕн çăкăр-тăвара.
Тăшману сан — чăваш ялĕн
Тăшманех вăл, тавăрар!..

Ак вĕçсе туха пуçларĕ
Кунсерен «хĕрлĕ автан».
Улпутсен паçмин пушарĕ
Курăнать таçтан-таçтан.

Хыпăнать Айтар** кил-çурчĕ,
Арпаланчĕ кив капан.
Харампырăн шалçи тулĕ
Тулма тивĕçлĕ таран.

Чиркӳсем чăлпар саланнă;
Пайтах пуп таврашсене
Типшарпа çакса суллану
Хăйсен хапхисем çине...

Улпутсем хыт йăлăнаççĕ:
Иккĕмĕш Кĕтеринтен
Хĕç-пăшаллă çĕнĕ тарçă
Тилмĕреççĕ Питĕртен.

* Пугачев пăлхавĕ, 1774 ç.

** Пугачевпа пĕрлешсе пăлханнă халăха пусарнă чух чапа тухнă чăваш çĕр улпучĕн хушамачĕ.

Пинӗн-пинӗн сӑнчӑрланӑ,
Каснӑ пирӗн чӗлхене,
Сӑмсана ҫурса кӑларнӑ,
Ҫӑлса илнӗ чӗрнене.

Хамӑра ӗмӗр ҫаратнӑ
Тӳресем пире ҫакса
Сулӑпа юхтарса янӑ,
В ӑ р ӑ с е м тесе ҫырса.

— Утманӑмӑр, хур пултӑн
Михельсонӑн ҫарӗнчен.
Анчах пурӗпӗр улпутӑн
Вӑрлӑх пӗтӗ ҫӗр ҫинче.

Вӗсем вуннӑн, эпӗр — ҫӗрӗн,
Вӗсем пин, эпир — мӗльун!
Каллах кар тӑрӑпӑр чӗррӗн,
Сайа каймӗ тӑкнӑ юн.

Ак каллех Сӑкӑт Ваҫлейӗ*,
Хӑлхине касӗҫин те,
Ҫӗн йыхрав илтсе вӗҫлейӗ
Ӗмӗтленнӗ ӗмӗте.

Ҫав вунҫич ҫулхи хастарӑн
Чун хавалӗ малашне
Вӗрилетӗ шӗл кӑваррӑн
Хӑлат куҫлӑ яшсене.

Ак тепре хӗн-хур амакӗ
Пуснӑҫемӗн ҫурӑмран
Тапса сикӗ урхамахӗ
Утаманӑн — Ваҫанкан**!

* * *

Хальлӗхе ҫӑхан ҫунатлӑн
Карӑнать сӗм тӗттӗм каҫ.
Пире пурте пӗр каварлӑн
Хупӑрланӑ та сӑхаҫ.

---

* Хусан кӗпӗрнинче Пугачев майлӑ тӑрса кӗрешнӗ халӑха пусаракан ҫар пуҫлӑхӗ.

** Пугачева ҫывӑх тӑрса кӗрешнӗ паттӑре.

Пуянсем тĕне кĕреççĕ
Çĕршĕн, шывшăн сутăнса,
Ял-йыша ирĕксĕрлеççĕ,
Салтаксем çӳреç урса:

Кӳпчекпе çапса ватаççĕ
Çӳпçесен тĕпĕсене;
Манахсем тăпăлтараççĕ
Ывăça мĕн лекнине:

Шӳлкеме, хушпу, пир-авăр,
Çăмарта, шăрттан та çу,
Сурăх тирĕ, çăм, сӳс-кантăр —
Ӳпĕнсех йулать çӳпçӳ.

«Миççие полицирен те,
Полицийе миççирен
Уйăрмашкăн май килмен», — тет
Хусанти пĕр ерхерей.

Çавăн чух тӳрккес, пăлхавçă
Елĕкхи лашмансене
Уделсен* чури тăваççĕ,
Пусараç çĕн хур айне.

Сулланаç вара, мăнтарăн,
Сухапуçĕ хыçĕнчен.
Йăран ăшăк, хуйхă тарăн —
Юрăпа вăл сирĕлмен...

* * *

Пире панă виçĕ тивĕç —
Çулне виççĕ пухăнма**:
Январьте хумашкăн хырăç,
Апрельте — çĕр уйăрма,

А октябрьте пуçтарнă
Туимккасене хырма.

---

* XIX ĕмĕр пуçламăшĕнче Кăрмăш, Чĕмпĕр, Пăва уесĕсенче пурăннă чăваш хресченĕсене удел çĕрĕ (патша таван-пĕлĕшĕсен çĕрĕ) çинче ĕçлеттермелле тунă.

** Граф Киселев 1838 ç. кăларнă реформă.

Пӗр шалҫа йулми тустарнӑ
Татмасассӑн парӑма.

Ваттисем ӗнсе хыҫаҫҫӗ,
Юптараҫ сив кӑмӑлпа:
— Вӗренти утран ыйтаҫҫӗ
Ирӗкри утсем апат!

Шӑн паранкӑ ларттармашкӑн
Пуҫласассӑн ялсене —
Астутарчӗҫ тепӗр ӑстрӑм
Пӑкачавӑн вӑхӑтне.

Тапранать хай урӑм-сурӑм
Ҫӗрулми пӑлхавӑрӗ:
Пӗр кунта вӑл ҫӗршер ҫухрӑм
Арасланчӗ, ялкӑшрӗ.

Анчах пит хӑвӑрт ӑнкарнӑ
Хусанта мӗн иккенне, —
Сулмакраххӑн авӑрланӑ
Кӗпӗрнаттӑр туппине.

Казаксем ҫитсе хӳтернӗ
Хавхаланнӑ халӑха,
Тепӗр хут юнпа шӳтернӗ
Халӑхри хӑюлӑха.

Палатай*, пӑлхав ҫар пуҫӗ,
Темиҫе ҫӗр тусӗпе
Пиншер хула айне пулнӑ
Хӑйӗн харсӑр пуҫӗпе.

Ун ик куҫ пекех ӗненнӗ
Кӗркури Васлейӗпе
Ҫемен Ҫитӑрӗ тертленнӗ
Ӗмӗр-ӗмӗр Ҫӗпӗрте.

---

* «Паранкӑ пӑлхавӗ» пулса иртнӗ вӑхӑтра (1842 ҫ.) пӑлханнӑ хресченсене ертсе пынӑ пуҫлӑхсенчен пӗри.

* * *

Утмăл пĕрмĕш çул хăтланчĕç
Манифест кăларанçи.
Анчах халăх улталанчĕ,
Хушăнайрĕ çеç выççи...

Çулсерен юра еретпĕр.
Çĕр сахал. Тӳлев нумай.
Хуçасем патне сĕнккетпĕр
Вĕсен тарçисем пулма.

Хуçасем хута яраççĕ
Укçана усламăçла:
Çĕр тара илсе акаççĕ,
Ларттара пуçлаç хăмла.

Укçа чул каса пуçланă.
Каскăн çын — Ехрем хуçа
Пирĕн мăй çине утланнă,
Пухнă çын вăйпе укçа.

Тихомиров чăпта лаçĕ
Кăкăрсăр туса пире
Шупашкарăн ятне ячĕ,
Мăшкăллатрĕ Раççейре.

* * *

Эх, çĕршывăмăр, мăнтарăн!
Кам сана юп курнă-ха?
Сана ĕмнĕ, тăпăлтарнă
Пурлăхна пур йыт-качка.

Çăварна та çăвархланă
Туртса илнĕ чĕлхӳне.
Пуйансем юри пытарнă
Хăйсем чăваш иккенне.

Чухăнсем савса упранă
Хăйсен тăван чĕлхине.
Пирĕн Çеçпĕл сăвăç çырнă

Асилсе çав иртнине:
«Эй, ваттисем! Эй, ват çынсем!

Авал чăваш асаплă пулнине
Çамрăксене каласа парăр:
Тăван çĕршывăн капăр чĕлхине
Ялан савма хушса хăварăр.

Эй, ваттисем! Пĕтĕм чĕререн
Сире пиллетпĕр ыр пилпе.
Эсир асапсене парăнманнипе
Чăваш чĕлхи чĕрĕлчĕ вилĕмрен».

## САРКЕЛ

*Памяти воина-комсомольца Германа Лашманова*

«...там огненным котлом кипела земля; все разлеталось в прах — железо и камни, но красноармейское сердце оказалось крепче камня и железа».

*А. Толстой*

### 1

Зловещие блики пожаров
Катила ночная река.
В траншее над выжженным яром
Я встретил бойца-земляка.

Давила тоска в обороне,
Гнев сердце и душу точил.
Зря слово никто не проронит,
И вдруг — взмыла песня в ночи.

То пел соплеменник мой юный:
«Саркел мой, прекрасный Саркел!
Какие поведают струны,
Как в чёрные дни ты скорбел?

Кто скажет, о город священный,
Как дух твой, горя, не сгорел?
Живет он в мечте сокровенной,
Саркел мой, прекрасный Саркел!

Пусть рухнули стены и двери,
Но в сердце народа ты цел.
В тебя, как в победу, мы верим.
Саркел мой, прекрасный Саркел!»

**2**

Я песнею был зачарован.
Но нету концерта, есть фронт.
И в зареве сизо-багровом
В полнеба пылал горизонт.

Визжали осколки. Я долго
Не мог к земляку подойти.
Откуда ты, песенник? «С Волги,
Где сходятся мира пути».

А кто, — я спросил возбужденный, —
Сложил эту песню, земляк? —
И юноша смуглый смущенно
Ответил не сразу мне так:

«Не сто лет тому и не двести,
Веков, может, десять назад,
Был город чувашский в том месте,
Где ныне стоит Сталинград.

И звался тот город Саркелом,
И также когда-то сгорел.
Мне сказывал дед... И все пел он:
Саркел мой, прекрасный Саркел!»

**3**

Осенние долгие ночи.
Полынная горечь костров.
Все сроки казались короче,
Чем грозный возмездия срок.

Но день наступил долгожданный:
Еще не окреп первый лед.
Как вражьи услышали станы
Крылатое наше: «Вперед!»

Гремела кругом канонада,
Сжимая расплаты кольцо.
И смерти, шагающей рядом,
Мы честно глядели в лицо.

Лишь песня, как ласточка, где-то
Забилась у сердца в углу.
И быть ей не скоро пропетой,
И песенник стал словно глух.

В атаку пошли с земляком мы.
Снег первый от крови краснел.
И слов не услышал знакомых:
«Саркел мой, прекрасный Саркел!»

**4**

...Шла рота сквозь вьюги, метели,
Недели и месяцы шла.
Шинели на нас леденели.
Боль Родины сердце нам жгла.

Глаза закрывать мы не смели,
Чтоб вдруг не увидеть страшней.
Мы по трое суток не ели,
Забыв о своем старшине.

Не думали мы о наградах
Под ветра пронзительный вой.
Мы знали: мы шли к Сталинграду,
Что было превыше всего.

И каждый мы шаг брали с боем —
В сугробах, в зигзагах траншей.
И враг обреченный был вдвое
Упрямей, коварней и злей...

Мы в город вошли на рассвете,
Земляк на меня посмотрел...
Не думал он пулю здесь встретить,
Саркел мой, прекрасный Саркел!

**5**

«Отец воевал за Царицын,
Дед пел про Саркел на свой лад.
А мне, знать дано породниться
Навеки с тобой, Сталинград!..»

Так, раненый, лежа в подвале,
Со мной говорил мой земляк.
И другу я, горем подавлен
Помочь был не в силах никак.

Взгляд карий то делался мутным,
То вдруг загорался огнем.
И в мире, казалось, то утро
Остались мы только вдвоем.

Кто знал, что в тот день знаменитый
Решали мы «быть иль не быть».
Что это последний день битвы,
Несущей прозренье судьбы!

Враг где-то уж с флагом шел белым,
А юношу бред одолел.
И вздохом последним пропел он:
«Саркел мой, прекрасный Саркел!..»

**6**

Не с громкою славою бранной,
Не в алом сияньи знамен. —
Он умер, как тысячи равных,
Кто в жизнь и свободу влюблен.

Не трубы его провожали,
Не флейты рыдали над ним.
Салют из винтовок мы дали
Над берегом, вечно родным.

И в братской могиле без гроба,
С сынами десятков племен,
Остался чуваш под сугробом,
Февральской пургой занесен.

Но память о нем, как последней,
Пропетой им песни стихи,
Пронес я дорогой победной
От Волги до Вислы реки.

Мы мчимся от края до края
И, что бы в походах ни пел,
Одно я с душой повторяю:
Саркел мой, прекрасный Саркел!

1944, август

# ӐНЛАНТАРУСЕМ

Чăваш халăх сăвăçи Петр Хусанкай (1907—1970) илемлĕ сăмахлăх çӳпçине кĕске сăвă-юрăпа кăна мар, шултра калăплă хайлавсемпе те нумай пуянлатнă. Кăларăмăн 1—2-мĕш кĕнекисенче унăн чун çуйăмĕн сăввисем пичетленчĕç, 3-мĕш томра — поэмăсем, новеллăсем. Сăвă ярăмĕсем, лирикăлла кĕске поэмăсем (чылай чухне вĕсем вăрăм сăвăсем пекех), калавла тулли сюжетлă е темиçе пайлă та романла анлă поэмăсем аслă сăвăç лирикăра та, эпикăра та маттур пулнине кăтартаççĕ.

Петĕр Хусанкайăн малтанхи поэмисем пичетленнĕçемĕн критика айне лексе пынă. Пуçламăш тапхăрта вĕсем пирки тĕрĕс те, тĕрĕс мар калани те нумай. «Паянхи поэма», «Сона», «Ишшак Верти», «Поэтпа миссионер» тата ытти те хайлавсем идеологи хăйри çине лексе сăвăçа сахал мар пăшăрхантарнă. «Маяковскилесе» картлашкаллă туса (сăкăлтакласа) çырнă е таçти çурçĕрти-кăнтăрти сăнарсене çĕкллентерсе (романтизацилесе) кăтартнă малтанхи поэмăсенче çамрăк Хусанкайăн вĕри харкамлăхĕ кайранхи хайлавсеннинчен ытларах сисĕнет. Унта шухăш ирĕкĕ, кăмăл хастарĕ, чĕлхе вылявĕ 50—60-мĕш çулсенчи поэмăрисенчен чылай уçăрах. Ан тив, вĕсенче васкавар алхапăллăх, самантлăх хавха, публистикăллă хĕрӳлĕх, анатрилле пуплевĕн хыçалти пусăмĕ тăтăшах сике-сике тухтăр, пĕрех поэмăсем çăмăллăн, йыхравлăн вуланаççĕ. Вĕсен чĕлхинче, сăнарлăхĕнче вăхăт таппи, самана сăнĕ ăмсанмалла ярт курăнса пырать!

Аслă ăста пулсан та, Петĕр Хусанкай самана пуслăхĕ айĕнчен яри ирĕке тухайман. Яшлăхри хăюлăхпа çырнă темиçе поэми пичетленмесĕр юлнă. Вĕсенчен пĕри (Майра инке е сенкер тынас») вулакансен аллинче упранса юлнă копи тăрăх пичетленет. Чылайăшне поэт кайран самаях тӳрлетнĕ. Чĕлхе енчен кăна мар.Шухăшпа сăнарсене те. Пирĕн шутпа, кайранхи якату поэмăсене вăйлатнă, вĕсен философилле янравлăхне хăпартнă. Çав вăхăтрах «Паянхи поэма» йышши хайлавсене малтанхи тĕслĕхсемпе танлаштарса вуласан аван. Паллах, кашни çĕнĕлĕхе кăтартса пыма, мĕншĕн апла тӳрлетнине ăнлантарма пулать. Ку вăл хăй пĕр тĕпчевлĕх ĕç. Кунта тĕслĕх вырăнне «Çирĕм улттă», «Паянхи поэма»,

варианчĕсемпе кăшт анлăрах танлаштарса пăхма шутларăмăр. Çав танлаштарусем урлă хальхи вулакан икĕ вăхăт сывлăшне туйма пултартăр.

Чылай вăхăт пичетленмесĕр выртнă «Хури», «Хупă çырупа «Уçă çыру» XXI ĕмĕрте илемлĕх (эстетика) шайĕпе пур вулакана та тыткăна илеймĕ. Анчах вĕсенче çап-çамрăк Хусанкайра Кĕçтенттин Ивановпа Çеçпĕл Мишинни пек вĕри шухăш, савăнăçпа хурлăх, халăх шăпи тапса тăнине вулакан асăрхатех. Çав хайлавсене тĕплĕ тишкермесĕр Петĕр Хусанкайăн ӳсĕм çулне, шухăшĕпе чунĕн анлăшне тĕрĕс хак пама пулмасть. Поэт халăх шăпине вăл вăхăтри чылай-чылай историкрен тĕрĕсрех кăтартса хăварнă. Унăн çак чысне вăхăт нихçан та илеймĕ!

Паллă тĕпчевçĕсем (С.П. Горский, М.Я. Сироткин, М.И. Фетисов, В.А. Долгов, С.Я. Ялавин, В.Е. Митта, Н.И. Иванов тата ыттисем) Петĕр Хусанкай поэмисене таса кăмăлпа, тӳрĕ сăмахпа тишкернĕ. Ăналантарусенче кашни хайлава кам-кам тишкернине палăртса хăварман, мĕншĕн тесен ятарлă библиографи кăтартмăшĕ тăрăх вĕсене кирек кам кам та çăмăллăнах пĕлме пултарать. Сайра тĕл пулакан ятсемпе сăмахсене йăлтах ăналантарса хăварма май килмерĕ. Малашне, П.П. Хусанкай 100 çулĕ тĕлне, пурнăçĕпе пултарулăхĕн энциклопедилле сăмахсарне кăларма тытăнсан, аслă сăвăçăмăр ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă мĕнпур пулăмсене йĕркипе уçса пама пулĕ.

Кĕнекене пухса йĕркелекентен килмен сăлтавсене пула кунта хăшпĕр произведенисем (вĕсене поэт хăй поэмăсен шутне кĕртнĕ пулин те) вырăн тупаймаççĕ. «Тавлашу», «Элтиван», «Микул турăпа Кăмиссар Курийĕ», «Чăваш калавçине Петĕр ывăлĕ Мĕтри Юмана... уççыру», «Улатимĕр хапхипе Шуртиван тракти» поэмăсем «Çырнисен пуххин» 1-мĕш кăларăмне кĕнĕ. «Тăван çĕршыв», «Таня», «Çĕрйĕркелӳ», «Магнитту» тата ытти эпикăлла поэмăсем ку кăларăма вырнаçаймарĕç. Вĕсем 4-мĕш кĕнекере «Аптраман тавраш» романпа пĕрле пичетленĕç.

Поэтăн килти тата Шупашкарти тĕрлĕ архивсенче алçыру хальлĕн упранакан сăвăсемпе кĕске поэмăсем сахал мар. Вĕсенчен хăшне-хăшне («Интервью», «Таса хĕр Тарье», «Тĕкĕр умĕнчи Венера») Чăваш Республикинчи обществăлла организацисен архивĕнче çырса илнĕ. Вĕсене тупма пулăшнăшăн Н.И. Иванов (Микки Микули) тĕпчевçе тав тăватăп.

Вырăсла çырнисем («Саркел» поэмăсăр пуçне) 3-мĕш тома кĕмен. Вĕсене уйрăм кĕнекен пичетлесе кăларни вырăнлă.

Кĕнекене йĕркипе вуласа пыракан çакна асăрхама пултарать: умлăхыçлă пыракан хайлавсенчен пĕрисем хальхилле тикĕс вуланаççĕ, çав вăхăтрах çырнă пĕр-ик поэма такăнчăклă, сăвăрман пек туйăнаççĕ. Ку вăл пĕрисене авторĕ кайран юсанинчен, теприсене вăл урăхран алла тытманнинчен, тӳрлетменнинчен килет.

Хайлавсене кĕнекере вĕсене хăçан çырнă çулĕсене кура (хронологи йĕркипе) вырнаçтарнă.

**Хури.** Петĕр Хусанкайăн пысăкрах хапа мелĕпе хайлавĕсенчен пĕрремĕшĕ — «Хури» поэма. Ăна хăçан çырнине палăртса хăварман. Поэт хăй каланине шута илсе пулсан, 1923 çул валли кăларнă чăваш кунтаврăмĕнче (календарĕнче) Тимахви Хури çинчен çырнисене вуланă

хыҫҫӑн ҫырма шутланӑ. Ал ҫыру вӗҫне «12/VIII—28.X.1927 ҫул» тесе паллӑ тунӑ. Малтанласа «Сунтал» журналта тухнӑ хыҫҫӑн чӑваш тӗпчевҫисене поэма чылай калаҫтарнӑ. Каярахпа поэма чылай вӑхӑта манӑҫа юлнӑ. 1987 ҫулта «Хури» поэма «Мехел кӗнекере, 1997 ҫулта «Хыпар» хаҫатӑн ятарлӑ хушма кӑларӑмӗнче («Канӑҫсӑр ман сассӑм — самана сассиччӗ...», 1997, кӑрлач, 22) пичетленнӗ. Кунта «Мехел» кӗнеке тӑрӑх кӗртнӗ. *Тимахви Хури* — Тимофей Николаевич Николаев (1878—1918) — чӑвашсен паттӑр ывӑлӗ, 1905—1907 ҫҫ. пӑлхавӑр ертӳҫи, Раҫҫейри эссерсен партийӗн тӗп комитетчӗн членӗ, чӑваш социал-революционерӗсен ушкӑнне (партине) йӗркелекенӗ тата председателӗ. Вӑл Сӗнтӗрвӑрри хутлӑхӗнчи Аслӑ Кӑршка ялӗнче «Арҫури» авторӗ М.Ф. Федоров вӗреннӗ ялта ҫуралса ӳснӗ. Хусанти учительсен семинарийӗнче, Чӗмпӗрти тӗп семинарийӗнче, Хусанти ветеринари институтӗнче вӗреннӗ. Ялти шкула, Чӗмпӗрти гимназире, Хусанти хула училищинче вӗрентнӗ. 1905 ҫулта Чӗмпӗрте чӑваш учителӗсен съездне пухнӑ. «Хыпар» хаҫатра ӗҫленӗ. Патша влаҫне хирӗҫ хӗҫ-пӑшалпа кӗрешнӗшӗн ӑна Якутска тӗрмене янӑ. Унтан тухса тарнӑ, пӗр хушӑ Францире пурӑннӑ. Тӗрмерен иккӗмӗш хут тарсан ӑна пуҫран хытӑ хӗненӗ, ӑс-тӑнне аркатнӑ. 1917 ҫулхи пӑлхавӑр хыҫҫӑн ирӗке тухнӑ. Анчах шуррисем Хусана илсен Т.Н. Хурие тата унӑн ҫураҫнӑ хӗрне А.Н.Гавриловӑна чекистсем персе вӗлернӗ. «Хури» поэмӑна ҫырнӑ чухне П.Хусанкай Тимофей Николаевич Николаев биографине, унӑн паттӑрла ӗҫӗсене тӗппипе пӗлме пултарайман. Апла пулин те вӑл кӗрешӳҫӗ чун-хавалне, сӑнарне витӗмлӗ ӳкерсе хӑварма пултарнӑ.

**Ҫирӗм улттӑ.** 1918 ҫулта, ака уйӑхӗн 25-мӗшӗнче, Бакура халӑх комиссарӗсен Канашне туса хунӑ. Ку вӑл Кавказри халӑхсен хушшинчи пӗрремӗш совет правительстви пулнӑ. Баку совнаркомне паллӑ революционер, В.И. Ленин юлташӗ С.Г. Шаумян комиссар ертсе пынӑ. Кӗркунне Баку коммунине акӑлчан интервенчӗсем хупӑрласа илнӗ. Авӑн уйӑхӗн 19-мӗшӗнче ҫӗрле 26 хӗрлӗ комиссара Каспи тинӗсӗ леш енчи пуш хирте персе вӗлернӗ. Ҫак хӑрушӑ тискерлӗх халӑха та, ҫыравҫӑсене те чылай вӑхӑт хытӑ хумхантарнӑ. Азербайджан поэчӗсем Сулейман Рустам «26» поэма, Наири Зарьян «26 комиссар» триолет, ыттисем тӗрлӗ сӑвӑ-юрӑ ҫырнӑ. Кӑнтӑр енне ҫитсе курнӑ Петӗр Хусанкая 26 комиссар ҫинчен поэма ҫырма хавхалантарнӑ. 1958 ҫулта Чӑвашрадиопа «Ҫирӗм улттӑ» поэмӑна парас умӗн каланӑ сӑмахсенче П.П. Хусанкай ҫакна палӑртнӑ: «1926 ҫулхи кӗркуннерен пуҫласа 1927 ҫулхи ҫуллаччен манӑн пӗрремӗш хут Чӑваш ҫӗршывӗнчен инҫенелле тухса ҫӳремелле пулчӗ. Эпӗ Вӑтам Ази тӑрӑх пайтах хутларӑм. Юлашкинчен Ашхабадран Красноводска, унтан Каспи тинӗс урлӑ Баку хулине ҫитрӗм. Ҫирӗм ултӑ Баку комиссарӗн трагедиллӗ шӑпи ҫинчен шухӑшланӑ майӑн эпӗ ҫав материалсемпе интереслентӗм... Вара 1927 ҫулхи ҫулла, Бакуран Сталинград урлӑ Атӑлпа Шупашкара таврӑнсан, С.В. Элкер хваттерӗнче, виҫӗ ир хушши садра ӗҫлесе, ҫак «Ҫирӗм улттӑ» поэмӑна ҫырса пӗтертӗм... Хамшӑн пулсан, ҫак поэма, идейи енӗпе кӑна мар, чӑваш поэзинчи ҫӗнӗ шкул — Ҫеҫпӗл шкулӗ — ҫирӗпленсе пынине тепӗр тӗслӗхпе кӑтартса панӑ пирки те хаклӑ пек туйӑнать. Ун чухнехи критика та ӑна ҫапла хакланӑччӗ» (Пин-пин

чĕре» кĕнекере, 1977, 157—158 енсем). «Çирĕм улттă» пĕрремăш хут «Сунтал» журналта (1927, 6) пичетленнĕ. Унтан «Уяртсан» тата «Хури. Çирĕм улттă» ятпа (1930) тухнă. Кайран «Чăваш илемлĕ литературин антологийĕ» (1935), «Чăваш совет поэзийĕн антологийĕ» (1940), поэтăн «Сăвăсемпе поэмăсем» (1941, 1948), «Поэмăсем» (1960), «Суйласа илнисем» (1970, 2-мĕш том) кĕнекисенче пичетленнĕ. Поэмăн кайранхи кăларăмĕсенче тӳрлетӳсем пур. Уйрăмлăхсем 1941 çулччен тухнисемпе вăрçă хыççăн пичетленнисем хушшинче ытларах курăнаççĕ. «Çирĕм улттă» поэмăри шухăшсем каярахпа Петĕр Хусанкайăн «Çирĕм улттăн вĕсем, çирĕм улттăн...» (1967) сăввине кĕнĕ, унта çĕнелсе анлăланнă. Баку паттăр революционерсен ĕçне тӳрре кăларнине палăртнă. Кĕрешӳ ахаль пулман. Тăванлăхпа туслăх, танлăхпа телей ялавĕ халĕ те, малашне те хакне çухатмĕ текен шухăш сăвăçăн каярахпа пичетленнĕ статйисенче те (тĕслĕхрен, «Сов. Чувашия» хаçатра 1977 çулхи кăрлачăн 22-мĕшĕнче тухнă «Во многих странах подаю я голос») палăрать. Поэмăна Чăваш халăх поэтне Семен Васильевич Элкере (1894—1966) халалланă. Вулакансемпе критиксем ăна пичетленсе тухсанах асăрханă. Малтанхи рецензисенчен пĕри — Н. Ваçанкка (В-ка) çырни. Вăл «Сунтал» журналта 1930 çулхи 4—5 кăларăмра пичетленнĕ. «Çирĕм улттă» чăваш поэзийĕнче сумлă вырăнта тăрать. Ăна вăтам тата аслă шкулсен вĕрнӳ кĕнекисене кĕртнĕ. Поэмăра 26 комиссартан паллăраххисене ятран асăннă. Кунта пурне те палăртса хăварăпăр: Багдасар Авякан, Мешади Азизбеков, Татевом Амиров, Арсен Амирян, Меер Басин, Эйжен Берг, Соломон Богданов, Анатолий Богданов, Арменак Борян, Мир-Гасан Везиров, Иван Габышев, Алеша Джапаридзе, Яков Зовин, Марк Коганов, Григорий Корганов, Арам Костандян, Иван Малыгин, Ираклий Метакса, Исай Мишне, Иван Николашвили, Сурен Осепьян, Григорий Петров, Владимир Полухин, Фçдор Солнцев, Иван Фиолетов, Степан Шаумян.

«Çирĕм улттă» поэмăн 1941 çулччен пичетленнĕ кăларăмĕсенче кайран улăштарнă çакăн пек йĕркесем пур.

2-мĕш йĕрке çапла пулнă: «Çирĕм ултă çулпуç сахал мар...». Кайран «çулпуç» сăмаха «герой» тесе ылмаштарнă.

16—17-мĕш йĕркесем:

> Красновотск — чăвашла Хĕрлĕ шыв вăл,
> Хĕрлĕ шывăн тĕрми пĕчĕк мар

пулнă, кайран:

> Красноводск — симĕс Каçпи хули вăл.
> Красноводскăн тĕрми пĕчĕк мар

тесе юсанă.

Хайлавсене çĕнĕрен пичете хатĕрленĕ чухне П.П. Хусанкай чылай сăвва-поэмăна мĕнле те пулин тӳрлетӳсем кĕртнĕ. Ытларах чухне вăл уйрăм сăмахсене çĕнĕ тĕрĕс çырăва (орфографие) пăхăнса çырнă (тĕслĕхрен, кӳртсе — кĕртсе, çăлăнăç — çăлăну) е сăвă янăравлăхне вăйлатас шутпа улăштарнă: Çакăнта а к  х у п а ç  пăчăхма — Çакăнта х у п ĕ ç  а к пăчăхма... (19 йĕрке); Ыранхи т е л е г р а м м  м ĕ с к е р  калĕ — ыранхи

т е л е г р а м м а  м ĕ н калĕ (38 йĕрке), Хурал хушрĕ часрах питĕрме (1927 çулхи кăларăмра) — Хурал хушрĕ часрах п ĕ т е р м е (41 йĕрке).

1948 çулта пичетленнĕ «Сăвăсемпе поэмăсем» пухчăра хальхинчен урăхла илтĕнекен йĕркесем пур. Вĕсенчен хăшне-пĕрне кăтартса хăваратпăр:

42-мĕш йĕрке: Сывă пултăр Капкас истеррори — Сывă пултăр Кавказ коммунарĕ!

*Истеррори* — революционер тени.

45-мĕш йĕрке: Куçĕсем ялкăшаç çиçĕм пек — Мăшăр куç ялкăшать çиçĕм пек.

48—49-мĕш йĕркесем:

...Бакура пĕтĕм пурнăç нехтă,
Çынсенчен сăрхăнать мазут.

«Нехтă» сăмаха 20-мĕш çулсенче çырнă пекех хăварнă, «Мазут» — нефтьрен бензин, газолин, краççын, уйăрса илсен юлакан çăра çу.

Поэмăра çынсемпе вырăн ячĕсем нумай. Вĕсенчен çаксене асăрхаттарса хăварни вырăнлă пулĕ: *Асхапат* — Ашхабад хули, *Арас* — шыв, *Сейттун маршĕ* — юрă ячĕ, *Самум* — пуш хирти тăвăл, *С.Г. Шаумян* (1878—1918), *М.А. Азизбеков* (1876—1918), *П.А. Джапаридзе* (1880—1918) — Азербайджан ирĕклĕхĕшĕн хăюллă тăнă кĕрешӳ ертӳçисем.

*Апшерон утравин хура юнĕ...* — калаçу хура тĕслĕ нефть пирки пырать.

*Апшерон çурутрав* — Каспи тинĕсĕн хĕвел анăç çыранĕ, унта Азербайджан вырнаçнă.

Тен, вĕсем аслă çул та кĕтеççĕ
Индие, Тĕрĕке, Ирана.

*Тĕрĕк* — хальхи Казах, Кăркăс, Узбек тата ытти тĕрĕк республикисен пĕтĕмлетӳллĕ сăмахĕ.

1930 çулта пичетленсе тухнă текстра: «Туркестан хирĕнчен шурă мамăк».

*Туркестан* тесе хальхи Вăтам Азие каланă.

1948 çулчченхи текстсенче пуринче те «пĕр чун».

*Кун* акăлчансене сутăннă çын хушамачĕ.

1960 çулта пур текстсенче те çапла çапăннă: «Мĕн çитменшĕн тата ăвăнать?»

*Ăвăнать* — хыпаланать, туртăнать, талпăнать.

*Дружкин* — Ашхабадри шырав бюровĕн пуçлăхĕ.

1960 çулччен: «урăхла» вырăнне «ăрасна» сăмахпа усă курнă.

1960 çулччен: «Ăна нимĕнсĕрех ярас мар».

*Мешшед* — вырăн ячĕ.

*Шанс* — шанчăк.

1960 çулччен:

Çирĕм улттă — вĕт тупăшлă ушкăн,
Пĕр лексен чĕрĕллех ярас мар.
Ан çиленĕр ăна: мистер Дружкин,
Анчах шухăшĕ ун... ăрасна.

1927, 1930, 1948, 1970 çулсенче пичетленнĕ текстсенче:

Красноводск тĕлĕрмест пĕр минут та,
Пĕр минут куç хупман кĕçĕр Кун —
Ун пуçне çавăрать çирĕм уттă.

Çак пĕчĕк сыпăка 1935, 1940, 1941 çулсенчи кăларăмсенче урăхларах йĕркеленĕ:

Хĕрлĕ шыв тĕлĕрмест пĕр минут та,
Ун пуçне çавăрать Çирĕм уттă,
Пĕр минут куç хупман кĕçĕр Кун.

1948 çулчченхи текстсенче пуринче те:

Вĕт мĕн пур Капказри пурлăха.

1927, 1930, 1935, 1940, 1941 çулсенче кăларнă текстсенче çак йĕркесем пур:

Вырă, вырăс, — тĕнче кĕлĕмçи.
Пăлханах, пăлханах, тен, пултарăн.
Анчах саншăн халь нехтă-бензин
Бакура калама та çук тарăн.

1927, 1930 çулсенчи текстсенче:

Асхапат — Хĕрлĕ шыв — Асхапат.

1927, 1930, 1935 çулсенчи текстсенче:

Ахвицер!
Пуçуна пит ан ус!

1927, 1930 çулсенчи текстсенче:

Вăл пушшех хĕпĕртет хăй чунне.

1960 çулчченхи пур текстсенче те:

Çеçен хир.
Саксаул та хăйăр.

*Саксаул* — пуш хирте ӳсекен çулçăсăр лутра йывăç.
1927, 1930 тата 1935 çулсенчи текстсенче:

Пуçласам пĕрех хут «Сейттун маршĕ».

*«Зейтун (Сейттун) маршĕ»* — эрменсен пăлхавăр вăхăтĕнче анлă сарăлнă юрри.
1927, 1930 çулсенчи текстсенче çак йĕркесем пур:

Польшшевик.
Еп пĕлеп: вăл чапа
Кăларасшăн çунмасть хăй çĕрне.
Хĕвелтухăç çынниĕ çапах
Иртнине манас çук ĕмĕрне.
Польшшевик!
Ун тăван çĕршывĕ
Кунта мар,
Лере мар,

Тĕнчипех.
Хĕвелтухăç çынни халь те тăвĕ
Юррине хăй тăван чĕлхипе».

1927, 1930 çулсенче пичетленнĕ вариантсенче:

Савăтан кĕрен
Хапрăкан.

1960 çулта тӳрлетиччен çак йĕркесем пулнă:

Пулмассăн сăнчăр тăхăнан.

1927, 1930, 1935 çулсенче:

Такама ӳкĕтлет хăй пухма.

1941, 1948, 1960, 1970 çулсенче:

Такама ӳкĕтлет вăй пухма.

1941 çулчченçак йĕрке ик тĕрлĕ çӳрет:
1927, 1930, 1935 çулсенче:

Çак ука шерепелĕ хĕç-пулă.

1940 çулхи вариантра:

Çак ука шерепеллĕ хĕç-пулькă.

*Щеголютин* — сутăнчăк машинист.

26 комиссара перевалпа Ахча-Куйма станцисем хушшинче Красноводскран 207 çухрăмра персе вĕлернĕ.

1960 çулчченхи вариант:

Вăл тĕлте разъезд мар, станци мар, —
Саксаул тĕмĕсем те хăйăр.
Ăнланатăн пуль теп? Ман сăмах
Çăмăлах катмалли вĕт мăйăр...

1948 çулчченхи вариант:

Юнпалан хĕрелен Хĕрлĕ шыв.

1948 çулччен çӳренĕ вариант юлашки çаврăмĕнче («Икçĕр çиччĕмĕш юнлă çухрăм» сăмахсемпе пуçланать) çакăн пек йĕркесем пур:

Е вĕсен шăпиех çапла пулнă?
Тавăрмашкăн мĕскер парас-ха?
Каспий тинĕс пуян та ав хумлă,
Тен, вĕсен шăпиех çапла пулнă, —
Кашни çыннăн хăйне ăраскал.

1960 çулхи текст умĕнхи вариант:

Çирĕм улттăн çеç мар эпир юлнă.

**Пушкинпа калаçни.** Петĕр Хусанкайăн малтанхи поэмисен ушкăнне кĕрекен «Пушкинпа калаçни» хайлав 1928 çулта «Сунтал» журналта (11-мĕш кăларăм) пичетленсе тухнă. Критиксемпе вулакансене поэма хытах кăсăклантарнă, ун пирки ырласа, тăрăхласа, тиркесе çырнă.

Поэма тытăмĕпе, шухăшĕпе, ирĕклĕ юхăмĕпе чăваш поэзине Çеçпĕл Мишшин витĕмне çирĕплетме пулăшнă.

*Мускавăн Тверь бульварĕ...* — А.С.Пушкина хисеплесе лартнă палăк вырăнĕ, халăх пухăнма юратакан лаптăк.

*Онегин, Ленский...* — А.С.Пушкинăн «Евгений Онегин» сăвăллă романĕнчи сăнарсем.

*Питрех те чухăн пирĕн чĕлхе мулĕ...* — сăмах поэтсем («ятсем пайтах») састашсемпе çителĕклĕ усă курайманни пирки пырать.

*Вăл юлчĕ Пушкăрт çĕрĕнчех...* — К.В. Иванов Пушкăртстанри Слакпуçĕнче вилсе выртни çинчен каланă.

*Теприн çине Украина çĕрĕ-шывĕ...* — Çеçпĕл Мишшин Остерти вил тăпри пирки каланă.

*Калатăр Комиссарăв...* Комиссаров Гурий Иванович (1882—1971), чăвашсен паллă тĕпчевçи, çыравçă.

*Миххал Петровччă çыртăр...* — Михаил Петрович Петров — Тинехпи (1877—1938), чăвашсен паллă историçи, каярахпа «халăх тăшманĕ» тесе тĕрĕс мар айăпласа хупнă. Тӳрре кăларнă.

**Сона.** «Сона» поэма — Петĕр Хусанкайăн малтанхи тапхăрта романтикăлла хавхаланупа çырнă хайлавĕсенчен пĕри. Вăл пĕтĕмĕшле шухăш-туйăмĕпе «Ишшак Верти», «Юлашки пăлхар» поэмăсен ушкăнне кĕрет. Сона — инçет çурçĕрте пурăнакан лопарь халăхĕн хĕрарăм ячĕ. «Таса» тенине пĕлтерет. «Юрату тăванран та, пурнăçран та хаклăрах» текен шухăша никĕсе хурса поэт халăх халапне калавласа панă. «Сона» поэма 1931 çулта Мускавра тата 1941 çулта Шупашкарта пичетленнĕ. Кунта «Суйласа илнĕ сăвăсемпе поэмăсем» (Ш., 1941) пухчăран илсе кĕртнĕ.

**Ишшак верти.** Поэмăна хăçан çырни паллă мар. Ăна 1930 çулччен çырнă теме пулать. «Сăвăсемпе поэмăсем» (М., 1931) кĕнеке тăрăх пичетленет. *Хаси* — çар ертӳçи. *Хасават* — ирĕклĕх вăрçи. *Кĕфĕрсене турамалла* — кяфир, ют тĕн çынни. *Хескер* — гвардеец. *Ленин оглы-Темир* — Ленин улĕ Темир, В.И. Ленин ятне тĕркменле калани.

**Юлашки пăлхар.** Поэма ал çырăвĕ Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн архивĕнче упранать (V уйр., 1220 у.ш., 9—23 енсем). Авторĕ хайлав ятне палăртман. Вăл 1989 çулта В.С. Чекушкин тĕпчевçĕ статйипе пĕрле «Чăваш литератури: поэтикăпа стиль ыйтăвĕсем» кĕнекере, унтан 1998 çулта «Хыпар» хаçатра (ака, 25) Н.И. Иванов ум сăмахĕпе пичетленнĕ. Виталий Чекушкин поэмăна «Юлашки пăлхар», Николай Иванов «Иван Яковлев» ят парса пичетленĕ. «Çырнисен пуххине» маларах пичетленнĕ тĕслĕхе кĕртнĕ. Ал çырура вуласа кăларма çук йĕркесемпе иккĕлле вуланакан вырăнсем пур. Вĕсене поэмăна 1989 çулта пичетленĕ чухне тĕплĕ ăнлантарса хăварнă. Пирĕн шутпа, Анат Энтри сăнарĕпе поэт 30-мĕш çулсенчи «класс кĕрешĕвĕпе» минренĕ çамрăксене Чĕмпĕрте И.Я. Яковлев патĕнче вĕреннĕ «чăваш интеллигенцийĕн пĕрремĕш сыпăкĕ», тăван чĕлхепе истори эткерĕ тата аслă ăру çине тимлĕрех пăхма хистет. Наркăмăш ĕçсе вилме хатĕрленнĕ çын — «Кĕмĕл Пăлхар» тĕпчевçин прототипĕ вырăнĕнче Чĕмпĕрти чăваш

шкулӗнче вӗреннӗ чылай историçӗ — Иван Юркин, Гурий Комиссаров, Мӗтри Юман тата ыттисем пулма пултараççӗ.

*Юлашки пăлхар* тени кунта çӗр çинчен çухалса пӗтнӗ халăхсен юлашки çынни тенине пӗлтерет. (Фенимор Купер индеецсем çинчен çырнă «Юлашки могикан» роман ятӗнчен çунатлă сăмах пулса тăнă.)

[1] *Пӗр нимӗç* сăмахсен тӗлне айккине Шопенгауэр тесе çырса хунă.

[2] *Сӳлеме* (сулема) — наркăмăшлă хăватлă им-çам.

[3] *Пуç чашки* — этем пуç шăмми.

[4] *Кӗмӗл Пăлхари* — поэма геройӗ çырнă кӗнеке ячӗ.

[5] *Пурне те темӗп сăвăç пек.* В. Маяковский вилес умӗн çырса хăварни «всем» сăмахпа пуçланать. П.Хусанкай çак йӗрке тӗлне «М. пек» тесе палăртнă.

[6] *Типшар* — тӗрӗслӗх тупайман чăвашсем хăйсене хытă кӳрентернӗ çыннăн килӗнче çакăнса вилни. Çапла тунипе тăшман пуçӗ çине ылхан ӳкет тесе шутланă.

[7] *Харакири* — япун самурайӗсен тыткăна лекесрен чыса хӳтӗлесе хăйсен хырăмне çурса вилес йăли (хара — хырăм, кири — касас).

[8] *Епле эп шчут туртса вилем* — 20-мӗш çулсенчи «таса» ӗçсенчен пӗри шут ӗçӗ пулнă.

[9] *Васкавăр.* Кунта сăмах çирӗммӗш çулсен вӗçӗнчи — вăтăрмӗш çулсен пуçламăшӗнчи хăвăртлату лозунгӗ пирки пырать.

[10] *Мухтавлă Кушкă çынни* — Кăнна Кушки ятлă ялта çуралнă И.Я. Яковлев.

[11] *Сан хыт тую та чуна çу.* И.Я.Яковлев çилленсе-тарăхса çитнӗ самантсенче хăй шкулӗнче вӗренекенсене туйипе хăмсарнă тенӗ сас-хура çӳренӗ.

[12] *«Çапах та çӗр çавăрăнать!»* — Коперникăн Çӗр Хӗвел тавра çавăрăнать текен вӗрентӗвне хӳтӗленӗшӗн инквизици сучӗ Галилее хăй шухăшне тӗрӗс мар тесе йышăнтарнă. Сут хыççăн Галилей: «Çапах та çӗр çавăрăнать!» — тенӗ пулать.

[13] *Чапăшăн.* Чӗмпӗр таврашӗнчи тата Тутарстанри хăш-пӗр районсенче У аффикс вырăнне Ă калаççӗ: чапу — чапă. Çакăн пек тӗслӗх поэмăра та тӗл пулать: çăкăр-тăварУ — çăкăр-тăварĂ.

[14] *Пӗшкӗнерех çӳрен ача*: К.В. Иванов, «Нарспи» авторӗ.

[15] *Килен ял-йыш* — таврăнакан ял çынни.

[16] *Тӳмеллӗ каччă.* Кунта: гимназистсен тумне тăхăннă каччă тесе ăнланмалла.

[17] *...чăн советнӗк тейӗр, Шантар режимӗ, йăнăрал...* 20—30 çç. И.Я. Яковлев çумне çыпăçтарнă ярлăк.

[18] *Камантласан* — команда парсан.

[19] *Ахах тăкрăм сысна умне.* Кунта: ним ăнланман çынсемпе шухăшлăн сăмахларăм (вырăслипе танлаштарать: метать бисер перед свиньями).

[20] *Мекке* — Мекка, Сауд Аравийӗнчи хула: унта ислам тӗн йӗркине пуçласа янă Муххамед (Магомет) çуралнă теççӗ.

[21] *Медина* — Сауд Аравийӗнчи хула; унта Магомет вил тăприйӗ упранать.

[22] *Цикута* (вырӑсла ячӗ: вех ) — наркӑмӑшлӑ курӑк.

[23] *Сократ* (ҫӗнӗ эрӑченхи 470—399 ҫҫ.) — авалхи Грецири философ. Хӑйне айӑпласа вӗлермелле тусан вӑл цикута наркӑмӑшне ӗҫсе вилнӗ.

[24] Ал ҫырӑвӗнче «чӑваш ҫынни» вырӑнӗнче «приват-доцент» пулнӑ, автор ӑна хӑех туртса хунӑ.

**Паянхи поэма.** Малтанхи хут Мускаврa «Сӑвӑсемпе поэмӑсем» (1931) кӗнекере пичетленнӗ. Каярахпа «Поэмӑсем» (1960) тата «Суйласа илнисем» кӗнекерен илсе пичетленӗ.

«Паянхи поэмӑна» П.П. Хусанкай темиҫе хут юсаса тӳрлетнӗ. Малтан ӑна «Маяковскилле» картлантарса ҫырнӑ пулсан, кайран «картсенчен» хӑтарнӑ. Вырӑн-вырӑн кӗскетнисем, ылмаштарнисем, тӳрлетнисем пур. 1931 ҫулхи кӑларӑмра поэма ҫапла пуҫланнӑ:

Праҫник те мар, уяв та мар...
Ҫӑватӗпне шӑпчӑк е росӑ
(Хуплантӑр тӗрлӗ шӑпчӑк, роза — 1960).
Ҫук, урӑх сасӑ ян та ян:
Ҫӗршывӑмри ҫӗнӗ тымар,
Куллен кунхи тӗреклӗ прозӑ
Туртать ман чунӑма паян.
Ак эпӗр — чикӗсӗр, виҫесӗр,
Тӑманпала тусан айне
Пулса выртан патшалӑхра —
Ак эпӗр халь епле виҫетпӗр
(ҫӗклетпӗр — 1960)
Тӗнченӗн улттӑмӗш пайне
Епле виҫетпӗр хамӑр!
Ӗнер ҫак чӑп-чӑмӑр ҫӗре
Пӗтӗм Европ мӑшкӑлӗшӗн
Китсем ҫине лартакансем —
Пӗртен-пӗр ушкӑн тӗнчере
Хӑй ирӗклӗ ӗҫне мӗншӗн
Ӗҫленине пӗлет этем.
Мӗскершӗн ирӗк ӗҫӗнче
Тӑрӑшнине пӗлекенсем... (1960)

I-мӗш сыпӑкри тӳрлетӳсем:

I-мӗш йӗрке ҫапла пулнӑ:

Вӑтам Союз картти ҫинче.

Халӗ:

Союз вӑтам картти ҫинче...

Сӑмах пӗчӗк е пысӑк карттӑ пирки пырать. Тӳрлетӳ вырӑнлӑ. Ҫӗнӗ кӑларӑмра ҫак вырӑна кӗскетнӗ:

Сӑвӑҫ та:

йурӑҫӑ та мар, —
кӗслем — сӑрнайӑм
хыҫа юлчӗ.
Ҫук, урӑх ятшӑн
тӑрӑшар:
сотсиалисӑм пӑртукулҫӗ.

Тӳрлетӳ тӗслӗхӗсем:

11-мӗш йӗрке:

Историйӗ
    чарăннă ун,
вăл
    халь вӗт
        пичеври лаша... —
Историйӗ тăлланнă ун,
Чăваш халь — пичеври лаша.

15-мӗш йӗрке:

Паллах —
пӗчӗк ача вăййи... — Паллах, ача-пăча вăййи...

18—19-мӗш йӗркесем:

Эс
    шӳт тетни,
            Ваççили Ванăч?.. —
— Ăм-та...
    Вопче
        чăвашсене... —
Шӳт тетӗн-и, Ваçлей Иванăч!
— Ăн... да! Эльмен таврашсене...

*Д.С. Эльмен* (1885—1932) Чăваш область ӗçтăвкомӗн председателӗ, çыравçă, журналист.

*Селиванпа Ехрем хуçасем* — чăвашран тухнă паллă сутуçăсем.

23-мӗш йӗрке:

Конешнă:
    мул та
        ырă тон... —
Паллах: мул кирлӗ, ырă тон...

25-мӗш йӗрке:

...вара
    Европ тăрăх —
            партон! —
Вара — Европăна! Пардон:

26-мӗш йӗрке:

кустар
    еврей чӗрипеле... —
            Çăпатуна хăвар киле!..

27—30-мӗш йӗркесем çапла пулнă:

Вопче
    ку революцирен
Чăваш
    кураймӗ пархатар.
Çитменнине —
    çак
        çук çӗртен...

32-мӗш йӗрке:

Пĕр-икĕ
　　руссоман
　　　　эссер —
Пĕр-икĕ вĕçкĕнрех эссер...

2-мĕш сыпăкри тӳрлетӳсем:

2-мĕш сыпăкăн малтанхи виçĕ çавринче çакăн пек вырăнсем пур:

Федераци тавра —
　　　　плоккатă:
шалта
　　выçлăх,
　　　　пыйтă,
　　　　　　чир...
Шалта —
　　«йут ăрусен»
　　　　çыннисем
çăлăнăç йалавне
　　　　çĕкленĕ...
пĕр çăлтăр айĕнче,
　　　　пĕр каварлă...

6-мĕш катренра:

Хыпар хыççăн
　　хыпар т и р с е — вĕçертсе.

7-мĕш катрен малтан çапла пулнă:

Анчах —
　　ним ерхерейсĕр,
　　　　　　патшасăр,
ĕмĕрне
　　асра çук
　　　«Чăваш Влаçĕ»
йалсене сисĕнсен,
　　　　вăтанмасăр
сенĕксем, тăпачсем
　　　　　　йăтаççĕ.

*Чаппан вăрçи* — 1921 çулхи кăрлачра Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри, Канаш, Каçал таврисенче пулса иртнĕ пăлхав. Ячĕ хресченсем чаппан (сăхман) тăхăннăран тухнă.

3-мĕш сыпăкри тӳрлетӳсем:

2-мĕш катрен çапла пулнă:

Оплăçăм —
　　Республĕк,
　　　　Аслă Чăвашлăх
(тупаç сăмахне те мур!)
— Чĕмпĕр
　　　е Улатăр?

3-мĕш çавра:

— Е тяппу хуҫӑлсан? —
— Улатӑра кайӑп,
сыптарап саман...

114—125 йӗркесем:

Анчах
лере
кулак мӑкшӑ
хӑйӗннех
хӑйӗннех перет:
— Ак
мӑшкӑл, мӑшкӑл...
— Тӗттӗм ҫуттӗнче...

1931 ҫулхи кӑларӑмра ҫак йӗркесем ҫук:

Калла тапать
Хӑш-пӗр мӑкши:
Мӗн сӑлтавпа?
Мӗн амак-ши?

3-мӗш сыпӑкри пӗрремӗш ҫаврӑм вӗҫӗнче «хӑшӗсем» вырӑнне малтан «мӑкшӑсем» тенӗ:

Пӗлмерӗҫ пулас
мӑкшӑсем,
Ӑнланмарӗҫ
ак ҫакна...

5-мӗш сыпӑкри тӳрлетӳсем:
«Истори тӑвать,
хӑйӗн кун-ҫулне
тирпейлет», —
йӗркерен «хӑйӗн» сӑмаха кӗскетнӗ, сӑвва янравлӑрах тунӑ.

*Ашмарин Н.И.* (1870—1933) — чаплӑ чӗлхеҫӗ-тюрколог, СССР Ӑслӑлӑх Академийӗн член-корреспонденчӗ, тӗпчевҫӗ.

*Марр Н.Я.* (1864—1934) — паллӑ чӗлхеҫӗ, археолог, академик, Чӑваш Республикине килсе ҫӳренӗ.

Каярахпа кӗскетнӗ вырӑн:

...ҫӗннине
пултаратӑр, чарма.
Ҫӗнни —
пайанхи,
лӑш курмасӑр,
ҫывӑрмасӑр
ӗҫлен ӗҫҫынни.
Тинехпи, йе ытти —
хӑть томсем урлӑ каҫӑр —
анчах
пултӑр
истори ҫӗннин.

6-мӗш сыпӑкри тӳрлетӳсем:

Сыпӑк пуҫламӑшӗ малтан ҫапла пулнӑ:

Иртнĕ кунăн
чаршавĕ
уçăлса хупăнчĕ
Ĕмĕртен ĕмĕрхи
хура çĕр хурчĕ
пур этемлĕх...
хăй сăнне
хĕрелмесĕр курчĕ.
пĕвĕ çинçе — пӳ-си çинçе...

Виççĕмĕш катренăн 1931 çулхи тĕсĕ:

Таçта,
чикĕ урлă
ют патшалăхра
эпĕр пурĕ
халь
шав сисĕнет.
Пире,
эпĕр тăкнă
тара-шура,
пире — каскăн
Атăл пăлхавçисене —
шурă пир çинче курса,
акăлчанĕ,
французĕ,
нимĕçĕ
кĕрешӳ кунĕнче
асилеççĕ
патриот кăмăлне чакарса.

«*Апайка*» — И.С. Максимов-Кошкинский лартнă кинофильм ячĕ.
*Н.Т. Ваçанкка* (1903—1976) — такмакçă, сăвăçă, кĕнеке тӳрлетӳçи.

Атя,
пуçлар.
«Айтар»,
«Кушар».
Мăнтарăн
«Траххом юрри» —
Тухтăр Оççĕппăв йĕрри.

*«Траххом юрри»*, *«Айтар»*, *«Кушар»* — П. Осипов драматургăн паллă драмисем. «Траххом юрри» хальхи вулакансене «Хĕн-хур юрри» е «Сĕрме купăс» ятпа паллă.

6-мĕш сыпăк вĕçĕ (малтанхи кăларăмра):

Пурте
çылăхлă эпĕр,
пурте:
анчах
кам,
ӳкĕнсе,
чăн-чăнах

хăйне
парттин
хура ĕçне кÿртĕ —
çавна
манмĕ,
каçарĕ самана.

7-мĕш сыпăкри тÿрлетÿсем:

2-мĕш катренăн малтанхи варианчĕ:

Ăслă çынсен
каларĕшпе
Чĕмпĕр иккен
ун амăш.
Çанталăк пулнă,
тет,
йĕпе,
халь
уяртса,
паллах уш.
Хуппийĕ
сисĕнмерĕ те
тулли
чăмăр тĕшсен...
Çапма
ĕнтĕ
çырлахрĕ вăл...

8-мĕш сыпăкри тÿрлетÿсем:

Кĕрхи
пĕр нÿрлĕ,
салху каç.
Пĕлĕт —
пеççимислах
тĕксĕм...
Кун пек чухне
урамалла
вăрăсем çеç
сĕнксе тухаç...

2-мĕш çаврари тÿрлетÿ:

Курман та
мана хирĕçех
пĕр вăрăмскер,
типери пек...

3—4-мĕш çаврасем:

Аван-и, Шупуççынни?
Раххат
йаш тонĕкçĕсене!..
Шупуççынни
хĕрхÿн кулать:
Михал Петровĕч
ырламасть...

Ку —
  вырăс культтурне пула,
чăвашшăн —
      çичĕ сыпăк
            маç ...

*М.П.Тинехпи* (Петров) (1877—1938) — паллă тĕпчевçĕ, историçĕ, чăваш ăсчахĕ.

5-мĕш çавра çапла пулнă:

Йĕрĕннĕн
      пĕрĕнет тута.
Йĕри тавра
      Шупуççыннин
пылак итиллийĕ
            путать.
Сившу çынни япшар Урха...

*Лапсар пики*, *Кармал Чĕкеçĕ* — Н. Шупуççыннин «Янтрак янтравĕ»: «Еркĕн» хайлавĕсенчи сăнарсем.

*Фордзон лашисем* — АПШ-ри Фордзон компанийĕнчен кӳрсе килнĕ тракторсем.

1931 çулхи кăларăмра:

Кивви кисренет,
Çĕнни çĕнтерет»

йĕркесем çук. Юлашки çаврăм пуçламăшĕ:

Нумай
      ан йупилейлĕр,
ан мухтăр
      хăвăра. —
«Хĕрлĕ чăваш»
      пропеллерĕ
кĕрлетĕр хытăрах.

*Канаш— Шупашкара хывасчĕ хăвăртрах.* Кунта сăмах Шупашкарпа Канаш хушшинче чугун çул хывасси пирки пырать. Çулне 1936 çулта тума пуçланă.

«Паянхи поэма» вĕçĕнчи тӳрлетӳсем чĕлхе ăсталăхĕ ӳснине те, В.В.Маяковскилле илтĕнекен çаврасене урăхла калама пултарнине те кăтартса параççĕ.

Пурсăмăр та
        меллĕн
тытрăмăр
      пĕр ĕç.
Пуçăмăрта —
      Ленĕн,
Чĕрере —
      Ильич.

Юлашки тӳрлетӳ хыççăн:

Пурсăмăр та меллĕн
Тытнă пĕр ĕçех.

Пуçăмăрта — Ленин,
Чĕрере — вăл çех.

Поэма вĕçĕнчи йĕркере «çывхарать» выртăнне вăл вăхăтра анлă сарăлнă «чарăну» сăмах пулнă: В коммуне — остановка!» Çакна чăвашла çавăрса калани шухăш пĕлтерĕшне анлăлатнă.

Пĕтĕмлетсе каласан, «Паянхи поэмăн» малтанхи тĕслĕхĕнче истори сывлăшĕ уççăнах курăнать, унта çав вăхăтшăн паллă пайрăмсем нумай.

**Поэт.** «Поэт» («Поэтпа миссионер») сăвăллă повеçе, К.В. Иванов асне 1929 çулта çырнăскере, «Сунтал» журналта тухнă хыççăн критика тĕрлĕрен хакланă. Уйрăмах аслă вĕрентекенĕмĕр И.Я. Яковлев сăнарĕ тĕрлĕ тапхăрта тĕрлĕ хак илнĕ. «Çырнисен пуххинче» поэма авторĕ тӳрлетнĕ алçыру тата «Мехел» (1987) кĕнеке тăрăх пичетленет. Ал çырăвăн 6-мĕш пайĕ («Слакпуçĕнчи масар») пулнă. Ку поэмăна литература ăмăртăвне тăратнă.

**Майра инке е сенкер тынас.** 1930 çулта çырнă поэма (авторĕ «ирĕклĕ новелла» тенĕскер) халиччен пичетленмен. «Çырнисен пуххине» В.П.Станьял Н.С.Дедушкин паллă тĕпчевçĕрен çырса илни тăрăх кĕрет.

Н.С.Дедушкина ал çырăвне П.П.Хусанкай хăй çапла çырса парнеленĕ: «Мана «истори» тен пулсан, Çак алçыру та пултăр сан! 24.V. П.Хусанкай». Ал çыру вĕçĕнче ăнлантарса пани пур: «Çыраканĕнчен. Çак япалана эпĕ çухатнăччĕ. Сăлтавĕ хамран килмерĕ тесен те юрать. Анчах «кашни алçырăвăн хăйĕн элчелĕ пур» теççĕ.

Кăна манран Мĕтри Кипек çырса илнĕ пулнă, унран ӳкерсе е аплипех С.Мерчен (Селезнев) илсе кайнă-мĕн. Ку вариант ман алла Степан Асланран лекрĕ. Ăна вăл 1967 çулхи çу уйăхĕн 6-мĕшĕнче Зеленовка ялĕнчен çырса ячĕ. Хăй 1935—36 çулсенче Канашра Кĕçтук Кольцовран çырса илнĕ имĕш.

Тата çакна калам: ун чухне эпĕ ямб пирки урăхларах шухăшланăмĕн, икĕ сыпăклă сăмахра икĕ «ă» е икĕ «ĕ» пулсан — пусăм хыçалти сыпăк çине ӳкет тенĕ. Пирĕн анатра çапла калаçаççĕ, сăмахран: ĕмĕт, хăйăр, тĕлĕк, тăвăр... Çеçпĕл шкулĕ эпĕ тĕрĕс мар шухăшланине кăтартса пачĕ. 04.V.68».

*Тынас* — йĕм кантри, шнурок, веревка для подвязывания онучей.

*Тимĕрç пурăнать* тени «Кузнецов» хушаматлă çынна тĕллесе кăтартнă теме май пур.

*Тĕпел* — Тĕп Комитет тенине пĕлтерет.

*Сулхăш* — сунчăк, зонт.

*Юрату сăмсахĕ* — Шупашкарти вырăн ячĕ, К.В.Иванов урамĕ Атăл хĕррине пăрăнса тухнă çĕрти чăнкă çыран тăрринчи лапă.

*Кăмиссаршă* — комиссар арăмĕ.

*Шăпчăк* — Спиридон Шăпчăк — чăвашсен паллă çыравçи.

*ЧĂВКУ* — кĕскетсе тунă сăмах: Чăваш кĕнеке уйрăмĕ.

*Н.Шенни* — Атăл хĕрринчи тирекрен çакăнса вилнĕ талантлă çамрăк сăвăç.

*Ҫак хаксӑр ҫынлӑ тӗнчере,*
*Тен, эпӗ хаксӑр пуринчен те... —*

А.С.Пушкинран илнӗ йӗркесем (Среди детей ничтожных мира, Быть может, всех ничтожней он).

**Хупӑ ҫыру.** «Хупӑ ҫыру» малтанхи хут 1998 ҫулхи юпан 27-мӗшӗнче «Хресчен сасси», унтан юпан 28-мӗшӗнче «Хыпар» хаҫатсенче тухнӑ. Вӗсене пичете филологи ӑслӑлӑхӗсен кандидачӗ Н.И.Иванов (Микки Микули) Чӑваш Республикинчи обществӑлла организацисен тӗп архивӗнчен илсе (2718—434, I, 232-мӗш ӗҫ, 59—62-мӗш енсем) хатӗрленӗ.

Поэма шӑпине уҫса панӑ май Н.И.Иванов ҫапла ҫырнӑ: «1930 ҫулта Чӑваш автономиллӗ республикин 10 ҫулне уявланӑ тӗле илемлӗ литература произведенийӗсем ӑмӑртӑвне ирттерме палӑртнӑ... тӑван халӑхӑн пурнӑҫӗпе ӗҫӗсенчи хастарлӑхӗпе хӑпартланса вӑл «Паянхи поэмӑна» ҫырса та ӗлкӗрнӗ, ӑмӑртӑва ярса панӑ. П.Хусанкайӑн ҫак эпикӑллӑ произведенийӗ пичетленсенех ун ячӗ тавра ҫӗнӗрен шӑв-шав тапранса каять — сассине уҫҫӑн кӑларса ӗлкӗрнӗ харсӑр поэт — «вак буржуллӑ» («хресчен») сӑвӑҫӗ хальхинче «кулак поэчӗ» пулса тӑрать».

1930 ҫулхи «Сунталӑн» 12-мӗш кӑларӑмӗнче М.Семеновӑн П.Хусанкая хирӗҫ ҫырнӑ «Ултав е хастарлӑх» элекӗ пичетленсе тухать. Унта сӑвӑҫа «питӗ маттур артист», «чее ултавлӑ поэт», «Ӗҫ халӑхне кӑмӑллӑ сӑмахсем хушшинчех ӗҫ халӑхне хирӗҫ мӑкалнӑ ҫӗҫҫине хӑйрать» сӑмахсемпе тиркенӗ.

«Хупӑ ҫырӑва» П.Хусанкай «Сунтал» журналта тухнӑ элеке хирӗҫ ҫырнӑ, вӑл пичетре тухмассине пӗлсе, тӗрлӗ ҫӗре ҫырупа ярса панӑ.

Архивра упранакан ал ҫыру вӗҫӗнче В.Маяковский ҫырнинчен илсе хушса хуни пур:

Я хочу быть понят моей страной,
А не буду понят — что ж?
Над родной страной пройду стороной,
Как проходит косой дождь.

*Хусанкай П.*

23. III.31. Тифлис, отель «Кавказ», к. 13.

«Хупӑ ҫырун» пӗр пайӗ («Ман лаборатори тӑваткӑл стеналлӑ... Кӗрсе градӑсла, формӑлла поэта») 1948 ҫулта «Чӗре юрри» кӗнекере «Сӑвӑ мӗнле ҫитӗнет. Шӳт пекки» ятпа пичетленнӗ.

**Интервью.** Журнал валли хатӗрлесе хунӑ (наборланӑ) текст тӑрӑх пичетленет (Чӑваш Республикинчи обществӑлла организацисен тӗп архивӗ, 2718—434, 232 ӗҫ, 87—91 енсем, Н.И.Иванов ҫырса илнӗ). Ал ҫыру умне С.В.Элкер хӑй аллипе вырӑсла ҫапла ҫырса хунӑ: «Сунтал» журналӑн 1932 ҫулхи 6—7 №№ пичетлес». Поэма пичетленмен. Ахӑртнех, ҫакӑ Атӑла пӗвелес ӗҫ чарӑнса ларнипе тата Республика ертӳҫисене ылмаштарнипе ҫыхӑннӑ.

*Пухвир Сергейӗ Петров* — Сергей Порфирьевич Петров (1889—1942), чӑваш халӑхӗн паллӑ ывӑлӗ, 1926 ҫултанпа парти Чӑваш обкомӗн пӗрремӗш секретарӗнче ӗҫленӗ. Атӑла пӗвелес, Канашпа Шупашкара чукун ҫулпа ҫыхӑнтарас тесе хытӑ тӑнӑ.

*Василий Иванович Токсин* (1889—1942), ҫыравҫӑ, журналист (10-мӗш класӑн «Чӑваш сӑмахлӑхӗ» 2-мӗш кӗнекине пӑхӑр), 1932—1937 ҫҫ. Чӑваш АССР халӑх комиссарӗсен Канашӗн председателӗ пулнӑ.

*Александр Никитич Никитин* (1892—1942), Чӑваш республикин ҫутӗҫ комиссарӗ, 1929 ҫултанпа Тӗпӗҫтӑвком председателӗнче ӗҫленӗ.

*Лука Семенович Спасов* (1899—1955), Чӑваш ҫӗршывӗн ҫӗрӗҫ комиссарӗ пулнӑ, 1931 тата 1937—1940 ҫҫ. ЧАССР халӑх комиссарӗсен Канашӗн председателӗ пулнӑ, унтан Чулхула крайкомӗн председатель ҫумне куҫарнӑ.

С.П.Петров, В.И.Токсин, А.Н.Никитин, Л.П.Спасов тата ытти те паллӑ ҫынсем ҫинчен «Они боролись за счастье народное» (1980—1985, 1—3-мӗш кӑларӑмсем) кӗнекесенче вуласа пӗлме пулать.

**Таса хӗр Тарье.** П.П.Хусанкай эткерлӗхӗнче пичетленмен кӗске поэмӑсем упранаҫҫӗ. «Таса хӗр Тарье», «Тӗкӗр умӗнчи Венера», «Интервью», «Сенкер ҫӗршыв» тата ыттисем республикӑри обществӑлла организацисен тӗп архивӗнче упранаҫҫӗ. Сӑвӑсемпе поэмӑсен тетрадьне «П.Хусанкай поэтӑн хаксӑр сӑввисем» тесе паллӑ тунӑ, 1933—1934 ҫҫ. тенӗ. Ку вӑл тетраде йӗркеленине пӗлтерет, мӗншӗн тесен унта маларахри ҫулсенче ҫырнӑ хайлавсем те пур.

«Таса хӗр Тарье» хайлава архиври ал ҫыруран Н.И.Иванов (Микки) ҫырса илнӗ (ЧРООПТА, 2718—434 упр., I шут, 232-мӗш ӗҫ, 87—91-мӗш енсем).

**«Тӗкӗр умӗнчи Венера».** Ӳнерсемпе кулленхи пурнӑҫ кукӑрӗ-макӑрӗ пирки шухӑшласа ҫырнӑ поэма Тициан ӳкерчӗкӗпе чӑваш «мелкеҫисен» ӑсталӑхӗн уйрӑмлӑхӗсене хускатать.

*Эрмитаж, Лувр, Британи музейӗ* — тӗнчери паллӑ вырӑнсем, ӳнер управлӑхӗсем.

*Синьор Тициан...* — Итали ӳнерҫи, тӗнчипе паллӑ «Даная» картина авторӗ.

*Юрий Зайцев, Моисей Спиридонов* — чӑвашсен паллӑ художникӗсем.

*Мартенс* — 20—30-мӑш ҫулсенче мелке ӳнерӗпе (фотографипе) Шупашкарта чапа тухнӑ ӑста.

*ҪЭП* — Ҫӗнӗ Экономика Политики сӑмахсен аббревиатури (выр. нэп).

Чӑваш Республикинчи обществӑлла организацисен патшалӑх тӗп архивӗнче упранакан ал ҫыруран илнӗ Н.И.Иванов (Микки) тупса панӑ.

**Байрон.** 1932 ҫулта Сиктӗрмере ҫырнӑ «Байрон» поэма Шупашкарта 1934 ҫулта тухнӑ «Сулмак, 2» кӗнекре пичетленнӗ. Унӑн тӳрлетсе якатнӑ редакцийӗ «Суйласа илнисен» 2-мӗш кӗнекинче тата «Мехел» (1987) кӗнекере пур. Кунта ҫавсенчен илсе кӗртнӗ.

*Байрон Джордж* (1788—1824) — акӑлчансен тӗнчипе паллӑ поэчӗ, ҫулӑмлӑ романтик, парламент пайташӗ (членӗ). Пурнӑҫра та, пултарулӑхӗнче те политикӑпа идеологи тӑрлавсӑрлӑхне хирӗҫ кӗрешнӗ, халӑхсен ирӗкне мухтанӑ.

«Сулмак, 2» кӗнекери хӑш-пӗр йӗркесене поэт каярах тӳрлетсе ҫырнӑ.

1, 2-мĕш йĕркесем:

Камах ачашлăх панă-ши
............. ăна, мăнтарăн.

Тӳрлетнĕ хыççăн:

Кам савнă, ачашланă-ши
Ача чухне ăна хавассăн...

4. Байрон амăшĕ хăвăрт хĕрсе каякан, тарăхса ятлакан хĕрарăм пулнă. Вăл ывăлне час-часах «уксах» тесе кӳрентернĕ.

5. *Кам колледжре ăна юп курнă* — Шкулта кам çывăх курнă, хисепленĕ, юратнă тесе ăнланмалла.

6, 7. Чеворт Мери

Пĕрремĕш савăшĕ Якурăн...

*Чеворт Мери* — Байронăн юратнă хĕрĕ.

*Якур* — Джордж, ку ят вырăсла Георгий, чăвашла Якур пулса сарăлнă: «Иоанн», «Жан», «Ян», «Иван», «Йăван» ятпа танлаштарăр.

9. Ĕмĕр çак тансăрлăхшăн урнă...

Тӳрлетнĕ хыççăн: Ялан хăй тансăр пирки урнă...

*Дарданелл* — Мрамор тата Эгей тинĕсĕсене çыхăнтаракан шыв пырлăхĕ.

18. Вĕреннинчен питрех — ĕçсе.

20. «Ерçӳллĕ сехетсем» — 1807 çулта çак ятпа Байронăн сăвăсен пĕрремĕх пухчи тухнă.

21. ...палатĕнче ун вырăн...

1809 çулхи пуш уйăхĕнчен пуçласа Байрон лордсен палатин пайташĕ (членĕ) пулнă.

27—28.

...Англие ик çул килмесĕр
Вăтаçĕр...

Çак çулçӳрев хыççăн Байрон «Чайльд Гарольд» поэмăна кĕрекен икĕ юрă пичетлесе кăларнă. Вĕсен тĕп геройĕ ирĕк çуккипе çут идеалсем сӳннипе аптăрать.

31—33.

Вăл таврăнать. Пĕр ир ун сасĕ,
Хăй ыйхăран тăнă-тăман,
Тĕнче хăлхине пырса çапнă...

Кунта сăмах Джордж Байрон 1812 çулхи нарăсăн 27-мĕшĕнче лордсен палатинче рабочисене хӳтĕлесе хĕрӳ калаçни пирки пырать.

1816—1817 çулсенче Дж. Байрон «Чайльд Гарольд» поэмăн 3-мĕшпе 4-мĕш юррисене çырать. Вĕсенче халăх вăйне шанни, ĕненни аван палăрать.

*Анабель Мильбенк* — поэт арăмĕ.

44. Анчах поэм çеç мар-çке чун.

45. Поэм санран килет, эс автăр,
Аватăн хăть хăш май...

Элекпеле кĕвĕçлĕх автăр,
Вăл çын кышлавĕнче çунать.

49. Вăрттăн çын çийĕвĕ, суялăх...

53.

...пĕлĕшсĕр, туссăр,
Савнисĕр юлнă поэта
...хăваç сĕм суккăр
Филиçтĕрсем ак Лондăнтан.

*Филистер* — ансăр тавракурăмлă, кĕвĕç те вĕчĕх çын.

58.

Хăй пекех хуса янă Шелли.
Кама, мĕскере хĕрхенсе...

*П. Шелли* (1792—1822) — акăлчансен паллă сăвăçи, çав вăхăтри пăлхавăрлă романтизмăн паллă хастарĕ.

62—64.

Çук кĕвĕç тăшмансен элекĕ
Чуна хайран салхулăх та
........................ хурлăх çеç...

66.

Пантеисланнă Шелли евĕр...

*Пантеист* — «çут çанталăкпа Турă пĕр» текен шухăшпа пурăнакан.

71. «*Манфред*» — философилле-символла поэма.

74. *Венеци* — Италин çурçĕр пайĕнчи провинцин тĕп хули, пысăк порт. Д.Байрон унта 1817—20 çулсенче пурăннă, чылай çырнă.

77—78.

Çак ирĕк сисĕмлĕ, тулли
Чĕрĕ...

79. *Беппо*. Кунта Байронăн 1818 çулта çырнă «Беппо» поэми пирки каланă. Ку поэмăра Байроншăн пачах çĕнĕлле питлев çуралать.

80. Ăшне пулать...

82—84. Кунçул пур сĕткене сăхать-тĕк?
Вĕт пурнăç — вăйă: çăмăл
Минутлăх Мариан Сегатти.

86. Юратнă Маргарит — тăр эсĕ?
...мăшри пуль тен —

89—92. Хăшĕ пĕртен-пĕр вĕсенчен?
Хăшĕ...
...Хăшĕ вăл халĕ?

97—98. Уяв. Вĕçĕмсĕр карнавал.
Çăмăл Венеци урнă мар-и?

100. *Карбонари* — пăлхавăрçă.

101—104. Кăмрăкçăсем чĕртен хĕлхем
...лордлăха пĕр ушкăн.
... Пĕтĕм
.... вĕт уншăн.

108. *Корсар* — тинĕс хурахĕ.

110. ...çил-тăвăллăн.

112. Çынла пулмашкăн çын кăмăллă.

113. Пĕлни вăл, Миссолунги...

*Миссолунги* — Грецири пысăк хула. Байрон Греције 1823 çулхи утă уйăхĕнче ирĕклĕхшĕн кĕрешекенсене хавхалантарма тухса каять. 1823 çулхи раштавра вăл Миссолунги хулинче сивчирпе аптраса вăхăтсăр вилет.

117.

...тыткăн та. Елладă.
Эс çак çар тумĕсĕр çынра
Хăвăн йыхравçуна паллатăн,
Сана вăл ирĕке йыхрать.

122—124.

Кама кĕтетĕр. Вĕт сире
Хăвăртран урăх нимле паттăр
Çăлаймĕ хăврăн Грецире.

125.

Çĕршывĕ унăн — Çĕр, сисеп эп.

**Улмуççиллĕ Тĕрлемес.** 1933 çулта «Трактор» альманахăн 7-мĕш кĕнекинче çапăнса тухнă. Унтан «Поэмăсем» (1960), «Суйласа илнисем» (1970) кĕнекесенче пичетленнĕ. Кунта «Суйласа илнисен» 2-мĕш томĕнчен илсе кĕртнĕ.

Поэмăра 1918 çулта, граждан вăрçи вăхăтĕнче, Тĕрлемес станцийĕнче (Куславкка районĕ) шурă çарсен Борис Савинков (вырăссен паллă çыравçи) отрячĕ хĕрлĕ çар салтакĕсемпе çапăçнине, станцире вăйлă сирпĕнӳ пулнине аса илсе çырса панă. Тĕрлемесре 17 хĕрлĕ çарçă вил тăприне чыслă пăхса пурăнаççĕ.

*Ермолаев архивçă* — Павел Фĕдорович Ермолаев (1905—1977) — чăвашсен паллă архивçи, Чăваш тĕп архивĕн директорĕ пулнă.

*Кариньке Элексей Кавĕрли* — Гаврил Алекссевич Кореньков (1884—1949) чăвашсен паллă çыравçи, куçаруçа, ЧАССР тава тивĕçлĕ учителĕ. Кив Тĕрлемес ялĕнче çуралса ӳснĕ, унтах ĕçленĕ.

**Басмач.** Поэма вĕçне «1928—1934. Хусан, Мускав» тесе паллă тунă. 4 пайлă хайлов хĕвел тухăç поэзийĕн техĕмĕпе палăрса тăрать.

«Суйласа илнисен» 2-мĕш томĕ тăрăх пичетленет.

*Дехкан* — хресчен, çĕрĕçлевçĕ.

*Дервиш* — çул çӳрекен вĕрентӳçĕ.

*Эмир* — вырăнти пуçлăх, патша.

*Дастархан* — кĕрекери сĕтел витти, чаплă ĕлкĕ.

*Хезрет* — ислам тĕнне йĕркелесе пыракан çын.

*Чачван, паранжа* — хĕрсемпе арăмсен пит-куçа кртлакан виткĕçĕ, ут хĕлĕхĕнчен тунă.

*Дуттар* — вăрăм вулăллă, икĕ хĕлхеллĕ тумра евĕрлĕ япала.

*Ичкири* — хĕр-хĕрарăм пӳлĕмĕ.

*Ай* — уйăх.

*Яр* — савни.

*Курбашша* — басмачсен ушкăнĕн пуçлăхĕ.

*Хасават* — тĕн вăрçи, «таса вăрçă».

*Хаçи* — çар ертӳçи, паттăр, парăнми, никам çĕнейми.

*Худай* — узбексен Туррин ячĕ.

*Саур, тал, каракаç* — Туркестанри йывăçсем.

*Чейхана* — чей килĕ, чей ĕçтерекен çурт.

*Пахта* — çĕр мамăк.

*Мĕн яшша, мĕн яшша, хашши Ирзамар паша!* — «Пин çул пурăн, пин çул пурăн, паттăр Ирзамар паша!».

*Ишшан-хезрет* — аслăрах мулла.

*Маш аллах!* — тĕлĕнсе калани, «ах, Турă!»

*Фрунза* — Фрунзе.

**Спартак.** «Çырнисен пуххине» 1934 çулта тухнă «Сулмак: Иккĕмĕш кĕнеке» кăларăмран илсе кĕртнĕ. Поэмăна 1933 çулччен çырнă. Ăна каярахпа тӳрлетни-якатни паллă мар. Спартак — Авалхи Римра чурасен пирĕн тапхăрччен 74—71 çç.хаяр пăлхавне ертсе пынă паттăр

*Паяц* — камитçĕ, кулăш ăсти.

*Плебей* — ирĕксĕр, танлăхсăр çын, анчах чура мар.

*Гладиатор* — чура, çар çынни.

*Амфора* — сиплĕ им-çам тытмалли савăт.

*Сатурнали* — ăмăрту.

*Сестерци* — укçа шучĕ.

*Свита* — хыçран çӳрекен тарçă-тĕрçĕ, пăхăнса тăракан тӳре.

*Рудиари* — мухтав.

**Яманкас юмахĕ.** Поэма «Суйласа илнисем» кăларăмăн 2-мĕш томĕ тăрăх пичетленет.

*Петĕр Чичканов* — Чичканов Петр Николаевич — чăвашсен паллă çыравçи, художник, нумайранпа Киев хулинче пурăнать. Канаш районĕнче çуралса ӳснĕ.

**Шелепи шерепи.** 1936 çулта çырнă «Шелепи шерепи» поэма — чăваш сăмахлăхĕнче хăвăрт пalăрса юлнă хайлав. Унăн уйрăм вырăнĕсене пайтах вулакан пăхмасăр калать, шӳтлесе тăрăхласа илес чухне çак поэма йĕркисемпе усă курать.

«Суйласа илнисем» кĕнекен 2-мĕш томĕ тăрăх пичетленет.

**Тавлашу.** 1936 çулта çырнă поэма «Хамăр ялтан» ярăмра пичетленнĕ («Чĕре юрри», 1952). Çавăнтан илнĕ. Ку ярăмри ытти сăвăллă новеллăсем («Уняхви», «Çунатлă хĕр») «Çырнисен пуххин» 1-мĕш кăларăмĕнче (1997) пичетленнĕ. Ытти хайлавсене («Çуралнă çĕршывра», «Юлашки») ярăмран уйăрса, çырнă вăхăтне кура вырнаçтарса тухнă.

**Аван-и, Пушкин!** Лирикăллă поэмăн малтанхи тĕслĕхĕ Чăваш Республикинчи обществăлла организацисен патшалăх архивĕнче (2718 упр. шучĕ) упранать. Пĕрремĕш хут «Сунтал» журналта пичетленнĕ. Çырнисен 3-мĕш томне 1968 çулта тухнă «Суйласа илнисем. I том» кĕнекерен илсе кĕртнĕ.

**Орден.** 1945 çулта çырнă. «Чĕре юрри» (1952) кĕнекерен илсе пичетленĕ. Ăна поэт фронтри паттăр салтак çинчен А.Твардовскилле ирĕклĕн каласа парас кăмăлпа çырнă.

**Пурăнах, Чăваш çĕршывĕ.** 1948 çулта пичетленнĕ «Сăвăсемпе поэмăсем» кĕнекерен илнĕ. Ăна çав кĕнекере сăвăсен пайне лартнă пулсан та, хапи-хатипе, шухăшĕ-сăнарлăхĕпе вăл кĕске поэмăсен шутне кĕрет: унта сюжет аталанăвĕ, тĕрлĕ сăнарсен хутшăнăвĕ тата эпикăлла курăм уççăнах палăрса пыраççĕ.

**Çĕнтерӳ юрри.** Шупашкарта 1948 çулта кăларнă «Сăвăсемпе поэмăсем» кĕнекере пичетленнĕ «Çĕнтерӳ юрри» поэма тытăмĕ 8 сыпăклă, «Суйласа илнисенче» (2-мĕш том) сыпăксен шутне 10-а çитернĕ. Анчах поэмăна çĕнĕ çаврасем хушман, уйрăм йĕркесемпе сăмахсене кăна тӳрлетнĕ. Малтан 1-мĕш сыпăк пулнă пая кайран 3 сыпăка уйăрнă.

**Автанран автанччен.** Сакăр сыпăклă «Автанран автанччен» (1948) поэма сăвăçăн лирикăлла публицистикин витĕмлĕ тĕслĕхĕ пулса юлнă. Унта чылай йĕркесем çунатлă сăмах пек янăраççĕ: «Пĕри сӳнсен — тепри кирлех!», «Лере, малта, чечен çыран», «Эс, тинĕс, тавăр халăхна», «Çӳлтен çӳле, Чи çӳллĕ тӳпере сӳнер» тата ытти те. Хăй ĕçĕ-хĕлĕ пирки калани те витĕмлĕ: «Поэмăсем — сайра юпа, анчах ан манăрччĕ: юнпа цементласа ăна сарап эп».

«Мехел» (1987) кĕнекерен илнĕ.

Çӳлтен çӳле! Хыпса çунсан та —
Чи çӳллĕ тӳпере сӳнер.
Сан çуттупа тепри хускантăр —
Тата паха, тата чипер! —

йĕркесем чăваш интеллигенцийĕн тупа сăмахĕ вырăнне сарăлнă.

**Юлашки.** «Хамăр ялтан» ярăма кĕрекен поэма. «Чĕре юрри» (1952) кĕнекерен илнĕ.

Малтанхи кăларăмра йăнăш кайнă вырăнсене тӳрлетнĕ. Тĕслĕхрен, «хăпартсан», «ут» йăнăшсене çапла тӳрлетнĕ:

Сăмах çыпăçрĕ те ларчĕ,
Хăпăтсан та хăпас çук.
Ӳт чĕлхен ун шăмми çук.

**Чĕре юрри.** 1950—1951 çулсенче çырнă «Чĕре юрри» поэма 1952 çулта «Чĕре юрри» ятлă кĕнекере пичетленсе тухнă. Поэма виçĕ пайран тăрать: 1. Çамрăксен кăмăлне. 2. Икĕ ят. 3. Эп сăмах хăватне ĕненетĕп.

«Эп сăмах хăватне ĕненетĕп» пайĕ каярахпа «Поэмăсем» (1960) тата «Суйласа илнисен» 2 томне (1970) улшăнмасăрах кĕнĕ. «Сăмах хăвачĕ», «Чăваш сăмахлăхĕ» вĕренӳ кĕнекинче пур (вăтам шкулăн 8-мĕш класĕ валли кăларнă, 1994).

Комсомола халалланӑ «Ҫамрӑксен кӑмӑлне» тата Ленинпа Сталина вӑл вӑхӑт виҫипе мухтаса ҫырнӑ «Икӗ ят» сыпӑксене «Чӗре юрри» кӗнекерен илсе пичетлетпӗр. Самана ыратӑвӗсене пурнӑҫри хурапа-шурра тӗрӗс хак туман пулсан та, поэма XX ӗмӗр варринчи шухӑш-туйӑма тата поэзи шайне курӑмлӑ палӑртса тӑрать. Сталина мухтаса вӑрҫӑ хирӗнчен е пӗтӗм халӑх ячӗпе янӑ мухтав юррисем (одӑсем) ун чухне питех те анлӑ сарӑлнӑ. Ҫав витӗм вӑрҫӑ хыҫҫӑн та часах иртеймен.

«Чӗре юрри» историе чӑваш один XX ӗмӗрӗн 50-мӗш ҫулӗсенчи пысӑк тӗслӗхӗ пулса кӗрсе юлнӑ.

**Тури Вылта туй сикет.** «Чӗре юрри» кӗнекере (1952) поэма ҫапла пуҫланать:

Сасӑран сӑмах пулать
Тет вӗреннӗ ҫын вара.
Сӑмахпа уртмах тулать
Теҫҫӗ пирӗн таврара.
Кам пӗлет: хӑш чух сӑмах
Ҫитерет те пуль ҫӑмах...

Автономлӑ Чӑвашра
Ман пирки ҫак хушӑра
Сарӑлать иккен пӗр сас,
Хӑлат пек вӗҫет хыпар:
«Ватсене сума сумасть,
Юррисем юравлӑ мар,
Чӗвӗл-чӗвӗл чӗлхене
Куракла карлаттарать,
Чун чӗмне уҫас чухне
Параппан патлаттарать...»
Ҫапларах мана пӗрре
Сехреметлӗ сехетре
Тарӑхса тиркенӗ тет
Пӗр чӗлхесӗр пӗр тӗлте.
Тавтапуҫ, тӑванӑмсем!
Урӑх кӗвӗ кӗвӗлем.
Ӑҫтарах-ши ман кӗслем?
Ӑҫтарах кӗсле уҫҫи?
Ырлӗҫ-и, ырламӗҫ-и —
Хӗнтерех-ха калама.
Ҫитӗнсе ҫитсен улма
Татмасан хӑех ӳкет,
Сӑвӑ та ҫаплах ӳсет.
Поэтсем халь пӗлӗм пек
Пӗҫерен ямбсем ҫинче
Кивӗрех ҫак кӗввӗмпе
Пулмӑп-ши эп пӗр-пӗччен?
Тантӑш-тусӑм тиркекен
Ҫичӗ сыпӑк ҫеммипе
Ҫичӗ пушӑт ҫӑпатин
Кунне курмӑп-ши халь тин?
Ҫӑпата ку чух сайра,
Атӑ-пушмак урара.

Мĕн пулать те мĕн килет, —
Виçĕ ят мана пиллет:
Хурапха Хĕветĕрĕн
Михалин мехелĕпе...

«Суйласа илнисен» 2-мĕш томĕнче поэма «Хурапха Хĕветĕрĕ Михалин мехелĕпе...» тенинчен пуçланать. Хăйĕн ĕçĕ-пуçĕ пирки шухăшланине поэт каярахпа кирлĕ темен пулмалла — кĕскетнĕ. Çавăн пекех поэма вĕçĕ те юлашки сыпăкĕсĕр пичетленнĕ. «Чĕре юрри» кĕнекере вăл çапла вĕçленнĕ.

Çитрĕ пулĕ. Çырлахсам.
Çичĕ сыпăклă сăвва
Авалтан сума сăван
Юрă ашшĕ! Эпĕ сан
Ăруна, йăхна-тĕпне,
Тäврашна та несĕлне
Пĕлейместĕп, ан ятла,
Йăпанап çакăнпала:
Сакăрвунă самана,
Тăхăрвунă тамаша
Курнă халăхăм мана
Ăнлансассăн — мĕн нуша
Эп камран вĕреннине
Тĕпчемешкĕн пит ăна?
Хăварар ыттисене
Çав чăнах та нушана.
Тен, Сироткин çырĕ-ха —
Якку ывăль Михала,
Сăвапа та çылăха
Виçĕ вăл мăскалпала.
Тен, мана, екки ярсан,
Яланхи пек юп курсан,
Авалхи ятсемпеле
Танлаштарĕ Таниле —
Хветĕр ывăль Микула:
Эп пит тусчĕ унпала, —
Тусăн тустарас пулать.
Тен, Чарлан Раисĕ те
Сыпăнтарĕ ĕмĕте,
Е вăл çивчĕ перипе
«Апла мар та капла мар!»
Тесе туртĕ чăр та чар
Эпĕ халĕ çĕрĕпе
Ĕçлесе ларан сăвва.
Вăл вут чул çинчи ăвва
Чакмапа çапса кăвар
Чĕртесси çеç мар-çке-ха:
Чултан мар, чунтан чăл-пар
Сирпĕнсе хĕлхем тухать!
Тен, Якку Наумĕ те —
Леш Любим тавраш ачи —
Мана кӳртĕ ӳкĕте.
«Чим-ха, — тейĕ, — чим-ха, чим,

Лар-ха парттă хушшине,
Пăх-ха эсĕ ху çине,
Ĕлĕкрех мĕнлеччĕ те,
Халь мĕн евĕр упăте!»
Тен, эпир хисеплекен
Петĕр ывăлĕ Çемен —
Горски тухтăр та часах
Чухлĕ манăн чир-чĕре:
«Кай-ха, — тейĕ, — лекĕре,
Чĕлхӳне пăртак юса...»
Тайăн пуçăм, тав сире!
Тĕрлĕрен пулать ĕçре.
Мĕн пулсан та, тусăмсем,
Вĕçленеççĕ ку ĕçсем.
Çитменнине çитерĕр
Тессĕм çук эп, пĕлетĕр:
Хамăнах çитермелле.
Хальлĕхе пĕр мехеле
Чарăнатăп пуплеме,
Чарăнап та — ӳлĕме
Çĕнĕ хут листи илеп...
Тайăн пуçăм, тав сире!

1951

«Тури Вылта туй сикет» поэма пуçламăшĕпе вĕçĕнче Петĕр Хусанкай хăйне вырăнсăр тиркенипе çилленнĕ пек пулса калаçать. Унта вăл вăхăтри паллă тĕпчевçĕсене хăйне тĕрĕс сăмах калама ыйтать.

Михаил Яковлевич Сироткин, Семен Петрович Горский, Николай Федрович Данилов, Наум Яковлевич Любимов, Раиса Ивановна Цаплина тĕпчевçĕсем, чăнах та, П.П. Хусанкай пултарулăхне пысăка хурса хакланă.

1950—1951 çулсенче çырнă поэма — П.П. Хусанкай Чăваш Республикин Аслă Канаш депутатчĕ пулнă чухне ял-ял тăрăх тĕлпулусемирттерсе çӳренĕ вĕхăта кăтартать.

Публицистикăлла çивĕчлĕхĕ, сăнарлă пуплевĕ, халăхла çаврасем, кулăшпа шухăш хайлава чĕрĕлетсе тăраççĕ.

«Суйласа илнинчен» 2-мĕш томĕнчен (1970) илнĕ.

**Çуллахи талăк.** Ялти ĕçсем вăхăтĕнче пĕр талăкра мĕн-мĕн курса çӳренине сăнласа «Çуллахи талăк» (1951) поэмăра сăвăç чăваш çыннин ĕçне-хĕлне энциклопедилле нумай енлĕ кăтартса панă. «Чĕре юрри» (1952) кĕнекере поэма туллинрех пичетленнĕ. «Суйласа илнисен» 2-мĕш томĕнче (1970) вĕçĕ кĕскелнĕ.

*В.К.* — Вера Кузьмина, поэт мăшăрĕ, СССР халăх артистки.

Тав сире пĕтĕм чун хальлĕн
Алексеевпа Ырзем,
Шорникова та Ургалкин
Молодовпа ыттисем... —

Чăваш академи драма театрĕн артисчĕсем.

*Борис Алекссев* — СССР халăх артисчĕ.

*Ольга Ырзем* — Чăваш халăх артистки, Чăваш академи драма театрĕн чи малтанхи спектаклĕсенчех выляма пуçланă.

*Елена Шорникова* — Чăваш халăх артистки.

*Алексей Ургалкин* — СССР халăх артисчĕ.

*Игнатий Молодов* — Чăваш халăх артисчĕ.

*Систерчĕ Алине* — Ала çăлтăра систерчĕ.

*Тен, Автан яшки тĕлне* — Автан яшки — кĕрхи пысăк уяв, уй-хир ĕçĕсем вĕçленсен ял-йышпа пĕрле иртереççĕ, 40-60 çулсенче «колхоз ĕçки» тетчĕç. Çав вăхăталлах тата Кĕрхи Автан уявĕ пур. Вăл вилнисене асăнмалли йăлана пĕлтерет.

**Çуралнă çĕршывра.** Сиктĕрмере 1951 çулта çырнă «Çуралнă çĕршывра» поэма «Хамăр ялтан» ятлă сăвăллă новеллăсен ярăмне кĕрет. Вăл 1952 çулта «Чĕре юрри» кĕнекере ятсăр пичетленнĕ («Каллех ак эп çуралнă çĕршывра...»).

«Поэмăсем» (1960) тата «Суйласа илнисем» 2 том (1970) кĕнкесенче «Çуралнă çĕршывра» ятпа пичетленнĕ. Автор тӳрлетнĕ кăларăм тăрăх пичетленет.

Асăрхамасăр пулнă йăнăшсене тӳрлетнĕ: «Çурхи тĕнче илемĕ...» вырăнне 1970 çулхи кăларăмра «илемлĕ» кайнă, т.ыт.те.

**Горкăри çурт.** 1951 çулта П.П.Хусанкай Мускав çывăхĕнчи Сăртлăра (Горкăра) В.И.Ленин музейĕнче пулса курнă. Ун чухнехи çĕкленӳлĕх ăна поэма çырма хавхалантарнă. В.И.Ленин, пăлхавăрсен, вак халăхсен шăпи çыравçăсене XX ĕмĕрте самаях шухăшлаттарнă. Çав саманан хапăлне-хавалне «Горкăри çуртра» поэт пултаруллă кăтартма пултарнă. Паллах, картара хĕссе тăракан идеологие пула сăвăç хăй шухăшне яр уççăн калама та пултарайман. Çапах та поэма — паха хайлав. Вăл малтанхи хут «Ялав» журналта (1951, 4) тухать, унтан «Поэмăсем» (1960) «Аслă чĕре» кĕнекесенче пичетленет.

«Çырнисен пуххине» «Аслă чĕре» кĕнекерен илсе кĕртнĕ.

*Мир Конференцийĕнчен тухсассăн...* — П. Хусанкай 1951 çулта Пĕтĕм Союзри миршĕн кĕрешекенсен конференцийĕн делегачĕ пулнă.

*Прометей* — авалхи халăхсен паттăрĕ, çынсене вут тупса панă çын. Уншăн ăна Аслă Турă Зевс ту хысакĕ çумне сăнчăрласа лартнă.

*Сасартăк Капри сăнарланă...* — Капри, Италири утрав çинчи кану вырăнĕ. Унта В.И. Ленипа А.М. Горький пĕрле каннă, 1928 çулта пролетари çыравçи йывăр чиртен сипленнĕ.

**Тĕнчере мĕн вăйлăрах?** Халăх юмахне сăвăç Н.Р. Романов ăсчаха халалласа çырнă (1952). Малти 8 йĕркере юмаха вăл çырса илнине тата ăна якатнине палăртнă. Сăвălла юмах темиçе хут пичетленнĕ.

Кунта «Чĕре юрри» (1952) кĕнекерен илнĕ.

*Романов Никита Романович* (1905—1960), паллă тĕпчевçĕ-фольклорист Муркаш районĕнче Шарпаш ялĕнче çуралса ӳснĕ. Вăл пухса кăларнă «Ваттисен сăмахĕсемпе каларăшĕсем» кĕнеке халĕ те хăйĕн пахалăхне çухатман.

**Пĕрремĕш кĕркунне.** Юпари аслă пăлхавăра (революцие) халалланă поэмăна 1955 çулта çырнă.

«Çырнисен пуххине» «Поэмăсем» (1960) кĕнекерен кĕртнĕ.

*Шеп-тĕр крепите те силлесен?.. Крепитсем валли кастарнă...* — сăмах ял пуянĕсене чи лайăх çĕрсене «крепить» туса пани, вĕсем хуторсене тухса пурăнни пирки пырать. Патша министрĕ Киселев 1912 çулта çĕр реформин саккунне кăларнă. Вăл саккунпа кулаксемпе пуянсене паха çĕрсем тивнĕ, хура халăх çĕрсĕр тăрса юлнă. Халăх хутор хуçисене курайми пулнă, çуртсене-хуралтисене тустарнă.

*Çук текех патша патречĕ, Таçта ун хашакĕ те...* — патрет — портрет.

*Хашака* — рама (алăк, чÿрече, сăнÿкерчĕк хашакĕсем пулаççĕ).

*Янавар* — тин çеç кÿлме вĕрентнĕ лаша.

*Çинчĕк улăм* — çиййĕнчĕк, выльăх суйласа хăварнă тăккаланчăк утă-улăм.

*Паçма* — выльăх-чĕрлĕх тытмалли карта-хура, картиш.

**Владимир Маяковский.** 1927—1930 çç. П.П. Хусанкай Хусанта Хĕвел тухăç халăхĕсен педагогика институтĕнче вĕреннĕ. Вăл вăхăтра (1927—1928) Хусана В.В.Маяковский тĕлпулусем irttерме пынă. Кашнинчех ăна Хусан ниçтинчен ытларах хаппăлласа йышăннă.

1928 çулта чăваш çыравçисем вырăс поэчĕпе хăна çуртĕнче тĕл пулнă. Ун çинчен В.Маяковскин тĕлпулăвĕсене йĕркеленĕ П.И. Лавут асаилÿсен кĕнекинче («Маяковский едет по Союзу: Воспоминания. М., 1969) çапла çырса хăварнă: «В номер старинного «казанского подворья», где остановился Маяковский, началось паломничество... Журналистов и студентов сменили местные и приезжие поэты. Вошел совсем молодой паренек и после робкого предисловия прочел по-марийски «Левый марш» (впоследствии выяснилось, что это был поэт А. Ток). У Маяковского тетрадь стихов. Появляются все новые и новые люди. Среди проходивших в этот день к Маяковскому были: молодой поэт П.Хузангай и поэт Н.Шелеби. В тот же день они по записке Маяковского прошли на его выступление» (с. 132).

Павел Лавут шăпах ĕнтĕ çав хутпа чăвашсене театра кĕртсе янă.

«Владимир Маяковский» поэмăна 1953 çулта çырнă. Вăл поэмăсем (1960) тата «Суйласа илнисем» 2 том (1970) пичетленнĕ.

Кунта «Суйласа илнисем» тăрăх пичетленет.

*Хади Такташ* (1892—1930), тутарсен паллă сăвăçи, сăвăсене сакăлтакласа («Маяковскилле») çырма юратнă.

*...такмакĕ ыйтнă Л Е Ф çинчен...* — ЛЕФ, сулахай фронт тени. «Левый фронт» сăмахсенчен тунă. Вăл вăхăтри çыравçăсен пĕр пысăк ушкăнĕ. Тутарсемпе чăвашсем хушшинче те çавăн евĕрлĕ «Сулф» юхăм пуçласа пăхнă.

*Мускав. Ак эпĕ пырса тухрăм чăваш хаçачĕн картишне* — Мускавра чăвашла тухса тăнă »Коммунар» хаçат. П.П. Хусанкай 1930—1934 çç. унта çул çÿрекен хыпарçă пулса ĕçленĕ.

*Ан тив, пире пĕр палăк пултăр...* В.В. Маяковский «Лайăх!» поэминчен илнĕ йĕрке.

*Я— чуваш, послушай, уважь...—* «Казань» сăвăран илнĕ йĕркесем. Малтанхи хут «Комсомольская правда» хаçатра 1928 çулхи июлĕн 7-мĕшĕнче пичетленнĕ.

**Раççейĕм.** 1960 çулта çырнă «Раççейĕм» («Раççейĕм Пушкинран пуçланчĕ...») поэма «Аслă чĕре» (1963) кĕнеке тăрăх пичетленет.

Поэт хăй çуралса ӳснĕ таврари историлле ĕçсене аса илсе халăхсен шăпине кил-йыш пурнăçĕ витĕр сăнаса пăхать: «Казанковсен ратти пуçланнă... Çав вырăсла хушамата Чăвашлатмашкăн шухăш тытрăм. Тымарĕ, кăкĕ — киввиех», — пĕлтерет поэт Хусанкай хушамат ăçтан пулса кайнине (3-мĕш сыпăк).

*Ташкентра ӳкернĕччĕ ăна...* — поэт хăй 1958 çулта тăнăçлăхшăн кĕрешекенсен тĕнчери конференцийĕнче пулнине аса илет.

**Аслă чĕре.** «Аслă чĕре» кĕнекерен илнĕ. Петĕр Хусанкайăн Ленинианинче ку поэма «Горкăри çуртпа» пĕр çыхăнура тăрать. И.Я. Яковлевпа В.И. Ленин хутшăнăвĕ, аслă çул пуç телеграммин пĕлтерĕшĕ, халăхсен шăпи пирки шухăшланисем иртнĕ ĕмĕрĕн варринче хайлавсен пахалăхне ӳстерсе тăнă.

П. Хусанкай пултарулăхĕнче мухтав сăввисем (одăсем) сахал мар. «Аслă чĕре» кĕнекере поэмăпа пĕрле В.И. Ленина халаллană сакăр сăвă пичетленĕ. «Çав кун», «Пытарни» сăвăсене 1924 çулхи кăрлачра çырнă.

**Упа Эрхипĕ.** Поэмăна чăвашсен паллă критикне Василий Архипович Долгова халаллană. «Сăвăсемпе поэмăсем» кĕнеке тăрăх пичетленет.

**Анне.** 17 октавăллă «Анне» поэма — Петĕр Хусанкайăн лирикăлла философийĕн паха хайлавĕ. Вăл пĕлтерĕшпе «Тилли юррисен» ярăмне çывăх тăрать. Ăна поэт амăшĕ вилсен (1961) çырнă. «Суйласа илнисем». I том. (1968) тăрăх пичетленет.

«Анне» поэма шкул программине кĕнĕ («Чăваш сăмахлăхĕ», 10-мĕш класс валли, 2-мĕш кĕнеке, 1994).

**Çӳлелле.** «Суйласа илнисем» кăларăмăн 2-мĕш томĕ тăрăх пичетленет. Поэмăна вăтам шкулăн 9-мĕш класс кĕнекине кĕртнĕ (Чăваш сăмахлăхĕ, 9-мĕш класс валли, 3-мĕш кăларăм, 1994). «Вăл виçĕ пайран тăрать, çавăнпа ăна поэма-трилоги теме юрать» тенĕ вĕренӳ кĕнекинче. Трилогин пĕрремĕш пайне 1960 çулта тĕнче уçлăхне Çĕр çулташне (спутникне) вĕçтерсе ярсан çырнă. Тепĕрне — Юрий Гагарин 1961 çулта Çĕр чăмăрĕ тавра вĕçсе çаврăнсан, юлашкине вара хамăр ентеш Андриян Николаев космонавт 1962 çулта çăлтăрлă çулпа çаврăннишĕн савăнса хайланă.

**Çĕрте те çĕрместпĕр.** Совет Çарĕн 50 çулĕ тĕлне Петĕр Хусанкай чăваш паттăрĕсен Мухтав çыруне «Çĕрте те çĕрместпĕр» поэмине çырнă. Сивашăн тăварлă шывĕнче пуç хунă Прохор Иванов сăнарĕ ку поэмăн янăравлăхне хăпартса тăрать.

«Суйласа илнисен» 2-мĕш томĕнчен илнĕ.

**Сергей Есенин патĕнче.** Вырăссен чаплă сăвăçи Сергей Есенин Петĕр Хусанкай пултарулăхне пысăк витĕм кӳнĕ.

Пĕли-пĕлми алпа çыраттăм
Сан майлă хам та — анриччен...

Эс тиврĕн чĕрене, Есенин,
Сана тавссийĕм. Яланхи, —

тесе ахальтен каламан чăваш ăсти хăйĕн юлашки поеминче. Ăна вăл Мускавра сыватăшра выртнă кунсенче 1968 çулта хайланă.

Поэма «Суйласа илнисен» 2-мĕш кăларăмĕнче (1970), «Мехел» (1987) кĕнекесенче пичетленнĕ. Кунта çавсемпе тĕрĕслесе кĕртнĕ.

## ВĔÇЛЕНМЕН ПОЭМĂСЕНЧЕН

3-мĕш тома ку поэмăсене поэтăн килти архивĕнчен илсе кĕртнĕ.

**Чăваш кантати.** Шкул типтерĕн 7 листи çине кăвак çырапа (чернилпа) çырнă. Ал çыру упранать.

Поэмăн пуçламăш хураллийĕ те 4 страница упранса юлнă.

**Тайга саккунĕ.** Хут листин тăрăхла çурнă енĕсем çине кăвак тĕспе çырнă, енĕсене хĕрлĕ кăранташпа 170—184 цифрăсемпе палăртса тухнă. 170—171 хут енсем хыçне урăх поэма йĕркисене çырса хунă: «Вăл çуралать çын пекех: ирĕк, таса, çарамас...» сăмахсемпе пуçанса «Эс салтака каяс çук-ха, вырăсла пĕлмесен те юрĕ...» тенипе вĕçленет.

«Тайга саккунĕ» поэмăн эпиграфĕ пур: «Ун куçĕсем куççуль пĕлмеççĕ, Чĕри ун виç кĕтеслĕ пăр...». Вĕсене чĕрсе хунă.

Поэма, ахăртнех, нумай пайлă пулмалла пулнă, мĕншĕн тесен сыпăксене ят панă (1. Улма чăпар пăлан. 2. Тăвата куç. 3. Вĕренĕр...). Поэмăна малтанхи тĕрĕс çыравпах йĕркеленĕ: унта йа («я»), йу («ю), хӳреллĕ л, т («ч» саспалли вырăнне) етем, Тшек Лонтăн тесе çырнă.

**Атăл куçĕ.** «Атăл куçĕ» поэмăна белоруссен «Дэлегату трэцяга Пленума Праулення ССП СССР» блокночĕ çине хура тĕслĕ çырапа çырнă. Тӳрлетӳсем сахал. Пленум 1936 çулта нарăс уйăхĕнче пулнă.

**Хĕр йĕрри.** «Пин-пин чăваш Аннисенчен пĕри» йĕркесемпе пуçланакан поэма вĕçленмен. Унта тӳрлетӳсем, ыйту паллисем, кăранташпа хушса çырнисем нумай.

Хут енĕн пĕр кĕтессинче çапла çырса хуни тĕл пулать: «777. I. Хăвăл патне пыра-пыра итлет. II. Çăхан вăрлать. Тĕнче шăпăрт. III. Шырать. Айвай! IV. Вĕренене ыталаса вилет. V. Чĕри витĕр вĕрене шăтать. VI. Ывăлĕ касать, сĕрмекупăс тăвать. VII. Мухтав юрри.

«Тури касра пурнать Туймет Энтри» тенĕ сĕрте Турай Энтри тесе тӳрлетни, Улай Лерукĕ вырăнне Пуян Лярукĕ тесе çырни тĕл пулать. Виçĕ листан икĕ енĕпе те çырнă. Тепĕр хушма листа çинче кăранташпа чĕрсе хунă 4 йĕрке курăнать.

**Райком секретарĕ.** Вĕçленмен поэма ал çыру тăрăх пичетленет (А.П.Хусанкайăн килти архивĕнчен). Шкул типтерĕн уйрăм листисем çине кăвак çырапа çырнă. 12—17-мĕш енсене кăранташпа тӳрлетнĕ. Хушнă, тӳрлетнĕ вырăнсем пур.

Ну, юрать, пыратпӑр, Ланӑ,
Икӗ милӗк хатӗрле! —

тенӗ хыҫҫӑн ал ҫырура ҫӗнӗ шутлав пуҫланать, вӑл ҫӗнӗ страницӑран тытӑнать.

Малтанхи йӗрки: «Сӗм тӗттӗм...». Унтан тин тепӗр йӗрке «Шав ҫумӑр...» сӑмахсемпе пуҫланать.

Поэмӑн кунта кӗртнӗ юлашки тӑватӑ йӗркине каярахпа кӑвак ҫырапа хушса хунӑ. Малалла ҫырма састашлани курӑнать:

кил, яр
тултар
тытсам..

**Сталин патне янӑ ҫыруран.** Поэмӑна 1937 ҫулта Чӑвашиздат харӑсах икӗ кӗнеке туса кӑларнӑ: пӗри пӗчӗк хапаллӑ, 4000 экземплярпа; тепри пысӑк та капӑр, чӑваш тӗриллӗ, чӑвашла тата вырӑсла (500 + 50 экземпляр). Поэмӑна вырӑсла Александр Жаровпа Джек Алтаузен поэтсем куҫарнӑ. «Ку ҫырӑва Чӑваш совет поэчӗсемпе писателӗсен коллективӗ ҫырнӑ», 239342 ҫын алӑ пуснӑ», — тесе палӑртса хӑварнӑ.

Поэма сыпӑкне «Чӑваш халӑхӗ аслӑ Сталин патне янӑ ҫыру» (4000 экз.) кӗнекерен илсе пичетленӗ.

П.П.Хусанкайӑн килти архивӗнче Сталин патне янӑ ҫырӑвӑн икӗ ал ҫырӑвӗ упранать. «I вариант. Ильинка. 1935» тесе паллӑ тунӑ ал ҫыру ҫине мала «Я.Ухсай был свидетелем моего бессонного труда...» сӑмахсем ҫырса хунӑ. Ку вариантӑн 31 страницине машинкӑпа пичетленӗ, малаллисене П.Хусанкай алӑпа ҫырнӑ (32—67 с.). Тепӗр ал ҫырӑва «1935—36 ҫулхи хӗлле Ильинкӑра, унтан 1937 ҫ. — Шупашкарта» тесе паллӑ тунӑ. Кӑна пӗрремӗш вариантри тӳрлетӳсене шута илсе куҫарса ҫырнӑ. Пурӗ 55 страница. Йӑлтах алӑпа тата кӑвак ҫырапа ҫырнӑ. Ҫак вариантне пӗтӗмпех кӗнекене кӗртме юрать, мӗншӗн тесен ӑна йӑлтах П.П. Хусанкай хӑй ҫырнӑ. Ыттисем (Я.Г. Ухсай, С.В. Элкер тата ыт.) ҫырни танлаштарса вуланӑ чухне тӳрех палӑрса тӑраҫҫӗ.

Икӗ ал ҫырӑвӗ те икӗ ҫавра верлибрпа тата «Историсӗр халӑх тенӗ» йӗркепе пуҫланаҫҫӗ.

**Саркел.** Короткая поэма «Саркел» написана в августе 1944 года и опубликована в газете «Красная Чувашия» в сентябре 1945 года. Посвященная воину Герману Лашманову, погибшему в бою за Сталинград, 30-катренная поэма (6 частей по 5 катренов) вызвала бурную критику в печати и среди писателей. Конечно, нападки были необоснованными.

Вырӑсла ҫырнӑ поэмӑсенчен пӗри — 6 пайлӑ, 5-шер тӑватйӗркелӗхле (пурӗ вӑтӑр ҫавра) «Саркел» чӑваш критикӗсене хытах шавлаттарнӑ. Ӑна тиркесе хаҫатсенче, пухусенче поэта хытӑ тапӑннӑ. Тапӑнни, паллах, тӗрӗс пулман.

Поэма малтанхи хут «Красная Чувашия» хаҫатра 1945 ҫулта, кайран тепре «Лик Чувашии» (1997, № 1) журналта пичетленнӗ.

Ку кӗнекене килти архиврa упранакан ал ҫыру тӑрӑх кӗртнӗ.

* * *

Ăнлантарусен вĕçĕнче çакна каласа хăварни вырăнлă пулĕ: П.П.Хусанкай архивĕнче халиччен пичетленмен вак хайлавсем, çырусем, уйрăм çаврасем, тӳрлетӳсем йышлă. Вĕсене ятарласа тĕплĕ тишкернĕ май çав сыпăксен, тӳрлетӳсен кирлĕ вырăнне палăртма пулĕ. Хальлĕхе вара ячĕсем паллă, анчах тĕпчевçĕсен аллинче пысăк хайлавсемех çук. Вĕсен шутне «Питтăпаль», «Сарнай Илли», «Поэт» поэмăн юлашки сыпăкĕ, «Слакпуç масарĕ çинче», «Хуракăш» поэмăсем кĕреççĕ.

Сăвăç ывăнми ĕçленĕ. Унăн кашни йĕрки тĕпчеве тивĕçлĕ.

***В.П. СТАНЬЯЛ***

# ТУПМАЛЛИ

### ПОЭМĂСЕМ

Хури (1926—1927) . . . . . . . . . . . . . . . . . 3
Çирĕм улттă (1927) . . . . . . . . . . . . . . . 15
Пушкинпа калаçни (1928) . . . . . . . . . . 23
Сона (1929) . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 29
Ишшак Верти (1930) . . . . . . . . . . . . . 42
Юлашки пăлхар (1930) . . . . . . . . . . . 48
Паянхи поэма (1930) . . . . . . . . . . . . . 56
Поэт (1929—1930) . . . . . . . . . . . . . . . 67
Майра инке е Сенкер тынас (1930) . . . . . . 86
Хупă çыру (1931) . . . . . . . . . . . . . . . 105
Интервью (1931) . . . . . . . . . . . . . . . 110
Таса хĕр Тарье (1931) . . . . . . . . . . . . 117
Тĕкĕр умĕнчи Венера (1931) . . . . . . . . . 122
Байрон (1932) . . . . . . . . . . . . . . . . 128
Улмуççиллĕ Тĕрлемес (1933) . . . . . . . . . 132
Басмач (1928—1934) . . . . . . . . . . . . . 141
Спартак (1934) . . . . . . . . . . . . . . . . 181
Яманкас юмахĕ (1934) . . . . . . . . . . . . 189
Шелепи шерепи (1936) . . . . . . . . . . . . 197
Тавлашу (1936) . . . . . . . . . . . . . . . 210
Аван-и, Пушкин! (1937—1949) . . . . . . . . 215
Орден (1945) . . . . . . . . . . . . . . . . . 219
Пурăнах, Чăваш çĕршывĕ (1945) . . . . . . . 223
Çĕнтерӳ юрри (1945) . . . . . . . . . . . . . 228
Автанран автанччен (1948) . . . . . . . . . . 238
Юлашки (1949—1950) . . . . . . . . . . . . . 248
Чĕре юрри (1950—1951) . . . . . . . . . . . . 257
    1. Çамрăксен кăмăлне . . . . . . . . . . —
    2. Икĕ ят . . . . . . . . . . . . . . . . . 261
    3. Сăмах хăвачĕ . . . . . . . . . . . . . 268
Тури Вылта туй сикет (1950—1951) . . . . . . 277

Çуллахи талăк (1952) . . . . . . . . . . . . . . *295*
Çуралнă çĕршывра (1951) . . . . . . . . . . . . . *319*
Горкăри çурт (1951—1952) . . . . . . . . . . . . . *323*
Тĕнчере мĕн вăйлăрах? (1952) . . . . . . . . . . . *335*
Пĕрремĕш кĕркунне (1955) . . . . . . . . . . . . *342*
Владимир Маяковский (1958) . . . . . . . . . . . *357*
Раççейĕм (1960) . . . . . . . . . . . . . . *370*
Аслă чĕре (1960) . . . . . . . . . . . . . . *379*
Упа Эрхипĕ (1961) . . . . . . . . . . . . . . *391*
Анне (1961) . . . . . . . . . . . . . . *395*
Çӳлелле (1962) . . . . . . . . . . . . . . *400*
I. Çӳлелле . . . . . . . . . . . . . . —
II. Пуçланчĕ . . . . . . . . . . . . . . *403*
III. Çăлтăрлă çулпа . . . . . . . . . . . . . . *408*
Çĕрте те çĕрместпĕр (1967) . . . . . . . . . . . . *412*
Сергей Есенин патĕнче (1968) . . . . . . . . . . . *439*

## ВĔÇЛЕНМЕН ПОЭМĂСЕНЧЕН

Чăваш кантати . . . . . . . . . . . . . . *443*
Тайга саккунĕ . . . . . . . . . . . . . . *446*
Атăл куçĕ . . . . . . . . . . . . . . *459*
Хĕр йĕрри . . . . . . . . . . . . . . *470*
Райком секретарĕ . . . . . . . . . . . . . . *475*
Сталин патне янă çыруран . . . . . . . . . . . . . *489*
Саркел (вырăсла поэма) . . . . . . . . . . . . . *503*
Ăнлантарусем . . . . . . . . . . . . . . *508*

ОРДЕНА «ЗНАК ПОЧЕТА»
ЧУВАШСКИЙ ГОСУДАРСТВЕННЫЙ ИНСТИТУТ
ГУМАНИТАРНЫХ НАУК
ПРИ КАБИНЕТЕ МИНИСТРОВ ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

| ПЕТĔР ХУСАНКАЙ<br>ÇЫРНИСЕН ПУХХИ<br>**Виççĕмĕш том** | ПЕДЕР ХУЗАНГАЙ<br>СОБРАНИЕ СОЧИНЕНИЙ<br>**Том третий** |
|---|---|

Редколлегия: **Н.И. Иванов, В.П. Станьял**, **А.А. Трофимов**,
**А.П. Хузангай**, **Г.Ф. Юмарт**

Составитель и автор комментариев
**В.П. Станьял**

Редактор ЧГИГН *В.П. Станьял.* Редактор издательства *П.Е. Димитриев.*
Художественный редактор *А.В. Семенова.* Технический редактор
*Л.К. Егорова.* Корректоры *Н.П. Печникова*, *З.И. Гаврилова*, *Г.И. Алимасова*,
*Т.И. Кириллова.* Компьютерная верстка *Е.Л. Карпеевой.*
Изд. лиц. № 06317 от 26.11.01. Подписано к печати 19.08.02. Формат
84x108$^{1}/_{32}$. Бумага офсетная. Гарнитура Тип Таймс. Печать офсетная.
Усл. печ. л. 28,56. Учетно-изд. л. 28,44. Тираж 1000 экз. Заказ № К-3395. Изд. № 30.
РГУП «Чувашское книжное издательство», 428000, Чебоксары, пр. Ленина, 12 б.
Отпечатано в РГУП «ИПК «Чувашия». 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.

**Хусанкай П.П.**

Х 98 Çырнисен пуххи. Виççĕмĕш том. Поэмăсем. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2002. — 542 с.

«Çырнисен пуххин» виççĕмĕш томне чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай (1907—1970) тĕрлĕ çулсенче çырнă поэмăсем, сăвăлла новеллăсемпе юмахсем кĕнĕ. Вĕсене хăçан çырнине кура вырнаçтарса тухнă. Кĕнеке вĕçĕнче хайлавсен тӳрлетнĕ тĕслĕхĕсене тата сайра тĕл пулакан ятсемпе сăмахсене ăнлантарса панă.

Эпикăлла поэмăсене («Магнитту», «Çĕрйĕркелӳ», «Тăван çĕршыв», «Таня» т.ыт.) 4-мĕш тома кĕртме палăртнă.

**УДК 821.512.111**

**ISBN 5-7670-1260-1** **ББК 84 (2Рос=Чув)—5**